К 84.89(=Чув)
А-23
Ч-37611

ЛЕОНИД
АГАКОВ

# САЛТАК АЧИСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-037611

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Зак. 1296 Тир. 10.000 1981 г.

кф
К84.89(=4чу)
А23

ЛЕОНИД
АГАКОВ

# САЛТАК АЧИСЕМ

Повеçпе калав



кр

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2002

УДК 821.512.111
ББК 84 (2 Рос – Чув) – 44
А 23

ПРОВЕРЕНО
20 10 03 НОЯ 2017

ч-37611

ISBN 5-7670-1228-8 © Чăваш кĕнеке издательстви, 2002

Национальная ...
Республики

# САЛТАК АЧИСЕМ

(Повесть)



## Пăрахут анаталла каять...

Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче çанталăк пуçĕпех пăсăлчĕ. Эрне ытла хĕвел пĕрре те курăнмарĕ, вĕттĕн-вĕттĕн сапакан çумăрпа хутăш йĕпе юр çурĕ, кунĕн-çĕрĕн çил вĕрчĕ, тăхлан тĕслĕ йывăр пĕлĕтсем кĕç-вĕç çĕре анса ларас пекех аяллăн шурĕç. Атăл шывĕ сăнсăрланса, тĕксĕмленсе кайрĕ, пĕрмай хумханса тăчĕ, çил вăйлăрах вĕрме тытăнсан хум тăррисем кăпăкланса хаяррăн сиккелерĕç, пĕр-пĕрне çапăна-çапăна арканчĕç.

Çулталăкри чи илемсĕр те салхуллă вăхăт — хура кĕркунне çитрĕ. Ĕнтĕ Атăл хĕрринчи вăрмансем çаралса, хуралса юлчĕç, уйрăм вырансенче тĕл пулакан чăрăшлăхсем çеç яланхи пекех ем-ешĕллĕн курăнаççĕ. Кас-кас Атăла çăра тĕтре хупласа лартрĕ, тепĕр чух çав тĕтре чаршавĕ кăнтăрла та сирĕлмерĕ. Ун пек чухне пăрахутсене питĕ кансĕр пулчĕ, вĕсен йĕркеллĕ çӳреме май килмерĕ, туран анаканнисем те, анатран хăпараканнисем те унта та кунта, Атăл варринчех якорьсем ярса, чăтлăхра çухалса кайнă çынсем пек, пĕр-пĕрне сас парса хурлăхлăн кăшкăртрĕç.

«Эпĕ кунта-а!» — тенĕ пекех илтĕнчĕ вĕсем кăшкăртни...

Тĕрĕссипе, Атăл тăрăх пăрахутсем çӳремелли вăхăт иртнĕ ĕнтĕ, навигаци хупăнмалла. Анчах та 1941 çулхи кĕркунне яланхи

йĕркесене тытса пыма, сроксене пăхăнса ĕçлеме ниепле те май килмен. Темиçе уйăх каялла пирĕн мирлĕ те телейлĕ пурнăçпа пурăнакан Тăван çĕршывăмăра тискер тăшман килсе тапăннă, Хура тинĕсрен пуçласа Пăрлă океан таранах, темиçе пин километр тăршшĕ тăсăлнă фронтра, хăрушла хаяр та йывăр çапăçусем пынă. Фронта мĕн кирлине — вăрçă техники, хĕç-пăшал, апат-çимĕç — вăхăтра илсе çитерме пур йышши транспортăн та пĕр чарăнмасăр, çĕрĕн-кунĕн пĕтĕм вăйпа ĕçлеме тивнĕ. Кунсăр пуçне, ун чухнехи йывăр кунсенче фронт çывăхĕнчи районсенчен мирлĕ халăха — ватăсемпе вĕтĕсене, хĕрарăмсене —васкасах инçетри вырăнсене, вăрçă çук çĕре турттарса тухмалла пулнă. Эвакуированнăйсем хĕвел тухăçнелле чукун çулсем тăрăх та, автомобиль çулĕсемпе те, пăрахутсемпе те вĕçĕ-хĕррисĕр, пинĕн-пинĕн килсе тăнă...

...Темиçе кун хушши юрпа хутăш çумăр çунă хыççăн Атăл çинче пăр муклашкисем пула пуçларĕç. Малтанлăха вĕсем кăпăшка кăначчĕ-ха, анчах çанталăк сивĕтнĕ май вĕсем хытрĕç, пĕр-пĕрин çумне çыпăçса текех пысăкланса пычĕç. Пăрахутсемшĕн çав пăр таткисем — чăн тăшмансемех вара, вĕсем чăрмантарма çеç мар, пысăк сиен кӳме те пултараççĕ. Чи ăста капитансем те çавăн пек чух рейса тухса кайма килĕшмеççĕ — юрамасть.

Анчах пристань çинче фронт таврашĕнчен куçса килнĕ темиçе çĕр çын — пĕр-ик эрне каялла çеç вут-çулăм ăшĕнчен тухнă, вилĕмрен ăнсăртран çăлăннă, темĕн тĕрлĕ тертленсе, асапланса пĕтнĕ ват стариксемпе карчăксем, кăкăр ачисене чĕркесе тытнă хĕрарăмсем, шкула каймалли вĕтĕр-шакăрсем — кĕтсе лараççĕ пулсан, вĕсенчен нумайăшĕ çуллахи тумсем çеç тăхăннипе шăнса хыта пуçланă, хăшĕсем чирлесе те кайнă пулсан мĕн тумалла-ха? Çук ĕнтĕ, темле йывăр килсен те кун пек çанталăкра пăрахута вырăнтан хускатма шыв çинчи пур саккунсем те чараççĕ пулин те — каймаллах, çитес çĕре илсе çитермеллех вĕсене, урăхла май килмест!..

Акă Горький хулинчи пĕр пристань пуçĕнчи «Диспетчерская» тесе çырнă каюта алăкĕ хыçĕнче темиçе арçын питĕ шавлăн калаçни илтĕнет. Хĕрсе кайсах тавлашаççĕ унта. «Юрамасть кайма. Ирччен пăрахут Атăл варринчех шăнса ларать. Çынсене вара тата ытларах асап кăтартса пĕтеретпĕр!..» Пĕри калать çавăн пек, тепри... Пурте пĕр шухăшлă пулнă пек туйăнать. Унтан сасартăк виççĕмĕшĕ хулăн сасăпа хыттăн, приказ панă пек калама тытăнать:

— Тавлашни усăсăр, юлташсем! Каймаллах. Пристаньре сакăр çĕр çын ытла. Ачасем, ваттисем. Чирлисем нумай. Ăçта чикмелле вĕсене? Горький хули те, облаçĕ те туп-тулли, тек пĕр çын та йышăнма пултараймаççĕ. Кусене Шупашкара илсе

çитерес пулать, вĕсене Чăваш республикине вырнаçтарма палăртнă...

— Анчах эсир çанталăкĕ мĕнлине куратăр-и? Шута илетĕр-и çавна, çук-и? — çапах та хирĕçме тăрать пĕри.

— Çил çурçĕртен вĕре пуçларĕ çав. Норд-ост. Сивĕтет, — илтĕнчĕ тепĕр сасă. — Пĕртте шанчăклă мар. Питĕ шикленмелле.

— Пĕлетĕп, анчах ним тума та çук, — терĕ вĕсене хирĕç хулăн сасă. — Вăрçă, юлташсем, вăрçă! Нимӗнле йывăрлăх умĕнче те чарăнса тăма юрамасть. Çынсене çăлас пулать. — Сасă пĕр вăхăтлăха шăпланчĕ, унтан каллех илтĕне пуçларĕ. — Çапах та эпĕ «Парижская коммуна» Шупашкара чиперех çитсе килессе шанатăп. Питех кирлĕ пулсан пулăшма буксирсем ярăпăр. Çур сехетрен вăл çак причал патне килет. Çынсене йĕркеллĕ, тĕркешӳсĕр вырнаçтарăпăр. Вун иккĕре пăрухат хускалса каймалла...

— Ку мĕн вара, приказ-и?

— Приказ. Ăна пурнăçа кĕртмесен пире пурне те çар трибуналне* параççĕ. Каçару пуласса ан кĕтĕр.

— Пĕтĕмпех паллă апла...

Чăнах та, тепĕр çирĕм-вăтăр минутран çак причал çумне темле хурлăхлăн та вăраммăн кăшкăртса çу каçа самаях вараланнă, сăнсăрланнă пысăк пăрахут пырса тăчĕ. Унăн сарлака трубинчен пĕр вĕçĕм хуп-хура тĕтĕм палкать, трюмра хăватлă машинăсем такама çилленсе калаçнă пек хуллентерехх̆ен кĕрлеççĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе машина пайĕнчен тухакан шурă пăс чашкăра-чашкăра илет.

Çакна курса дебаркадерăн иккĕмĕш хутĕнчи кĕтмелли залра лаӑракансем пĕр харăсах шавлама, тăрмашма, унăн-кунăн кумма тытăнчĕç. Темиçе çĕрте ачасем макăрса яни илтĕнчĕ, тахăшĕсем теприсене ятран чĕнсе кăшкăрчĕç. Аяла анмалли ансăртарах пусма çинче пробка пулса ларчĕ — темĕн тĕрлĕ çыхăсем, чăматансем, карçинккасем, ещĕксем йăтнă, пĕчĕк ачисене аллисене тытнă, утаканĕсене çавăтнă çынсем ытла та пĕр харăс пырса чыхăнчĕç унта. Малтисем хирĕнкелесе тухсан тин çынсем пĕр майлăрах шума тытăнчĕç.

Пăрахут çинчи матроссем те, пристаньре ĕçлекенсем те çынсене ӳкĕтлерĕç, лăпкăрах, йĕркеллĕрех пулма ыйтрĕç:

— Ан васкăр, юлташсем! Ĕлкĕретĕр!..

— Никама та пăрахса хăвармастпăр, пурне те илсе каятпăр вĕт! Пăрахут пысăк! Вырăн çитет!

— Малтан ачасене илсе кĕртĕр! Ан хĕсĕр ĕнтĕ, ан кĕпĕрленĕр, хуллентерех пырăр!

Анчах усси питех пулмарĕ. Пурте васкарĕç, пĕр-пĕрне

---

* Çарти суд.

тĕрткелерĕç, малтисен урисем çине пусрĕç. Çавăнтах вăрçкаласа илнисем те илтĕнчĕç. Мĕн тăвас тетĕн, ку çынсем ниепле те лăпкă пулма пултарайман çав — ытла та нумай хурлăх курнă, темĕн те пĕр тӳснĕ вĕсем юлашки вăхăтра, сывă юлассăн та, вилĕмрен хăтăлассăн та туйăнман вĕсене. Халĕ те нумайăшĕ хăйсем хăрушлăхран хăтăлнине ĕненсех çитеймен-ха...

Пĕр сехет ытла иртрĕ çынсем пăрахут çине вырнаçиччен. Шала кĕрсен те вăрахчен шавларĕç-ха вĕсем, ниепле те лăпланса çитеймерĕç. Пĕрисен ачисем çуйăхаççĕ, теприсем ку таранччен пĕрле килнĕ юлташĕсенчен уйрăлса кайнă — вĕсене шыраççĕ, теприсем тата ачи-пăчине часрах вĕри шыв ĕçтерсе ăшăтма васкаççĕ.

Чăн юлашкинчен трап* тăрăх пăрахут çине пĕр çемье кăштăртатса кĕчĕ. Ыттисенчен уйрăм, кая юлса кĕнипе ку çемьене пурте курчĕç — çӳле улăхса пăрахут палубине тухма ĕлкĕрнисем те, дебаркадер çинче тăраканнисем те. Трап çине малтан пĕр вун-вун ик çулхи арçын ача ярса пусрĕ. Вăл унтан-кунтан лапчăннă пысăках мар сарă чăматан йăтнă та ун йывăрăшне пула сылтăм еннелле чалăшсах кайнă. Пуçĕ çинчи хура пустав карттусĕ куçĕ çинех анса ларнă, мăйĕнчи улачăла шарфĕн пĕр вĕçĕ пилĕкрен те аяларах усăннă, кĕске кăвак пиншак аркисем уçăлса кайнă — тӳмисем татăлнă пулмалла.

Ун хыççăн çӳллĕ, ырхан, кăштах курпунланнă старик утрĕ; унăн пичĕ шăрт пек хытă шап-шур сухалпа витĕннĕ — яланах хырăнса пурăннăскер, халĕ нумайранпа бритва тытман курăнать. Вăл — тумтирĕ çӳхе пирки пулмалла — хул пуççийĕсене хĕрарăм шалĕпе витнĕ, пĕр аллипе вараланса пĕтнĕ утиялпа чĕркенĕ пысăк çыхă йăтнă, тепринпе туя çине таяннă. Старик урисене хуллен, асăрханса илсе пусрĕ, анчах вăл пуринчен ытларах хăй шуçасран та мар, хăйĕн пальти аркинчен тытса пыракан кăн-кăвак куçлă, мамăк пекех шурă çӳçлĕ хĕр ача такăнса ӳкесрен хăрарĕ пулмалла. Юлашкинчен вара трап çине куçĕ-пуçĕ курăнмиех темле симĕс тумтирпе чĕркенĕ ача çĕкленĕ, хăрах аллипе карçинкка йăтнă хĕрарăм кĕчĕ. Ку ĕнтĕ çак ачасен амăшĕ пулас. Сăнран вăл питĕ те ĕшенчĕклĕ, çав тери шуранка, пысăк кăвак куçĕсем путса ларнă. Тӳрех курăнать — темиçе талăк хушши çывăрман вăл...

Хĕрарăм трап тăрăх темиçе утăм тусанах карçинкки карлăк хăминчен çакланнипе вăл каялла сулăнса кайрĕ, аллинчи ачи шариех кăшкăрса ячĕ, карçинкки вара çĕре ӳкрĕ. Хĕрарăм пĕшкĕнме тăчĕ, ачи тата хытăрах макăрма тытăнчĕ. Çав самантрах ун патне кăвакара пуçланă пысăк уссиллĕ матрос чупса пычĕ те карçинккана çĕртен вăшт кăна çĕклерĕ.

---

* Пристаньрен пăрахут çине кĕмелли сарлака хăмасем.

— Ан пăшăрханăр, гражданка, утăр, эп пулăшăп сире...

Вĕсем виççĕмĕш класалла пăрăнса кĕчĕç. Карçинкка йăтнă матрос çынсем хушшипе хĕсĕнсе маларах иртрĕ те унталла-кунталла пăхкаларĕ. Пушă вырăн ниçта та курăнмарĕ. Пур çĕрте те çынсем, япаласем — пăрахут çине малтантарах кĕнисем пур вырăнсене те йышăнса пĕтернĕ иккен. Кая юлнă кил-йыш ним тума пĕлмесĕр тăчĕ. Хĕрарăм халĕ те нăшăклакан ачине хуллен кăна çурăмĕнчен лăпкарĕ, ачашланă май унпа пĕрле малалла сулăнкаларĕ.

— Мĕн тăвас пулать-ши? — терĕ матрос татах йĕри-тавралла пăхкаласа.

— Ачасене те пулин вырнаçтарасчĕ... — терĕ старик вăйсăр сасăпа. — Пĕчĕкки чирлесе кайрĕ-ха пирĕн. Температура... Хамăр ура çинче тăрса та пыраттăмăр-ха, анчах ачине питĕ кансĕр пулать...

— Çук, ун пек ĕç тухмасть, — килĕшмесĕр пуçне пăркаласа илчĕ матрос. — Юрамасть ун пек! Пурне те вырнаçтарас пулать. Çулĕ çывăхах мар.

— Мĕн тăвас-ха эппин вырăн çук пулсан?

Матрос шухăша кайнă пек пулчĕ. Унтан çĕре лартнă карçинккана каллех çăтăр-çатăр йăтрĕ те тепĕр аллипе малалла кăтартрĕ:

— Атьăр манпа пĕрле! Ан юлăр!

Пурте кĕпĕрленсех ун хыççăн утрĕç. Тепĕр ик минутран малтанхи пекех унталла-кунталла кумакан çынсем темле пичкесем, михĕ куписем хушшипе пырса, машинăсен уйрăмĕнчен иртсе тăваттăмĕш класс вĕçĕнчи пĕр ансăр алăк умне çитсе чарăнчĕç. Матрос хăйĕн бушлачĕн* кĕсйинчен уççи кăларса алăка уçрĕ те:

— Тархасшăн, кĕрсе вырнаçăр хăвăр пĕлнĕ пек! — терĕ.

Старикпе хĕрарăм та ун çине самаях тĕлĕнсе пăхса тăчĕç. Курчĕç вĕсем: çак ватă матрос вĕсене пассажирсем ларса çӳремелли каютăна та, служба пӳлĕмне те мар, хăй пурăннă çĕре илсе пынă-мĕн. Каютăра икĕ вырăн, вĕсенчен пĕрне килти утиялпа витсе хунă, минтерĕ те пур; пĕчĕк сĕтел çинче — чейник, икĕ стакан, сĕт тытнă графин...

— Ма тăратăр тата? Мĕншĕн кĕместĕр? — ыйтрĕ матрос старикрен.

— Анчах та ку сирĕн каюта вĕт-ха... — терĕ ăна хирĕç лешĕ, çаплах малалла иртме хăяймасăр. — Эпир йышăнсан сире хăвăра валли вырăн пулмасть...

— Ну, эсир ун пирки ан пăшăрханăр, — ал сулчĕ матрос. — Ак ку вырăнĕ пушă вăл, унта никам та выртмасть. Эпĕ вахтăра

---

* Матроссен пиншакĕ.

пулатăп. Улшăнсан хам валли эпĕ урăх çĕрте те вырăн тупатăп. Иртĕр, вырнаçăр!

— Аван мар ун пек сире чăрмантарма...

— Нимĕн те мар! Халь — вăрçă, кам йывăра лекет, ăна пулăшас пулать. Совет çыннисем пуль эпир?

Старик хĕрарăма темскер каларĕ (вĕсем вырăсла калаçман пекех туйăнчĕ матроса), вара тин пурте, пĕтĕм кил-йышĕпех, каютăна кĕчĕç.

— Вырнаçăр, вырнаçăр, ку пĕчĕккине часрах ак çакăнта вырттарăр, — вырăн çине сулса кăтартрĕ матрос.

— Тавах сире, юлташ, питĕ пысăк тав, — терĕ старик пăлханнă сасăпа.

Хĕрарăм та матрос çине чи ырă кăмăлпа пăхса, пуçне таятая темскер каларĕ. Унăн сăмахĕсене матрос ăнланаймарĕ, анчах вăл та, старик пекех, хăйне чĕререн тав тунине пит лайăх ăнланчĕ.

«Вырăссем мар кусем, — терĕ вăл хăй ăшĕнче. — Балтика таврашĕнчисем пулас — латышсем е эстонецсем... Старикĕ çеç вырăсла пĕлкелет иккен...»

— Ашăнмалăх чей ĕçместĕр-и? Халех вĕретнĕ шыв илсе килсе пама пултаратăп, — терĕ вăл унтан.

— Тархасшăн, май пур пулсан, — пуçĕпе сулса илчĕ старик.

— Э, Атăлта шыв нумай пирĕн! Баксем те вĕресех тăраççĕ...

Матрос çавăнтах сĕтел çинчи чейнике илсе тухса кайрĕ те ик-виç минутранах каялла çаврăнса çитрĕ.

— Хăналанăр! Ак кунта заварка та пур... — Вăл çӳлĕк çинчен пĕчĕк кăна тимĕр коробка илсе сĕтел çине лартса пачĕ. — Кун пек çанталăкра вĕри чей — питĕ аван...

— Çапла, çапла... Чей... аван вăл. Тав, пысăк тав, — терĕ старик. — Питĕ аван. Чей — усăллă.

Матрос алăк çумне тайăнса кĕске хура чĕлĕмне табак тултарма тытăнчĕ. Унăн хăнисем вырнаçрĕç ĕнтĕ: хĕрарăм алăри пĕчĕк ачине вырăн çине майлаштарса вырттарчĕ, старик япалисене сак айнелле тĕртсе кĕртрĕ, арçын ачи чӳрече патне пырса тулалла пăха пуçларĕ, йăмăкĕ те унран юлмарĕ, унпа юнашар пырса тăчĕ. Çак кил-йыш кăштăртатни çине пăхнă май матросăн халь вĕсем çинчен пĕлесси килчĕ.

— Каçарăр, юлташ, ăçтисем çак эсир? — ыйтрĕ вăл. — Инçетрен килетĕр пулас?

— Питĕ аякран килтĕмĕр çав, — терĕ ăна хирĕç старик, — тĕнче хĕрринченех темелле... Эстонирен. Вăрçă пуçлансассăнах Ленинград еннелле тарса тухсаттăмăр, анчах халĕ ак тата инçетерех килмелле пулчĕ. Вунă кун ытла ĕнтĕ çул çинче... Тата мĕн чухлĕ каймалла пулать — ăна пĕлме те пултараймастпăр.

— Халь нумай мар ĕнтĕ, ыран çитетĕр.

— Питĕ лайăх пулĕччĕ. Шалт халтан кайрăмăр...

— Ку пĕтĕмпех сирĕн çемье ĕнтĕ? Ачисем — мăнуксем пуль?

— Çапла, çапла. Çемье. Ку — кин, Амалия, ман ывăлăн арăмĕ, кусем — вĕсен ачисем, ывăлĕ — Ян, хĕр ачи Юули ятлă, чăн пĕчĕкки — Эльга, — йĕркипех каласа пачĕ старик. — Мана хама Пауль теççĕ, Пауль Киккас.

— Ачисен ашшĕ, ну, сан хăвăн ывăлу, эппин, ăçта тата? Ватă Пауль матрос çине пăхрĕ те ассăн сывласа илчĕ.

— Пĕлместпĕр...

— Вăрçăра пуль? Арçынсем халĕ пурте унта...

— Калама йывăр... Пирĕн хула çине пирвайхи бомбăсем ÿксенех вăл килтен чупса тухса кайрĕ те — урăх эпир ăна пачах та курман. Те вилнĕ вăл, те чĕрĕ, нимĕн те паллă мар...

Матрос тата тем çинчен ыйтасшăнччĕ, анчах çав вăхăтра сасартăк пăрахут кăшкăртса ячĕ. Ку кĕтмен çĕртен пулнипе Киккассем пурте картах сикрĕç, матрос вара хăвăрт кăна тухса кайрĕ. Ватă Пауль кăкăр умĕнчи кĕсйинчен тачка вăчăраллă сехетне кăларса пăхрĕ.

— Вун иккĕре каятпăр терĕç, халь иккĕ те çитет ĕнтĕ...

Тепĕр вунă минутран пăрахут тата тепре кăшкăртрĕ, кăшт тăхтасан виççĕмĕш хут янратрĕ. Машинăсен уйрăмĕнче двигательсем хăватлăн кĕрлеме тытăнчĕç, пăрахут пĕтĕм кĕлеткипе чĕтрене-чĕтрене илчĕ. Унтан çÿлте умлăн-хыçлăн ик-виçĕ хут ши! ши! туни илтĕнчĕ те, пăрахут ерипен, майĕпе пристань çумĕнчен уйрăла пуçларĕ. Пичĕпе чÿрече çумне çыпçăнсах тăнă Ян Киккас пристань çамки çине çырнине уйрăм сас паллисем тăрăх вуласа тухрĕ:

— Г... ор... ки...

Мăнукĕн çурăмĕ хыçĕнче тăрса унăн пуçĕ урлă тулалла пăхакан ватă Пауль ку сăмаха пĕтĕмĕшпе вуласа пачĕ.

— Горький... Питĕ пысăк хула ку, Яник, пирĕн Таллин* пекех. Ĕлĕк ăна Нижний Новгород тетчĕç.

— Горький вăл — писатель вĕт? — аслашшĕ еннелле çаврăнса ыйтрĕ Ян.

— Çапла, писатель пулнă. Питĕ чаплă писатель, — терĕ старик ăна пуçĕнчен ачашласа илсе.

— Эпĕ унăн калавĕсене вуласа курнă... Итали ачисем çинчен.

— Чирлĕ пирки Горький Италире чылай пурăннă. Анчах хăй вăл вырăс пулнă, чăн-чăн вырăс. Шăпах çак хулара çуралса ÿснĕ, темĕн тĕрлĕ хурлăх курнă, тăлăха юлнă пирки пĕчĕклех хăй ĕçлесе тăраннă. Çакăн пек пăрахут çинче те ĕçленĕ.

---

* Таллин — Эстонин тĕп хули.

— Мĕн ĕçлеме пултарнă-ха вăл кунта, пĕчĕкскер?

— Повара апатсем пĕçерме пулăшнă, савăт-сапа çунă. Унтан, ӳссессĕн, грузчик та, тем те пулнă. Кайран вара Атăл çинчен кĕнекесем нумай çырнă...

Пăрахут Атăл варрине çаврăнса тухрĕ те хăвăртран хăвăрт кая пуçларĕ. Ян амăшĕ чирлĕ хĕр ачипе юнашар ларса вăл йывăррăн сывланине итлерĕ. Хушшăн-хушшăн хăй те хурлăхлăн, ассăн сывла-сывла илчĕ. Аслашшĕ карçинккине уçса сĕтел çине çимеллисем кăларма пуçларĕ — хытса кайнă çăкăр, пуçланă консерв банки, пĕр татăк типĕтнĕ аш. Карçинкка тĕпĕнчи пĕчĕк хутаçра темиçе татăк сахăр тупăнчĕ. Ку çимĕçсене пурне те вĕсем виçĕ кун каялла пĕр пысăк станцире, ятарласа эвакуированнăйсем валли уçнă лавккара, ик сехет ытла черет тăрса илнĕччĕ. Нихăшĕ те нимĕн те чĕнмерĕç, мĕншĕн тесен пĕр-пĕринпе мĕн калаçмаллине вĕсем тахçанах калаçса çитернĕ ĕнтĕ, аса илмеллине аса илнĕ, хуйхăрмаллине хуйхăрнă. Ыранхи, малашнехи çинчен вĕсем калаçма пултарайман, мĕншĕн тесен ыран хăйсем ăçта, мĕнле вырăнта пулассине те пĕлмен. Вĕсен пĕтĕм ĕмĕчĕ те çак кăна пулнă: часрах ăçта та пулин çитесчĕ те кăштах та пулин лăпланса пурăнасчĕ...

Ян çаплах чӳрече кантăкĕ витĕр пăхса пычĕ. Çыран хĕрринчи вăрăм баржăсем, вĕсем çумĕнчи пысăках мар буксир-пăрахутсем, катерсемпе ахаль кимĕсем, сăртри темиçе хутлă çуртсем, вăрман пек курăнакан парксемпе садсем пăрахут малалла кайса пынă май каялла шунăн туйăнчĕç.

Кĕрхи кун кĕске те тĕксĕм, çавăнпа та часах тĕттĕмлене пуçларĕ, инçетри çуртсем те, çӳллĕ çыран та хурарах кăвак чаршавпа витĕннĕ пек пулса пычĕç, юлашкинчен çав чаршав хуралсах ларчĕ те — тек нимĕн те курăнмарĕ. Машина уйрăмĕнчи двигательсем пĕрмай ĕçлерĕç — кĕр-кĕр-кĕр, кĕр-кĕр-кĕр, пăрахут стенисем хуллен чĕтренчĕç, ытла таччăнах хупăнман чӳрече тăкăртата-тăкăртата илчĕ.

«Парижская коммуна» аналалла васкарĕ...

## Аса илме те хăрушă

Ăçтарах илсе çитерĕ-ши ку пăрахут Янсен кил-йышне?

Аслашшĕпе амăшĕ ĕнерех, хăйсем Горький хулине çитсен пĕр-ик сехетренех, каларĕç — вĕсене Чăваш республикине ăсатаççĕ терĕç. Анчах инçе-ши вăл, сывăх-ши? Хулара пурăнмалла пулать-ши вĕсен, ялта-ши? Çыннисем мĕнлерех-ши унта? Чăвашсем çинчен Ян нимĕнех те пĕлмест. Чăн та, ку çуркунне мар, леш çуркунне, 1940 çулта пулать ĕнтĕ вăл, Янсем ялта пурăннă чух, Сааремаа утравĕ çине вырăс çарĕ-

сем пырсан пĕр хушă вĕсем патĕнче яштака пӳллĕ, çаврака питлĕ, пысăк хура куçлă çамрăк совет офицерĕ хваттерте пурăннăччĕ. Хăйне çав офицер чăваш тетчĕ, эпир Атăл çинче питĕ хитре çĕршывра пурăнатпăр тесе калатчĕ.

Çынни вара çав тери лайăххскерччĕ вăл! Ирсерен, вырăн çинчен тăрса крыльца çине сивĕ шывпа çăвăнма тухсанах, темле ăнланмалла мар юрăсем юрлатчĕ. Яна вăл вырăсла сăмахсем вĕрентетчĕ, хăй эстонла сăмахсене вĕренме тăрăшатчĕ. Уйрăм тетрадь те тунăччĕ вăл эстонла сăмахсене çырса пыма. Кĕнекесем питĕ нумай вулатчĕ... Каç-каç вăл Янсен аслашшĕпе вăрахчен калаçса ларатчĕ, мĕншĕн тесен аслашшĕ вырăсла лайăх пĕлет, ĕлĕк вăл Российăра, Петроград хулинче, караппсем туса пурăннă... Янсен ашшĕ, Ильмар Киккас, ун чухне килте çукчĕ, тĕрмере ларатчĕ. Вăл малтан хуторти шкулта учительре ĕçлетчĕ, анчах пĕррехинче, шартлама сивĕре, сĕм çĕрле, вĕсем патне темиçе кайцелийтовец* пычĕç те пĕтĕм кил-çурта ухтарса, пур япаласене те кутăн-пуçăн çавăрттарса пĕтерчĕç, унтан ашшĕне пăшалсемпе тĕллесех илсе тухса кайрĕç. Ашшĕ вара çулла тин, вулăс правленийĕ çине те, шкул умне те хĕрлĕ ялавсем кăларса çаксан темиçе кунтан, таврăнчĕ**.

Ой, мĕн тери пысăк савăнăç пулчĕ ку!..

Ян ашшĕ тĕрмерен таврăннăшăн вĕсен хăйсен кил-йышĕ кăна мар, вĕсем патĕнче пурăннă çав совет офицерĕ те питĕ хĕпĕртерĕ. Пĕр-ик кунтан вăл Янсен пĕтĕм кил-йышне пахчана илсе тухса хăйĕн фотоаппаратĕпе темиçе хут ӳкерсе илчĕ, унтан хăй те Янсен çемйипе пĕрле ларса фотоаппарат тӳми çине кӳршĕ хĕрне Линда Сальмене пустарса тепĕр ӳкерчĕк тутарчĕ.

— Асăнмалăх, — терĕ вăл ун чух.

Кĕр енне, таврари вăрмансене ытармалла мар ылтăн тĕс çапма пуçланă вăхăтра, çак офицер — «Федя пичче» — вĕсем патĕнчен тухса кайрĕ.

— Мана Мускава Çар академине вĕренме яраççĕ, — тесе пĕлтерчĕ вăл Киккассене каçхине пурте пĕрле чей ĕçсе ларнă чух.

— Тек килместĕн-и ĕнтĕ пирĕн пата? — ыйтрĕ пĕчĕк Ян унăн куçĕсенчен кăмăллăн, кăшт хĕрхенерех пăхса.

— Пĕлместĕп. Пилĕк çул вĕренмелле... Унтан вара ăçта кайма хушаççĕ — çавăнта каяс пулать. Çар çынни хăйшĕн хăй хуçа

---

* Кайцелийт — буржуалла Эстонире пулнă фашистла организаци. Кайцелийтсем — çав организаци членĕсем, фашистсем.

** 1940 çулта, июнь уйăхĕнче, Эстонири ĕç çыннисем буржуалла правительствăна сирпĕтсе Совет влаçĕ туса хунă.

мар вĕт вăл... Анчах малашне эсир хăвăр та пирĕн еннелле пырса çÿреме пултаратăр ĕнтĕ, халĕ эпир пĕр çĕршыв — Совет Союзĕн çыннисем. Пырăр-ха пĕрре Атăл курма! Питĕ лайăх кĕтсе илнĕ пулăттăм сире!

— Кам пĕлет, тен, пырăпăр та пурăна киле, — терĕ Ян ашшĕ. — Çулла, отпуск вăхăтĕнче, кил-йышĕпех пуçтарăнăпăр та Таллин урлă Ленинграда çитĕпĕр, унтан — Мускава, Мускавран канал тăрăх Атăл çине...

Яна ку шухăш питĕ килĕшнĕччĕ. Вун икĕ çула çитсе вăл ниçта та кайса курманччĕ-ха, Сааремаа утравĕ çинчен те тухса курман, Курессаарере* те пĕрре кăна пулнă. Мĕн тери лайăх пулĕччĕ пысăк хуласене, чăн-чăн Российăна кайса курсассăн! Унтан киле таврăнсан вара Ян хăйĕн тантăшĕсене хăй ăçтаăçта пулни, мĕн-мĕн курни çинчен каласа парса тĕлĕнтерĕччĕ...

Анчах ун пек курса çÿресси пулмарĕ çав, вăл ĕмĕтре кăна юлчĕ... «Федя пичче» тухса кайнă хыççăн часах Янсен ашшĕне Курессаарене ĕçлеме илсе кайрĕç — ăна çĕнĕ совет йĕркипе уес Совечĕн председателĕ пулма суйларĕç, ун хыççăн вара Янсем пĕтĕм кил-йышĕпех хулана пурăнма куçрĕç. Ян хĕл каçа пиллĕкмĕш класра вĕренчĕ, унăн йăмăкĕ Юули пĕрремĕш класа çÿрерĕ, пĕчĕк Эльгăна ача садне пачĕç, мĕншĕн тесен амăшĕ те ĕçлерĕ, ăна çĕвĕ мастерскойĕнче асли тунăччĕ.

Хĕл питĕ лайăх иртрĕ. Ахаль шкулта вĕреннисĕр пуçне Ян хĕлĕпех музыка шкулне çÿрерĕ, сĕрме купăс калама вĕренчĕ. Сĕрме купăса вăл питĕ юратать, ялта пурăннă чухнех музыка учителĕн килне çÿресе кăштах вĕренме пуçланăччĕ, анчах Янсен ашшĕне тытса хупнă чух кайцелийтсем ăна та тытса кайрĕç те — вĕренесси пĕтрĕ. Хулара вара вăл чăн-чăн музыка ăстисем патĕнче пĕтĕм чунтан тăрăшса вĕренчĕ.

— Маттур сирĕн ывăлăр, унран лайăх музыкантах пулма пултарать! — тетчĕç вĕрентекенсем Янăн ашшĕпе амăшне.

Анчах çăва тухсан Янсен кил-йышĕ пĕр уйăхлăха каллех яла кукамăшĕ патне кайса пурăнма хатĕрленнĕ чух сасартăк вăрçă пуçланчĕ те пĕтĕмпех пăтранса кайрĕ.

Ун çинчен аса илме те хăрушă...

Халĕ те-ха хăлхара бомбăсем çÿлтен тискеррĕн шăхăрса ÿкни, шатăртатса, кĕрĕслетсе çурăлни илтĕнсе тăрать, çуртсем ишĕле-ишĕле анни, вĕсене вут-çулăм хыпса илни, ăнран тухса кайнă çынсем ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр чупкалани,

---

* Сааремаа утравĕ çинчи пĕртен-пĕр пысăкрах хула. Халĕ вăл хула Кингисепп ятлă. В. Э. Кингисепп Октябрьти аслă революци хыççăн Эстонире Совет влаçĕ тăвасшăн кĕрешнĕ паллă коммунист пулнă.

урам варринче, юн кӳлленчӗкӗсем ăшӗнче, çын виллисем выртни куç умӗнчех. Вӗсене нихçан та, виличчен те манас çук пулӗ. Ăçтан манатăн?..

Амăшӗ каланă тăрăх, вӗсен ашшӗ çав кун ирхине ирех, хула урамӗсенче пирвайхи бомбăсем çурăлсанах, килтен чупса тухнă, Янпа унăн йăмăкӗсем ун чухне чи ырă ыйхăпа çывăрнă-ха, унтан вара пӗрре те киле пырайман, телефонпа кăна калаçса илнӗ.

— Халех, çак самантрах тухса кайма хатӗр пулăр, — тенӗ имӗш вăл. — Чи кирлӗ япаласем çеç илӗр, ик-виç чăматан, унтан ытла мар. Çур сехетрен сире илме машина пырать...

Амăшӗпе аслашшӗ çав машинăпа пӗрле ашшӗ хăй те киле пырать пулӗ тесе шутланă, анчах ашшӗ темшӗн пыман, машина çинче темле палламан çынсем ларнă — ваттисем, хӗрарăмсем, ачасем. Пурте питӗ васканă, Ян амăшӗ вӗсене: «Тăхтăр-ха пăртак, халех ман упăшка килет!» — тесе тем пекех ӳкӗтлесен те пӗр минут та кӗтсе тăрасшăн пулман, мӗншӗн тесен пӗлӗтре тăтăшах фашистсен самолечӗсем улани илтӗннӗ. Вӗсем хуть те хăш самантра та каллех бомбăсем тăкма пултарнă. Вара Янсен ашшӗсӗрех тухса кайма тивнӗ...

Тӗрӗссипе, вӗсем ашшӗне кӗтнӗ пулсан та усси пулас çукмӗн: хулари коммунистсемпе рабочисенчен çав вăхăтра васкасах истребительнăй батальон йӗркеленӗ, Янсен ашшӗне батальон командирӗ тунă, вара вăл пӗр тăхтаса тăмасăрах хăйӗн боецӗсене нимӗç фашисчӗсем самолетсем çинчен парашютсемпе сиктернӗ десанта* пӗтерме илсе тухса кайнă.

...Грузовик çунакан хуларан вăркăнса тухса Муху утравӗ еннелле çул тытрӗ. Анчах кунта хăвăрт каясси пулмарӗ — сарлака шоссе лăках тулса ларнă иккен, тӗрлӗ йышши машинăсем пӗр-пӗрне таптас пекех пыраççӗ, пӗр-пӗринчен иртесшӗн кăшкăртаççӗ, анчах иртме май çук. Машинăсемпе хутăш килти ăпăр-тапăр тиенӗ урапасем пыраççӗ, хăшӗсен лашисем, машинăсенчен хăраса, аяккалла сикеççӗ. Ян куçӗ умӗнчех темиçе урапа тӳнсе кайрӗ, вӗсем çинче ларса пыракан ачаллă хӗрарăмсем япалисемпе пӗрлех канава тăкăнчӗç; çул хӗррипе ик кустăрмаллă тачкăсем тӗкнӗ çынсем, велосипедистсем, уйрăм çуран çынсем вӗçӗ-хӗррисӗр пыраççӗ. Пурте хӗвел тухăçнелле, пурте «Пысăк Çӗр» еннелле васкаççӗ... Хăйсем пӗрмай çӳлелле пăха-пăха илеççӗ: тăшман самолечӗсем хăваламаççӗ-ши, каллех вилӗм илсе килмеççӗ-ши?..

Чи хăрушши Муху утравӗ патнелле çитнӗ чух пулчӗ. Сааремаапа Муху утравӗсене пӗр виçӗ километр тăршшӗ тăсăлакан

---

* Десант — тăшман ют çӗр çине карапсемпе е самолетсемпе илсе пырса яракан çар.

дамба* пĕрлештерет. Сарлака мар вăл кĕпер, виçĕ машина юнашар тăратсанах тулса ларать. Ун çинчен ниçталла та пăрăнса кайма çук — ик енче те симĕсрех кăвак тинĕс хумханса выртать...

Янсем ларса пыракан грузовик ытти нумай машинăсемпе, çуран васкакан çынсемпе пĕрле дамба тăрăх çурри ытла кайсан сасартăк унта та кунта хыттăн, пăлханса, хăраса кăшкăра пуçларĕç:

— Сывлăш! Сывлăш!

— Самолетсем килеççĕ!..

Пурте пĕлĕтелле, унталла та кунталла пăхма тытăнчĕç. Шоферсем машинăсене хăвăртрах яма, урапасем çинче ларакансем лашисене хытăрах чуптарма пикенчĕç, анчах усси пулмарĕ — малти çул пĕтĕм анлăшĕпех картланса ларнă пулсан ăçта каятăн-ха? Çав вăхăтра Муху утравĕ енчен дамба патнелле виçĕ самолет питĕ хăвăрт та тӳп-тӳрĕ вĕçсе пычĕ. Виççĕшĕн те çунаттисем çинче — хура хĕрессем. Акă кĕçех ĕнтĕ, кĕçех вĕсем çитеççĕ те вĕлерме, çĕмĕрме, çунтарма тытăнаççĕ, никама та чĕррĕн хăвармаççĕ! Вĕсенчен ниçта тарма та, ниçта пытанма та, ниепле çăлăнма та çук, пурин те çакăнтах, дамба çинчех вилсе выртас пулать е тинĕсе сиксе путма тивет...

Анчах пăтравлă колонна çаплах малалла шурĕ-ха, чарăнмарĕ, мĕн май килнĕ таран васкарĕ. Кашниех хăй ăнсăртран та пулин çăлăнса юласса шанчĕ пулас çав. Тен вĕсене лекмĕ? Тен тата дамба тăрăх çар чаçĕсем мар, ахаль çынсем, мирлĕ халăх пынине курса самолетсем вĕсене тивмесĕрех иртсе кайĕç?

Анчах çакăн пек шухăшлакансем питĕ хытă йăнăшнă...

Самолетсем дамба вĕçне çитсенех вĕсенчен пĕри, малтарахра пыраканни, хăлхана çурса ямалла шăхăрса аялалла чăмрĕ. Хăранипе ним пĕлми пулса, чул пек хытса ларнă Ян тахăш самантра çав самолетăн хура хĕреслĕ хăрах çунатти айĕнчен пĕр харăсах пилĕк-ултă тăрăхларах хура япала уйрăлса аялалла вăркăннине асăрхарĕ. Çавăнтах вăл куçĕсене хупса, пĕтĕм шăнăрĕсене хытарса аслашшĕн хулĕнчен çатăрах тытрĕ, ун çумне пăчăртанса ларчĕ.

— Ак халех, халех... — çĕçĕпе тирнĕ пек шухăш вĕçсе илчĕ унăн пуçĕнче. Бомбăсем тӳсмелле мар хăрушла шăхăрса, пуç çийĕпех иртсе кайса, таçта инçетре те мар кĕрĕслетсе, шартлатса çурăлчĕç...

Янсен машини хăйне такам çĕкленĕ пек çӳлелле сиксе илчĕ...

Унтан каллех бомбăсем шăхăрчĕç, каллех çĕре кисретсе çурăлчĕç. Грузовик тӳнес пекех чалăшса кайрĕ, анчах хăй ча-

---

* Дамба — чултан, çĕртен купаласа тунă пĕве пек кĕпер.

рӑнмарӗ, малаллах чупрӗ. Бомбӑсем самаях аякра ӳкрӗҫ пулмалла... Хӑйсем дамба ҫинчен мӗнле хӑтӑлса тухнине, унтан ӑҫта пырса чарӑннине, мӗн тунине Ян пачах та астумасть. Кун темле иртсе кайнӑ, каҫ тахҫан пулнӑ... Сӗм тӗттӗмре авӑнакан хӑмасем тӑрӑх утса, ҫӳллӗ те сарлака баржа ҫине такамсем хыҫҫӑн шуҫа-шуҫа утса хӑпарнине, унтан ҫав баржӑна пӗр пӗчӗкрех катер ҫаклатса вӑраххӑн туртса кайнине ҫеҫ кӑшт астӑвать вӑл. Хӗвел тухӑҫ енчен шӑм-шака витӗр тивекен ҫил вӗрчӗ, ҫумӑр ҫурӗ, пӗртте ҫуллахи пек мар сивӗ пулчӗ...

Ир енне, тул ҫутӑласпа, аран-аран лӑкӑртатакан катер вӗсен баржине Виртсу текен порта сӗтӗрсе ҫитерчӗ. Фашист самолечӗсем кунта та пулма ӗлкӗрнӗ иккен — пысӑках мар темиҫе пӑрахута путарнӑ, портри вӑрӑм ҫуртсене ҫунтарса янӑ. Ӑҫталла ан пӑх — пур ҫӗрте те вӑйлӑ пушар пулни палӑрать, ӗнӗк, хӑрӑм шӑрши кӗрет...

Утравсем ҫинчен тарса тухнӑ ҫынсене портран аяккараха, вӑрмана, илсе кайрӗҫ. Чылайччен вӗсем кунта малашне мӗн тумаллине, ӑҫталла каймаллине ним пӗлмесӗр кӗтсе тӑчӗҫ. Пӗрик сехет иртсен тин йывӑҫсем айӗнчен тахӑшӗ хулӑн сасӑпа хыттӑн кӑшкӑрса ӑнлантарма тытӑнчӗ:

— Нимӗҫсем ӗнер порт ҫывӑхӗнчи чукун ҫула та чылай ҫӗрте ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Ҫавӑнпа та сирӗн тепӗр станцине ҫиткччен ҫуранах каймалла пулать, урӑх нимӗнле май та ҫук... Каясса чукун ҫул тӑрӑх мар, вӑрманпа сывлӑшран курӑнмалла мар кайма тӑрӑшас пулать...

— Миҫе километр унта ҫитме? — ыйтрӗҫ темиҫен пӗр харӑс.

— Инҫех мар, пӗр вунӑ километр. Кӑнтӑрлапа ҫитме пултаратӑр.

— Унтан вара мӗнле?

— Унтан пуйӑссем ҫӳреҫҫӗ. Таллина каятӑр. Приказ ҫавӑн пек. Халӗ ӗнтӗ тытӑнса ан тӑрӑр, утӑр. Сире ятарласа ертсе каякансем пулмаҫҫӗ...

Вӑрманти кукӑр-макӑр, шӑтӑк-путӑклӑ, тӗллӗн-тӗллӗн шурлӑхлӑ вырӑнсемпе иртекен ҫулсем тӑрӑх утма питӗ кансӗр пулнипе, ҫитменнине кашниннех чылай япаласем, ачасем пулнӑ пирки ҫынсем ҫав вунӑ километра хӑвӑрт утса тухаймарӗҫ, ҫывӑхри станцие каҫ пуласпа тин ҫитрӗҫ. Ку, тен, лайӑх та пулчӗ-и, мӗншӗн тесен кӑнтӑрла фашист самолечӗсем ку таврара пӗрмаях ҫӑхансем пек явӑнса ҫӳреҫҫӗ.

Ывӑнса ҫитнӗ, халран кайнӑ ҫынсене ансӑр чукун ҫул тӑрӑх ҫӳрекен пуйӑсӑн ахаль чух вутӑ, чул, кирпӗч турттарнӑ уҫӑ платформисем ҫине лартса илсе кайрӗҫ. Ҫав тери кансӗр, нӳрӗ, сивӗ пулчӗ пулин те Ян хӑйӗн аслашшӗ ҫумне тайӑнса ҫӗрӗпех ҫывӑрчӗ, анчах тӗлӗкре вӑл пӗрмай ӗнерхи хӑрушлӑхсене курчӗ пулмалла та, час-часах карт та карт сиксе илчӗ. Юули

те, амăшĕ çумне йăпшăннăскер, çавăн пекех тискер тĕлĕксемпе аташрĕ пулмалла, нумай хутчен шариех кăшкăрса вăранса кайрĕ.

Пĕчĕк кăна пăравус çĕр каçах мĕн вăй çитнĕ таран малалла ыткăнчĕ, пуйăса Лахула, Рапла, Кохила станцисем урлă ирттерсе, ирхине пĕр вунă сехет тĕлĕнче Таллина илсе çитерчĕ. Кунта нумаях кĕтсе тăмалла пулмарĕ, вĕсене часах пысăк пуйăс çине лартрĕç те васкасах Российăна ăсатрĕç...

Кун хыççăн хăйсем ăçта-ăçта пулнисене Ян каллех уçăмлăн астăваймасть. Пуйăс питĕ хытă вĕçтерсе пычĕ... Кайсан-кайсан тахăш тĕлте çĕрле вĕсене çак пуйăс çинчен антарса урăххи çине лартрĕç. Ку та питĕ хăвăрт ыткăнчĕ. Чӳречерен пĕрмай вăрман курăнса пычĕ, вĕçĕмсĕр вăрман. Унтан çав вăрман хушшинчи пĕр пĕчĕк станцире вĕсене каллех антарчĕç те лавсем çине лартса илсе кайрĕç. Каç пулнă чух вĕсем темле пысăк яла пырса кĕчĕç.

Ян халран кая пуçларĕ, унăн çав тери пуçĕ ыратрĕ... Малтанхи каç вĕсем ялти икĕ хутлă шкулта çывăрчĕç, ирхине вара темле ватăрах вырăс хĕрарăмĕ, кивĕ сăран пиншак, арçын атти тăхăннăскер, вĕсене хăй патне илсе кайрĕ. Пысăк пӳртре вăл пĕр вун ултă çулсенчи хĕрĕпе кăна пурăнать-мĕн, унăн икĕ ывăлĕ — фронтра.

Лайăхах пурăнчĕç Янсем ун патĕнче... Темĕн те пĕр курса пĕтнĕ хыççăн кăштах лăпланчĕç, ашшĕ çинчен нимĕн те пĕлменни çеç хытă пăшăрхантарчĕ.

— Ăçта-ши вăл халь? Мĕн тăвать-ши çак самантра?

Вĕсем ашшĕ пирки калаçма пуçласан кил хуçи хĕрарăмĕ — тĕлĕнмелле ырă кăмăллă Аграфена Петровна — яланах лăплантаратчĕ:

— Ан кулянăр-ха ытлашши, сывах пулĕ-ха! Пурте пĕтеççĕ-им вара? — тетчĕ. Унтан хăйĕн ывăлĕсен стена çинче çакăнса тăракан сăнĕсем çине кăтартатчĕ: — Манăн иккĕшĕ те килтен кайнăранпа пĕрер çыру кăна ячĕç те, çапах та шанчăка çухатмастăп-ха, сывах пулĕ тетĕп...

— Васкаса тухнипе эпĕ ашшĕн сăн ӳкерчĕкне те пулин илеймен вĕт-ха! — ӳпкелешсе илетчĕ Ян амăшĕ. — Хама хам çавăншăн ниепле те каçарма пултараймастăп... Ачасем пăхса пурăнатчĕç хуть...

— Уншăн та ан хуйхăрăр, — тетчĕ Аграфена Петровна. — Пурăна киле ӳкерчĕкне кăна мар, хăйне те курăр-ха, вăл авантарах та, савăнмалларах та пулĕ...

— Ой, ылтăн хĕрарăм эсĕ, Аграфена инке! — мухтаса илетчĕ вара ăна Ян амăшĕ.

Вĕсем кил хуçине кăна мар, ытти ял çыннисене те часах хăнăха пуçларĕç. Амăшĕ темиçе кунтанах колхозра ĕçлеме

тытăнчĕ, тырă та вырчĕ, авăн та çапрĕ; аслашшĕ валли те ĕç тупăнчĕ: чăн малтан вăл, колхозра молотилка пăсăлсан, ăна хăвăрт кăна тӳрлетсе ĕçе ячĕ, унтан колхозăн юхан шыв çинчи пысăках мар электростанцине çӳреме тытăнчĕ, унти çамрăк механиксене пулăшрĕ. Ял çыннисем вĕсене çакăншăн питĕ хисеплетчĕç. Янпа Юули ялти ачасемпе туслашса вырăсла вĕренме пикенчĕç, пилĕк çулхи пĕчĕк Эльга Аграфена Петровнăран уйрăлма та пĕлмерĕ, вăл та пăт-пат вырăсла ăнлана пуçларĕ.

Çапла пĕр хушă пурнăç йĕркеллех шурĕ темелле. Анчах фронтран килекен хыпарсем хăрушлансах пычĕç — тăшман çаплах пирĕн çĕр çине шалтан шала кĕрсе пырать иккен-ха. Пĕррехинче фашистсен икĕ самолечĕ Янсем пурăнакан ял çине те пырса тухрĕç... Чăн та, вĕсем хальхинче бомбăсем пăрахмарĕç, тупă-пулеметсемпе те пемерĕç, ун вырăнне çĕр çине темĕн чухлĕ тĕрлĕ тĕслĕ листовка сапса хăварчĕç...

«Германин никам çĕнейми çарĕ Хĕрлĕ Çара çапса аркатрĕ ĕнтĕ: кĕçех вăл Мускава, Ленинграда илет. Паян-ыранах сирĕн патăрта пулатпăр. Ниçта та тухса ан кайăр, ан тарăр, фюрер* çарĕ сире валли çăлăнăç илсе пырать, эсир тинех чăн-чăн телейлĕ пурнăçпа пурăнакан пулатăр!» — тесе çырнăччĕ вĕсем çине.

Ян çав листовкăсенчен пĕр-иккĕшне урамран илсе кĕрсе аслашшĕне парсан ватă Пауль тарăхнипе малтан кăвакарса, унтан хĕрелсе, тарласа кайрĕ.

— Урнă кашкăрсем! Кама ĕнентерме шутлаççĕ-ши çак суя сăмахсемпе? Ухмах тесе шутлаççĕ-ши вĕсем пире? — терĕ те вăл çилĕпе листовкăсене чăр та чар çуркаласа ывăтрĕ.

Çакăн хыççăн тепĕр ик кунтан чăнах та инçетрен тупăсем йывăррăн ухлатни илтĕне пуçларĕ, каççерен таçти вăрмансем хыçĕнчи пĕлĕте пысăк çутăсем ӳкрĕç — çав тери вăйлă пушар çутисем. Фашистсем совет ялĕсене çунтарнă ĕнтĕ унта...

Пĕр ирхине вырăн çинче выртнă çĕртех Ян хăйĕн амăшĕпе аслашшĕ хуллен калаçнине илтрĕ.

— Нимĕçсем кунтан вăтăр-хĕрĕх километртра кăна. Районтан приказ килнĕ — пурин те тухса каймалла. Пире, аякран килнисене, чăн малтан ăсатаççĕ. Е паян, е ыран...

Вара каллех хускалса тухрĕ Янсен кил-йышĕ. Малтан пĕр талăка яхăн лавпа кайрĕç вĕсем, унтан каллех пуйăспа. Хăшхăш станцисенче вĕсен пуйăсĕ çуршар кун ытла та кĕтсе тăчĕ, мĕншĕн тесен çул пушă пулмарĕ — фронт еннелле эшелон хыççăн эшелон иртрĕ. Вĕсене, паллах, пĕр самант та чарса тăма юраман.

ч-37611

---

* Фашистсем хăйсен Гитлерне «фюрер» — «чи аслă пуçлăх» — тесе каланă.

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Юлашкинчен вĕсем Горький хулине çитсе тухрĕç.

...Халĕ акă Янсен кил-йышĕ, çул çинче темĕн тĕрлĕ тертленсе пĕтнĕ хыççăн, аран-аран пăрахут çине вырнаçрĕ те Атăл тăрăх пырать. Каютăра ăшă, çутă, килти пекех туйăнать. Таччăнах хупман каюта чӳречи хушшăн-хушшăн чĕтренсе тăкăртатни тата сайра хутра пăрахут кĕскен-кĕскен кăшкăртса илни çеç вĕсем килте мар, çул çинче пулнине, пăрахутпа пынине аса илтерет.

«Чăваш республикине илсе каяççĕ... — шухăшларĕ Ян паçăр аслашшĕпе амăшĕ каланине аса илсе. — Федя пиччесен çĕршывне, эппин... Кам пĕлет, тен, ăнсăртран эпир ăна тĕл пулăпăр? Ой, лайăх пулĕччĕ!..»

Анчах самантранах урăхла шухăшларĕ: «Çук çав, ун пек пулма пултараймасть. Халĕ вăрçă вĕт... Вăрçă вăхăтĕнче офицер епле килте пултăр-ха? Фронтра ĕнтĕ вăл, фашистсемпе çапăçать. Тен, хальччен аманнă та-и...»

Вăл вилме пултарасси çинчен Янăн шухăшлас килмерĕ.

## Шупашкартан инçе те мар

Çӳлти сак çинче выртса пырса тахăш вăхăтра çывăрса кайнăскер, Ян каютăра такамсем хуллен мăкăртатса калаçнине илтнипе вăранса кайрĕ. Куçне уççан вăл чăн малтан алăк патĕнче тăракан паçăрхи матроса, унтан таса юр пек шап-шурă калпакпа шурă халат тăхăннă хĕрарăма курчĕ. Вăл аллине чирлĕ çынсене итлемелли хура трубка тытнă та калаçнă май ăна çаваркаласа тăрать. Амăшĕ пĕчĕк Эльгăна вырттарнă вырăн çинче ларать, хăрах аллине унăн çурăмĕ хыçнелле янă, аслашшĕ чӳрече патнелле тӳртĕн çаврăнса тăнă. Пурте — аслашшĕпе амăшĕ те, матрос та — çав хĕрарăм çине пăхаççĕ, вăл мĕн каласса кĕтеççĕ пулас.

«Тухтăр килнĕ... Эльга пирки ĕнтĕ...» — тавçăрса илчĕ Ян.

Шурă халатлă хĕрарăм Ян аслашшĕпе калаçрĕ. Унтан вăл пуçĕпе сулса илсе каютăран васкасах тухса кайрĕ. Ун хыççĕнчен алăк хупăнсанах амăшĕ хăранипе чарăлса кайнă, кăштах шывланнипе йăлтăртататакан куçĕсемпе аслашшĕ çине хурлăхлăн пăхса, хăйсен чĕлхипе питĕ васкаса ыйтрĕ:

— Ну, мĕн терĕ вăл? Мĕн каларĕ?.. Хăрушă тет-и?..

— Шăннă тет. Ӳпки шыçма пуçланă. Çавăн пирки температура питĕ хăпарса кайнă, — терĕ те аслашшĕ çĕрелле пăхса ассăн сывласа ячĕ.

— Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ халь? Пулăшма пултарать-и вăл

мӗнпе те пулин? — Амӑшӗ кӗҫ-вӗҫ макӑрса ярас пек калаҫрӗ, унӑн сасси чӗтресе тӑчӗ.

— Эмел илме кайрӗ. Халех килет. Анчах ачине епле пулсан та хӑвӑртрах больницӑна хумалла тет.

— Больница... ӑҫта-ха вӑл, больница? — терӗ те амӑшӗ ним тума пӗлменнипе тутине ҫыртса лартрӗ.

— Ан пӑшӑрханӑр ытлашши, ыран ҫитетпӗр, — терӗ ку таранччен алӑк патӗнче ним чӗнмесӗр тӑнӑ матрос. — Шупашкарта больница пристаньрен ик ҫӗр метрта кӑна...

— Унччен тем пулать-ҫке, — каллех ассӑн сывласа илчӗ ватӑ Пауль. — Ача вӗт, мӑн ҫын мар...

— Нимех те пулмӗ-и-ха тен, — лӑплантарчӗ матрос.

Ҫав вӑхӑтра тухтӑр каялла таврӑнчӗ. Вӑл пӗр аллипе ҫиелтен шурӑ тутӑрпа витсе янӑ темле пӗчӗк япала тытнӑ.

— Хӗр ачан кӗпине ҫӗклӗр, — терӗ те вӑл ватӑ Пауле Эльга ҫумне ларчӗ. — Укол тӑватпӑр, чӗрине ҫӑмӑлтарах пултӑр...

Самантранах Эльга шари! кӑшкӑрса ячӗ — укол туни питӗ хытӑ ыраттарчӗ пулмалла. Амӑшӗ ӑна ачашласа йӑпатма тытӑнчӗ, унтан, Эльга макӑрма чарӑнсан, тухтӑрпа иккӗшӗ ӑна илӗрткелесе темле порошок ӗҫтерчӗҫ.

— Халӗ унӑн температури чакма тивӗҫ, — терӗ тухтӑр ура ҫине тӑрса. — Тепӗр виҫӗ сехетрен порошокне татах парӑпӑр.

— Питӗ хӑрамалла-и, тухтӑр? — хуллен ыйтрӗ аслашшӗ.

— Халлӗхе хӑрушши нимех те ҫук. Анчах чирӗ вӑйланма пултарать. Епле пулсан та вырӑна ҫитсен тӳрех больницӑна илсе каяс пулать.

— Ӑна пӗлӗпӗр-ха, анчах ҫитесси тахҫан...

Кӑшт тӑрсан тухтӑр тухса кайрӗ. Каютӑра шӑп пулчӗ. Ян ҫӳлти сак ҫинчен пуҫне аялалла усрӗ те ҫывӑрса кайнӑ Эльгӑна вӑратас мар тесе хуллен ыйтрӗ:

— Мӗнле тухтӑр пулчӗ ку? Ӑҫтан тупрӑр эсир ӑна?

— Пӑрахут ҫинчи тухтӑр, — терӗ аслашшӗ. — Эльга аташа пуҫларӗ те, хӑрасах кайрӑмӑр. Шӑп ҫав вӑхӑтра хамӑрӑн каютӑри матрос килсе кӗчӗ... Эльга йывӑрланни ҫинчен каласанах тухтӑр патне тухса чупрӗ...

— Питӗ лайӑх ҫынсем, — терӗ амӑшӗ ҫӑмӑлтараххӑн сывласа илсе.

— Камсем?

— Матросӗ те, тухтӑрӗ те...

— Вырӑс халӑхӗ ӗмӗрнех лайӑх пулнӑ, — терӗ аслашшӗ кӑшт тӑхтасан выртма хатӗрленсе. — Кам хурлӑха лекнӗ, кама хӑшӗ те пулин кӳрентернӗ — вырӑс ҫынни ӑна яланах пулӑшнӑ, ун хутне кӗнӗ. Анчах хӑй вара нихҫан та никама та кӳрентермен...

— Хӑйне кӳрентерекенсем пулсан тата? — ыйтрӗ Ян.

— Ун пек чух — каҫарман. Хăйне ним сăлтавсăр тĕкĕнекенсене вăл пит хытă таварса пынă. Никама та парăнман. Ютран килсе тапăнакансене пурне те аркатнă, пурне те хăваласа янă. Каялла ҫаврăнса пăхмасăрах тарнă вара лешсем... Ҫак Гитлер ҫарĕпе те ҫавăн пекех пулать акă. Халь вĕсем Россия ҫĕрĕ ҫине урнă пекех сĕкĕнсе кĕреҫҫĕ, анчах кайран пĕри те сыввăн тухса каяймаҫҫĕ ак, курăн. Историпе Наполеон ҫинчен вĕреннĕ-и эсир? — ыйтрĕ вăл мăнукĕнчен.

— Вĕреннĕ, пĕлетĕп, — терĕ Ян.

— Унăн ҫарĕ Российăран мĕнле таврăннине пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп.

— Гитлер шăпи унтан та начартарах пулать.

Ян чĕнмерĕ. Вăл истори учебникĕнче курнă ӳкерчĕке аса илчĕ: шартлама сивĕ, куҫ-пуҫ курăнми ҫил-тăман ҫавăрттарать, кĕрт хывса лартнă ҫул тăрăх француз салтакĕсем пыраҫҫĕ, вĕсем шăнса хытнă, ăшăнас тесе хăйсем ҫине темĕн те пĕр тăхăнса тултарнă, нумайăшĕ хĕрарăм тутăрĕсемпе пĕркеннĕ. Ҫул хĕррипе кутăн ҫавăрса пăрахнă урапасем, тӳнсе кайнă тупăсем, лаша виллисем вырта ҫҫĕ, юр айĕнчен шăнса вилнĕ ҫынсен аллисем курăнаҫҫĕ. Питĕ хăрушă...

Пăрахут вăрăммăн кăшкăртса ячĕ. Мĕне пĕлтерет ку?

Аслашшĕ вырăн ҫинчен тăрса чӳрече каррине уҫса пăрахрĕ.

— Нимĕн те курăнмасть, — терĕ вăл. — Темле пристань пулмалла.

Чăнах та, темиҫе минутран пăрахут чарăнса тăчĕ, чӳрече леш енче ҫын сассисем илтĕнчĕҫ, пăч-пач ҫутăсем курăнчĕҫ.

— Тухса пăхас-ха, — терĕ те вара аслашшĕ пальтине тӳмелесе, карттусне хытăрах пусса лартса каютăран тухрĕ. Вăл вăраххчен таврăнмарĕ, тен, ҫур сехет те иртрĕ пулĕ, унтан каялла пычĕ те аллисене хире-хирĕҫ сăтăркаласа:

— Питĕ сивĕ, шăнтать пулмалла, — терĕ.

Вăл лăпкăн ҫывăракан Юулине стена ҫумнерех сиктерсе унпа юнашар хăяккăн вырнаҫса выртрĕ. Каютăра каллех шăп пулчĕ, пĕчĕк Эльга хăйăлтатса йывăррăн сывлани ҫеҫ илтĕнчĕ. Амăшĕ ҫывăрмарĕ пулмалла, час-часах хускалкаларĕ, Эльгăна ăшăрах витме тăрăшрĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе ассăн та хурлăхлăн сывласа илчĕ.

...Пăрахут Бармино пристанĕнче ирчченех тăчĕ. Каҫхине Атăла ҫăра тĕтре хупласа лартма пуҫланипе вăл кунта аранаран ҫитнĕ иккен. Тул ҫутăлсан та ытла часах тухса каяймарĕ, мĕншĕн тесен тĕтре питĕ вăраххăн сирĕлчĕ. Пĕр вунă сехетсем ҫитеспе тин кăштах ҫил вĕрчĕ те майĕпе хускалса тухма май килчĕ.

Ҫанталăк кĕҫĕр чăнах та сивĕтрĕ. Ҫӳлте, пăрахут тăрринче,

штурман рубкинче* лоцманпа** юнашар тӑракан ҫӳллӗ, сарлака хул пуҫҫиллӗ, пысӑк хура уссиллӗ капитан кантӑк витӗр пит те пӑшӑрханса пӑхса илчӗ. Атӑл тӑрӑх халӗ кӑпӑшка юр муклашкисем мар, самаях пысӑк, ик-виҫ метр сарлакӑш пӑр таткисем шӑваҫҫӗ. Вӗсем пур енче те курӑнаҫҫӗ.

— Начарланать пирӗн пурнӑҫ, — терӗ капитан вичкӗн куҫӗсемпе малалла тӑрӑннӑ лоцман ҫине пӑхмасӑрах. — Температура татах чаксан эпир чӑнах та Атӑл варринчех шӑнса ларатпӑр. Аптрас пулать вара. Мӗнле пассажирсем илсе пынине ху пӗлетӗн... Ӑҫта чикес вӗсене, мӗн тӑвас?

— Горькинчен тухмалла марччӗ...

— Ну, ку вӑл халь тин кирлӗ мар калаҫу. Епле пулсан та ҫитес ҫӗре ҫитме тӑрӑшас пулать.

— Вӑл тӗрӗс.

Шыв ҫинче пӑрсем нумай пулнипе пӑрахута вӑраххӑн, асӑрханса илсе пымалла пулчӗ. Козьмодемьянск патнелле ҫитеспе каллех тӗттӗмленме, Атӑла тӗтре хуплама тытӑнчӗ.

— Кузьмара*** ҫӗр каҫмалла пулать, — терӗ лоцман.

— Юрамасть, — пуҫне пӑркаласа илчӗ капитан. — Малаллах каятпӑр.

— Тӗтре.

— Пулин. Тӗтре витӗрех каяс пулать.

Лоцман капитан ҫине хӑйӗн хул пуҫҫийӗ урлӑ чалӑшшӑн пӑхса илчӗ, анчах хирӗҫ нимӗн те каламарӗ. Тӗрӗссипе, калама та юраман, мӗншӗн тесен капитан калани — приказ, приказа пурнӑҫа кӗртесех пулать.

Козьмодемьянскра пӑрахут пилӗк минут та тытӑнса тӑмарӗ пулӗ, ҫыран хӗрринчи пӗчӗк баржа ҫумне кӑкарӑннӑ-кӑкарӑнманах (чӑн пристане кунтан илсе кайнӑ ӗнтӗ) свисток пачӗ. Унтан иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш хут кӑшкӑртрӗ те — матроссем трапсене каялла туртса илчӗҫ.

— Ӑҫта ҫитӗ-ши ӗнтӗ ку кӗҫӗр? — тесе пӑхса юлчӗҫ кунти ҫынсем сивӗ пирки ҫӳҫенкелесе.

Тепӗр вунӑ-вун пилӗк минутран «Парижская коммуна» каҫхи тӗксӗм кӑвак тӗтре ӑшне кӗрсе кайса куҫран ҫухалчӗ.

Машинӑсем кӗрлерӗҫ, пӑрахутӑн хӑватлӑ винчӗсем сивӗ шыва пӑраласа каялла ывтӑнтарса пычӗҫ. Ҫур сехет, пӗр сехет... Анчах тавралӑх тӗттӗмленнӗҫемӗн тӗттӗмленсе пычӗ, пӗлӗтрен сасартӑк татӑлса аннӑ шултра нӳрӗ юр пӑрахут умӗнче нимӗнпе сирсе ямалла мар хулӑн чаршав пек пулса тӑчӗ. Ни малта, ни кайра, ни айккисенче нимӗн те курӑнмарӗ.

---

* Пӑрахут рульне тытса пыракансем тӑмалли вырӑн.

** Лоцман — пӑрахут рульне тытса пыракан.

*** Атӑл ҫинчи матроссем шӳтлесе Козьмодемьянск хулине ҫапла калаҫҫӗ.

— Тӗп сакайӗнчи пек, — терӗ лоцман.

Пăрахут унччен те питӗ вăраххăн пынăччӗ, анчах халӗ ӗнтӗ ун пек пыма та хăрушă пулчӗ: е çырана пырса тăрăнатăн, е ăшăх çӗре кӗрсе ларатăн.

Капитан машинăсен уйрăмне кӗскен кăна команда пачӗ:

— Стоп!

Машинăсем тăруках ӗçлеме чарăнчӗç, пăрахут малтанхи инерци вăйӗпе çеç малалла шурӗ. Унччен те пулмасть, пăрахут пуçӗнче лебедка* хыттăн кăлтăртатни, чылай хушă йывăр сăнчăр чанкăртатни илтӗнчӗ.

Пăрахут Атăл тӗпне якорь пăрахрӗ.

Тек вăл вырăнтан хускалмарӗ...

Ирхине вăрансан вара «Парижская коммуна» çинчи пӗтӗм халăх тӗлӗнсе кайрӗ: пăрахут Атăл варринче тăрать, унăн машинисем ӗçлемеççӗ, йӗри-тавра пăр, шыв шăнса ларнă, çыранти çӗр çинче те, йывăççем çинче те шап-шурă юр...

Çӗр каçа мӗн пулса тăнине тавçăрса илнӗ çынсем пăлханма, хытăран хытă калаçма, часах шавлама та тытăнчӗç:

— Мӗн тумалла ӗнтӗ халь?..

— Ăçта кайса кӗмелле пирӗн? Выçса та, шăнса та вилетпӗр вӗт капла!

— Ачи-пăчи-мӗнӗпех пӗтетпӗр...

— Хӗле хирӗç мӗн тума илсе тухрӗç-ха пире Горькинчен? Унтах вырнаçтармалла пулман-им ăçта та пулин?

— Капитан патне каяс пулать!

— Ăçта капитан? Мӗн тума шутлать вăл?

Тен, халăх тата та ытларах шавласа каятчӗ пулӗ, анчах çав вăхăтра пăрахут çинчи пур репродукторсенчен те пӗр харăсах хулăн та çирӗп сасă илтӗнчӗ:

— Пассажир граждансем! Итлӗр! Пассажир граждансем, итлӗр: «Парижская коммуна» çинчи радиоузел калаçать... Микрофон умӗнче капитанăн пӗрремӗш помощникӗ...

Пурте шăпах пулчӗç, макăракан ачасене те чарма тăрăшрӗç, куççемпе репродукторсем çине тăрăнчӗç. Мӗн калӗ-ши вăл?

— Граждансем, — илтӗнме пуçларӗ каллех çав сасă, — кӗçӗр, Козьмодемьянскран иртсен, сасартăк юр вăйлă çума тытăннипе Атăл çинче нимӗн те курăнми пулнă пирки пăрахута чарса лартмалла пулчӗ. Çӗрле вара çанталăк сивӗтнипе пирӗн пăрахут тавра пăр шăнса ларнă. Уншăн никам та айăплă мар, çанталăк çеç айăплă. Анчах пассажирсен пăшăрханма кирлӗ мар. Тепрер сехетрен эпир пурне те кимӗсемпе çырана илсе тухатпăр, унтан вара сире машинăсемпе е лавсемпе Шу-

---

* Лебедка — якоре шыва антармалли тата туртса хăпартмалли машина.

пашкара, Чăваш республикин столицине, илсе каяççĕ... Пирĕн çынсем ку ĕçпе çырана пацăрах кайнă ĕнтĕ. Тата тепĕр хут каялатăп — ан пăшăрханăр, лăпланăр, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать...

Репродукторсем шăпланчĕç, халăх каллех пĕр хушă шавласа илчĕ. Пурте пĕр-пĕринпе калаçма тытăнчĕç:

— Хăçан пулать-ха вăл? Мĕн вăхăт кĕтмелле?

— Кун чухлĕ халăха илсе кайма транспорт ăçтан тупĕç вĕсем?

— Шупашкарне миçе километр-ши кунтан?

— Ытла инçех мар теççĕ...

— Эх, хăçан пĕтĕ ку асап! Унăн вĕçĕ-хĕрри пулĕ-ши?..

Янсене кун çинчен ирхине ирех хăйсен матросĕ — каюта хуçи — пĕлтерчĕ.

— Шабаш, пĕтрĕ малалла каясси, шăнса лартăмăр! Вăт, ăнман япала! — вăрçса илчĕ те вăл сак айĕнчен чăматанне кăларса ăшăрах тумланма тытăнчĕ.

— Мĕн пулать ĕнтĕ пирĕнпе? — хăрарах ыйтрĕ ватă Пауль.

— Халех эпир хамăрăн капитана кимĕпе çырана илсе каятпăр, унта вăл вырăнти влаçсемпе калаçать, пулăшу ыйтать...

— Инçе каймалла пулать-и?

— Çук, инçе мар, ав çав сăртран пăрăнсанах пысăк ял пур... — Матрос аллипе чӳрече витĕр тĕллесе аналалла кăтартрĕ.

«Парижская коммуна» Ильинка пристанĕнчен пĕр тăватă километр тăварахра шăнса ларнă. Пăрахут текех малалла кайма пултарайман, çавăнпа та унăн капитанĕ тул çутăлсанах çырана тухма шут тунă: çынсене пăрланнă Атăл тыткăнĕнчен епле пулсан та хăтармалла вĕт-ха! Пăрахут çинчи çынсемшĕн никамран малтан капитан ответ тытать! Вăл пăрахут вĕçĕнче çакăнса тăракан шлюпкăна* хăвăртрах антарма хушрĕ те хăйпе пĕрле пилĕк матрос илсе юхакан пăрсем хушшипе çыраналла васкарĕ.

Ильинкăра капитан пĕр наччасрах ял Советне шыраса тупса хăйĕн пăрахутне мĕн пулни çинчен каласа пачĕ. Совет председателĕ, вăрçăран аманса килнĕ хăрах алăллă çамрăк çын, кăмрăк пек хура куçлă, питĕ çивĕч те хастарскер, тӳрех телефонпа района шăнкăравлама тытăнчĕ.

— Алло! Исполком! Ильинкăран-ха ку, Бурлаков калаçать. Пирĕн патра пăрахут шăнса ларнă, ун çинче эвакуированнăйсем — сакăр çĕр çынна яхăн! Эп кунта пĕччен ним тума та пултараймастăп, пулăшма килĕр! Шупашкара та пĕлтеретĕр пулĕ, вĕсемсĕр те ĕç тухас çук... Кĕтетĕп!

— Мĕн теççĕ? — ыйтрĕ капитан председатель калаçса пĕтерсен.

— Халех пыратпăр, Шупашкара пĕлтеретпĕр терĕç. — Председатель кăштах шухăша кайнă пек пулса ларчĕ. Унтан тăрук

* Ш л ю п к а — вун ик-вун пилĕк çын лармалли сарлака пысăк кимĕ.

каллех ура çине сиксе тăчĕ те: — Ман шутпа, капитан юлташ, эсир Шупашкара хăвăр ятпа телеграмма çаптарсан тата лайăхрах пулать, — терĕ. — Тӳрех обкома, пĕрремĕш секретарь патне.

Ку шухăш капитана килĕшрĕ. Вĕсем çавăнтах почтăна кайса васкавлă телеграмма пачĕç. Унтан тухсассăн капитан крыльца çинче чарăнса тăрса пĕр хушă Атăл еннелле, унта-кунта выртакан кимĕсем çине пăхрĕ.

— Бурлаков юлташ, çапах та мĕнпе илсе тухăпăр-ха эпир пĕтĕм халăха пăрахут çинчен? Манăн хамăн — пĕртен-пĕр шлюпка...

— Шухăшласа пăхас, — терĕ председатель. — Майне тупас пулать, пирĕн тĕле çавăн пек нуша килсе тухрĕ пулсан...

Анчах унăн пуçĕнче çак ĕçе мĕнле тумалли план çуралнă та ĕнтĕ. Ял Советне таврăнсанах вăл хăй патне колхоз председательне, колхозри комсомол организацийĕн секретарьне, шкул директорне чĕнсе пыма чуптарчĕ. Çавăнтах хут илсе чăр-чар çыркаларĕ те канцелярине пырса кĕнĕ пĕр йĕкĕте тыттарчĕ.

— Чуп часрах Шашкара, пулăçсен эртелĕн председательне тупса пар çакна. Сăмахпа та кала: тепĕр сехетрен хăвăн катерна кунти перевоз патне илсе çитермесен Бурлаков сан пуçна касать те.

Вунă-вун пилĕк минутран ял Советне чĕнтернисем пухăнса та çитрĕç. Председатель васкавлă канашлу ирттерме тытăнчĕ. Малтан капитана сăмах пачĕ, унтан хăй каларĕ:

— Нумай пуплеме те кирлĕ мар, вăхăт çук, — терĕ вăл. — Ман шутпа, çапла тумалла: Атăл хĕрринче мĕн чухлĕ кимĕ пур — вĕсен хуçисене пурне те чĕнтермелле, кĕсменĕсене йăтсах килччĕр, перевоз баржипе катерне илмелле, кĕçех тата Шашкарсен катерĕ çитет. Çавсемпе puринпе те пăрахут çинчи çынсене халех турттарма тытăнмалла. Çыннисене ытла тăруках ăсатса пĕтерме май пулас çук, анчах тулта та тытма юрамасть...

— Вĕсем хушшинче чирлисем пур, — самантлăха пӳлчĕ ăна капитан.

— Çавăнпа та ăшă вырăнсем хатĕрлемелле. Чирлисем пулсан вĕсене больницăна хурăпăр. Ыттисене — шкула, клуба вырнаçтарăпăр, ытах унта вырăн çитмесен канмалли çуртăн пĕр корпусне йышăнма пулать... Мĕнле шутлатăр?

— Питĕ тĕрĕс, — терĕç темиçен пĕр харăс. — Çаплах тăвас.

— Тавайăр, çынсене чĕнĕр! Калăр — никам та турткаланса тăма пултараймасть! — Çавăнтах вăл пĕртен-пĕр аллипе стенана шаккаса илчĕ. — Дуся! Эсир Ваньккапа иксĕр халех кимĕ хуçисен списокне тăвăр. Клубне хутса ăшăтма хушăр! Столовăйне кайса калăр — апат ытларах пĕçерччĕр, лавккасем те уçă пулччăр. Больницăна та систерĕр!

Ял Совечĕ фронтри пĕр-пĕр штаб пекех пулса тăчĕ. Çынсем кĕчĕç, тухрĕç, унталла та кунталла чупрĕç, шавлăн калаçрĕç. Вăхăт нумай та иртмерĕ — икĕ машинăпа районти пуçлăхсем кĕрлеттерсе çитрĕç. Ял Совет председателĕ Бурлаков хăйсем мĕн-мĕн тума палăртни çинчен каласа парсан вĕсем ăна ырларĕç çеç.

Тепĕр сехетрен Атăл çыранĕ хĕррипе тăвалла, «Парижская коммуна» шăнса ларнă еннелле, пĕрин хыççăн тепри çирĕм-вăтăр кимĕ кайрĕç. Малта икĕ катер лăкăртатса пычĕ, вĕсем иккĕшĕ те Атăл урлă лавсем илсе каçармалли чылай пысăк кимĕсем кăкарнă.

— Чăн-чăн флотили* пекех пулчĕ ку пирĕн, — кулса илчĕ пăрахут капитанĕпе пĕрле малти катер çинче пыракан ял Совет председателĕ Бурлаков кайри кимĕсем çине пăхса.

— Ан та кала, — терĕ капитан, — Стенька Разин е Пугачев çарĕ пекех пыратпăр.

«Флотили» сăрт хысакĕ тавра çаврăнса тухсан умлă-хыçлă пыракан кимĕсене «Парижская коммунăн» çӳлти палуби çинчен тӳрех асăрхарĕç.

— Килеççĕ!

— Пире илме килеççĕ! — унта та кунта хавассăн кăшкăрнисем илтĕнсе кайрĕç пăрахут çинче.

Çак сасăсене илтсе ватă Паульпе Ян та палуба çине тухрĕç. Вĕсем те паян ытти пассажирсем пекех хăйсене пăрахут çинчен часрах илсе каясса кĕтсе ыйăннă. Пуринчен ытла вĕсене Эльга халĕ те каçхи пекех йывăррăн сывласа выртни, унăн пĕтĕм кĕлетки вут пек пĕçерни хытă пăшăрхантарнă.

Леш енчи çӳллĕ çыран енчен кимĕсен ушкăнĕ ерипен çывхарса килнине курсанах ватă Пауль çăмăллăн сывласа ячĕ:

— Эльгăна çăлатпăр пулас...

## Икĕ тус

...Евгенипе Аркаш вырсарни кун ирхине вутă татса çурма тытăнчĕç. Иртнĕ вырсарнире вĕсем Аркашсен вуттине тирпейлерĕç — татрĕç, çурчĕç, шаршанларĕç, паян акă, хăйсем малтанах калаçса татăлнă тăрăх, Евгенисенне те çавăн пекех тирпейлесе пуçтарса хумалла вĕсен.

Евгенипе Аркаш — уйрăлми туссем. Вĕсем иккĕшĕ те улттăмĕш класра вĕренеççĕ, пĕр парта хушшинче лараççĕ. Хăйсем пĕр-пĕринчен чылай инçетре, расна урамсенче пурă-

* Флотили (флотилия) — юхан шывсем çинче çӳрекен çар карапĕсен ушкăнĕ.

naççĕ пулин те кашни кунах пĕр-пĕрин патĕнче пулаççĕ. Хирехирĕç çӳреме сăлтавĕ яланах тупăнать — е уроксене пĕрле хатĕрлемелле, е стена хаçачĕ валли ӳкерчĕксем тумалла вĕсен, е каççерен — уйрăмах праçниксем умĕн — репетицисене çӳремелле. Евгенин сасси питĕ лайăх, хор юрланă чух ялан ăна пуçлаттараççĕ, уйрăммăн та юрлаттараççĕ, Аркаш спектакльсенче выляма ăста, пуринчен ытла унăн кулăшла рольсем аван тухаççĕ.

Сăнран пăхсан та, хăйсен кăмăлĕпе те çак икĕ ача пĕрпĕринпе туслă пулма пултарас çук пек. Евгени — ырхантарах, хăйĕн çулĕсене кура мар çӳллĕ ача, çӳçĕ сарă та çемçе, куçĕсем уяр кунхи пĕлĕт пек кăвак, пичĕ çинче пăч-пач чĕкеç шатрисем пур, кăмăлĕ те çемçе унăн, пулчĕ-пулмарĕ çилленсе каймасть, васкамасăр, мăн çын пек шухăшласа, сăмахсене татса калаçать. Аркаш вара пачах урăхла, вăл Евгенипе тантăш пулсан та унран нумай лутрарах, анчах платна, хул пуççийĕсем сарлака, урисем кĕске те çирĕп, çӳçĕ-пуçĕ те, куçĕсем те хуп-хура, çуллахи хĕвеллĕ кунсенче чăн-чăн чикан ачи пекех пулса каять; хăй вăл çивĕч, лара-тăра пĕлменскер, пур чухне те питĕ хăвăрт калаçать, наччас вĕриленсе каять, хăйне кӳрентерекен пулсан ăна çăт-çат паркаласа илме те яланах хатĕр...

Вĕренессе вĕсем иккĕшĕ те тăрăшса, лайăх вĕренеççĕ. Чăнах та, Аркаш арифметикăпа вăйлах мар, задачăсене йывăртарах шутлать, çавăнпа та ăна час-часах Евгенин пулăшма тивет, анчах уншăн Аркаш литературăпа, историпе питĕ пултарать. Халь вĕренекен писательсенне çеç мар, çур енне тин вĕренмеллисен кĕнекисене те вуланă ĕнтĕ вăл, истори учебникне те ик-виçĕ хут та вуласа тухма ĕлкĕрнĕ. Таçтан вăхăт тупать!

— Апат çиме те кĕнекесĕр лармасть вĕт, мур ачи! — çилленсех каласа парать тепĕр чух ун çинчен амăшĕ. — Çынсен ачисем катаччи ярăнаççĕ, пĕве çинче конькипе чупаççĕ, пирĕн пур — тек кĕнекепе, пĕрмай хутсемпе ларать! Хĕл каça шурăхсах каять вара...

Учительсем вĕсене иккĕшне те юратаççĕ, ачасем те туслă вĕсемпе, анчах вĕренекенсем хушшинче Евгенипе Аркаша хирĕççисем те пур, ăна та пытарма кирлĕ мар. Акă, сăмахран, Чернов Павел, ял хушшинчи пек каласан — Палля, çырма леш енче пурăнакан Хĕрлĕ Мари ывăлĕ, амăшĕ пекех хĕпхĕрлĕ çӳç-пуçлăскер. Хăй начар вĕренет — ăс-пуçĕ çитменнипе те мар, кахаллипе, анчах алхасас, иртĕнес, хăйĕнчен кĕçĕнрех ачасене кӳрентерес енĕпе вара пуринчен те ирттерет. Вăрттăн чĕлĕм те туртать вăл, пĕррехинче шкулах табак чиксе пынă та перемена вăхăтĕнче вутă сарайĕ хыçне кайса хăйпе пĕрле тата икĕ ачана чĕлĕм турттарма тытăннă.

Тахăшĕ ун çинчен класс руководительне, Рина Петровнă-

на, пĕлтернĕ, лешĕ вара ăна пĕтĕм класс умĕнче ятларĕ те хыттăн асăрхаттарса каларĕ:

— Тепре кун пек хăтлансан шкултан кăларса яратпăр, асту çавна! — терĕ.

Палля класри ачасем çине пăхма хăяймасăр мăшлата-мăшлатах тек кун пек нихçан та тумастăп тесе сăмах паранçи пулчĕ, анчах хăйне çав кунах тимĕрç лаççи патĕнче мăн çынсемпе пĕрле пирус пашлаттарса тăнине курнă.

Евгенипе Аркаш ун çинчен стена хаçатĕнче кулăшла ӳкерчĕк тусах çырса кăларчĕç. Çавăншăн вăл вĕсене калама çук хытă çилленнĕ. Хаçатне кăларса çаксан тепĕр куннех, шкултан таврăннă чух, вăл Аркаша хĕнеме тăнă, куç-пуçне çутăлтарсах сиксе пынă ун патне, анчах ытти ачасем ăна тытса чарнă. Халĕ те-ха Палля:

— Пур пĕрех тавăратăп-ха çав Евгенипе Аркаша, — тесе çӳрет тет.

Е тата ялти лавккара приказчик пулнă Караçăм Иванч ывăлне, Колькăна, илер. Ытти чылай ачасенчен çӳллĕрех пулсан та имшеркке тата шутсăр йыншака вăл. Пулчĕ-пулмарĕ лĕр-р... макăрса ярать. Ачасем ăна çавăншăн Ӳпре тесе ят панă. Анчах хăй питĕ чее, улталама, элеклеме юратать. Хăех мĕн те пулин туса хурать те çавăнтах çынсем çине ярать.

Евгение вăл иртнĕ çуркунне арифметикăпа тĕрĕслемелли урок — контрольнăй — пулнă чух çырса илме паманшăн çилленнĕ. Евгенипе Аркаш хыçĕнчи парта хушшинче лараканскер, вĕсен хул пуççийĕсем урлă пăхса задачăсене мĕнле шутланине ним намăса пĕлмесĕрех çырса илме пуçланă-мĕн вăл, анчах Евгени çакна асăрханă та тетрадьне хупласа лартнă.

— Ху шутла! — тенĕ вăл ăна каялла çаврăнса. — Асту, учительницăна каласа паратăп. Чикмек лартса парать вăл сана! («Чикмек» тесе ачасем единицăна калаНă.)

Колька шутлайман, «иккĕ» илнĕ.

Çавăнтан вара вăл пĕрмаях Евгение сиен тума тăрăшнă — пĕррехинче унăн сарса хунă таса тетрачĕ çине юриех чернил тăкса янă, тепринче тумтирсем çакăнса тăнă çĕртен унăн çĕлĕкне илсе пытарнă. Тепле шырасан та тупайман ăна Евгени, киле çара пуçăнах таврăннă. Кольки ун çĕлĕкне кăмакана чиксе хунă-мĕн, юрать-ха каçхине вутă хутнă чух техничка асăрхаса туртса кăларнă.

Анчах Евгенипе Аркашăн туссем ытларах пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем нихçан та йышран уйрăлман, обществăлла ĕçсенче те яланах пултарнă, вĕсене унта та, кунта та суйланă, пĕр сăмахпа — шкулта вĕсем активистсем пулнă.

...Çулла, вăрçă пуçлансанах, «Çĕнĕ самана» колхозран темиçе кун хушшинчех пĕр аллă çын ытла, вăй питти арçынсем, —

вăл шутрах Евгенипе Аркашăн ашшĕсем те — тăшманпа çапăçма тухса кайрĕç. Халăхпа пĕрле шкул директорĕ Иван Кузьмич та, истори вĕрентекен Геннадий Павлович та, биологи учителĕ Илья Фомич та кайрĕç.

Ачасем хăйсен ашшĕсене, тăван ял çыннисене вăрçа мĕнле ăсатса янине питĕ лайăх астăваççĕ, вĕсем ăна нихçан та манас çук. Ирхине — ун чух хĕвел урамри йăмрасенчен кăшт çеç çӳлерех хăпарнăччĕ-ха — колхоз клубĕ тĕлĕнчи уçă вырăна пĕтĕм ял халăхĕ пухăнчĕ. Клуб умĕнчи трибуна урлă хĕрлĕ хăмач тăрăхĕ çине пысăк шурă сас паллисемпе

***Фашизма пуçĕпех çапса аркатар!***

тесе çырнă лозунг çакăнса тăрать. Аякранах курăнать вăл. Ĕнер кунта нимĕн те çукчĕ, кĕçĕр ку лозунга клуб заведующийĕ Виталий Кураков çĕр çывăрмасăр çырса хатĕрленĕ пулмалла ĕнтĕ, мĕншĕн тесен каçхине правленире вăрçа каякансене пĕтĕм колхозпа хисеплĕн ăсатасси çинчен калаçса татăлнă.

Халăх шавларĕ, вăрçа каякансен ашшĕ-амăшĕсем, арăмĕсемпе ачисем, тăванĕсем вĕсене сырса илсе чи ырă сăмахсем каларĕç, телей сунчĕç, çапăçура паттăр пулнă вăхăтрах сыхланма та хушрĕç, çырусем час-часах çырма, хăйсем çинчен ик сăмахпа та пулин пĕлтерсе тăма ыйтрĕç...

Унта та кунта макăрнисем илтĕнчĕç, çав вăхăтрах клуб пуçĕнче, вата йăмра айĕнче, купăс ташă кĕвви шăрантарчĕ, тахăшĕсем ала çупса, шăхăрса, кăшкăрса, çĕр кисретсе ташларĕç, çырма леш енче темиçе çын юрă сăмахĕсене вăраммăн тăсса юрларĕ. Колхоз витисем енчен клуб патне çич-сакăр лав пырса тăчĕ — пĕккисене те, лашисен çилхисене те хĕрлĕ, симĕс, сенкер хăюсемпе илемлетсе пĕтернĕ.

Унтан трибуна çине колхоз председателĕ Павел Петрович — Финлянди вăрçинченех «За отвагу» медаль илсе таврăннă хурарах сăнлă, ялан çарти пек тумланса çӳрекен лутрарах çын, шкул директорĕ Иван Кузьмич — лĕпки çаралма пуçланă сарă та типшĕмрех арçын, правлени членĕсенчен иккĕн-виççĕн хăпарса тăчĕç...

Колхоз председателĕ хуп-хура вичкĕн куçĕсемпе пурне те пăхса çаврăнса хыттăн, янравлăн:

— Хаклă юлташсем! Юратнă тăвансем, асран кайми ялйышсем! — тесе кăшкăрсанах пĕтĕм халăх шăп пулчĕ.

Павел Петрович хĕрӳллĕн, çав тери хумханса, хушăран чышкипе юна-юна калаçрĕ.

— Урнă Гитлер пире хăйĕн чурисем тума ĕмĕтленет, анчах вăл нихçан та пулас çук! Вăхăт çитĕ, унăн тискер ĕмĕчĕсем усал тĕлĕк пекех пĕтсе ларĕç. Ан тив, тăшман вăйлă пултăр, анчах эпир унран темиçе хут вăйлăрах, çак юнлă çапăçура

çĕнтерекеннисем эпир пулатпăр, урăх никам та мар! Пирĕн ирĕклĕ çĕршыва ку таранччен те хаяр тăшмансем сахал мар тапăннă, анчах эпир вĕсене пурне те аркатса тăкнă... Халĕ те çавăн пекех аркататпăр, ютран килнĕ тăшман мăшкăлĕ пулмастпăр, унăн пуçне çĕлен пуçне татса ывăтнă пекех татса ывăтатпăр! Çавна çирĕп шанса, çавна чĕререн ĕненсе тухса каятпăр эпир паян çак хаяр вăрçа!

Павел Петрович каланисене итлесе хĕрарăмсем нăшăклатса, шывланнă куçĕсене тутăр вĕçĕсемпе шăлкаласа тăчĕç, арçынсен сăнĕсем хаярланнăçемĕн хаярланса пычĕç.

Ун хыççăн шкул директорĕ Иван Кузьмич каларĕ, килте юлакансене пĕр-пĕринпе туслă, пĕр каварлă пулса пурăнма, ырми-канми ĕçлесе фронта куллен-кун мĕнпе май килнĕ çавăнпа пулăшса пыма чĕнчĕ.

Директор хыççăн колхозри бригадирсенчен пĕри, граждан вăрçинчен хăрах урасăр таврăннă Сар Тимухха, питĕ хаяррăн калаçрĕ.

— Шанăр пире, тăвансем, — терĕ вăл фронта каякансене, — эпир сирĕн çинчен кунĕн-çĕрĕн шухăшласа ĕçлĕпĕр, пирĕн чунсем яланах сирĕнпе пĕрле пулĕç, эпир сире мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăрăпăр. Эпĕ, ватă салтак, хамăрăн Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн юн тăкса курнă çын, çакна каласа яратăп сире, тăвансем: пирĕн çинчен, кил-йышусем, арăмусемпе ачусем çинчен астуса çапăçусенче паттăр пулăр, хаяр пулăр, тискер тăшмана пĕтерĕр, тĕп тăвăр та киле телейлĕн, таса та сывă çаврăнса çитĕр! Эпир сире ирхи çут хĕвеле кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илĕпĕр, тăшмана аркатнăшăн ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвăпăр...

Тек тухса калаçакансем пулмарĕç.

— Каяс пулать, вăхăт ĕнтĕ...

— Пуйăсран юлас мар тата, — тенисем илтĕнчĕç унтан та кунтан.

Çынсем каллех шавлама, хускалма тытăнчĕç, вăрçа каякансем кил-йышĕсемпе юлашки хут сывпуллашрĕç. Каллех ӳлесе макăрнисем илтĕнчĕç, çынсем пĕр-пĕрин мăйĕсенчен уртăнчĕç, ыталашрĕç.

Евгени ашшĕ чăн малтан пĕчĕк Маринене, Евгени йăмăкне, çĕклесе темиçе хут чуптурĕ, ăна пуçĕнчен ачашласа илчĕ, çурăмĕнчен лăпкарĕ.

— Асту, хĕрĕм, ăслă ача пул, аннӳне итле... Кăçал санăн шкула каймалла пулать, тăрăшарах вĕрен...

— Эс унччен килместĕн-и? — куçĕсене мăчлаттарса ыйтрĕ Марине. — Эсĕ мана шкула чăн малтан çавăтса каятăп терĕн-иç?

— Килме тăрăшăп, хĕрĕм, тăрăшăп!

— Сана вăрçăра вĕлермеççĕ вĕт?

— Çук, çук, вĕлермеççĕ... Кам вĕлертĕр мана? — Ашшĕн куçĕсенчен икĕ шултра куççулĕ шуса анчĕ. Унтан вăл Маринене алăран ямасăрах тепĕр аллипе Евгение ыталаса илчĕ. — Ну эсĕ пысăк ĕнтĕ, ывăлăм, хăвах ăнланмалла... Çăмăл пулмасть сире. Аннӳне пулăш, вĕренессине те ан ман. Вăрçă — пĕтет вăл, санăн малашнехи пурнăç çинчен шухăшлас пулать. Мана мар, хăвна кирлĕ пулать вĕренни... ăнланатăн-и, ачам?

— Ăнланатăп, — терĕ те ăна хирĕç Евгени куççулĕ капланса килнипе часрах çĕрелле пăхрĕ.

Салтака каякан ашшĕ чăн юлашкинчен амăшне ыталаса чуптурĕ.

— Санпа эпир, Улька, мĕн калаçмаллине пĕтĕмпех калаçса çитерне ĕнтĕ... Ачасене лайăххрах усрама тăрăш...

Амăшĕ ăна хирĕç нимех те калаймарĕ, куççульне çăта-çăта ун çине çав тери хурлăхлăн пăхрĕ.

— Пĕлетĕп... хамах пĕлетĕп... Пирĕншĕн ан хăра, — терĕ çеç вăл.

— Эсĕ çырусем час-часрах çыр, — терĕ Евгени. — Эп вĕсене пухса пырăп...

— Кайрăмăр, кайрăмăр! — шкул директорĕ умлăн-хыçлăн кăшкăрни илтĕнчĕ çав вăхăтра.

Пурте вырăнтан хускалчĕç. Лавсем пушăллах малтан кайрĕç, çынсем çуран утрĕç. Çаплах калаçрĕç, тем хушрĕç, ыйтрĕç, нумайăшĕ макăрчĕ. Евгенисен ашшĕ Маринене йăтса пычĕ, Евгенипе амăшĕ ик енчен утрĕç. Тек ĕнтĕ калаçма сăмах та тупăнмарĕ.

Уя тухса колхоз йĕтеменчен иртсен, çул çырма еннелле пăрăнсан вара ăсатма тухнисем тăрса юлчĕç, вăрçа каякансем лавсем çине ларчĕç. Вĕсем вăрăм сĕвек сăрт тăрăх çырманалла анса куçран çухаличченех ял-йышсем аллисемпе, тутăрĕсемпе сулчĕç...

Ял пушансах юлчĕ. Арçынсем пăч-пач кăна курăнкалаççĕ — ватăсем те вĕтĕсем. Пĕтĕм ĕç хĕрарăмсем, стариксемпе ачасем çине тиенчĕ. Колхоза ертсе пыма утмăл çултан иртнĕ Назар Егорчча хушрĕç — вăл вунă-вун икĕ çул каялла çак ялти колхозăн пирвайхи председателĕ пулнă-мĕн; вăрçа кайнă икĕ бригадир вырăнне хĕрарăмсене суйларĕç, вĕсенчен пĕри Евгенисен амăшĕ пулчĕ. Лашасене пăхма та, пушар хуралне те, çил арманĕнче мелник пулма та хĕрарăмсем тăчĕç. Никам та «эп пултараймастăп», «маншăн вăл йывăр пулать», «манăн вăхăт çук» тесе тăмарĕ, турткаланмарĕ.

Кĕçех уй-хирте хĕрӳ ĕç пуçланчĕ: тырă вырмалла, авăн çапмалла, часрах патшалăха памалла. Тырри вăл çулхине калама

та çук вăйлă пулнăччĕ-çке! Ырашĕ — пĕкĕ курăнми, сĕлли — мăй таран, пăрçи — кĕççе пек, çĕр улмийĕ вара кашни пĕр кĕренке... Вĕсене пурне те тирпейлĕ, пĕр пучах, пĕр пĕрчĕ сая ямасăр пухса кĕртмелле, часрах, васкасах. Килес çул валли те акса хăвармалла, лайăх акмалла, каллех кăçалхи пекех, фронт валли те, килтисене çиме те çителĕклĕ пултăр...

Вăрçă!..

Ĕçлерĕ вара килте юлнă халăх, çĕрне-кунне пĕлмесĕр, ырми-канми ĕçлерĕ, темле йывăр пулсан та пурне те вăхăтра турĕ. Ачасем те канăç курмарĕç, вун ик-вун тăватă çулхи арçын ачасем хăйсен ашшĕсемпе пиччĕшĕсем тăвас ĕçсене турĕç; амăшĕсемпе, аппăшĕсемпе пĕрле тырă вырчĕç, кĕлте турттарчĕç, авăн çапрĕç, темиçешер пăт туртакан михĕсене иккĕн-виççĕн тытса лавсем çине тиерĕç, çĕр сывăрмасăр Шупашкара, «Заготзернона», турттарчĕç... Вăхăт çитсен кĕр аки турĕç, ашшĕсем мĕн чухлĕ акнă — çавăн чухлех акса хăварчĕç, унтан çĕр улми кăларма тытăнчĕç. Колхозра васкаса тумалли ĕçсем нумай пулнипе вĕренӳ те вăхăтра пуçланаймарĕ, ăна октябрьччен хăвармалла пулчĕ.

— Куншăн эпир аптрасах каймăпăр, ачасем, — терĕ Евгенисен класс руководителĕ Рина Петровна вĕсем октябрĕн пĕрремĕшĕнче шкула пухăнсан. — Çине тăрса, тăрăшарах вĕренĕпĕр те хамăрăн программăна пур пĕрех тултарăпăр. Çапла пуль, ачасем?

— Çапла! — пĕр саслăн ответ пачĕ ăна класс.

Евгенипе Аркаш çу каçа пĕр ĕçрен те юлмарĕç. Ăçта ĕç нумай, ăçта йывăртарах, васкамалла — çак икĕ тус унта. Вĕсем çеç те мар ĕнтĕ, ыттисем те хытă ĕçлерĕç, никам та килте хĕвел çаврăнăш шĕкĕлчесе ларман, пурте тенĕ пекех хĕвелпе пĕрле тăнă та пăч тĕттĕм пулсан тин çывăрма выртнă. Хĕр ачасем валли те ĕç нумай тупăнчĕ. Малтанах вĕсем çум çумларĕç, колхоз пахчинче ĕçлерĕç, унтан кантăр анисем çинче пуса татрĕç. Кантăрĕ те вăйлă пулнăччĕ те вăл çул, татма пӳ çитменнипе хăшĕсем каска пуканĕсем çине тăрса тататчĕç вĕт!

Пĕрисем тата «нянькăсем» пулса тăчĕç — ĕç вăхăтĕнче, хĕрарăмсем хăйсем килĕшнипе, колхоз ясли уçрĕ. Мăннисем пурте уйра ĕçленĕ чух вĕт-шаксене хăйсем тĕллĕн мĕнле хăваратăн-ха? Анчах вĕсене яслинче пăхма та çын кирлĕ. Унта аслăрах хĕр ачасене ĕçлеттерчĕç.

— Пирĕн ачасем кăçал тăруках мăн çынсем пек пулса тăчĕç вĕт, — тетчĕç хăш чух амăшĕсем пĕр-пĕрне тимлесех ĕçлекен ывăлĕсемпе хĕр ачисем çине кăмăллăн пăхса.

— Мĕн тăвас тетĕн — вăрçă! — ассăн сывласа илетчĕç хăйсем.

— Çапла çав!..

Анчах ӳркенекеннисем те, халăх ĕçĕнчен пăрăнаканнисем те пурччĕ çав. Акă Хĕрлĕ Мари Паллинех илес... Хăй вăйлă вăл, тĕреклĕ, анчах çу каçа пĕр-икĕ хут те тухрĕ халăхпа пĕрле ĕçлеме, те çук. Тухмарĕ те пулас. Пĕррехинче Евгенипе Аркаш уйра ĕçленĕ чух унăн амăшĕнчен:

— Ăçта çав сирĕн Палля, мĕншĕн пĕртте ĕçлеме тухмасть? — тесе ыйтсан лешĕ темле тăрăхларах кулса:

— Вăхăт çук унăн, сирĕн пек шăпăрлансем пырса çаратасран сад хурал тăрать, — тесе хучĕ.

Ачасене ку питĕ кӳрентерчĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çын сад пахчине улма-çырла вăрлама ĕмĕрне те кĕрсе курман, вăл-ку вĕсен хăйсен те пур, анчах пулман пулсан та çыннăнне ыйтмасăр нимĕн те илес çук вĕсем. Çапах та хăйсене кӳрентерекене хирĕç нимех те каламарĕç.

— Ун пек усал чĕлхеллĕ çынпа çыхлансан вĕçне-хĕрне тупас çук...

Кĕркунне, çĕр улми кăларма тытăнсан, пĕр ирхине уя кайнă чух Евгенипе Аркаш çак Палля хăйсен хапхи умĕнче хĕвел çаврăнăш çисе тăнине курчĕç.

— Атя паранкă кăларма! Мĕн ĕçсĕр аптраса тăратăн, халь те сад хуралламастăн пулĕ вĕт? — терĕ ăна Евгени.

— Атясам, — мăкăртатса илчĕ Палля. — Мана колхоз паранки кирлĕ мар, килти те çитет. Кăларăрах сире пит кирлĕ пулсан!

Евгенипе Аркаш питĕ тарăхса кайрĕç, вĕсем ăна кăкринчен тытса силлесех хăтăрса тăкасшăнччĕ, анчах Палли çавна сисрĕ пулмалла та вăшт кăна хапхаран кĕрсе çухалчĕ.

— Вăт путсĕр! — вăрçса илчĕ Аркаш ун хыçĕнчен пăхса. — Нивушлĕ ăнланмасть вăл эпир фронт валли ĕçленине?

— Вĕсен вăрçăра никам та çук та, çавăнпа хыпмасть пуль, — терĕ Евгени.

— Хыркассинчи куккăшĕ вăрçăра тет.

— Кам пĕлет, те вăрçăра-ха, те таçта... Вĕсен пĕр куккăшĕ тĕрмере ларать тенине илтнĕччĕ эпĕ.

— Тен, ку урăххи пулĕ...

— Темле пулсан та ăс парас пулать-ха ăна пĕрре, ытла иртĕнсе кайрĕ. Мĕнле çакăн пек пулмалла пулĕ хальхи вăхăтра?..

Çавăнтанпа вĕсем Палляна тата ытларах юратми пулчĕç, анчах хăйсем ăна питех палăртмарĕç.

Октябрĕн пĕрремĕшĕнче шкулта вĕрентме тытăнчĕç. Вĕренӳ йĕркеллех пычĕ, анчах ачасем ытти çулсенчи пек хаваслах пулмарĕç. Хавасланма майĕ те пулман çав ун чух: ялтан вăрçа кайнă çынсенчен иккĕшĕ вилни çинчен хут килчĕ, темиçе çын аманнă иккен — таçта госпитальсенче выртаççĕ, хăшĕсем

тата малтанах пĕрер-икшер çыру ячĕç те, унтанпа нимĕнле хыпар та пулмарĕ. Тем пулнă-ха вĕсене, кам пĕлет?

Евгенисен ашшĕ те пĕр-икĕ уйăха яхăн çырмарĕ, амăшĕпе иккĕшĕ уншăн калама та çук пăшăрханса, кулянса пурăнчĕç, анчах кайран виç кĕтеслĕн хуçлатнă пĕр пĕчĕкçеç хут татки килчĕ-килчех. Нимрен те хаклă пулчĕ вĕсемшĕн çав лутăрканчăк кăвак хут çине ахаль кăранташпах çырнă темиçе сăмах! Пурне те йĕркипе сывлăх сунса саламланă хыççăн ашшĕ юлашкинчен темле ăнланмаллах мар çырнăччĕ:

«Пĕр уйăх ытла тамăкра пултăм, тем те тӳсрĕм, чĕррĕн юласса шанманччĕ, анчах халĕ хăтăлса тухрăм ĕнтĕ, эпĕ сывă, ман алăра çĕнĕ пăшал, фашистсене пур пĕр тĕп тăватпăр!»

Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕç Евгенипе амăшĕ çак сăмахсем пирки. Мĕнле тамăк çинчен каланă вăл? Ăçтан хăтăлса тухнă? Аманнă пулнă-ши? Тавçăрса илеймерĕç...

Аркашсен ашшĕнчен те вăрахчен сас-хура пулмарĕ, вĕсен çемйи те хытă хуйхăрса пурăнчĕ, çапах та каярахпа унран та çыру килчĕ — вăл Баку хулинчи госпитальре выртать иккен. Ăçтан, мĕнле аманни çинчен каламан, анчах çыруне хăй аллипе çырман, урăх çынна çыртарнă.

— Алли аманнă пуль унăн, — шут турĕç Евгенипе Аркаш. — Анчах аллине татсах пăрахман пулсан госпитале лекнĕскер сывалатех пулĕ-ха...

Çапла шутлани вĕсене кăштах лăплантарчĕ.

Ун чухнехи йывăр кунсенче пĕр килте те лăпкă пулман çав. Кашни çемьеренех кам та пулин вăрçă вут-çулăмĕнче пулнă, килтисем ун пирки пăшăрханса пурăннă, унран çыру, ырă хыпар кĕтнĕ.

Евгенисен класс руководителĕ литература вĕрентекен Рина Петровна Молгачова та — шкулта иккĕмĕш çул çеç ĕçлекен çамрăк учительница — пĕрмай хăйĕн пиччĕшĕ çинчен шухăшласа, çыру кĕтсе пурăннă. Вĕсем тăлăхсем пулнă — ашшĕ граждан вăрçи вăхăтĕнче Чапаев дивизинче Уфа хулишĕн çапăçнă чух пĕтнĕ, амăшĕ выçлăх çул шыçăнса вилнĕ, Ринăпа Федьăна вара ял Совечĕ ачасен çуртне леçнĕ те, вĕсем унта ӳснĕ, кайран патшалăх шучĕпе вĕреннĕ. Вун саккăр тултарсан Федя Молгачов тӳрех çар шкулне кайнă, унтан лейтенант пулса тухнă та яланлăхах çарта юлнă. Лайăх, пултаруллă командир пулнă пирки ăна пĕр-ик çултан тата аслăрах çар шкулне вĕренме янă...

Кăçал çулла вăл пĕр уйăхлăха Рина Петровна патне килсе пурăнасшăнччĕ (пан улмисем пулса çитнĕ вăхăталла пыратăп тесе çырнăччĕ), анчах сасартăк вăрçă пуçланчĕ те, килесси пулмарĕ. Пĕртен-пĕр çыру çеç илчĕ Рина Петровна унран — ăна Мускавран тухса каяс умĕн, васкаса, кĕскен кăна çырса янăччĕ.

«Манăн хаклă йăмăкăм, ылтăнăм! Çĕршывăмăр умне мĕнле хăрушлăх килсе тухнине эсĕ хăвах ăнланатăн. Çак вăхăтра никам та лăпкăн ларма пултараймасть. Пире телей панă Совет влаçне пирĕнех хӳтĕлемелле, тăшмана никамăн та мар — хамăрăн аркатмалла. Пирĕн академие инçетри тыла, Ташкента, куçараççĕ, анчах эпĕ унта каймастăп, ĕнер хама фронта яма ыйтса рапорт патăм, эп ыйтнине хирĕç пулмарĕç. Паянтан эпĕ — салтак, вăрçă çынни... Эпир санпа тăлăх ӳснĕ пулин те яланах телейлĕ пулнă, тен, çав телейлĕ шăпа мана малашне те хăтарса пырĕ. Ан кулян, куççуль тăкма кирлĕ мар, вăхăт çитсен тĕл пулăпăр.

Сана çĕр хут ыталаса чуптăватăп, манăн ырăран та ырă тăванăм!»

Каçсерен шкул çумĕнчи çуртри хăйĕн пĕчĕк пӳлĕмне таврăнсан Рина Петровна яланах стена çинче эрешлĕ рамка ăшĕнче çакăнса тăракан пиччĕшĕн сăн ӳкерчĕкĕ çине нумаййчен пăхса ларчĕ.

«Ăçта-ши эс халĕ, тăванăм?»

Пушăрах вăхăтсенче вăл унăн малтанхи, вăрçăченхи, хаваслă çырăвĕсене те, чăн юлашкинчен илнине те йĕркипе кăларса хурса вуларĕ, тепĕр чух çав тери хурланса, шăппăн макăрчĕ. Кăнтăрла, ĕçре, хăй хуйхăрнине палăртмарĕ вăл, анчах ачасенчен нимĕн те пытарма çук вĕт — питĕ сисĕмлĕ вĕсем, пурне те туяççĕ. Рина Петровна хурланнине те курсах тăчĕç вĕсем, çавăнпа та нихçан та, нимĕнпе те кӳрентересшĕн, пăлхатасшăн пулмарĕç хăйсен юратнă учительницине. Ăна Рина Петровна хăй те лайăх сисрĕ.

Хурлăх-тунсăх ан пустăр тесе вăл яланах ачасемпе пĕрле пулма тăрăшрĕ. Ачасем колхозра ĕçленĕ чух вĕсемпе уя çӳрерĕ, хăй те тăрăшсах ĕçлерĕ; вĕрентме пуçласан кăнтăрлахи уроксемсĕр пуçне каçсерен кружоксене ертсе пычĕ — Октябрь уявĕ валли спектакль хатĕрлерĕ, юрăсем юрлаттарчĕ. Ытах пушă вăхăт пулсан хăш-пĕрисем патне килĕсене çӳрерĕ. Евгенисем патĕнче те час-часах пулчĕ вăл, унăн амăшĕпе калаçса ларчĕ. Паллах, сăмах-юмах кашнинчех пуринчен ытла вăрçă, фронта кайнă çывăх çынсем тавра çаврăнчĕ...

Пĕррехинче, Рина Петровна Евгени амăшĕпе çавăн пек шăкăл-шăкăл калаçса ларнă чух, сăмах унăн пиччĕшĕ çине пырса çитсен вăл каллех питĕ хурланчĕ. Евгенин ăна çав тери хĕрхенес, лăплантарас килсе кайрĕ.

— Хаçатсенче халĕ партизансем çинчен нумай çыраççĕ, тен, сирĕн пиччӳ те партизанра çӳрет? Пулма пултарать вĕт çавăн пек? — терĕ вăл.

— Паллах, пулма пултарать... — килĕшрĕ учительница.

— Тен, вăл унта та командир пулĕ, хăйĕн отрячĕпе фа-

шистсене кашни каç кисретет, анчах сире пĕлтерме май çук унăн...

— Ку та пулма пултарать, — терĕ учительница каллех, — Федя питĕ хăюллă вăл, нимрен те хăраса тăрас çук...

Рина Петровна кăштах лăпланнăшăн Евгени чунтан савăнчĕ.

Çапла кун хыççăн кун иртрĕ.

Фронтран килекен хыпарсем çав-çавах начар пулчĕç. Почтăран çĕнĕ хаçатсем илсе пырсан пурте нимрен малтан Совинформбюро пĕлтернине вулама пикенеççĕ, анчах савăнмалли нимĕн те çук. Ялан тенĕ пекех пĕр майлă сăмахсем: «Йывăр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем... çав хулана хăварнă...»

Клуб заведующийĕ Витали Кураков малтанхи вăхăтра стена çинче çакăнса тăракан географи картти çинче фронт мĕнле куçса килнине паллă туса пычĕ, анчах каярахпа пăрахрĕ. Ытла хăрушă курăнать. Акă çак кунсенче нимĕçсем Орел хулине илнĕ, вăл ĕнтĕ Мускавран инçе те мар...

Анчах ним тума та çук. Темле пулсан та хамăр çĕнтерме пуçлассине шанса, пĕр çавăн çинчен кăна шутласа, çавна ĕненсе пурăнас пулать. Çĕнтермелле-çке эпир, çĕнтермелле!.. Пирĕн çарсем халь каялла чакса килни, тăшман нумай хуласене йышăнни — вăхăтлăха çеç вăл. Каярахпа пĕтĕмпех улшăнать, фашистсен хăйсен пĕтĕм техникине — танкĕсене, туписене, ытти хĕç-пăшалне пăрахсах тармалла пулать акă! Ун çинчен хаçатсенче те çыраççĕ, Шупашкартан килнĕ лектор та каласа ăнлантарчĕ пĕркун... Инçе мар тет вăл вăхăт... Ах, часрах çиттĕрччĕ-çке ун пек телейлĕ кун!..

Часах акă хĕлле пулать, шартлама сивĕсем пуçланаççĕ. Тен, пирĕн Сив Мучи вĕсене Наполеон çарне тыткаланă пекех тыткалĕ?

Кун çинчен шкул ачисем хăйсем хушшинче час-часах хĕрсе кайсах калаçрĕç.

— Таракансене шăнтнă пек шăнтса пĕтересчĕ вăл фашистсене!..

— Сивви хĕрĕх градус, аллă, утмăл пултăрччĕ!

— Шăнса, алли-урисем кукăрăлса ларччăр, сывлайми пулччăр, шуйттансем!

Анчах хĕле кĕтсе илме килте те хатĕрленес пулать. Сивĕ вăл тăван анне мар теççĕ. Кил таврашĕнчи унти-кунти шăтăксене те питĕрмелле — çил вĕрсе ан тăтăр, вутти-шанкине те янтăламалла, тытса хутма кал-кал пултăр. Çавăнпа та ĕнтĕ Евгенипе Аркаш çак кунсенче вутăпа тăрмашрĕç. Юрать-ха, вуттине вĕсен ашшĕсем иртнĕ хĕлле çителĕклех турттарса килнĕ. Хатĕр вутта татса çурасси темех мар, ăна Евгенипе Аркаш хăйсен ашшĕсем килте чухнех хăнăхнă. Евгени пăчкине хăйрама

та вĕреннĕ, подпилка илет те пăчкă шăлĕсене ик енчен чашт та чашт тутарать çеç.

Хыр вутти лайăх касăлать. Сыпă хыççăн сыпă татăлса ӳкет. Вунă-вун пилĕк сыпă пухăнсан ачасем икĕ пуртăпа пĕр харăс çурма тытăнаççĕ. Шач! шач! лартаççĕ пуртăсене. Пуленкисем питĕ хитре пулса тухаççĕ. Кăштах сухăр шăрши кĕрет, çуллахи вăрмана аса илтерет.

Шаршанне амăшĕ лупас айне, юр лекмен çĕре, купалама хушрĕ. Хăй вăл паян, вырсарни ячĕпе, кукăль пĕçерес терĕ-ха, пӳртре, кăмака умĕнче тăрмашать. Бригадирта ĕçленипе вăхăчĕ вуçех те çук пулин те вăл ачисене тутлăрах пĕçерсе çитерме тăрăшать. Ашшĕ те хушса хăварчĕ вĕт-ха вăрçа тухса каяс умĕн:

— Ачасене лайăхрах пăхса усра, — терĕ.

Евгенипе Аркаш ĕçленĕ çĕре пĕчĕк Марине те тухса тăнă. Сивĕ тытнипе унăн çаврака пит çăмартисем анис пан улми пекех хĕрелнĕ, пуклакрах сăмси айĕ йĕпеннĕ.

— Кĕр пӳрте, мĕн шăнса тăратăн пустуй, курман-им вут татнине? — пĕр-ик хут та каларĕ ăна Евгени, анчах йăмăкĕ итлемерĕ.

— Анне мана сĕлĕм тивеслен тула кăлалчĕ... — терĕ вăл.

Вăт айван ача! Хăй çиччĕ тултарчĕ, кăçал шкула кайма пуçларĕ, çапах та «р» калаймасть. Мĕн чухлĕ вĕрентрĕ пулĕ ăна Евгени, пур пĕрех «Арарат» вырăнне «Алалат» тет...

Аслисем татнă вутта çурма тытăнсан вара Марине валли те ĕç тупăнчĕ, вăл икшер-виçшер пуленкен йăтса лупас айне чупма тытăнчĕ.

— Эсил ан йăтăл, эп хамах! Пĕчченех йăтатăп!

Наччасах ăшăнчĕ ача, çăварĕнчен пăс та туха пуçларĕ унăн. Евгенипе Аркаш хăйне кăштах мухтарĕç те, тата хытăрах тăрăшма тытăнчĕ вăл.

Халь ĕнтĕ виççĕшĕ те ĕçлерĕç, вутă шаршанĕ çӳлленсех пычĕ.

— Каплах ĕçлесен эпир паян пĕтеретпĕр те пулĕ, — терĕ Евгени çĕнĕ пĕрене сыппине татма майлăрах вырнаçтарса хурса.

— Тăрăшсан пĕтерме те пултаратпăр, — килĕшрĕ Аркаш.

Çав вăхăтра хапха шашулкки чăнкăр-чанкăр турĕ те, картишне ял Совечĕпе колхоз правленинчи сторожиха, хăрах куçлă Уçтук инке, кĕрсе тăчĕ.

— Аннӳ килте-и?

— Килте, — терĕ Евгени. —Кĕр пӳрте.

Уçтук васкасах крыльцаран кĕрсе кайрĕ, ачасем ун çине тек çаврăнса та пăхмарĕç, ĕçлерĕç. Амăшĕ бригадир пулнăранпа ăна правление час та часах чĕнсе кайнине Евгени хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ.

Вăхăт кăшт çеç иртрĕ — Уçтукпа пĕрле вĕсен амăшĕ те утнă çĕртех сăхманне тӳмелесе картишне тухрĕ.

— Мана темшĕн питĕ васкаса пыма хушнă-ха, — терĕ вăл Евгение. — Тахçанччен тытаççĕ, пĕлместĕп, çавăнпа та тепĕр вун пилĕк минутран пӳрте кĕрсе кукăльсене кăмакаран кăлар та çиелтен çу сĕрсе хур. Асту, ан ман! Кăмаки вĕри, куклисем çунса кайĕç тата...

— Юрĕ, — пуçĕпе сулса илчĕ Евгени.

— Эпĕ ăна манталмастăп, — хушса хучĕ пĕчĕк Марине.

— Тутлă япаланах çунтарса ямăпăр-ха, — кулса илчĕ Аркаш та.

Амăшĕпе Уçтук хăвăрт тухса кайрĕç.

— Тем пулнă ĕнтĕ тата пит васкамалли... — терĕ те Евгени пуçĕнчи çĕлĕкне тӳрлетсе лартса каллех пăчкăн пĕр вĕçĕнчен тытрĕ. — Тавай турт...

## Васкавлă ĕç

Правленире амăшĕ нумай та тăмарĕ, пĕр çур сехетренех хыпкаланса каялла таврăнчĕ.

— Мĕнле ытла час тата? — ыйтрĕ Евгени.

— Васкамалла-ха, пит васкамалли ĕç сиксе тухнă, — терĕ амăшĕ.

— Мĕн пулнă вара ун пекех?

— Районтан хушнă... Кĕçĕр мар, иртнĕ каç Ильинка патĕнче пăрахут шăнса ларнă тет, пăрахучĕ çинче вакуированнăйсем, вăрçă çывăхĕнчен тарса килнисем пулнă тет. Çыннисене çырана илсе тухнă, анчах ниçта вырнаçтарса пĕтерме те çук имĕш. Халĕ ĕнтĕ çавсене часрах хамăр таврари ялсем тăрăх салатмалла тет...

— Ку питĕ интереснă, — терĕ Аркаш.

— Интерес мар вăл, хурлăх, — ун çине кăмăлсăртарах пăхса илчĕ Евгени. — Ачасем те туллиех ĕнтĕ унта, çанталăкĕ сивĕ...

— Ара, хурлăх пулмасăр! — килĕшрĕ амăшĕ. — Шутсăр хĕрхенмелле вĕт...

— Мĕн тумалла тет вара?

— Пирĕн колхозран халех Ильинкăна вунă лав ярса темиçе çемье илсе килмелле те вĕсене хамăр патăмăрта вырнаçтармалла. Назар Егорччă лашасем кӳлтерме кайрĕ ĕнтĕ.

— Лавçисем камсем пулаççĕ?

— Конюхсем пĕр-иккĕш каяççĕ пуль, Витали каятăп терĕ, тен, хамăн та каймалла пулать майлă çын тупăнмасан, — терĕ амăшĕ.

— Сан выранна эпĕ хам каям-и? — тăрук ыйтрĕ Евгени аллинчи пурттине каска çине лач! лартса.

— Темле-çке... — кăшт иккĕленерех тăчĕ амăшĕ. — Пултарайăн-ши? Çынсене илсе килмелле пулать те-ха... Таçта тӳнтерсе ярăн-и, мĕн-и унта...

— Епле пултараймастăп пулать? Мĕн, хальччен ут тытса курман-и эпĕ? — хирĕçлерĕ Евгени кăмăлсăрланнă пек пулса.

— Евгени каять пулсан пĕр лавĕпе эпĕ те каятăп, — терĕ Аркаш. — Халех киле чупса аннене пĕлтеретĕп те...

Амăшĕ текех хирĕç пулмарĕ. Чăнах та, ма шанас мар-ха ачасене? Çулла мĕн чухлĕ кĕлте, утă турттарчĕç, тырă пама Шупашкара та виççĕ-тăваттă хутларĕç. Çитменнине, вĕсене колхоз председателĕ Назар Егорччă хăй ертсе каять вĕт...

— Питех каяс тетĕр пулсан кайăр эппин, — терĕ вара вăл. — Анчах лайăхрах тăхăнас пулать, сивĕ паян.

Тепĕр сехетрен, апат çисе хулăнрах тумтир тăхăннă хыççăн, вĕсем виççĕшĕ те правлени патне пычĕç. Кунта лашасем кӳлсе пынă та-мĕн. Ларма çемçерех пултăр тесе урапасем çине улăм ытларах хунă. Лава кайма хатĕрленнисем крыльца çинче калаçкаласа тăраççĕ: лашасем пăхакан Лисаветпа Кулюк — пĕр пекрех тулли питлĕ хĕрсем, клуб заведующи Витали тата ик-виçĕ çын.

— Эс кĕр-ха часрах председатель патне, сана кĕтеççĕ унта, — терĕ Евгенисен амăшне Витали. Унтан Евгенипе Аркашран ыйтрĕ: — Эсир те пыратăр-и?

— Пыратпăр çав, — терĕç ачасем. — Час каятпăр-и?

— Нумай тăмастпăр пулĕ. Ак Назар Егорччă пушанать те...

— Заседани тăваççĕ-и-мĕн?

— Эвакуированнăйсене илсе килсен вĕсене кам патне вырнаçтарасси çинчен калаçаççĕ. Урамра усрамалла мар вĕт-ха çынсене, хваттерсем хатĕрлес пулать.

— Вăл тĕрĕс... Камсем патне кĕртеççĕ-ши?

— Камăн пӳрчĕ аслăрах, çемйи сахалтарах — çавсем патне ĕнтĕ. Сăмахран каласан, эпĕ хам пĕр çемье йышăнатăп, эпир аннепе çеç пурăнатпăр, вырăн çитет. Пĕрисене сирĕн пата та яма пулать, эсир те йышлăнах мар...

— Эп хирĕç мар, пурăнччăр! — терĕ Евгени тӳрех кун çинчен амăшĕпе сăмах-юмах пулман пулин те.

— Пирĕн пата та пĕр пĕчĕкрех çемье кĕртме май пур, — калаçăва хутшăнчĕ Аркаш. Унăн нихçан та Евгенирен юласси килмест çав, тусĕ мĕн тăвать — унăн та çавнах тумалла.

Витали каланă пекех председатель патĕнчи канашлу нумая пымарĕ. Кĕçех пурте шăкăлтатса калаçса тухрĕç — Назар Егорччă, пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Сар Тимухха, иккĕмĕшĕн — Ярмуш Татянĕ, çӳллĕ те йăрăс пӳллĕ хĕр, Евгени

амăшĕ, унтан Рина Петровнăпа ялти медсестра Антонина Клементьевна.

Крыльца çинче чарăнса тăрса Назар Егорччă хăйпе пĕрле тухнă çынсене тепĕр хут каларĕ:

— Çапла, эппин, астăвăр, хваттере яма палăртнă кашни килех çитсе пăхăр. Урайĕсене çуччăр, пўрт ăш-чиккисене тирпейлеччĕр, лайăхрах хутса ăшăтчăр. Куна санăн тĕрĕслес пулать ĕнтĕ, Антонина Клементьевна, ку вăл — медицина енĕпе...

— Юрать, юрать, пурне те тăвăпăр, — пуçĕпе темиçе хут сулса илчĕ медсестра.

— Ну, халь кайрăмăр!

Назар Егорччă пусма картлашкисем тăрăх çамрăк çын пекех чупса анчĕ те колхозри Çулăм ятлă чи çивĕч тимĕр кăвак лашана кўлнĕ урапа çине ларса тилхепине карт! туртрĕ. Ун хыççăн ыттисем те хускалса кайрĕç.

— Вăхăт пулсан — кукаму патне кĕрсе тух! — тесе кăшкăрчĕ Евгени амăшĕ чăн хыçалти лав çине лекнĕ ывăлне.

— Юра-ать! — терĕ Евгени тилхепе вĕçĕпе лаши çине сулса.

Вĕсен кукамăшĕ Ильинкăра пурăнать. Унăн кĕçĕн ывăлĕ Петюк — Евгени куккăшĕ пулать-ха ĕнтĕ вăл — виç-тăватă çул каялла Ильинкăри пристань çине матрос пулса ĕçлеме кĕнĕ пирки унта пурăнма куçнă вĕсем. Вăрçă пуçлансан тепĕр куннех фронта тухса кайса куккăшĕ хăрах аллине çухатса килчĕ, анчах, чунĕ питĕ канăçсăр пулнипе, ĕçсĕр ларас килмен унăн.

— Килте выртса пурăннипе мăкланса каясран ял Советĕнче чупатăп-ха, — терĕ вăл пĕркун, Шупашкартан таврăннă чух çула май Евгенисем патне йăпăртлăх кĕрсен. Тухса каяс умĕн Евгение чĕнсе хăварчĕ: — Эс пыр-ха пĕрре ман пата, эп сана фронтран илсе килнĕ фриц япалисене парса ярăп, спектакльсем лартнă чух кирлĕ пулĕç, — терĕ. Анчах куккăшĕ патне кайса килме Евгени ниепле те вăхăт тупаймарĕ.

«Халь кĕрсе тухатăпах ĕнтĕ», — шухăшларĕ вăл лашине ытти лавсем хыççăн чуптарса.

Çĕрле шăнтнипе çул хулари асфальт пекех хытса ларнă, ни пылчăк çук, ни тусан. Кутăруçăн кўлмен лашасем хăйсемех, хăваламасăрах лайăх чупаççĕ. Ик-виçĕ ял витĕр тухса темиçе уй урлă каçсан «Çĕнĕ самана» колхоз лавçисем çаралса, хуралса юлнă Атăл вăрманне курчĕç, вăрман хушшипе кăштах пырсан Ильинкăна та çитсе тăчĕç.

Малта пыракан Назар Егорччă лашине тўрех ял Совечĕ патнелле тытрĕ. Кунта ытти ялсенчен çитме ĕлкĕрнĕ лавсем те чылай-мĕн.

— Эсир кăштах ларăр-ха, эпĕ кĕрсе пĕлем, — терĕ те Назар

Егорчча хайӗн ҫыннисене аллинчи пушшипе сулкаласа утса ял Совет канцелярине кӗрсе кайрӗ.

Хайӗн куккӑшӗ кунти ял Советӗнче ӗҫленине пӗлнипе Евгенин те Назар Егорччӑ хыҫҫӑн каяс килчӗ. Нумай шутласа тӑмасӑрах вӑл малтарахри лав ҫинче ларакан Аркаш патне чупса пычӗ.

— Эсӗ ман лашана та пӑхкала-ха, эпӗ йӑпӑрт кукка патне кӗрсе тухам...

Аркаш килӗшсе пуҫӗпе сулса илчӗ.

Ял Советӗнче халӑх туллиех иккен. Ҫын сӑнӗ палӑрми чӗлӗм туртса тултарнӑ, симӗс тӗтӗм айӑн-ҫийӗн явӑнать, чыхӑнсах каймалла. Ҫынсем шавлаҫҫӗ, тем пирки тавлашаҫҫӗ пулмалла. Евгени малалла иртесшӗн пулчӗ, анчах халӑх хушшинче хӗсӗнсех ларчӗ.

Вӑл ӗнтӗ каялла тухма та шут тытнӑччӗ, анчах ҫав вӑхӑтра куккӑшӗ хыттӑн кӑшкӑрнине илтрӗ:

— Шӑпланӑр, юлташсем! Халех сире список вуласа паратпӑр!

Ҫынсем шавлама чарӑнчӗҫ. Кӗҫех Евгени куккӑшӗн сасси мар, урӑх сасӑ илтӗнчӗ:

— Малтан «Ҫиҫӗм» колхоз илсе каять. Пур-и унти ҫынсем?

— Пур! — терӗ тахӑшӗ кӑмака ҫумӗнчен.

— Пилӗк ҫемье! Унтан Ленин колхозӗ...

— Кунта!

— Ҫичӗ ҫемье. «Хӗрлӗ ҫӑлтӑр» колхоз...

— Мы!

—Ултӑ ҫемье...

— «Малалла» колхоз! Улттӑ. «Коммунизм ҫулӗ» — саккӑр. «Хӗрлӗ хунав» — пиллӗк...

Мӑн куҫлӑхлӑ ҫын колхоз ячӗсене, кашни колхоз эвакуированнӑйсен миҫе ҫемйине илсе каймаллине йӗркипех каласа пычӗ.

«Валеҫеҫҫӗ... — шухӑшларӗ Евгени хӑлхисене чӑнк тӑратсах итлесе. — Пире миҫе ҫемье параҫҫӗ-ши?»

Анчах вӗсен колхозне темшӗн асӑнмарӗҫ. Нумай колхозсен ячӗсене илтсе юлчӗ Евгени, анчах «Ҫӗнӗ самана» ячӗ тухмарӗ. Мӗншӗн-ши? Нивушлӗ пурне те валеҫсе пӗтерчӗҫ вара? Апла пулсан килни те ахалех пулать, тата... тата кӳренмелле те пулса тухать: ытти колхозсенче эвакуированнӑйсем пулаҫҫӗ, вӗсене пӗтӗм халӑхпа пулӑшса, пӑхса усраҫҫӗ, «Ҫӗнӗ саманара» пачах та ҫук, вӑрҫӑ пирки тӑван килӗсенчен тарса тухса темӗн тӗрлӗ асап курнӑ совет ҫыннисене «Ҫӗнӗ самана» колхозникӗсем пулӑшма тивӗҫсӗр пулнӑ пек...

Кун пирки Евгени кӑна мар, вӗсен колхоз председателӗ Назар Егорччӑ та пӑшӑрханнӑ иккен. Списока вуласа пара-

канни хăйсен колхозне асăнман пирки вăл маларах хирĕнсе тухрĕ те Евгенисен куккăшне паллана май ун çине пăхса хыттăн ыйтрĕ:

— Бурлаков юлташ! Петр Васильч! «Çĕнĕ самана» колхоз ăçта кайса кĕнĕ вара? Ун ячĕ ма тухмарĕ? Е эпир çынсенчен кая, çак хисеплĕ ĕçе хутшăнма тивĕçлĕ мар? Ăнлантарса парха эс мана!

Бурлаков ун çине тĕлĕнерех пăхрĕ.

— Тивĕçлĕ мар тесе кам калать сире? Эп пĕлнĕ тăрăх, эсир — малта пыракан колхоз...

— Апла пулсан мĕн тата? Пире мĕншĕн асăнмарăр?

— Эпир список тума тытăннă чух эсир çукчĕ, çавăнпа çеç пулчĕ ку, килмеççĕ пуль терĕмĕр...

— Анчах эпир кунта ĕнтĕ!

Çав вăхăтра Евгени те сĕтел умне хĕсĕнсе тухма вăй çитерчĕ-çитерчех. Çамки çине анса ларнă çĕлĕкне тӳрлетсе вăл куккăшне сĕтел урлă карăнсах мăн çын пек алă пачĕ:

— Сывă-и, кукка?

— О-о, эсĕ те кунта-и? — тĕлĕнчĕ лешĕ.

— Тин çеç çитрĕмĕр. Вунă лав пирĕн. Ан кӳрентерĕр ĕнтĕ, пире те пĕр пилĕк çемье те пулин парăр. Ялта халь пурте хатĕрленеççĕ, урайсем çăваççĕ, мунчасем хутаççĕ, эпир хамăр та пĕр çемье усрас тетпĕр, — хăвăрт-хăвăрт каласа тăкрĕ Евгени.

— Çук, çук, кӳрентерместпĕр! Тăвансене епле-ха хур тăватăн? — кулса илчĕ куккăшĕ. — Анчах сирĕн кăштах кĕтмелле пулать, малтан спискра асăннисене ăсатса яратпăр, унтан — сире. Эсĕ унччен кукаму патне кайма пултаратăн, пулă ăшаласа çитерĕ вăл сана. Вăхăт çитсен хамах пырса чĕнĕп. Халĕ пирĕн каймалла ĕнтĕ...

Ял Совечĕ патĕнчи лавсем, «Çĕнĕ самана» лавĕсемсĕр пуçне, пурте шкулпа клуб патнелле туртăнчĕç. Канцеляринчен тухнă çынсем те çавăнталлах утрĕç. Колхозсен списокне вуласа панă мăн куçлăхлă самăр çын хăйпе юнашар пыракан çар çыннипе хура кĕрĕклĕ хĕрарăма тем çинчен аллисемпе сулкаласах ăнлантарса пычĕ. Вăл тек-текех «больница», «эмел», «тухтăрсем» сăмахсене асăнчĕ.

«Кусем Шупашкартан килнисем пулмалла», — шухăшларĕ Евгени хăй ăшĕнче, вĕсенчен инçетре те мар утса пыраканскер. Куккăшĕ ăна хăйсем патне кайма хушрĕ пулин те Евгени унта каймарĕ («кукамая ăна кирек хăçан та курма пулатьха»), унăн çак инçетрен килнĕ çынсене, эвакуированнăйсене, питĕ курас килчĕ. Мĕнлерех çынсем-ши вĕсем, камсем?

Ял Советĕнчен пынисем тӳрех шкула кĕчĕç, Евгени те юлмарĕ. Шкул крыльци çине хăпарсан вăл хăйне тахăшĕ çурăмран тĕртнине туйрĕ. «Кĕме хушаççĕ ĕнтĕ, çавăнпа ку...» —

шухăш вĕçсе илчĕ унăн. Анчах каялла çаврăнса пăхрĕ те... Аркаша курах кайрĕ.

— Эс мĕн? Хăратсах пăрахрăн...

— А эсĕ ху тата ма пăрахса хăвартăн мана? — ун куçĕнчен чăр-р пăхрĕ Аркаш. — Хăй килет, мана систермест! Ларатăп, ухмах пек, лашасене сыхласа...

— Май килмерĕ...

Вĕсем шкулăн пĕр класне хĕсĕнсе кĕчĕç те стена çумне йăпшăнчĕç. Лăк тулли халăх иккен кунта! Мĕн тĕрлĕ çын çук пулĕ... Ват стариксемпе карчăксем, темиçе ачаллă хĕрарăмсем, çамрăк йĕкĕтсемпе хĕр ачасем... Сĕтелсем çинче, партăсем çинче, урайĕнче — пур çĕрте те çын, çын... Пĕрисем ларaççĕ, теприсем выртаççĕ, выртаканнисем çумĕнче вĕт-шаксем йăшăлтатаççĕ. Тумĕсем вара пĕрин те кунти çынсен пек мар — арçынĕсем шав шлепкесемпе, çутă сăмсаллă карттуссемпе, хăшĕсем урисене чĕркуççи таранах шнуроксемпе тирсе çыхнă атă пек пушмаксем тăхăннă, шăлаварĕсем сарлака, темле тăваткăл-тăваткăл ӳкерчĕклĕ пуставсенчен çĕленĕ. Хĕрарăмĕсем те кунтисем пек мар, çӳçĕсене темле лĕпке тĕлне купаласа çыхнă, кĕписем — шат ула-чăла, хăшĕсем çиелтен çанăсăр вăрăм халат пеккисем тăхăннă. Калаçасса вырăсла мар, темле урăхла чĕлхепе калаçаççĕ...

— Камсем-ши вĕсем? Мĕнле халăх-ши? — шăппăн ыйтрĕ Евгени хăйпе юнашар тăракан Аркашран.

— Тăхта, пĕлĕпĕр-ха... — терĕ тусĕ.

— Вырăсла вуçех те пĕлмеççĕ-ши вара вĕсем? Апла пулсан кунта пурăнма вĕсене пит кансĕр пулать вĕт...

— Вĕренеççĕ пулинех...

Çав вăхăтра класа пaçăрхи мăн куçлăхлă çынпа Евгенисен куккăшĕ кĕрсе пӳлĕм варринерех тухрĕç те пурне те шăп пулма ыйтрĕç.

— Граждансем, — терĕ куçлăхли, — сирĕн халех çак таврари тĕрлĕ ялсене каймалла пулать. Тимлĕрех итлĕр, эпĕ список вулама пуçлатăп. Кама асăнатăп — вĕсен хăйсен япалисене илсе урама тухас пулать. Лавсем пурин валли те хатĕр. Ăнлантăр-и?

— Ăнланатпăр, — терĕ темиçе арçын.

Куçлăхлă çын аллинчи хут тăрăх вулама тытăнчĕ. Тĕлĕнмелле, нихçан илтмен-вуламан ятсемпе хушаматсем каларĕ вăл, пĕрне те астуса юлас çук! Евгенипе Аркаш сывламан пек пулса итлерĕç...

— Иоганн Орас! — вуларĕ куçлăхли. — Мююр Освальд!

— Лотта Юргенс! Отто Лан!

— Юлиус Ноор!

Аркаш Евгение хулĕнчен пăчăртаса тытрĕ те хăвăрт пăшăлтатса илчĕ:

— Ара, нимӗҫсем вӗт кусем! Мӗн тума илсе килнӗ вӗсене кунта?!

— Ҫук, нимӗҫсем мар пуль, нимӗҫсем пулсан вӗсене пӗр-пӗр лагере янӑ пулӗччӗҫ, — терӗ ӑна хирӗҫ Евгени.

— Епле нимӗҫсем мар? Ячӗсене итле-ха эсӗ — Лотта, Отто...

— Ман шутпа, вӗсем Литва, Латви таврашӗнчен, унта ҫавӑн пек ятсем пулаҫҫӗ.

— Ӑҫтан пӗлетӗн?

— Эпӗ пӗр кӗнеке вуланӑччӗ...

Эвакуированнӑйсем япала ҫыххисене, чӑматанӗсене, карҫинккисене, пӗчӗк ачисене йӑтса, пысӑкраххисене аллисенчен ҫавӑтса тулалла тухма пуҫларӗҫ. Кунта вӗсене лавсем ҫине Евгенисен куккӑшӗ вырнаҫтарчӗ, список ҫине пӑха-пӑха камӑн ӑҫта лармаллине кӑтартрӗ. Час пулмарӗ ку. Ҫав вӑхӑтрах ҫанталӑкӗ сивӗтсе пычӗ; сӑнсӑрланнӑ, унта та кунта пӑрланнӑ Атӑл енчен — ҫурҫӗртен вӗрекен ҫил вӑйланнӑҫемӗн вӑйланчӗ, ҫилпе пӗрле шултра юр пӗрчисем вӗҫсе килчӗҫ. Пӗлӗт тӑхлан тӗслӗ, унран хӑйӗнченех сивӗ тухса тӑнӑн туйӑнать. Кун пек ҫанталӑкра темиҫе уй урлӑ каҫасси — ырӑ ӗҫех мар вара, пуринчен ытла лав ҫинче ачасем е начартарах тумланнӑ ҫынсем ларса пыраҫҫӗ пулсан...

Ҫавӑнпа та эвакуированнӑйсене вырнаҫтарма килнӗ комисси васкасах ӗҫлерӗ. Ӗнер пӑрахут ҫинчен антарнӑ хыҫҫӑн шкулта ҫӗр каҫнисене лартса ярсан клубрисене ӑсатрӗҫ, унтан канмалли ҫуртӑн пӗр корпусӗнче кӗтсе ларакансем патне кайрӗҫ.

Евгени хӑйӗн куккӑшӗпе юнашар утса пычӗ.

— Халӗ пире те парса яратӑр пулӗ ӗнтӗ? Каҫ пулать вӗт атту пире кайма, — терӗ вӑл.

— Парса яратпӑр, халь парса яратпӑр, — терӗ куккӑшӗ. — Эсӗ кукаму патӗнче пултӑн-и ҫав?

— Каймарӑм...

— Ара, эсӗ нимӗҫ япалисене туянасшӑнччӗ-ҫке?

— Тепринче килӗп ӗнтӗ...

Канмалли ҫуртра вырнаҫнисенчен ултӑ ҫемьене комисси «Ҫӗнӗ самана» колхоза яма шут турӗ. Шупашкартан килнӗ ҫын — каллех лешӗ, мӑн куҫлӑхлиех — Назар Егорччӑран кӗскен кӑна ыйтса пӗлчӗ:

— Хваттерсем хатӗр-и? Илсе пырсанах вырнаҫтарма пултаратӑн-и?

Назар Егорччӑ та кӗскен ответ пачӗ:

— Ан пӑшӑрханӑр, пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулать...

Вара Шупашкар ҫынни Назар Егорччӑпа пӗрле пӗр пысӑк пӳлӗме кӗчӗ те унта ларакансене лӑпкӑн кӑна пӗлтерчӗ:

— Эсир, граждансем, «Ҫӗнӗ самана» ятлӑ колхоза каятӑр,

сире ак çак старик илсе каять. — Вăл Назар Егорччă çине кăтартрĕ. — Ку çын — колхоз председателĕ, сирĕншĕн пур енчен те ответлă пулать.

— Инçе-и? — ыйтрĕ пĕр ырхантарах, кăвак сухалĕ шăрт пек тапса тухнă çӳллĕ старик хыçалти парта хушшинчен тăрса.

— Пĕр вунă километр пулать, унтан ытла мар, — терĕ Назар Егорччă. — Анчах уншăн ан пăшăрханăр, тĕттĕм пуличчен чиперех çитетпĕр, лашасем лайăх пирĕн...

— Больница пур-и унта? — ыйтрĕ çав старикех.

— Больница çук, анчах фельдшер пур. Лайăх фельдшер, тепĕр тухтăртан та ирттерет пулĕ...

— Эсир чирлĕ-и-мĕн? — ыйтрĕ Шупашкар çынни.

— Эп хам мар, пирĕн пĕчĕк хĕр ача чирлет... пилĕк çулхискер. Кунта тухтăр килсе пăхрĕ ăна, эмелсем пачĕ, халĕ аптрасах каймасть пек, анчах çул çинче тем пуласси пур, хăратпăр...

— Ан пăшăрханăр, юлташ, эпир ăна лайăхрах чĕркĕпĕр, — терĕ Назар Егорччă. — Ан хăрăр...

— Ну, вăхăта сая ярас мар, граждансем, — терĕ Шупашкар çынни.

Эвакуированнăйсем урама туха пуçларĕç. Унччен «Çĕнĕ самана» лавĕсене канмалли çурт патне илсе пырса тăратнă тамĕн. Чирлекен ачаллă хĕрарăма тата унăн çич-сакăр çулхи тепĕр хĕр ачине Назар Егорччă хăйĕн урапи çине питĕ тĕплĕ чĕркесе вырнаçтарса лартрĕ. Хĕр мăнукĕ чирли çинчен kалaнă старикпе пĕр вун ик çулхи арçын ача Евгени лавĕ çине лекрĕç. Вĕсен япалисене вăл урапа хыçнерех вырнаçтарса çыхса хучĕ.

— Васкарах майлашăр, васкарах, — кăшкăрчĕ Назар Егорччă ытти лавçăсене.

Тепĕр çирĕм минутран «Çĕнĕ самана» лавĕсем Ильинкăран тапранса тухрĕç. Малтан, çул тăвалларах пулнипе, лашасене уттарсах пыма тиврĕ, анчах тӳрем вырăна тухсан малта пыракан Назар Егорччă тилхеперен пĕрре кăна туртса хуллен шăхăрсанах унăн Çулăмĕ урисене вăрăммăн ярса хăвăрт юртма тытăнчĕ. Ун хыççăн ытти лавсем те шăн çул тăрăх кăлтăртатма тытăнчĕç.

Евгени урапа пуçĕнче чĕркуççи çинче тăрса пычĕ. Вăхăтран вăхăта, лаши ахалех лайăх чупать пулин те, тилхепене вăл кăрт-карт! турткаласа илчĕ, но-но, ан юл текелерĕ. Хăй пĕрмай малалла пăхрĕ, хирĕç вĕрекен çил ытла вăйлах мар пулин те унăн питне майĕпе хĕретсе пычĕ. Хутран-ситрен кăна вăл хăйĕн çурăмĕ хыçĕнче ларса пыракан старикпе унăн мăнукĕ çине çаврăнса пăхкаларĕ. Тĕрĕссипе каласан, Евгенин вĕсемпе кăшт та пулин калаçса илес, вĕсем çинчен ыйтса

пĕлес килчĕ, анчах сăмах хушма ниепле те ытла тӳрех хăюлăх çитереймерĕ.

Старикĕ вырăсла пĕлет, вăл паллă, паçăр Шупашкар çыннипе те, унтан Назар Егорччăпа та калаçрĕ. Темле кунти пек мар, сăмахсене кăштах хуçкаласа калаçать, çапах та ăнланмалла хăйне. Мĕнрен пуçлас-ши? Çав иккĕлентерчĕ Евгение. Тата... хăй вырăсла тĕрĕс мар калаçасран та пăртак хăрарĕ вăл. Каласа хурăн та — йăнăш, кулăшла пулса тухĕ! Ирĕксĕрех намăс курас пулать вара ют çын умĕнче.

Лаша çаплах чупрĕ, урапа кустăрмисем пĕр майлăн кăлтăртатрĕç...

Вĕсем пĕр яла пырса кĕчĕç. Урам тăвалла хăпарнă пирки Назар Егорччă лашине чуптарма пăрахрĕ. Урампа пĕр харăсах вунă лав таран пынине курса çак ял çыннисем вĕсем çине тилмĕрсех пăхрĕç, кашни чӳречеренех темиçешер çын сăнарĕ, хăшĕсем, лайăхрах курас тесе пулас, урам хапхисем умне те туха-туха тăчĕç. Унтан та кунтан ыйтнисем илтĕнчĕç:

— Ăçтисем, ара, эсир?

— Инçе илсе каятăр-и кусене?

Лавçăсем пур еннелле те ответ пачĕç, çав хушăрах хăйсем те ыйтрĕç ку ял çыннисенчен:

— Сирĕн колхоз илме кайман-им паян? Атăлтан инçе пурăнмастăр-çке, мĕнле апла тата?

— Пирĕн пата пĕркунах килнĕ, сакăр çемье усратпăр.

Ялтан тухсан лашасем каллех юртма тытăнчĕç. Халь ĕнтĕ Евгени хăй илсе килекен çынсемпе калаçма пуçлатăпах тесе çирĕп шут турĕ. Калас тенĕ сăмахсене малтан чăвашла шутласа хурас та вырăсла куçарса хатĕрлес.

«Сире сивĕ мар-и?» мĕнле пулать-ха вăл? Аха, çапла...

Евгени хăйĕн çывăрса кайма пуçланă урисене çемçетмелле чĕркуççи çинчен тăчĕ те ӳрече çине ларчĕ. Халĕ ăна старик сăнĕ те лайăх курăнчĕ, вăл тĕлĕрнĕ пекрех пырать иккен. Ачине пуçĕ çинченех утиялпа витнĕ те — лешĕн пичĕ курăнмасть. Ахăртнех, вăл та çывăрать пулĕ...

— Товарищ! Вам не холодно? — тăрук ыйтрĕ те Евгени хăйĕн сасси ытла хытă тухнинчен хăй те темле хăраса кайрĕ.

Старик картах сиксе вăранчĕ те куçĕсене мăчлаттарса илчĕ.

— Что, мальчик? Ты что-то сказал? — ыйтрĕ вăл.

— Не холодно вам, говорю! — терĕ Евгени.

— О, нет! Спасибо, не холодно. Чуть-чуть, немножко ветер, но это ничего, ничего... Терпеть можно.

— А мальчик как?

— Мальчик спит, ему хорошо. Мальчик очень устал, ему надо очень спать, много спать... — Старик ача пуçĕ çине витнине тӳрлетрĕ.

Калаçу чиперех пуçланнишĕн Евгени питĕ хĕпĕртерĕ. Ют çынсемпе вырăсла калаçма та пултарать иккен вăл, ахаль мар вырăс чĕлхипе унăн «отлично». Кăшт кайсан вăл каллех сăмах хушрĕ:

— Ничего, скоро будем дома... дома тепло!

— А далеко еще ехать? — ыйтрĕ старик.

— Нет! Еще будет наверно... семь верстов! — терĕ Евгени.

— Километров?

— Да, да... — Евгени хăй йăнăш каланине сисрĕ те («верстов» темелле марччĕ, «вёрст» темеллеччĕ!) циклăн именнĕ пек пулса пĕр хушă чĕнмерĕ, анчах çак çынсем çинчен ыйтса пĕлес килни ăна каллех канлĕх памарĕ, вăл татах калаçа пуçларĕ.

— А вы откуда пришли... приехали?

— Мы из Эстонии. Знаешь? Далеко это, там, где Балтийское море... — Старик аллипе çурçĕрелле сулса кăтартрĕ.

— Знаю, — терĕ Евгени. — В книге географии есть...

— Вот, вот... Очень далеко.

Евгени çавăнтах хăйсен класĕнче çакăнса тăракан географи карттине аса илме тытăнчĕ: «Акă Ленинград... Унтан сулахай еннелле кайсан Литва пулать, сылтăмалла, çурçĕрелле, Эстони... Тĕп хули мĕнлеччĕ-ха вĕсен? Вильнюс — Литван... Эстонин — Таллин... Тĕрĕс, Таллин. Финский залив хĕрринче».

— Вы из Таллина? — ыйтрĕ каллех Евгени.

— Нет, еще дальше. Остров Сааремаа...

Кун çинчен Евгени илтмен. Ăçтарах-ши вăл? Ыранах шкула кайсан карттă çинче шыраса тупас пулать ăна.

— А этот мальчик в школе учится? — çывăракан ача çине кăтартрĕ Евгени.

— Да, да, он ученик. Хороший ученик, — терĕ старик.

— В каком классе учится?

— В пятом учился. Теперь — нет, теперь у нас война. Германец пришел, фашист. Школы сгорели.

— А как мальчику имя? — хăюлансах тĕпчеме тытăнчĕ халь Евгени.

— Его зовут Ян.

— Иван? — старик çине тĕлĕнсе пăхрĕ Евгени. — Разве в Эстонии тоже Иваны есть?

— Не Иван, а Ян, — ăнлантарчĕ старик. — Я-н. Две буквы. Понимаешь? Это есть такое короткое имя.

Евгени ăнланатăп тесе пуçĕпе сулса илчĕ.

Вĕсем татах калаçатчĕç пулĕ те, лавсем тарăн çырма хĕррине пырса тухрĕç. Кунта асăрханса анас пулать. Евгени каллех чĕркуçленсе тăчĕ те тилхепине хыттăн туртса лартрĕ. Лаша ерипен урапана пĕтĕм вăйĕпе каялла тĕксе утрĕ.

Çырма тĕпĕнчи кĕпер урлă каçсан, лашана çăмăлтарах

пултăр тесе, Евгени урапа çинчен siксе анчĕ. Унăн халĕ Аркашпа калаçасси килчĕ, çавăнпа та вăл чарăнса тăрса унăн лавне кĕтсе илчĕ. Аркаш та урапа çинчен аннă-мĕн, лашипе юнашар утса пырать.

— Ну, мĕнле? — ыйтрĕ Евгени.

— Мĕн мĕнле? Кăштах урасем шăнчĕç, — терĕ Аркаш пĕр вырăнта тăпăртатса илсе.

— Камсене илсе килетĕн? Паллашрăн-и?

— Паллашрăм çав! Белоруссем. Амăшĕпе икĕ ачи килеççĕ. Асли — Петрусь, пирĕнпе пĕр çулхискер, тепри хĕр ача, Калери, тăххăрта. Хушамачĕ питĕ кулăшла — Дорожка. Чăвашла каласан сукмак пулать ĕнтĕ вăл. Эсĕ ху кама илсе килетĕн?

Евгени каласа пачĕ.

— Эпĕ ку çемьене хамăр патрах усрас тетĕп. Анне килĕшет пулсан тӳрех киле илсе каятăп, — терĕ Аркаш.

— Ма килĕшмест пулĕ? Эпĕ те хамăннисене хамăр патах илесшĕн-ха, — терĕ Евгени те. — Арçын ачипе лайăх юлташсем пулатпăр...

— Шкулта вĕренес пирки мĕнле пулать-ха вĕсен? — ыйтрĕ Аркаш. — Чăвашла та, вырăсла та пĕлмеççĕ. Ку, Петрусь, ман лав çинчи кăшт чухлакалать-ха, вĕсен чĕлхи вырăссенни майлăрах, анчах эстонецсем пĕлмеççех ĕнтĕ.

— Тен, вĕсем хушшинче хăйсен учителĕ пур, пĕлместпĕрха вĕт эпир, — терĕ Евгени. — Çук пулсан ашшĕ-амăшĕсем мĕн те пулин шухăшласа кăларĕç...

— Ларăр, кайрăмă-ăр! — Назар Егорччă кăшкăрни илтĕнчĕ çав вăхăтра.

Туссем уйрăлса хăйсен лавĕсем патнелле ыткăнчĕç. Лашасем каллех пĕр майлăн чупма тытăнчĕç, урапасем кăлтăртатни илтĕнчĕ. Тавралăх майĕпе тĕттĕмленсех пычĕ, çил вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Унтан сасартăк шултра юр çума тапратрĕ те, уйра куç-пуç курми çил-тăман çавăрттарма пуçларĕ. Лавçăсем лашисене хытăран хытă хăваларĕç.

Тăван ял çывхарсах пычĕ...

## Малтанхи каç

Кĕске-çке вăл кĕр кунĕ! Лавсем яла çитнĕ чух пăч тĕттĕм пулса ларчĕ. Пӳртсенче краççын çутнăччĕ ĕнтĕ, кашни чӳречеренех урамалла тĕксĕмрех хĕрлĕ çутă ӳкет.

Эвакуированнăйсене малтанлăха правление илсе кĕртрĕç.

— Япалисем лавсем çинчех пулччăр, хăйсем ăшăнччăр, — терĕ Назар Егорччă.

Вĕсем килессе кĕтсе паян кунĕпех правлениреп халăх таталман. Пĕрисем пынă, теприсем кайнă, вĕсем вырăнне урăххисем пырса çитнĕ.

— Çук-и-ха? Çак таранччен те килмерĕç-и? — ыйтнă пурте.

— Çулĕ ытла инçе те мар-çке, хальччен унта иккĕ те хутлама пулать!

— Тĕлĕнмелле...

Халĕ вара илме кайнисем килсе çитнине пĕлсен правлени çуртне çынсем лăках тулчĕç — мăннисем те, ача-пăча та. Кашниех маларах иртесшĕн, ютран килнисене курасшăн. Хĕрарăмсем шавлăн калаçма, хĕрхенме, кулянма тытăнчĕç.

— Ай-у-уй, пĕчĕккисем те пур-çке! Мĕн кăна тӳсмерĕç пулĕ вĕсем çул çинче, мăнтарăнсем...

— Эй, шуйттан Гитлерĕ-ĕ! Çаксем пурте чип-чипер хăйсен килĕсенче пурăнмалли çынсем вĕт-ха...

— Аçа çаптăрах, çĕр çăттăрах вăл тăшмана пирĕн çынсене çакăн пек асап кӳнĕшĕн!

— Чирлисем те пур пулмалла, ав пăх-ха леш хĕрарăм аллинчи ачана, епле йывăр сывлать вăл...

— Чирлемесĕр, ара! Ачана нумай кирлĕ-им? Кăштах шăнать те, пулчĕ те вара...

Бригадирсемпе, правлени членĕсемпе пĕрле хăйĕн пӳлĕмĕнче темиçе минут хушши калаçса илнĕ хыççăн Назар Егорччă алăка уçрĕ те пурне те килĕсене саланма хушрĕ.

— Кунта спектакль мар, çăвар карса пăхса тăмалли нимĕн те çук. Çынсене часрах вырнаçтарса кантарас пулать, — терĕ вăл. — Камăн эвакуированнăйсене илсе каймалла, çавсем çеç юлччăр...

Назар Егорччă хыçĕнче тăракан Евгени хăйĕн амăшĕ патнелле хĕсĕнсе тухрĕ.

— Эпир те илсе каятпăр пуль, анне? — хăвăрт ыйтрĕ вăл унран.

— Илетпĕр, — килĕшсе пуçĕпе сулчĕ амăшĕ. — Эп пĕтĕмпех хатĕрленĕ ĕнтĕ.

— Апла пулсан эп хам лартса килнисене йышăнăпăр. Пĕр старикпе пĕр хĕрарăм, виçĕ ача...

— Юрĕ, тăхта пăртак.

Çакăн хыççăн Евгени вата эстонец умне пырса тăчĕ.

— Пойдем к нам, в наш дом! — терĕ вăл ăна. — Будет хорошо.

— Спасибо, спасибо, — пăшăлтатса илчĕ старик. — Но надо позвать доктор, врач... фельдшер. Нашей девочке опять тяжело.

— Фельдшер здесь, я скажу, она придет.

— Спасибо...

Евгени каялла, председатель пӳлӗмӗ патнелле, ыткӑнчӗ — фельдшерица Назар Егорчӑпа пӗрле тӑрать-мӗн. Анчах ун патне ҫитиччен вӑл ҫынсем хушшинче Аркашпа пите-питӗн тӗл пулчӗ.

— Ну, мӗнле, аннӳпе калаҫрӑн-и? — ыйтрӗ Евгени.

— Калаҫрӑм, ҫавсене илсе каятпӑр...

— Пит аван апла пулсан! Манӑн Антонина Клементьевнӑна пӗр сӑмах каламалли пур-ха. Чирлӗ пирӗн пӗр ачи...

Тепӗр ҫур сехетрен правленире никам та юлмарӗ. Эвакуированнӑйсене илсе каймаллисем вӗсене каллех лавсем ҫине лартса кайрӗҫ, ыттисем те килӗсене саланчӗҫ. Пӑч тӗттӗм урамсенче шӑп пулчӗ, ниҫта та пӗр ҫын сасси те, утни те илтӗнмерӗ, анчах чылай чӳречере нумайччен ҫутӑ курӑнчӗ-ха, ҫынсем ҫывӑрма васкамарӗҫ вӑл каҫ. Инҫетрен килнисене хӑйсем патне йышӑннисем вӗсене ӑшӑтса, ҫитерсе-ӗҫтерсе, вырӑнсем хатӗрлесе вӑраха юлчӗҫ курӑнать, ыттисем ҫав ҫынсен йывӑр шӑпи, асапӗ-хурлӑхӗ ҫинчен шеллесе калаҫрӗҫ. Паллах ӗнтӗ, ҫавна май хӑйсен вӑрҫӑри тӑванӗсене асӑнмасӑр та пулман: ӑҫта-ши, мӗнле-ши?..

...Эстонецсен ҫемйине Евгенипе амӑшӗ тӳрех малти пӳрте иртгерчӗҫ.

— Вырнаҫӑр, ку пӳлӗмре эсир хӑвӑр хуҫа пулатӑр, — терӗ амӑшӗ, вырӑсла самаях лайӑх калаҫаканскер. — Акӑ сире валли икӗ вырӑн, кирлех пулсан тата тепӗр вырӑн тума пулать...

Евгени асӑрхарӗ: амӑшӗ паян пӳрт ӑш-чиккине праҫник умӗнхи пекех тасатса тирпейленӗ. Сӗтел ҫине ҫӗнӗ ҫитти сарнӑ, чечек чӳлмекӗсене шурӑ хутпа чӗркенӗ, чӳрече каррисене те лайӑххисене кӑларса ҫакнӑ.

«Маттур ҫав пирӗн анне...» — шухӑшларӗ Евгени тулли кӑмӑлпа.

Ют ҫынсем чӑн малтан хӑйсен чирлекен хӗр ачине ҫемҫе вырӑн ҫине меллӗн выртгарчӗҫ, унтан пурте пичӗсене ҫурӗҫ, ҫи-пуҫӗсене йӗркене кӗртрӗҫ. Ҫав хушӑра Евгени амӑшӗ сӑмавар ӑшӑтрӗ, чей чашкисем кӑларчӗ, ирхине пӗҫернӗ кукӑльсене кӑларса хучӗ, ашшӗ вӑрҫӑ умӗн кӑна туяннӑ сенкер вазӑпа пыл лартрӗ.

— Ну, халь ӗнтӗ килӗр, пурте сӗтел хушшине вырнаҫӑр... — терӗ вӑл юлашкинчен.

— Ҫимеллисене эпир хамӑрӑнне кӑларӑпӑр, пур-ха пирӗн... — тытӑнарах тӑчӗ старик.

— Ҫук ӗнтӗ, сирӗнни нимӗн те кирлӗ мар, паян эсир пирӗн хӑнасем пулатӑр, — терӗ ӑна хирӗҫ Евгени амӑшӗ. — Иртӗр тавай, ларӑр, именсе ан тӑрӑр, килти пек пулӑр...

Ҫакӑн хыҫҫӑн вара старик сӗтел пуҫне пырса ларчӗ, ыттисене хӑйсен чӗлхипе тем каларӗ те — лешсем те, хӑюсӑртарахxӑн пулин те, сӗтел хушшине вырнаҫрӗҫ.

Евгени амӑшӗ пурне те чей ярса пачӗ, пыл, кукӑль илме сӗнчӗ.

— Спасибо, спасибо, — терӗ старик пӗрмай хӑйӗн кил-йышӗ ҫине кӑмӑллӑн пӑхса ҫаврӑнса. Паллах ӗнтӗ, вӑл хӑйсем ҫакӑн пек ырлӑха тинех курмалла пулнӑшӑн чунтан савӑнчӗ.

Пурте ҫиме тытӑнчӗҫ, кӑшт тӑрсан Евгени амӑшӗ тем ҫинчен аса илнӗ пек пулчӗ те йӑпӑртлӑха чӑлана кӗрсе тухрӗ. Ун аллинче хӗрлӗ эрех кӗленчи курсан Евгени тӗлӗнсех кайрӗ: мӗнле япала тата ку, ӑҫтан тупнӑ вӑл ӑна?

— Упӑшкана вӑрҫа ӑсатнӑ чух илнӗччӗ те, сирӗн телее, тӗпне кӑштах юлнӑ... — терӗ амӑшӗ старикпе унӑн кинӗ ҫине пӑхса.

Вӑл эрехе виҫӗ пӗчӗкҫеҫ черкке ҫине тултарса иккӗшне вӗсем умне лартрӗ, пӗрне хӑй тытрӗ.

— Хӑналанар-ха эсир чипер ҫитнӗ ятпа... Сирӗн сывлӑхшӑн!

Евгени амӑшӗпе старик ӗҫрӗҫ, анчах хӗрарӑм черкке тӑррине ҫеҫ ӗмсе илчӗ.

— Халӗ лайӑхрах паллашар ӗнтӗ, — терӗ унтан Евгени амӑшӗ, — пирӗн малашне пӗрле, пӗр кил-йыш пек пурӑнма тивет, ҫавӑнпа та пӗр-пӗрне пӗлес пулать... Мана чӑвашла Улька теҫҫӗ, вырӑсла вӑл Ольга пулать, атте ячӗпе каласан — Павловна, анчах ку кирлех те мар. Ачамсенчен ак ку акӑ, сире илсе килекенни, Евгени, хӗр ачине Марине тетпӗр.

— О, аван, питӗ аван ачасем... — терӗ старик. — Вӗсен ашшӗ ӑҫта?

— Арҫынсем хальхи вӑхӑтра ӑҫта пуласси паллӑ ӗнтӗ, вӑрҫӑра вӑл, — ассӑн сывласа илчӗ кил хуҫи.

— Сирӗн хушаматӑр мӗнле тата?

— Рыбаковсем эпир, — амӑшӗнчен малтан каласа хучӗ Евгени. — Сирӗн хӑвӑрӑн мӗнле?

— Пирӗн — Киккас. Эпӗ хам — Пауль, Пауль Оскарович.

Унтан старик ыттисен ячӗсене каласа тухрӗ. Чӑн пӗчӗккин, Эльгӑн, ятне асӑнсан Евгени амӑшӗ савӑнсах кайрӗ:

— Эльга тени — вырӑсла Ольга пулать пуль вӑл? Апла эпир унпа иксӗмӗр пӗр ятлӑ-иҫ? Пӗр килте ик Ольга пулатпӑр эппин...

— Ҫапла, ҫапла, — пусӗпе темиҫе хут сулса илчӗ старик. — Анчах чирлӗ-ха вӑл пирӗн, хӑратпӑр... — Вӑл Эльга выртакан вырӑн ҫине шиклӗреххӗн пӑхса илчӗ.

— Аптрамӗ-ха, сывалӗ, тин шӑнас ҫук, — лӑплантармалла каларӗ Улька.

— Эпӗ Антонина Клементьевнӑна чӗнтӗм-ха, — терӗ Евгени.

Шӑпах ҫав вӑхӑтра урам хапхи уҫӑлса хупӑнни илтӗнчӗ.

— Авӑ килет те пулмалла...

Чăнах та, çур минутранах пӳрте фельдшерица — çӳллĕ, арçын пек патвар, хурарах сăнлă хĕрарăм кĕрсе тăчĕ. Хулĕнчен вăл пысăк хĕрлĕ хĕреслĕ симĕс сумка уртса янă.

— Ырă каç пултăр пурне те!

— Килех, кил, Антонина Клементьевна, хывăн та малалла ирт, пирĕнпе пĕрле чей ĕçме лар, — вырăнтан тăрса ун патнелле пычĕ кил хуçи.

Кайри пӳртре тумтирне хывса çаксан Антонина Клементьевна малалла иртрĕ те унăн-кунăн пăхкаласа тӳрех:

— Ăçта-ха сирĕн чирли? — тесе ыйтрĕ.

Ватă Пауль хăйĕн кинне — Амалие — хăйсен чĕлхипе темскер каларĕ, лешĕ вара часрах ачи патне пырса ăна витнĕ утиялне кăкăр таран уçрĕ. Антонина Клементьевна хĕр ачана пуçĕнчен тытса пăхрĕ, унтан хул хушшине градусник лартрĕ.

— Пĕлер-ха малтан, температури мĕнле унăн...

Улька ăна та чей ярса пачĕ. Чей ĕçнĕ май вăл çак ача ку таранччен мĕнле-мĕнле чирсемпе чирлени, юлашки хут хăçан халсăрланса кайни, чирĕ мĕнрен пуçланни çинчен ыйтса пĕлчĕ. Фельдшерица ыйтнисене хирĕç пĕтĕмпех ватă Пауль каласа пачĕ, Амалия вырăсла пĕлменнипе нимĕн те чĕнмерĕ, вăл çак ют хĕрарăм çине шăтарас пек пăхса, тем кĕтнĕ пек пулса, хытă пăлханса ларчĕ. Антонина Клементьевна пĕчĕк хĕр ачан хул хушшинчен градуснике кăларса лампа патнерех, çутăрах çĕрелле, пĕр-ик утăм ярса пуссан ача амăшĕ те васкасах вырăнтан тăрса ун патнелле чупса пычĕ.

— Миçе?

Ачан температури пысăк иккен — хĕрĕх градус патнех. Антонина Клементьевна каласа париччен малтан ăна Амалия хăех курчĕ те куçĕсене чарса пăрахса питне икĕ аллипе хупласа лартрĕ.

— Хăрушă-çке... — терĕ ватă Пауль градуснике фельдшерица аллинчен илсе пăхса. — Мĕн тăвас пулать-ха?

Вăл пĕркеленчĕк тутине çыртса çĕрелле пăхса ларчĕ. Амалия пуçне сĕтел хĕррине хучĕ те пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе макăрма тытăнчĕ.

Антонина Клементьевна ăна лăплантарма пикенчĕ. Хĕрарăма хул пуççийĕнчен лăпкаса, ачашшăн, кăмăллăн ӳкетлерĕ:

— Чарăнăр, алла илĕр хăвăра хăвăр, кăмăлăра хытарăр! Ытлашши хуйхăрма кирлĕ мар-ха, пĕчĕк ачасен температура ытларах та пулать. Ан хăрăр...

Ватă Пауль унăн сăмахĕсене кинне эстонла куçарса пачĕ. Хĕрарăм куççульне çăта-çăта фельдшерица çине çав тери хурлăхлăн, анчах пысăк шанчăкпа пăхрĕ. Антонина Клементьевна çав вăхăтрах халат кĕсйинчен хура трубка кăларса чирлĕ ачана кăкăрĕнчен, хул айĕсенчен, çурăмĕ енчен итлеме тытăнчĕ.

Пурте шăп ларчĕç... Мĕн пулĕ-ши, мĕн калĕ-ши вăл?

Ик-виç минутран Антонина Клементьевна трубкине каллех кĕсйине чиксе тараннăн сывласа илчĕ те хуллен кăна:

— Ӳпки шыçать. Пневмония... Воспаление легких, — терĕ.

Пауль çавăнтах кун çинчен Амалие каларĕ. Лешĕ каллех макăрса ячĕ... Хальхинче ун патне Улька пырса лăплантарма тăрăшрĕ:

— Кирлĕ мар, кирлĕ мар макăрма, унтан усси çук вĕт-ха... Ача тени чирлемесĕр пулмасть ĕнтĕ вăл. Иртсе каять акă, чиперех пулать!

— Тĕрĕс, тĕрĕс, чирлĕ çынна куççулĕпе пулăшма çук, — татах ассăн сывласа илчĕ Антонина Клементьевна. — Эпир халех унăн температурине чакарма тăрăшăпăр та чĕрине ĕçлеме пулăшăпăр. Вара ăна çăмăлтарах пулĕ...

Вăл чылай хушă чирлĕ ача патĕнче тăрмашрĕ. Ăна пĕр-икĕ тĕслĕ эмел те пачĕ пулмалла, пуçĕ çине таса ал шăлли йĕпетсе хучĕ, ача еплерех сывланине татах итлесе тăчĕ, юн тымарĕ мĕнле тапнине тĕрĕслерĕ. Хăй ăшĕнче вăл та хытă пăшăрханчĕ пулмалла, анчах ăна никама та палăртмарĕ.

Пĕр вун пĕр сехетсем тĕлнелле Киккассен кил-йышĕ майĕпе вырнаçкаласа выртрĕ. Аслă ачисем, Янпа Юули, тӳрех вилнĕ пекех çывăрса кайрĕç, анчах аслисем — кăмака çумĕнчи хыçлă сак çине вырнаçнă ватă Пауль те, пĕчĕк ачипе выртакан Амалия та — çывăрмарĕç пулмалла, час та часах вĕсем вырăн çинче хускалкалани, ассăн сывла-сывла илни илтĕнчĕ. Эльга пирки хуйхăрнипе çывăраймарĕç ĕнтĕ вĕсем...

Евгени кайри пӳртри сентре çине хăпарса выртрĕ. Йăмăкĕ, Марине, кунта паçăрах чĕрĕп пек хутланса çывăрса кайнă. Евгени те часрах çывăрса каяс тесе куçĕсене хупрĕ, анчах ыйхи тăруках килмерĕ. Унăн куçĕ умне пĕрин хыççăн тепри паян курнисем кинори пек тухса тăма пуçларĕç. Ильинкăна кайни, унта нумай эвакуированнăйсене курни, вĕсене епле лартса килни, правлени тулли пухăннă халăх шавлăн калаçни...

Йывăр кун пулчĕ çав паян! Такама та курнă, тем те пĕр илтнĕ. Шăнма та тиврĕ пăртак. Çапах та киле чиперех çитнĕ, илсе килнисене вырнаçтарнă, малашне вĕсем лайăхах пурăнаççĕ ĕнтĕ. Ĕçлеме пĕлеççĕ-ши вĕсем? Хулара пурăннă çынсем вĕт. Тепĕр тесен — вĕренмеççĕ-им? Шел, пĕчĕк ачи сыв мар, чирĕ вăрăмах кайсан кансĕр пулать-ха унпа...

Çапла шухăшласа выртнă Евгени майĕпе çывăрса кая пуçларĕ. Анчах çав вăхăтрах аялта, кăмака умĕнчи чăланта, хăйсен амăшĕпе Антонина Клементьевна хуллен мăкăртатса калаçни илтĕнчĕ:

— Эппин, эсĕ кĕçĕр кунтах çывăр, вырăн туса парăп сана, — терĕ амăшĕ фельдшерицăна. — Ачи çĕрле татах йывăрланса

кайӗ те, мӗн тума пӗлӗпӗр эпир? Каллех сан патна чупмалла пулать... Ан кай луччӑ, кунтах юл, килӗнте санӑн никам та макӑрса лараканни ҫук.

— Йывӑрри халӗ те питӗ йывӑр-ха вӑл, ҫав тери йывӑр. Ирччен тем пуласран питӗ шикленетӗп, — терӗ ӑна хирӗҫ Антонина Клементьевна хуллен.

— Мӗн вара... вилсех кайма пултарать-и? — хӑраса ыйтрӗ Улька.

— Кам пӗлет ӑна. Чирлӗ ҫынпа тем те пулать...

Евгенин ыйхи ҫилпе вӗҫсе кайнӑ пекех пулчӗ. Вӑл вӑшт кӑна ӳппӗн ҫаврӑнса выртрӗ те, чавсисем ҫине тӗренсе, пуҫне ҫӗклесех итлеме тытӑнчӗ.

— Тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах района тухтӑр патне ярас пулать, — терӗ фельдшерица малалла. — Тӗрӗссипе каласан манӑн ӑна пулӑшма тек эмелӗ те ҫук, халь юлашкине патӑм...

— Эппин, халех ямалла мар-и кама та пулин? — хӑвӑрт ыйтрӗ Улька. — Председателе калас та...

— Ҫӗр хута кам тухса кайтӑр-ха? Ҫанталӑкӗ асар та писер ҫавӑрттарать, куҫран чиксен те курӑнмасть.

— Пулин! Ҫӗр ҫухрӑм мар вӗт.

— Ҫук ӗнтӗ, ирччен тӑхтар...

Евгени тӑруках ҫав тери пӑлханса кайрӗ.

«Хӑрушӑ иккен ӗҫсем... Хӗр ача вилсе кайма пултарать тет... Мӗн тери пысӑк хуйхӑ пулать вара ку! Амӑшӗ ӑна тӳссе те ирттереймӗ. Ак тата тамаша! Анне тӗрӗс калать — тухтӑрӗ патне халех каяс пулать, мӗн кӗтсе тӑмалли пур? Эмелӗ те пӗтнӗ тет хӑй. Ҫынна эмелсӗр мӗнле сывататӑн? Каякан ҫын тупӑнмасан эпӗ хам та кайса килме пултаратӑп унта. Ним хӑрамалли те ҫук, пӗччен те каятӑп. Тепӗр тесен Аркаша чӗнме пулать, манпа пӗрле пыратех вӑл...»

Ҫак шухӑшсем арҫын ача пуҫӗнче питӗ хӑвӑрт вӗҫсе иртрӗҫ. Вӑл ӗнтӗ халех, ҫак самантрах сентре ҫинчен siксе анса амӑшӗпе Антонина Клементьевнӑна: «Ярӑр мана тухтӑр илме! Ирччен ҫитсе килетӗп!» — тесе татӑклӑн калама хатӗр пулчӗ, анчах малти пӳртре сасартӑк ача хыттӑн кӑшкӑрса яни илтӗнчӗ, унтан ватӑ Пауль чупса тухрӗ.

— О, плохо! Эльга... очень плохо! — терӗ вӑл фельдшерицӑна. — Боюсь, умрет она... Что делать?

Антонина Клементьевнӑпа Улька ҫав самантрах малти пӳртелле ыткӑнчӗҫ. Тек вара Евгени выртма пултараймарӗ. Вӑл сентре ҫинчен кӑмака ҫине куҫрӗ, тӗттӗм ҫӗртех ҫӑматтине тупрӗ те хуллен кӑна урайне анса тӑчӗ. Хӗрарӑмсем ҫаплах чирлӗ хӗр ача патӗнче пулчӗҫ-ха. Евгение никам та курмарӗ. Вӑл часрах пӑтаран ӑшӑ йӗмӗпе кӗпине илсе тӑхӑнчӗ, унтан кӗрӗк пиншакне тӑхӑнса хӑвӑрт тӳмелеме тытӑнчӗ.

Çак вăхăтра малти пӳртрен амăшĕ тухса тăчĕ.

— Эс ăçта кайма пуçтарăнан капла? — ыйтрĕ вăл тĕлĕнсе.

— Тухтăр патне каймалла вĕт-ха... Эсир мĕн калаçнине эпĕ пĕтĕмпех илтрĕм, — терĕ Евгени пĕр шикленмесĕрех.

— Чипер калаç! Каймалла пулсан та эс каймастăн ĕнтĕ çĕр хута!

— Мĕншĕн каймастăп?

— Эс паян ахаль те нумай шăнса çӳренĕ.

— Нимĕн те шăнман эпĕ, — терĕ Евгени пăта çинчен мулаххайне илме карăнса.

— Каймастăн тетĕп сана! — сассине хытарчĕ амăшĕ.

Малти пӳртрен Антонина Клементьевна тухрĕ. Евгени кĕтмен çĕртен тумланса тăни, вĕсем амăшĕпе иккĕшĕ хыттăн калаçни ăна та тĕлĕнтерсе ячĕ.

— Мĕн пулчĕ тата капла? — пĕрре Евгени, тепре Улька çине пăхса илчĕ вăл.

— Çак шĕшлĕ никама систермесĕрех тухтăр патне кайма хатĕрленнĕ мар-и? — терĕ Улька кăмăлсăртарах.

— Чăнах-и? — аллисене сарсах пăрахрĕ фельдшерица.

— Эсир хăвăрах каларăр вĕт-ха, эмел те çук терĕр, мĕн-ха тата? Мĕн кĕтсе тăмалла? Ачи вилме пултарать тетĕр! — çирĕппĕн каласа хучĕ Евгени. — Халех конюхсем патне кайса лаша кӳлтеретĕп те...

— Вара тухса каятăн пулать? — çилĕпе пӳлчĕ ăна амăшĕ.

— Ну, кампа та пулин... — куçĕсене мăчлаттарса илчĕ Евгени.

— Пулмасть ун пек! Ниçта та каймастăн! — сассине тата ытларах хытарчĕ амăшĕ. — Итленĕ пултăр каланине. Вăрçа тухса кайнă чух аçу мĕн хушса хăварнине мантăн та-и?

— Нимĕн те манман... — тутине тăсрĕ Евгени.

— Эппин, ма итлеместĕн тата? Çакăн пек çанталăкра шăнса пăсăлса, чирлесе ӳкес килет-и-мĕн? Çав кирлĕ-и сана? Хывăн халех!

Евгени темиçе самант хушши амăшĕ çине шăтарас пек пăхса ним чĕнмесĕр тăчĕ, унтан макăрса ярас пек сасăпа, çилленсе кайса:

— Асту, чирлеççĕ пуль! — терĕ. — Ман пек ачасем фронтра çĕрĕ-çĕрĕпе разведкăра çӳреççĕ, «чĕлхесем» тытса пыраççĕ, кĕперсене сиктереççĕ... Партизансем çинчен çырнисене вулаха! Анчах эсĕ мана лашапа сакăр çухрăма яма хăратăн. Эпĕ мĕн, арçын мар-им? Эпĕ — пионер, пĕлетĕн-и?

Евгени çакăн пек çирĕппĕн, никама парăнмалла мар калаçни хĕрарăмсене тата ытларах тĕлĕнтерчĕ. Çав вăхăтрах савăнтарчĕ те вĕсене. Фельдшерица Ульканa хуллен кăна пуçĕпе сулса илчĕ.

— Каясси каясах пулать, — терĕ вăл. — Евгени конюхсем патне чупса лаша кӳлтертĕр эппин. Лавĕпе пĕрле вĕсенчен хăшĕ те пулин кунта килтĕр. Эпĕ унччен тухтăр патне хут çырса хатĕрлем.

— Мана хама ямастăрах-и вара? — çине тăрсах ыйтрĕ Евгени.

— Курăнĕ унта, эс малтан лашине илсе кил.

Евгени çĕлĕкне тăхăнчĕ те шăннă алăка пĕррех тапса уçрĕ. Тултан пӳртелле шурă пăс пек сивĕ палкаса кĕрсе кайрĕ.

— Пур пĕр хам та каятăп! — илтĕнсе юлчĕ унăн сасси.

— Ну, маттур ывăл ӳсет санăн, — терĕ Антонина Клементьевна кăмăллăн Улька çине пăхса. — Ку чăн-чăн арçынах пулать!

— Ашшĕнех хывнă пулмалла та-ха ачи, — терĕ ăна хирĕç Улька. — Чипер çитĕнсен юратчĕ те-ха...

Малти пӳртрен каллех ача вăйсăррăн йынăшни илтĕнчĕ.

— Аташать, — терĕ Антонина Клементьевна. — Мĕн пулса тухĕ-ши ĕнтĕ... Питĕ хăратăп!

Вăл сумкинчен хут татăкĕ кăларса хăвăрт кăна çырма тытăнчĕ.

## Çил-тăман витĕр, çĕрле

Çур сехет те иртмерĕ пулĕ — урам хапхи умне лаша пырса чарăнни илтĕнчĕ. Унтан шашулкка чанклатса илчĕ, пусма картлашкисем çинче ура сассисем нăтăртатрĕç те, пӳрте иккĕн кĕрсе тăчĕç. Пĕри — Евгени, тепри конюхра ĕçлекен Мархва, пĕр вăтăр пиллĕксене çитнĕ лутрарах хĕрарăм, — иккĕшĕ те юр айнех пулнă хăйсем.

— Ну, эпир хатĕр, — терĕ Евгени кĕнĕ-кĕменех.

— Эс каясах тетĕн-и вара? — пăшăрханарах ыйтрĕ амăшĕ.

— А эсĕ мана ярас марах тетĕн-и? — кăшт тăрăхланă пекрех каласа хучĕ ăна хирĕç ывăлĕ. Çавăнтах, амăшĕ тата мĕн калассине кĕтмесĕрех, фельдшерицăран ыйтрĕ:

— Хутне çырса янтăларăн-и? Пар кунта, шаларах чиксе хурам...

Антонина Клементьевна Улькаран ирĕк ыйтнă пек пулса ун çине пăхса илчĕ.

— Хăшне парас çыруне? («Ывăлна тухтăр патне яратăнах-и?» тенĕ пек пулчĕ ĕнтĕ ку.)

— Кайтăрах пит шăнса çӳресси килет пулсан, — ал сулчĕ Улька. Çапах та хăй çав самантрах Евгени патнелле пычĕ те: — Çиелтен чаппан та пулин тăхăн хуть, мур ачи! — терĕ.

— Чаппанне тăхăнăп та-ха, тухтăрĕ валли тăлăп илмелле пулĕ, — унăн-кунăн пăхкаларĕ Евгени.

— Кĕлетре çакăнса тăрать, кайса ил!

Евгени пӳртрен тухсанах Мархва, темрен хăранă пек, алăк çине пăхса илчĕ те Улькана каласа пама тытăнчĕ:

— Ну, хăтăрса пĕтерчĕ те пире санăн ывăлу! Чун юлмарĕ!

— Мĕн хăтланчĕ тата?

— Эпир канма выртсаттăмăр... Сасартăк алăка шăлт-шалт! уçса пырса кĕчĕ те тӳрех кăшкăрчĕ: «Халех, туххăм лаша кӳлĕр! Виçĕ минутра хатĕр пултăр! — тет. — Урапа мар, çуна кӳлĕр, урамра юр çуса лартнă, чĕркуççи таран! Анчах астăвăр, çара çуна кӳлсе ан лартăр тата, ӳречеллине кӳлĕр!» — тет. Хăй хашкать, сывлăшне те çавăрса илеймест... «Мĕн пулнă, ăçта каймалла?» — тетпĕр. Вăл тата хытăрах кăшкăрса пăрахрĕ: «Эсир тата ыйтса тăратăр-и? Вăрçă вăхăтĕнче нумай калаçмаççĕ!» — тет. Çапах та пĕлтер ĕнтĕ, лашине эпир пĕрре кăна мар, виççĕ те кӳлсе парăпăр тетпĕр. Тин каларĕ вара.

— Начальник пекех эппин, — кулса илчĕ Антонина Клементьевна.

— Каккуй! Шутсăр пысăк начальник пек, çăвар уçма та памасть!

Тултан Евгениваскасах тăлăп йăтса кĕчĕ.

— Ну, кайрăмăр-и?

— Маншăн ĕç тытăнса тăмасть, — терĕ Мархва.

Улька ывăлне чаппан тăхăнтартрĕ, çав вăхăтра Евгени фельдшерицăран тепĕр хут тĕпчесе пĕлчĕ:

— Хучĕ çине мĕн кирлине пĕтĕмпех çыртăн-и? Тухтăрне килме хушрăн-и? Эмелĕ çинчен манмарăн-и?

— Çырнă, пĕтĕмпех çырнă... Вĕçтерĕр.

Улька çул çине каякансене ăсатма тухрĕ. Çенĕк алăкне уçсанах питрен юрпа хутăш сивĕ çил пырса çапрĕ, сулăнтарсах ячĕ. Картишĕнче юр айăн-çийĕн çаврăнать, нимĕн те курăнмасть.

«Мĕнле кайса килкелĕç кун пек çанталăкра... Çул çинче çухалса кайĕç-и-ха, пĕр-пĕр çырмана пырса сикĕç-и... Ма килĕшрĕм пĕрех хут!» — шикленерех шухăшларĕ Улька хăй ăшĕнче.

Анчах ӳкĕнни кăлăхах пулчĕ ĕнтĕ халь. Евгени хапха патнелле чупсах кайрĕ, урама тухсанах лашине çавăрма тытăнчĕ.

— Лар часрах, Мархва инке!

— Ну, чипер кайса килмелле пултăр эппин. Асăрханарах çӳрĕр! — теме çеç ĕлкĕрсе юлчĕ Улька. Евгени лашана пĕррех туртса çапрĕ, темиçе самантранах вĕсем тăкăрлăкалла пăрăнса çил-тăман ăшĕнче çухалчĕç.

...Çанталăкĕ урнă пек çавăрттарать, таврара нимĕн те ку-

рăнмасть, анчах ăслă лаша çула çирĕп тытса пырать. Акă ĕнтĕ вĕсем Анатри выселка тĕлĕнчи хура стена пек курăнакан вăрман çумĕпе иртрĕç; кунта, хӳтĕре, кăшт лăпкăрах пулчĕ, унтан çул çырманалла ана пуçларĕ. Лаша хăех чупма пăрахрĕ. Çырма тĕпне анса çитсен вĕсене пĕр хушă лупас айне лекнĕ пекех туйăнса кайрĕ — шăп пулчĕ, ăшă. Таçта çӳлте, пуç тăрринче кăна, çил такама тарăхнă пек ӳлет, шăхăрать, уйри юра çĕклесе таçта хăяматалла вĕçтерсе каять...

Унтан тата тепĕр уй урлă каçрĕç вĕсем, татах тепĕр çырмана анса хăпарчĕç те тутлă ыйха путнă пăч тĕттĕм яла пырса кĕчĕç. Пĕр çутă та пулин пуласчĕ хуть! Пĕр йытă та пулин вĕрсе ярасчĕ! Пурте вилсе выртнăн туйăнать.

Ялтан тухсан лаша каллех хăй çеммипе юртма тытăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ каймалли ытла инçех те мар, çак çулпа пĕр-икĕ километр тухсан шоссе пулать, вара тăршшĕпех, район центрне çитичченех, телефон юписем тăрăх каймалла. Юри çухалса каяс тесен те çухалса каяс çук, шанчăклă.

Евгени хăйсем района çитсен мĕн тăвасси çинчен шухăшласа пычĕ. Паллах, вĕсем тӳрех больницăна пыраççĕ. Унта пурте çывăраççĕ ĕнтĕ, мĕншĕн тесен вăхăчĕ çавăн пек. Больница алăкĕ питĕрĕнчĕк. Евгени шаккать... Уçмаççĕ. Пĕр сасă та çук. Татах шаккама тивет хытăран хытă, хытăран хытă... Юлашкинчен тахăшĕ алăк патне пырса хăранă сасăпа ыйтать:

— Кам унта? Мĕн кирлĕ?

— Уçăр часрах! — тет Евгени. — Эпир «Çĕнĕ самана» колхозран, пире тухтăр кирлĕ!

— Халь, çĕрле, тухтăрсем çук, ирччен кĕтмелле пулать сирĕн, — тет сасă.

— Кĕтме пултараймастпăр! — тет Евгени çилĕпе. — Эсир кулатăр-и-мĕн? Пирĕн унта çын вилет! Халех тухтăра тупса килĕр! Унсăрăн эпĕ жалоба паратăп. Ну-кă, кĕртĕр!..

Шалти çын хăрать пулмалла та алăка йăпăр-япăр уçса кĕртет.

— Тăхтăр эппин, халех чĕнме каятăп, — тет вăл...

Лаша чупать. Çуна тупанĕсем айĕнче юр нăтăртатать, хăшхăш çĕрте, юр айне пулайман шăннă тăпра муклашкисем урлă каçнă чух, çуна тăлт-талт сиккелесе илет.

— Евгени, — сас парать пĕтĕмпех юр айне пулнă Мархва.

— Мĕн? — ун çинелле пăхать Евгени.

— Шоссе çине тухмарăмăр-и-ха çав эпир?

— Çук пулмалла-ха.

— Хальччен тухмалла пек-çке?

— Ан пăшăрхан, халех çитетпĕр. Но-но! —васкатать лашине Евгени.

Анчах шоссе çук та çук. Мĕн амакĕ? Чăнах та, хальччен

шоссе çине çитмелле ĕнтĕ, Уйкасран тухни хăçан пулать те! Йăнăш çулпа илсе каймарĕ-и вĕсене ку лаша? Тен, район еннелле каяс вырăнне вĕсем пачах урăх çĕрелле каяççĕ?

Евгенин чĕри пăчăртансах илчĕ. Вăл чăнласах хăра пуçларĕ, анчах Мархвана нимĕн те каламарĕ-ха. Тата пăртак кайсан вăл лашана чарса çуна çинчен анчĕ те туртаран тытса пырса унăн пуçĕ патне тухрĕ.

— Мĕн пулчĕ? Лаши тăварăнса каймарĕ пулĕ-çке? — ыйтрĕ тĕлĕре пуçланă Мархва хăйсем пĕр вырăнта тăнине туйса илсе.

— Ним те пулман, — терĕ Евгени. — Хамăн ĕçпе эпĕ...

Анчах хăй пĕтĕм куç вăйне пухса малалла пăхрĕ. Ăçталла каяççĕ вĕсем? Хăш еннелле? Малта мĕн пур? Паллă мар... Çулĕ те çул майлă мар вĕт, шăн çĕр çине юр çуса лартнă та, мĕн уйăрса илетĕн унта? Те çулпа пыратăн, те уй урлă... Çапах та çулпа пынă пекех туйăнать-ха. Кунта, ура айĕнче, такăр, кăшт пăрăнсан — хăмăл пулмалла. Ăна Евгени кукленсе ларсах, аллипе хыпашласах пăхрĕ... Тĕрĕс, хăмăл. Апла пулсан çак çулпах каяс пулать, пур пĕр ăçта та пулин илсе тухатех вăл!

Евгени каллех çуна çине ларчĕ те лашине чуптарчĕ.

— Тĕрĕсех пыратпăр-ши эпир? — ыйтрĕ Мархва кăшт тăхтасан.

— Тĕрĕсех мар пулмалла çав, лаша пире урăх çулпа илсе каять пулмалла, — пытарса тăмарĕ Евгени.

Мархва вăртах ун еннелле çаврăнса ларчĕ:

— Епле урăх çулпа? Ăçталла?

— Мур пĕлет... Тен, каялла каятпăр-и... — ним калама аптранăран каласа хучĕ Евгени.

— Апайтурах! — хыпăнса ӳкрĕ Мархва. — Ма пăхмарăн лайăхрах, ма асăрхамарăн? Пĕтетпĕр вĕт, пĕр-пĕр шуйттан шăтăкне пырса сикетпĕр акă! Э-эй, ма шантăм пуль сана, ма хам тытмарăм лашине...

— Ан хăра, пĕтместĕн! — çилленсе кайрĕ Евгени. — Кун пек нăйкăшассу пур — килтен те тухмалла марччĕ санăн.

— Манăн анчах мар, санăн та тухмалла марччĕ, килтех лармаллаччĕ çак çанталăкра! — хирĕçмех пуçларĕ Мархва. — Пĕтĕмпех эс айăплă, эс пăлхатса тухрăн. Аннӳ те ярасшăн марччĕ вĕт!

— Эппин, ан та — каялла яра пар! — кăшкăрсах пăрахрĕ Евгени тарăхса. — Эп сансăрах пит лайăх кайса килетĕп!

— Кайсам халь тин! Кашкăрсем çисе яччăр-и? Эккей, калаçать тата...

— Апла пулсан — ан шарла!

Мархва тек чĕнмерĕ...

Вĕсем хăйсем аналалла анма тытăннине туйрĕç. Ну, паллах

ĕнтĕ, йăнăшнă! Уйкасран шоссе çине тухиччен нимĕнле çырма та пулмалла мар. Анчах ăçти çырма ку? Çĕр çăттăр! Акă кĕпер... Пысăк кĕперех. Карлăкĕсем çӳллĕ. Хăш ял кĕперĕ? Кĕпер урлă каçсан тĕрлĕ çĕрелле ик-виç çул та пулма пултарать. Хăшĕнпе каймалла? Тепĕр тесен суйласа тăмалли те çук, курăнмаççĕ ĕнтĕ вĕсем. Ак чун хыптармăш! Чăнах та пĕтес пулать вĕт...

Лаша хăех сылтăмалла пăрăнса юртрĕ. Мĕн пулать-килет, сылтăмалла тăк — сылтăмалла пултăр. Халь тин çавах мар-и ĕнтĕ? Пĕр-пĕр яла пырса кĕресчĕ кăна, унтан çул тупăнатех.

Евгени куçĕсене мăчлаттармасăр малалла пăхрĕ. Çил-тăман кăштах лăплана пуçланă пек туйăнчĕ, çил халĕ кассăн-кассăн кăна вĕрчĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе тавралăх уçăлсах каять. Сасартăк малта çутă курăнса илчĕ. Вĕлт! турĕ те каллех çухалчĕ. Е туйăнчĕ кăна-ши ку? Çук, çук, чăнах та, малта çутă пур! Пур!

— Куратăн-и? — ыйтрĕ Евгени паçăр ятлаçса илнĕренпех шарламан Мархваран. — Çутă пур малта, авă...

— Ним те курмастăп, — мăкăртатса илчĕ лешĕ кăмăлсăр.

— Суккăр, эппин, эсĕ, — терĕ Евгени. — Яла çитетпĕр.

— Çак тĕпсĕр çырмара мĕн ялĕ пултăр?

— А эсĕ, мĕн, пур ялсем те качакасем пек сăрт тăррине хăпарса лараççĕ тетĕн-им?

Çутăсем тата пăч-пач курăнчĕç.

— Улăххĕрри вĕт ку! Пăх-ха, урамра электричество хунарĕсем çутатаççĕ! — кăшкăрса янă пекех каларĕ Евгени. — Вĕсем кăçал гидростанци туса пĕтерчĕç, пĕлетĕн пуль?

— Апла пулсан эпир пĕр пилĕк çухрăм тавра килнĕ, — терĕ Мархва. — Сан пирки!

Евгени илтмĕш пулчĕ, лашине хăваларĕ. Тепĕр вунă минутран вĕсем чăнах та ял хушшине пырса кĕчĕç. Урамра, пилĕкулт çĕрте, çӳллĕ юпасем тăрринче, электричество лампочкисем çунаççĕ. Юр пĕрчисем вĕсен çутинче вĕтĕ шур лĕпĕшсем пек курăнаççĕ. Лайăх-çке вăл электричество пурри!

— Шоссе çине тухма кунтан та инçе мар, — терĕ Евгени. — Эп пĕлетĕп... Улăх тăрăх кăшт каймалла кăна. Унтан вара пĕр виçĕ километр çеç юлать.

— Паçăрах çитмеллеччĕ, — каллех кăмăлсăр сас пачĕ Мархва.

Çĕрле çул çӳрекенсене хĕрхеннĕ пекех, çил-тăман лăплансах пычĕ. Ку тăрăхра чарусăр ахăрнă-аташнă хыççăн вăл таçта урăх çĕрелле çĕмĕрттерсе кайрĕ пулмалла. Кĕçех пĕлĕтсем хушшинчен пĕр-икĕ хутчен уйăх та курăнса илчĕ. Çавна пула Евгени кăмăлĕ юсансах кайрĕ. Текех ним хăрамалли те çук ĕнтĕ, часах вĕсем больницăна çитеççĕ, тухтăра лартаççĕ те каялла каяççĕ... Анчах килте мĕнле-ши халь? Чирлĕ хĕр ачи татах

йыварланса каймарĕ-ши? Тен, унтан та япăхрах... чи хăруш-ши пулмарĕ-ши? Васкас пулать, васкас!..

Ĕнтĕ ял хыçра юлчĕ. Улăхри çул тип-тикĕс те тап-такăр. Икĕ çын çеç ларнă çунана çак çулпа туртса пырасси мĕнех вара лайăх лашашăн?

— Юрттар хăвăртрах, пире килте кĕтеççĕ!..

Евгенин юрлас килсе кайрĕ. Таçтан ашшĕ час-часах юрланă юрă кĕвви аса килчĕ ăна:

Вот мчится тройка почтовая
По Волге-матушке зимой...

Ĕлĕк хальхи пек машинăсем пулман çав, пурне те лашасемпе турттарнă — çул çӳрекенсене те, таварсене те, почтине те. Халĕ ав пур çĕрте те машинăсем чупаççĕ. «Çĕнĕ самана» колхоз та кăçал çуркунне вĕр çĕнĕ грузовик туянчĕ, анчах шел — ăна вăрçă пуçлансанах фронт валли илсе кайрĕç. Эх, вăл вăрçă! Ма пулчĕ-ши, ма пуçланчĕ-ши? Мĕн тери аван пурăнаттăмăр... Пĕтĕмпех çав эсрел фашисчĕсем айăплă, пĕтĕм асап, пĕтĕм терт вĕсемшĕн пулать халь. Акă кĕçĕр те Евгенипе Мархва çавна пулах çĕр хута аташса çӳреççĕ. Тавăрăпăр та-ха вĕсене, шалчи тулĕ те-ха, анчах халлĕхе тӳсес пулать, мĕн тăвассу пур...

— Евгени, Евгени! — терĕ Мархва сасартăк темле хăранă сасăпа ăна çурăмĕнчен тĕртсе. — Пăх-ха çавăнталла, пăх-ха!

— Мĕн? — ун еннелле вăртах çаврăнчĕ Евгени. — Мĕн пăхмалла? Мĕн куртăн?

— Авă... мĕн çав? — аллипе çул тăрăх каялла тĕллерĕ хĕрарăм.

— Ăçта?

— Авă ара, курмастăн-им? Чупать... Пирĕн хыççăн чупать! Тукмак* вĕт ку, туршăн та, хĕвелшĕн те тукмак! Пĕтрĕмĕр!..

Евгени тинкерсе пăхрĕ. Чăнах та, çул тăрăх вĕсем хыççăн темскер мĕкĕлтетсе пырать иккен. Уйăрса илме çук — те çын, те йытă, те... кам пĕлет, тен, чăнах та кашкăр? Çĕрле тем те пулма пултарать...

— Хăвала часрах лашуна, хăвала! — Евгение хул пуççинчен чышнă пекех тĕрте-тĕрте илчĕ хăраса кайнă Мархва.

Анчах Евгени лашине хытăрах чуптарса тарма тытăнас вырăнне тилхепине тăрук карăнтарса, ăна чарса тăратрĕ.

— Пĕлес пулать малтан, мĕн вăл?

— Ухмаха ертĕн пуль эсĕ! — татах кăшкăрчĕ Мархва. — Çурса тăкать акă вăл пире, лаши-мĕнĕпех кăшласа ярать! — Хĕрарăм Евгени аллинчи тилхепене туртса илме тăчĕ, анчах лешĕ памарĕ.

---

* Кашкăр.

— Тăхта-ха эсĕ, ан çухăр! Кам пĕлет, тен, çын вăл? Тен, вăл шăнса хытма тытăннă, ăна пулăшас пулать?

— Мĕнле çын пултăр! Иртсе килнĕ чух нимĕн те курмарă-măр-иç? Тем тесен те тукмаках ку, халь çеç вăрмантан сиксе тухнă вăл... пире курса! Чуптар тетĕп лашуна, шуйттан ачи!

Хăранипе сиксе чĕтреме тытăннă Мархвана Евгени тек нимĕн те каламарĕ, ун вырăнне каялла пăхса питĕ хыттăн кăшкăрчĕ:

— Эхе-хе-хе-хей! Э-эй! Кам эсĕ?..

Ун сасси улăх тăрăх инçете янраса кайрĕ, анчах хирĕç сас паракан пулмарĕ. Таврара каллех шăп пулчĕ. Паçăр вĕсем хыç-çăн килнĕ чĕр чун халь хускалмарĕ, пĕр вырăнтах муклашка пек пулса тăчĕ.

— Эх-эй! — татах кăшкăрчĕ Евгени.

Каллех хирĕç сас пулмарĕ, хура тĕм вырăнтах тăчĕ.

«Çын мар ку», — шухăшларĕ те Евгени самаях шикленсе лашана пĕррех çурăм тăрăх туртса çапрĕ. Лаша сиккипе ячĕ...

Ытла нумаях та каймарĕç вĕсем, Мархва каллех Евгение хулĕнчен тытса карт! туртрĕ.

— Пăх ĕнтĕ, кур! Хайхискер каллех хăвалать пире! Çиччас хуса çитет... Ай тур-тур, пĕтрĕмĕр вĕт!.. Пĕтрĕмĕр!..

Вăл тĕрĕс калать-мĕн. Лаша мĕн тери хăвăрт чупать, çак уйăрса илмелле мар чĕр чун та хыçалтан çав тери хытă ыткăнса пырать. Евгени ăна хул пуççи урлă пĕрре каялла пăхса илсенех курчĕ... Пысăк хăй, пăру пысăкăшех пулĕ. Нивушлĕ кашкăр? Анчах ма-ха вăл вĕсене хăваласа çитмест, лав чарăнсан вăл та чарăнса тăрать? Кашкăр çынран хăрать теççĕ, чăнах иккен! Ну, юрĕ, курăпăр-ха мĕн пулассине!..

Евгени лашине каллех пат! чарса тăратрĕ.

— Стой! Вĕрентем-ха эп ăна хыçран хăвалама!

Мархва каллех тем каласшăнччĕ, лашана хытăрах чуптарас вырăнне ăна чарнăшăн вăрçасшăнччĕ пулмалла, анчах ĕлкĕреймерĕ — Евгени ăна васкасах тилхепе пачĕ те:

— Тыт хытăрах! — терĕ.

Хăй çав вăхăтрах çуна çинчи улăма кăштах сирсе темле çă-мăлтарах рычак пек вăрăм япала туртса кăларчĕ.

«Ай-уй! Ку ача кашкăрпа çапăçма каясшăн тем! — тесе шухăшласа илме кăна пултарчĕ Мархва тата ытларах хăраса. — Айван, пĕтет вĕт!»

Анчах Евгени аллинче рычак мар, пăшал пулнă-мĕн, чăн-чăн пăшал! Мархвана ку тата ытларах тĕлĕнтерсе, хăратса ячĕ. Евгени хыçалалла хăвăрт кăна тĕллерĕ те кĕрс! тутарчĕ. Пăшал кĕпçинчен вут-çулăм тухнине çеç курса юлчĕ Мархва. Пăшал сассинчен хăраса лаша тăрук тăпăрт! тапса сикрĕ, Мархва чутах ÿрече урлă ывтăнатчĕ.

— Тыт лайăхрах, чар лашана! — кăшкăрчĕ Евгени. Çавăнтах, Мархва лашана тытса чарайманнине кура, тилхепене хăй çавăрса тытрĕ.

— Стой! Ан хăра, ухмах...

Вăл каллех пеме хатĕрленсе хыçалалла пăхрĕ. Анчах та тек пеме кирлĕ пулмарĕ — хыçалтан йытă кăшкăрса йынăшнă сасă илтĕнчĕ.

— Нăй-най, нăй-най... — вăраммăн, хурлăхлăн йынăшать...

— Тьфу, шуйттан пуçĕ! — сурчĕ Евгени тарăхса. — Кам хушнă-ха ăна çакăн пек çĕрле уйра çынсене хăратса çӳреме? Хăй айăплă! Эп чăнах та кашкăр тесе...

— Кашкăр та пулма пултарнă, — терĕ Мархва хăйне тинех кăшт чун кĕнĕ пек пулсан. — Ку вăхăтра вĕсем тем чухлех çӳреççĕ... Пăшалне ăçтан тупрăн эсĕ?

— Аттенне юри илсе тухрăм, çĕрле вĕт-ха, — терĕ Евгени. — Сыхланни нихçан та кансĕрлемест...

Çанталăк лайăхлансах кайрĕ. Çил чарăннă май сивĕ пулма та пăрахрĕ — хуть те пĕр пиншакпа пыр. Часах вĕсем шоссе çулĕ çине тухрĕç, унтан район центрне те пырса кĕчĕç.

Евгени каллех больницăрисемпе мĕнле калаçасси çинчен шухăшлама тытăнчĕ. Паллах, çине тăрса, çирĕппĕн, ĕнентермелле калаçас пулать, унсăрăн итлемĕç тата! Туртăнкаласа, кутăнланса тăрĕç, çулĕ инçе, çĕрле кайма тĕттĕм, ирччен тăхтас пулать тата тем те пĕр...

Анчах та ĕçсем пĕртте вăл шухăшланă пек пулмарĕç. Лашана больница умне тăратса коридора кĕрсенех пĕр пӳлĕм алăкĕнчен шурă халатлă ватăрах арçын тухрĕ те куçлăхне пĕркеленчĕк çамки çинелле хăпартса тӳрех ыйтрĕ:

— Эсир «Çĕнĕ самана» колхозран-и?

— Çавăнтан...

Евгени тĕлĕнсех кайрĕ: ăçтан палларĕ-ха вĕсене ку çын?

— Эпир сире паçăрах кĕтетпĕр, — терĕ лешĕ.

— Çулĕ начартарах, çанталăкĕ те усал, çавăнпа та час çитеймерĕмĕр... — тӳрре тухма пăхрĕ Евгени. Хăй çав хушăрах Мархва çине пăхса илчĕ: асту, хамăр аташса çӳрени çинчен персе ан яр тата!

— Çанталăкĕ ырах мар çав паян, — килĕшрĕ больница çынни.

— Эпир килессе пĕлнĕ-им эсир? — ыйтмасăр тӳсеймерĕ Евгени.

— Пире ун çинчен паçăрах телефонпа пĕлтерчĕç. Сирĕн фельдшерица калаçрĕ, эвакуированнăй хĕр ача хытă чирленĕ тет.

— Çапла çав, пирĕн патра пурăнаканскер... Акă ун пирки çырнă хут та пур манăн... — Евгени пиншакĕн шалти кĕсйин-

чен Антонина Клементьевна ҫыруне кăларса пачĕ. Больница ҫынни кусăхне вырăнне лартса ăна йăпăрт кăна вуласа тухрĕ те ним каламасăрах кăкăр умне чиксе хучĕ.

— Тухтăр илме килтĕмĕр эпир, — терĕ Евгени, — эмел те парса яма хушрĕ Антонина Клементьевна...

— Пĕлетпĕр, ачам, пĕтĕмпех пĕлетпĕр! — терĕ арҫын. — Ларса ăшăнăр пăртак.

— Пирĕн хăвăртрах каясчĕ!

— Ытлашши ан хыпăн, ĕлкĕретĕр... — Халатлă ҫын тĕксĕмрех коридор тăрăх утса кайса пĕр пӳлĕме кĕчĕ.

— Вăт васкамаҫҫĕ вĕсем, — кăмăлсăр мăкăртатса илчĕ Евгени. — Лере ачи вилес пек выртать...

— Хамăр та айăплă, — терĕ Мархва, — аташса ҫӳремен пулсан ку таранччен каялла ҫур ҫулне каймаллаччĕ.

Анчах вĕсен нумай кĕтмелле пулмарĕ. Халатлă арҫын каллех коридора тухрĕ, унпа юнашар пысăк ҫухавиллĕ пальто, тĕп хунă мăн ҫăматă тăхăннă, ăшă тутăр ҫыхнă, аллине пысăках мар сар чăматан тытнă хĕрарăм курăнчĕ.

«Ҫак пырать пулĕ ĕнтĕ пирĕнпе», — шухăшларĕ те Евгени сак ҫинчен тăчĕ.

— Ну, телейлĕ кайса килĕр эппин, Калерия Ивановна! — терĕ арҫын вырăсла хăйсем алăк патнерех пырсан хĕрарăма ала парса. Унтан Евгенипе Мархва еннелле ҫаврăнчĕ те чăвашла каларĕ: — Чи лайăх врач яратпăр сирĕн пата, халь ҫеҫ Ленинградран килнĕскер. Астăвăр, чипер илсе ҫӳрĕр...

— Тавтапуҫ! — терĕ Евгени хĕпĕртесе. — Ан пăшăрханăр, илсе ҫӳреме пĕлĕпĕр!

Тепĕр вунă-вун пилĕк минутран вĕсем райцентртан тухрĕҫ те, шухă лаша шоссе тăрăх хĕвел анăҫнелле, Евгенисен ялĕ еннелле, юртрĕ. Халĕ пĕртте паҫăрхи пек пулмарĕ ĕнтĕ — сивĕ те мар, пĕлĕтре ҫурла пек ҫакăнса тăракан уйăх самаях ҫутатнă пирки аташса каяс-тăвас хуйхи те ҫук. Хĕпĕртемелле кăна — часах акă вĕсем киле ҫитеҫҫĕ те, ҫак майра тухтăр чирлĕ Эльгăна тӳрех эмеллеме тытăнать. Паллах ĕнтĕ, вăл ăна сывататех, епле пулсан та вилме памасть...

## Паллашусем

...Иртнĕ каҫ Евгенипе Мархва асар та писер ҫил-тăман витĕр нимрен хăрамасăр района тухса кайса эвакуированнăй хĕр ача валли тухтăр илсе килни ҫинчен ирхине пĕтĕм ял пĕлчĕ. Пурте ырласа калаҫрĕҫ кун пирки. Пуринчен ытла Евгение мухтарĕҫ:

— Маттур, маттур ача! Тепри пулсан кун пек çанталăкра урама тухма та шикленсе тăмалла, вăл пур — темиçе уй урлă кайма хăраман!

— Аслашшĕне хывнă, лешĕ çавăн пек нимрен хăраманскерччĕ, — терĕç ватăраххисем. — Пĕрре йăлăмра упана пĕрпĕччен тĕл пулсан та çухалса кайман, лешĕ хăй çине ыткăнса пыма пуçласан пĕррех пуçĕнчен пуртăпа лартнă! Упи çавăнтах тĕшĕрĕлсе аннă вара...

— Тухтăрне илсе килнинчен усси пулнă-ши хуть?

— Пулнă теççĕ. Ачи халь çăмăлтарах сывлать тет, кăкри кăшт çемçелнĕ ĕнтĕ унăн...

— Хытă тăрăшать тет-ха тухтăрĕ, ачи пуç вĕçĕнчех сăнаса ларать тет. Епле пулсан та сыватасшăн ĕнтĕ.

— Лайăхскер килнĕ эппин...

— Тухтăрĕ хăй те вакуированнăй тет.

Çакăн çинчен илтсен Аркаш тӳрех тусĕ патне тухса чупрĕ. «Çĕрĕпе çӳренĕскер, халь сывăрать пулĕ-ха вăл, тен, шкула та пыраймасть-и. Çапах та ыйтса пĕлес... Мĕншĕн мана систерменши, эпĕ те кайнă пулăттăм унпа пĕрле...» — шухăшласа пычĕ вăл.

Евгени чăнах та сентре çинче çывăрать-мĕн, амăшĕ ăна вăратмарĕ:

— Кайран кил, кайран, шкултан таврăннă чух...

Çапах та Аркаш ытла тăруках тухса каймарĕ. Кăшт çеç уçăлнă алăк витĕр пуçне чиксе вăл малти пӳртелле пăхса илчĕ. Унта, кравать çинче, чирлĕ ача выртать, сĕтел пуçĕнче шурă халатлă, сап-сар çӳçлĕ çамрăк хĕрарăм ларать. Ун умĕнче темле эмел кĕленчисем, хутсем... Ку ĕнтĕ, паллах, тухтăр. Ăна хирĕç питĕ ĕшенчĕк сăнлă тепĕр хĕрарăм ларать, ку вара çав чирлĕ ача амăшĕ пулмалла.

— Каях, кай, асту, шкултан юлатăн, — терĕ ăна Евгени амăшĕ тепĕр хут.

— Ачи мĕнле, самайланать-и? — ыйтма ĕлкĕрчĕ çапах та Аркаш.

— Самайланнă пек-ха...

Уроксем пуçланиччен ачасем те çавăн çинченех калаçрĕç. Таçтан илтнĕ (те Мархва каласа пама ĕлкĕрнĕ?), анчах ачасем Евгенипе Мархва çĕрле çул çинче çухалса кайнине те, темле сĕтĕрĕнчĕк йытта персе пăрахнине те пĕлнĕ. Кун çинчен сăмах пуринчен те ытларах пулчĕ.

— Юрать-ха, кашкăр сиксе тухман.

— Мĕнех вара? Кашкăр пулнă пулсан та шаплаттаратчĕ вăл ăна! Çавах мар-им? Хуть йытта пер, хуть кашкăра...

— Упа пулнă пулсан тата?

— Хĕлле упа уйра çӳремест, вăрманта, пĕр-пĕр шăтăкра, тяппине ĕмсе выртать.

Калаçакансем патне Палля та пырса тăчĕ. Çăвар тулли чыхса лартнă пан улмине лачăрт-лачăрт чăмласа вăл:

— Шел, упа тĕлне пулман, лешĕ вĕсенчен пит лайăх саккускă тунă пулĕччĕ, — терĕ те кулса ячĕ.

Пурте ун çине хаяррăн пăхса илчĕç.

— Сысна эсĕ! Санăн пĕтĕм шухăшу та саккускă çинчен кăна! — терĕ Аркаш хăйĕн тусĕшĕн çав тери çилленсе кайса. — Аннӳ кунĕн-çĕрĕн ханша юхтарать, эс саккускă хатĕрлетĕн. Хупахри пекех. Лекетĕр-ха пĕрре, пĕлетĕр вара ун чух!

— Эсĕ куртăн-и? Тытрăн-и? — сиксе ӳкрĕ ун çине Палля.

— Тытĕç-ха, ан васка!

— Элекленĕшĕн эп сана суда паратăп!

— Ак çакна куртăн-и? — Аркаш ăна виç пӳрне туса кăтартрĕ. — Судне хăвăрăннах каймалла пулĕ-ха, ан васка!

Вĕсем, тен, тытăçсах каятчĕç пулĕ, анчах класа Рина Петровна пырса кĕчĕ. Ачасем вырнаççа ларсан вăл пурне те пăхса çаврăнчĕ те:

— Кам килмен паян? — тесе ыйтрĕ.

— Пурте килнĕ, пĕр Рыбаков кăна çук, — терĕ ăна хирĕç малти парта хушшинчи хĕр ача, хулĕ çине сарлака хĕрлĕ хăю çыхнă дежурнăй.

— Евгени паян килмесен те пултарать, — терĕ Рина Петровна. — Вăл кĕçĕр мĕн тунине пĕлетĕр-и эсир?

— Пĕлетпĕр! — терĕç вуннăн-вун иккĕн пĕр харăс. — Тухтăр илсе килнĕ...

— Рыбаков Евгени кĕçĕр хăй чăн-чăн пионер пулнине кăтартнă. Çынна çăлас тесе нимрен те хăраса тăман. Ку сирĕншĕн пуриншĕн те пример пулмалла... Ăнланатăр-и?

— Ăнланатпăр.

— Фронтра та пирĕн боецсем çавăн пек тăваççĕ, юлташĕсем йывăрлăха лексессĕн — темле хăрушă пулсан та — вĕсене пулăшма, хăтарма тăрăшаççĕ...

— Анчах Палля Евгение упа тытса çурманшăн шеллет, — терĕ çав вăхăтра стена çумĕнче ларакан Миккăн ятлă каçăртарах сăмсаллă ача ура çине тăрса.

Пурте кар-р! çаврăнса пĕрре çав ача çине, тепре Палля çине пăхрĕç. Палля тăруках хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕ.

— Чăнах калатăн-и эсĕ? — ыйтрĕ учительница Миккăнран.

— Пурте илтрĕç ăна, — терĕ лешĕ. — Çавăн пирки Аркашпа та чутах çапăçса каятчĕç... Ыйтăр ыттисенчен.

— Чернов! Мĕне пĕлтерет ку? — çилĕпе пăхрĕ ун çине Рина Петровна.

— Эп ăна ахаль çеç... шӳт тусаካларăм, — хулăн тутине аран хускатса мăкăртатса илчĕ Палля ларнă çĕртенех.

— Тăр ура çине! Тĕрĕссине каласа пар.

Аран йăраланкаласа Палля парта хушшинчен тăчĕ те Рина Петровна çине тӳррĕн пăхма хăяймасăр пуçне унталла-кунталла пăркаларĕ. Хăй йĕп-йĕпе тар пулчĕ.

— Ну, ма чĕнместĕн?

— Эп ахаль çеç... Аркаш хăй çулăхрĕ ман çума...

— Суять, суять! Аркаш ăна ним те туман! — кăшкăрчĕç ачасем.

— Асту, Чернов! Сана пĕрре кăна мар асăрхаттарнă ĕнтĕ, анчах эсĕ çаплах тӳрленместĕн, пурне те хирĕç пыратăн. Юлташсенчен уйрăлса кайни, çитменнине тата ялан иртĕхни ырăпа пĕтмест вăл, ан ман çавна! Юлашки хут калатăп...

Палля ним чĕнмесĕрех хăй вырăнне ларчĕ, анчах пĕрремĕш урок хыççăнах, перемена вăхăтĕнче, хăй çинчен каласа панă Миккăна крыльца хыçĕнче тытса çапса ӳкерчĕ те çав тери хытă хĕнеме тапратрĕ. Ача сăмсинчен юн юхса анчĕ, вăл кăшкăрса макăрса ячĕ. Ытти ачасем ăна хӳтĕлеме чупса пырсан вара Палля сумкине пăрахса хăварсах килне тухса тарчĕ...

Кун пирки Рина Петровнăна пĕлтерсен вăл сăнран та улшăнса кайрĕ, унăн тути сиккелесе илчĕ.

— Епле иртĕнчĕк ача! Амăшне чĕнсе хытах калаçас пулать-ха ун пирки, — терĕ вăл.

Уроксем хыççăн Аркаш киле каймарĕ, каллех Евгени патне чупрĕ. Тусĕ шăпах урамри çăлтан шыв ăсса тăрать-мĕн.

— Ну, мĕнле? Çывăрса тăрантăн-и? — ыйтрĕ вăл ун патне çитнĕ-çитмен.

— Питĕ лайăх çывăрнă, — терĕ Евгени. — Унччен пĕр эрне çывăрман пекех.

— Леш ачи мĕнле? Тухтăрĕ кайман-и-ха?

— Хăрамаллах мар терĕ. Тухтăрĕ паян каймасть-ха, халĕ Антонина Клементьевнăпа пĕрле ытти эвакуированнăй ачасен сывлăхĕ мĕнлине тĕрĕслеме тухса кайрĕ. Районтисем çапла тума хушнă тет...

Евгени пĕр витрине, Аркаш теприне йăтрĕç те вĕсем картишне кĕчĕç. Шывĕ выльăхсем валли кирлĕ пулнă. Евгени ваккасах пӳртрен тепĕр витре вĕри шыв илсе тухрĕ, вара вĕсем ăна сиввипе хутăштарса пур выльăхсене те шăварчĕç, унтан каçхи апат пачĕç. Аркаш çав вăхăтра хăйĕн тусне паян шкулта мĕн пулса иртни çинчен каласа кăтартрĕ.

— Чăн та, сыснах ĕнтĕ вăл Палля, — терĕ Евгени. — Ăна амăшĕ питĕ пăсать пулмалла. Амăшĕ пĕртте халăх шутлă мар вĕт. Тăхта акă, малашне эпир унпа мĕн тумаллине пĕлĕпĕр-ха. Çын шутне кĕртетпĕрех ăна!

— Амăшне-и? — ыйтрĕ Аркаш.

— Мĕн тума кирлĕ пире амăшĕ? Паллине! Пăсăлнă ачасене тӳрлетесси те пионерсен ĕçĕ...

— Çук ĕнтĕ, халь тин ăна тӳрлетесси пулмасть пулĕ.
— Ан кала, пулать. Курăн...
Аркаш тата кăшт тăркаларĕ те киле каяс пулĕ, манăн та выльăхсене пуçтарса хупмалла терĕ. Евгение каçхине, ерçсен, хăйсем патне пыма чĕнчĕ.
Çав вăхăтра крыльца çине эвакуированнăйсен аслă ывăл ачи Ян тухрĕ. Вăл картишĕнчи икĕ арçын ачана курчĕ те тăпах чарăнса тăчĕ. Пĕр хушă чĕнмерĕ, унтан:
— Тэрэ... Страстуйте, — тесе пуç тайрĕ.
— Здравствуй, — терĕç туссем ăна хирĕç пĕр харăсах. — Иди сюда... — кăчăк туртрĕ Евгени.
Ян вĕсем патнелле пычĕ. Вăл карттуспа, çӳхе пиншакпа, пушмакпа кăна иккен. Евгенипе Аркаш кĕрĕк пиншаксем, çăматăсем тăхăннă.
— Так тебе не холодно? — ыйтрĕ Аркаш ун урисем çине кăтартса.
— Русски... нет, — пуçне пăркаларĕ Ян. —Вэне кээлт эм оска*.
— Питĕ шел, — ассăн сывласа илчĕ Аркаш. — Вĕрентмелле пулать эппин сана.
— Нимех те мар, — терĕ Евгени, — пурăна киле вырăсла мар, чăвашла та вĕренĕ-ха. Эпир ют çĕршыв чĕлхисене вĕренетпĕр-çке, вĕсене те çавăн пекех вĕрентеççĕ.
Кăшт уçăлас шутпа пулас кил хушшине Янăн аслашшĕ, ватă Пауль, тухрĕ. Вăл та ачасем патне пычĕ те пурин çине те кăмăллăн пăхса:
— Паллашрăр-и? — тесе ыйтрĕ.
— Паллашасси паллашрăмăр, анчах калаçаймастпăр-ха, — терĕ Евгени. — Вăл вырăсла пĕлмест...
— Çапла çав, пĕлмест, — терĕ Пауль. — Пирĕн шкулсенче пĕлтĕрччен вырăсла вĕрентмен, нимĕçле çеç вĕрентнĕ.
— Мĕншĕн ун пек пулнă вара?
— Мĕншĕн тесен ун чухне пирĕн çĕршывра нимĕç фашисчĕсем майлă çынсем пуç пулса тăнă, пур эстонецсене те нимĕçсем пек туса яма шутланă. Пĕлтĕр, Совет влаçĕ тусан тин, шкулсенче вырăсла вĕрентме тытăнчĕç...
— Анчах эсир хăвăр вырăсла ăçта вĕреннĕ вара, питĕ лайăх калаçатăр-çке? — ыйтрĕ Аркаш.
— Эпĕ ĕлĕк Российăра нумай пурăннă, — терĕ Пауль. — Нижний Новгородра, Сормовăра пăрахутсем тунă, кайран Петербургра карапсем тăвакан заводра ĕçленĕ, вун тăваттăмĕш çулхи вăрçă вăхăтĕнче патша çарĕнче служить тунă...
— Вăрçăра та пулнă пуль эппин? — ыйтрĕ Евгени.

* Эп вырăсла пĕлместĕп (э с т о н л а).

— Пулнă, таçта та çитнĕ... Аманса та курнă, тыткăна та лекнĕ... — ассăн сывласа илчĕ Пауль.

— Манăн çапах та киле каяс-ха, — терĕ Аркаш. — Сыв пулăр... Эсĕ, Евгени, кайран пыр эппин...

— Ку ача санăн тусу-и? — ыйтрĕ Пауль Аркаш хапхаран тухса кайсан. — Лайăх ача пулмалла...

— Пĕрле вĕренетпĕр. Унăн та ашшĕ вăрçăра, пирĕн аттепе пĕрле кайрĕ, çавăнпа та эпир пĕр-пĕрне пур чух та пулăшатпăр, — терĕ Евгени.

— О, пĕрне-пĕри пулăшни питĕ аван вăл... Питĕ аван! Пĕччен тăвайманнине иккĕн тăватăнах.

— Ушкăнпа пулсан тата авантарах, — хушса хучĕ Евгени.

— Ку та тĕрĕс... Эсир пирĕн Яна та хăвăр ушкăна йышăнăр ĕнтĕ. Вырăсла вĕренме пулăшас пулать ăна.

— Паллах, пулăшатпăр. Хăйĕн кăмăлĕ пултăр кăна!

— О, вăл хăй питĕ вĕренесшĕн, питĕ! — Старик мăнукĕ çине пăхса хăйсен чĕлхипе темскер каларĕ. Ян пуçĕпе сулса илчĕ те, шăна пуçланăскер, çенĕк еннелле утрĕ. Шăпах çав вăхăтра калинккерен Рина Петровна кĕрсе тăчĕ те Паульпе Евгение курсанах:

— Здравствуйте! — терĕ.

Ватă эстонец ăна пуç тайрĕ.

— Доброго здоровья, девушка!

— Килте кам пур? — Евгенирен ыйтрĕ учительница.

— Пурте килтех...

Çамрăк хĕр хăвăрт кăна картлашкасем тăрăх чупса хăпарса кайрĕ.

— Ку кам пулчĕ тата? — хуллентерех ыйтрĕ Пауль.

Евгени каласа пачĕ.

— Çивĕч хĕр, — ырларĕ Пауль. — Лайăх вĕрентет пуль?

— Эпир ăна пуринчен те ытларах юрататпăр.

— Аван, аван...

Пауль урамалла тухрĕ. Евгени кĕреçе тытса пĕр хушă вырăнта шăнна навуса хырчĕ, унтан паянлăха ĕç пĕтрĕ пулас-ха тесе урисене шăпăрпа тасаткаларĕ те пӳрте кĕчĕ. Алăкран кĕнĕ-кĕменех вăл çав тери кăмăла каймалла япала курчĕ: кайри пӳртри сĕтел хушшине Маринепе эстонецсен хĕр ачи Юули юнашар кĕрсе ларнă та тимлесех кивĕ букварьти ӳкерчĕксене пăхаççĕ. Марини — сăмала пек хура çӳçлĕ, Юули çӳçĕ тин çеç çăмартаран тухнă чĕпĕ тĕкĕ евĕр шап-шурă та çеп-çемçе курăнать. Евгение асăрхамарĕç те пулмалла вĕсем, пăхмарĕç те ун çине. Марине сылтăм аллине пуç пӳрнипе кĕнеке çине тĕлле-тĕлле каласа пырать:

— Ак ку акă — сĕтел. Ак ку — пукан. Ку — кĕнеке... Ку — хут. Ак ку — кĕпе. Пушмак. Атă...

Евгени вӗсем ҫине пӑхса хӑй ӑшӗнче кӑмӑллӑн кулса илчӗ.

— Эпир вӗсене вӗрентесси ҫинчен калаҫрӑмӑр кӑна-ха, анчах пирӗн Марине ӗҫе тытӑннӑ та иккен!

Унтан вӗсем патне пырса тӑчӗ те йӑмӑкӗнчен:

— Эсӗ учительница пулнӑ тем? — тесе ыйтрӗ кӑшт куларах. — Хӑвах шутласа кӑлартӑн-и куна е анне хушрӗ-и?

Марине ун ҫине тӗлӗнерех пӑхрӗ.

— Чӑвашла нимӗн те пӗлмест те... Антонина Клементьевна калалӗ, силӗн пӗл-пӗлинпе калаҫма вӗленес пулать телӗ...

— Тавай вӗрент, вӗрент. Лайӑх пулать!

— Санӑн та алҫын ачине вӗлентесчӗ, вӑл та нимӗн те пӗлмест-иҫ? — терӗ Марине.

— Эпӗ те вӗрентетӗп акӑ, тӑхта...

Евгени малти пӳртелле иртрӗ. Унта хӑйсен амӑшӗ, Рина Петровна, Антонина Клементьевна тата Амалия лараҫҫӗ. Чирлӗ хӗр ачи ҫывӑрать иккен, унӑн амӑшӗ, яланхи пекех, ун пуҫӗ вӗҫӗнче, тарӑн шухӑша кайнӑ пек, чавсаланса ларать — халӗ те хуйхӑрать ӗнтӗ. Евгени илсе килнӗ тухтӑрӗ кӑмака ҫумӗнчи вырӑн ҫинче ҫывӑрать, ӗнертенпе чӑлкӑм куҫ хупмансker, канать вӑл.

— Кун пирки эпир паян педсоветра калаҫса илтӗмӗр, — терӗ Рина Петровна унччenех пуҫланнӑ калаҫӑва малалла тӑсса. — Эвакуированнӑй ачасенчен уйрӑм группӑсем туса вӗрентес терӗмӗр. Районтан та шӑнкӑравларӗҫ кун ҫинчен. Ҫавӑнпа та халӗ эп вӗсене килӗрен ҫырса ҫӳретӗп.

— Ҫапах та ачисем ни чӑвашла, ни вырӑсла пӗр сӑмах та пӗлмеҫҫӗ пулсан мӗнле вӗрентес тетӗр-ха вӗсене? — ыйтрӗ Евгени амӑшӗ.

— Майне тупас пулать. Тен, хӑйсен ашшӗ-амӑшӗсем хушшинче чылай вӗреннисем тупӑнӗҫ, вӗсене чӗнетпӗр.

— Ҫаксен ватти вырӑсла лайӑх калаҫать, — терӗ Антонина Клементьевна, — вӑл пулӑшма пултарать те пулӗ...

— Ку тӗрӗс шухӑш.

— Хамӑр ачасене те ытларах хутшӑнтарма шутлатпӑр. Шефа илччӗр, вӗсемпе ялан вырӑсла калаҫчӑр. Ку вӑл хӑйсемшӗн те усӑллӑ пулать.

— Ара, майлашмаллах ӗнтӗ мӗнле те пулин, — терӗ Улька. — Вӑрҫи тахҫан пӗтет-ха, ӑна пӗлме ҫук... Ачасен унччен вӗренмесӗр пурӑнмалла мар вӗт!

Ҫак калаҫу Евгение питӗ килӗшрӗ. Кур-ха, ҫыннисем тин ҫеҫ килсе ҫитнӗ, лайӑххӑн канайман та, анчах учительсем вӗсен ачисене вӗрентес пирки хыпкаланма тытӑннӑ.

Пӳрте ватӑ Пауль таврӑнчӗ те, калаҫу пӗр вӑхӑта чарӑнчӗ. Старик малалла иртсе сак ҫине ларсан Рина Петровна унпа калаҫа пуҫларӗ.

— Эпир сирӗн ачасене шкулта вӗрентесси пирки сӑмахлатпӑр...
— О, ку питӗ аван... Питӗ кирлӗ! — терӗ Пауль.
— Хӑшӗ миҫе ҫулта, вӑрҫӑччен хӑш класра вӗреннӗ, ҫавна пӗлмелле манӑн. — Ҫамрӑк учительница тетрадьпе кӑранташ кӑларса ҫырма хатӗрленчӗ.
Ватӑ Пауль хаваслансах каласа пачӗ:
— Ян — вун иккӗ тултарнӑ, кӑҫал улттӑмӗш класа каймаллаччӗ, Юули — саккӑрта, пӗлтӗр пӗрремӗш класра вӗренчӗ...
— Хушаматӑр мӗнле-ха сирӗн?
— Киккас.
— Питӗ... тӗлӗнмелле хушамат. Нихҫан та илтмен.
— Вырӑссен ҫук ҫав ун пекки. Эстонла хушамат.
Рина Петровна ҫырса пӗтерчӗ те тетрадьне кӗсйине чиксе хучӗ.
— Сӑмах майӑн каласан, манӑн пичче, ҫар ҫынни, Эстонире пӗр ҫулталӑка яхӑн пурӑннӑччӗ... — терӗ вӑл унтан.
— Хӑҫан? — тӑруках интересленсе ыйтрӗ ватӑ эстонец.
— Вӑтӑр тӑххӑрмӗш ҫулта, кӗркунне, сирӗн ун чухнехи правительствӑпа тунӑ договор тӑрӑх, пирӗн ҫар чаҫӗсем Эстоние пычӗҫ-ҫке-ха?
— Ҫапла, ҫапла. Пирӗн утрав ҫине те пычӗҫ вӗсем... Питӗ кӑмӑллӑн йышӑнтӑмӑр эпир совет салтакӗсене.
— Хӑш утрав ҫине? — ыйтрӗ Рина Петровна.
— Сааремаа ҫине, — васкасах хуравларӗ Пауль.
Рина Петровна ҫакна илтсенех шухӑша кайнӑ пек пулчӗ.
— Сааремаа... Сааремаа... Урӑхла ӑна Эзель теҫҫӗ мар-и?
— Ун пек те калаҫҫӗ...
— Вӑт, ман пичче шӑпах ҫавӑнта пулнӑ!
— Чӑнах-и? — тӗлӗнчӗ Пауль. — Хӑҫанччен пурӑннӑ вӑл унта?
— Хӗрӗхмӗш ҫулта, кӗр енне, ӑна унтан академие ячӗҫ.
— Эппин, вӑл офицер пулнӑ?
— Лейтенант.
— Вӗсен чаҫӗ, калӑпӑр, батальонӗ, полкӗ е дивизийӗ хӑш тӗлтерех вырнаҫнине пӗлместӗр-и?
— Ун ҫинчен ҫырман вӑл. Ку, тен, вӗсен ҫар секречӗ пулнӑ пуль.
— Шел, — терӗ Пауль. Унтан ӑнлантарма тытӑнчӗ: — Куна эпӗ акӑ мӗншӗн ыйтатӑп. Ун чух пирӗн вулӑс салинче Мустиялере те пӗр батальон вырнаҫнӑччӗ. Офицерсем уйрӑм ҫынсем патӗнче хваттерте пурӑнатчӗҫ, пирӗн патра та пӗр ҫамрӑк офицер пурӑнчӗ...
— Ман пичче те хваттерте пурӑннӑ! — старике пӳлнӗ пекех каларӗ Рина Петровна.

— Пирĕн патри хăйне... чăваш тетчĕ.

— Чăваш?! Хушамачĕ мĕнлеччĕ унăн? Астумастăр-и?

— Хушаматне... астăваймастăп çав халь. Темле, вырăсла марччĕ-ха ун хушамачĕ, — терĕ Пауль. — Ячĕ те асра юлман. Чим-ха, Ян астумасть-ши? Вĕсем иккĕшĕ çав тери туслăччĕ...

Старик çавăнтах Янпа хăйсен чĕлхипе калаçса илчĕ.

— Ону Федья*, — терĕ ăна хирĕç лешĕ, аслашшĕпе Рина Петровна калаçнине нимĕн ăнланмансқер.

— Тĕрĕс, Федя, Федор! — аса илнĕшĕн савăнса кайрĕ Пауль.

— Хушамачĕ — Молгачов марччĕ-и? — чутах ура çине сиксе тăратчĕ Рина Петровна. Унăн пит çăмартисем тăруках хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕç.

— Çапла, çапла, Молгачов!.. Халь аса илтĕм...

— Апла пулсан... сирĕн патăрта манăн пичче пурăннă вĕт! — калама çук савăнăçлăн, куçĕсене çутăлтарса, кăшкăрсах илчĕ Рина Петровна. — Манăн пичче, тăван пичче, ăнланатăр-и?

— Пулма пултараймасть! — пĕççисене шартах çапса илчĕ Пауль.

— Мĕншĕн пулма пултараймасть? Тăхтăр-ха, эп ак халех унăн сăн ӳкерчĕкне илсе килсе кăтартам сире... Куратăр вара! — Рина Петровна йăпăр-япăр пальтипе тутăрне уртса ячĕ те алăксене шăлт-шалт уçса хупса урамалла тухса чупрĕ.

Пауль Амалипе Яна хăй халь кăна учительницăпа мĕн çинчен калаçнине ăнлантарса пачĕ. Вара вĕсем виççĕшĕ те пăлханса кайса тавлашнă пекех калаçма тытăнчĕç. Рина Петровнăпа ватă Пауль калаçнине итлесе ларнă Улькапа Антонина Клементьевна та, вĕсемпе пĕрле Евгени те çав тери тĕлĕнсе пĕрпĕринпе калаçса кайрĕç:

— Пăх-ха эсĕ, епле пулса тухать пурнăçра!..

— Кĕнекере те час-часах тупса вулас çук кун пеккине!

— Ара, ку тĕрĕсех пулсан тĕлĕнсе хытсах каймалла-иç!

Кĕçех учительница çил пек каялла чупса çитрĕ.

— Акă ĕнтĕ, курăр! — Вăл сĕтел çине хăйĕн пиччĕшĕ лейтенант формипе ӳкерĕннĕ фотографие хучĕ. Пурте пĕр харăсах ӳкерчĕк çинчи çавракарах питлĕ, çав тери чĕрĕ куçлă илемлĕ каччăна пăхма тытăнчĕç.

— Çакă-и? Палларăр-и? — пĕрре ватă Пауль çине, тепре унăн кинĕ еннелле çаврăнса ыйтрĕ Рина Петровна.

— Вăл, — терĕ Пауль. — Тĕп-тĕрĕс! Хирĕç нимĕн те калаймăн...

— Ону Федья... — пăшăлтатса илчĕ Ян.

---

* Федя пичче.

— Руски лейтенант... Та елас меил*... — терĕ Амалия тĕлĕннипе куçĕсене хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарса.

— Анчах ку пĕтĕмпех мар-ха, эсир тата çакна курăр... — Рина Петровна сĕтел çине тепĕр сăн ӳкерчĕк кăларса хучĕ. — Кун çинчен эпĕ мансах кайнăччĕ, ăнсăртран халь куç тĕлне пулчĕ. Паллатăр-и? — Вăл пур Киккассене те пăхса çаврăнчĕ. Лешсем малтанах çăварĕсене шыв сыпнă пек пулчĕç, ним те чĕнеймерĕç, пурте ăнран тухса каймаллах тĕлĕнчĕç пулмалла çав... Пуринчен малтан Амалия сиксе тăчĕ:

— Ильмар! Юмал хамастакс!** — темрен тăрук хăранă пек кăшкăрсах ячĕ вăл. Унччен те пулмарĕ, ӳкерчĕке ик аллипех ярса тытрĕ те ăна вĕçĕмсĕр чуптума тытăнчĕ. — Ильмар!.. Мину армас, мину калльис!***

Унăн пит çăмартисем тăрăх шултра куççулĕ шăпăртатса анчĕ. Çавăнтах вăл ӳкерчĕке ачисене кăтартма тытăнчĕ:

— Паппа, паппа!****

Анчах çав ӳкерчĕк çинче Амалия упăшки кăна мар, ыттисем те пур иккен: Амалия хăй те, Пауль те, Янпа Юули те. Вĕсемпе пĕрле Рина Петровна пиччĕшĕ, совет лейтенанчĕ Федор Молгачов, кăмăллăн кулса тăрать...

— Ăçтан лекнĕ ку ӳкерчĕк сирĕн патăра? — пăлханнипе чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ вată Пауль.

— Епле ăçтан? — тĕлĕнчĕ Рина Петровна. — Ăна мана пичче хăй ярса панă, асăнмалăх...

— А-а, çапла пуль çав... Анчах пирĕн çук вăл. Пирĕн пĕр ӳкерчĕк те çук. Ильмар сăнне те илсе тухайман эпир, çавăншăн пĕрмай кулянатпăр...

— Апла пулсан ку ӳкерчĕке эпĕ сирĕн патăрта хăварма пултаратăп, — терĕ Рина Петровна. — Маншăн та питĕ хаклă вăл, анчах сирĕншĕн тата хаклăрах ĕнтĕ...

— Тавах сире, темрен те пысăк тав!.. Пирĕншĕн ку çав тери пысăк парне пулать!

Рина Петровна мĕн каланине старик эстонла куçарса парсан Амалия куçĕсем тепĕр хут хавассăн çутăлса илчĕç.

— О, ырă çын!..

Вăл хăй пурнăçĕнче пĕрремĕш хут курнă чăваш хĕрне çатăрах ыталарĕ те ăна питĕнчен çине-çине темиçе хут чуптурĕ.

...Çав каçхине вата Паульпе унăн кинĕ Амалия нумайччен сывăрса каяймасăр шăппăн калаçса выртрĕç. Çак инçетри чăваш ялĕнче, тăван Эстонирен икĕ пин километра яхăн аякра, кĕтмен

---

* Вăл пирĕн патра пурăннă.

** Ильмар! Турăçăм!

*** Ман юратнă, асран кайми çыннăм!

**** Аçу, аçу!

çĕртен, пачах та ăнсăртран хăйсен чи хаклă çыннин сăн ÿкерчĕкĕ тупăнни вĕсене калама çук савăнтарса, пăлхантарса ячĕ.

— Халь ĕнтĕ Ильмар кунта пирĕнпе пĕрле пурăннă пекех пулать, эпир ăна кашни кун, кашни самантра курма пултаратпăр, — терĕ Амалия. — Мĕн тери лайăх!..

— Ачасемшĕн епле аван тата вăл! — хушса хучĕ Пауль. — Ўкерчĕк пулмасан вĕсем ашшĕн сăнне те манса кайма пултараççĕ вĕт...

— Ăçтан кăна сиксе тухрĕ пуль пирĕн тĕле ку çамрăк учительница! Тавтапуçах ăна!

— Ăна çеç мар, ыттисене те пĕтĕм чун-чĕреренех тав тăвас пулать пирĕн, — тарăннăн сывласа илчĕ старик. — Шутласа пăх-ха эсĕ, епле кĕтсе илчĕç вĕсем пире... Тепри хăйĕн чи çывăх тăванне те ун пек ăшшăн кĕтсе илмест... Камсем-ха эпир вĕсемшĕн? Çичĕ ют! Вĕсен чĕлхине те, йăлисене те пĕлместпĕр, вĕсем хăйсем те пирĕн халăх çинчен çак таранччен илтменпе пĕрех. Анчах халĕ тăвансем пекех пулса тăтăмăр...

— Тĕлĕнмелле çав, — килĕшрĕ Амалия.

— Совет Российинче йăли çавăн пек, — терĕ малалла Пауль, — унта тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăхсем пĕр-пĕринпе хирĕçсе мар, пĕр-пĕрне пулăшса, тăвансем пек туслă пурăнаççĕ. Кун çинчен мана хамăрăн Ильмар та пĕрре кăна мар каланă... Пирĕн вăл тахçанах коммунист пулнă-çке, Совет Союзĕнчи пурнăç çинчен лайăх пĕлетчĕ...

— Туслă пурăннине нимĕн те çитмест ĕнтĕ, — терĕ Амалия.

Пĕр хушă чĕнмерĕç, унтан Пауль каллех калаçма тытăнчĕ:

— Çапах та, Амалия, пирĕн сăр хуртсем пек пурăнма юрамасть, мĕн те пулин ĕçлеме пуçлас пулать...

— Мĕн ĕçлеме пĕлĕпĕр-ши эпир кунта? — ыйтрĕ çывăрса кайма пуçланă Амалия.

— Чипер сывă ал-уràллă çын валли ĕç тупăнатех. Ыранах колхоз пуçлăхĕ патне кайса пăхатăп. Ху пĕлетĕн, эпĕ ăста механик. Вĕсен тĕрлĕ машинăсем пулма кирлĕ. Тен, вĕсенчен хăшне-пĕрне юсамалла, тÿрлетмелле... Сана та мĕн те пулин тупса парĕç тен. Ĕçлемесĕр çăкăр çиме намăс. Пултараймастăп эпĕ ун пек...

Кинĕ çывăрса кайрĕ, анчах ватă Пауль тата вăрахчен куç хупмасăр выртрĕ. Шухăшлама ирĕк пулчĕ ăна. Стена çинчи сехет хăй çеммипе шакканисĕр пуçне пĕр сасă та пулмарĕ. Чирлĕ Эльга та лăпкă çывăрчĕ кĕçĕр — йынăшмарĕ, малтанхи каççенчи пек вăрана-вăрана макăрмарĕ.

Пауль Киккас чăн-чăн ĕç çынни пулнă çав. Унăн ашшĕ, пулăç, вăйлă шторм вăхăтĕнче тинĕсре путса вилнĕ, унăн виллине те тупайман. Ун чухне Пауль вун иккĕри ача пулнă. Çавăнтан вара унăн пĕрмай пуян хуçасем патĕнче кĕрĕшсе ĕçле-

ме тивнĕ. Хăй ĕмĕрĕнче вăл вуншар тĕрлĕ ĕçре пулса курнă: грузчик та, пулăç та, матрос та, заводри механик та — тем те. Пĕр кун та ĕçлеменни пулман унăн. Хăйĕн ачисене те çамрăклах ĕçе хăнăхтарнă. «Ху ĕçлесе тупнă çăкăр — чи тутли», — тенĕ вăл яланах.

Халĕ те вăл çак инçетри ют яла çитсе вырнаçнă-вырнаçман ĕç çинчен шухăшла пуçларĕ. «Хамăрăн ытти çынсемпе калаçас, вĕсем те ĕçлеме тытăнччăр. Сана ыр кăмăлпа, чунчĕререн йышăнчĕç пулсан — хăвăн та тӳр пилĕк пулмалла мар...»

Ирхине вăл апат çисенех тумланчĕ те килтен тухса утрĕ. Малтан эвакуаципе килнĕ эстонецсем вырнаçнă килсенче пулчĕ, вĕсене хăй мĕн шухăшлани çинчен каласа пачĕ, унтан колхоз правленине кайрĕ.

## Пĕр кăмăлпа

...Вăл кунсенче колхоз председателĕ Назар Егорччă пĕртте лăш курмарĕ. Уйри тыр-пулсене пуçтарса кĕртнĕ, авăн çапса пĕтернĕ, патшалăха мĕн памаллине парса татнă пулин те ларатăра пĕлмерĕ вăл. Ытти çулсенче, вăрçăччен, ку вăхăтра ял халăхĕ пĕр хушă каннă, кĕр вăййĕпе хăнасем пухса савăннă, çамрăксем кашни каç клубра пухăнса юрланă-ташланă, кино курнă, шкул ачисем Октябрь праçникне концерт-спектакль хатĕрленĕ, анчах 1941 çулхи кĕркунне пĕрре те ун пек пулмарĕ çав.

Районтан шăнкăравласах тăчĕç: ăна тумалла та кăна тумалла. Пĕрин хыççăн тепри уполномоченнăйсем килеççĕ — хăвăртрах, Назар Егорччă, хăвăртрах! Фронта кирлĕ! Фронт валли!..

Тискер тăшман халĕ те пирĕн çĕр çинелле шалтан шала кĕрсе пырать-ха. Хăйĕн салтакĕсем куллен пинĕ-пинĕпе пĕтни, танкĕсем çĕршерĕн çунса кайни, вуншар самолечĕ сывлăшрах хыпса çуннине те пăхса тăмасть вăл, пирĕн Тăван çĕршыв чĕри патнелле çывхарса килет.

Хăрушă, çав тери хăрушă! Пирĕн салтаксем тăшмана хирĕç калама çук хытă тăнă, арăслансем пекех çапăçнă пулин те вĕсен халлĕхе çаплах чакма тивет-ха.

Нивушлĕ Мускавах çитсе кĕрĕ ирсĕр фашист?

Çук, пулма пултараймасть ун пек! Чараççĕ ăна пирĕн паттăр салтаксем, çĕршыв чĕрине тăшман аллине памаççех!..

Пирĕн пĕтĕм халăхăн, кашни совет çыннин шухăшĕпе ĕмĕчĕ çавăн пек. Нимĕн те шел мар — вăй та, сывлăх та,

пурлăх та, укçа-тенкĕ те! Гитлер хурахĕсене текех малалла шума парас марччĕ кăна!

Назар Егорччă районтан мĕн хушнисене пурне те тĕп-тĕрĕс туса пычĕ. Фронт валли колхозран тата вунă лаша — çуни-турти, хăмăчĕ-пĕкки-мĕнĕпех ăсатрĕ, çунисем çине пĕр вуншар пăт чи лайăх утă тиесе ячĕ. Фронт валли кирлĕ хатĕр-сем хăвăртрах леçме Хусантан Горький хули еннелле асфальт сарнă мăн çул тума тытăнчĕç — унта ĕçлеме харăсах сакăр лавпа вун ултă хĕрарăм кăларса ячĕ — пĕри те хирĕçсе тăмарĕ. Госпитальсем валли кайăк-кĕшĕк ашĕ ыйтрĕç, ăна та хулана вăхăтра çитерсе пачĕ вăл. Никама та шанмарĕ, хăй леçсе килчĕ.

Эвакуированнăйсемшĕн те нумай тăрăшмалла пулчĕ пред-седателĕн. Вĕсене тăрантармалла вĕт-ха, вĕсем пурăнакан пӳртсене те лайăхрах хутса ăшăтмалла. Нумайăшĕн ăшă тум-тирĕ те, урисене тăхăнмалла те çук — епле хĕл каçтарас-ха вĕсене? Хурлăха кĕрсе ӳкнĕ çынсене пулăшмаллах, вĕсем ха-мăрăнах, совет çыннисемех вĕт-ха.

Учительсен те сахал мар ĕçлемелле пулчĕ — хăрушă вăрçа пула кунта килсе тухнă çынсен ачисене вĕрентес пулать, темле кансĕр пулсан та вĕсене шкултан хăварма юрамасть...

Педсоветра тĕплĕн калаçса илнĕ хыççăн ку ĕçе Рина Пет-ровнăна хушрĕç.

— Эсĕ çамрăк-ха, пĕччен çын, санăн каç-каç та вăхăт пу-лать, хăвна пулăшса пыма вĕренекен ачасенчен çивĕчреххи-сене хăнăхтарма пултаратăн...

Çамрăк учительница пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ.

Колхоза илсе килнĕ ултă çемьерен виççĕшĕ эстонецсем, иккĕшĕ — белоруссем, пĕр çемйи — вырăс. Белорус ачисем вырăсла ăнланаççĕ, анчах эстонецсен ачисем вара пĕр сăмах та пĕлмеççĕ. Мĕнле вĕрентмелле вĕсене? Хăйсен ашшĕ-амă-шĕсенчен хăшĕ те пулин пулăшмасан, чăнах та, ним тума аптрамалла, тăрăшни те ахалех сая кайма пултарать.

Педсовет хыççăн Рина Петровна Евгенисем патне кайрĕ.

«Ватă эстонецĕ вырăсла лайăхах пĕлет, çавна явăçтарсан аван пулĕччĕ. Хирĕççех тăмасть пулĕ-ха, пĕркун питĕ кăмăллă çын пек курăнчĕ...» — шухăшларĕ вăл.

Рина Петровна шухăшĕ тĕрĕсех пулчĕ. Хирĕççе тăма мар, учительница хăйсем патне мĕн шутпа пынине пĕлсен Пауль Киккас питĕ кăмăллă пулчĕ.

— О, аван ку, питĕ аван! — терĕ вăл кăмăлĕ тулнипе алли-сене сăтăркаласа. — Эсир вĕсене вырăсла вĕрентетĕр, эпĕ хамăр чĕлхепе каласа паратăп... Питĕ аван пулать, ăнлантаратпăр! Унтан майĕпе хăйсем те вырăсла вĕренсе пырĕç...

Вăл çакăн çинчен васкасах кинне каласа пачĕ. Вара Ама-лин те хĕпĕртенипе куçĕсем çуталса кайрĕç, вăл çӳхе тутипе

йăл та йăл кулса, пуçĕпе сула-сула илчĕ. Ачисем шкула çӳреме пуçласси амăшне савăнтаратех ĕнтĕ. Кунсăр пуçне тата унăн пĕчĕк хĕр ачи, Эльга, юлашки кунсенче самайлансах пычĕ, çавăнпа вăл ахаль те хаваслă-мĕн.

Тепĕр кунне вара ирхи уроксем пĕтсен эвакуированнăй ачасене пурне те шкула илсе пычĕç. Кам миçе çултине тата пĕлтĕр хăйсен килĕсенче хăш классенче вĕреннине шута илсе Рина Петровна вĕсенчен икĕ пĕчĕк класс пекки турĕ.

— Вĕренме тытăнар, ачасем...

Октябрь праçникĕ çитиччен пĕр виçĕ кун малтан, кăнтăрла иртсен, «Çĕнĕ самана» колхозри шкул умне кивĕрех сăран пиншак тăхăннă, пуçне кăвак çăм тутăр çыхнă шуранка сăнлă хĕр пырса тăчĕ. Переменăна тухнă ачасем ăна карах сырса илчĕç — кам вара ку? Анчах пĕри те тӳрех сăмах хушма хăймарĕха. Хăшĕсем ăна сывлăх сунчĕç кăна. Хĕр те ачасене сывлăх сунчĕ, унтан хăйĕн резина атти çумне çыпçăннă пылчăка турпаспа хырса тасатрĕ (ĕнер-виçĕм кун çумăр çунипе юр ирĕлчĕ те, çулсем лапралансах кайрĕç), унтан тутри айĕнчен усăнса тухнă çырă çӳçне тӳрлетсе крыльца картлашкисем тăрăх майĕпе утса хăпарчĕ.

— Учительсен пӳлĕмĕ ăçтарах сирĕн? — ыйтрĕ вăл ачасенчен.

— Коридор леш вĕçĕнче, сылтăм енче! — темиçен пĕр харăс каларĕç ăна.

Хĕр хăйне тĕллеттерсе янă пӳлĕме кĕчĕ те алăк патĕнче чарăнса тăрса перемена вăхăтĕнче канса ларакан учительсене — тăвată хĕрарăмпа пĕр старике — пуç тайса саламларĕ.

— Мана директор кирлĕччĕ...

— Директор çук çав, анчах ун вырăнне эп калаçма пултаратăп сирĕнпе, — терĕ пĕр çамрăк учительници симĕс пусма витнĕ сĕтел хушшинчен тăрса. Ку Рина Петровна пулчĕ. Килсе кĕни вара тӳрех ун патнелле пырса ал пачĕ:

— Кулюкова Нина... Комсомол райкомĕнчен.

— Паллатăп сире, — терĕ Рина Петровна умĕнчи тетрадьсене аяккалла сирсе хурса. — Нумаях пулмасть райком фронта пулăшас пирки ирттернĕ канашлура президиумра эпир сирĕнпе пĕрле лартăмăр. Астумастăр-и?

— Астăватăп... Эпĕ халĕ те çав ĕçпех.

Коридорта шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ, ачасем васкаса чупни, алăксем шăлт-шалт уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Кĕçех учительсем урока тухса кайрĕç те, Рина Петровнăпа райкомран килнĕ хĕр пӳлĕмре иккĕшех юлчĕç.

— Комсомол тĕп комитечĕ постановлени йышăннă, — терĕ Кулюкова кĕсйинчен хут кăларса. — Ноябрĕн саккăрмĕшĕнче

пётём Союзёпех шкул ачисен воскресникне ирттерсе тимёр-тăмăр пухмалла. Питё кирлё, çине тăрса тумалли ёç!

— Тимёр-тăмăрне ăна эпир кăçал ахаль те чылай пухкаларăмăр-ха, колхоз вити патёнче сахалтан та пёр виçё лав выртать, — терё Рина Петровна.

— Сахал вăл, сахал! Тата ытларах пухас пулать, кайран тракторпах килсе илсе каяççё... Халё кашни килограмм хаклă вёт!

— Вăл тёрёс ёнтё...

— Кунсăр пуçне фронт валли ăшă япаласем пухас пирки ёçсем мёнле пыраççё сирён?

— Алсиш-чăлха, çăм тăла, тирсем чылай пухса патăмăр. Иртнё эрнере колхоз председателё района икё михё леçрё.

— Татах пухас пулать. Хёле кёретпёр, часах акă шартлама сивёсем пуçланаççё...

Калаçнă май Рина Петровна çак хёр çине куç илмесёр пăхса ларчё. Вăл ытла та салхуллă пек туйăнчё ăна. Темшён калаçнă çёртех ассăн сывла-сывла илет. Сăнё те шуранка, куçёсем те темле путса ларнă. Пёркун, районти канашлура курнă чух, ун пек марччё вăл... Килте юлнă çынсен фронта мёнле пулăшмалли çинчен çав тери хёрӳллё каларё, хăмăр куçёсем çиçсе кăна тăчёç, пит çăмартисем хăмач пек хёрелсе кайрёç унăн. Халь мён пулнă вара ăна? Çав териех ывăнса çитнё-ши? Е чирлесе кайнă?..

Кулюкова пёр майлă, лăпкăн калаçрё:

— Фронтра çапăçакансен çемйисене, вёсем йывăр пурăнаççё пулсан, куллен пур майсемпе те пулăшас пулать. Уйрăмах эвакуированнăйсемшён тăрăшмалла. Вёсем ахаль те тем те пёр курса пётнё, нумайăшё çитмёл çичё вилём витёр тухнă. Кăштах лăпланса пурăнччăр, вара колхозри ёçсене те хутшăнма тытăнёç... Çаксем çинчен паян ачасемпе хăйсемпе калаçса илёпёр.

— Пуринпе те-и? Е аслăраххисемпе çеç? — ыйтрё Рина Петровна.

— Пурне те пухăпăр. Вăрçă мён иккенне халь пёчёккисем те пит лайăх ăнланаççё.

— Вăл çапла, вăл тёрёс... — Рина Петровна ассăн сывласа илчё те, ун куçё умне тӳрех хăй пиччёшён сăнё тухса тăчё.

Вăрахчен калаçса ларчёç икё хёр. Унтан Рина Петровна аллинчи сехечё çине пăхса илчё те ура çине тăчё.

— Ку пирён юлашки урок, — терё вăл, — классене кайса асăрхаттарам-ха эпё, ан саланччăр...

Учительница тухрё, Кулюкова пёчченех юлчё. Вăл ёçсёр ларасран сётел çинче выртакан хаçата тытрё те тӳрех малтанхи страницăра пичетленнё Совинформбюро пёлтерёвне вулама тытăнчё:

«Ноябрĕн 2-мĕшĕнче кунĕпех пирĕн ҫарсем тăшманпа Можайск, Малоярославец, Волоколамск, Тула енче питĕ хытă ҫапăҫнă...»

Хĕр йывăррăн сывласа илчĕ те тек вуламарĕ. Каллех чакнă пирĕннисем. Ик-виҫĕ кун каялла ку хуласен ячĕсене асăнмастчĕҫ. Хăҫанччен пулса пырĕ кун пек? Мускав патнех ҫитрĕмĕр вĕт... Урăх чакмалли вырăн та юлмарĕ ĕнтĕ! Эх-х...

Коридорта паҫăрхи пекех шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ, кĕҫех алăксем шалтлатрĕҫ, ачасем чупма тытăнчĕҫ. Пӳлĕме Рина Петровна таврăнчĕ.

— Пилĕк минутран ачасем пурте пĕр класа пухăнаççĕ, учительсем те пулаççĕ, — тесе пĕлтерчĕ вăл.

— Тавтапуҫ, — пуҫне тайса илчĕ Кулюкова.

— Мĕншĕн тавтапуҫ? Сирĕншĕн ҫеҫ мар вĕт ку, пирĕншĕн пуриншĕн те кирлĕ.

...Уроксем хыççăн ачасем — аслăраххисем те, кĕҫĕннисем те — коридор вĕҫĕнчи мăн класа пухăнса ларчĕҫ. Учительсемпе «райком хĕрĕ» пырса кĕрсен (Кулюковăна ҫавăн пек ят пама ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ ачасем) пурте кар-р! ура ҫине тăрса сывлăх сунчĕҫ, унтан шăп пулса ют ҫынна куҫĕсемпе пăралаcа шăтарас пек пăхса ларчĕҫ. Рина Петровна пухăва пуҫласа парсанах Кулюкова калаҫма тытăнчĕ.

— Хаклă ачасем, ҫамрăк тусăмсем, — терĕ вăл, — темиҫе кунтан, ноябрĕн ҫиччĕмĕшĕнче, пирĕн ҫĕршывра Аслă революци пулнăранпа, ĕҫ ҫыннисем хăйсен тăшманĕсене, пуянсене, мул хуҫисене ҫĕнтерсе влаҫа хăйсен аллине илнĕренпе, хăйсем валли ирĕклĕ те телейлĕ пурнăҫ тума тытăннăранпа ҫирĕм тăвата ҫул ҫитет...

Сĕтел хушшинче ларакан Рина Петровна ун ҫине ҫаврăнса пăхрĕ. Кулюкова ҫак темиҫе самант хушшинчех палламалла мар улшăнма ĕлкĕрнĕ. Пĕркун районта тухса каланă чухнехи пекех, унăн куҫĕсем хĕрӳллĕн ялкăшаççĕ, типшĕмрех пит ҫăмартисем хĕрелсе кайнă...

— Ҫирĕм тăвата ҫул хушши ирĕклĕ совет халăхĕ ырмиканми ĕҫлесе хăй валли телейлĕ пурнăҫ турĕ, кашни ҫутă кун пире ҫĕнĕрен ҫĕнĕ савăнăҫ кӳчĕ. Эпир пурте питĕ лайăх пурăнаттăмăр — măннисем те, ачасем те... Анчах пирĕн юратнă ҫĕршыва сасартăк тăшман вăрă-хурахла килсе тапăнчĕ. Вăл пире, ирĕклĕ совет ҫыннисене, хăйĕн чурисем тума ĕмĕтленет...

«Райком хĕрĕ» хĕрнĕҫемĕн хĕрсе пычĕ. Вăл фашистсем вăхăтлăха тытса илнĕ пирĕн ҫĕр ҫинче мĕн тери хăрушă ĕҫсем туни, мирлĕ ҫынсене пинĕ-пинĕпе вĕлерни, хуласемпе ялсене ишĕлтерсе ҫунтарни ҫинчен, анчах темле тискерленсен те вĕсем пире ҫĕнтерме пултарас ҫукки ҫинчен каларĕ. Пирĕн

вăй нумай, пирĕн хастарлăх иксĕлми. Тăшманпа çапăçма пĕтĕм халăх çĕкленчĕ, паттăр совет салтакĕсемпе харсăр партизансем фашистсене кунĕн-çĕрĕн пĕтерсе пыраççĕ. Анчах та пирĕн хамăрăн воинсене куллен-кун, пĕр чарăнмасăр, мĕнпе май килнĕ çавăнпа пулăшса пымалла...

Кулюкова самантлăха чарăнса сывлăш çавăрса илчĕ те малалла каларĕ:

— Эсир кăçал уйри тыр-пула, çĕр улмине, пахча çимĕçсене пуçтарса кĕртнĕ чух хытă тăрăшнă, авăн та çапнă, арçын ачасенчен чылайăшĕ тырă акнă чух та ĕçленĕ... Ку питĕ аван, куншăн сире мухтамалла çеç. Анчах кунпа лăпланса ларма юрамасть, ачасем. Фронта тем те кирлĕ. Чăн малтан — салтаксене хĕç-пăшал ытларах туса памалла: танксем, самолетсем, тупăсем, пулеметсем; вĕсем валли тата вĕçĕмсĕр снаряд та патрон кирлĕ... Çаксене мĕнрен тунине эсир хăвăрах пĕлетĕр. Металл кирлĕ вĕсене тума — тимĕр, хурçă, пăхăр. Питĕ нумай кирлĕ! Тупма пултаратпăр-и эпир вĕсене? Паллах...

— Пултаратпăр! — хыттăн кăшкăрчĕ тахăшĕ хыçалти ретрен. — Темĕн чухлех тупса паратпăр!..

Пурте карах каялла çаврăнса пăхрĕç. «Райком хĕрне» пӳлсех кăшкăраканни улттăмĕш класра вĕренекен Аркадий Мазяков, килти пек каласан — Аркаш иккен. Итлесе ларнă чух вăл питĕ пăлханса кайнă пулмалла, тăшман тискерлĕхĕсем çинчен итлесе пĕтĕм ăш-чикĕ вĕреме тытăннă унăн, çавăнпа тӳсеймен вăл...

— Ыттисем мĕнле шутлаççĕ? — ыйтрĕ Кулюкова.

— Çаплах шутлатпăр! — кăшкăрчĕç темиçен пĕр харăс.

— Апла пулсан, ачасем, çак ĕçе сирĕн халех тытăнас пулать. Ноябрĕн саккăрмĕшĕнче пĕтĕм Совет Союзĕнчи пионерсемпе шкул ачисем тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе воскресник ирттереççĕ, çавăнта сирĕн те хутшăнса тимлĕн ĕçлемелле...

— Ĕçлетпĕр! — каллех кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Тăрăшатпăр!..

— Пурте-и?

— Пурте! Никама та килте лартмастпăр. Пĕр-пĕринпе ăмăртса пухатпăр! — кĕрлесе кайрĕç ачасем. Çав вăхăтрах Рина Петровна виççĕмĕш ретре ларакан Евгени алă çĕкленине асăрхарĕ.

— Рыбаков, эс мĕн каласшăнччĕ?

Евгени ура çине тăчĕ.

— Ман шутпа, ку ĕçре хамăр хушăра ăмăртни сахал, пĕрпĕр урăх ялти шкул ачисене ăмăртăва чĕнес пулать! — терĕ вăл хыттăн. — Калăпăр, Улакасси ачисене...

— Тĕрĕс! Чĕнес!

Рина Петровна ыйтмасăрах унта та кунта çӳлелле çĕкленĕ

алӑсем курӑнчӗҫ, Евгени шухӑшӗпе килӗшсе ачасем хӑйсемех сасӑлама тытӑнчӗҫ.

...Чылая пычӗ пуху. «Райком хӗрӗпе» Рина Петровна ачасемпе халех тумалли ытти ӗҫсем пирки те калаҫса татӑлчӗҫ: фронт валли ӑшӑ япаласем татах пухмалла, хӗр ачасен чӑлха-алсиш ҫыхмалла, ялта пурӑнакан эвакуированнӑй ачасене шефа илсе вӗсене вӗренӳре пулӑшмалла, кашни звенон фронтовиксен пӗрер ҫемйине тӑтӑшах пулӑшса тӑмалла. Ачасем пуринпе те хапӑл тусах килӗшрӗҫ.

— Маттур ачасем сирӗн, — терӗ Кулюкова пуху хыҫҫӑн Рина Петровнӑпа унӑн хваттерне ҫитсен. — Вӗсемпе нумай усӑллӑ ӗҫсем тума пулать, чипер ертсе пымалла ҫеҫ...

— Эсӗ хӑвах каларӑн-ҫке: вӑрҫӑ мӗн иккенне халӗ пӗчӗк ачасем те ӑнланаҫҫӗ терӗн, — ун ҫине кӑмӑллӑн пӑхса илчӗ Рина Петровна.

— Ӑнланаҫҫӗ ҫав, питӗ лайӑх ӑнланаҫҫӗ, — ассӑн сывласа ячӗ Кулюкова. — Анчах вӗсем вӑрҫӑ ҫинчен пӗлмен, ун ҫинчен нихҫан та илтмен пулсан пин хут лайӑхрах пулӗччӗ!

— Ҫаплаччӗ те ҫав... Мӗн тӑвас тетӗн-ха? Айӑпӗ — пирӗнте мар, тӑшмансенче. Пирӗн халь ачасене тӗрӗссине каласа памалли ҫеҫ юлать. Пӗлччӗр, ӑнланччӑр вӗсем пурнӑҫра кампа тата мӗншӗн кӗрешмеллине.

Рина Петровна тимӗр кӑмака хутса ярса апат ӑшӑтма тытӑнчӗ, «райком хӗрӗ» аллипе тӑнлавӗсенчен тытса сӗтел ҫине чавсаланса ларчӗ те тарӑн шухӑша кайнӑ пек пулчӗ. Унӑн сӑнӗ каллех салхуланчӗ, куҫӗсем ҫав тери хурлӑхлӑн пӑхрӗҫ. Рина Петровна ҫакна асӑрхарӗ те хуллен кӑна ыйтрӗ:

— Нина, санӑн пуҫ ыратмасть пулӗ-ҫке?

— Ҫук, — терӗ лешӗ.

— Тем, сӑну питех мар та... Ывӑннӑ ӗнтӗ эсӗ. Халех акӑ апат ҫикелӗпӗр те ҫывӑрма выртӑпӑр. Канас пулать.

— Ҫук, ывӑннӑшӑн мар вӑл... — йывӑррӑн сывласа ячӗ Кулюкова. — Хуйхӑ манӑн, Рина, каласа памалла мар пысӑк хуйхӑ! Чӗре патӗнче чул пек ҫакӑнса тӑрать...

— Мӗн пулнӑ тата ун пекех?

— Виҫӗм кун... пирӗн атте вӑрҫӑра вилни ҫинчен пӗлтерекен хут килчӗ! — хӗр ҫавӑнтах пуҫне сӗтел ҫине хучӗ те пӗтӗм кӗлеткипе чӗтренсе макӑрса ячӗ. — Пӗтрӗ пирӗн атте, текех эпир ӑна нихҫан та... курас ҫук ӗнтӗ... нихҫан та! Ҫирӗҫ ун пуҫне эсрел фашисчӗсем...

Рина Петровна ӑна лӑплантарма тытӑнчӗ, йӑпатрӗ, ҫурӑмӗнчен, пуҫӗнчен ачашларӗ, анчах Кулюкова ниепле те макӑрма чарӑнаймарӗ. Кайран, чылайран тин, кӑштах лӑпланнӑ пек пулса апат ҫиме ларсан Рина Петровна унӑн хуйхи ҫинчен тӗплӗнрех пӗлчӗ.

— Ан çиллен мана, Рина, — терĕ Кулюкова хĕрелсе кайнă куçĕсене тутăрпа шăлса, — кăмăлна пăсрăм эп хам макăрнипе... Кун пекех пулакан марччĕ, темле тăруках епресе кайрăм паян.

— Ой, мĕн кирлĕ мара калаçатăн эсĕ? — терĕ Рина Петровна. — Мĕн çилленмелли пур уншăн? Эп хам та, тепĕр чух чун кӳтсе килет те, минтер пичĕ йĕп-йĕпе пуличченех макăратăп...

— Эс мĕн пирки тата?

— Пиччерен тăвата уйăх ытла ĕнтĕ çыру çук. Таçта, тем пулнă ăна, нимĕн те пĕлместĕп...

Вĕсем пĕр хушă чĕнмерĕç. Анчах çынна хуйхă пусса илнĕ чух сăмах хушмасăр ларсан пушшех йывăр пулать. Çавăнпа та Кулюкова стаканран вĕри чей сыпа-сыпа ерипен калаçма тытăнчĕ:

— Эпир нихçан та çăмăл пурнăçпа пурăнман, — терĕ вăл. — Ачи-пăчи нумай пирĕн, мансăр пуçне тата улттă, пĕринчен тепри пĕчĕкрех. Ĕçлекенĕ пĕр атте çеç пулнă, аннен кил таврашĕнче тăрмашсах тăн тухатчĕ. Çитменнине, пĕр виç-тăвата çул каялла вăл чирлеме тытăнчĕ. Сывлăшĕ тухмасть. Астма теççĕ тухтăрсем. Анчах килте пурнăç кансĕр пулсан та вĕсем мана, аслине, çине тăрсах вĕрентме тăрăшрĕç. Пуринчен ытла — атте. Ăслă çынччĕ вăл. Ял хушшинче те хисеплетчĕç ăна. Темиçе хут правление суйларĕç. Çиччĕмĕш класран тухсан эпĕ хамах вĕренме пăрахма шут тытрăм, вăтам шкула çичĕ çухрăма çӳремелле, хĕлле кашни кун киле таврăнма та пулмасть, хваттер кирлĕ, уншăн та тӳлемелле, тата аннене те кил таврашĕнче пулăшаймастăп, пулмасть кун пек вĕренсе терĕм, анчах атте кун çинчен пĕлсен мана хăтăрсах тăкрĕ: «Пăрахасси çинчен çăвар та ан уçнă пултăр, санăн вăтам шкул кăна мар, институт та пĕтермелле-ха! Пурнăçне пурăнкалăпăр», — терĕ. Хăй сахал вĕреннишĕн тарăхсах мана аслă шкултан вĕрентсе кăларасшăн пулчĕ пулмалла çав...

Хĕр каллех ассăн сывласа куçĕсене шăлкаласа илчĕ.

— Чăнах та вара пĕлтĕр эпĕ вуннăмĕш класран пур предметсемпе те «пиллĕкпе» вĕренсе тухрăм, кĕркунне пединститута кайса кĕтĕм, вĕренӳ лайăх пычĕ, стипенди те памалла турĕç мана... Ĕçсем çавăн пек ăнса пынăшăн манран хамран та ытларах атте хĕпĕртетчĕ пулмалла. Мĕн тери ăшшăн та кăмăллăн пăхатчĕ вăл ман çине эпĕ хăш чух киле пырсассăн! Мĕн калăн ĕнтĕ, пĕчĕкренпе кĕтӳ кĕтсе, пуянсем патĕнче тарçăра пурăнса ӳснĕ Çĕтĕк Якку хĕрĕ институтра вĕренет вĕт!.. Анчах нумая пымарĕ пирĕн савăнăç. Вăрçă пуçлансанах аттене фронта илсе кайрĕç. Ăна ăсатнă чух анне выртса йăвансах макăрчĕ: «Мĕн тăвас ĕнтĕ манăн çак вĕтĕр-шакăрпа, мĕнле усрас вĕсене? Сана мĕн те пулин пулсан мĕнле çитĕнтерсе çын тăвас?..»

Атте ăна ӳкĕтлесе лăплантарма тăрăшрĕ, анчах хăйĕн куççульне те чараймарĕ. Юлашкинчен, картишĕнчен тухса каяс умĕн, мана аяккалла чĕнсе илчĕ те: «Пĕтĕм шанчăк сан çинче ĕнтĕ, хĕрĕм», — терĕ... Ăна хирĕç эпĕ нимех те калаймарăм, куççулĕпе чыхăнса кайрăм... Анчах аттен юлашки сăмахĕсем халĕ те хăлхарах янăраса тăраççĕ. Паллах ĕнтĕ, манăн тек институт çинчен шухăшлама та май пулмарĕ. Кăшт та пулин укça пултăр тесе кĕр енне перекет кассине ĕçлеме кайса кĕтĕм, унтан мана райкомола пионерсемпе шкул ачисем хушшинче ĕçлеме илчĕç. Халĕ ав куран, çӳретĕп... Паян кунта, ыран лере тенĕ пек...

— Эсĕ питĕ усăллă ĕç тăватăн, Нина, — терĕ Рина Петровна вăл каласа пĕтерсен. — Акă паянхинех илер: епле çĕклентерсе ятăн эсĕ пирĕн ачасен кăмăлне! Ытла кашниех пултараймасть ăна...

— Ĕçĕ нумай-ха, питĕ нумай. Ачасене пур çĕре те явăçтармалла, унсăр ниепле те май килмест.

— Çапла çав, пысăк вăй пулса тăчĕç хальхи вăхăтра пирĕн ачасем, мăн çынсем выраннех ĕçлеме тивет вĕсен, эрнере пĕрре çунашкапа ярăнма та вăхăчĕ çук мăнтарăнсен...

Хĕрсем пĕр вырăн çинче пĕрне-пĕри ăшăтса выртрĕç. Çывăрса кайиччен тата нумай сăмах-халап пулчĕ вĕсем хушшинче.

Ирхине «райком хĕрĕ» тул çутăлнă-çутăлманах тухса кайрĕ.

— Манăн паян тата виçĕ шкула çитес пулать-ха, — терĕ вăл.

— Çав ĕçпех, воскресник пиркиех пуль? — ыйтрĕ Рина Петровна ăна ăсатма крыльца çине тухса.

— Çавăн пиркиех...

— Май пулсан пирĕн пата час-часах кил-ха, эсĕ ачасене пит лайăх хавхалантаратăн, пирĕншĕн ку пысăк пулăшу пулать...

— Тавтапуç ырă сăмахшăн, — вăтаннă пекрех пăхса кулса илчĕ Кулюкова учительница аллине чăмăртаса. Унтан вăл пусма картлашкисем тăрăх чупса анчĕ те сивĕ пирки пиншак çухавине тăратса, хул пуççийĕсене темле кулăшларах хутлатса, аллисене кĕсьене чиксе çиле хирĕç тăвалла утрĕ. Малалла кайнăçемĕн унăн ахаль те тĕреклех мар кĕлетки тата ытларах пĕчĕкленнĕ пек курăнчĕ. Рина Петровнăн çак хĕре шеллес килсе кайрĕ, çав вăхăтрах вăл ăна ăшă кăмăлпа мухтаса илчĕ:

— Хăйĕн çав тери пысăк хуйхă... Ашшĕ вилнĕ... Тепри пулсан ун пек чух ним тума та пултарас çук. Вăл пур — çанталăкне-мĕнне пăхмасăр, ывăнни-шăннине пĕлмесĕр ялтан яла çӳрет, çынсемпе калаçать, вĕсене хавхалантарса кăмăлне çĕклет, тăшманпа кĕрешме чĕнет... Анчах хăй те ача кăна вĕт-ха!

## Пирвайхи савăнăçсем

Аслă уяв умĕнхи каç, ытти çулсенчи пекех, ял халăхĕ клуба пухăнчĕ. Пуринчен ытларах çынсем унта фронтсенчи ĕçсем çинчен лайăхрах пĕлес шутпа кайрĕç, ма тесессĕн паянхи докладне районти çар комиссариатĕнчен килнĕ çын тăвать терĕç. Чăнах та, докладчикĕ хăй вăрçăран йывăр аманса таврăннăскер-мĕн — унăн сылтăм алли кăкĕ таранах татăлнă, гимнастеркин пушă çаннине вăл пиçиххи айне чиксе хунă.

Виççĕмĕш рете вырнаçнă Евгенипе Аркаш ун çине çав тери тимлĕн пăхса итлесе ларчĕç. Ку таранччен вĕсем вăрçăра пулнă çынсене пĕрре те курманччĕ-ха. Эх, унтан хăйĕнчен ыйтса пĕлесчĕ!.. Мĕнле çапăçнă-ши вăл, миçе фашиста вĕлернĕ? Мĕнле аманнă, кам çăлса кăларнă ăна?..

Докладчик ытлашши çĕнĕ хыпарсемех каламарĕ, вăл каланисенчен нумайăшне ял çыннисем хаçатсенче вуласа та пĕлнĕ ĕнтĕ, анчах çапах та вăл итлекенсен чĕрисенчи шанчăка ытларах çирĕплетрĕ, вĕсен чунĕсене лăплантармалли сăмахсем тупса калама пĕлчĕ. Вăл хăй вăрçăра пулнă пирки ăна ĕненмесĕр тăма май килмерĕ. Уйрăмах вăл пирĕн салтаксемпе командирсем мĕн тери паттăр çапăçнине кăтартакан уйрăм-уйрăм тĕслĕхсем çинчен каласа кăтартни ĕнентерӳллĕ пулчĕ. Вăл каланисем итлесе ларакансен куçĕ умнех тухса тăчĕç...

...Акă пирĕн траншейăсем çинелле тăшман танкĕсем кĕмсĕртетсе, гусеницисемпе чанкăртатса, хăйсен çулĕ çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех çĕмĕрсе, лутăркаса, çĕрпе хутăштарса пыраççĕ, тупписенчен переççĕ, пулемечĕсенчен вут-çулăм сапаççĕ. Вĕсен умĕнче никам та тӳссе тăраяс çук пек ĕнтĕ. Анчах пирĕн салтаксем вĕсене хăйсем патне çывăхарах пыма май параççĕ, вара ку таранччен пытанса тăнă тупăсем сасартăк пĕр харăс пеме тытăнаççĕ те, малтан пĕр танкĕ, унтан тепри çуна пуçлать... Çапах та хăшĕсем малаллах ыткăнаççĕ-ха, иккĕшĕ-виççĕшĕ траншейăсем патнех çитеççĕ, çав вăхăтра вĕсен гусеницисем айне граната çыххисем, çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем ывтăнаççĕ те, кусене те вут-çулăм хыпса илет. Танксен атаки путланать, вĕсенчен «сывă юлнисем» тарма тытăнаççĕ, анчах пирĕн артиллеристсем хыçалтан перепере тата пĕр-иккĕшне тивертсе яраççĕ.

...Пирĕн пĕр полк самаях пысăк юхан шывăн ку енне каçса пĕтиччен ун çинелле талпăнса пыракан тăшмана епле пулсан та чарса тăмалла пулнă. Ку ĕçе тума пĕр ротăна хушнă. Атака хыççăн атака тунă фашистсем, анчах хăйсем пилĕк-ултă хут йышлăрах пулнă пулсан та рота йышăннă траншея патне çитеймен. Иртен пуçласа каçчен пынă çак хăрушă çапăçу. Траншея

умĕнче тăшман салтакĕсен виллисем ытларах та ытларах купаланнă. Анчах пирĕн ротăра та çынсем пĕтсех пынă. Юлашкинчен пĕртен-пĕр пулеметчик тăрса юлнă. Вăл та ĕнтĕ иквиçĕ çĕртен аманнă, çапах та хăй виличчен парăнма шутламан. Фашистсем пуçĕсене çĕклеме пуçласанах вĕсене çула-çула ӳкернĕ. Çĕр çынна яхăн пĕтерсе тăкнă вăл çапла. Унтан пулеметчикăн патронĕсем пĕтсе çитнĕ... Пулемет шарлами пулсанах фашист пуç касанĕсем сике-сике тăнă та йытăсем вĕрнĕ пек хайлатса малалла ыткăннă. Хăйсен шучĕпе тек вĕсене нимĕн те чăрмантарма пултарайман ĕнтĕ. Анчах çамрăк пулеметчик траншея тĕпĕнче гранатăсем тултарнă ещĕке курах кайнă та часрах ун патнелле чупнă. Ещĕкне тин çеç пуçланă иккен. Вара вăл çав гранатăсене иле-иле тăшмансем çинелле вăркăнтарма тытăннă. Алă граната ытла ывăтнă... Траншея патне пĕр фашист та çитеймен. Юлашки гранатине персе ярсан, хăй ĕнтĕ вуçех халран кайса çитнĕ пулин те, вăйĕ çуккипе енчен енне сулкаланса юхан шыв патнелле чупнă. Шыв хĕррине çитсен чăнкă çыранран вăл чул муклашки пекех йăваланса аннă. Шăпах çав вăхăтра пирĕн юлашки кимĕ ку еннелле килме тапраннă-мĕн. Çав кимĕ çинчисем хамăр салтака асăрханă та часрах каялла таврăнса ăна хăйсемпе пĕрле илсе каçнă...

Пит те тимлĕн, пĕр сăмахне сиктермесĕр, сывлайми пулнă пек ларса итлерĕç ял çыннисем алăсăр командир каласа панисене. Хĕрарăмсен нумайăшĕн куççулĕ юха-юха анчĕ, унта та кунта нăшăклани илтĕнчĕ. Анчах пуринчен те ытларах вĕсене докладчикăн тепĕр калавĕ пăлхатса ячĕ...

— Фашистсене хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ кĕрешет, — терĕ вăл, — тискер тăшмансемпе пурте, вăл шутрах ваттисем те, ачасем те, çапăçаççĕ. Кам мĕнле май тупать, тăшмана çапла таварать. Акă, сăмахран, Смоленск облаçĕнчи Каменка ятлă ялта мĕн пулса иртнĕ... Ытти çĕрти пекех, фашистсем кунта пырса кĕрсен çаратма тытăннă, колхозниксен юлашки выльăхчĕрлĕхне пусса çинĕ, тем те тунă. Кунпа пĕрлех ялти активистсен, коммунистсемпе комсомолецсен, партизансен çемйисене шырама тытăннă... Килтен киле çӳресе çынсене хĕнехĕне тĕпченĕ. Никам та нимĕн те каламан, хамăр çынсене сутакан тупăнман... Унтан сасартăк пĕр тĕттĕм каç нимĕççем икĕ çамрăк партизана тытнă — лешсем разведкăна пынăмĕн. Иккĕшĕ те çав ялсемех пулнă, анчах ирхине вĕсене пĕтĕм ял халăхĕ умне кăларса тăратса: «Çаксене паллатăр-и? Камсем вĕсем?» — тесе ыйтсан пурте пĕлмĕше пенĕ. Партизансене çавăнтах, урам варринчех, такан туса çакса вĕлернĕ... Унтан фашист офицерĕсем икĕ партизана тытса çакнăшăн савăннипе пуль ĕнтĕ ĕçме тытăннă. Вуннăн-вун иккĕн пĕр пӳрте

пухӑнса ӗҫнӗ вӗсем, ним майсӑр ахӑрнӑ, юрланӑ, ташланӑ, унтан пӗрин хыҫҫӑн тепри ӳке-ӳке ҫывӑрса кайнӑ. Кил хуҫи, утмӑлтан иртнӗ ырӑс хӗрарӑмӗ, ҫаксене пӗтӗмпех сӑнаса тӑнӑ... Пурте ҫывӑрса кайсан вара вӑл тула тухнӑ та лешсен шӑнса хытнӑ часовойне чӗнсе кӗртсе сӗтел ҫине тӗллесе кӑтартнӑ:

— Вӗсем ӗҫсе супрӗҫ, эсӗ те ӗҫ ӗнтӗ!

Часовой вырӑсла пӗлмен, анчах сӗтел ҫинче эрех те, ҫимел-лисем те тем чухлех юлнине курса карчӑк ӑна мӗн каланине тӳрех ӑнланса илнӗ. Каҫса кайсах ӗҫме-ҫиме тытӑннӑ... Ҫав вӑхӑтра карчӑкӗ пӳртрен йӑкӑлт кӑна тухса алӑка тул енчен тӗкӗлесе лартнӑ, чӳрече хупписене ҫаклатса хунӑ, унтан хӑй малтанах хатӗрлесе лартнӑ бензин савӑтне илсе пӳрчӗ ҫине унтан та кунтан сапнӑ та тивертсе янӑ. Пӳрт тӳрех хыпса илнӗ... Пӗр офицерӗ те, леш часовойӗ те ҫӑлӑнайман вара, пурте ҫунса кайнӑ, икӗ партизаншӑн вун икӗ фашиста пӗтернӗ, тӑшмана тавӑрас тесе ҫав карчӑк хӑйӗн кил-ҫуртне те хӗрхен-се тӑман!

Докладчик самантлӑха чарӑнса тӑрса клубра ларакансене пӑхса ҫаврӑнчӗ.

— Ҫапла ҫапӑҫаҫҫӗ, ҫапла кӗрешеҫҫӗ пирӗн ҫынсем хамӑр ҫӗр ҫине килсе кӗнӗ урнӑ тӑшмансемпе. Кам ҫӗнтертӗр ӗнтӗ пире? Кам чура тума пултартӑр? Нихҫан та, никам та!..

Ҫав вӑхӑтра иккӗмӗш ретре ларакан ватӑрах хӗрарӑм ура ҫине тӑрса пурне те илтӗнмелле ыйтрӗ:

— Хӑй... хӑй ҫӑлӑннӑ-ши хуть кайран?

— Кам?

— Ара, леш карчӑк, нимӗҫсене ҫунтарса яраканни? Ҫавна питӗ пӗлес килет манӑн...

— Ӑна ял ҫыннисем партизансем патне ӑсатнӑ, анчах ни-мӗҫсем ун ҫинчен тӗпчеме тытӑнсан вӑл хӑй те лешсемпе пӗрле ҫунса кайнӑ тесе улталанӑ.

— Апла пулсан юрать-ха хуть... — хӗрарӑм ҫӑмӑлтараххӑн сывласа илчӗ те куҫӗсене тутри вӗҫӗпе шӑлкаласа ырӑна ларчӗ.

Унтан докладчик пирӗн ҫарсем тӑшмана ку таранччен ну-май хавшатни, унӑн салтакӗсене те, техникине те ҫав тери нумай пӗтерни, фашистсем текех малтанхи пек ҫӗмӗрсе кӗме пултарайманни, ҫав вӑхӑтрах пирӗн вӑйсем пухӑнсах пыни, кӗҫех акӑ эпир тӑшмана урӑм-сурӑм кисретме, хамӑр ҫӗр ҫин-чен хӑвалама тытӑнасси ҫинчен каларӗ.

— Инҫе мар ӗнтӗ ҫав телейлӗ вӑхӑт, юлташсем! —терӗ вӑл. — Анчах тӑшмана ҫӗнесси хӑй тӗллӗн пулмасть, ҫав ҫӗнтерӳшӗн кашнин кӗрешмелле, пуринчен малтан — фронта куллен пу-лӑшасси ҫинчен пӗр самантлӑха та манма юрамасть...

— Ӑна манмастпӑр-ха, мӗн май килнине веҫех паратпӑр, — терӗ иккӗмӗш ретре ларакан паҫӑрхи хӗрарӑм. Вӑл халӗ те

лăпланса çитеймерĕ пулас-ха. Вăл çеç мар, ыттисем те çавах ĕнтĕ: пур тӳрĕ кăмăллă çынсен те пĕр шухăш-кăмăл пулнă-çке-ха!

Доклад хыççăн пысăках мар концерт пекки пулчĕ.

Вăхăт пулманнипе Рина Петровна ачасене çĕнĕ япаласем вĕрентеймен, вĕсем пуринчен ытла Майăн пĕрремĕшĕ валли хатĕрленĕ юрă-сăвăсемпе тухрĕç. Çапах та клуба пухăннă çынсен кăмăлĕ тулчĕ. Епле пулсан та праçник ахаль иртмерĕ...

Шкулти пухура калаçса татăлнă тăрăх тепĕр кунне виççĕн — Евгени, Аркаш тата пиллĕкмĕш класра вĕренекен Улюк ятлă питĕ çивĕч хĕр ача — Улакасси шкулне ăмăрту пирки калаçса татăлма кайса килчĕç. Вĕсем пырасси çинчен унта малтанах пĕлнĕ — «райком хĕрĕ» кунта та пуху ирттернĕ те «Çĕнĕ самана» колхозри ачасем вĕсемпе ăмăртма шутлани çинчен каласа хăварнă.

Улакасси шкулĕнчи вожатăй васкасах звеньевойсене пухрĕ те, вĕсем çапла калаçса татăлчĕç: кашни шкул ачи пулас воскресникра вунă килограмран кая мар тимĕр-тăмăр пухмалла, кунсăр пуçне уяв ячĕпе фронта ярса пама кашнин пĕрер мăшăр чăлха е алсиш хатĕрлемелле, хĕр ачасен пĕрер табак енчĕкĕ çĕлемелле, арçын ачасен çав енчĕксене тултармалăх табак хатĕрлемелле.

Ĕç питĕ хăвăрт татăлчĕ, çавăнпа та «делегатсем» шкулти уроксем пĕтичченех таврăнса ачасен мĕн-мĕн тумалли çинчен каласа пама тытăнчĕç.

Ноябрĕн саккăрмĕшĕнче вара, вырсарни кун, ирхине ирех пурте шкула пухăнчĕç те тӳрех ĕçе тытăнчĕç. Ялта виçĕ урам тата «леш айкки» — сарлака та тарăн çырма хĕррипе тăсăлакан хăрах енлĕ урам пур. Кула-кула пĕрисем ăна «Камчатка», теприсем «Сахалин» теççĕ. Шкулта çичĕ класс, шăпах кашнине урамăн пĕр енĕ лекет. Кĕçĕн классене ертсе пыма аслă классенчен икшер ача уйăрчĕç — вĕсен кашни киле кĕрсе хуçисемпе калаçмалла, юрăхсăра тухнă тимĕр-хурçă, пăхăр-тăхлан япаласем пуррине ыйтса пĕлмелле, йывăртараххисене çунашкасем çине илсе хума пулăшмалла.

Мĕн кăна пухăнмарĕ пуль вара кун каçа! Кивĕ çĕçĕсемпе катăк хурансенчен, никама та кирлĕ мар суха пуç тимĕрĕсемпе шăтăк витресенчен пуçласа урамра тахçантанпах тутăхса йăваланса выртнă кустăрмасăр плугсем таранах пуçтарчĕç ачасем. Сахалтан та пĕр çĕр пăт пухăнчĕ пулĕ, клуб хыçĕнче темĕн пысăкăш купа пулса тăчĕ. Питĕ тăрăшса ĕçлерĕç çав ачасем, калама та çук! Пурин те пичĕсем хĕрелсе кайнă, куçĕсенче савăнăç çиççе тăрать. Лайăх-çке вăл пурĕ пĕрле, пĕр кăмăллă пулса ĕçлени!..

Кулмалли те тупăнчĕ вăл кун.

Тĕрлĕ тĕслĕ кивĕ тимĕр-тăмăр купи мăнлансах пынине чӳречерен курса колхоз председателĕ Назар Егорччă хăйĕн ĕçне пăрахсах урама тухрĕ. Ват çыннăн ачасене темиçе ăшă сăмах каласа хаваслантарасси килчĕ пулмалла ĕнтĕ.

— Маттур, маттур, пĕчĕк гражданем! — терĕ вăл. — Пăхха, мĕн тери сĕтĕрсе тултарнă! Ялтах кун чухлĕ тимĕр таврашĕ тупăнать тесе нихçан та шутлас çук...

— Пĕр танк тума çитет-ши? — ыйтрĕ унран хура тутлă арçын ача çанни вĕçĕпе сăмсине шăлса илсе.

— Танк тумах çитеймест-и тен те, анчах пĕр тупă пулать те пулĕ! — ачана çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ Назар Егорччă. — Айтурах, тем хăямачĕ те пур-çке! — Унтан сасартăк аплакапла кукăрткаланă чылай вăрăм пăрăх çине кăтартса тĕлĕннĕ пекрех ыйтрĕ: — Ку мĕнле япала тата?

Ун патне хăрăмпа вараланса пĕтнĕ Аркаш пырса тăчĕ те чеерехххĕн пăхса йăл-йăл кулса илчĕ.

— Чухлатăн пуль...

Назар Егорччă ку пăрăх мĕн иккенне питĕ лайăх пĕлнĕ, нумай курнă ун пеккисене хăй ĕмĕрĕнче: вăл сăмакун аппарачĕн пĕр пайĕ пулнă. Анчах вăрçă пуçланнă хыççăн, уйрăмах юлашки вăхăтра, ялта сăмакун юхтарса аппаланаканнисем сисĕнмен, çавăнпа та ачасем çакăн пек япала тупни ăна самаях тĕлĕнтерчĕ.

— Ăçтан сĕтĕрсе килтĕр эсир ку шуйттан япалине? — ыйтрĕ вăл пăрăха урипе тапса. — Кивĕ те мар-ха, эсрелĕ, ниçтан та тутăхман, нумай пулмасть тутарнă пулмалла...

— Эп ăна пĕр пахчара тупрăм, — терĕ Аркаш шăппăн.

— Кам пахчинче? Кам мурĕ хăтланать кун пек ирсĕр ĕçпе?

Аркаш председателе тĕрĕссине каласа пама çăварне уçнăччĕ кăна, сасартăк хăйсем патнелле Хĕрлĕ Мари, хайхи чарусăр Палля амăшĕ, чупнă пекех васкаса пынине курчĕ. Хăй питĕ çиллес, çаврака куçĕсем вăльтăр та вальтăр çаврăнкалаççĕ; улачăла тутри ĕнси çинелле анса ларнă та, арпашса кайнă хĕрлĕ çӳçĕ çулăм ăшне чиксе кăларнă мелке пекех курăнать.

— Шуйттан ачи-пăчи-и! Ма халер килсе çапмасть пуль вĕсене, ма алли-урисем хăрса лармаççĕ пуль! — аякранах илтĕнчĕ вăл çĕтĕлсе килни. — Пĕлем кăна кам хăтланнине, тупата туршăн, мăйне каялла пăрса лартатăп!..

— Кама ун пекех ылханатăн ара эсĕ? — ыйтрĕ Назар Егорччă Мари хăй патне пырса тăрсан ун çине сиввĕн пăхса. Сăмакун хатĕрне ачасем ун пахчинчен илсе тухнине Аркаш каламасăрах тавçăрса илчĕ вăл. Хĕрлĕ Мари шоссе тунă çĕрте ĕçлекенсене сăмакун кая-кая сутни çинчен каланăччĕ-ха пĕрисем... Акă халь ĕнтĕ пĕтĕмпех паллă пулчĕ.

— Çаратнă мана! — кăшкăрчĕ Мари аран сывлăш çавăрса илсе.

— Мĕн çаратнă? Нивушлĕ вара сана çаратма пултаракан çын та пур? — юриех тĕлĕннĕ пек пулчĕ ватă председатель.

— Пур çав, пур, пур! — тата хытăрах кăшкăрчĕ Мари. — Така хуранĕ, ик витре, тимĕр çăпала, пăхăр чейник пĕр харăс вăрласа тухса кайнă!

— Ăçта пулнă вара вĕсем санăн? Урамра выртман пулĕ вĕт?

— Пурте мунча умĕнчи çенĕкреччĕ, халь кайса пăхрăм та — пĕри те çук, тахăш явăлĕ ним те хăварман!

— Эккей... — Назар Егорччă сайра сухаллă янахне хыçкаларĕ, çав хушăрах хăй куç хĕррипе Аркаш çине пăхса илчĕ. — Кам хăтланма пултарнă-ха ун пекех? Тĕлĕнмелле... Шалт тĕлĕнмелле! Нивушлĕ пирĕн ялта вăрăсем те пур вара, э?

Аркаш хăй çине Назар Егорччă мĕншĕн çавăн пек пăхнине тӳрех ăнланчĕ. «Эсир туман-и ку ĕçе?» — тесе ыйтрĕ ĕнтĕ председатель, çавăнпа та, хăй айăплă маррипе, пуçне пăркаласа илчĕ: «Çук, эпир ун пек-кун пеккине нимĕн те тивмен...»

— Ак çаксем çаратнă мана, урăх никам та мар! — Мари сасартăк Аркаша çапма пĕррех ал сулса ячĕ. — Куртăм эп ăна, ачасене килтен киле ухтарттарса çӳретчĕ. Ы-ых сана! Çĕлен чĕппи!..

Аркаш аяккалла сиксе илчĕ те хăйне çаптармарĕ.

— Тивмен эпир сан япалусене, куçпа та курман!

— Ан суй, пĕçелянни! Эсех вăрласа тухнă! — каллех ун çинелле сикрĕ Мари. — Кала луччă, ăçта чикрĕн ман япаласене, атту халех хăлхусене тăпăлтарса кăларатăп!

Назар Егорччă Марие çаннинчен çатăрах тытса чарчĕ, анчах лешĕ лăпланма мар, хытăран хытă çухăрма тапратрĕ.

— Вăрă, вăрă! Каттăршнăй ратти, санăн кукаçу та Çĕпĕре кайса вилнĕ, эсĕ те тĕрмере çĕрмеллискерех пулатăн акă!

— Ман кукаçие Çĕпĕре вăрăшăн мар, патшана хирĕç пынăшăн янă! — кăшкăрчĕ Аркаш.

Шăв-шав пуçланнине илтсе килĕсене саланма ĕлкĕреймен ачасем карах вĕсем тавра пухăнчĕç, ăнсăртран иртсе пыракан мăн çынсем те чарăна-чарăна тăчĕç.

— Мĕн пулнă? Ма вăрçаççĕ?..

— Халех тавăрса панă пултăр ман япаласене! Милицие кайса калатăп, суда паратăп! — янăрарĕ Хĕрлĕ Мари. — Ытла çамрăклах янттине хапсăнатăн, некотнăй! Вĕрентĕп эп сана!.. — Аркаша перес шутпа вăл купари пĕр тимĕр хулла ярса тытрĕ.

Назар Егорччă тек тӳссе тăраймарĕ, Мари аллинчи тимĕ-

ре карт! туртса илсе аяккалла ывӑтрӗ те пӗррех кӑшкӑрса пӑрахрӗ:

— Чарӑн, лапра ҫӑвар! Ан элекле ачасене, сана пур пӗр никам та ӗненмест!..

— Епле ӗненмест?! — шӑлӗсене йӗрсе, аллисемпе пилӗкӗнчен тытса кӗҫ сиксе ларас пек пӑхрӗ Мари.

— Мӗншӗн тесен санӑн нимле хуран та, нимле витре те ҫухалман, пустуй палкатӑн эсӗ, ачасене тасаранах ҫылӑха кӗртетӗн!

— Епле ҫухалман? Ӑҫтан пӗлетӗн эсӗ ним те ҫухалманнине? Эс пырса куртӑн-и, шырарӑн-и? — парӑнмарӗ Мари.

— Санӑн намӑссӑр куҫусенченех кuратӑп, ан та палка! — татса хучӗ Назар Егорччӑ. — Никам та тытман сан япалусене. Кунта эсӗ ак ҫакӑ ҫухалнӑшӑн ҫеҫ килнӗ, урӑх нимӗншӗн те мар! — Вӑл вӑшт ҫеҫ кукленчӗ те тимӗр купинчен сӑмакун аппарачӗн кукӑр-макӑр пӑрӑхне туртса кӑларчӗ. — Санӑн вӗт ҫакӑ? Вӗр ҫӗнӗ, халь ҫеҫ тутарнӑ! Хӑҫан туянтӑн? Кала!

Хӗрлӗ Мари шӑпах пулчӗ. Пырне шӑмӑ кӗрсе ларчӗ тейӗн.

— Ну, ма чӗнместӗн? — председатель Аркаш еннелле ҫаврӑнса ыйтрӗ: — Ӑҫтан тупса килтӗр эсир ӑна, кала-ха?

— Паллясен пахчинчен, — терӗ Аркаш. — Мунча хыҫӗнчи чиесем хушшинче выртатчӗ...

— Питӗ аван! Эппин, эсӗ халӗ те сӑмакун юхтарса пурӑнатӑн-ха, намӑса пӗлменскер? — Мари еннелле ик утӑм турӗ Назар Егорччӑ. — Ҫынсем ку чухне хӑйсем ҫиес ҫӑкрине те фронт валли параҫҫӗ, анчах эсӗ ҫак йывӑр вӑхӑтра ханша юхтарса пуйма шут тытрӑн пулать? Ҫапла-и?

— Юхтармастӑп эпӗ нимӗн те! — тутине палт! мӑкӑртрӗ Мари. — Ку пӑрӑхӗ те ман мар.

— Кам пырса пӑрахнӑ-ха эппин ҫак кукӑр-макӑра сан пахчуна? Каллех пӗр-пӗр вӑрӑ пуль?

— Пӗлместӗп! Курман, илтмен. Ан та ҫулӑхӑр ман ҫума!

— Эпир ҫулӑхмастпӑр. Эпир акӑ халех акт ҫыратпӑр та НКВДна, милицине ярса паратпӑр. Ку чухне сӑмакунпа спекуляци тӑвакансене пуҫран ачашласах тӑмаҫҫӗ. Фронтшӑн тӑрӑшакан ачасене нимсӗрех кӳрентернине те пӗрлех кӗртсе ятратпӑр, уншӑн сана татах хушса парӗҫ. Атя правление.

Хӗрлӗ Мари ӗҫсем кун пек ҫаврӑнса каясса пӗрре те шутламан. Вӑл хӑрасах кайрӗ. Ара, лектереҫҫӗ вӗт, чип-чиперех тӗрмене кӗрсе ларма пулать!

— Эсӗ мӗн... Мӗн, ара, аплах тата, Назар Егорччӑ? Ан шӳтле-ха кун пек, — терӗ вӑл куҫӗсене хӑварт-хӑварт мӑчлаттарса. Сасси те тӑруках йӑвашланчӗ унӑн.

— Эп санпа шӳтлеме вӑйӑри каччӑ мар! — ҫилӗпе пӑхса илчӗ ун ҫине председатель. — Ут теҫҫӗ, халех акт ҫыратпӑр!

— Ай-уй, ара, эп ним те каламарăм-çке? Кашни сăмахшăнах хут çырма пуçласан мĕнле пурăнса çитĕпĕр? Чим-ха эс... Ют çынах мар-çке...

— Сан пек намăса-чыса çухатнă этемсемпе урăхла май килмест! — Назар Егорччă клуб патнелле утса кайрĕ. Хĕрлĕ Мари те ун хыççăн темиçе утăм ярса пусрĕ. Унтан сасартăк пат! чарăнчĕ те аллипе пĕррех сулса каялла тапса сикрĕ. Ăна пăхса тăракан ачасемпе темиçе хĕрарăм ахăлтатсах кулса ячĕç. Çакна илтсе Назар Егорччă çаврăнса пăхрĕ те Мари сиккипе тарнине курса вăл та тӳссе тăраймарĕ, халăхпа пĕрле каçса кайсах кулма тытăнчĕ.

Аркаш икĕ шĕвĕр пӳрнине çăварне чиксе юмахри хурахсем пек хăлхана çурса ямалла ши-и! ши-и! шăхăрсан ку таранччен пĕрре те çаврăнса пăхман Мари йăпăртлăха вăльть! каялла пăхрĕ те тăрук темрен такăнса кĕпсĕрт! тăсăлса ӳкрĕ. Ку вара çынсене тата ытларах култарса ячĕ. Ачасене хăратма вăркăнса пынă Мари хăех ял кулли пулса тăчĕ.

...Тепĕр кунне тимĕр-тăмăра юриех турттарса пăхрĕç — вăл икĕ тонна ытла пулчĕ, Улакасси ачисем пухнинчен темиçе центнер ытларах. Кун çинчен районти хаçатра та мухтаса çырса кăларчĕç. Çавăншăн питĕ савăннă ачасем ытти ĕçсене те хастаррăн тытăнчĕç. Пĕр эрне хушшинче вĕсем шкула, Рина Петровна аллине, вăтăр мăшăр таран алсиш-чăлха, тепĕр çавăн чухлĕ тулли табак енчĕкĕсем илсе пырса пачĕç. Шупашкарти хаçатсенчен республикăри çамрăксемпе шкул ачисем «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезд тума укçа пухма тытăнни çинчен пĕлсен Рина Петровна ачасемпе тепре калаçса илчĕ те, вĕсем кам мĕн чухлĕ пултарнă таран укçа хывма тытăнчĕç.

Çапла кун хыççăн кун иртрĕ...

Вăрçă хирĕсенчен ырă хыпарсемех килмерĕç-ха, анчах юлашки вăхăтра хаçатсенче «пирĕн çарсем çав хулана хăварнă» тесе çырни те пулмарĕ. Эппин, пирĕннисем тек пĕр шит те чакмаççĕ. Ах, ан чакчăрах! Çитет ĕнтĕ тăшмана ку таран кĕртсе янипе те, халь ăна каялла хăвалама, хамăрăн çĕре çав ирсĕрсенчен тасатма пуçлама та вăхăт! Кашни кĕтрĕ çав саманта, кашни çавăн çинчен шухăшласа, пăлханса, пăшăрханса пурăнчĕ.

...Пĕр каçхине Евгенисен амăшĕ пурне те пĕрле лартса апат çитерсен яланхи пекех кашни хăйĕн ĕçне тытса ларчĕ. Вăтă Пауль, ĕнтĕ пĕр уйăх ытла шкулта «учитель помощникĕ» пулнăскер, хăйĕн мăнукĕсене уроксем вĕренме пулăшрĕ, вĕсем вырăсла мĕнле вулани-çырнине тĕрĕслерĕ, лешсем йăнăшсан хушăран ятлам пекки те турĕ; Амалия шкулти хĕр ачасем арласа панă çипрен алсиш çыхрĕ — ку ĕçе вăл питĕ пултарать иккен; Евгени кăмака çумне ларса Маринен çăматтине сап-

ларĕ (вăрçăччен ку вырăна çавăн пек ĕçсемпе вĕсен ашшĕ ларатчĕ); пĕчĕккисем те — Эльгăпа Марине — хăйсем валли ĕç тупрĕç, чăлан çумĕнчи сак çинче пуканесене тумлантарчĕç. Улька хăй кайри пӳртри сĕтел çине хутсем саркаласа хурса шут шăрçисене майĕпе шăкăртаттарчĕ, хăй бригадинчи колхозниксен ĕçкунĕсене шутларĕ пулмалла.

Тулта вăл каç латсăр çил-тăман çавăрттарчĕ, пӳрт умĕнчи çатрака чие йывăççисем çилпе авăна-авăна шăнса хытнă çара тураттисемпе кантăксене çапăнчĕç, мăрьере çил ачисем шăхăрчĕç, — кун пек çанталăкра таçта уй варринче, çул çинче пулма тӳр ан килтĕрех! — анчах пӳртре ăшă, çав тери ырă пулчĕ. Мăннисем нихăшĕ те нимĕн те чĕнмерĕç, хутран-ситрен Марине Эльгăна вĕрентсе калани кăна илтĕнчĕ:

— Апла мал, апла мал тетĕп-иç! Ку пуканене улăх салаппан тăхăнталăпăл! Ах, айван ача-çке эсĕ, нимĕн те ăнланмастăн...

Вăхăт сисĕнмесĕрех шурĕ, сехет йĕппи майĕпен вуннă патнелле çитрĕ. Амалия Эльгăна ирĕксĕрлесех çывăрма выртарчĕ, Улька та хăйĕн Маринине сентре çине хăпарса выртма хушрĕ. Çав вăхăтра кĕтмен çĕртен калинкке уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Кĕçех çенĕк алăкĕн шашулкки те чанклатрĕ.

— Ай-уй, çĕр хута кама мĕн кирлĕ пулнă-ши тата? — терĕ Улька. Такам килнине илтсе ыттисем те алăк çинелле пăхрĕç. Унччен те пулмарĕ, пӳрте Рина Петровна кĕрсе тăчĕ.

— Ырă каç пултăр! — терĕ вăл янăравлă сасăпа. Хăй пĕтĕмпех юр айне пулнă, шап-шурă. — Ну çавăрттарать те кĕçĕр!..

— Килех, Рина Петровна! — Улька сĕтел çинчи хутсене пĕр çĕрелле пухса хучĕ. — Эсĕ хăвна çил-тăман вĕçтерсе каясран та хăрамастăн тем?

— Мĕн хăрамалли, Улька аппа? — юрлă шальне пусĕнчен вăштах сĕвсе илчĕ учительница. — Тĕрĕссипех калас тăк сана, эпĕ кĕçĕр çак çил-тăман витĕр çĕр çухрăм утма та хатĕр! Çунатсем пулас пулсан пĕлĕтсем патнех вĕçсе хăпарăттăм та пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле юрласа ярăттăм!..

Вăл тумтирне хывса пăтана çакрĕ, унтан Улька умне пырса ларчĕ. Хăйĕн куçĕсем ялкăшса кăна тăраççĕ, тути сиккелет, халь тесен халь кулса ярас пек. Вăл çакăн пек хаваслă сăнлă пулнине Улька вăрçă пуçланнăранпа та курманччĕ-ха, çавăнпа та ун çине питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Мĕн пулчĕ ара ун пекех? — ыйтрĕ вăл. — Пиччӳнтен çыру илмерĕн пулĕ-çке?

— Илтĕм çав, илтĕм, Улька аппаçăм! Акă вăл, акă!.. — Рина Петровна жакет кĕсйинчен кĕрен конверт туртса кăларчĕ. — Сывă ман пичче, пурăнать! Тем те тӳснĕ, тем те курнă, анчах пур пĕрех сывă!..

— Апла пулсан санăн чăнах та çунатсăрах вĕçмелле! — хавасланса кайрĕ Улька та.

Çак калаçăва хăлха хĕррипе илтсенех малти пӳлĕмрен Евгени сиксе тухрĕ.

— Сывă эппин? Пĕркуннех каларăм вĕт сире... Партизанра çӳренĕ пуль? Вулаттарăр-ха çырăвне... — аллине тăсрĕ вăл.

— Чим-ха эсĕ, ан васка, вулăпăр, — терĕ Рина Петровна тепĕр кĕсйинчен хаçат туртса кăларса. — Малтан урăххине вуласа парам-ха эп сире, ку тĕлĕнмеллерех те, савăнмалларах та пулĕ!

— Тата мĕн-ши?

Учительница хаçата чĕри çумне тытрĕ, унтан ялкăшакан куçĕсемпе пĕрре Улька çине, тепре Евгени çине пăхрĕ те:

— Çĕнтерӳ! — терĕ.

— Мĕнле çĕнтерӳ? Ăçта? — картах сиксе илчĕ Улька халех, çак самантрах çав тери ырă хыпар илтессе пĕтĕм чун-чĕрипе туйса илсе. — Каласам тата часрах!..

— Пирĕннисем Мускав патĕнче нимĕçсене йăлт аркатса тăкнă! Пĕтернĕ, нимĕн те хăварман! Нимĕçсем халь мулкачсем пекех тараççĕ...

— Чăнах-и?! Ан калаç-ха... — Рина Петровнăна хулĕнчен çатăрах ярса тытрĕ Улька. — Тинех, эппин... кĕтни çитет!

— Çитет çав, çитет, Улька аппа! Итлĕр акă, итлĕр Совинформбюро мĕн пĕлтерет. Паянхи хаçат ку, халь кăна пырса пачĕç... — Рина Петровна хутлатнă хаçата сарса тӳрлетрĕ те кăкăр туллин сывласа илсе вулама тытăнчĕ: — «Тăшмана малтанхи çапăçусенче хавшатса çитернĕ хыççăн пирĕн Хĕвел анăç фронтĕнчи çарсем 1941 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче тăшманăн флангĕсенчи ударнăй группировкисене хирĕç контрнаступлени пуçласа янă... 1941 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕ тĕлне пирĕн çарсем Рогачев, Яхрома, Солнечногорск, Истра, Венев, Сталиногорск, Михайлов, Епифань хулисене ирĕке кăларнă...»

Рина Петровна ытти чухнехи пек мар хаваслă калаçнине, унтан васкасах хаçат вулама тытăннине илтсе ватă Пауль те кайри пӳлĕме тухрĕ. Чăвашла пĕлмест пулсан та вăл тӳрех тавçăрса илчĕ: учительница темле савăнмалли япала вулать...

— Что, хорошие известия? — ыйтрĕ вăл хуллен.

— Да, да, хорошие, очень даже хорошие, Пауль Оскарович, прямо замечательные! — терĕ Рина Петровна йăпăртлăха вулама чарăнса.

— Какие именно? — Вăл çывăхарах пырса тăчĕ. — Какие?

— Немцев под Москвой разгромили в пух и прах, части Красной Армии освободили очень много городов и населенных пунктов, наступление наших войск продолжается...

— О! Это прекрасно, это великолепно! — ывăçĕсемпе шарт!

çапса илчĕ Пауль. — Я давно знал, что это будет так, я все время верил... надеялся! Теперь они будут уходить, как сто лет назад Наполеон... — Старик çавăнтах хăй мĕн çинчен пĕлнине Амалие каласа пачĕ, вара лешĕ те вырăнта лараймарĕ, ĕçне пăрахса тухрĕ. Малалла Рина Петровнăн çурри чăвашла, çурри вырăсла куçарса вуласа пыма тиврĕ. Пирĕн çарсем тăшманăн çар техникине çавăн чухлĕ аркатнă, çавăн чухлĕ трофей тытса илнĕ... Вĕçĕмсĕр танк, тупă, миномет, пулемет... Çапăçусенче тăшманăн вăтăр пин салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ...

Пурте сывламан пек пулса итлесе тăчĕç.

— Ну, мĕн калăр ĕнтĕ? — Рина Петровна вуласа пĕтерчĕ те хаçата ывăçĕпе шап! тутарчĕ. — Вăйлă вĕт? Мĕн чухлĕ савăнăç кунта пирĕншĕн, э?

— Мĕн каламалли ĕнтĕ, мĕн каламалли-и! — пуçне сулкаласа илчĕ Улька. — Нимрен те хаклă хыпар çав!.. Халăх кăмăлĕ çĕкленсе каять халь... Атту вĕт нăйкăшакансем те курăна пуçларĕç, вăрçине тем те яратпăр, анчах вăл хамăр паталлах килет, кĕçех пĕтмелли те çитет пулĕ текелеççĕ. Халь ĕнтĕ телей пирĕн еннелле çаврăнчĕ, пуç усма сăлтав пулмасть!

— Пуç усма мар, юрла-юрла ĕçлемелле малашне! — Рина Петровна старик çине çаврăнса пăхрĕ те кула-кулах ыйтрĕ: — Пауль Оскарович, Гитлер ноябрĕн çиччĕмĕшĕнче Мускавра парад тума сăмах панăччĕ — пулаймарĕ, парадне пирĕн çарсем турĕç. Халь акă каялла чакса каять. Мĕн пулса тухрĕ-ха унăн?

— Гитлер — тăнран тухнă этем, ухмах, — терĕ эстонец. — Вăл вырăс салтакне пĕлмест. Вырăс салтакĕ яланах çĕнтернĕ. Гитлер мăйне те пăрса хурать акă вăл! Нимĕçсене халь Мускав патĕнче аркатни пирĕн çĕнтерĕвĕн пуçламăшĕ пулса юлать, курăр! Çакăн пек тата темиçе пырса çапсан тăшман пилĕкĕ хуçăлать те, ура çине те тăраймасть вара вăл...

Питĕ ĕненмелле каларĕ ватă Пауль.

Хĕпĕртенĕ çынсен ыйхи пĕтĕмпех вĕçсе кайрĕ те, вĕсем тахçанччен калаçса ларчĕç. Рина Петровна тата пиччĕшĕн çырăвне вуласа пачĕ, куншăн та пурте савăнчĕç: Евгенипе амăшĕ те, Паульпе Амалия та — вĕсемшĕн Федор Молгачов лейтенант лайăх палланă, çывăх çын пулнă-çке-ха, кунсăр пуçне вĕсене хăйсем юратакан Рина Петровнăн йывăр хуйхи пĕтни хĕпĕртеттерчĕ. Молгачов вăрçăн малтанхи уйăхĕнчех окружение лекнĕ-мĕн, унтан хăтăлса тухма тăрăшса темиçе çĕр километр çуран утнă, вăрмансенче пытанса пурăннă, анчах пĕр самантлăх та тăшманпа çапăçма чарăнман, фронт урлă каçайманнипе партизансемпе пĕрлешсе кайнă, унта рота командирĕ пулнă, юлашки çапăçусенчен пĕринче амансан ăна самолетпа «Пысăк Çĕр» çине илсе тухнă, халь Саратоври гос-

питальре выртать иккен. Ăçтан тата мĕнле аманнине çырман хăй. «Ан пăшăрхан, пĕр-икĕ уйăхран каллех строя тăратăп», — тенĕ кăна. Юлашкинчен шӳтлесе те илнĕ: «Вăхăт çитсен санăн туйунта та ура хуççах ташлăп-ха!»

— Хаваслă йĕкĕт! — кулса ячĕ Улька куна илтсен.

## Çĕнĕ çул умĕн

Питĕ пысăк савăнăç пулчĕ çав ку!..

— Çĕнтерне! Пирĕннисем Мускав патĕнче нимĕççене шутсăр хăватлăн аркатса тăкса вĕсене каялла, хĕвел анăçнелле, хăвалама тытăннă, тăшман йышăннă нумай хуласене, темиçе çĕр яла ирĕке кăларнă! Наступлени малалла пырать!..

Пĕринчен теприне куçса пычĕ чуна çĕклекен çак хыпар. Килте те, пĕр-пĕринпе урамра тĕл пулсан та, лавккара та — таçта та сăмах-юмах пĕр çавăн çинчен кăна пулчĕ. Правленирен халăх татăлма пĕлмерĕ, пĕри каять те — тепри пырса тухать, кашниех тата çĕнĕрех хыпарсем пĕлесшĕн. Клуб пуçлăхĕ Витали Совинформбюро пĕлтернине темĕн пысăкăш сас паллисемпе плакат пек çырса урама кăларса çакрĕ — вулăр, тăвансем, савăнăр!.. Темиçе кун хушши çав плакат умĕнчен халăх татăлма пĕлмерĕ.

Унччен малтан хаçат вуласшăн çунакан çынсем йышлах марччĕ, каçхине клуба пилĕк-ултă çын пыраççĕ те хыпарсем ялан пĕр майлăрах пулнипе нумай та вуласа лармаççĕ, тухса каяççĕ. Халĕ вара ушкăнĕ-ушкăнĕпе пырса ыйтма тытăнчĕç:

— Паян хаçатсем илсе килнĕ-и? Çĕнĕ хыпарсем пур-и?

— Пур, пур...

— Тата мĕнле хуласем илнĕ? Трофейсем нумай-и? Миçе самолет çапса антарнă?

— Вулăр ара, вулăр, хутла пĕлмен çынсем мар пуль?

Çакăн пек калаçусем клубра тăтăшах пулса иртрĕç.

Хаçачĕсенче, чăнах та, кашни кун тенĕ пекех ытармалла мар ырă хыпарсем пулчĕç. Пирĕн çарсем фашистсене пĕр чарăнма памасăр хĕвел анăçнелле хăвалаççĕ... Акă ĕнтĕ Белев, Ефремов, Ливны хулисене тăшманран хăтарнă. Вĕсем пурте Мускавран чылай инçетри хуласем! Кунсăр пуçне, кулленех вăтăршар, хĕрĕхшер, аллăшар ял ирĕке кăларса пыраççĕ.

Эх, пĕрмай çакăн пек пулсанччĕ!..

Рина Петровна палламалла мар улшăнса кайрĕ, ăна пурте асăрхарĕç. Куçĕсем йăлтăр-йăлтăр çиçеççĕ, пит çăмартисем çавракаланса хĕрелчĕç, урампа пынă чух утмасть — вĕçет, уроксенче те, çынсемпе калаçнă чух та çав тери хаваслă, йăл

та йăл кулса илет. Лара-тăра пĕлмерĕ вăл, ирхи уроксем хыççăн эвакуированнăйсен ачисене вĕрентрĕ, каçсерен репетицисем ирттерчĕ: Çĕнĕ çул каçхине учительсем ачасемпе пысăк вечер тума шут тытрĕç.

— Елка тăватпăр, савăнччăр пĕрре пирĕн ачасем! — терĕ Рина Петровна колхоз председательне. — Пулăшăр-ха пире...

— Мĕнпе пулăшам-ха эпĕ? Сирĕн вечера пырса хамăн ташласа кăтартас-и? — куларах ыйтрĕ Назар Егорччă.

— Ташлама ăна эпир хамăр та пултаратпăр-ха, уншăн ĕç тытăнса тăмĕ, эс пире кăштах тулă çăнăхĕ, пăртак пыл, аш, çу пар... тата укçан пĕр çĕр тенкĕ.

— Ку мĕн тума тата? — тӳрех кулма чарăнчĕ председатель. — Эсир туй тума хатĕрленместĕр пуль вĕт?..

— Туй çинчен мар-ха сăмах... Эс ăнлан, Назар Егорччă. Ачасем кăçал мĕнле ĕçлерĕç? Вĕсем пулман пулсан эсĕ уйри тыр-пула, сӳс-кантăра, пахча çимĕçне, паранкине çакăн пек ним хăвармасăр, тап-таса пуçтарса кĕртме пултараттăн-и? Тĕрĕссипе каласан, ачасем çăлчĕç вĕт?

— Ну, вăл çапла, вăл тĕрĕс тейĕпĕр...

— Нивушлĕ вара çавăншăн ачасене тав туса савăнтарсан çылăх пулать? Куншăн никам та ятлас çук. Малашне те сахал мар ĕçлĕç-ха вĕсем. Халь вĕт пĕтĕм шанчăк хĕрарăмсемпе ачасем çинче...

— Ĕçленĕшĕн эпир вĕсене ĕçкунĕ çырса паратпăр-çке.

— Ĕçкунĕ вăл — ĕçкунĕ, анчах ача тени — ачах, вăл кăштах йăпатнине, ачашласа илнине юратать, уншăн праçникре панă пĕр пĕремĕк те темех тăрать, Назар пичче! Ăна нихçан та манмасть вăл...

— Мĕн тăвасшăн вара эсир?

— Пăртак вĕтĕ кукăль, печени пекки пĕçеретпĕр, лавккаçă кăштах канфет тупса паратăп терĕ. Çавсене пакетсем ăшне тултаратпăр та Çĕнĕ çул умĕнхи каç колхоз правленийĕ ячĕпе кашнинех тыттаратпăр çулла лайăх ĕçленĕшĕн тесе. Япăх пулать-им вăл? Ачисем хамăрăн вĕт-ха!

Председателĕн килĕшмелли çеç юлчĕ.

— Юрĕ, ĕнентертĕн, — кăмăллăн пăхса илчĕ вăл çамрăк учительница çине. — Тĕрĕс сан сăмаху. Паянах правлени членĕсемпе калаçса илĕп эппин кун пирки...

...Çĕнĕ çулчен вăхăт нумай юлмарĕ, çавăнпа та пур ĕçсемпе те питĕ васкамалла пулчĕ. Юрать-ха Рина Петровнăна пурте пулăшрĕç. Ватă учитель Анани Яккăльч, мамăк пек шап-шур çӳçлĕ курпунтарах старик, шкулта хĕрĕх çул ытла ĕçленĕскер, нумайранпа алла тытман сĕрме купăсне тусанлă футлярĕнчен кăларса каллех ĕнерчĕ те ачасене çине тăрсах çĕнĕ юрăсем вĕрентме тытăнчĕ. Пауль Киккас кинĕ Амалия тĕрлĕ тĕслĕ

хутсенчен хитре чечексем, кайăк-кĕшĕксем, тилĕ-мулкачсем касса кăларчĕ, елка айне тăратма Хĕл Мучипе Юрпике тумĕсене тĕлĕнмелле ăста çĕлерĕ. Аркашсем патĕнче пурăнакан белорус ачи Петрусь Дорожка амăшĕ килте чух фабрика-кухньăра повар пулнă иккен — вăл ачасем валли чăн-чăн пĕремĕксем хатĕрлеме килĕшрĕ.

Пауль Оскарович та аякра тăрса юлмарĕ, Рина Петровнăна уроксенче пулăшнипе хăйне хăй учитель вырăннех шутласа шкултан тухма та пĕлмерĕ. Çĕнĕ çулччен икĕ кун малтан вăл клуб пуçлăхĕ Виталипе тата Евгенипе пĕрле вăрмантан питĕ хитре ешĕл чăрăш касса килсе мăн класа вырнаçтарса лартрĕ, çав кунах Амалипе Рина Петровна ăна илемлетме тытăнчĕç...

Ачасем хăйсем те çав тери хастар пулчĕç вăл кунсенче. Çине тăрсах сăвă-юрăсем вĕреннисĕр пуçне пĕрисем шкул вуттине татса çурчĕç, теприсем лозунгсем çырчĕç, стена хаçачĕ кăларчĕç, классене çуса тасатрĕç, виççĕмĕшĕсем Çĕнĕ çул парнисем валли кивĕ хаçатсенчен пакетсем çыпăçтарчĕç — вĕсем те сахал мар, çĕр аллă таран кирлĕ пулнă. Вĕресе кăна тăчĕ шкулта пурнăç!

Эвакуированнăйсен ачисене çеç Рина Петровна нимĕнле ĕçе те хутшăнтараймарĕ. Вĕсем те шкултан татăлмарĕç ĕнтĕ, каçсеренех ялти ачасемпе пĕрле пулчĕç, анчах шкула пыраççĕ те кусем мĕн тунине пăхса, итлесе кăна лараççĕ. Чĕлхи те çукрах-ха вĕсен, хăюлăхĕ те çитеймест, ютшăнаççĕ...

Анчах пĕррехинче Рина Петровна тĕлĕнмелле япала курчĕ. Вăл каçхине мăн класа пырса кĕнĕ чух Анани Яккăльч унта хора çĕнĕ юрă вĕрентет-мĕн. Малтан юрă кĕввине сĕрме купăспа каласа парать, унтан пурне те харăс юрлаттарать. Пĕр хут, икĕ хут, виçĕ хут... Кăшт тăхтасан ватă учитель сĕрме купăсне сĕтел çине хучĕ те ачасене: «Кăштах канса илерха», — терĕ, хăй хыççăр пукан çине ларса чĕлĕм чĕркеме тытăнчĕ.

— Ну, ĕçсем мĕнлерех пыраççĕ? — ыйтрĕ Рина Петровна.

— Лайăх! — терĕç ачасем темиçен пĕр харăс.

— Ачисем маттур-ха, тăрăшаççĕ, — терĕ Анани Яккăльч та. — Тепĕр ик-виçĕ юрă вĕренсен питĕ пуян концерт пулать пирĕн...

— Пултăрччĕ çав, пултăрччĕ, Çĕнĕ çула хаваслăрах кĕтсе илесчĕ, тен, районтан та килсе çитĕç пирĕн вечера курма...

Çав вăхăтра сасартăк сĕрме купăс хĕлĕхĕсем хуллен кăна янăраса илни илтĕнчĕ. Анани Яккăльч та, Рина Петровна та сасă илтĕннĕ çĕрелле çаврăнса пăхрĕç. Сĕтел çинче выртакан сĕрме купăс патне Эстони ачи Ян Киккас пырса тăнă та унăн хĕлĕхĕсене пӳрнисемпе ерипен сĕртĕне-сĕртĕне илет иккен.

Учительсем нимĕн те шарламарĕç, анчах Ян хăй çине çынсем пăхнине туйса илчĕ пулас та, пысăк айăпа кĕнĕ пек, тăруках хĕрелсе кайрĕ.

— Вииул...* Я... мошно? — сĕрме купăс çине кăтартса хуллен ыйтрĕ вăл.

— А ты что, умеешь? — Анани Яккăльч пукан çинчен тăрса ун патнелле пычĕ. — Может быть, ты учился играть на скрипке? Или хочешь учиться?

— Та, та... — пуçĕпе сулса илчĕ Ян.

— Ну, что ж, возьми, попробуй! Не стесняйся!

Ян çавăнтах сулахай аллипе сĕрме купăса илсе янахĕ патне тытрĕ, сылтăммипе сĕркĕчне çĕклерĕ. Пурте ун çине иккĕленерех пăхрĕç: чăнах калама пĕлет-ши вара ку? Анчах унччен те пулмарĕ, Ян сĕркĕчне хĕлĕхсем çине хурса пĕрре, иккĕ каллĕ-маллĕ туртса илчĕ те темле питĕ илемлĕ те хаваслă ташă кĕвви манерлĕрех çемĕ шăрантарма тытăнчĕ.

Учительсем те, ачасем те ним чĕнмесĕр итлесе тăчĕç. Пĕрик минут пек каласан Ян чарăнчĕ те сĕрме купăса сĕтел çине каялла хума тăчĕ, анчах Анани Яккăльч ăна хулĕнчен тытса чарчĕ:

— Погоди, сынок, погоди. А еще что-нибудь можешь сыграть? Ну, сыграй нам еще! — Ача ăнланмасран хăраса вăл ун аллинчи сĕрме купăса каллех янахĕ патне çĕклерĕ. — Еще!

Ян Киккас тата тепĕр кĕвĕ каласа пачĕ.

— Молодец, мальчик!.. — çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ ăна Анани Яккăльч, мĕншĕн тесен Ян калană кĕвĕсем ăна чăнах питĕ кăмăла кайрĕç. Вĕсем Эстони халăхĕн кĕввисем пулнă, халăх кĕввисем яланах чĕре патне пыраççĕ.

Çавăн чух çуралчĕ те ĕнтĕ Рина Петровна пуçĕнче ырă шухăш: Çĕнĕ çул вечерĕн программине тĕрлĕ халăх юррисăввисемпе ташшисене кĕртес, вăл пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхне, тăванлăхне кăтартакан концерт пултăр! Ку шухăша Анани Яккăльч та, ыттисем те ырларĕç, вара вĕсем тепĕр куннех эвакуированнăй ачасенчен хăшĕ мĕн пĕлнине, вечерта мĕнле юрă-сăвăпа тухма пултарнине палăртса вĕсене лайăхрах хатĕрленме хушрĕç.

...Акă ĕнтĕ, юлашкинчен, Çĕнĕ çул каçĕ те çитрĕ.

Шкулти чи пысăк класăн пĕр кĕтессинче çӳллĕ мачча таран ем-ешĕл елка ларать, ăна темĕн тĕрлĕ илемлетсе пĕтернĕ, «Çĕнĕ саманари» шкулта кун пек капăр елка вăрçăччен те пулманччĕ-ха!

Ачасем вăрăм хăмасенчен тунă саксем çине вырнаçса ларсан (кунти партăсене кĕçĕрлĕхе коридора кăларса тăратнă-

* Вииул — сĕрме купăс (эстонла).

мĕн) Рина Петровна вĕсене шăпланма хушрĕ, унтан кĕçех елка хыçĕнчен Хĕл Мучи тухса тăчĕ — унăн вăрăм тумĕ те юр пекех шап-шурă, çĕлĕкĕ те, пилĕк таранах усăннă сӳс сухалĕ те. Хĕл Мучирен кăшт çеç кая юлса ачасем умне Юрпике тухрĕ — вăл та шурă сараппан тăхăннă, кĕрен тăраллă сарă калпакĕ айĕнчен сап-сар çивĕтсем усăнса тăраççĕ, унăн пĕтĕм кĕлеткичинче тĕрлĕ тĕслĕ çутă йăлтăрккасем çиçеççĕ... Çав тери хитре!..

Хĕл Мучи ачасене пăхса çаврăнчĕ, сухалне шăлкаласа тӳрлетрĕ, аллинчи пысăк шурă туйипе урайне шак! шак! тутарчĕ, унтан пĕр аллине çĕклерĕ те унталла-кунталла пăркаланса такмакланă пек калама тытăнчĕ:

— Манăн савнă тусăмсем, тăванăмсем! Арçын ачи, хĕр ачи, пысăкки те пĕчĕкки, сире эпĕ, Хĕл Мучи, пĕтĕм кăмăла уçса, чунтан савса-юратса, кашнине ыталаса, çурăмĕсенчен лăпкаса, пурсăра та ыр сунса Çĕнĕ çул ячĕпеле пысăк салам калатăп! Салам сире, салам, Çĕнĕ çулти çĕн салам!

Ачасем шăпăр-шапăр алă çупса ячĕç, çав хушăрах пĕр-пĕринпе пăшăлтатса илчĕç:

— Кам вара ку?

— Хĕл Мучийĕ кам?

— Ара, Витали-иç! Клуб пуçлăхĕ...

— Юрпики кам тата?

— Улюк, пиллĕкмĕш класри!

Хĕл Мучи малалла такмаклама тытăнчĕ, вăл пурне те ырлăх-сывлăх, телей сунчĕ, лайăххрах вĕренме, колхозра та, килте те ялан тăрăшса ĕçлеме, пĕр-пĕринпе туслă пурăнма, вăрçăри салтаксем пек хастар пулма, вĕсем çинчен пĕрмай астуса фронта куллен пулăшса пыма хушрĕ.

Питĕ килĕшрĕ ачасене унăн хаваслă сăмахĕ, юлашкинчен вара, вăл туйипе урайне шаккаса темиçе хут пуç тайса илсен, нумайччен каçса кайсах алă çупрĕç...

Унтан концерт пуçланчĕ.

Пĕчĕкçеç сцена çине тухса тăнă хор чăн малтан хальхи хаяр вăрçă çинчен калакан çав тери хĕрӳллĕ вырăсла юрă юрларĕ:

Вставай, страна огромная,
Вставай на смертный бой
С фашистской силой темною,
С проклятою ордой!

Пусть ярость благородная
Вскипает, как волна,
Идет война народная,
Священная война!..

Дадим отпор душителям
Всех пламенных идей,

Насильникам, грабителям,
Мучителям людей.

Пусть ярость благородная
Вскипает как волна...

Çак юрă фашистсем пирĕн Тăван çĕршыва хурахла килсе тапăннă кунах çуралнăччĕ. Ун чухне ăна пурте — салтаксем те, килте юлнисем те — юрлатчĕç, мĕншĕн тесен унăн сăмахĕсем те, кĕвви те пирĕн халăх тискер тăшмана мĕн тери курайманнине, юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçса тăшмана çĕнтерме хатĕррине питĕ лайăх палăртса тăраççĕ. Халĕ те, ачасен хорĕ юрланă май, вăл çак класра ларакан пур çынсен кăмăлне те хускатса, çĕклентерсе ячĕ.

Хор тата пилĕк-ултă юрă юрласан халăх умне Рина Петровна тухса тăчĕ.

— Халĕ сăвăсем итлĕпĕр, — терĕ вăл. — Чăн малтан пире улттăмĕш класра вĕренекен...

Анчах вăл каласа пĕтереймерĕ — сцена çине Аркаш тĕпĕрт! сиксе хăпарчĕ те йăлт-ялт унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ. Ачасем ахăлтатсах кулса ячĕç, мĕншĕн тесен ку ытла та хăвăрт, кĕтмен çĕртен пулчĕ. Çитменнине тата, Аркаш шкулти вечерсенче яланах кулăшла япаласем: юптарусем, шӳтлĕ калавсем — вуласа паратчĕ те, ăна пурте юратса кĕтсе илетчĕç.

— Тăршшĕ ик метр, урлăш — пĕрре территори кирлĕ Гитлере! — тӳрех пуçласа ячĕ Аркаш çинçерех сасăпа. — Чăваш халăх поэчĕ Николай Иванович Шелепи çырнă!

Сăвă ячех култарса ячĕ итлесе ларакансене.

Фашист — тискер кайăк,
Этем мурĕ,
Фашизм — чуралăх
Сăнчăрĕ,
Гитлер — вăрă-хурах
Утаманĕ!

Аркаш аллисемпе хăлаçланса, питне-куçне вылятса, кирлĕ чух пĕрре хаяррăн кăшкăрса, урипе тапса, тепре мăшкăлласа, сассине урмăштарса каларĕ те пурне те ахăртса пĕтерчĕ. Питĕ хытă алă çупрĕç ăна.

— Тата, тата каласа пар мĕн те пулин! — урисемпе тăпăртаттсах кăшкăрчĕç хăшĕсем. Вĕсен Аркаша ниепле те сцена çинчен тăруках антарас килмерĕ пулмалла çав. — Юптарусем каласа пар, юптару-у!..

Аркаш кĕттерсе тăмарĕ: вăл малтанах тепĕр «номер» хатĕрлесе хунă — Крыловăн «Йытă витинчи кашкăр» ятлă юптарăвне вĕреннĕ. Ăна та питĕ ăста каласа пачĕ вăл...

Кун хыççăн вечерта тата интереслĕрех япаласем пулчĕç.

— Пирĕн шкулта халĕ тĕрлĕ халăхсен ачисем вĕренеççĕ, — терĕ Рина Петровна каллех сцена çине тухса тăрса, — эстонецсем, белоруссем... Вĕсем, пирĕн çĕнĕ туссем, хăйсен юррисăввисене нумай пĕлеççĕ. Акă халĕ пире белорус ачи Петрусь Дорожка хăйсен халăх поэчĕ Янка Купала çырнă «Пионер» ятлă сăвва тăван чĕлхипе каласа парĕ...

Пурте тăруках çăварĕсене шыв сыпнă пек шăп пулчĕç: ытла та тĕлĕнмелле-çке ку! Хăйсен чĕлхипе... Мĕнлерех каласа парĕши-ха вăл?..

Малти ретрен çӳçне яп-яка кастарнă, тĕрленĕ çухавиллĕ шур кĕпе тăхăннă пĕр вун тăватă çулхи арçын ача сцена çине васкамасăр утса хăпарчĕ. Вăл класра ларакансем çине çаврака та кăн-кăвак куçĕсемпе пăхса çаврăнчĕ те кăкăр тулли сывласа илсе хавассăн кала пуçларĕ:

Пионер я млады, хоць куды!
Не смучуся, смеюся, вяселы;
Я не знаю ни бяды, ни нуды,
Бухну у бубен — и пайшоу, и пайшоу...
Перескочыць и горы, и долы
　　Зауседы гатоу!
За свободу я пойду хоць у вир,
Бо я вольны, як ветер, як птушки, —
Дзядзька Ленин мне адно правадыр...*

Итлесе ларакансем сăвă сăмахĕсене ăнлансах кайман пулин те хытă ал çупрĕç, Рина Петровна сăвва чăвашла куçарса парсан вара класс тата вăйлăрах кĕрлесе кайрĕ. Ачасем кăшт лăплансан учительница тата тĕлĕнмеллерех хыпар пĕлтерчĕ:

— Халĕ Эстони ачисем, пиччĕшпе йăмăкĕ, Янпа Юули Киккассем, елка çинчен юрласа нараççĕ...

Сцена çине шап-шур çӳçлĕ, утмăл турат чечекĕ пек сенкер куçлă арçын ачапа хĕр ача хăпарчĕç. Арçын ачи сĕрме купăс тытнă, хĕр ачин аллинче — хутран тунă кĕрен чечек, пуçĕ çинчи бантикĕ те çавăн тĕслех, питĕ илемлĕ.

— Ай тур-тур, ытармалла мар-çке кусене!

— Хĕр ачи çаран çинчи лĕпĕш пек... — кăмăллăн пăшăлтатса илчĕç вечера хăйсен ачисемпе пынă хĕрарăмсем.

Ян сĕрме купăс хĕлĕхĕсене ĕнернине хуллен кăна тĕрĕслерĕ,

---

* Эпĕ çамрăк пионер, пит маттур,
Шав юрлатăп, шав кулатăп, пит хавас;
Хурланма та, хуйхăрма та эп пĕлмес,
Параппана пĕр çапатăп та — вĕçеп...
Тусем урлă, уйсем урлă ыткăнма
　　Хатĕр яланах!
Ирĕклĕхшĕн тем тума та хатĕр эп,
Ма тесен эп çил пек, кайăк пек, —
Ленин асатте — манăн çулпуç...

унтан йӑмӑкӗ ҫине пӑхрӗ те, пуҫӗпе сулса илсе, купӑсне калама тытӑнчӗ. Ҫав тери илемлӗ, йӑваш кӗвӗ илтӗнсе кайрӗ мӑн пӳлӗмре... Унтан Юули юрласа ячӗ:

Ох, иыулупуу, ох, иыулупуу,
Куй армзад он су оксад!
Са касвад каугел пыхямаал,
Я хальендад веел хилья хаал...*

Юрри самаях вӑрӑм иккен, Эстони ачисем ӑна вӑрахчен юрларӗҫ, анчах вӗсем пӗр сехет юрлас пулсан та итлекенсене йӑлӑхтармастчӗ пуль. Кӗвви те питӗ хитре, хӗр ачин сасси те шӑнкӑрав пекех. Тата ачисем хӑйсем те калама ҫук кӑмӑла каймалласкерсем!

Юули юрласа пӗтерсен Ян сцена ҫинче пӗччен юлса Эстони халӑхӗн ташӑ кӗввине шӑрантарма тытӑнчӗ. Ҫав тери хаваслӑ кӗвӗ пулчӗ вӑл, итлекенсен чӗрисене ҫӗклентерсе, пӗр вӑхӑтлӑха пурин ҫинчен те мантарса ячӗ...

Унтан каллех хор юрларӗ, ачасем татах сӑвӑсем каларӗҫ, вун-вун иккӗн пӗрле тухса ташларӗҫ. Каламалли те ҫук ҫав, хаваслӑ пулчӗ! Чӑн юлашкинчен вара, Хӗл Мучипе Юрпике кашни шкул ачине Ҫӗнӗ ҫул кучченеҫӗсем тыттарсан, вӗсем савӑннипе ҫӗрӗпех, ирччен юрлама-ташлама хатӗр пулчӗҫ. Вӗсен амӑшӗсем те тем пекех тав турӗҫ учительсене куншӑн:

— Савӑнтартӑр паян ачасене, сӑпаҫҫипах...

Учительсен хӑйсен те кӑмӑлӗ тулчӗ. Мӗн тӑвас тенине турӗҫех вӗсем, тӑрӑшни сая каймарӗ!

Киле Рина Петровна ҫур ҫӗр иртсен тин таврӑнчӗ. Кун каҫа питӗ ывӑннӑ пулин те унӑн темшӗн ҫывӑрасси килмерӗ. Вӑл апат ҫикелерӗ те пиччӗшӗ патне ҫыру ҫырма ларчӗ. Пӗр-икӗ кун каялла кӑна ун патне Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе саламласа, сывлӑхырлӑх сунса пысӑк ҫыру янӑччӗ-ха, анчах халӗ пур пӗрех ҫырас, хӑйӗн пӗртен-пӗр тӑванӗпе хут урлӑ та пулин чунтан калаҫас килчӗ. Пуринчен ытларах Рина Петровна хӑй шкулта мӗнле ӗҫлени, пӗтӗм чунне ачасене пани, вӗсемшӗн тӑрӑшни ҫинчен ҫырчӗ:

«...Хӗрхенетӗп эпӗ ку чухнехи ачасене, ҫав тери шеллетӗп, мӗн кӑна тӳсмеҫҫӗ вӗсем ҫак вӑрҫӑ пирки!.. Манӑн кашни кун вӗсене мӗнпе те пулин савӑнтарас, кӑмӑлӗсене ҫӗклес килет...»

Ҫырӑва конверт ӑшне майласа хурсан вӑл пиччӗшӗн стена ҫинчи портречӗ ҫине пӑхса илчӗ. Унтан пукан ҫинчен сиксе

---

* Ах, чӑрӑшӑм, ах, чӑрӑшӑм,
Епле хитре сан лӑссусем!
Инҫетри ҫурҫӗрте эс ӳсетӗн,
Пур пӗр яланах ем-ешӗл...

тăчĕ те ун çывăхнех пычĕ. Хут çинчи ӳкерчĕке мар, чĕрĕ çыннах курчĕ Рина Петровна хăй умĕнче. Тахăш самантра пиччĕшĕ çемçен, кăшт çеç палăрмалла кулса илнĕн те туйăнчĕ ăна.

— Мĕн тата, йăмăкăм? Ывăннă вĕт эсĕ, выртса çывăр, кан, санăн ыран та ĕç нумай... Ырă каç пултăр, телейлĕ тĕлĕксем кур! — терĕ пек вăл.

— Сана хăвна та ырă каç пултăр... — пăшăлтатса илчĕ çамрăк учительница. Унтан вырăн çине выртса хулăн утиялпа пусĕ çийĕнченех витĕнчĕ те пĕчĕк ача пек лăпкăн çывăрса кайрĕ.

Тулта çанталăк сивĕтнĕçемĕн сивĕтрĕ...

## Хĕллехи пĕр кун

Çĕнĕ çул хыççăн ялти пурнăç пĕр майлă шурĕ...

Колхозра ку тĕлте ытла васкамалли ĕçсемех пулмарĕç, анчах çынсем ĕççĕр те లармарĕç. Хĕрарăмсемпе хĕрсен пысăк ушкăнĕ халĕ те-ха Хусан — Горький хушшинчи çула тунă çĕрте пурăнчĕ, тепĕр ушкăнĕ таçта, Çĕмĕрле енне, чукун çул валли вутă хатĕрлеме тухса кайрĕ (çĕр кăмрăк çителĕксĕр пулнипе ун чух нумай пуйăссем вутă çунтарса çӳренĕ), хăшĕсем çуна çулĕ ларсанах йăлăмран колхоз утине турттарма тытăнчĕç. Утă патне măннисемпе пĕрле аслăрах ачасем те кая-кая килчĕç. Хĕллехи каникул вăхăтĕнче, пĕр ытла сивех мар кун, йăлăмра Евгенипе Аркаш та пулса курчĕç. Питĕ кăмăллă таврăнчĕç вĕсем унтан...

Хĕллехи вăрманăн та хăйне май ытармалла мар илемĕ пур вĕт-ха! Хăватлă юмансем, пĕлĕтелле кармашакан çурта пек тӳп-тӳрĕ хырсем, тураттисене вĕçме хатĕрленнĕ кайăк çунаттисем пек сарса пăрахнă ешĕл чăрăшсем пĕтĕмпех юр айне пулнă, аякран пăхсан вĕсем мамăкпа витĕннĕ пек курăнать. Çулçăсăр йывăççене шап-шурă пас тытса лартнă, вĕсен тураттисене такам ятарласах вĕтĕ-вĕтĕ чĕнтĕрсемпе хитрелетнĕ тейĕн. Таврара шăп, ниçта пĕр сасă илтейместĕн, çуллахи пек чĕвĕл кайăксем юрламаççĕ, анчах та çав-çавах пурнăç пур-ха иккен кунта...

Лавсем пĕр пысăк уçланкă хĕрринчи утă капанĕсем патне çитсе чарăнсан паян çынсене йăлăма ертсе килнĕ Сар Тимуххa — бригадир — шаларах кĕрсе кайрĕ те сасартăк çав тери хаяррăн кăшкăрса ячĕ:

— Ах, фашист проклятăй! Акă ăçта вăл тепĕр Гитлер! Пăххалĕ, мĕн хăтланнă, шуйттан пусĕ!..

Ачасем тĕлĕнчĕç: мĕн курнă унта Тимуххa, кама вăрçать ун пекех? Капансем хыçĕнче пĕр-пĕр çынна тĕл пулчĕ-ши?

Аркашпа Евгени пилĕк таран юр ăшшĕн хăйсен бригадирĕ ятлаçса тăнă çĕре чупса çитрĕç те тĕлĕннипе юпасем пек хытрĕç. Утă капанĕ тавра тытнă çатан карта çумĕнчи юра пĕтĕмпех таптаса лапчăтнă, унта такам сиксех ташланă тейĕн. Çавăнтах тата юн... Нумай юн юхнă, юр ăшне те сăрхăнса кĕрсе пĕтеймен вăл, лаптăкĕ-лаптăкĕпе шăнса хытса ларнă.

Ачасем хăрасах кайрĕç. Мĕнле юн ку? Мĕн пулма пултарнă кунта?

— Курăр, мĕн хăтланнă вăл, шуйттан! — Сар Тимухха юр çинче выртакан темле выльăх пуçĕ, кăшласа пĕтернĕ юнлă шăмăсем çине сулса кăтартрĕ. — Пĕтернĕ айăпсăр чĕр чуна...

— Мĕнле выльăх вара ку? Ĕне-и, пăру-и? — терĕ Евгени.

— Пăши вăл! — терĕ Тимухха. — Лось! Чи хитре те çылăхсăр чĕр чун. Саккун та тивме хушмасть ăна, тытакансене пиншер тенкĕ штраф тӳлеттерет...

— Кам тытса çинĕ-ха ăна? Упа-и?

— Упа халь шăтăкра выртать, тухмасть. Кашкăр хăтланнă куна, пирĕн вăрмансенчи Гитлер!

— Эх, хăйне пăшалпа хреплеттересчĕ!..

— Çаплаччĕ те çав, сунарçисем çук-çке халь, пурте вăрçăра. Çавăнпа хунаса кайрĕç те вăл эсрелсем! Хăрамаççĕ нимрен те. Пĕркун пĕри Хурăнвар фермине кăнтăрлах пырса тухнă тет...

— Тытайман та-и вара?

— Кам тыттăр? Фермăри çынсем пуртăсемпе, сенĕксемпе чупса тухса хатăльтатма тытăнсан тин вăрманалла çаврăнса утрĕ тет...

Сар Тимухха пăши пуçне çĕртен илсе çаврăкаласа пăхрĕ.

— Çамрăккине туртса антарнă, явăл... Пăхăр акă, мăйракисем кăшт çеç шăтса ӳснĕ.

— Питĕ шел, — хаштах сывласа ячĕ Аркаш.

— Ара, шел пулмасăр!

Вĕсем пăши юлашкийĕсем патĕнче тата кăштах калаçса тăчĕç те лавсем патне таврăнса пычĕç.

— Тавайăр тиеме тытăнас! — кăшкăрчĕ Тимухха.

Тепĕр виçĕ сехетрен утă лавĕсем — сакăр лав — киле кайма тухрĕç. Кунта килнĕ чухнехи пекех, малта Сар Тимухха пычĕ. Çанталăкĕ вăл кун питĕ лайăх пулчĕ, çил-мĕн вĕрмерĕ, тап-таса кăвак тӳперен пĕрмай хĕвел пăхрĕ, ун çутинче таврари шап-шур юр çут кĕмĕл пек йăлтăртатса выртрĕ, юр çине вăрахчен пăхсан куçсем те йăмăхса кайрĕç.

Бригадир лавĕ хыççăн пыракан Евгени çӳлте утă çинче ларса пĕрмай йĕри-тавралла пăхрĕ. Хăй паçăр капан патĕнче курнă пăши виллин юлашкисене халĕ те манаймарĕ-ха, çавăн çинченех шухăшласа пычĕ. Епле асапланчĕ пуль виличчен, мăнтарăн!

Евгени хӑй ӗмӗрӗнче сала кайӑк чӗппине те вӗлерсе курман та, уншӑн ку ытла хӑрушшӑн туйӑнчӗ. Шухӑшланӑ май унӑн куҫӗ умне пӗтӗм картина тухса тӑчӗ. Акӑ ҫӑра йывӑҫ тӗмисем хушшипе пӗҫ кӑкӗ таран юр ӑшне пута-пута ҫамрӑк пӑши пырать... Ним те туймасть-ха вӑл, нимӗн те сисмест, утнӑ май ҫамрӑк йывӑҫ тӑррисене шӑлӗсемпе ҫырта-ҫырта илет — унӑн хырӑмӗ выҫнӑ. Ҫав вӑхӑтра сасартӑк аякри тӗмсем хушшинчен кашкӑр курӑнать... Вӑл тӳрех пӑши еннелле, унтан унӑн ӗнси ҫине сикет. Пӑши пӗтӗм кӗлеткипе чӗтресе мӗнпур вӑйӗпе малалла ыткӑнать. Вӑл хӑйӗн ӗнсинчен шӑлӗсемпе ҫыртса лартнӑ кашкӑра ҫӗре ӳкерет, анчах та юр тарӑн пулнипе хытӑ чупаймасть те, кашкӑр часах ӑна хӑваласа ҫитсе ӑмринчен, пырӗ патӗнчен, ҫыртса лартать. Сӗт пек шурӑ юр ҫине хӗп-хӗрлӗ вӗри юн пӗрхӗнет, пӑши чупайми пулать, кашкӑр ӑна тирӗнтерсе ярать те тата ытларах ҫыртса ҫурма, тулама ты-тӑнать. Пӑши юлашки вӑйне пухса ура ҫине сиксе тӑма пике-нет, анчах кашкӑр ӑна каллех пырӗнчен ҫыртса лартать. Ун-тан пӑши, хӑйне пулӑшма чӗннӗ пек, хӑрушла кӑшкӑрса ярать те юнланса пӗтнӗ юр ҫине ластах тӑсӑлса ӳкет...

Тен, ку пӗрре те ун пек пулман, анчах Евгение шӑп ҫавӑн пек пулнӑн туйӑнать.

Евгени Сар Тимухха сӑмахӗсене аса илчӗ: «Пирӗн вӑрман-сенчи Гитлер!» — терӗ вӑл кашкӑр ҫинчен. Чӑнах ҫав! Тӗрӗсне каларӗ бригадир. Гитлер та пире ҫав кашкӑр пекех вӑрттӑн, хурахла килсе тапӑнчӗ...

Евгени шухӑшӗсем малти лав ҫинчи Сар Тимухха тӑрук кӑшкӑрса янипе татӑлчӗҫ.

— Эхе-хе-ей! Пӑхӑр-ха, пӑхӑр, епле тара-ать! — аллинчи пушшипе сылтӑмалла сула-сула кӑтартрӗ бригадир.

Евгени ҫав еннелле пӑхрӗ те сарлака уҫланкӑ урлӑ шурӑрах кӑвак тӗслӗ мулкач вӑркӑнса пынине курах кайрӗ.

— Эх-х, пӑшал ҫук! — кӑшкӑрчӗ Тимухха Евгени еннелле ҫаврӑнса. — Хурса килмеллеччӗ санӑн аҫу пӑшалне, киле тав-рӑнсан куян ашӗ ӑшаласа ҫиеттӗмӗр кӗҫӗр!

— Хӳри кӗске ҫав унӑн, — кӑшкӑрчӗ ҫав самантрах Евгени хыҫӗнчи лавпа пыракан Аркаш, — ытла тӑруках ярса тытаймӑн!

Вӗсем ҫапла кӑшкӑрашнӑ вӑхӑтра мулкач куҫран ҫухалчӗ.

Атӑл хӗррине тухас умӗн татах тӗлӗнмелли тупӑнчӗ. Кӗтмен ҫӗртенех Евгени таҫта ҫывӑхрах, йывӑҫсем хыҫӗнче, ҫине-ҫине пӑшал пенине илтрӗ. Кӗрс! кӗрс! тутараҫҫӗ.

«Хайхи мулкача переҫҫӗ пулмалла, — шухӑшларӗ вӑл. — Тытасшӑн ӗнтӗ... Анчах ма-ха ун пекех нумай переҫҫӗ? Ни-вушлӗ пӗр мулкачшӑнах ҫавӑн чухлӗ пемелле?»

Лавсем майӗпе, пӗрин хыҫҫӑн тепри, Атӑл ҫыранӗнчен пӑр ҫинелле анчӗҫ. Ҫакӑнта вара Евгени хӑй питех те йӑнӑш

шухăшланине тавçăрса илчĕ. Атăл çыранĕ патĕнче салтаксем (нумай пулмасть пуçтарнисем пулĕ ĕнтĕ) винтовкăсенчен тĕл пеме вĕренеççĕ иккен. Пăр çинчи чылай пысăк лаптăк тавра пĕчĕкçеç хĕрлĕ ялавсем лартса тухнă — ку, паллах, кунта ют çынсен çывхарма юраманнине пĕлтерет, чăнкă çыран çумне фанертан этем кĕлеткисем туса лартнă. Пăр çине купаласа тунă лутра кăна хӳме хыçне выртса пĕр вуннăн харăс çав мишеньсене переççĕ, унтан винтовкисене хураççĕ те тĕл лекнилекменнине пăхма чупаççĕ. Пĕрисем таврăнсан теприсем пеме тытăнаççĕ...

— Чухлатăн-и, мĕн тăваççĕ? — кăшкăрса ыйтрĕ вăл Аркашран ун еннелле çаврăнса.

— Чухлатăп! — терĕ лешĕ. — Фашистсене лайăххрах паклаттарма вĕренеççĕ!

— Вăт, çавăн пек чăн-чăн винтовкăран персе курасчĕ!

— Пирĕн пек шĕпĕнсене лекес çук çав вăл.

— Партизансемпе çӳрекен ачасем переççĕ-çке...

— Вĕсем перĕç! Анчах эпир кунта партизанла выляма çеç пултаратпăр. Винтовка вырăнне — ал туйи пирĕн!

— Çапларах çав...

Лавсем хуллен шăваççĕ пулин те малтан мала кайса пычĕç, сылтăмри çыран патнелле çывхара пуçларĕç, анчах ачасем çаплах пăшал сассисем илтĕннĕ еннелле, халь ĕнтĕ пĕчĕк мĕлкесем пек кăна курăнакан çынсем чупкаланă çĕрелле пăхрĕç. Арçын ачасем пăшал таврашне питĕ юратаççĕ вĕт! Вăрçă вăхăтĕнче пушшех алла чăн-чăн пăшал тытас килет вĕсен. Çар çыннисем çине, уйрăмах вăрçă вут-çулăмĕ ăшĕнче пулса курнă çынсем çине çав тери ăшă кăмăлпа, чун-чĕререн юратса, хисеплесе пăхаççĕ. Вĕсемшĕн пулсан фронтра çапăçса курнă çын пек хакли те çук. Уншăн вĕсем тем тума та хатĕр — хуштăр е ыйттăр кăна...

Утă лавĕсем киле хĕвел аннă вăхăтра таврăнса çитрĕç. Кăнтăрла, хĕвел пăхнă чух, сивех марччĕ, анчах каçалла сулăнсан çанталăк сивĕтрĕ, çил те тухрĕ те, лавсем тăрринче ларса пынă Евгенипе Аркаш самаях шăнчĕç. Улăхра вырнаçнă фермăсем патне çитсе лашисене тăварсан вĕсем часрах килĕсене чупрĕç.

— Ыран пыр, кăштах йĕлтĕрпе ярăнса çӳрĕпĕр, — терĕ Евгени ял варринчи пушар сарайĕ тĕлĕнче тусĕпе уйрăлнă чух.

— Хăш вăхăтра?

— Ирхи ĕçсене пуçтарнă хыççăн.

— Юрать!

Анчах та Аркаш ыранччен кĕттермерĕ, Евгени патне тепĕр сехетренех вĕçтерсе пычĕ.

Акă мĕнле пулчĕ вăл.

Евгени киле çитсе алăк урлă каçсанах ăна нихçан лара-тăра пĕлмен йăмăкĕ Марине çулса тытрĕ те çине-çине ыйтусем парса тĕпчеме тытăнчĕ:

— Мĕнле кайса килтĕн, пичче? Вăлманта мĕн култăн? Кашкăлсем тĕл пулмалĕç-и?

Евгени тумтирĕсене хывнă май ăна хирĕç шӳтлесе илчĕ:

— Упа куртăм, сана кăтартма тытса килесшĕнччĕ те — тытаймарăм, манран хăранипе тем çӳллĕш йывăç тăрне хăпарса тарчĕ...

— Суятăн эсĕ, ахаль кулса калатăн...

— Суятăп пулсан — ан итле. Анне ăçта?

— Ăна плавленине чĕнчĕç. Пауль мучие те пыма хушнă.

— Ыттисем ăçта кайса пĕтнĕ тата?

— Янпа Юули шкулта, Амалипе Эльга хăйсен çыннисем патне кайлĕç пулмалла. Эп пĕчченех кил пăхатăп. Анне сана килсенех апат çиме хушса хăвалчĕ. Аш шӳлпи пит тутлă паян. Купăстапа...

— Юрĕ, халех çиетĕп, — терĕ те Евгени чăлана кĕрсе аллисене çурĕ, унтан кăмакари мăн чукуна аран туртса кăларса вĕри апат антарчĕ. Кунĕпе уçă сывлăшра çӳресен, çитменнине тата çан-çурăм ĕшеничченех ĕçлесен апат ытла та лайăх анатьçке вăл! Евгени пĕр мăн чашăк çисе ячĕ. Çиелтен тата пĕр стакан сĕт ĕçрĕ.

— Ну, ман хырăм параппан пекех пулчĕ ĕнтĕ! — терĕ вăл юлашкинчен кăмака çумĕнчи сак çинче пуканесемпе выляма ларнă Марине патне пырса. — Акă тытса пăх-ха...

— Кай, кай, ан чăлмантал! — тĕртсе ячĕ ăна йăмăкĕ.

Шăп çав вăхăтра алăк уçăлчĕ те, пӳрте Аркаш кĕрсе тăчĕ. Чупсах килнĕ пулмалла, хашкать. Евгени тĕлĕнсех кайрĕ.

— Мĕн эсĕ? Килте тем пулман пулĕ те?

— Килĕнче чиперех-ха унта, — ал сулчĕ Аркаш. — Эп урăххи пирки чупса килтĕм. Интерес пур. Питĕ пысăк интерес, тусăм!..

— Мĕнле интерес?

— Атя салтак курма. Чăн-чăннине, фронтовойне!

— Кам таврăннă? — кăна илтсен тӳрех хавасланса кайрĕ Евгени.

— Пирĕн ялсем мар, — терĕ Аркаш сĕтел пусĕнчи пукан çине ларса. — Паллясен Хыркассинчи куккăшĕ аманса таврăннă та курма килнĕ теççĕ.

— Паллясен куккăшĕ? Хĕрлĕ Мари шăллĕ-и? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Евгени. — Ара... вĕсен куккăшĕ тĕрмере ларать теместчĕç-и? Астăватăн-и, пĕркун калаçрăмăр...

— Тĕрĕс пулман пулмалла вăл сăмах. Сулахай алли аманнă тет. Апла тăк вăрçăрах пулнă ĕнтĕ. Атя кайса куратпăр çавна.

Нимĕçсемпе мĕнле çапăçни çинчен каласа пама пултарать вăл... Интереснă вĕт-ха вăрçăра пулнă çынна итлеме!

Евгени ытла тӳрех ответ памарĕ, шухăша кайнă пек пулса тăчĕ. Тĕрĕссипе каласан унăн Паллясем патне пит каясах та килмерĕ. Паллине хăйне те юратмасть вăл, унăн амăшне вара тӳсме те пултараймасть. Вĕсен класĕнче Палля пек йĕркесĕр ача та çук вĕт-ха. Миçе хут ятланă ĕнтĕ ăна, шкултан кăларса яма та тăнă! Пĕркун авă пĕр ачана ахальтенех хĕнесе чĕп-чĕр юн тунă, унтан хăй пĕр эрне хушши шкула пымасăр пурăнчĕ. Анчах Рина Петровна татах шеллерĕ пулмалла ăна: Палля пирки унăн амăшĕпе кайсах калаçнă терĕç, çавăн хыççăн Палля каллех шкула çӳре пуçларĕ, çапах та тӳрленес шут пулмарĕ унăн. Кашни кун тенĕ пекех мĕн те пулин туса хурать те хăй айăпне ыттисем çине яма тăрăшать. Çавăн пирки унпа никам та туслашмасть — майĕ çук.

Амăшĕ вара вуçех те çын мар, чисти арçури, лапра çăвар, намăса çухатнă этем. Хăйсен урамĕнче кăна мар, пĕтĕм ялĕпе те вăл мĕнле те пулин кӳрентермен, тарăхтарман çын çук пулĕ. Çынна вăл сăмахпах вĕлерсе хума пултарать, ним сăлтавсăрах тем те пĕр каласа тăкать — хуть те ват çын пултăр уншăн, хуть ача-пăча, никама та пăхса тăмасть. Октябрь праçникĕ хыççăн ачасем тимĕр-тăмăр пухнă чух та темĕн те пĕр хăтланса пĕтрĕ... Колхоз ĕçне ячĕшĕн çеç хутшăнкалать, ĕçне пырсан та пуринчен ытларах вăхăта лăпăр-лапăр калаçса ирттерет, хăйне кун пирки кам та пулин асăрхаттарсан хирĕç кăна çаптарать. Кĕркунне, уйран çĕр улми турттарнă чух, вăл икĕ миххине хăйĕн пахчине ывăтса хăварнă. Çавна куракансем пулнă та часрах Евгенисен амăшне — бригадира — пырса каланă. Ку часрах чупса кайса çав михĕсене каялла илсе тухтарнă, акт çырса правление панă, правлени ăна питĕ хытă ятласа штраф тӳлемелле тунă. Çавăншăн Хĕрлĕ Мари Евгенисен амăшне мĕн кăна каласа пĕтермен пуль, мĕнле ылханман пулĕ! Халĕ те-ха лăпланмасть, ялан:

— Эп ăна ĕмĕрне те каçармастăп, пур пĕр тавăратăп! Асăнĕха вăл мана! — тесе калать тет.

Хăй пĕрмай ханша юхтарса мăн çул çинче ĕçлекенсене питĕ хаклă хакпа сутать теççĕ. Пĕр сăмахпа, шутсăр ирсĕр çын! Евгени ăна урамра тĕл пулсан та курмăш пулса иртсе каять. Мĕнле кайса кĕрес-ха вĕсем патне?

— Ну, кайрăмăр-и? — Евгение куçĕнчен пăхрĕ Аркаш.

— Эп пыраймастăп пулĕ, эс пĕчченех кай, — терĕ Евгени.

— Ак тата япала! Мĕншĕн пымастăн пулать? Вăрçă çинчен итлеме саншăн интерес мар-им?

— Палля амăшне курас килмест манăн...

— Э, тупнă япала! — аллипе ваш! сулчĕ Аркаш. — Мĕн

тума кирлĕ вăл сана? Эс ун çине ан пăх! Эс леш салтакĕ çине пăхса лар, ăна итле! Атя, атя, тăхăн часрах...

Аркаш питĕ çине тăракан ача, вăл мĕнле те пулин шут тытрĕ пулсан — ăна ним тусан та пăрахтараймастăн, темле хирĕçлесе тăрсан та юлашкинчен вăл шутланă пекех тăватăн. Çавăн пек çирĕп кăмăл унăн, хуть те кама та çĕнет.

Хальхинче те Евгение парăнтарчĕ.

— Сана юлташлăх пырам эппин, — терĕ Евгени вăрахчен тытăнса тăнă хыççăн. — Анчах та нумай лармăпăр...

— Курăнать унта! Питех интерес çук пулсан тӳрех тухса кайма пултаратпăр, пире никам та чарас çук вĕт, — терĕ Аркаш.

Паллясен килĕ, Аркашсенни пекех, «леш енче», — яла икĕ пая уйăрса тăракан çырма урлă. Вĕсем патне çырма пусĕнчи ансăр урампа çаврăнса каймалла, анчах хĕлле çырмари пĕве урлă леш енне тӳрĕрен çӳремелли сукмак пур, кунтан чылай сывăхрах, çавăнпа та ачасем çакăнтан кайма шут турĕç.

Çыран хĕррине пырса тăрсан ун тĕпĕнчи пĕве тăрăхларах курка пек курăнать. Çулла кунта хур-кăвакал кĕшĕлтетет, шыва кĕрекен ача-пăча янăрать, хĕрарăмсем хăйсем çăвакан кĕпе-йĕме лаптак тукмаксемпе пĕр хĕрхенмесĕр шаплаттарни илтĕнет... Анчах хĕлле те лăпках мар кунта. Пуринчен ытла — каçалапа. Килте ларма юратман ача-пăча çырман ик енчен те пĕве çинелле çунашкасемпе ярăнать. Хăш чух çĕр ача та ытла пухăнать пулĕ. Çунашка çуккисем ахаль хăма таткисен пĕр енне ăшă тислĕк сĕрсе, çиелтен шыв сапа-сапа шăнтаççĕ те «пăркутсем» туса тухаççĕ — ку йышши «ярăнчăк» çунашкаран темиçе хут хытăрах каять. Акăш та макăш шавлаççĕ вара, çĕр тĕрлĕн çуйăхаççĕ — çырма кĕрлесе çеç тăрать.

Ак халĕ те, каç пулса килнĕ май, кунта ача-пăча тем чухлех... Пĕрисем сăртран вăркăнса анаççĕ — хăш-хăш çунашкасем çине иккĕн-виççĕн ларнă, теприсем çунашкисемпе «пăркутсене» сĕтĕрсе тăвалла чаваланаççĕ. Нумай ярăннипе сăрчĕ урай хăми пекех якалса ларнă, тăвалла хăпарма питĕ кансĕр, урасем каялла шуса анаççĕ, вара нумайăшĕ шуçса ӳкеççĕ те тăма ĕлкĕриччен пĕр хушă хырăмĕсем çинче выртса каялла шуса анаççĕ. Анчах та ку вĕсене пĕртте кӳрентермест, хаваслантарать çеç, ачасем ахăлтатса кулаççĕ, урисемпе тапкаланса çухăраççĕ:

— Эй-э-эй, пăрăнă-ăр, таптаса кая-яп!..

Евгенипе Аркаш сăртран асăрханса, урисене чалăшшăн пусса, ерипен утса анма пикенчĕç. Анчах Аркаш нумаях тытăнса тăраймарĕ, унăн уринчи мăн çăматă тĕпĕ пăрлансах ларнă та (йăлăмран таврăннă хыççăн типĕтеймен вăл ăна) — пĕр-икĕ утăм тусанах ярт! шуса кайрĕ. Аркаш кулăшла хăлаçланса

илчĕ, унтан лак! ларчĕ те çырма тĕпнелле ярăнса анса кайрĕ.
— Хуса çи-ит! — кăшкăрса хăварчĕ хăй.
Евгени те темиçе хут шуса кайрĕ, анчах ӳкмерĕ, пĕверен çӳлерехри çăл пури патне чиперех çитрĕ. Аркаш унта хăй çумне çыпăçса тулнă юртан тасалма тытăннă та-мĕн ĕнтĕ...
— Ахалех ларса анмарăн, шутсăр лайăх! — кулса илчĕ вăл. — Чăн та, йĕм ăшне юр тулчĕ ĕнтĕ, анчах аптрамаллах мар...
— Эппин, малашне çырма-çатра тĕл пулсан яланах çавăн пек ларса çӳре, — терĕ ăна хирĕç Евгени. — Анчах пĕр хĕл каçма миçе йĕм кирлĕ пулĕ-ши сана?
— Çавна пĕлместĕп вара...
Аркаш юртан тасалса çитрĕ, унтан чалăшса кайнă мулаххайне тӳрлетсе тăхăнчĕ те:
— Ну, вĕçтертĕмĕр малалла! — терĕ.
Анчах шăп çав самантра сăрт çинче, вĕсенчен çӳлерехре, темле хĕрарăм шари! шари! кăшкăрса ячĕ:
— Ай!.. А-ай!..
Ачасем вăльть кăна çав еннелле пăхрĕç те хăйсенчен сылтăмарахран иккĕн ларнă çунашка ыткăнса иртнине, пăрланнă юр çинче темле çын саркаланса выртнине, ун патĕнчен икĕ тимĕр витре сиккелесе, чăнкăртатса кусса аннине курчĕç.
— Тахăшне çапса ӳкернĕ! Атя часрах кайса пулăшатпăр! Тен, пуçне çурса пăрахнă вăл! — кăшкăрчĕ те Евгени тăвалла тапса сикрĕ.
— Çав çунашка ӳкерчĕ ăна! — чупнă çĕртех каялла сулса илчĕ Аркаш. — Тытас пулать вĕсене! Камсем-ши?..
Хĕрарăм пуçĕпе пăрлă çул çине питĕ хытă çапăнса тăнне çухатнă пулмалла, ӳппĕн çаврăнса выртнă та хускалмасть те. Ачасем ăна майĕпен çурăмĕ çине çавăрса хучĕç.
— Ара, Маюк кинеми-иç ку, Аристарсен амăшĕ! — терĕ Евгени. Çавăнтах ăна тытса тăратасшăн пулчĕ. — Кинеми! Тăма пултаратăн-и? Атя эпир сана киле леçсе ярăпăр...
Хĕрарăм чĕнмерĕ, сывламан пекех выртрĕ. Хушшăн-хушшăн çеç йынăша-йынăша ячĕ. Аркаш çаплах пĕве еннелле пăхапăха илчĕ. Хăй питĕ пăлханчĕ.
— Евгень, — терĕ вăл унтан, — эпĕ леш эсрелсене халех кайса тытатăп! Чисти сыснасем вĕт, ват çынна çапса ӳкереççĕ те килсе те пăхмаççĕ! Тен, çынни вилсе кайнă?..
— Хальччен тарчĕç те пуль вĕсем, — терĕ Евгени хĕрарăм çинчен куç илмесĕрех. — Кинеми, тăна кĕр-ха...
— Çук-ха, тарайман, куратăп эп вĕсене, ав леш еннелле хăпараççĕ. Хăйсем мĕн туса хуни çинчен шут та çук! Таккуй тытса памалла вĕсене пĕрре... Ялан ашкăнаççĕ вĕт, ялан иртĕнеççĕ!
— Чупса кайса палласа кил эппин, кайран кама кирлине

каласа парăпăр вĕсем çинчен, — терĕ Евгени, — анчах çапăçма кĕрсе ан кай, хăвăртрах кил, кинемее килне илсе каймалла пулать.

— Наччас таврăнатăп!

Аркаш пĕве урлă чупрĕ, Евгени халь те ним пĕлми выртакан хĕрарăма тăна кĕртме тăрăшрĕ.

— Кун пек ĕç тухмасть, юр çинче нумай вырттарсан шăнса та пăсăлĕ тата... — ытларах та ытларах пăшăрханчĕ Евгени. — Аркаша кăлăхах чуптартăм, кинемее иксĕмĕр çĕклесе каяттăмăр та пуль.

Ун çамки çине вĕтĕ тар тапса тухрĕ.

— Мĕн тăвас? Кама та пулин кайса чĕнес-ши? Аманнă çынна пĕччен пăрахса хăварма та аван мар...

Вăл ура çине тăчĕ те унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ. Самаях тĕттĕмленнĕ пулин те таврари курăнать-ха. Акă аякра та мар çунашка сĕтĕрнĕ икĕ пĕчĕк хĕр ача хăпараççĕ. Хушас çавсене!

Евгени ик пӳрнипе çăварне чиксе ши! шăхăрчĕ, унтан кăчăк турта-турта кăшкăрчĕ:

— Эй, шăнкăрчсем, килĕр-ха часрах кунта!

— Мĕн тума? — сас пачĕ ăна хирĕç пĕри.

— Кунта пĕр çын вилет, халех кама та пулин чĕнсе килес пулать!

Капла каласан ачасем тӳрех чупса пычĕç.

— Кам вăл? Мĕн пулнă? — ыйтма тытăнчĕç вĕсем, анчах Евгени нумай калаçтарса тăмарĕ.

— Маюк кинеми ӳксе тăнсăр пулнă, ăна килне илсе каймалла, анчах эп пĕччен йăтаймастăп. Халех аннĕрсене кайса калăр — чупса килччĕр кунта! Часрах! Ăслă ачасем пулăр ĕнтĕ! — васкатрĕ вăл ачасене.

— Юрать! — терĕç лешсем пĕр харăсах.

— Вĕçтерĕр!

Ачасем сăрталла чупрĕç, анчах çав вăхăтра Аркаш та хашкаса çитсе тăчĕ.

— Ну, мĕнле? Тăна кĕмерĕ-и-ха халь те? — ыйтрĕ вăл пуçĕпе карчăк еннелле сулса.

— Çук-ха. Çынсене чĕнме чуптартăм. А эс мĕнле... лешсене хăваласа çитрĕн-и? Палларăн-и?

— Палламасăр! Ак вĕсен çунашкине те сĕтĕрсе килтĕм! — Аркаш çĕлĕкне ĕнси çинелле лартса çамкине шăлса илчĕ.

— Камсем хăтланнă?

— Лавăшник ывăлĕсем, Караçăм Колькkипе шăллĕ.

— Каллех Колька-и?! Леш эрнере кăна лекнĕччĕ-ха ăна Ваçуххасен чӳречине çĕмĕрнĕшĕн. Татах чарăнмасть эппин?

— Чарăн вĕсене Палляпа иккĕшне! Арçури хăраххисем вĕт!

— Хăйсем мĕн теççĕ?

— Мĕн теччĕр вĕсем? Тунаççĕ! Эпир никама та таптаман, курман, илтмен... Ан суйăр, эсир карчăка еплерех вăркăнтарса хăварнине эпĕ хам куçпах курса юлтăм тесен Колькки мана хирĕç: «Санăн куçусем чармак, ытла пурне те кураççĕ, пĕрре хĕсес пулать-ха вĕсене», — тесе хучĕ. Ну... тӳсеймерĕм вара, хăлха чиккинчен пĕр-иккĕ тăхăнтартса ятăм...

— Çапах та çапăçмасăр тӳсеймерĕн пулать? — кăмăлсăр пулчĕ Евгени. — Каласах ятăм-çке сана...

— Ара, епле тӳссе тăратăн-ха? — хăр-хар каласа хучĕ ăна хирĕç Аркаш. — Вăл ашкăнса ват çынна вĕлерес пек ӳкерсе хăварнă, çитменнине тата манах юнаса хăратма пăхать! Çавăн хыççăн ман ăна ыталаса чуптумалла-и тата?

— Чуптăвасси çинчен каламастăп эпĕ...

Çак тĕлте туссен калаçăвĕ татăлчĕ, мĕншĕн тесен çӳлте, сăрт тăрринче, икĕ хĕрарăм мĕлки курăнчĕ.

— Евгени-и, эс-и унта? — ыйтрĕ пĕри.

— Эпĕ! — кăшкăрчĕ Евгени.

— Мĕн пулнă ара, пире ма чĕннĕ эсĕ?

— Кунта анăр-ха часрах, килсен куратăр...

Хĕрарăмсем — хайхи пĕчĕк хĕр ачасен амăшĕсем — çӳлтен аялалла ярăннă пекех шăва-шăва анчĕç те Маюк карчăк ним пĕлми выртнăшăн калама та çук хăраса ӳкрĕç.

— Ай тур-тур-ту-ур, пуçĕ çурăлнă пуль унăн!.. — аллисене хире-хирĕç шартах çапса илчĕ пĕри.

— Сывлать-и хуть? Юн тымарĕ тапать-ши? — карчăк патне кукленсе ларчĕ тепри.

— Атьăр часрах илсе каяр та фершăла чĕнтерер...

Вĕсем Маюк карчăка тăваттăн илсе кайрĕç. Килĕнче никам та çук иккен, карчăк ку кунсенче пĕчченех кăштăртатса пурăннă. Икĕ ывăлĕ вăрçăра унăн, кинĕ ытти колхозниксемпе пĕрле Çĕмĕрле таврашне вăрман касма кайнă. Çавăнпа та килти ĕçсене хăй тĕллĕнех тукаласа пынă вăл. Халĕ те ав шыв патне кайнă-мĕн те — ун тĕлне çакăн пек кĕтмен хурлăх сиксе тухнă...

Карчăка вырăн çине выртарсан Аркаша часрах фельдшерицăна чĕнме ячĕç, Евгени карчăк витрисем çырмарах юлнине аса илсе вĕсем патне чупрĕ.

— Шывне ăссах кил ĕнтĕ эсĕ, вăл текех хăй кайма пултарас çук, — хушса ячĕ ăна пĕр хĕрарăмĕ.

— Хамах пĕлетĕп! — терĕ Евгени.

Вăл тулли витресемпе таврăннă тĕле Маюк кинеми патне Антонина Клементьевна çитсе те ларнă.

— Хытă çапăннипе унăн пуç мими хускалма пултарнă, çавăнпа час тăна кĕреймест, — терĕ вăл. — Халех больницăна илсе каяс пулать, килте эпир унпа нимех те тăваймăпăр. Назар Егорчча систерес, лаша пама хуштăр.

Анчах ҫав вӑхӑтра колхоз председателӗ шӑпах хӑй пырса кӗчӗ. Маюк кинеми ӳкни ҫинчен ӑна тахӑшӗ урамрах пӗлтернӗ пулмалла. Антонина Клементьевнӑпа виҫ-тӑват сӑмах калаҫса илсенех вӑл хӑвӑрт кӑна каялла тухса утрӗ.

— Больницӑна эп ӑна хам илсе каятӑп, манӑн ыран ҫавах канашлура пулмалла, — тесе хӑварчӗ вӑл.

Ун хыҫҫӑн Евгенипе Аркаш та тухрӗҫ.

— Лере каятпӑр-и халь? — ыйтрӗ Аркаш. — Ҫитсе куратпӑр-и ҫав салтака?

— Темле-ҫке... — каллех иккӗленнӗ пек пулчӗ Евгени.

— Пӗрре тухнӑскер каяр ӗнтӗ. Килте халь ҫавах ним те тӑвас ҫук вӗт?

— Атя эппин...

## Кам вӑл?

Вӗсем халь пӗве урлӑ мар, ҫырма пуҫӗнчи пралукпа кайрӗҫ. Пӗр вӑхӑт нихӑшӗ те чӗнмерӗ, вӗсен урисем айӗнчи хытӑ юр кӑчӑртатни ҫеҫ илтӗнчӗ. Таврара кӑнтӑрлахи пекех ҫутӑ — леш енчи йӑмрасем хыҫӗнчен тулли уйӑх тӳпенелле хӑпарса пӗтӗм ял ҫине сенкертерех сивӗ ҫутӑ сапать. Ҫуртсем, йывӑҫсем ҫинчи, пахчасенчи юр кӗмӗл тӗслӗн йӑлтӑртатса выртать, хӑшпӗр мӑрьесенчен тухакан тӗтӗм те чиперех палӑрать. Илемлӗ!.. Анчах Евгени унталла-кунталла пӑхмарӗ, халь ҫеҫ пулса иртнисем ҫинчен шухӑшласа пычӗ.

— Ҫапах та Колькkине ҫапмалла пулман санӑн, — терӗ вӑл сасартӑк, Аркаш пачах кӗтмен ҫӗртен. — Хулигансене хирӗҫ хулиганла майсемпе кӗрешмеҫҫӗ. Ун ҫинчен эпӗ кӗнекесенче те вуланӑ... Колькkине ҫакӑн пек киревсӗр хӑтланнӑшӑн айӑпламаллах, анчах сана хӑвна та ӑна хӗненӗшӗн айӑплама пулать.

— Хӗнемен эп ӑна, — пуҫне пӑркаласа илчӗ Аркаш.

— Хӑлха чикки патӑм терӗн-ҫке?

— Вӑл пӑртак тӑн кӗртмелӗх кӑна.

— Хӑвна та тыттарса ячӗ пуль-ха?

— Асту, ҫав ӳпренех ҫаптаратӑп мар-и! Тӳрех лӗр-р макӑрса ячӗ те апия калап тесе килнелле лӑпӑстатрӗ. Шӑллӗ те унран юлмарӗ. Ӑна тивмен эпӗ, анчах вӑл та хӑйне пусма таппратнӑ пекех ҫухӑрса чупрӗ. Ҫунашкине те пӑрахса хӑварчӗҫ...

Евгение тусӗн сӑмахӗсем пӗрре те лӑплантармарӗҫ курӑнать. Вӑл ассӑн сывласа илчӗ те каллех калаҫма тытӑнчӗ:

— Вӗсем хӑйсен амӑшне пырса каланӑ ӗнтӗ, леш кӗҫӗрех ял тӑрӑх янраса ҫӳреме тытӑнать, пулни ҫумне пулманнине

ытларах хушать, пирĕн çинчен усал сăмах сарăлать... Мĕн тума кирлĕ ку?

— Усал сăмахне вăл хăйĕн Колькки çинчен сартăр! Эп никама та пуç çурăлса каймалла çапса ӳкермен, — măкăртатса илчĕ Аркаш.

— Колькки çинчен сăмах пулĕ-ха: шкулта та, пионерсен сборĕнче те калаçĕç ун пирки, ахальирттерсе ямĕç. Халь тата паллă та мар-ха, Маюк кинеми сывлăхĕ темлерех пулать... Айăпĕ пĕтĕмпех Колька çинче.

— Калаçма та кирлĕ мар, тытмалла та Палляпа иккĕшне шкултан хăваласа ямалла çеç! — тарăхса каласа хучĕ Аркаш.

— Вĕсемпе пĕрле — сана та-и?

— Мана мĕншĕн?

— Пулчĕ-пулмарĕ çапăçма кĕрсе кайнăшăн.

— Эп айăпсăр çынсене тивместĕп!

— Вăл пурĕ пĕр. Çыннăн нихçан та чышки малта пымалла мар, çавна ан ман эсĕ. Кам та пулин йăнăш тăвать пулсан ăна чăн малтан сăмахпа ăнлантарма тăрăшас пулать.

— Ăнлантарăн Палляпа Колька пеккисене! Эс вĕсене ăнлантариччен вĕсем сан мăйна каялла пăрса хума пултараççĕ...

Çапла пĕр-пĕринпе хирĕçлерех калаçса ачасем Паллясен тĕлне çитсе тăчĕç. Тӳрех кĕрсе каймарĕç вĕсем, малтан пӳрт умĕнчи решетке карта урлă карăнса чӳрече витĕр шалалла пăхрĕç. Аркашран çӳллĕрех Евгени пӳртре çынсем пуррине асăрхарĕ, анчах никамах та палласа илеймерĕ. Вара вĕсем пӳрте кĕрсе тăчĕç. Çынсем чылай иккен. Ваттисем те, ачасем те пур. Хĕрарăмсем те курăнкалаççĕ. Паллах, вĕсем пурте çак вăрçăран аманса таврăннă салтака курма пынă. Ĕмĕртен пыракан йăла вăл — салтак курма каясси. Вут-çулăм ăшĕнчен тухса йăпăртлăха киле лекнĕ çын каласа панисене пурин те итлес килет вĕт-ха.

Ачасем алăк патĕнчен иртмесĕрех куçĕсемпе хăйсем палламан çынна шырарĕç — ăçта-ха вăл? Тĕпелти сĕтел пуçĕнче паян хăйсемпе пĕрле йăлăмра пулнă Сар Тимуххă чĕлĕм туртса ларать — вăл хăй те ĕлĕкхи вăрçăра аманнăскер те, унăн хальхи вăрçă паттăрне пуринчен те ытларах курас килнĕ пуль, çавăнпа маларах иртсе ларнă ĕнтĕ. Чӳрече умĕнче Палля пĕчĕк мăлатукпа çапа-çапа măйăр катать. Вăл çĕнĕ кăвак çитсă кĕпепе — хаклă хăна килнĕ ятпа амăшĕ ăна ятарласах тăхăнтартнă пуль-ха. Анчах ӳссе кайнă хĕрлĕ çӳçĕ яланхи пекех тирпейсĕр, милĕк пек. Вăл никам çине те пăхмасть, măйăр катать те çиет, катать те хыпать.

Пӳртрисем пĕри те чĕнмеççĕ, тем кĕтнĕ пек лараççĕ.

Ăçта-ха салтакĕ? Таçта тухса кайнă-ши? Апла килни те ахалех пулчĕ эппин?

Сасартăк кăмака çинче тахăшĕ вăраммăн харлаттарса илни,

унтан йынăшса яни илтĕнчĕ. Ав мĕн иккен! Салтак çывăрать. Çынсем вăл вăранасса кĕтеççĕ.

Алăк уçăлчĕ те, тултан Палля амăшĕ кĕчĕ. Евгенипе Аркаш ик еннелле пăрăнса ăна çул пачĕç, çав хушăрах Евгени вăл сăхман аркипе хупласа темскер йăтса кĕнине асăрхаса юлчĕ. Хĕрарăм тӳрех чăланалла пăрăнса кайрĕ.

Паллясем патне пынă çынсенчен пуринчен малтан Сар Тимухха сăмах хушрĕ.

— Итле-ха, Мари кин, вăратма пулмасть-ши ăна? — ыйтрĕ вăл. — Шутсăр калаçса курас килет... Эп те салтак вĕт-ха, какникак. Атту ыран ир манăн каллех йăлăма утă патне каймалла, килсе курма ерçӳ пулмасть.

— Чиччас тăрататăп, каçхи апат çитерес пулать-ха ăна, — сас пачĕ Палля амăшĕ чăланта савăт-сапасене кĕмсĕртеттерсе. — Ытла тем те курса пĕтнĕ-çке-ха вăл, амансан та юр çинче икĕ талăк юн юхтарса выртнă, çавăнпа та лайăхрах кантăр тетĕп-çке!

— Тĕрĕс калатăн, Мари кин, хамăршăн юн тăкнă паттăрсене хисеплес пулать. Хам тӳссе курнă...

— Эс тӳснĕренпе çĕр çул та иртнĕ ĕнтĕ, ун чух мĕн пулнине манса та кайрăн, аса та илместĕн пуль.

— Э-э, Мари кин, виличчен те асран каймасть вăл. Унта пулса курманнисем çеç чухламаççĕ ăна. Курса килнисем — манмаççĕ!

— Питĕ ăслă сан сăмаху, тĕрĕс пуплетĕн, юлташ, — илтĕнчĕ çав самантрах кăмака çинчен.

Салтак хăех вăраннă иккен. Вăл каллех вăрăммăн, йынăшса янă пек анасласа илчĕ те кăмака çинчен сиксе анчĕ. Ачасем ăна куçĕсемпе çисе ярас пек пăхма тытăнчĕç. Лутрарах платна арçын, хул пуççисем сарлака, хĕрлĕ çӳçне шакла кастарнă. Симĕс гимнастеркăпа, ваткăллă симĕс йĕмпе. Уринче «фабричнăй» çĕнĕ çăматă, аллине марлĕпе чĕркенĕ те пиçиххипе мăйĕнчен çакса янă. Сăнĕ-пичĕ темле тăваткалтарах, янах шăммисем тулалла тухса тăраççĕ.

Сар Тимухха ăна хирĕç тăрса ал пачĕ.

— Салам, юлташ, чипер таврăнса çитнĕ ятпа...

— Чиперрине ху куратăн, ав епле юсаса ячĕ шуйттан Гитлерĕ! — çыхнă аллине çĕклесе кăтартрĕ салтак.

— Мĕн тăвас тетĕн, вăрçă унсăр пулмасть, — ассăн сывласа ячĕ Тимухха. — Манне те ав вун улттăмĕш çулта вĕсен Вильгельмĕ* урана хуçса ячĕ. Çавăнтанпах уксах автан пек хăрах ура çинче сиксе çӳретĕп...

---

* Вильгельм — пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче (1914—1917) нимĕççен кайзерĕ (патши) пулнă.

— Ну, хальхи вăрçă ун чухнехинчен çĕр хут хăрушăрах вĕт! Самолечĕсем çӳлтен тĕвеççĕ, танкĕсем таптаççĕ, тупписем таçта çити переççĕ, автомачĕсем окопран пуç кăларма та памаççĕ...

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ, ĕлĕкхипе хальхине ăçтан танлаштаран? Вĕренсе çитрĕç çынна вĕлерме! — килĕшрĕ Тимухха.

Палля куккăшĕ сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

— Туртмалли пур-и? — ыйтрĕ вăл Тимуххаран. — Манăн госпитальрен парса янă пирус та пурччĕ те — пĕтрĕ.

— Пирĕн кунта «сарайхыçтрест» кăна çав... — именнĕ пек пулчĕ Тимухха табак енчĕкне кăларса.

— Юрать вăл та, манăн халь çине ун пекки те çук-ха.

— Ыран эп сана тем чухлех тураса паратăп, кукка, тупса хутăм, — калаçăва хутшăнчĕ Палля чӳрече анинчи măйăр хупписене пуçтарса. — Килопех пулать.

— Эс ху та туртатăн пуль-ха, шельмă? — ун çине куларах пăхса илчĕ куккăшĕ.

— Çук, — пуçне пăркаларĕ Палля. — Алла та тытман!

— Ма суян, туртатăн-иç? — пат! персе ячĕ çав вăхăтра Улюк текен кăвак куçлă хĕр ача, ыттисемпе пĕрле салтак курма пынăскер. — Сана шкулта та миçе хут ятларĕç уншăн!

— Хуп çăварна, асту, кăларса ывăтатăп! — кăшкăрса пăрахрĕ ăна Палля.

— Табак тути кăмăла каять пулсан — турттăрах, — пурне те тĕлĕнтерсе Палляна çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ куккăшĕ. — Эп ăна хам та вун иккĕрех ĕмме тытăннă...

— Сиенлĕ вĕт-ха вăл! — каллех сас пачĕ Улюк.

— Арçыншăн нимех те мар... аптрамасть! Ну-кă, чĕркесе пар-ха эппин, тăванăм, мана хăрах алăпа кансĕр.

Палля хаçат çурса илчĕ те ун çине пĕр пысăк чĕптĕм табак хурса йăпăр-япăр чикаркка туса пачĕ.

— Маттур, пултаратăн, — мухтаса илчĕ куккăшĕ, — арçын пула пуçланă санран.

— Анчах шкулта начар вĕренет вăл, — татах каламасăр тӳсеймерĕ курăнать çав Улюках. — Ялан «двойкăсем» илет...

Вара пĕр самант хушшинчех çав тери тискер ĕç пулса иртрĕ. Палля сиксе тăчĕ те Улюк патне чупса пырса ăна питĕнчен иккĕ-виççĕ çăт-çат! çутăлтарса ячĕ.

— Ак сана «двойка»! Ак «пятерка»! — кăшкăрчĕ вăл. — Тухса вăркăн пирĕн патран, сана кунта никам та чĕнмен!..

Хĕр ача нимĕн те каламарĕ, Палля çапнă тĕлтен аллипе тытрĕ те пӳртрен хăвăрт тухса кайрĕ.

— Но-но, ку ытлашши вара, — Палляна хăтăрнă пек турĕ куккăшĕ çынсем умĕнче аван мар пулнипе. — Хĕр ачасемпе çапăçмаççĕ. Çилленсен те вĕсене тĕттĕм кĕтесре чĕпĕтме кăна юрать...

— Тепринче эп унăн çивĕтне тăпăлтарса кăларатăп акă! — терĕ Палля. — Вĕрентĕп элекleme!

Амăшĕ çаксене пĕтĕмпех курса тăчĕ, анчах ывăлне пĕр сăмах та каламарĕ.

— Эх, урамра пулмарĕ ку! — Евгение хулĕнчен пăчăртаса тытрĕ Аркаш. — Ах, ăс кĕртеттĕмĕр пĕрре!..

— Ан шарла, — пăшăлтатрĕ Евгени. — Вăхăт килсен кун çинчен аса илтерĕпĕр-ха ăна...

Палля амăшĕ сĕтел çине çăкăр касса хучĕ, унтан мăн чашăкпа апат, кашăксем тата хура чейникпе стакан пырса лартрĕ.

— Çийĕр! Чейникĕнчен хăвăрах ярса илĕр. Манăн кукăль кăлармалла-ха, ерçместĕп.

Чейникре сăмакун пулнă-мĕн. Палля куккăшĕ малтан хăй умлăн-хыçлăн икĕ стакан ярса ĕçрĕ, унтан Сар Тимуххана тыттарчĕ.

— Ĕçсе пар-ха ман сывлăхшăн... эпĕ хамăн пуçа киле илсе çитернĕ ятпа!

— Çапла пултăр-ха эппин, — терĕ лешĕ. — Эсĕ... Лука ятлăччĕ вĕт-ха? Йăнăшмастăп-и эпĕ?

— Так точнă. Лука Лукиччă. Вамили — Козлов. Пирĕн асатте ялан качака усранă та, çавăншăн ăна хамăр ялта Качака Петĕрĕ тенĕ. Атя, çавăрса хур!

Унтан вăл каллех хăй тултарса ĕçрĕ те, ӳсĕрĕлни сисĕне пуçларĕ. Тимуххан та пуçне кайрĕ пулмалла.

— Ну, Лука Лукиччă, хăв мĕнле çапăçни çинчен каласа кăтарт-ха пире, питĕ пĕлес килет, — ыйтрĕ Тимухха кăштах ларсан. — Мĕнле амантăн, унтан епле çăлăнса тухкаларăн?

Палля куккăшĕ çисе тăраннипе лăкăрт! какăрчĕ те чĕлĕм тивертсе ячĕ.

— Калас пулсан пит нумай калас пулать, ирччен те пĕтес çук ман юмахăм, — терĕ вăл мăнкăмăллăн.

— Эс пĕтĕмпе мар, кĕскен те пулин! Акă кусем те илтесшĕн веç, — пӳртри ытти çынсем çине кăтартрĕ Тимухха.

— Нимĕçсене Мускав патĕнче аркатса тăкни çинчен илтнĕ пуль эсир? — ыйтрĕ Козлов.

— Ăна илтнĕ-ха, уншăн тем пекех савăннă! — терĕ Тимухха.

— Вăт, самăй çавăнта пулнă эпĕ. Чăн-чăн тамăк хуранĕнче. Çитмĕл çиччĕмĕш артполк тетчĕç пире. Иккĕмĕш дивизион. Хам рядовой мар, оруди командирĕ пулнă. Старши сержант Козлов. Малтан пирĕн нумай чакса килме тиврĕ. Ăна та илтнĕ эсир...

— Илтнĕ çеç мар, уншăн тем чухлех хуйхăрнă. Мĕн калаmalли! — ассăн сывласа илчĕ Тимухха.

Çав хушăра Козлов (Палля куккăшне эпир малалла çапла калăпăр) тата тепре ĕçрĕ те тутине çанă вĕçĕпе шăлса илчĕ.

— Ну, вот... Мускав та инçе юлмарĕ. Пире приказ — урăх пĕр шит те чакмалла мар. Вилсен те вырăнта тăр! Оборона. Çĕрĕн-кунĕн траншейăсем чаврăмăр, блиндажсем турăмăр, тем те пĕр. Пырса та ан çулăх халĕ пирĕн çума. Анчах нимĕçсен малаллах каяс килет, хăйсен Гитлерĕ вĕсене Мускава часрах илме хушнă... Кашни кун çиччĕ-саккăр пырса сĕкĕнеççĕ пирĕн позици çине — ĕç тухмасть. Как пеме тытăнатпăр — пăрккин саланаççĕ. Тарăхнипе самолетсем яраççĕ пирĕн çине, бомбăсем тăкаççĕ, танксемпе те пыра-пыра пăхаççĕ — шалиш! Хурçă пек çирĕп тăратпăр, хамăр паталла пыракан нимĕçсене çĕрпе, тăпрапа хутăштарса хуратпăр. Пĕр-икĕ эрне çапла пулса пычĕ... Çав хушăра ман оруди сахалтан та пĕр алă танк çунтарса ячĕ пулмалла, пехотăн шучĕ те çук. Ну, орден лекетех сана, старши сержант Козлов, теççĕ аслăрах командирсем. Тен, пĕрре кăна та мар, иккĕ тан пулĕ теççĕ. А эпĕ вĕсене мана орденĕ кирлĕ мар, маншăн тăшмана ытларах пĕтерсе пултăр тетĕп...

— Тĕрĕс каланă, питĕ тĕрĕс, — пуçĕпе сулса илчĕ Сар Тимухха. — Тăшманне часрах пĕтересчĕ, орденĕсем пулĕç вĕсем!

— Орденне чăнах та пачĕç, Мускавран пынă генерал хăй аллипех çакса ячĕ ăна ман кăкăр çине. Пĕтĕм полк умĕнче! Шел, госпитальре выртнă чух тахăшĕ вăрларĕ. Анчах уншăн питех хуйхăрмастăп эпĕ, вăрçă пĕтиччен темиçе те илме пулать-ха вĕсене... Ну, унтан наступление кĕрсе кайрăмăр. Аркататпăр анчах фашистсене. Мулкачсем пек тараççĕ. Трофейсем илетпĕр кашни кун — блиндажсенче тем чухлĕ французски эрех, коньяксем, закуски... Ĕçетпĕр-çиетпĕр те — татах малалла. Нимле чару та çук пирĕншĕн. Мускавран пĕр-ик çĕр çухрăм ытла кайрăмăр. Вперед, хĕвел анăçнелле! — Козлов ку сăмахсене такама команда панă пекех кăшкăрса каларĕ те чышкипе сĕтел çине чант! тутарчĕ. — Унтан вара пĕррехинче ак çапла пулса тухрĕ... Эпир пĕр вăрман хĕрринче чарăнсаттăмăр. Нимĕçсем пире асăрхарĕç пулмалла та тытăнчĕç сывлăшран ăшалама, апайтурух!.. Унтан артиллерипе! Танксемпе! Пирĕн пĕри вилет, тепри аманать... Пăхатăп — эп хайхи пĕчченех тăрса юлнă. Нимĕçсем енчен виçĕ танк килет. Ман оруди çинех ыткăнаççĕ, мĕншĕн тесен пуринчен те ытларах эп тарăхтарса çитернĕ-çке вĕсене. Ну, тинех пĕтмелли çитрĕ, халех лапчăтса хураççĕ кусем тетĕп... Çапах та парăнас шутăм çук! Тытăнтăм пеме! Пĕрне лектертĕм — гусеници татăлса ывтăнчĕ, тепĕр снарядпа иккĕмĕшне тивертсе ятăм. Виççĕмĕшĕ хăраса ӳкрĕ пулмалла та вăр-р! çаврăнса каялла тĕпĕртеттерчĕ... Ну, халь ĕнтĕ çăлăнса юлтăм тетĕп. Оруди çумне тайăнса лартăм та чĕлĕм чĕртсе ятăм. Канас терĕм пăртак. Ывăнтарать вĕт пĕрмай перепере... Снарячĕсем йывăр, пулăшакансем никам та çук манăн,

пурте вилсе пĕтнĕ. Юрать, хамăн вăйăм пур та! Минут лартăмши çапла, иккĕ-ши, пĕлместĕп. Унччен те пулмарĕ, пирĕн умри пĕр траншейăран нимĕçсем сиксе тухрĕç... Пехота! Пĕр аллăн пуль, унтан никак та кая мар. Ятарласа мана сыхласа ларнă вĕсем. Мĕн тăвас хайхи? Вилнĕ салтакăн автоматне илтĕм те çаксем çинелле шатăр-р! шатăр-р! тутартăм. Çурри çавăнтах тăкăнчĕç, ыттисем тарма тапратрĕç. А эп вĕсене — хыçран шатăр-р! шатăр-р! Веç пĕтрĕç çаксем, пĕр çын та чĕрĕ юлмарĕ... Анчах хам та амантăм çавăнта: таçтан шуйттанĕнчен пĕр ухмах снаряд пырса ӳкрĕ те шап! хупласа хучĕ мана. Урăх нимĕн те астумастăп, госпитальте тин тăна кĕтĕм. Вун пĕр осколка кĕрсе ларнă ман ӳте. Сулахай хула çĕмĕрсех пăрахнă... — Козлов мăйĕнчен çакса янă аллине хускаткаласа илчĕ.

— Осколкисем халь те сан ăшăнтах-и вара? — ыйтрĕ Палля, ытти пур çынсем пекех питĕ тимлĕн итлесе ларнăскер.

— Вĕсене магнитпа туртса кăларчĕç. Анчах ку алли тӳрленмест-ха, суранĕсене ӳт илмест. Тухтăрсем мана госпитальтен кăларса ярасшăн марччĕ, эп хам ирĕкпе тухса килтĕм. Тăвансене шутсăр курас килекен пулчĕ.

— Ара, этем чунĕ килеллех туртать çав, — терĕ Сар Тимухха. — Манăн хамăн та çавăн пекехчĕ...

Козлов тата тепĕр хут тултарса ĕçрĕ.

— Çапла иртрĕ манăн фронтри пурнăç...

— Нумай, пит нумай тӳснĕ эсĕ! Калама та çук...

— Мĕн тăвас тетĕн, вăрçă! Вăрçă, тăванăм!.. Çак алă чипер тытакан пулсан каллех кайма тивет акă. Тылра ларса пурăнмалли çын мар эпĕ. Манăн çапăçмалла, тăшмана пĕтермелле. На то салтак! Салтак анчах та мар — старшина сержант. Таврăнсанах лейтенант тăваççĕ пуль-ха ĕнтĕ, ма тесессĕн ман халь опăт пысăк, çитменнине тата эпĕ çапăçусенче те çав тери харсăр пулнă... Хама слободă парсан эп халь дивизион командирĕ те пулма пултаратăп. Ним те мар!

Козлов ӳсĕрĕлсе кайрĕ. Унăн сăмаххисем пĕр-пĕринпе çыхăнми пулчĕç, анчах никамăн та ăна тиркес шут пулмарĕ: вăрçăра тем те пĕр тӳснĕ салтакăн халлĕхе вăйĕ те çукрах пулĕ, тен, çавăнпа час епрерĕ вăл...

Пĕр хушă чĕнмесĕр ларнă хыççăн Козлов тăрук кăшкăрса юрласа ячĕ:

Ехал с ярмарки ухарь-купец,
Ухарь-купец, удалой молодец...

Ăна курма пынă çынсем майĕпе саланма пуçларĕç. Евгенипе Аркаш та киле кайма шут турĕç.

— Ну, мĕнле? Интереснă вĕт? Анчах эсĕ килесшĕн марччĕ, айван, — терĕ Аркаш вĕсем урама тухсан.

— Итлеме интереснӑ та, анчах манӑн темле... питех ёненесех килмест ӑна, — пуҫне пӑркаласа илчӗ Евгени. — Ытлашши мухтаннӑ пек туйӑнать. Ӑна пӗтӗмпех ёненсен Мускав патӗнче фашистсене вӑл пӗчченех аркатса тӑкнӑ пек пулса тухать...

— Э, эс яланах хӑвна майлӑ шутлатӑн! — терӗ Аркаш кӑмӑлсӑрланса. — Ара, ҫынни чӑнах та вӑрҫӑра пулнӑ вӗт-ха, куран — аманса таврӑннӑ. Эппин, мӗн курмаллине курнах ёнтӗ вӑл, хӑйӗнчен шухӑшласа кӑлармасть!

— Курассине, тен, курнӑ та пуль те...

— Мӗн тата?

— Нимех те мар...

Евгени хӑй шухӑшне каласа пӗтермесӗрех килнелле утрӗ.

«Нивушлӗ вара вӑрҫӑра ҫавӑн пекех пулать? — хӑй ӑшӗнче тӗлӗнсе пычӗ вӑл. — Нивушлӗ пӗр-пӗччен тӑрса юлнӑ ҫын ҫавнашкал тем те пӗр тума пултарать-ши? Тӑшман танкӗсене те ҫунтарса ярать вӑл, пехотине те ҫавапа ҫулнӑ пек ҫулса тӑкать. Ытла та юмахри пек-ҫке ку? Ун пекех пулсан тӑшмана пӗтерсе тӑкма йывӑрах та мар? Анчах ма-ха, эппин, пирӗннисем Мускав таранах чакса килчӗҫ, мӗншӗн халӗ те фашистсене ытла тӑруках каялла хӑваласа ярайманҫҫӗ?..»

## Куншӑн никам та каҫармӗ!

Ирхине, тул ҫутӑлса ҫитиччченех, картлӑ кӗвентерен ик витре ҫакса ҫырмари ҫӑла шыв ӑсма чупса ансан Евгени унта кӗтмен ҫӗртен Антонина Клементьевнӑна тӗл пулчӗ. Фельдшерица тӗп хунӑ мӑн ҫӑматӑ тӑхӑннӑ, пуҫне темле кивӗ кӑвак шаль ҫыхнӑ та, Евгени ӑна тӑруках палласа та илеймерӗ. Евгение вӑл хӑй малтан сӑмах хушрӗ:

— Ай-яй, хытӑ ҫунтарать паян сив мучи! Сана епле пек, Евгени?

— Сивӗ ҫав, — терӗ Евгени. — Миҫе градус-ши?

— Вӑтӑртан та иртет пуль...

— Ёнерех апла марччӗ, эпир йӑлӑма ним мар кайса килтӗмӗр. Кӗҫӗр сывламалла мар шӑнтса лартнӑ — тӗлӗнмелле!

— Вӑхӑчӗ ҫавӑн пек. Ёлӗкхилле каласан раштав сиввисем пуҫланчӗҫ... Анчах эпир килте ӑшӑ пӳртсенче ларса аптрамӑпӑрха, пирӗннисем фронтра мӗн кураҫҫӗ-ши?

— Кансӗр ёнтӗ вӗсене паллах...

— Ҫапах та маттур ҫапӑҫаҫҫӗ-ха! Хӑвалаҫҫӗ те хӑвалаҫҫӗ фашистсене! Эсӗ хаҫатсем вуласа пыратӑн пуль?

— Маншăн ку чухне хаçат тавраш̆ çăкăртан та хаклăрах. Пирĕн Пауль Оскарович та хаçат вуламасан апат çиме те, çывăрма та пăрахать. Каçсерен эпир пурĕ пĕрле пухăнса вуласа ларатпăр...

— Халь пурте çапла ĕнтĕ, пурин пуçĕнче те вăрçă шухăшĕ анчах.

Фельдшерица витрисене картлă кĕвентепе çаклатса çĕклерĕ те темиçе утăм тăвалла ярса пусрĕ. Çав вăхăтра Евгени тăрук ĕнерхи çинчен аса илсе ыйтрĕ:

— Антонина Клементьевна, Маюк кинеми пирки мĕн терĕç? Ăна больницăна леçме Назар Егорччăпа пĕрле эс ху та кайнă вĕт-ха?

— Кайнă çав. Ытлашши нимех те пулман, анчах пĕр эрнесем пек вырттарас пулать терĕç.

— Килĕнче мĕнле унăн? Выльăхĕ-кайăкĕ... Вĕсене камăн та пулин пăхас пулать вĕт-ха!

— Халлĕхе юнашарти Праски ачисем пăхаççĕ, кинне вăрман ĕçленĕ çĕртен киле килме хушса правлени ячĕпе телеграмма патăмăр...

— Çакна веç Лавăшник Караçăм Колькки туса хучĕ, эсрел пуçĕ! — тарăхса каларĕ Евгени. — Хăй тунать тет-ха тата! Анчах эпир Аркашпа иксĕмĕр хамăр куçпа курса тăтăмăр...

— Вăл сирĕнпе пĕр класрах вĕренет мар-и çав?

— Пирĕнпе-ха. Ак каникул хыççăн калаçатпăр эпир унпа. Пĕрре лайăх кăна тытса лăскамалла пулать.

— Хĕнес теместĕр пуль те? Астăвăр, ун пек юрамасть...

— Çук, — ал сулчĕ Евгени. — Ун пек хăтланма сĕм ухмахах мар-ха. Эпир ăна пĕтĕм класс умĕнче намăслантаратпăр. Стена хаçатĕнче çыратпăр.

— Намăслантарнинчен ытларах — кун пек хăтланма юраманнине ăнлантарас пулать. Эсир калани унăн чĕри патне çиттĕр!

— Тĕрĕс...

Çăл патĕнчен вĕсем пĕрле хăпарчĕç. Ялан халăх хушшинче пулнипе пурин çинчен те ыйтса пĕлме, пуринпе те калаçма хăнăхса çитнĕскер, Антонина Клементьевна халь те калаçмасăр пымарĕ.

— Сирĕн килтисем епле пурăнаççĕ унта? Ку яхăнта пырса та кураймарăм, ниепле те вăхăт çитмест...

— Чиперех пурăнатпăр-ха, — терĕ Евгени.

— Эстонецсен леш чирлесе пурăннă пĕчĕк хĕр ачи мĕнле?

— Чупать! Кунĕпех Маринепе пĕрле вĕсем, шит те уйрăлмаççĕ. Тепĕр чух выляççĕ-выляççĕ те пĕрлех выртса çывăраççĕ.

— Ютшăнма пăрахрĕç эппин?

— Мĕн ютшăнни пултăр! Эльгипе Юули те чăвашла сăмах-

сем чылай пӗлекен пулчӗҫ ӗнтӗ. Марине вӗсене ҫине тӑрсах вӗрентет...

— Вӗренччӗр, вӗренччӗр, — терӗ Антонина Клементьевна. — Кам пӗлет, тахҫанччен пурӑнмалла пулать-ха вӗсен кунта.

Икӗ урам хӗресленнӗ тӗлте вӗсем уйрӑлчӗҫ. Хӑйсен хапхи патне ҫитнӗ чух Евгени ялта почта валеҫсе ҫӳрекен Варькканa — пӗчӗк те хӗп-хӗрлӗ сӑн-питлӗ, тӗлӗнмелле вӑрӑм куҫ тӗклӗ хӗр ачана — тӗл пулчӗ. Вӑл аслашшӗн кивӗ сӑран сумкине кӑкри умне ҫакнӑ та анатран хӑпарать-мӗн. Ӑна курсанах Евгени чарӑнса тӑчӗ.

— Пире валли мӗн пур?

— Хаҫат кӑна паян...

— Ҫыру ҫук-и?

— Ҫыруне тин ҫеҫ ҫырма ларнӑ тет-ха! — Варькка ӑна сумкинчен «Чӑваш коммуни»* кӑларса тыттарчӗ те малалла утрӗ. Евгени килне кӗрсе витрисене каткана пушатсанах чӳрече умне ларса хаҫат вулама тытӑнчӗ. Мӗн пӗлтерет-ха паян Совинформбюро? Тата миҫе хула ирӗке кӑларнӑ-ши пирӗн ҫарсем?

Хаҫатсем вулама халь савӑнӑҫлӑ пулчӗ. Нимӗҫсене Мускав патӗнче аркатса тӑкнӑран варах ялан ырӑ хыпарсем пӗлтерчӗҫ унта. Хӗрлӗ Ҫар хамӑрӑн ҫӗре фашист ҫӗлен-калтисенчен тасатса малаллах пырать. Акӑ ҫак кунсенче кӑна пирӗннисем Калуга, Малоярославец, Наро-Фоминск, Можайск, Дорохово тата ытти чылай хуласене ирӗке кӑларчӗҫ. Паян та пӗлтернӗ пуль-ха, тен...

«...вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн Уварово хулипе ун ҫывӑхӗнчи чылай ялсене ирӗке кӑларнӑ», — хӑй ӑшӗнче вуларӗ Евгени. Аван, питӗ аван!

Ҫак вӑхӑтра ун ҫумне малти пӳртрен шӑппӑн утса тухнӑ ватӑ Пауль пырса тӑчӗ.

— Ну, как? О чем пишут, чем радуют? — ыйтрӗ вӑл.

Евгени хаҫатра уйрӑмах хура сас паллисемпе ҫырнӑ хула ячӗ ҫине шӗвӗр пӳрнипе тӗллесе кӑтартрӗ.

— У-ва-рово... — вуларӗ те эстонец шухӑша кайнӑ пек пулса тӑчӗ. — Не слышал. Где этот город?

— В Московской области, — ӑнлантарчӗ Евгени.

— А дальше что пишут? Расскажи по-русски...

Евгенисем вырӑсла хаҫат ҫырӑнса илмен, ҫавӑнпа та унӑн кашнинчех Совинформбюро пӗлтернисене те, вӑрҫӑри ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ ытти статьясене те Пауле вырӑсла куҫарса памалла пулчӗ. Лешӗ вара вӗсем ҫинчен хӑйӗн кил-йышне ҫеҫ мар, урӑх килсенче пурӑнакан эстонецсене те каласа кӑтартрӗ. Хальхинче те Евгени ӑна Информбюро сводкинче ҫырнисене

* Хальхи «Хыпар» хаҫат.

пĕтĕмпех куçарса пачĕ. Унта пирĕн çар чаçĕсем, уйрăм салтаксемпе офицерсем епле паттăр çапăçни çинчен, темле Батя ертсе пыракан партизансен отрячĕ пĕр ялта тăракан гитлеровецсен гарнизонне çĕрле сасартăк тапăнса пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкни, совет летчикĕсемпе зенитчикĕсем тăшманăн вун сакăр самолетне персе антарни, тылри заводсем фронт валли хĕç-пăшал туса кăларассине ӳстерсе пыни çинчен çырса пĕлтернĕ.

Яланхи пекех, ватă эстонец Евгени куçарса каланисене тимлĕн, хамăрăн фронтри ĕçсем ăнса пынăшăн савăнса, пуçĕпе сула-сула итлерĕ. Унтан хăйĕн кил-йышĕ вырăн çинчен тăрасса кĕтмесĕрех чей ĕçрĕ те ăшăрах тумланса килтен тухса кайрĕ. Халь вăл пĕртте кунта килнĕ чухнехи пек мар тăхăнса çӳрерĕ: колхоз председателĕ Назар Егорччă ăна хăйĕн хура кĕрĕк пиншакĕпе хĕрлĕ пăру тирĕнчен çĕленĕ мулаххайне, «кукмăрски» текен тĕрленĕ кунчаллă кивĕ çăматтине парнеленĕ те, çавсене тăхăнчĕ. Килтисем хăш чух кулкаласа та илчĕç унран:

— Сунара кăна çӳремелле санăн ку çи-пуçпа. Упа курсан вăл та хăраса тарĕ санран!..

— Мана капăрĕ кирлĕ мар, мана ăшши пултăр, — терĕ вĕсене хирĕç Пауль Оскарович.

Чăнах та, ăна халь нимрен ытла ăшши кирлĕ пулнă. Пĕр эрне каялла колхоз правленинче ял хуçалăх машинисене çур акине хатĕрлесси çинчен калаçнă. Ку ĕçпе районран ятарласа çын та килнĕ-мĕн. Çав ларура ватă эстонец та пулнă — Евгенисен амăшĕ ăна ятарласах хăйпе пĕрле илсе кайнă. Назар Егорччă плугсемпе ытти машинăсене юсама халĕ ялта пĕр тимĕрçĕ те çукки çинчен каласа парсан ватă Пауль сăмах илнĕ те: «Эпĕ механик, машинăсене юсаса хатĕрлессине пĕтĕмпех хам çине илетĕп», — тенĕ. Хăйне пулăшма вăл пĕр-икĕ вăйлăрах йĕкĕт тупса пама çеç ыйтнă.

— Эп хам панă сăмаха тытманни нихçан та пулман-ха, çавăнпа та шанма пултаратăр, — тесе ĕнентернĕ ватă эстонец.

Назар Егорччă ăна куншăн аллине чăмăртасах тав тунă:

— Спаççипă сана, Киккас юлташ! Çăлатăн вара эс пире. Манмăпăр эс ыр тунине...

Лару хыççăн тӳрех вăл Пауле хăй килне илсе кайнă та хĕлле тăхăнмаллисем парса янă. Тепĕр кунне ăна мĕн вăрçă пуçланнăранпах хупă тăнă колхоз тимĕрç лаççин уççине тыттарнă, унтан юсамалли машинăсене турттарса пырса панă та, çавăнтан вара вăл иртен пуçласа каçченех хăйне май лаçра кăштăртатать. Ак халĕ те çавăнтах тухса утрĕ вăл. Ĕмĕрне ĕçре пиççе иттернĕ çынна çакăн пек вăхăтра ĕççĕр епле лартатăн? Чунĕ тӳсмест унăн ĕççĕр ларма!..

...Пурнăç çакăн пек пĕр майлă та йĕркеллĕ шунă вăхăтрах, Хĕрлĕ Çар тăшмана куллен хĕвел анăçнелле хăваланă пирки çынсен кăмăлĕ çĕкленнĕçемĕн çĕкленсе пынă хушăрах тавра-ра сасартăк пурне те çав тери тарăхтармалли усал хыпарсем сарăла пуçларĕç. Малтанах ĕненес те килмерĕ — ытла та тискер, ку чухне пулма та пултарайман ĕçсем çинчен калаçнă пек туйăнчĕ.

— Чăрăшкассинчи пĕр тăлăх арăма çаратнă. Хăйĕн упăшки вăрçăра вилнĕ, ачисем пиллĕк тан, пĕринчен тепри пĕчĕкрех тет. Кĕлет çăраççине лумпа çĕмĕрсе кĕнĕ те юлашки пур-çук çăнăхне илсе тухса кайнă...

— Юманайри колхоз ферминчен пĕр харăсах пилĕк сурăх вăрланă. Фермăрисем çакна сиссе хыççăн хăвалама тăрсан вăррисем пăшалпа персе хăварнă. Хăйсем çунапах пулнă, пар лашапа тет...

Ăçтан-ха тăруках ĕненетĕн çакăн пек сăмахсене? Епле пулма пултартăр ун пекки хальхи вăхăтра?! Кун çинчен каллĕ-маллĕ шухăшласан пуç та çаврăнса каймалла!.. Хура тинĕсрен пуçласа Пăрлă океана çити ĕмĕрне пулман хăрушă вăрçă пырать, фронтра фашистсемпе çапăçса кашни кун пин-пин вăй питти çын пĕтет пуль, пĕтĕм совет халăхĕ тăшмана тĕп тума, Тăван çĕршыва ютран килнĕ хурахсенчен епле те пулин хăвăртрах тасатма пулăшас кăмăлпа çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшать, çавăншăнах ачасем те мăннисемпе тан ĕçлеççĕ, халăх нимĕн те хĕрхенсе тăмасть, мĕн пуррине пĕтĕмпе тенĕ пекех фронт валли парать, анчах çав вăхăтрах пирĕн хушăра хура юнлă, çĕлен чĕриллĕ этемсем те пур эппин?

Пĕр каçхине тин çеç районти учительсен канашлăвĕнчен таврăннă Рина Петровна Евгенисем патне пырсан вĕсем чылайччен çав тискер хыпарсем пирки калаçса ларчĕç. Рина Петровна татах хăрушă сăмах илтсе килнĕ иккен...

— Атăл енчи пĕр ялта темле хурахсем çил-тăманлă тĕттĕм каç учительница хваттерне пырса кĕрсе пĕр ырă япала та хăварман тет. Фронтра çапăçакан упăшкин костюмĕсене, пальтисене, учительницин икĕ пин тăракан кĕрĕкне, çенĕкри чăланта упраннă аш-пăшне тата тем те пĕр илсе тухса кайнă... Пĕр сăмахпа каласан çынна çап-çара тăратса хăварнă.

— Хăй килте пулман-и-мĕн? — ыйтрĕ Евгени амăшĕ, сывламан пек итлесе ларнăскер.

— Килтех пулнă!

— Ма кĕртнĕ-ха вăл палламан çынсене? Кĕртес пулман унăн...

— Лешсем питĕ чеен улталанă ăна: эпир районти милицирен, инçерен килетпĕр те — шутсăр шăнтăмăр, йăпăрт

кăна ăшăнса тухма ирĕк парăр тесе каланă. Кĕрсен вара тӳрех шăп пул, кăшкăрса ачусене ан вăрат, вырăнтан ан хускал, атту халех леш тĕнчере пулатăн тенĕ... Ку вилнĕ пек пулса ларнă, лешсем ним чăрмавсăрах çаратнă, куçа мĕн курăннă — çавна илсе чикнĕ. Тухса кайнă чух пăшалпах юнаса хăварнă: тул çутăличчен алăкран тухсан — тӳрех вилсе выртатăн, пирĕнтен пĕри ирчченех сан крыльца умĕнче пулать тенĕ. Ну, лешĕ чĕтресе ларнă вара... Камăн-ха вăхăтсăр вилсе выртас килтĕр?

— Кай, ĕненес те килмест! — ассăн сывласа илчĕ Улька. — Çĕр çăттăрах! Камсем пулма пултараççĕ-ха вăл хурахсем? Тем тесен те пирĕн çынсем мар, фашистсемех пуль!..

— Фашистсемпе пĕр пекех ĕнтĕ, — терĕ Евгени. — Лешсем те пирĕн çынсен пурлăхне çаратаççĕ, пусмăрласа, пăшалпа хăратса туртса илеççĕ, кусем те ав... Ма-ха тытмаççĕ вĕсене?

— Шыраççĕ те, тупаймаççĕ тет-ха, таçта питĕ тĕплĕн пытанса пурăнаççĕ курăнать, — терĕ Рина Петровна.

— Хĕлле ăçта пит аякка пытанччăр вĕсем? Çулла пулсан хуть вăрманта-мĕнте, улахрах çырмасенче выртĕччĕç, анчах халĕ ав епле шартлама сивĕсем çитсе çапрĕç те...

— Тен, вĕсене пулăшакансем ялсенче те пур? Тен, кам та пулин ăшă пӳртрех усрать аçа çапманскерсене? Кам пĕлет! Çĕлен-калтасем пĕтмен вĕт-ха çĕр çинче, — терĕ Улька.

Пĕр хушă чĕнмерĕç, унтан сăмаха каллех Улька пуçларĕ.

— Ара, ун пекех хăтланса çӳрекенскерсем, вĕсем сывă, вăй питти арçынсемех пуль-ха, уксах-чăлахсем пулас çук паллах! — терĕ вăл. — Апла тăк мĕншĕн-ха вĕсем лере, вăрçăра, мар? Халĕ вĕт кашни пăшал тытма пултаракан арçын, ăна военкомат ятарласа хăварман пулсан, вăрçăра пулма тивĕç! — Улька шухăша кайнă пек пулчĕ. — Эпир пĕчĕккĕ чух пире ялан таркăнсемпе хăрататчĕç, çавăн йышшисем мар-ши вĕсем?..

— Таркăн тесе дезертирсене каланă вĕт-ха? — ыйтрĕ Евгени.

— Ара, çавсем ĕнтĕ, кам пултăр тата? Германипе вăрçнă леш вăрçă вăхăтĕнче те, граждански чухне те нумайччĕ вĕсем. Халăха çаратса пит аптрататчĕç...

— Граждан вăрçи вăхăтĕнче пуринчен ытларах тĕрлĕ пуянкулак ывăлĕсем тарса çӳренĕ, ун çинчен вуланă эп.

— Анчах халĕ дезертирсем пулмалла мар-çке! — аллипе сĕтеле шат! çапса илчĕ учительница. — Кулаксем тахçанах пĕтнĕ пирĕн, тата ун чухнехипе хальхи хушшинче расналăхĕ ытла та пысăк: граждан вăрçи вăхăтĕнче кулак ывăлĕсем Совет влаçĕшĕн çапăçасшăн пулман — вĕсем шурă гвардеецсене кĕтнĕ, шуррисем çĕнтерсен хăйсем каллех хура халăха пусмăрласа пурăнакан хуçасем пуласса шаннă. Анчах халĕ те дезертирсем

пурах пулсан вěсен мěн ěмěтпе пурăнмалла? Енчен те фашистсем пире чăнах çěнтерес пулсан вěсене Гитлер уйрăмах ыр кăтартасса шанаççě-ши?

— Кам пěлет, Рина Петровна, кам пěлет! — терě Улька. — Тем тěрлě çын та пур вěт çěр çинче! Пěри халăхшăн чунне парать, çынсен телейěшěн вут ăшне кěрсе кайса пуçне хурать, тепри — пěр хăйшěн çеç çунать, хăйěн тирне çăлса хăварасшăн кăна тăрăшать. Ун пеккисен чыс та, намăс та, этем тивěçě те çук, вěсем Тăван çěршыва мар — ашшě-амăшне те сутма пултараççě. Пур-ха ун пек анчăксем, пěтерейמен эпир вěсене...

— Хаçатсенче çыраççě вěт-ха, — терě Евгени, — фашистсем хăйсене пулăшма пирěн çынсенченех старостăсем, полицайсем суйласа илеççě тет.

— Ирсěр чунлă сутăнчăксем, предательсем тупăнаççě-ха эппин, — йывăррăн сывласа илчě Рина Петровна. — Анчах эпě çакна ăнланаймастăп: халь нимěçсем патěнче тěрлě старостăсем, полицайсем пулма килěшнисем, вěсем вăрçăччен пирěн çынсемех, совет çыннисемех пулнă-çке-ха, пирěнпе юнашарах пурăннă, пěрле ěçленě, пěрле ěçсе çинě темелле... Мěнле-ха вěсем тăруках тăшман майлă çаврăнма пултарнă?!

— Вěсем ун чухнех чăн-чăн совет çыннисем пулман пуль çав, — терě Улька. — Эп çапла шутлатăп. Тулаш енчен çеç пирěн çынсем пек курăннă вěсем, анчах чěрисенче вěре çěлен ларнă. Кулак йăхěсенчен юлнисем, тěрлě вăрă-хурах таврашěсем пирěн пурнăç йěркисене ытах юратса пурăннă тетěн-им? Вăйěсем çуккипе çеç шарламан вěсем... Халь ак май килчě — хăйсене кӳрентернěшěн «тавăраççě» мар-и! Фашистсен ури тупанěсене çулаканнисем — шăп та çавсем ěнтě вěсем, урăх никам та мар!

— Апла, тен, ку тăрăхра ашкăнса çӳрекенсем те çавăн йышшисемех мар-и?

— Кам пултăр-ха тата? Паллах, çавсем!

— Тытаççě ак вěсене, иртěнме памаççě... — терě Евгени хăй сăмахěсене çирěп ěненсе. — Шпионсене те тытаççě пулать те! Лешсем бандитсем пек мар тěплěн пытанса пурăнаççě те — çавах лекеççě вěт!

— Тытсассăн эп вěсене... ы-ых! пěтěм халăх умěнче çакса вěлерěттěм! — çилěпе чышкине чăмăртарě Улька. — Пурте курччăр, кашни иртен-çӳрен чарăнса тăрса суртăр вěсем çине!

— Алла лексен вěсене никам та каçармě те-ха, мěн тумаллине пěлěç, анчах тытасси тахçан-ха, — терě Рина Петровна.

— Пěтěм халăхпа шырас пулать вěсене, кашкăрсем çине

облава тунӑ пек облавӑсем тӑвас пулать! — хӗрӳленсе сӗнчӗ Евгени.

— Ун пек тума та малтан вӗсем хӑш тӗлерех пытаннине пӗлес пулать-ҫке! — терӗ амӑшӗ. — Пушӑ вӑрмана е никам ҫук ҫырма-ҫатрана пушали кайса ухтар — мӗн усси?

— Эппин, малтан вӗсен йӗрӗ ҫине ӳкмелле... Йытӑсемпе!

— Шыраҫҫӗ пуль-ха, тупаҫҫӗ пуль!

Калаҫу ҫакӑнпа пӗтрӗ. Рина Петровна Улькапа Евгение ырӑ каҫ сунса килне тухса кайрӗ. Эстонецсен ҫемйи паҫӑрах ҫывӑрса кайнӑччӗ ӗнтӗ, — халӗ кун каҫа тимӗрҫ лаҫҫинче ӗшенсе таврӑнакан ватӑ Пауль те часах выртать, — анчах Евгенин ыйхӑ килмерӗ. Пурнӑҫра пулса иртекен пур ӗҫсене те мӑн ҫын пекех чӗре патне илсе вӗсем пирки хӑй тӗллӗн шухӑшлама вӗреннӗскер, кӗҫӗр те вӑл хӑйсем халь кӑна калаҫса ирттернисем ҫинчен вӑрахчен шухӑшласа выртрӗ. Таҫта ҫак тавралах темле путсӗрсем ахаль те хуйхӑллӑ-суйхӑллӑ пурӑнакан ҫынсене кӳрентерни ҫамрӑк ачана ҫав тери тарӑхтарчӗ. Мӗнле хӑрушӑ чунлӑ этемсем пуль вӗсем!

«...Хальхи вӑхӑтра миллионшар ҫын фронтра ҫапӑҫать... Пӗр пирӗн ялтан кӑна алӑ ҫын ытла вӑрҫӑра. Тӑваттӑшӗ пирки вилнӗ хутсем килчӗҫ. Аманнисем вуннӑран иртнӗ. Вӗсем халь госпитальсенче выртаҫҫӗ, сывалса тухсан каллех вӑрҫа каяҫҫӗ. Анчах ҫав вӑхӑтрах кунта такам шуйттанӗсем фашистсене хирӗҫ ҫапӑҫас вырӑнне хамӑр ҫынсене, тӑлӑха юлнӑ ҫемьесене ҫаратса ҫӳреҫҫӗ. Мӑшкӑл вӗт ку, никам тӳсме пултарайман мӑшкӑл!..»

Евгенин ҫав ирсӗрсене халех, ыранах тупса тыттарас килчӗ. Вӗсене хупӑрласа илсе тытнӑ ҫӗре вӑл хӑй те хутшӑннӑ пекех туйрӗ. Хурахсем пурте темле хуп-хура мӑн сухаллӑскерсем, вӗсен чармак куҫӗсем, вӑкӑрӑнни пек, юнпа тулса хӗп-хӗрлӗ пулса кайнӑ, шултра шӑлӗсем малалла тухса тӑраҫҫӗ. Хул пуҫҫиййӗсенчен урлӑ та пирлӗ темле авалхи пӑшалсем ҫакнӑ, пиҫиххисем хыҫне кукӑр авӑрлӑ вӑрӑм пистолетсем чикнӗ, хӑшӗсем юман чукмарсем тытнӑ. Вӗсем вӑрманти уҫланкӑ варрине вут хунӑ та ӑшӑнса лараҫҫӗ пулмалла. Темскер шавлаҫҫӗ, ахӑлтатаҫҫӗ... Акӑ вӑрмантан милицисем йӑтӑнса тухрӗҫ, ҫӗр ҫын та пулӗ. Вӗсемпе пӗрле ахаль ҫынсем те нумай... Евгени те халӑхпа пӗрле, ун аллинче — ашшӗн икӗ кӗпҫеллӗ пӑшалӗ.

— Ур-ра-а! — кӑшкӑрса ярать те тахӑшӗ хурахсем ҫинелле ыткӑнать. Евгени те малалла вӑркӑнать, чупнӑ ҫӗртех пӑшалӗпе кӗрс! кӗрс! тутарать. Хурахсен ӗнтӗ ним тума та ҫук, вӗсен пӑшалӗсене пӑрахса аллисене ҫӗклесси ҫеҫ юлать. Тек вӗҫерноймеҫҫӗ вӗсем! Ашкӑнса, ҫынсене кӳрентерсе ҫӳреймеҫҫӗ! Лекрӗҫ!

Анчах та ку тӗлӗкре кӑна пулчӗ...

## «Пурне те ĕçе кӳлетпĕр»

Кун хыççăн кун... Сисĕнмерĕ те, каникул вăхăчĕ иртсе те кайрĕ. Вăл вуçех те пулман тейĕн!

Ачасем каллех вĕренме пуçларĕç.

Малтанхи куннех, уроксем хыççăн, Рина Петровна вĕренекенсен пухăвне ирттерчĕ. (Шкул директорĕ Васса Павловна чирлĕрех пурăннă пирки кун пек ĕçсене юлашки вăхăтра пĕрмай вăл туса пычĕ.) Питĕ шавлă пулчĕ ку пуху. Малтан Рина Петровна вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнче пурин те тата тăрăшарах вĕренмелли, никамăн та кая юлса пыма юраманни, вĕренӳре пĕр-пĕрне пулăшса пымалли çинчен каларĕ.

— Хамăрăн ĕçсем ăнса пыччăр тесен пире нимрен малтан çирĕп дисциплина кирлĕ, — терĕ вăл. — Пурте пĕлетĕр: эпир халĕ çав тери йывăр вăхăтра пурăнатпăр. Аттесемпе пиччесем фронтра тем тĕрлĕ йывăрлăхсем тӳссе тăшмана епле те пулсан хăвăртрах аркатасшăн çапăçаççĕ. Вĕсем унта пирĕншĕн, пире хӳтĕлесе юн тăкаççĕ. Çакăн пек чух пирĕн уйрăмах ăнланулла, йĕркеллĕ, сăпайлă та ĕçчен пулмалла. Иртĕнсе ашкăнакансем, паян тăвассине ырана хăваракансем вуçех те пулмалла мар. Çакна эсир пурте ăнланатăр пулĕ тетĕп...

— Ăнланатпăр! — илтĕнчĕ унтан та кунтан.

— Ăнланатăр пулсан — питĕ аван, — терĕ Рина Петровна ачасене йăваш куçĕсемпе пăхса çаврăнса. Унтан самантлăха чарăнса тăчĕ те тарăннăн сывласа илчĕ. — Питĕ аван... Анчах пирĕн хушăра çакна ăнланманнисем те пур-ха çав! Хăшĕсем шкулта та, урамра та хăйсене пĕртте пионерла мар тыткалаççĕ. Сăмахран каласан, çак каникул вăхăтĕнче Коля Герасимов мĕн туса хуни çинчен эсир илтнĕ ĕнтĕ?

Пурте шакăрах хыçалалла, Караçăм Колькки ларнă çĕрелле, çаврăнса пăхрĕç. Лешĕ тăрук хĕрелсе кайса пуçне пĕкрĕ — никам çине те пăхма пултараймарĕ.

— Ăна пула пĕр карчăк чут çеç вилсе выртман... Ĕнер çеç ăна больницăран каялла илсе килчĕç. Хăрушă япала ку, ачасем!

Çакăнтан пуçланса кайрĕ те вара. Рина Петровна хăй сăмахне пĕтерсен (хытă ятларĕ вăл Колькăна — пуринчен ытла Маюк карчăк пăрлă çул çине ӳксен ăна пырса пулăшманшăн!) ачасем пĕрин хыççăн тепри хаяррăн калаçрĕç. Никам та Колька майлă пулмарĕ — пурте тиркерĕç ăна, вăл хăй çунашкапа çапса ӳкернĕ карчăк патĕнчен тарса шкул ачи пек мар, пионер пек мар, хулиган пек тунă терĕç. Хурлăха лекнĕ çынна пăрахса хăварма юрать-и вара? Уйрăмах — çав хурлăх санăн хăвăн айăпупа пулнă пулсан!..

Сăмах Палля çине те çаврăнса çитрĕ. Ăна ĕнтĕ вунă хут та асăрхаттарнă, анчах вăл çаплах ашкăнма пăрахмасть-ха. Унăн куккăшне курма пынă каç та вăл çынсем умĕнчех Улюка çупа-çупа янă ав. Улюкăн та ашшĕ фашистсемпе çапăçать, çавăнпа та унăн вăрçă çинчен каласа панисене пушшех илтесси килнĕ ĕнтĕ, анчах Палля ăна тӳсме çук хытă кӳрентернĕ. Арçын ача хĕр ачана çапни ахаль те калама çук киревсĕр япала...

Хăшĕсем Колькăпа Палляна халех шкултан кăларса яма сĕнчĕç. Кун çинчен чăн малтан Аркаш тăрса каларĕ:

— Шкул ятне ярса пурăнаççĕ вĕсем. Пире намăс кăтартаççĕ. Тасалас пулать ун пеккисенчен!

Анчах кунпа килĕшменнисем те пулчĕç. Палля ним айăпсăр кӳрентернĕ Улюках çапла каларĕ:

— Шкултан кăларса яриччен вĕсенчен юлашки хут ыйтас пулать: ашкăнма пăрахаççĕ-и вĕсем, пăрахмаççĕ-и? Тӳрленме шутлаççĕ-и, çук-и? Нивушлĕ вĕсен вĕренмесĕр тăрса юлас килет?

Колькăна çакăн çинчен хăйне калама хушсан вăл автан кикирикки пек хĕрелсе пĕр сăмах та чĕнмесĕр тăчĕ-тăчĕ те лĕр-р... макăрса ячĕ. Палля та чылайччен тарласа, куçĕсене унталла-кунталла çавăркаласа тăчĕ, юлашкинчен çапах та темиçе сăмах каласа хучĕ:

— Урăх никампа та вăрçмастăп. Анчах мана та ан тивччĕр. Хама тивсен çавах хирĕç паратăп...

— Сана никам та тĕкĕнмест, эсĕ ху никамран малтан çапăçма кĕрсе каятăн! — тӳсеймесĕр кăшкăрчĕ Евгени.

— Эп çапăçмастăп, хама хĕнесрен кăна... пăспа хăрататăп, — терĕ те Палля шăлне йĕрсе çамки çинчи тарне çаннипе шăлса илчĕ.

Кун пек калани пурне те култарса ячĕ. Çапах та Рина Петровна вĕсене Колькăпа иккĕшне те тата тепре ал тупанĕпе сĕтел çине шаккасах асăрхаттарчĕ:

— Ан манăр, пĕр вĕçĕмсĕр каçару пулмасть! Тин эсир пĕчĕк ачасем мар ĕнтĕ, каллĕ-маллĕ шухăшлама та вăхăт! Астăвăр!

...Унтан Рина Петровна хальхи вăхăтра пур çĕрте те, пĕтĕм Союзĕпех пионерсемпе шкул ачисем «Тимур командисем» йĕркелени, хăйсен шкулĕнче те çавăн пек команда тусан лайăх пуласси çинчен сăмах пуçларĕ. Çав «командăсем» валли ĕç питĕ нумай: фронтовиксен кил-йышĕсене, чăн малтан ĕçлеме пултаракансем çук çемьесене куллен пулăшас пулать. Сăмахран калас тăк, çав Маюк кинемее пулăшакансем пулнă пулсан вăл нимĕнле хурлăх та курмастчĕ. Анчах ялта ун пеккисем татах та нумай вĕт!

Ачасем пур йышши çĕнĕ пуçарăва та юрataççĕ. «Тимур командиı» тума сĕнни те вĕсене питĕ килĕшрĕ. Вырăссен çав тери

лайăх писателĕ Аркадий Петрович Гайдар çырнă «Тимурпа унăн команди» кĕнекене иртнĕ хĕллех — вăрçă пуçланиччен нумай малтан — классенче пĕрле пухăна-пухăна вуласа паттăр Тимурпа унăн тусĕсене пурте чунтан юратса пăрахнăччĕ. Мĕншĕн тесен вăл ачасем Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе боецĕсен çемйисемшĕн пĕтĕм вăйне хурса тăрăшнă, вĕсене куллен-кун мĕнпе май килнĕ — çавăнпа пулăшса пынă... Маттур пулнă Тимур командинчи ачасем! Ватăсемпе вĕтĕсене киревсĕр çынсенчен хӳтĕленĕ, вĕсем хăйсем тума пултарайман ĕçсене туса панă. Паллах, пурте ырланă вĕсене уншăн, пурте тав тунă...

Ачасем ку сĕнĕве хапăл тусах йышăннипе Рина Петровна ĕçе çак пухурах туса çитерме шутларĕ. Тахçанах каланă вĕт-ха: тимĕре вĕри чух шаккамалла!

— Пирĕн Тимур командин ĕçĕсене куллен йĕркелесе пыма пĕр пилĕк çын уйăрса хăварас пулать, — терĕ вăл. — Штаб тейĕпĕр-и ăна, совет тейĕпĕр-и — пурĕ пĕр. Анчах унта Гайдар кĕнекинчи Тимур пек хăюллă, тӳрĕ кăмăллă, ĕçлеме юратакан ачасем пулччăр. Вĕсен хăйсен пурне те пример кăтартмалла, ыттисене ертсе пыма пĕлмелле. Кама уйăрма кăмăл тăватăр?

Чылай ятсене асăнчĕç ачасем. Рина Петровна вĕсенчен пĕр вуннăшне çырса юлчĕ. Сасăласан вара команда советне пиллĕкмĕш класран Миккăнпа Улюк, улттăмĕшĕнчен Аркашпа Евгени тата белорус ачи Петрусь Дорожка суйланчĕç. Петруçа, Рина Петровна сĕннипе, ятарласах эвакуированнăйсен çемйисемпе çыхăнса тăма кĕртрĕç. Вĕсене пулăшасси те пысăк ĕç пулнă вĕт-ха, вĕсем çинчен пĕртте манма юраман...

Пуху хыççăнах Рина Петровна тин çеç суйланнă совет членĕсене учительсен пӳлĕмне илсе кайса вĕсемпе вăрахчен калаçса ларчĕ. Ĕçе мĕнрен тытăнмалла, мĕнлерех туса пымалла... Çавăнтах Евгение совет председателĕ, Улюка секретарь тума йышăнчĕç. Чăн та, Улюк турткаланса тăчĕ, пултараймăп эпĕ, пăтратса пĕтерĕп тата текелерĕ, анчах юлашкинчен çапах та килĕшрĕ.

— Эпĕ сана, Уля, хулăн тетрадь парăп, эс унта хăвăр мĕнмĕн тунисене тĕплĕн çырса пырăн, — терĕ Рина Петровна. — Дневник пултăр вăл сирĕн. Ним те манса ан хăварăр, пурне те çырса пырăр — хăçан мĕн тунă, кама пулăшнă... Вăрçă пĕтсен, аçăрсемпе пиччĕрсем киле таврăнсан çав дневнике вĕсене те вулаттарма пулĕ: акă курăр, епле пурăннă эпир, мĕн ĕçленĕ, тăшмана çĕнтерме сире мĕнлерех пулăшса пынă... Пĕлсех тăрăр, вĕсем таврăнсан сирĕнтен ун çинчен ыйтаççех-ха акă!

— Юрĕ, Рина Петровна, эпĕ пĕтĕмпех эсир хушнă пек туса пырăп эппин, — терĕ кăштах хăюланнă Улюк. — Аттесене кăтартма намăс пулмĕ!

Киле ачасем хавассăн шăкăлтатса калаçса таврăнчĕç. Хăйсене çакăн пек ĕç шанса пани пурне те çĕклентерсех ячĕ курăнать. Ара, пысăк ĕç вĕт-ха вăл, калама та çук кирлĕ ĕç — фронтовиксен çемйисене пулăшасси! Хальхи вăхăтра фронт валли мĕн кирлине парса тăнинчен тата унта çапăçакансен ашшĕ-амăшĕсемпе ачи-пăчишĕн тăрăшнинчен кирлĕрех ĕç çук та ĕнтĕ! Çав ĕçе йĕркелеме халĕ никама та мар, вĕсене хушнă...

— Çапла, эппин, тусăмсем, — терĕ Евгени вĕсем икĕ урам хĕресленнĕ тĕле çитсе чарăнса тăрсан, — ыран вырсарни кун, шкулта вĕренес çук... Килти ĕçсене пуçтаркаласан, пĕр вунă сехетсем тĕлнелле, пурте ман пата пырăр. Эп унччен фронтовик çемйисен спискине туса хатĕрлĕп. Вара список тăрăх килтен киле çӳрĕпĕр... Кама мĕн кирлĕ, камăн мĕнле нуша — чăн малтан çавна пĕлмелле пирĕн.

— Вара мĕн, вăл пирĕн делегаци пулать-и? — ыйтрĕ Аркаш Евгени çине куçĕсене хĕсерех пăхса.

— Хăвна мĕнле килĕшет — çапла кала, хуть делегаци, хуть демонстраци, анчах та пирĕн пурин патне те çитсе курас пулать. Пыратăр пуль?

— Эп пыратăп, — терĕ Улюк. — Анне ыран кĕпе çумалла тетчĕ те — ăна ĕлкĕрĕпĕр-ха, эпир каçченех çӳрес çук вĕт?

— Вăл хамăртан килет, — терĕ Евгени. — Хăвăртрах пухăнсаваскарах çӳресен пĕр виç сехетрен ытла кирлĕ пулмасть пуль...

— Пыратпăр, кĕтсех тăр! — алсишĕсене хире-хирĕç шап! çапса илчĕ Аркаш. — Халь киле каяр-ха, тӳсме çук хырăм выçрĕ. Атя, Петруç, чупрăмăр!

— Вĕçтерĕр! Ыранччен, эппин...

Тепĕр кунне вара калаçса татăлнă вăхăтра вĕсем пурте Евгенисем патне пухăнчĕç те вăрçăри çынсен килĕсем тăрăх çӳреме тухса кайрĕç. Урамра никамран малтан тĕл пулнă Сар Тимухха вĕсем çине тĕлĕнерех пăхса ыйтмасăр тӳсеймерĕ:

— Ăçтаваскать ку вак халăх? Мĕнле бригада?

— Халăх ĕçĕсемпе çӳретпĕр, — куç хĕссе илчĕ Аркаш.

— Çапла пулĕ ĕнтĕ хальхи ача-пăчан! — кăмăллăн кулкаласа юлчĕ Тимухха. Унтан вĕсен хыçĕнчен кăшкăрчĕ: — Манăн та сирĕнпе халăх ĕçĕпе калаçмалли пур-ха! Шкула пырсах калаçатăп ак!

— Юрĕ, пыр! — терĕ ăна хирĕç Евгени.

...Каçхине, лампа çутса уроксем тума ларсан, Улюк — халь ĕнтĕ Тимур командин секретарĕ — Рина Петровна панă хура хуплашкаллă тетраде уçрĕ те ун çине пуçласа çакăн пек çырса хучĕ:

«...Паян ĕçе тытăнтăмăр, вăрçăри çынсен кил-йышĕсем

мĕнле пурăннипе паллашса çӳрерĕмĕр. Пурĕ тăхăр килте пултăмăр...

Чăн малтан Евгени пире Маюк кинеми патне илсе кĕртрĕ. Карaçăм Колькки çунашкапа çапса ӳкернĕ хыççăн ăна больницăна илсе кайнă та вăл унта эрне ытла выртнă. Унăн сывлăхĕ халь аптрасах каймасть, хăй çапах та выртать-ха, тухтăрсем çапла хушнă тет. Кинĕ вăрман каснă çĕртен таврăнман, çавăнпа та килте никам та çуккипе кинемее Праски инкен аслă хĕрĕ, Варькка почтальон, пăхать, анчах та унăн вăхăт çукрах: кашни кун Çирĕккассинчи почтăна кайса хаçатсемпе çырусем илсе килмелле, унтан вĕсене валеçсе çӳремелле. Вăл хушăра кинеми пĕчченех выртать, шыв ăшăтса паракан та çук. Çавăн пирки ĕнтĕ ырантан пуçласа ун патне хамăрăн хĕр ачасене черетлĕн дежурствăна яма тытăнас терĕмĕр...

Эпир пынă чух пӳрчĕ сивĕччĕ, хутма вутти те, апат пĕçерме шывĕ те çукчĕ. Пирĕн арçын ачасем пĕр наччасра эрне хутмалăх вутă хатĕрлерĕç, эпĕ шыв ăсса килтĕм. Шăп çав вăхăтра Варькка почта салатса таврăнчĕ те васкасах вут хутса ячĕ. Маюк кинеми пире тем пекех тав турĕ, эпир пулăшнăшăн савăннипе унăн куççулĕ те тухрĕ. «Ах, аслă ачасем-çке эсир, ах, ылтăн ачасем, мĕнпе тав тăвам-ши сире куншăн?» — тет. Пире тав тума кирлĕ мар, эпир хальхи вăхăтра пионерсен мĕн тумаллине кăна тăватпăр терĕмĕр ăна. Ыран хĕр ачасемпе пĕрле ун патне каллех кайса пăхатăп-ха. Ытла та кăмăллă карчăк-çке! Хăй вată вăл, çитмĕлсене çитнĕ, апла пулин те колхоз ĕçĕнчен халь те юлмасть. Тырă та вырчĕ кăçал, çĕр улми кăларнă çĕрте те ĕçлерĕ. Пĕррехинче тахăшĕ ăна: «Маюк инке, сана килте ларсан та намăс мар ĕнтĕ, тырри-пуллине сансăрах пуçтарса кĕрткелĕпĕр» тесен вăл ăна хирĕç: «Манăн икĕ ывăл вăрçăра çапăçаççĕ, вĕсем унта выçă пурăнаççĕ-им? Манăн хамăн ывăлăмсем валли çăкăр тăвас пулать», — тесе каларĕ тет... Çавăн пек ырă карчăка чут çеç вĕлерсе пăрахман вĕт эсрел Колькки!..

...Унтан эпир Иливан арăмĕ Ультитти патне кĕтĕмĕр. Ун килĕ ял вĕçĕнче, чăн хĕрринче. Пӳрчĕ пĕчиккĕ, виç çынна çаврăнкаламалăх та çук, анчах ачисем улттă тан, пурте вĕтĕршакăр, иккĕшĕ çеç шкула çӳреççĕ-ха. Чăн пĕчĕк ачисем кăмака çинче курак чĕпписем пек çăварĕсене карса пăхса лараççĕ. Кăмака çумĕнчех пăрушĕ кăкарăнса тăрать, сĕтел айĕнче икĕ ула путек курăнаççĕ.

Хăй пире кăмăллăн йышăнчĕ.

— Килĕрех, килĕрех, ачамсем, — терĕ вăл вăтаннă пек пулса, — анчах малалла иртĕр теме те май çук-ха... Вăрçă тухиччен пӳрт лартса хăвараймарĕ-çке пирĕн ашшĕ, çав хуплать! Пурине те туянсаттăмăр, ултă кĕтеслех тăвасшăнччĕ,

анчах пулса çитеймерĕ... Тем çăмăлпа килтĕр ĕнтĕ эсир? Тем сăмах пурччĕ? Калăр эппин, эп итлетĕп...

Евгени хамăр мĕншĕн пынине каласа пачĕ.

— Э-эй, ачамсем, мана пулăшас тесен пулăшса та пĕтерес çук, — терĕ Ультитти. — Ара, хам нимле йывăр ĕç те тăваймастăп мар-и! Кĕркунне ăнсăртран аслăк çинчен курита пуçне ӳксе хул пуççи шăммине хускатрăм пулмалла та, паян кун та сылтăм алăпа ним те тытаймастăп — тӳсмелле мар ыратать. Салтак арăмĕсене панă вутта та çавăн пиркиех турттарса килеймерĕм, анкартинче акса тунă пăрçана та çапаймарăм — мунча çенĕкĕнче çаплипех выртать, армана та кайса килейместĕп — сăнăх пĕтнипе кӳршĕсенчен кивçене кĕрсе пĕтрĕм ĕнтĕ. Шутсăр кансĕр пурăнатăп! Ачисем ытла та вĕтĕ-çке-ха, пĕри те ĕç патне пыраймасть...

Евгени вăл каланисене пĕтĕмпех çырса пычĕ.

— Пулăшма тăрăшăпăр сана, — терĕ вăл.

— Ара, сирĕн хăвăрăн та аçăрсем çук вĕт, пирĕнни пекех салтакра, хăвăрăн та килĕрсенче ĕç măй таранах пулĕ? — шанмасăртарах хуравларĕ Ультитти.

— Шкулта нумаййăн эпир, — терĕ Евгени, — черетпе ĕçлесе паратпăр, уншăн пăшăрханмалли çук!

Эпир тухса кайма хатĕрлентĕмĕр, анчах Ультитти пире сасартăк тытса чарчĕ: «Чимĕр-ха, кун пек ырă ĕçпе çӳренĕшĕн эп сире пĕрер кучченеç парам хăть!» Çавăнтах вăл тĕп сакайне анчĕ те саппун аркипе тытса темскер илсе тухрĕ. Пан улми иккен, ытармалла мар хĕп-хĕрлĕ аниссем! Эпир илесшĕн марччĕ, анчах та вăл вăйпах кашнине пĕрер пан улми тыттарчĕ... Эп ку тарана çитсе те пĕлмен — питĕ уçă кăмăллă хĕрарăм иккен вăл. Паллах, ун пек çынна пирĕн пулăшасах пулать. Евгени ăна вутă кӳрсе парас пирки Назар Егорччăпа калаçатăп терĕ, пăрçине хамăрах çапса паратпăр, ытти ĕçсем пирки кунта та дежурство тăвас пулать ĕнтĕ. Унсăр май килмест...

...Кун хыççăн Маркка Петĕрĕ патĕнче пултăмăр. Вăл — пĕччен пурăнакан ват старик. Карчăкĕ улт-çичĕ çул каяллах вилнĕ те, вăл икĕ ывăлĕпе çеç тăрса юлнă. Анчах халĕ ывăлĕсем те çук. Асли 1940 çулхи хĕлле Финлянди вăрçинче пĕтнĕ. Кĕçĕн ывăлĕ Шашшук — вăл командир, пĕлтĕр яла килсе кайрĕ — çĕршыв чиккине сыхланă, анчах вăрçă пуçланнăранпа пĕр çыру та яман. Ăна пурте вилнĕ пуль теççĕ. Пĕр сăмахпа, старикĕн никам та юлман. Хăй каçсерен ялти лавккана хураллать, кăнтăрла вара ниçтах та тухмасть.

Эпир пырса кĕнĕ чух вăл кăмака кукринче паранкă шуратса ларатчĕ — апат пĕçерме тытăннă пулмалла. Алăкран кĕрсенех сăмсана питĕ йывăр шăрш пырса çапрĕ. Пӳрт ăш-чиккине

тахçантанпах тасатман, уçăлтарман пулмалла, сывлăшĕ пăчăх-сах çитнĕ. Ăçталла ан пăх — пур çĕрте те çӳп-çап, пӳрне хулăнăш тусан. Урайне ĕнтĕ çур çул ытла çуман пуль. Пăхмалла мар!.. Анчах пӳрчĕ лайăх, çĕнĕпе пĕрех-ха, ăна ывăлĕсемпе пĕрле ĕçлесе карчăкĕ вилес умĕн çеç лартрĕ — эп те астăватăп. Хĕрарăмсăр кил-çурт йĕркерен тухса каять çав!

Старик эпир çакăн пек тĕркĕлтипе пырса кĕнинчен тĕлĕнсех кайрĕ. Мана чĕнме килтĕр-и тесе çурри шуратнă паранкине пăрахрĕ те каска пуканĕ çинчен тăчĕ. Евгенин каллех ăнлантарса памалла пулчĕ хамăр мĕншĕн çакăн пек çӳренине.

— Çук, çук, мана никам пулăшни те кирлĕ мар, эпĕ поккутă хамах майлашкаласа пурăнатăп-ха, — ал сулчĕ ăна хирĕç Маркка Петĕрĕ. — Кун пек вăхăтра çынна мĕнле чăрмантаратăн? Никама та çăмăл мар... Кашнин хăйĕн хуйхи!

Анчах эпир ăна çапах та шута илтĕмĕр: старик патĕнче субботник тусах ун пӳрт-çуртне пĕрре лайăх кăна тасатса парас пулать. Тен, унăн улăштарса тăхăнма таса кĕпи те çук? Ку ĕнтĕ пирĕн, хĕр ачасен, ĕçĕ, ăна эпир хамăр çине илетпĕр.

Йĕркипех çӳрерĕмĕр çапла. Пулăшмалли кил-йышсем татах та пур. Пирĕн команда валли ĕç ытлашшипех. Анчах ӳркенмесен пурне те тума пулать. Ыран кусем çинчен Рина Петровнăна каласа паратпăр та пурне те ĕçе кӳлетпĕр...

## Ырă ят.
## Кукамăшĕ патĕнче

Шкул ачисем çакăн пек усăллă ĕç тума тытăнни çинчен пĕлсен вĕсене пурте чунтанах ырларĕç. Колхоз председателĕ Назар Егорччă правленире тӳрех каларĕ тет:

— Тĕлĕнмелле ăслă хальхи ача-пăча. Питĕ шанчăклă йăх ӳсет! Кусем нихçан та пурнăçа юхăнтарса ярас çук...

Сар Тимухха çакна итлесе тăнă та хăй шухăшне хушса хунă:

— Ачисем чăн та маттур ĕнтĕ... Колхоза кăçал тем териех пулăшрĕç. Халь те ĕçлеççĕ. Анчах манăн вĕсене тата тепĕр ĕç сĕнсе пăхас шутăм пур-ха...

— Мĕнле ĕç? — ыйтнă председатель.

— Акă кур-ха... — Сар Тимухха кĕрĕк кĕсйинчен хаçат туртса кăларса ун умне сарса хунă. — Вула-ха ак çакна... Унта Кольцовкăри колхоз ачисем çамрăк выльăхсене шефа илни çинчен çырнă. Арçын ачисем тихасене пăхаççĕ тет, хĕр ачисем — пăрусене... Шутсăр тăрăшса ӳстереççĕ имĕш. Çавăн пек тума пирĕн те май пур-ха вĕт? Ан тив, ĕçлеччĕр... Атту тăк фермăра та, конюшнинче те çын çитмест, шалт аптрамалла!

Назар Егорчча кăштах шухăша кайса тăнă, унтан килĕшнĕ:

— Вăйпа хушаймастпăр, анчах ачисем хăйсем кăмăл тусан — пăхчăр ара! Сиенĕ пулас çук, усси пулма та пултарĕ...

— Эп те çавнах калатăп çав! — сĕтел çине шап! çапса илнĕ Сар Тимухха. — Тихасемпе пăрусене уйрăм-уйрăммăн çирĕплетсе парсан каçса кайсах пăхма тытăнаççĕ акă!

Стариксем йăнăшман. Ачасене ку сĕнӳ калама та çук килĕшрĕ. Вĕсем пĕр наччасрах икĕ звено туса хучĕç: пĕри, арçын ачасен звени, тихасем пăхать, хĕр ачасен звени пăрусем ӳстерет...

Çавăнтан вара лаша витинчен те, ĕне ферминчен те ачапăча татăлма пĕлмерĕ, унта та, кунта та ирĕн-каçăн вĕсен сасси янрарĕ. Тихасемпе тынашкасене ачасем хăйсене килĕшекен ятсем парса тултарчĕç: Самолет, Пулемет, Ăмăрткайăк, Сокол, Çилçунат (кусем — тихасем), Роза, Мăкăнь, Чĕкеç (кусем, паллах, тынашкасем), унтан вĕсене пĕр-пĕринпе ăмăртсах пăхма тытăнчĕç. Камăн пăрушĕ хăвăртрах çитĕнĕ? Камăн тихи мăнтăртарах (çăмарта пек!) пулĕ?

Çак ĕçе туса пынă чух кӳренмеллисем те, кулмаллисем те пулкаларĕç. Хăшĕсем хăйсен çамрăк тусĕсене ыттисенчен лайăхрах ӳстерес тесе çитермеллисене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн килĕсенчен йăтма тытăннă иккен. Пĕри сĕлĕ, тепри пиçнĕ паранкă, апат юлашки илсе кайнă. Анчах хăшĕсен амăшĕсем çакна сиснĕ те ачисене хăйсем пĕлнĕ пек тăн панă...

Никамран малтан ку тĕлĕшпе Аркаша лекнĕ терĕç. Вăл хăйĕн тимĕр кăвак Соколĕ валли темиçе хут та пĕчĕк хутаçпа кĕлетри пураран сĕлĕ тултарса кайнă-мĕн. Çавна пĕррехинче унăн шăллĕ курнă та амăшне каласа панă. Аркаш туннă, эп пĕр пĕрчĕ те илмен тенĕ, анчах пĕр-ик кунтан амăшĕ ăна кĕлетрен хутаçпа тухнă чух тытнă та çавăнтах çурăмĕ тăрăх кив урхалăхпа темиçе хутчен çунтарса илнĕ.

Ыттисене те леккеленĕ тет çавăн пек...

Çапах та ачасен ĕçĕ чăн-чăнах усăллă пулни ик-виç эрнеренех палăрма пуçларĕ. Малтан ĕшенсе çитнĕ ват лашасем пек салху, пуçĕсене пĕксе çӳрекен тихасем хавассăн та янравлăн кĕçенме, картишĕнче тĕпĕрти-тĕпĕрти чупма, вылями пуçларĕç, пăрусем те сисĕнмеллех тасалса кайрĕç. Ун пирки Сар Тимухха Назар Егорччăна çав тери тулли кăмăлпа пĕлтерчĕ:

— Тĕрĕс турăмăр эпир санпа ачасене çак ĕçе шанса парса! Лайăх ĕçлеççĕ, ним те калаймăн! Хаçата çырса паратăпах кун çинчен, пурте пĕлччĕр пирĕн ачасем мĕнлине...

— Яра пар ара, мухтан, эсĕ вĕт эп астăвассах мухтанчăк, — кулса илчĕ ăна хирĕç ватă председатель. — Сан аçуна та ялта Вĕçкĕн Ваçça тетчĕç...

— Мухтанса мар, ара, тĕрĕссине кăна... — тӳрре тухма тăрăшрĕ Тимухха.

— Çыр, çыр! Анчах ылашши суйса ан тултар. Хаçат тени суйнине юратмасть.

...Тепĕр эрнерен район хаçатĕнче чăн та «Çĕнĕ саманари» ачасем çамрăк выльăхсене чунтан тăрăшса пăхса ӳстерни çинчен пĕчĕк кăна статья тухрĕ. Унта чылай ачасен ячĕсене те асăннăччĕ. Статья айне «Т. Рыжов, колхоз бригадирĕ» тесе çырнă...

Çав тери савăнчĕç ачасем уншăн! Ара, епле савăнмастăнха! Вĕсем халь пĕтĕм район умĕнче ырă ятлă пулчĕç вĕт!

Анчах ачасем çакăн пек хавасланнă кунсенчех сасартăк калама çук тĕлĕнмелле те хăрушă ĕçсем пулса иртрĕç.

Хĕвел кулленех çӳлтен çӳле хăпарса пынă май, çĕр çине ăшăраххăн пăхса, кăнтăрласенче пӳрт-çурт тăррисенчен пирвайхи тумламсем ӳкерме тытăннă кунсенче Евгенисен ĕни пăруларĕ. Ял çыннишĕн ĕне пăрулани — уяв пекех вăл. Халь ĕнтĕ кил-йыш валли сĕчĕ-çăвĕ те, турăхĕ-чăкăчĕ те пулать. Пуринчен ытла кил-йышра ача-пăча пулсан лайăх вăл! Çавăнпа та ĕне пăруласан çынсем тус-тăванĕсене те чĕнеççĕ, вĕсене ĕне ыррипе хăналаççĕ. Ĕмĕртен пыракан йăли çапла пирĕн енчи чăвашсен.

Улька хăна-мĕн пухас темерĕ, анчах кайри пӳртре ула тынашка пурăнма пуçласан виç-тăват кунтан Евгение çапла каларĕ:

— Паян шкултан таврăнсан кукамусем патне вĕçтер-ха эсĕ, илсе кил ăна ĕне ырри çиме. Хăйне те курас килекен пулса çитрĕ. Пĕр эрне те пулин пурăнса кайтăр...

— Юрать, анне, унта кайса килесси маншăн ним те мар, — терĕ Евгени. — Юлашки урокра лармасан та пултаратăп — физкультура пулать, уншăн хăрамастăп...

— Ку тата лайăх, иртерех кайсан хăвăртрах çаврăнса килетĕн. Анчах урокĕнчен учительрен ыйтмасăр пăрахса ан кил, асту, — вĕрентрĕ амăшĕ.

— Юрĕ.

Кукамăшĕсем патне кайса килесси çинчен Евгени тахçанах шухăшласа пурăнатчĕ, — кĕркунне Ильинкăна эвакуированнăйсем илме кайсан та кĕрсе тухаймарĕ-çке вăл унта, — çавăнпа та паян амăшĕ хушни ăна чăннипех хĕпĕртеттерчĕ. Тинех Петюк куккăшĕ фронтран илсе килнĕ нимĕç япалисене курать ĕнтĕ вăл! Вĕсене куккăшĕ пĕркуннех парса ярасшăнччĕ — спектакльсем лартнă чух кирлĕ пулĕ тенĕччĕ. Халь илсе килетех вĕсене Евгени, юлташĕсене кăтартса тĕлĕнтерет!

Килтен вăл шăп кăнтăрла тухса кайрĕ те лашине çул çинче

уçăрах чуптарнипе икĕ сехетрен Ильинкăна çитсе кукамăшĕсен хапхи умне пырса тăчĕ. Никамран малтан ăна Хураçка — пĕчĕкçеç çăмламас хура йытă — кĕтсе илчĕ: хапха айĕнчен пуçне кăларчĕ те тарăхнипе çурăлса каяс пек вĕрме тытăнчĕ. Йытă çĕтĕлнине илтсе кукамăшĕ — çӳллĕ, сарлака хул пуççиллĕ, тăваткалтарах хура сăн-питлĕ хĕрарăм — чупса тухрĕ, пĕчĕк хапхаран Евгени кĕрсе тăнине курсан савăннипе аллисене хире-хирĕç шартах çапрĕ:

— Эсĕ-и ку, ывăлăм?! Ай-уй, мĕнле килме пĕлтĕнех? Эп сире ман çинчен пуçĕпех мантăр пуль тенĕччĕ ĕнтĕ! Хăçантанпа курман, тур çырлах... Атя, кĕрт лашине, тăварса лупас айне тăрат.

— Тăварса тăмастăп, кукамай, вăхăт çук!

Евгени хăй мĕншĕн килнине каласа пачĕ.

— Каç пуличчен пирĕн каялла таврăнас пулать.

Кукамăшĕ хыпăнсах ӳкрĕ:

— Ай-уй, ара, мĕнле пулса тухать-ха капла? Сирĕн пата пуш алăпа пыраймастăп ĕнтĕ эпĕ! Мĕн те пулин пĕçерес пулать. Хуран кукли те пулин çупам-ха эппин!

— Ан чăрман, кукамай, нимĕн те кирлĕ мар, халлĕхе çимелли хамăрăн та тем те пур! — терĕ Евгени ним калама аптăраса.

— Уй, ачам, чипер калаç-ха эсĕ! — ун çине тĕлĕннĕ пек пăхрĕ кукамăшĕ. — Хăçантанпа курман пулать те, кучченеçсĕр пыратăп-и вара? Хуран кукли пĕр наччасрах пулать вĕт вăл! Чĕрес ăшне хурса çиелтен лайăхрах чĕркетпĕр те, сирĕн пата çитиччен сивĕнме те ĕлкĕреймĕ...

Карчăк йăпăр-япăр тулти чăлантан кункăрапа çăнăх илсе кĕртсе чуста çăрма тытăнчĕ. Хăй пĕрмай ыйтса пĕлчĕ:

— Мĕнле пурăнкалатăр эсир унта, ачам?

— Чиперех-ха...

— Вакуированнăйсене усратăр терĕç. Халь те пурăнаççĕ-и?

— Вăрçă пĕтиччен ăçта кайччăр ĕнтĕ вĕсем? Пит лайăх пурăнатпăр. Пĕр çемье пекех. Çыннисем кăмăллă.

— Вĕсене те шеллемелле çав. Пирĕн ялта та темиçе çемье пур та, çавăнтан пĕлетĕп. Пĕрисен тăвата ача, питĕ тертленеççĕ. Амăшĕ чирлĕ. Пăхсан куççулĕ тухать. Эп вара час-часах вĕсене кăшт-кашт кучченеçсем кайса паркалатăп... Çĕр çăтман вăрçи! Мĕн чухлĕ халăх пĕтет, мĕн чухлĕ асапланать тата... Сирĕн ялта та «вилĕм хучĕсем» килеççĕ пуль?

— Килеççĕ çав... Аманнисем те нумай.

— Аçу çырать-и? Сывах-и?

— Пĕр-икĕ эрне каялла сывахчĕ-ха. Халь çине çырман.

— Малашне те чипер сывă пулмалла пултăрччĕ! Эй, туртур... Вăрçин вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть вĕт-ха! — Кукамăшĕ ассăн сывласа илсе тăрăшсах чуста çăрчĕ.

— Кукка ăçта? — ыйтрĕ Евгени.

— Советра! Ăçта пултăр ĕнтĕ вăл тата? Кунĕн-çĕрĕн çавăнта. Пин тĕрлĕ ĕç те тупăнать ăна валли. Вĕшле пекех чупать.

— Манăн унпа калаçмалли пурччĕ те...

— Тен, килет пулĕ-ха, кăнтăрлахи çиме килсе каяканччĕ. Анчах тепĕр чух кунĕпех выçă çӳрет. Начарлансах кайрĕ ĕнтĕ!

Кукамăшĕ çапла каларĕ кăна — тулта Хураçка вĕрни, унтан хапха шашулкки чанклатни илтĕнчĕ.

— Ак çылăхсăр çын, çитрĕ те пулмалла! Пăх-ха, кукку мар-и?

— Çавă, — терĕ Евгени хĕпĕртесе.

Тепĕр самантранах куккăшĕ крыльца картлашкисем тăрăх чупса хăпарса пӳрте кĕрсе тăчĕ. Çăлтăрлă салтак çĕлĕкĕпе, ваткăллă фуфайкăпа, симĕс галифе йĕмпе, атăпа. Сулахай аякĕ çинче кивелнĕ полевой сумка. Чăн-чăн салтаках ĕнтĕ, халь тесен халь строя тăмалла, хăрах алли çеç çитмест ăна. Пушă çаннине пиçиххи айне чиксе çыхнă.

— О-о, пирĕн герой çитсе ларнă-çке! — терĕ вăл яланхи пекех хавассăн Евгение сулахай аллине парса. — Мĕнлерех чупатăн... Рыбаков юлташ?

— Аван-ха, — терĕ Евгени, темшĕн — те хăйне «Рыбаков юлташ» тенĕшĕн — тăрук хĕрелсе кайса. — Кукамая хамăр пата чĕнме килтĕм. Ĕне ырри çиме...

— Ĕне ырри? Питĕ лайăх япала! Пĕчĕк чух эпир ĕне ырри пĕçерессе мункуна кĕтнĕ пекех кĕтеттĕмĕр...

Вăл тумтирне хывса сĕтел пуçне ларчĕ те хăрах аллипех чикаркка чĕркеме тытăнчĕ. Евгени çавăнтах Палля хăйĕн аманнă куккăшне чикаркка пит ăста туса панине аса илчĕ, тахăш самантра унăн та куккăшне чĕркесе парас шут çуралчĕ, анчах сĕнме именчĕ — хăйне чĕлĕм туртма вĕреннĕ тесе каласран хăрарĕ.

— Махмут Иванĕ аманса килнĕ, анне, — терĕ куккăшĕ чăлан еннелле пăхса. — Халь çеç кĕрсе калаçса тухрăм.

— Пуçĕпех килнĕ-и? — ыйтрĕ амăшĕ.

— Çук, виçĕ уйăхлăха çеç янă. Сулахай хул шăммине çĕмĕрнĕ унне, анчах хăрушах мар, тӳрленме пултарать.

— Кайран каллех каймалла пулать-и вара?

— Тӳрленсен каять. Ун аллине ман пек татса ывăтман вĕт.

— Эп хам пулсан пĕрре аманнă çынна вăрçа урăх вуçех те ямăттăм. Пулманнисем кайса курччăр. Хулана кайсан куртăм эпĕ — таккуйски ăйăрсем шăл йĕрсе çӳреççĕ, вăрçăра пулма мар, пăшал пенине те илтмен пуль! Çавсене пухса ярас пулать...

— Хăшĕсене ятарласа тылра хăварнă, анне, фронт валли хĕç-пăшал, тĕрлĕ машинсем тума... Унсăр та май килместçке-ха. Анчах кашни аманнă çынна киле пуçĕпех ярсан çапă-

çаканни кам пулĕ? Çарта халĕ кашни виççĕмĕш çын аманнă ĕнтĕ.

— Пирĕн яла та пĕр уйăх каялла вăрçăра аманнă çын пырса кайрĕ, — калаçăва хутшăнчĕ Евгени.

— Хăвăр ялсемех-и? Кам тавраш? — ыйтрĕ кукамăшĕ.

— Çук, Хыркассисем, леш енчи Хĕрлĕ Мари шăллĕ. Акăшĕ патне пырса темиçе кун пурăнчĕ. Сулахай аллине амантнă. Эп те кайса куртăм, хăй çинчен каласа панине итлерĕм. Анчах темле... ытлашширех мухтаннă пек туйăнчĕ. Нимĕçсен танкĕсене те пĕтернĕ вăл, салтакĕсене те чиксĕр нумай çулса тăкнă.

— Хăш-пĕр чăвашсен мухтанас йăла пур çав, ĕçне пĕр пуслăх тăваççĕ — сăмахне пĕр тенкĕлĕх каласа тултараççĕ, — кулса илчĕ куккăшĕ. — Уйрăмах кăшт «вутлă шыв» çăтсан тапранса каяççĕ те — чарăнма та пĕлмеççĕ вара.

— Ку та тăвата кун хушшинче пĕртте урăлмарĕ тет. Акăшĕ пĕр вĕçĕм сăмакунпа хăтланать те — май килнĕ ăна. Илтеттĕмĕр — кашни каç урама тухса çухăратчĕ: «Эп фронтовик, халăхшăн юн тăкнă! Ма ĕçес мар манăн?» — тетчĕ. Унтан темшĕн ялан тĕрме юррисене юрлатчĕ...

— Ун пек карма çăварсем те сахал мар. Суранĕсем кушак чавнă пек кăна пулнă пулсан та: «За што кровь проливали?!» — тесе çуйăхаççĕ. Куркаланă эпир унашкал паттăрсене...

— Çынсем тĕрлĕрен пулаççĕ çав, — терĕ кукамăшĕ кăмака кукринчен. — Тата кашни хăйне майлă ухмаха ерет!

Вăл сĕтел çине пысăк шуç чашăкпа пăсланакан аш яшки илсе пырса лартрĕ.

— Çийĕр-ха, ачасем, эп часрах хуран кукли туса пĕтерем...

Пĕр хушă нихăшĕ те чĕнмерĕ — калаçма майĕ те пулмарĕ, çуллă вĕри яшка тута хĕррисене пĕçертрĕ, кашăк çине пĕрмай вĕрмелле пулчĕ. Кăшт тăхтасан вара сăмаха Евгени пуçларĕ:

— Кукка, — терĕ вăл, — хальхи вăхăтра дезертирсем пулма пултараççĕ-и? Ну, вăрçăран таракансем, эппин. Вăрçа каяссинчен пытанса юлакансем... Пулма пултараççĕ-и, çук-и?

— Ма ыйтатăн эс кун çинчен? — çиме пăрахса ун çине чăр-р пăхрĕ куккăшĕ.

— Ахалех... Пуçа çавăн пек шухăш пырса кĕчĕ те... — кăштах хĕрелсе илчĕ Евгени.

— Çук-ха, ахаль ыйтмастăн эсĕ, суйса ан лар! — терĕ куккăшĕ. — Темле сăлтав пурах санăн...

— Пĕркун хамăрăн учительницăпа калаçса лартăмăр, çав аса килчĕ, — тĕрĕссине каласа пачĕ Евгени.

— Мĕн пирки калаçрăр?

— Ара, унта та кунта çынсене тапăнса çаратни çинчен сăмах çӳрет те... Çав вăрă-хурахсем вăрçа каяссинчен тарса çӳрекен-

сем пуль терĕмĕр. Тепĕр енчен ку чухне дезертирсем пулма пултарассине те ĕненес килмест...

Куккăшĕ темиçе самант чĕнмесĕр ларнă хыççăн хуллен кăна ответ пачĕ:

— Тĕрĕс шухăшланă эсир. Ирсĕр чунлă этемсем пĕтмен-ха çав пирĕн. Дезертирсем те пур, Тăван çĕршыва сутакансем те. Çынсене çаратакансем те — çавсемех. Кашкăрсем пек таçта пытанса çӳреççĕ-çӳреççĕ те тăрук сиксе тухса сиен кӳреççĕ.

— Камсем, мĕнле çынсем-ха вĕсем, кукка?

— Тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Тĕрмере ларса тухнисем, кулак тавраш̆ĕсен юлашкисем...

— Рина Петровнăпа анне те çапла каларĕç çав. Чипер йĕркеллĕ совет çынни вăрçăран та тарас çук, хурах та пулас çук. Çапла вĕт?

— Тĕрĕс. Чăн-чăн совет çыннин халь пĕртен-пĕр ĕмĕт — тăшман пилĕкне çапса хуçасси. Пурте çавăн çинчен шутлатпăр, çавăншăн тăрăшатпăр. Пирĕн тăшмана часрах çĕнтерсе каллех телейлĕ пурнăçпа пурăнас килет. Анчах кусемшĕн пулсан — хăйсен тирĕпе карланки çеç хаклă. Вăрçăран епле те пулсан пăрăнса юлас — унта вĕлерме пултараççĕ, ĕçме-çиме — çынсенне туртса илес, çаратас. Пĕр сăмахпа каласан — тискер кайăксем! Нумай мар вĕсем, тен, çĕр пинре пĕрре пулĕ, çапах та пур-ха. Анчах ĕмĕрĕ кĕске вĕсен, халăх вĕсене пурĕ пĕр усал кăпшанкăна таптанă пек таптаса тăкать.

— Юлашки вăхăтра илтĕнсех каймасть пулас та-ха ун пеккисем çинчен?

— Халь çинех илтмен. Тен, хальччен тытрĕç те пуль вĕсене.

Евгени çисе тăранса сĕтел хушшинчен тухрĕ.

— Кукамай, пирĕн кайма вăхăт, каçчен киле çитесчĕ, — терĕ вăл чӳречерен тулалла пăхса.

— Халех, халех, ачам. Куклисене хурана ятăм ĕнтĕ, наччас пиçет! — сас пачĕ чăланта тăрмашакан карчăк.

Унтан Евгени куккăшĕнчен ыйтрĕ:

— Эс мана пĕркун темле нимĕç япалисем çинчен каласаттăн, астăватăн-и? Вĕсем хăвна кирлĕ мар пулсан...

— Э, чăнах та-çке! — ик пӳрнипе шаклаттарса илчĕ куккăшĕ: — Ун çинчен эпĕ мансах кайнă, хăямат! Илсе кай, илсе кай, мана вĕсем ним тума та кирлĕ мар, сире хуть спектакльсем лартма юрĕç!

Вăл хăвăрт кăна çенĕке тухрĕ те минутранах салтаксен симĕс кутамккине çĕклесе кĕчĕ.

— Акă вĕсем, суйласа ил хăвна мĕн кирлĕ пеккине!

Чăн малтан куккăшĕ михĕрен нимĕçсен хура сăрпа сăрланă хурçă калпакне — каска — туртса кăларчĕ.

— Кур, епле шаплаттарнă! — Каскăна шăп çамка тĕлĕнчен

персе шăтарнă иккен. — Лайăх лектернĕ вĕт? Витĕрех тухса кайнă!

— Пульăпа шăтарнă-и вара ăна? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Евгени.

— Панкрапа персе мар ĕнтĕ, — кулса илчĕ куккăшĕ.

Ун хыççăн михĕрен лутăрканса пĕтнĕ икĕ нимĕç пилотки, пĕр китель (салтак пиншакĕ), йывăç çулçисем евĕр арăшпирĕш ўкерчĕксем туса тултарнă маскировочнăй халат, чăн юлашкинчен икĕ «тимĕр хĕрес» — фашистсен чи хаклă орденĕ — тухса выртрĕç.

— Пуçтарса чик, — терĕ куккăшĕ. Анчах Евгени иккĕленнĕ пекрех пулса тăчĕ:

— Пиншакне тăхăнма пулать-иç? Ăна хăв валли...

— Ан лăпăртат! — каласа пĕтерме памарĕ ăна куккăшĕ. — Фашист тирне хам çие хума ухмахах ермен-ха эпĕ! Манăн ку япаласем çине куçпа пăхсан та ăш лĕкленсе килет.

— Юрĕ эппин. Эс калашле, спектакль лартма аван пулать. Чăн-чăн нимĕç тумне курасшăнах тем чухлĕ халăх пухăнĕ...

— Яра пар, яра пар! Тĕлĕнтер хăвăр ял çыннисене!

Тепĕр çур сехетрен Евгени çул çине кайма хатĕрленсе лашине хапха патне çавăрса пырса тăратрĕ. Кукамăшĕ çуна пуçне кив кĕрĕкпе чĕркенĕ чĕрес лартрĕ — унта вăл вĕри хуран кукли тултарнă, юнашарах шуç бидон вырнаçтарчĕ — кунта çурри таран çав тери ырă шăршлă пыл, çавăнтах хура кĕркунне çĕртен пуçтарнă сап-сар мăйăр тултарнă кив кĕпе çанни те вырăн тупрĕ. Чылайранпа курман аслă хĕрĕпе унăн ачисене лайăхрах хăналаса савăнтарас килнĕ ĕнтĕ ват çыннăн!

Кукамăшĕпе Евгени питĕ меллĕн вырнаççа ларчĕç, халь хапха уçмалла та тухса каймалла çеçчĕ — çав вăхăтра Евгени куккăшĕ тем аса илсе кăшкăрсах ячĕ:

— Чимĕр-ха, тăхтăр! Манăн тепĕр кучченеç пур!

— Мĕн тата? — кăмăлсăр пăхса илчĕ ун çине карчăк.

— Кĕлетре эпир пĕркун тытнă чĕр пулă выртать, çавна илсе кайăр! Кăçал вĕсем швежи пулă тутанса та курман пуль-ха.

— Кирлĕ мар, кукка, ахаль те тем те пĕр тултарчĕ ĕнтĕ кукамай, — именнĕ пек пулчĕ Евгени.

— Аптрамасть, йывăр япала мар, хурса каятăн! Хăвăр патри эвакуированнăйсем те тутанса пăхчăр Атăл пуллине. Хамăра валли эпир живă-два тытма пултаратпăр, Атăлĕ пирĕн хамăрăн...

Çапла пĕр чарăнмасăр калаçнă маях куккăшĕ кив хутаç ăшне шăннă пулă тултарса çуна пуçне пырса пăрахрĕ.

— Ну, халь ĕнтĕ кайма та пултаратăр! — Вăл мăн хапхана яриех уçса ячĕ. — Чипер çитĕр, упа тĕлне ан пулăр! — çавăнтах кулса илчĕ вăл.

— Сыв пул, кукка, май килсен пирĕн пата пырса кур!

# Хăрушă тĕл пулу

Тепĕр вунă минутран вĕсем ялтан тухрĕç. Уйра паçăрхи пек мар, самаях сивĕ иккен, хĕвел тухăçĕ енчен хирĕçле çил вĕрет, пит-куçа чĕпĕтет. Уйĕ сарлака, тӳрем, таçта çитиех шап-шурă тикĕс юр сарăлса выртать, ниçта пĕр хӳтлĕх те çук. Евгени хăйсен çурăмĕ хыçĕнчи хĕвел çине çаврăнса пăхрĕ — вăл Атăл леш енчи вăрман хыçне пулсанах хăвăрт тĕттĕмлене пуçлать, каç пулать. Çулĕ çывăхах мар, васкамалла.

Евгени тилхепине кăрт-карт туртса лашана хытăрах чуптарма тытăнчĕ, çулăн икĕ енĕпе лартса тухнă чăрăш лăссисем — маяксем, куç умĕнче вĕлт те вĕлт туса, хăйсемех каялла шунă пек курăнса, хыçа юлаççĕ. Кун пек кайсан тепĕр сехет çурă-иккĕрен киле те çитме пулать пулĕ.

Йĕри-тавралла пăхса пырса Евгени хăй темиçе уйăх каялла, хура кĕркунне, çак çулпах эстонецсене лартса килнине аса илчĕ. Ун чух тин юр çума тытăннăччĕ-ха, шăн çĕр çийĕн урапа кустăрмисем сиккелесе, халтăртатса пыратчĕç. Çакăн пекех хирĕçле çил вĕретчĕ, ватă Пауль утиялпа чĕркенĕ мăнукне чĕрçи çинче тытса пыратчĕ. Ун чухне вĕсем Евгенишĕн пачах та ют çынсемччĕ, вăл Пауль Оскаровичпа сăмах хушма та аран-аран хăюлăх çитерпĕччĕ, анчах халь акă вĕсем тăвансем пекех пулса тăчĕç. Пĕр хурантан, пĕр çемье пек, çисе пурăнаççĕ. Çыннисем чăнах та лайăх ĕнтĕ, тĕлĕнмелле ырă кăмăллă... Шутсăр ĕçчен тата! Вăрçă пĕтсен вĕсемпе уйрăлма та йывăр пулать пуль. Анчах ун чухне вĕсем каяççех ĕнтĕ, кунта пурăнас çук, кашни çын чĕри хăй çуралса ӳснĕ çĕршыва туртать. Евгени хăй те унăн çак эстонецсем пек таçта аякка кайса пурăнмалла пулнă пулсан тăван ялнех таврăнмалла çав...

Çул кăштах тăвалла хăпара пуçларĕ, малта вăрман курăнса кайрĕ. Ытти чухнехи пек хура тĕслĕ мар, темле кăвакраххăн курăнать вăл — йывăççене пас тытса лартнă пирки пулмалла. Евгенисен çав вăрман урлă пĕр тăватă çухрăм каймалла; малтан çамрăкрах вăрман пулать, ăна «хунав вăрманĕ» теççĕ, леререхре пĕлĕтех тăрăннă пек курăнакан хутăш вăрман пуçланса каять. Унта кăнтăрла та тĕттĕмрех, уяр çанталăкра та çĕре хĕвел ӳкмест. Чăн та сăвăри пекех: «Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман...»

Сасартăк Евгени чĕри кăрт-кăрт тапса пăчăртанса илчĕ: ăна паçăр куккăшĕпе иккĕшĕ çынсене кĕтмен çĕртен тапăнакан вăрă-хурахсем çинчен калаçни аса килчĕ. Çав ирсĕрсем шăпах çакăн пек вăрмансенче çаратаççĕ вĕт-ха. Ăнсăртран çак вăрманта вĕсене те кам та пулин тапăнсан мĕн тăвас? Таврара никам та çук, пыру çурăлса кайиччен хурах кăшкăрсан та усси

пулмасть... Тытĕç те кукамăшĕпе иккĕшне те çапса пăрахĕç, унтан вĕсен тумтирĕсене сĕвсе илсе хăйсен лашипех таçталла тарĕç. Пулнă тет вĕт ун пекки... Пĕрре кăна та мар пулнă тет...

Вăрман кашни самантрах çывхарса килчĕ. Акă пĕр ик çĕр метр та юлмарĕ пулĕ. Лаша вăрăммăн ярса пусса юртать, çуна тупанĕсем айĕнчи юр пĕр майлă кăчăртатса пырать.

«Мăн вăрманне кĕрсенех лашана сиккипе яратăп, ыткăнса пыракан лашана никам та тытса чараймасть... — пăлханса шухăшларĕ Евгени. — Кам та пулин çула картлама тăрсан ăна таптаса хăварма та пулать...»

Çул тăршшĕпех ним чĕнмесĕр ларса килекен кукамăшне вăл хăй пăшăрханса пынине палăртмарĕ, мĕн шутлани çинчен те каламарĕ. Ма пăлхатас карчăка? Тен, нимĕн те пулмĕ-ха, вăрман витĕр чиперех тухса кайĕç вĕсем? Куккăшĕ те паçăр леш хурахсене ку таранччен тытрĕç те пулĕ терĕ. Тен, кăлăхах аса илчĕ вĕсем çинчен Евгени? Паçăр сăмах хускатнăран...

Вĕт вăрмантан иртсе мăн вăрмана кĕрсенех вăл хăй малтан шухăшланă пек турĕ: ура çине тăчĕ те ахалех лайăх чупакан лашана йĕкĕрлесе тытнă тилхепе вĕçĕпе çурăмĕ тăрăх меллĕн туртса çапрĕ. Лаша пĕтĕм вăйĕпе тапса сикрĕ, çуна картах малалла туртăнчĕ, хыçалалла пăхса ларнă кукамăшĕ пĕтĕм кĕлеткипе çуна вĕçнелле сулăнчĕ, чутах тухса ӳкетчĕ.

— Ма ун пекех хăвалатăн ара утне? — каялла çаврăнса ыйтрĕ вăл Евгенирен.

Анчах Евгени вăл каланине илтмерĕ курăнать, илтнĕ пулсан та хирĕç чĕнмерĕ. Сиккипе пыракан лашине вăл тата иквиçĕ хут туртса çапрĕ. Çав тери хăвăрт пынипе вăхăчĕ-вăхăчĕпе çуна тупанĕсем çĕре те перĕнмерĕç пулас.

— Хуллентерех кайсам, Евгени! Асту, сулнăкра вăркăнса юлатпăр! — кăшкăрчĕ кукамăшĕ.

Евгени каллех чĕнмерĕ. Чĕриех сиснĕ курăнать çав унăн кĕçĕр çакăнта ырă мар пуласса...

Хăй вăл, ура çинчех тăраканскер, лашине хăваланă хушăрах пĕр вĕçĕм малалла пăхрĕ. Тĕттĕмленсех пычĕ пулин те куçĕсем чылай инçетрине курчĕç-ха. Çулĕ тӳп-тӳрĕ тăсăлса выртать, ун çинче никам та çук. Пуш-пушах. Хăлхана лаша урисем тăпăртатса пыни тата çуна тупанĕсем тикĕс мар вырăнсенче кăлт-калт туни çеç пырса кĕрет. Питрен сив сывлăш çапать тата...

Часах çул сылтăмалла пăрăнмалла. Унтан вара уя тухасси инçех те юлмасть...

Тăпăрти, тăпăрти, тăпăрти! ыткăнать лаша. Унăн кайри урисем айĕнчен çуна пуçне юр муклашкисем пырса çапăнаççĕ, хăш чух кăкăра, пите те пырса тивеççĕ.

— Ан чуптар-ха ун пекех! Пӳлӗнсе ӳкет акă лашу! — кăшкăрать кукамăшӗ.

Евгени ун сăмахӗсене хăлхана та чикмест...

Çул сылтăмалла пăрăнчӗ. Пăраннă чух çуна тарăн сулнăка пырса çапăннипе чутах тӳнсе каятчӗ, юрать-ха ӳречисем вăрăм, тӳнме памарӗç.

Çунапа пӗрле лаши те сулăнса кайрӗ те сиккипе чупма пăрахрӗ. Тен, ывăнса та çитрӗ-и. Чӗр чун вӗт-ха вăл, мотор мар.

Шăп çав самантра вара сылтăм енчи тем тачкăш юман хыçӗнчен çул çине икӗ мӗлке чупса тухрӗç те, вӗсенчен пӗри тӳрех лашана йӗвенӗнчен ярса тытрӗ.

— Стой, миллай, ан васка!

Хашкама ернӗ лаша тăпах чарăнчӗ.

— Ма тăратрăн тата? — ыйтрӗ мӗн пулса иртнине ним пӗлмен кукамăшӗ каялла пăхмасăрах. — Лаши тăварăнса каймарӗ пуль те? Каларăм сана ытла хытă ан кил тесе...

Евгени сас памарӗ... Вăл халӗ пӗр сăмах та калама пултараймарӗ, унăн чӗлхи çыхăнса ларчӗ, чӗри те тапма чарăнчӗ-и тен. Куçӗсем хуралса килчӗç, чӗркуççийӗсем лӗнчӗрех кайрӗç.

«Ак хайхи, лекрӗмӗр... Пӗтрӗмӗр!» — шухăш вӗлтлетсе илчӗ ун пуçӗнче. Вăл ерипен çуна ӳречи çине ларчӗ.

Çав вăхăтрах мӗлкесенчен пӗри çунапа юнашар пырса тăчӗ те Евгенирен хăйăлтатакан сасăпа ыйтрӗ:

— Мӗн тиесе каятăн? Мӗн пур сан çуну çинче? Кала часрах!..

— Нимӗн те çук... — пăшăлтатса илчӗ Евгени.

— Ан суй, анчăк çури! Кунта мӗн? — Вăрмантан сиксе тухнă этем тӳрех çуна пуçӗнчи япаласене курса хыпашлама тытăнчӗ.

Ют сасса кукамăшӗ те илтрӗ пулмалла та каялла çаврăнса пăхрӗ. Хăйсене темле ют çынсем — кам пултăр, хурахсем ӗнтӗ! — тытса чарнине тавçăрса илсен вăл та тăруках ним калаймарӗ, унăн пырне темле хытă япала кӗрсе ларнă пек пулчӗ, сывлăшӗ те пӳлӗнчӗ, пӗтӗм кӗлетки сасартăк шăнса кайнă пек вӗттӗн-вӗттӗн чӗтре пуçларӗ. Анчах çапах та пурнăçра нумай хурашур курнă карчăк çухалсах каймарӗ, часах кăмăлне хытарма вăй çитерчӗ. Вăл йăпăр-япăр чӗркуççи çине тăрса ларчӗ те урмăшнă сасăпа хяррăн кăшкăрса ячӗ:

— Мӗн кирлӗ сана? Ма çулăхатăн, намăссăр! Иртсе кай хăвăн çулупа, ан чарса тăр, санăн пирӗнпе ним ӗç те çук!..

Бандит ун çине тăй-й пăхрӗ те сывăхнерех пычӗ.

— Хуп çăварна, çурăк кăвас чӗрес, атту халех мăйна каялла пăрса лартатăп! — çӗлен чашкăрнă евӗр хăйăлтатса илчӗ те вăл карчăка пуçӗнчен çапас пек хăмсарчӗ.

— Вĕлер ара, вĕлер, этем чĕри вырăнне хура юн муклашки çакăнса тăрать пулсан! — каллех кăшкăрчĕ ăна хирĕç карчăк. Унтан сăмахĕсене пăрça сапнă пек сапма тытăнчĕ: — Намăссăр, кĕççе пит, мăйракаллă шуйттан! Сан пек молотеццăсем ку чухне пурте вăрçăра халăхшăн пуçĕсене хураççĕ, анчах эс вăрманта кашкăр пек пытанса пурăнатăн та ват карчăксемпе ачасене çарататăн пулать, вилме маннăскер!

— Молчать! Асту, туртса антарса юр ăшне кутăн чикетĕп! — Бандит татах аллине çĕклерĕ.

— Мĕн палкаса тăратăн эс вăл киреметпе? — кăшкăрчĕ çав вăхăтра тепĕр хурахĕ, лаша пуçĕнчен тытса тăраканни. — Пар ăна пĕрре тути урлă, юлашки шăлĕсем тухса сирпĕнччĕр!

— Эсĕ хăвăн аннӳн шăлĕсене сирпĕнтер, чухах пулать ăна сан пек путсĕр ывăл çуратса ӳстернĕшĕн! Мана çапма сăлтав çук сирĕн! — тата хытăрах кăшкăрчĕ Евгени кукамăшĕ. Малтан хăраса ӳкни иртсе кайрĕ пулмалла унăн, халь тӳсме çук тарăхнипе пĕтĕм ăш-чикки хыпса çунчĕ курăнать, вăл кайран-малтан мĕн пуласси çинчен шутламасăрах хурахсене тем те пĕр каларĕ...

Анчах Евгени ни чĕрĕ, ни вилĕ ларчĕ. Хăранипе те мар, çук. Тĕлĕннипе, хăй куçĕсемпе курнине хăй ĕненме пултарайманнипе... Çуна патне пырса тăнă хурахĕ ик-виç сăмах каласанах Евгение унăн сасси паллапă сасă пек, ăна вăл таçта илтнĕ пек туйăнса кайрĕ, анчах ăçта, хăçан илтнине тăруках аса илеймерĕ. Хурах Евгени кукамăшне юнаса ăна кăшкăрса пăрахсан ун сасси каллех çавăн пек туйăнчĕ — илтнĕ, нумаях та пулмасть илтнĕ вăл ăна!.. Кукамăшĕ ятлаçма тытăннă хыççăн хурах чышкине чăмăртаса ун патнех пĕшкĕнсен, самаях тĕттĕм пулнă пулин те, Евгени вара ăна чип-чиперех палласа илчĕ. Ку этем — çак вăрманти хурах — хайхи Паллясен куккăшĕ, пĕр уйăх çурă каялла вĕсен ялне аманнă салтак пек пырса кĕнĕ Лука Лукич Козлов иккен. Çавах, çавах, урăх никам та мар!.. Сасси те çавăн — качака сасси пекрех, çинçен, хăйăлтатса тухать, сăнĕ те унăннах: янах шăммисем сарлака, куçĕсем хĕсĕк, сухалĕ хĕрлĕ, халь вăл шăрт пек ӳссе ларнă...

Ак сана салтак, ак сана Мускав патĕнче фашистсене шутсăр нумай пĕтерсе тăкнă «герой»!.. Паллясем патĕнче ӳсĕр пуçпа хăйĕн «паттăрлăхĕпе» ним латсăр мухтанса ларнă чух вăл хăйĕн аманнă алли тӳрленсенех тепĕр хут фронта каясси çинчен сӳпĕлтетрĕ, анчах та хăй халĕ ав мĕн хăтланса çӳрет. Дезертир! Вăрă-хурах! Бандит! Тен, вăл вăрçинче те пулман, алли те аманман унăн? Юри лăпăртатнă çеç вăл, пире, айвансене, улталанă кăна!

Хăйсене çаратма тапăннă пирки хăранинчен ытла Паллясен куккăшне, çав ирсĕр Лука Козлова, палласа илни ăнран

кăларса ячĕ Евгение. Мĕн тери тискер, тӳрĕ чунлă çын шутлама та пултарайман хăрушла ĕçсем пулса иртеççĕ иккен çут тĕнчере!..

Çав тери пăлханса кайнă Евгени чĕри мăлатук пек шаккарĕ, вăл сив чир тытнă пек чĕтрерĕ. Вăйĕ çитнĕ пулсан çак ирсĕре вăл тем туса тăкĕччĕ!

Козлов çав хушăра çуна пуçĕнче мĕн пуррине пĕтĕмпех туртса кăларчĕ: хуран кукли тултарнă чĕресе те, пыллă бидона та, мăйăрлă кĕпе çаннине те, Евгени куккăшĕ вăйпа тенĕ пекех парса янă чĕр пулла та.

— Охо-хо, пур-ха кунта пире валли! — терĕ вăл лаша пуçĕнче тăраканнине хавассăн. — Тутлă пулать пирĕн каçхи апат!..

Анчах çав самантрах Евгени кукамăшĕ ура çине сиксе тăрса ăна аллинчен ярса тытрĕ.

— Ан тивнĕ пултăр, продягă! Сан валли хатĕрлемен эп вĕсене, чирлĕ ачасем валли илсе каятăп!

— Ничего, пирĕн хырăма та пăсмасть! — хăйăлтатрĕ лешĕ.

— Хур каялла, эсремет пуçĕ! Хур теççĕ! — Карчăк хурах аллинчи япаласене туртса илме пикенчĕ. — Памастăп! Çĕленсене çитерместĕп! Луччă кăларса ывăтам!

Хăрас-тăвасси çинчен халĕ пуçĕпех манса кайнă карчăк хăй хураха çĕнтерме шаннă пекех кĕрешме тытăнчĕ, ун пек те кун пек авкаланса хăйĕн юратнă мăнукĕсем валли хатĕрленĕ кучченеçĕсене каялла туртрĕ. Анчах та кăлăхах пулчĕ вăл — хурах сылтăм аллине вĕçертрĕ те карчăка пĕррех янахĕнчен чышрĕ. Карчăк каялла ывтăнса кайса пуçĕпе çуна ӳречине çапăнчĕ. Ку çитмерĕ-ха, бандит çуна çине сиксе хăпарса ăна темиçе хут унтан та кунтан тапрĕ.

— Йытă вилли! Ме сана, ме, тăран!.. — хăйăлтатрĕ хăй.

— А-а-а! Ан вĕлер ман кукамая! Тархасшăн ан вĕлер! Мĕн тунă вăл сана? — Козлов çине пĕррех ыткăнчĕ вара Евгени, ку таранччен ним тăваймасăр пăхса тăнăскер. Арçын ача пĕтĕм вăйне пухса хураха кăкринчен питĕ хытă тĕртнипе вăл ӳрече урлă çул çине тухса ӳкрĕ. Анчах çавăнтах сиксе тăчĕ те Евгение хăйне çулса илчĕ.

— А-ах, йытă çури! Сана та кирлĕ пулчĕ-и?! — йынăшнă пек хăйăлтатрĕ те вăл ачана çуна çинчен туртса антарса пуçĕнчен, кăкринчен, аякĕсенчен çапма тапратрĕ.

— Ан çап! Ан тив! — аллисемпе хӳтĕленме, пит-куçне пытарма тăрăшса кăшкăрса ячĕ Евгени. — Эп сана паллатăп вĕт! Эс Паллясен куккăшĕ... Козлов... Лука... Пирĕн ялта та пултăн... Ан çап!..

Евгени унăн ячĕпе хушаматне калани хураха тăрук темле урăлтарнă пек пулчĕ. Тарса çӳрекен çыншăн ăна кам та пулин палласа илни питĕ хăрушă-çке-ха вăл, хăйне тытнăпа пĕрех!

Тӗлӗнсе кайнӑ Козлов ачана хӗнеме чарӑнчӗ, йӑпӑрт кӑна тем ҫинчен шухӑшларӗ пулмалла, анчах тепӗр самантранах хаяррӑн хӑйӑлтатса илчӗ:

— Паллатӑн эппин, сволочь!

— Паллатӑп ҫав! Эс вӑрҫӑ ҫинчен каласа панине те пырса итлерӗм... — ҫӗртен тӑма пикенчӗ Евгени.

— Апла пулсан эп сана никама паллайми тӑватӑп! Н-на! — Козлов ачана каллех пуҫӗнчен ҫапса ӳкерчӗ. — Вӗлеретӗп! Кайса пӗлтер вара мана паллани ҫинчен... леш тӗнчене!

Козлов хыпчӑк пек хытӑ пӳрнисемпе Евгение пырӗнчен ярса тытрӗ. Ача мӗн вӑйӗ ҫитнӗ таран тапкаланчӗ, аллисемпе ҫапкалашрӗ, вӗҫерӗнме тӑрӑшрӗ — усси пулмарӗ: Козлов ӑна ҫӗр ҫумне чӗркуҫҫипе пусса мӑйӗнчен тата хытӑрах пӑчӑртарӗ.

— Лука, пӑрах аппаланма! — кӑшкӑрчӗ ҫав вӑхӑтра тепри, лаша пуҫӗнче тӑраканни. — Хыҫалтан лавсем килеҫҫӗ, шӑвӑнас пулать!...

Козлова вара Евгени ҫумӗнчен ҫил ҫӗклесе кайнӑ пекех пулчӗ. Вӑл сиксе тӑчӗ те ҫуна ҫинчи япаласем патне ыткӑнчӗ, хӑшӗсене юлташне тыттарчӗ, хӑшӗсене хӑй илчӗ. Тепӗр минутранах вӗсем вӑрманалла тапса сиксе куҫран ҫухалчӗҫ. Аран сывлӑш ҫавӑрса илнӗ Евгени ҫуна ӳречинчен тытса ура ҫине тӑчӗ, халӗ те йынӑшса выртакан кукамӑшӗ патне пырса пӑхрӗ, унтан хурахсен йӗрӗпе вӑрман хӗррине чупса пычӗ. Унӑн халӗ епле пулсан та вӗсем ӑҫталла тарнине курса юлас килчӗ. Каласа памалла-ҫке-ха вӗсем ҫинчен, кӗҫӗрех ӑҫта та пулин ҫитсе пӗлтермелле — халех шыраччӑр, тытчӑр!

Хурахӗсем иккӗшӗ те йӗлтӗрсемпе пулнӑ-мӗн, Евгенисем умне сиксе тухнӑ чух йӗлтӗрӗсене йывӑҫ кутне пӑрахса хӑварнӑ. Халь акӑ каллех йӗлтӗрӗсем ҫине тӑнӑ та чӑтлӑхалла кӗрсе кайнӑ.

Лайӑх-ха ку, йӗлтӗр йӗрӗсем пурри! Тӗлне манас марччӗ те, ирччен юр ҫуса ан ларттӑрччӗ! Йӗр юлсан нимӗнле хурах та ҫӑлӑнаймасть!..

Евгени ҫул ҫине каялла чупса тухнӑ чух кукамӑшӗ пур-ҫук вӑйне пухкаласа тӑрса ларнӑ-мӗн, анчах халь те йынӑшать-ха.

— Тарчӗҫ! — терӗ Евгени.

— Ҫимеллисене пурне те илсе кайрӗҫ пуль ӗнтӗ? — вӑйсӑр сасӑпа ыйтрӗ кукамӑшӗ.

— Вӗсем ҫинчен ан калаҫ-ха, хамӑр сывӑ юлнӑшӑн савӑн...

— Ҫӗр ҫӑттӑрах явӑлсене, упа-кашкӑр тытса ҫуртӑрах!

— Кашкӑрсем ҫине шанса ӗҫ тухмасть-ха, — терӗ Евгени лаша урисем айне ӳкнӗ тилхепине васкасах пуҫтарса тытса, — пирӗн халӗ часрах каялла кайса кун ҫинчен куккана каласа парас пулать. Вӑл мӗн тумаллине пӗлӗ. Района, НКВДна, шӑнкӑртаттарӗ, тен, лерен йӗрлеме тухӗҫ...

Çак вăхăтра вĕсем патне Атăл енчен килекен виçĕ утă лавĕ çитсе чарăнчĕ. Евгени лашине юр ăшне кĕртсе ярса каялла çавăрма тытăннине курсан малти лавĕ тăрринче ларакан хĕрарăм кăшкăрсах ыйтрĕ:

— Мĕн пулчĕ тата, ма таврăнатăр?

— Мĕн пулмалли пулчĕ-ха çав, — терĕ Евгени. Анчах хăйсене хурахсем тапăнни çинчен пĕр сăмах та шарламарĕ, хĕрарăмсене хăратас мар терĕ пулмалла.

Утă лавĕсем тĕлĕпе юр ăшшĕн ашса тухсан Евгени паçăрхи пекех ура çине тăчĕ те тилхепине карт! туртрĕ.

— Кукка патне епле те пулин хăвăртрах çитес!

Пĕр хушă канса тăнă лаша вырăнтанах сиккипе яра пачĕ...

## Ăçта çухалчĕ Евгени?

Вăл каçхине Евгени амăшĕ киле питĕ кая юлса таврăнчĕ — колхоз правленин ларăвĕ час пĕтмерĕ. Кăнтăрла районран шăнкăравланă — ыранах районти больница валли тата кĕркуннех Ленинград патĕнчен куçса килнĕ ачасен çурчĕ валли вутă кӳме каймалла. «Çĕнĕ саманана» утмăл кубометр турттарса килме хушнă. Вутти инçетре, Атăл леш енче. Кун каçа ниепле те пĕрререн ытла хутлама çук. Çапах та вун пилĕк лаша ярсан ку ĕçе виçĕ кунта тума пулать. Лашисем халь ерçеççĕ, анчах вĕсемпе каякан çыннисене тупмалла-çке! Ялĕнче хĕрарăмсемпе ватă-вĕтĕсем анчах. Вĕсем хушшинче те кил пăрахса тухайманнисем, сывах маррисем пур.

Анчах епле пулсан та хушнине тăвасах пулать. Вăрçă!..

Ĕçлеме пултаракан колхозниксен списокне малтан пуçласа вĕçне çитиччен ик-виçĕ хут пăхса тухнă хыççăн çапах та кирлĕ чухлĕ лавçă тупăнчĕ. Вĕсене ертсе кайма Улькана хăйне хушрĕç, правлени членĕсемпе бригадирсенчен хальхинче урăх никама та яма май килмерĕ. Кĕçĕрех хатĕрленсе çитес пулать те, ыран ирех, тул çутăлсанах, йăлăма тухса каймалла...

...Тĕттĕм тăкăрлăкран пăрăнса тухсан Улька тӳрех хăйĕн килĕнче çутă çуккине асăрхарĕ.

«Çывăрма выртнă ĕнтĕ пурте, — шухăшларĕ вăл. — Аннепе Евгени шăнса килчĕç пулĕ-ха, çын шăннă хыççăн ăшă çĕрте питĕ лайăх çывăрать...»

Пӳрте вăл шăппăн, никама та вăратас мар тесе кĕчĕ, тумтирне хывса çакнă хыççăн малти пичурккара спичка шыраса тупса чăланти «шăши куçне» çутса ячĕ. Унтан, çиме лариччен, чăлантан тухса кутнĕк сакки çине пăхрĕ — шутпа, амăшĕ

(Евгенин кукамăшĕ ĕнтĕ) унта çывăрмалла. Анчах кутнĕк пушах иккен, унта никам та çук.

«Шăнса килнĕскер ăшă çĕре хăпарса выртнă пуль-ха», — шухăшларĕ те Улька кăмака çинелле пăхрĕ.

Ак тамаша! Кăмака çийĕ те пушах...

— Виççĕшĕ те сентре çинче çывăраççĕ-ши? — тĕлĕнчĕ Улька. Çав вăхăтрах тем ырă мара сиснĕ пек чĕри хытăран хытă тапма пуçларĕ. Вăл кăмака çумĕнчи сак çине тăрса çӳлелле пăхрĕ, — унта та Марине пĕр-пĕчченех çăмха пек чăмăртанса выртнă.

Улька хăрасах кайрĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Евгенипе кукамăшĕ мĕн пирки çак таранччен те киле çитмен? Ахăртнех, кукамăшĕ чирлĕ пулнă-ши? Анчах ун пек пулсан та Евгени çĕр выртмалла мар-çке, пур пĕр таврăнмалла! Нивушлĕ çул çинче пĕр-пĕр инкек пулчĕ-ши? Пĕрех хут ма кăларса ятăм ку ачана!..

Вăл кăмакаран апат юлашки кăларса çиме ларчĕ, анчах ăшĕ вăрканипе халь унăн çиесси те килмерĕ ĕнтĕ.

— Мĕншĕн, мĕншĕн таврăнмарĕ-ха ку Евгени? Мĕн пулнă ăна? Ăçта вăл халь?!. — çак шухăшсем Улька чĕрине вутпах çунтарчĕç.

Улька чăланта кăштăртатнине илтнипе пулас малти пӳртрен ватă Пауль шăппăн утса тухса ун патне пырса тăчĕ.

— Евгения-то нашего нет, не приехал, — терĕ вăл. — Не случилось ли чего? Дорога-то — через лес? Как ты думаешь, Ольга? Весь вечер беспокоюсь, уснуть не могу... Что будем делать?

— Хам та çавăн пирки пăшăрханса ларатăп та, ним шутлама та пĕлместĕп çав, — ассăн сывласа илчĕ Улька. — Мĕншĕн ку таранччен килмен, мĕн пулнă, ăçта кайса кĕнĕ?.. Çитменнине, вăл пĕччен мар, кукамăшĕпе пĕрле килмеллеччĕ. Те мĕншĕн те пулин лерех çĕр выртма юлнă, те çул çинче тем пулнă...

Ун пек те, кун пек те шутласа пăхрĕç ватă эстонецпа Улька, анчах хăйсене лăплантарма пултаракан сăлтав тупаймарĕç.

— Ним тума та çук, ирччен кĕтес пулать, — терĕ юлашкинчен Улька. — Ирхине вара аннесем патнех çитсе пăхма тивет.

Вăл çĕрĕпех çывăраймарĕ. Кăшт тĕлĕрсе каять те тултан сасă илтĕннĕ пек туйăннипе варт! вăранать, унтан нумайччен тинкерсе выртать: лашапа килни илтĕнмест-и, урам хапхи уçăлмасть-и... Çур çĕр те иртрĕ, унтан пĕр сехет те, виççĕ те çитрĕ, анчах Евгени таврăнмарĕ.

Ывăлне кĕтсе илеймесĕрех кун каçа ĕшенсе çитнĕ Улька йывăр ыйхăпа çывăрса кайрĕ.

...Амăшĕпе Евгение ăсатса ярсан Петр Бурлаков алла çĕнĕ хаçат тытрĕ те кăштах канас тесе чăлан çумĕнчи хыçлă сак

çине выртрĕ. Хаçатĕнче паян çĕнни нимех те çук-мĕн, фронтсенче «выранти çапăçусем» çеç пулса иртнĕ, анчах Брянск вăрманĕсенчи партизансем пĕр район центрне тăрук вăркăнса кĕрсе тăшман штабне аркатни, нимĕççен пĕр генералне вырăн çинчен аялти кĕпи-йĕмĕпех сĕтĕрсе тухни çинчен вулама питĕ интереслĕ пулчĕ. Маттур та иккен пирĕн партизансем!..

Юлашки кунсенче ĕç нумай пулнипе ĕшенсе çитнĕскер, Бурлаков кăштах выртсан ыйха путрĕ. Унăн фермăра ĕçлекен йăмăкĕ Вĕçелис таврăнса апат çирĕ, унтан кĕнчелеççи çĕклесе алăксене шăлт-шалт хупса тухса кайрĕ, — ялти хĕрсем халĕ кашни каçах вулав çуртне пухăнса çăм арлаççĕ, фронтовиксем валли ăшă алсиш-чăлха çыхаççĕ, — Бурлаков ăна та сисмерĕ. Анчах хăй вăл пĕртте лăпкă çывăрмарĕ, тĕлĕкре ăна, яланхи пекех, вăрçă курăнчĕ — самолетсем вĕçеççĕ, танксем килеççĕ, вут-çулăм ăшĕнчен тăшманăн ӳсĕр салтакĕсем пичĕкуçĕсене чарса пăрахса, йытăсем вĕрнĕ пек йăсласа атакăна килеççĕ... Бурлаков вĕсене пулеметран çунтарать, анчах лешсен йышĕ чакмасть, çĕр айĕнчен тухсах тăраççĕ тейĕн — вĕлерсе пĕтерме те май çук... Акă пĕри, ырхан та вăрăмскер, ун умнех çитсе тăрса ăна аллинчи автомат приклачĕпе çапма сулса ячĕ. Бурлаков унран тăрук аяккалла пăрăнчĕ те... пуçĕпе стенана çав тери хытă çапăнса вăранса кайрĕ.

— Ух-х... шуйттан! — йывăррăн сывласа ячĕ вăл çамкине ал тупанĕпе сăтăрса. Хăйĕн çамки йĕп-йĕпех иккен. — Тьфу, курăнать те вĕт... çакăн пек ирсĕр япала!

Вăл лампа çутса ярас тесе кĕсйинче шăрпăк шырама тытăнчĕ. Çав вăхăтра тулта сасартăк урам хапхине темскер питĕ хыттăн çапăнса кĕмсĕрт! тутарни, хапха нăчăр-начăр! туни илтĕнчĕ. Хураçка вĕрсе ячĕ...

— Мĕн мурĕ ку? — чӳрече патне чупса пычĕ Бурлаков ним шутлама пĕлмесĕр. — Такам лашапах килчĕ пулас?

Кĕç калинкке уçăлса кайрĕ, кил хушшине пысăках мар çын кĕрсе васкасах мăн хапхан урлуççине тĕртме тытăнчĕ. Тулта тĕттĕм пулин те Бурлаков çав çынна тӳрех палласа илчĕ:

— Ара, Евгени вĕт ку! Çĕр çăттăр!.. Мĕн пулнă кусене, ма каялла килчĕç?!

Вăл çарамасах кил хушшине сиксе тухрĕ те Евгение мăн хапхана уçса лашине шала кĕртме пулăшрĕ, çав хушăрах хыттăн, пăлханнă сасăпа кăшкăрса ыйтрĕ:

— Ма таврăнтăр? Мĕн амакĕ пулчĕ тата?

— Хурахсем тапăнчĕç... — терĕ Евгени çĕтсе ларнă сасăпа.

— Хурахсем? Сире-и?..

— Пире çав. Дезертирсем. Мăн вăрмана кĕрсен. Иксĕмĕре те чутах çапса пăрахатчĕç...

Пӳрте кĕнĕ-кĕмен Евгени хăйсемпе мĕн пулса иртни çин-

чен питĕваскаса, анчах ним сиктермесĕр каласа пачĕ. Евгени каланă чух кукамăшĕ те сăмах хушкаларĕ, хурахсене темĕн те пĕр каласа вăрçрĕ. Куккăшĕн сăн-пичĕ тăрук улшăнса, кăвакарса, чул тĕслĕ пулса кайрĕ. Тути хĕрри кăна хушшăн-хушшăн кăрт та кăрт сике-сике илчĕ.

— Эппин, эсĕ кукамупа иксĕре хĕнекеннине чăн-чăнах палласа юлтăн? — салху сасăпа ыйтрĕ вăл Евгени каласа пĕтерсен. — Йăнăшмастăн-и? Тен, сана çавăн пек туйăнчĕ кăна?

— Çук, кукка, йăнăшмастăп, пит лайăх палласа юлтăм, — çирĕплетсех каларĕ ăна хирĕç Евгени. — Çавах вăл, пирĕн ялти Хĕрлĕ Мари шăллех, урăх никам та мар! Эпĕ Паллясем патĕнче çав бандит хăй вăрçăра епле çапăçни çинчен суйнине те итлесе ларнă вĕт-ха, ăна ун чух халь сана курнă пекех çывăхран курнă, унăн сассине те илтнĕ! Кĕçĕр те эп ăна çывăхранах куртăм, сассине те тăраничченех итлерĕм — ун сасси сĕрмен урапа сасси пек. Чăн та, Паллясем патĕнче чух вăл сулахай аллине çыхса мăйĕнчен çакса янăччĕ, анчах кĕçĕр икĕ аллипе те пит лайăх хĕнерĕ — нихăшĕ те ыратмасть унăн... Ним иккĕленмелли те çук!

— Çав шуйттанах ĕнтĕ! — килĕшрĕ кукамăшĕ.

— Пулма та пултарать... — Бурлаков шухăша кайрĕ, чĕлĕм чĕртсе ячĕ. Анчах тепĕр минутранах сиксе тăчĕ те тумланма тытăнчĕ. — Юрĕ, эсир ларăр-ха, эп ял Советне кайса районпа калаçса илем...

Вăл васкасах тухса кайрĕ. Кукамăшĕ кăмака çине хăпарса выртрĕ, хăй пĕр вĕçĕм мăкăртатрĕ, хăйсене тапăннă хурахсене таттисĕр ылханчĕ, вĕсене таварма, «алли-урисене хуçма, пуçĕсене çапса çурма, вар-хырăмĕсене кӳпĕнтерсе шăтарма» туррине те, киреметне те ӳкĕтлерĕ...

Вăл Евгение те выртма хушрĕ, анчах Евгени халь çыхса пăрахсан та çывăрма пултарайман. Вăл куккăшне кĕтрĕ — мĕн калĕç-ши, мĕн тума хушĕç-ши ăна районтисем? Тен, вĕсем халех йĕрлеме тухса каяççĕ? Облава тăваççĕ? Анчах та хурахсем Евгенипе кукамăшне хăш тĕлте тапăннине пĕлмеççĕ-çке вĕсем, ăна пĕр Евгени кăна кăтартса пама пултарать.

Вăл сĕтел çинче выртакан хаçата илсе пăхкалама тытăнчĕ. Юлашки страницăра, ытти статьясем хушшинче, «Хĕрлĕ Çар валли — утă» тенĕ заметка курăнса кайрĕ. Таçти колхоз хăйĕн çулла хатĕрленĕ утинчен вунă лавне станцие кайса леçнĕ имĕш — фронта яма. Çакна вуласан Евгени хăйсем каникул вăхăтĕнче йăлăма утă патне кайнине, унта пĕр капан çумĕнче кашкăр кăшласа янă пăши шăммисен юлашкисем выртнине аса илчĕ.

— Ах, фашист проклятăй! Ах, бандит! Акă ăçта вăл Гитлер! — çав тери тарăхса кăшкăрчĕ ун чухне Сар Тимухха...

Шутласан, паян вĕсене вăрманта тапăннă хурахсем çав кашкăртан мĕнрен уйрăм ĕнтĕ? Ун пекех тискер кайăксем мар-и вĕсем? Фашистсем мар-им?..

Евгени ĕнтĕ самаях лăпланнăччĕ, анчах халĕ ун ăш-чикки тепĕр хут тарăхупа вĕресе кайрĕ... Евгенин, Аркашăн тата ытти çĕршер, пиншер, миллионшар ачасен ашшĕсем ак çак самантра фронтра, сивĕ окопсенче, вут-çулăм айĕнче... Тен, выçă та пуль, ăçтан пĕлес? Унта вĕт хырăм выçнă-выçман кăмака кукрине пырса аш яшки антарса çиейместĕн! Анчах кусем, кĕçĕр Евгенипе кукамăшне хĕне-хĕне çаратнисем, халĕ ăçта та пулин ăшă çĕрте кӳпсе, ăйăрсем кĕçеннĕ пек ахăрса лараççĕ ĕнтĕ... Ах, тытасчĕ-çке вĕсене! Евгение кам та пулин хушас пулсан вĕсене вăл хăех персе пăрахмалла, алли кăлт та сикес çук унăн, нимĕн чухлĕ те!.. Хаçатсенче çыраççĕ-çке — партизан отрячĕсенче Евгени пек ачасем те пит паттăр çапăçаççĕ тет. Акă нумаях та пулмасть «Комсомольская правда» хаçатра çырнăччĕ — пĕр вун тăватă çулхи арçын ача вăрман хушшипе пыракан фашистсен машинине гранатăпа персе çĕмĕрнĕ, унтан машина ăшĕнчен сиксе тухса тарма тытăннă нимĕç майорĕ хыççăн виçĕ километр ытла чупнă та юлашкинчен ăна пур пĕрех персе ӳкернĕ, унăн сумкинчен пирĕн командованишĕн питĕ кирлĕ хутсем кăларса илнĕ... Çав ача вырăнĕнче пулнă пулсан Евгени те ун пек тума пултараймастчĕ-ши вара?

Куккăшĕ стена çинчи сехет йĕпписем тăххăр урлă каçсан таврăнчĕ.

— Калаçрăн-и? — вăл пӳрте кĕнĕ-кĕменех ыйтрĕ Евгени.

— Калаçкаларăм аран-аран, — терĕ Бурлаков тумтирне хывса. — Темшĕн питĕ япăх илтĕнет. Тата малтан начальникĕ те çукчĕ те, ăна чĕнсе пыриччен кĕтмелле пулчĕ.

— Мĕн тăваççĕ-ха ĕнтĕ вĕсем?

— Халех кунта килеççĕ те — вăрмана каятпăр. Йĕр йĕрлеме. Санăн та пымалла пулать. Бандичĕсем вăрмана хăш тĕлтен кĕрсе тарнине астуса юлнă вĕт-ха эсĕ?

— Пит лайăх пĕлетĕп!

— Милицисем килсе çитиччен кăштах выртса кан-ха эппин. Тен, кайран çĕрĕпех çывăрмалла пулмĕ.

— Манăн пĕртте çывăрас килмест...

Чăнах та, епле çывăратăн-ха? Евгени калама та çук пăлханчĕ: кĕçех вăл милицисене вăрманта пытанса пурăнакан бандитсене тытма ертсе каять вĕт-ха! Епле пысăк ĕç ку!..

...Районтисем нумай кĕттермерĕç — Бурлаков телефонпа калаçса килнĕ хыççăн тепĕр сехет-сехет çурăранах икĕ çунапа кĕрлеттерсе çитрĕç. Пӳрте вĕсем — пĕрин хыççăн тепри — пиллĕкĕн кĕчĕç, пурте кăвакрах мулаххайсем, çухавиллĕ кĕске-

рех кĕрĕксем тăхăннă, урисенче — çăматăсем, иккĕшĕ винтовкăсемпе, ыттисен пиçиххийĕсем çумĕнче — пистолетсем.

Пĕри, ыттисенчен раснах хура кĕрĕк тăхăннăскер, лутрарах сарă çын — асли пулмалла — кил хуçисене сывлăх сунсанах малалла иртсе сĕтел пуçне ларчĕ те Евгенирен вăрманта мĕн-мĕн пулни çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Евгени каллех, пацăр куккăшне каласа панă пек, йĕркипе каласа пачĕ...

— Ну, юрĕ! Халь ĕнтĕ, ачам, эс пире çав вырăна илсе кайса кăтарт, — терĕ милицисен начальникĕ Евгени калавне итлесе пĕтерсен. — Анчах та ăшăрах тăхăн, уйра çил кастарать, çав шуйттансемшĕн шăнса пăсăлмалла ан пултăр тата!

Унтан вăл Бурлаков еннелле çаврăнса унпа хуллен кăна калаçма тытăнчĕ, анчах чăланалла пăраннă Евгени вĕсем мĕн калаçнине илтмерĕ, чăн юлашкинчен куккăшĕ: «Юрĕ, лаши кунтах пур пирĕн, халех кӳлетĕп», — тенине çеç илтрĕ те ăнланчĕ: кун пек йышлă халăха ик çунапа кайма йывăртарах пулать, çавăнпа та Евгени лашине те кӳлеççĕ...

...Милици çыннисем пиллĕкĕн çеç те мар, улттăн тан пулнă: пĕр çуни çинче тепĕр çын йытă тытса ларнă. Ăна Евгени урама тухсанах курчĕ те тăрук темле хавасланса кайрĕ: вĕсем йĕр йĕрлекен сыщик йытă та илсе килнĕ иккен, апла пулсан бандитсене тытаççех! Тартмаççĕ!..

— Атя, ывăлăм, эс манпа пĕрле малти çуна çине лар, — терĕ начальник Евгение хул пуççинчен лăпкаса. — Çул кăтартаканĕ пулăн, атту çухалса кайăпăр таçта... — кулса илчĕ çавăнтах.

— Çулĕ тӳп-тӳрех-ха, юри аташас тесен те аташса каяс çук, — терĕ Евгени унпа юнашар вырнаçса.

— Ну, Степанов, вĕçтертĕмĕр, — терĕ начальник ларкăч çинчи милиционера çурăмĕнчен тĕртсе. — Полный ход!

Çунасем пĕрин хыççăн тепри хускалчĕç те тĕттĕм урам тăрăх тăвалла хăпарчĕç, уя тухсан вара акăш-макăш хытă вĕçтерчĕç.

Евгени çак уй урлă паян тăваттăмĕш хут каçать ĕнтĕ — икĕ хутчен кунталла килнĕ, иккĕмĕш хут лерелле каять. Çитменнине, халĕ питĕ хăрушă, чĕрене пăлхатакан ĕçпе каять...

Ун пуçĕнче пĕртен-пĕр шухăш явăнчĕ: мĕнле пулĕ-ши, бандитсене йĕрлесе тупма пултарĕç-ши?.. Темиçе хут та вăл хăйпе юнашар ним чĕнмесĕр ларса пыракан милици начальникĕнчен ыйтма тăчĕ, анчах ниепле те хăяймарĕ. Чылай кайсан тин хăюлăх çитерсе калаçма пуçларĕ:

— Сирĕн çак йытă вăл — вĕрентнĕскер-и? Пограничниксен пекки-и?

— Шăп çавăн пекки, — терĕ начальник.

— Хурахсене нумай тытнă-и вăл?

— Пулкаланă. Аманса та курнă. Медаль те пур унăн...

— Медаль?! — тĕлĕнчĕ Евгени. — Нивушлĕ вара...
— Йытăсене те медаль параççĕ-и тесшĕн ĕнтĕ эсĕ, çапла-и? — Ун еннелле çаврăнса кăмăллăн кулса илчĕ начальник. — Параççĕ çав, ачам! Ятарласа йытăсен выставки тăваççĕ те вĕсенчен кашни мĕн тума пултарнинине шута илсе хаклаççĕ. Илтмен-и?
— Илтмен... Тĕлĕнмелле...
— Хытă чупакан лашасене, сĕт лайăх паракан ĕнесене, çăвăр нумай тăвакан сысна амисене медальсем панине те пĕлместĕн пуль эппин эсĕ?
— Ун çинчен «Колхозник календарĕнче» вуланă хăть...
— Пĕл эппин малашне: йытăсем те награда илеççĕ. Паллах, вĕсем çынна нумай усă кӳреççĕ пулсан...
Çапла калаçса пынă хушăра вĕсем вăрмана çитсе кĕчĕç.
— Тимлĕрех сăнаса пыр, — терĕ начальник. — Хăш тĕлте тапăнчĕç вĕсем сире?
— Леререх вăл, мăн вăрман пуçлансан, — терĕ Евгени. Хăй вара тек ним чĕнмесĕр пĕр вĕçĕм малалла пăхса пычĕ. Курма ансатрах пултăр тесе кăшт кайсан ура çинех сиксе тăчĕ.
Милици лаши хăвăрт чупрĕ, хыçалтисем те юлмарĕç. Çитес вырăн çывхарнăçемĕн çывхарса килчĕ. Акă хунав вăрманĕ пĕтет те, çул сылтăмалла пăрăнать, унтан вара...
Евгени хăйĕн куçĕсем ыратакан пуличченех тинкерсе пăхрĕ. Хурахсем хăйсене тытса чарнă вырăнта, çул хĕрринчи юр çинче, йĕрсем пулма кирлĕ вĕт-ха! Евгение пусса антарса хĕненĕ çĕрте те, унтан каялла кайма лашана юр ăшшĕн аштарса тухнă чух та тарăн йĕрсем пулнă...
— Чар! Çитрĕмĕр! — ларкăч çинчи милиционера хул пуççирен тĕртсе илчĕ Евгени. Хăй çавăнтах сиксе анчĕ те юр çине пăхса унталла та кунталла кускалама тытăнчĕ. — Çакăнта, ак çак тĕлтех! — çирĕппĕн, тулли кăмăлпа пĕлтерчĕ вăл темиçе самантран.
Вара ыттисем те çунасем çинчен анчĕç, тахăшин аллинче пĕчĕкçеç электричество хунарĕ çуталса кайрĕ. Чăн та, ку тĕлти юра нумаях та пулмасть таптаса пĕтернĕ иккен, çын йăваланнă йĕр те пур. Эппин, çак хăюллă ача тĕрĕс илсе килнĕ!
— Кайран ăçталла кайрĕç-ха вĕсем? — ыйтрĕ милици начальникĕ.
— Ав çавăнталла... — Евгени аллине малалла тăсса çултан аяккалла, йывăçсем хушинелле, чупрĕ. Ыттисем ун хыççăн пычĕç.
— Акă курăр, йĕлтĕр йĕрĕсем...
Пурте пĕшкĕнсе пăхма тытăнчĕç. Кăпăшка юр çинче халĕ пĕр харăсах темиçе хунар çути сиккелерĕ. Йĕлтĕр йĕрĕсем чăнах та пур иккен, вĕсем вăрманалла кĕрсе каяççĕ.
Милици начальникĕ çав йĕрсем тăрăх пĕр çирĕм-вăтăр утăм

турĕ те чаранса тăчĕ. Унтан юлташĕсене чĕнсе илчĕ, Евгени куккăшĕ те вĕсемпе пĕрлех кайрĕ. Начальник шăппăн кăна тем ăнлантарма тытăнчĕ. Каярах тăрса юлнă Евгени мăн ҫынсем мĕн калаҫнине илтмерĕ, анчах ик-виҫ минутранах ун патне куккăшĕпе икĕ милиционер таврăнса пычĕҫ.

— Акă мĕн, тăванăм, — терĕ куккăшĕ пĕртен-пĕр аллине Евгени хул пуҫҫийĕ ҫине хурса, — эс хăвăн ĕҫне турăн ĕнтĕ... Халь санăн киле каяс пулать. Санпа пĕрле ак ҫак икĕ ҫын пыраҫҫĕ. — Вăл пуҫĕпе милиционерсем ҫине сулчĕ. — Яла ҫитсен эс вĕсене тӳрех леш Паллясем патне леҫсе яр. Ху вара кайса ҫывăр. Час таврăнманшăн аннӳ те кулянса пĕтрĕ пулĕ-ха...

Тĕрĕссипе каласан Евгенин халĕ киле каясах та килмерĕ, леш бандитсене йĕрлесе тытнă ҫĕрте пуласси килчĕ, анчах куккăшне хирĕҫ нимех те калаймарĕ. Ҫитменнине, ăна халь милици начальникĕ хушнипе ăсатнине те ăнланчĕ вăл. Ирĕксĕр тенĕ пекех Евгени хăйĕн ҫуни ҫине ларчĕ те тилхепе тытрĕ.

Килелле лаша питĕ лайăх чупрĕ. Вăл та йăлăхрĕ пуль ҫав паян каллĕ-маллĕ ҫӳресе. Мулаххай хăлхисене антарса ҫыхнă, кĕрĕк ҫухависене тăратнă милиционерсем ним чĕнмесĕр пычĕҫ, вĕсем ҫывăрса кайнă пек те туйăнчĕ, анчах пĕр икĕ километр пек кайсан вĕсенчен пĕри ҫуна пуҫне куҫса лаша еннелле тӳртĕн ларчĕ те Евгенипе сăмахлама тытăнчĕ:

— Мĕнле ҫын вара вăл сирĕн ҫав Хĕрлĕ Мари тени? Паян кукамупа иксĕре тапăнаканни унăн тăван шăллĕ тет-и?

Евгени хăй Хĕрлĕ Мари ҫинчен мĕн пĕлнине пĕтĕмпех каласа кăтартрĕ.

— Ун пек кайăк иккен-ха вăл, — мăкăртатса илчĕ милиционер Евгение итлесе пĕтерсен. — Тĕрĕс, ун пек этемсенчен тем те кĕтме пулать!

Яла вĕсем ҫур ҫĕр иртсен тăватă сехетре пырса кĕчĕҫ. Куккăшĕ хушса янă пек, Евгени уйран кĕрсенех лашине сулахаялла каякан тăкăрлăкалла пăрчĕ те Паллясен тĕлне ҫитсен вара тăпах чарчĕ.

— Акă вĕсен пӳрчĕ...

Ҫуна ҫинчен ансан милиционерсенчен пĕри, Евгенипе калаҫса килни, ун патнерех пĕшкĕнсе пӳрнипе юнасах каларĕ:

— Асту, эпир кунта килни ҫинчен — шăпăрт! Никама та... килтисене те пĕр сăмах та ан шарла! Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм...

Милиционерсем Паллясен хапхи патнелле утрĕҫ, Евгени лашине ҫавăрса витесем еннелле чуптарчĕ.

«Мĕн тума килчĕҫ-ши кусем Паллясем патне? — ним ăнланаймасăр тĕлĕнсе шухăшларĕ Евгени. — Амăшне тытса каясшăн-ши? Леш бандичĕ ҫинчен ыйтса пĕлме-ши?»

Ответне тупаймарĕ. Тепĕр вунă минутранах вăл лашине конюхсене парса хăварса килне чупса çитрĕ те хапха шашулккине чăнкăртаттарма тытăнчĕ. Амăшĕ çывăрман та пулмалла, кĕçех крыльца çине тухса хыттăн кăшкăрса ыйтрĕ:

— Кам унта?

— Эпĕ ку, анне...

— Ах, турă, тинех çитрĕн-и? Чун юлмарĕ кĕçĕр...

Амăшĕ хытă пăлханнине Евгени ун сассинченех сисрĕ. Вĕсем пӳрте кĕрсен малти пӳлĕмрен васкасах ватă Пауль тухрĕ. Вăл та пăшăрханса пĕтнĕ, çывăрман курăнать, питĕ ĕшеннĕ тĕслĕ.

— Почему... так долго, очень поздно, мой мальчик? — ыйтрĕ вăл.

— Я не виноват. Так получилось, — терĕ Евгени шăнса кӳтнĕ пӳрнисемпе мулаххай çыххине салтма пикенсе. — Очень интересно, как в сказке. Расскажу вот...

Амăшĕ часрах вучах чĕртсе ячĕ:

— Выçса вилетĕн пуль паян?

Сĕтел хушшинче вара вĕри яшка сыпа-сыпа Евгени кĕçĕр мĕн-мĕн пулнине каласа пачĕ. Амăшĕ куççулĕпех макăрчĕ. Ватă Пауль чул сăнлă пулса пĕр хускалмасăр ларчĕ. Пĕрре кăна сăмах хушрĕ вăл:

— Какие... гады есть еще на свете! Давить их надо, как ядовитых змей!

Паллясем патне икĕ милиционер кĕрсе юлни çинчен Евгени çăвар уçмарĕ. Апат çисе тăраничченех ăна çав тери ыйхă пусма пуçларĕ те, вăл часрах сентре çине хăпарса выртрĕ.

Юмахри паттăрсен ыйхипех çывăрчĕ вара Евгени. Татах та çывăратчĕ пуль те, хăйне тахăшĕ çине тăрсах хул пуççирен лăсканипе вăранма тиврĕ. Куçĕсене уçсанах куккăшне курчĕ: лешĕ чавсисемпе сентре хĕррине тĕреннĕ те Евгени çине пăхса кăмăллăн кулать:

— Ай-ай, вăйлă туртатăн ыйха! Çĕр çухрăма йăтса кайса пăрахсан та сисместĕн пуль? Çур сехет вăратрăм вĕт!..

Евгени йăпăр-япăр тăрса ларчĕ.

— Ну... мĕнле? Тупрăр-и лешне? Тытрăр-и? — ыйтрĕ вăл тӳрех çĕрлехине аса илсе.

— Пĕтĕмпех йĕркеллĕ, шăллăм, — терĕ куккăшĕ.

— Иккĕшне те çулса илтĕр-и?

— Иккĕшне мар, тăваттăшне. Тăват кашкăр пĕр харăс тытрăмăр. Тĕп-тĕрĕс. Вăрманта çĕр пӳртре пурăннă, явăлсем...

— Халь ăçта ĕнтĕ вĕсем?

— Илсе кайрĕç. Эп те вĕсемпе пĕрле районта пултăм. Халь унтан таврăнатăп, юри сана курас тесе пăрăнса кĕтĕм мар-и... Леш çынни, ну, Паллясен куккăшĕ, кам пулнă тесе шутлатăн?

— Ăçтан пĕлем-ха эпĕ? — куçĕсене час-час мăчлаттарса илчĕ Евгени. — Çынсене фронтра аманса таврăнтăм тесе ĕнентеретчĕ, кайран ав вăрманта пире тапăнчĕ...

— Нимĕнле фронтра та пулман вăл! Çынсене çаратнăшăн пилĕк çул тĕрмере ларнă. Заключенинчен тухмалли вăхăт çитме пуçласан ăна фронта ямалла тунă. Тумлантарнă, вĕрентнĕ. Анчах вăл Тăван çĕршыва хӳтĕлесси çинчен шутламан та. Фронталла кайнă чух пĕр станцинче эшелон çинчен сиксе юлнă та — тарнă, хăйне тăрук палласа тытасран аманнă салтак пек пулса тăнă. Маскировка тунă эппин. Артистсем вĕт ун йышши çынсем, хуть те мĕнле роль те выляса кăтартма пултараççĕ, пăхса тăр кăна. Ак епле «фронтовик» пулнă вăл, ачам! Сволăч, пĕр сăмахпа каласан...

— Анчах епле-ха вăл вăрçă çинчен çынсем ĕненмеллех каласа пачĕ, хăй унта пулнă пекех? Чăн та, ытлашширех мухтаннине сисрĕмĕр, çапах та пурне те пĕлнĕ пек... — иккĕленчĕ Евгени.

— Илтнĕ ăна камран та пулин, — ал сулчĕ куккăшĕ. — Тен, ятарласах вуланă та пуль. Халĕ вĕт пирĕн салтаксем епле паттăррăн çапăçни çинчен кашни хаçатрах çыраççĕ.

Евгени шухăша кайрĕ: чăнах та, епле ирсĕр, тискер япала ку! Пĕтĕм халăх тăшмана çĕнтерме пур вăйне панă чух...

— Ну, ан тавай, — унăн шухăшĕсене татрĕ куккăшĕ. — Кăнтăрла иртни тăват сехет çитет. Тулта тĕттĕмленет ĕнтĕ. Аннӳ халь çеç правленирен килчĕ те пулă яшки пĕçерет-ха. Эпĕ леш бандитсем кукамупа иксĕртен туртса илнĕ швежи пулла каялла илсе килтĕм вĕт, ăна çиме ĕлкĕреймен вĕсем... Э, маннă тата! НКВД начальникĕ сана тав тума, салам калама хушса ячĕ. Питĕ мухтать...

— Хăйне тав тумалла ăна лешне тытнăшăн, — терĕ Евгени сентре хĕрринелле шуса. Анчах çавăнтах тем аса илчĕ те куккăшне хулĕнчен тытрĕ: — Итле-ха, каçхине манпа пĕрле милиционерсем мĕн тума килчĕç çав? Эп вĕсене Паллясен тĕлĕнче антарса хăвартăм...

— А вĕсем засадăра пулчĕç. Леш Лука Козловĕ аппăшĕ патне килсе кĕме пултарать тесе...

— Эсир ăна тытнă та-ха, вăл килмен ĕнтĕ?

— Вăл килмен пулин те — милицисем килнинчен усси пулнă. Хĕрлĕ Мари килĕнче ухтарсан вăрланă япаласем нумай тупнă.

— Чăнах-и?! — çăварне карсах пăрахрĕ Евгени.

— Тĕп-тĕрĕс. Кĕлет айне шăтăк алтса чикнĕ — темĕн тĕрлĕ çи-пуç, тир-сăран, çăматă, тем шуйттанĕ! Тĕп сакайĕнчен тата темиçе четвĕрт сăмакун туртса кăларнă. Тин çеç юхтарнăскер тет. Хĕрлĕ Марине милицисем хăйсемпе пĕрлех илсе кайнă. Ăна та хупаççĕ ĕнтĕ. Çавă чух!

— Палли вара мӗнле-ха... пӗчченех пурӑнать-ши ӗнтӗ? — пӑшӑрханнӑ пек пулчӗ Евгени.
— Ӑна-кӑна пӗлместӗп. Тӑванӗсемпе пурӑнать пуль.
— Ялта никам та ҫук вӗсен.
— Апла пулсан ял Совечӗн ӗҫӗ пулать ку. Вырнаҫтарӗҫ ӑҫта та пулин. Выҫтарсах вӗлермӗҫ.
Аялтан, кӑмака умӗнчи чӑлантан, Евгени амӑшӗн сасси илтӗнчӗ:
— Ҫитӗ сире вӑрттӑн калаҫнипе, анӑр, яшка пиҫрӗ!
— Есть! — салтакла ответ пачӗ ӑна куккӑшӗ.
...Хӗллехи тӗттӗм те сивӗ каҫхине Ильинка ҫывӑхӗнчи вӑрманта пулса иртнӗ хӑрушӑ ӗҫ ҫинчен «Ҫӗнӗ самана» колхозра ҫеҫ мар, пӗтӗм районӗпе пӗр икӗ эрне хушши калаҫрӗҫ. Ҫакнашкал йывӑр вӑхӑтра ҫынсене сӗмсӗррӗн кӳрентерсе пурӑннӑ вӑрӑ-хурахсене питӗ ӑнӑҫлӑ тытни пурне те савӑнтарчӗ. Калаҫнӑ чух вара пурте—палланисем те, палламаннисем те — Евгение ырларӗҫ:
— Питӗ паттӑр пулнӑ вӗт ҫав ача! Пӑх-ха эс ӑна, хӑйсене тапӑнса ҫаратнӑ хыҫҫӑн часрах киле ҫитсе ӳкме васкас вырӑнне каялла кайса милицисене пӗлтермелле тунӑ!
— Вӑрманти йӗрсене те хӑех тупса панӑ-ҫке!
— Тепри пулсан тӑнне те ҫухатмалла, чӗлхесӗр пулса лармалла, анчах та ку ҫухалса кайман авӑ...
— Маттур ача, маттур... Ҫавна ҫеҫ калама пулать!
Анчах Евгение хӑй ытлашши нимех те туман пек туйӑнчӗ. «Ман вырӑнта пулсан кашниех ҫапла тӑватчӗ пуль, — шухӑшларӗ вӑл, — вӑрӑ-хураха, халӑхӑн тӑшманне ху куҫупа куртӑн, ӑна палларӑн пулсан епле-ха ун ҫинчен тивӗҫлӗ ҫӗре пӗлтерме васкамастӑн пулать?!.»
Кунта ҫакна та каласа хӑвармалла: ҫав суя «фронтовик» Лука Козловпа унӑн тусӗсене тытнӑ хыҫҫӑн ку тӑрӑхра кам та пулин ҫынсене ҫаратса кӳрентерни ҫинчен тек нихҫан та сӑмахюмах илтӗнмерӗ.

## Тӑлӑх пулмаҫҫӗ вӗсем

Амӑшне милицисем илсе кайнӑ хыҫҫӑн Палля та килне питӗрсе тухса тарнӑ иккен. Вӑл, айван, халь хӑйне те айӑплаҫҫӗ тесе шутланӑ пулмалла ӗнтӗ. Ӑҫта кайнӑ — ӑна никам та пӗлмен. Чылайран тин тахӑшӗ Шупашкартан таврӑннӑ чух Палля Хыркасси вӑрманӗнчен ҫунашкапа ҫапӑ туртса тухнине курнӑ.
— Эппин, кукамӑшӗ патӗнче, Хыркассинче, пурӑнать вӑл, — тенӗ ҫынсем. — Ку лайӑх-ха ӗнтӗ...

Анчах ик-виçĕ эрне иртсен пĕр ирхине ирех çынсене вăрмана вутă патне йĕркеллĕ кăларса ярас тесе лаша витисем еннелле утнă май колхоз председателĕ Назар Егорччă Паллясен мăрйинчен тĕтĕм пăрăлтатса тухнине курчĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: мĕне пĕлтерет ку? Кам вут хутма пултарнă никам пурăнман пўрте кĕрсе?

Назар Егорччă тўрех тĕрĕслесе пăхма шут турĕ. Вăл картишне кĕчĕ, крыльцана хăпарса çенĕк алăкне тĕртрĕ. Алăк уçăлмарĕ, ăна шалтан тĕкĕленĕ иккен. Шаккарĕ. Сас паракан пулмарĕ. Татах шаккарĕ.

— Кам кĕнĕ унта? Халех уçнă пултăр, атту çынсене чĕнсе килетĕп те алăка çĕмĕрттеретĕп! — хăратса каларĕ ват çын.

Çакăн хыççăн тин шалта ура сасси, унтан алăк сăлăпне ерипен шутарса кăларни илтĕнчĕ. Алăк уçăлсанах Назар Егорччă хăй умĕнче кĕрĕк пиншак, така тирĕнчен çĕленĕ çăмламас çĕлĕк тăхăннă Палля тăнине курчĕ те тĕлĕнсех кайрĕ.

— Эс... килтех тем? — ыйтрĕ вăл.

— Килтех... — хăюсăр хуравларĕ Палля.

— Эс кукамусем патĕнче пурăнать темерĕç-и çав?

— Кукамай вилчĕ...

— Епле тăруках вилчĕ тата?

— Вăл эп пынă чухнех питĕ чирлĕччĕ... Ăна пытарсан вара ун пўрт алăкĕпе чўречисене хăмасемпех çапса лартрĕç те мана киле таврăнма хушрĕç.

— Хăçан килтĕн эс?

— Ĕнер каç... Шăнса вилеттĕм кĕçĕр, аран çĕр каçкаларăм.

— Ма-ха кўршĕсем патне кайса выртмарăн? Хутман çуртра çĕр выртсан шăнса пăсăлма та пулать вĕт, ухмах ача!

— Хăяймарăм...

Палля пĕрмаях пуçне усса, Назар Егорччăна куçран пăхма именнĕ пек калаçса тăчĕ. Юлашки сăмахĕсене каланă чух унăн сасси те чĕтренме тытăнчĕ — кĕç-вĕç макăрса ятратчĕ пулмалла. Вăл пўртелле утрĕ, Назар Егорччă та ун хыççăн кĕчĕ.

— Апла-ха, эппин, сан пурнăç... — Назар Егорччă сивĕ сак çине ларса ассăн сывласа ячĕ те чĕлĕмне табак тултарса чĕртрĕ. Вăл халь кăмакара чашкăрса выртакан чĕрĕ вутта лайăхрах çунтарма ăна турчкапа тĕккелесе тăракан арçын ачана чунтанах хĕрхенчĕ. Чăнах та, Палля нимĕн чухлĕ те айăплă мар вĕт-ха, пĕтĕмпех амăшĕ айăплă! Колхозра та нихçан та çынсем пек чунне парса ĕçлемерĕ вăл, кўршĕ-аршăсемпе те килĕштерсе пурăнмарĕ, шав ханша юхтарса сутрĕ, юлашкинчен тата халăха çаратакансемпе çыхланса кайнă иккен... Халăх куççулĕпе пуйма шутланă! Куншăн каçару пулмасть ĕнтĕ, вăл паллă. Анчах та ачин мĕншĕн асапланмалла? Кам пăхать ĕнтĕ ăна халь, кам ăс парать, пурнăç тума вĕрентет?.. Эх, пулаççĕ

те вĕт çавăн пек путсĕр çынсем! Хăйсем иртĕннипех ачисене телейсĕр туса хăвараççĕ!..

— Мĕнле пурăнас тетĕн-ха ĕнтĕ малашне, ачам? — лăпкăн кăна ыйтрĕ Назар Егорччă. — Çавăн çинчен шухăшласа пăхрăн-и эс? Аннӳ мĕн те пулин каласа хăварчĕ-и хуть?

— Вăл мана кукамай патне кайма хушрĕ çеç...

— Анчах вăл хăй те нумай пурăнайман авă. Урăх тăвансем çук вĕт санăн?

— Çук...

— Çакăн пек пĕчченех пурăнас тесе шутлатăн-и?

— Мĕн тăвас-ха манăн? Вилместĕп пуль-ха. Паранкă пур. Çăнăх та пур-ха. Вутти те хĕл каçма çитет.

— Апат-çимĕçне кам пĕçерсе парĕ сана, кĕпӳ-йĕмне кам çăвĕ, пӳрт-çуртне кам тасатĕ?

— Хамах, ара...

— Çук, ачам, ун пек санăн пурнăç пулса çитеймест пулĕ. Шухăшлас пулать лайăхрах. Тен, кам патне те пулин пурăнма куçма тивĕ?

Палля старик çине куç харшисем айĕн, шанмасăр, шикленнĕ пекрех пăхрĕ. Чылайран тин вара:

— Кам усратăр-ха мана? — терĕ те ассăн сывласа ячĕ. — Эпĕ вĕт... хăвах пĕлетĕн...

— Мĕн вара эсĕ? Камах вара эс? — кăмăлсăрланса сассине хытарчĕ Назар Егорччă. — Ача тăк ача, урăх никам та мар. Пурин пекех!

— Пурин пекех мар çав. Ун çинчен нумай шухăшларăм эпĕ, Назар мучи. Шкулта та йĕркеллĕ вĕренмен, шав тантăшсемпе çапăçнă. Юлашкинчен акă вăрă-хурах таврашĕ пулса тăтăм. Манăн халь урама тухма та хăрамалла, ачасем тӳрех тем те пĕр каласа мăшкăллама тытăнаççĕ. Чи телейсĕр çын эпĕ халь...

«Кур-ха, хăйĕн йăнăшĕсене ăнланма пуçланă тата, шĕпĕн. Ку питĕ аван-ха...» — шухăшласа илчĕ хăй ăшĕнче Назар Егорччă. Çавăнтах ачана хирĕç каларĕ:

— Куна пустуй палкатăн вара эсĕ. Сана кӳрентерме нимĕнле сăлтав та çук. Пĕтĕм айăп — аннӳре, вăл пурнăçра ялан йăнăш çулпа утнă, сана та ырра вĕрентме тăрăшман. Куна тĕрĕссипех калас пулать. Анчах эсĕ ухмах ача мар, вĕренме те, ытти пур ачасем пек йĕркеллĕ пулма та пултаратăн тесе шутлатăп. Пултаратăн вĕт?

Палля чĕнмерĕ. Вăл Назар Егорччă хăй шухăшне ăçталла пăрса пынине тавçăрса илме тăрăшрĕ пулас.

— Эпир пурне те çапла калăпăр: Палляра нимĕнле айăп та çук, çавăнпа та ăна кӳрентерме юрамасть тейĕпĕр. Никам та хирĕç калаймĕ. Ху йĕркеллĕ пулсан учительсем те сана юратсах вĕрентĕç, ыттисенчен уйăрмĕç. Анчах вĕренессе епле пул-

сан та вĕренесех пулать. Хальхи вăхăтра вĕренмесĕр юлнă çын — çын та мар вăл. Эпир ача чухне вăт вĕренме, чăнах та, çав тери йывăрччĕ — кашни кун, çанталăкне-мĕнне пăхмасăрах, Чирĕккассине, хамăр ялтан çичĕ çухрăма, утаттăмăр, пирĕн шкулĕ те чиркӳ хурал пӳртĕнче кăначчĕ, учителĕ те ялан ӳсĕр çӳрекен чечук çеçчĕ. Ĕçсе пыратчĕ те вара вулама-çырма вĕрентес вырăнне кунĕпе «отченашсем» çухăрттаратчĕ, эпир юрлани килĕшмесен тапкăпа та çупкăпа ислететчĕ. Анчах та ку чухне... мĕн каласси пур! Халĕ ав епле хăрушă вăрçă пырать, халăха калама çук йывăр килчĕ, çапах та патшалăх ачасем çинчен манмасть, вĕрентет, куллен тăрăшать вĕсемшĕн...

Çак сăмахсене Назар Егорччă шухăша кайса, хăй тĕллĕн калаçнă пек калаçса ларчĕ. Пĕр хушă Палля çине те пăхмарĕ вăл. Анчах Палля ват çын сăмаххисене тимлесех итлерĕ, вăл каланисене чĕре патне илчĕ курăнать.

— Пурăнасси пирки эпир санпа ак епле шут тăвăпăр, ачам, — терĕ унтан Назар Егорччă сӳннĕ чĕлĕмне тепĕр хут чĕртсе. — Тавай эсĕ паянах хам пата пурăнма куç...

Палля ун сăмахĕсене ытла тӳрех ăнланса та çитеймерĕ пулмалла.

— Ăçта? — тĕлĕнсе пăхрĕ вăл старик çине.

— Ман пата тетĕп-иç. Вырăн çитет пирĕн, карчăкпа иксĕмĕр çеç пурăнатпăр. Малти пӳртне эвакуированнăйсене ятăм ĕнтĕ, анчах вĕсем пире кансĕрлемеççĕ. Пит лайăх пурăнма пултаратпăр...

— Эс куна... чăн-чăнах калатăн-и, Назар мучи? — тăрук пăлханса кайса ыйтрĕ Палля. Ялта ялан пысăк хисепре пулнă çын, колхоз председателĕ ăна хăй патĕнче пурăнма чĕнесси çинчен шутлама та пултарайман çав вăл!

— Чăнласах пулмасăр тата. Шӳт тума манса кайнă ĕнтĕ эпĕ, ачам, — ура çине тăчĕ Назар Егорччă. — Вăхăчĕ халь шӳт тумалли вăхăт мар. Манăн çак вăрçă пĕтиччен çынсене епле те пулин ыр туса пурăнасси çинчен çеç шухăшламалла. Вăрçăрисене те пулăшсах тăрас пулать, килте юлнисене те манмалла мар... Çапла, ачам, паянах куç, атту шăнса вилетĕн эс кунта. Паранкине хăвна çимелĕх хăварăпăр та ытлашшине патшалăха сутăпăр. Тырри-пуллине, вăл санăн пурах пулсан, виççе хурăпăр. Мана санăн пĕр пĕрчӳ те кирлĕ мар, хам валли манăн хамăн та пур. Юрать-и çапла? Килĕшрĕмĕр-и?

Палля иккĕленсе тăчĕ-ха. Хăй килĕшменнипе те мар, урăххишĕн...

— Эс капла калатăн та-ха, Назар мучи, — терĕ вăл хăюсăртарах сасăпа, — анчах кинеми килĕшĕ-и?

— Ман карчăк-и? Урине-и?

— Ийя çав. Виçĕм çул ухмахланса эпĕ хам пек ачасене сирĕн

пахчана илсе кĕртсе хăяр-кишĕр йăранĕсене сăтăр тунăччĕ... Çавăншăн кинеми пирĕн пата киле килсех вăрçрĕ. Анне ăна ун чухне хапхаран тĕртсе кăларса ячĕ. Çавна манман ĕнтĕ кинеми...

— Э, уншăн ан хăра! Пурнăçри пур ăпăр-тапăра кам-ха ĕмĕр тăршшипе асăнса пурăнать? Тепĕр енчен илсен манăн карчăкăн кăмăлĕ — ылтăн, ухмах мар вăл. Йывăра лекнĕ çынсене яланах пулăшма хатĕр. Калатăп та ăнланать. Чухласа илет.

— Апла пулсан...

— Çаплах, ачам. Йĕркеллех пулать. Эс мана шан.

...Кĕтмен-туман çĕртенех Палля Назар Егорччă усрав ывăлĕ пулса тăчĕ. Нумайăшне ку питĕ тĕлĕнтерчĕ: епле-ха вара Назар Егорччă пек сăпайлă, йĕркеллĕ, ытлашши шăв-шава тӳсме пултарайман ятлă çын ялти чи пуçтах хĕрарăм ачине, чăн-чăн хулигана хăй килне кĕртме пултарнă пулать?..

— Кăтартать-ха ăна Палля мĕн кăтартмаллине! Сахал мар ӳкĕнмелле пулать акă Назар Егорччăн! — терĕç хăшĕсем.

— Курăр акă, пĕр эрнеренех кăларса ярать вăл ăна! Ара, çав вĕреçĕлен ачине ăçтан çын тăватăн?!

Анчах теприсем ватă колхоз председательне чунтанах ырларĕç:

— Питĕ тĕрĕс тунă Назар Егорччă! Маттур! Чăн-чăн совет çынни пек тунă. Акă Палляна алла илет те вăл майпе унăн ăстăнне те, кăмăлне те улăштарать. Çын тăватех унран!

Çак хыпар ял тăрăх сарăлсан куншăн пуринчен те ытларах Рина Петровна савăнчĕ. Ара, Палля унăн класĕнче вĕреннĕ ача пулнă-çке, ку ачан малашнехи пурнăçĕшĕн вăл та ответ тытнă. Сахал мар чăрмав кӳнĕ ăна Палля, кӳренме те тивнĕ уншăн, анчах Рина Петровна темле тăрăшсан та Палля тӳрленмерĕ. Халĕ, Назар Егорччăн усрав ывăлĕ пекки пулса тăнă хыççăн, тен, Палля чăнах та йĕркеленсе кайĕ? Кун пирки ытти учительсем те, Евгенисен амăшĕ Улька та çавăн майлах шухăшланă.

Çапла шутлакансем йăнăшман. Йăнăшаканĕсем Назар Егорччăн ырă ĕçĕ пирки иккĕленсе калаçакансем пулчĕç. Ун патне куçнă хыççăн Палля, çĕнĕрен çуралнă пек, палламалла мар улшăнса кайрĕ. Унччен хи вĕçкĕнлĕх, алхасасси, юлташĕсене кӳрентересси асра та юлмарĕ, вăл каллех шкула çӳреме тытăнса çине тăрсах вĕренме пуçларĕ, ушкăнпа пĕрле пухăнса тăвакан ĕçсенчен те ĕлĕкхи пек пăрăнмарĕ, кил таврашĕнче те тăрăшрĕ.

Назар Егорччă арăмĕ, Урине кинеми, хăйĕн упăшки Палляна усрама илесси çинчен сăмах хускатсан чăнах та хирĕç пулнăччĕ.

— Ухмаха ан ер-ха эсĕ, старик, ан йӳте! Кай-кай-кай, ан



6. Заказ № К-3048.

та пупле! — ик аллипе харăс сулчĕ вăл. — Тем курса ларăн унпа!

Иккĕшĕ самаях тавлашнă хыççăн Урине çапах та Палляна илме килĕшрĕ, анчах тĕрĕссипе каласан ун çине чылайччен шанмасăртарах, унран ютшăнарах пурăнчĕ. Пĕр-икĕ эрне иртсен вара Палля хăйне йĕркеллĕ тытнине кура ăна хăйĕн тăван ачине пăхнă пекех пăхма пуçларĕ. Çынсем ун çинчен ыйтсан та ырăпа çеç каларĕ:

— Ачине тиркемелли çук. Назарпа иккĕшĕ ашшĕпе ывăлĕ пекех пурăнаççĕ.

Çапла улшăнчĕ Палля пурнăçĕ...

...Вăхăт шурĕ, майĕпе сивĕ кунсем иртсе пычĕç, хĕвел куллен-кун çӳлерех хăпарса кăнтăрласенче пӳрт-çурт тăррисенчен тумла юхтара пуçларĕ. Колхоз çине тăрсах çур акине хатĕрленчĕ. Ватă Пауль Киккас ытла вăрт-вартах ĕçлеймест пулин те плугсене, сӳресене, тырă акмалли машинăсене йĕркене кĕртсе çитерчĕ. Хĕрарăмсемпе, стариксемпе пĕрле шкул ачисем те пĕр эрне хушши, уроксем хыççăн, уя тислĕк турттарчĕç, икĕ вырсарни кун, иртен пуçласа каçчен, килтен киле çӳресе кĕл пуçтарчĕç. Кĕлĕ пирки Назар Егорччă малтанах пурне те асăрхаттарнăччĕ — никамăн та пĕр чĕптĕм кĕл те çилпе вĕçтерсе ямалла мар, пухса пымалла тенĕччĕ.

— Темле йывăр пулсан та кăçал пирĕн вăйлă тыр-пул илмелле. Салтаксем валли, çĕнтерӳ валли! — терĕ вăл.

Фронтран ку яхăнта усал хыпарсем те, лайăххисем те питех килмерĕç, пур çĕрте те тенĕ пекех «вырăнти çапăçусем» çеç пулса пыраççĕ. Эпир тăшмана çĕнтерсе малалла кайни те, чакни те çук. Çапах та «Çĕнĕ саманаран» вăрçа кайнисенчен икĕ çын вилни çинчен пĕлтерекен хутсем килчĕç. Темиçе салтак аманнă, госпитальсенче выртаççĕ. «Вырăнти çапăçусем» те çăмăлах мар иккен çав...

Шкулти вĕренӳ йĕркеллех пулса пычĕ. Эвакуированнăй ачасем те чиперех вĕренчĕç, чылайăшĕ вырăсла калаçнине те, вуланине те ăнланакан пулчĕ, пăт-пат чăвашла та перкелешме пуçларĕç ĕнтĕ.

— Лайăх-ха ку, пит лайăх, — терĕ ватă Пауль, пĕчĕк хĕрăнукĕ Эльга Евгени йăмăкĕпе Маринепе чăвашла пакăлтатнине илтсе. — Виçĕ чĕлхе пĕлекен пулаççĕ: эстонла, вырăсла, чăвашла...

Пауль кинĕ — Янсен амăшĕ Амалия — каçсерен ялти хĕрсемпе пĕрле вăрçăри салтаксем валли тĕрлĕ парнесем: алсиш-чăлха, пит шăллисем, табак енчĕкĕсем çыхса-çĕлесе хатĕрленĕ май вĕсене çĕвĕ çĕлеме, çав тери кăткăс тĕрĕсем тĕрлеме, чĕнтĕрсем çыхма вĕрентрĕ. Ку ĕçсене тума питĕ ăста пулнă

вăл, ахальтен мар вăрçă умĕн хăйсем патĕнче çĕвĕ мастерскойне ертсе пынă. Çур енне вара кашни килте тенĕ пекех хитре чӳрече каррисем, чĕнтĕрлĕ çытар пичĕсем, сĕтел çиттисем курăна пуçларĕç. Аслăраххисемпе пĕрле çын пурнăçне илем кӳрекен çак ал ĕçне шкулта вĕренекен хĕр ачасем те хăнăхса пычĕç. Кăмăла каякан япала яланах чуна туртать-çке вăл!

Рина Петровна ятарласа вунă кунлăх отпуск илсе Саратоври госпитальте выртакан аманнă пиччĕшне курма кайса килчĕ. Питĕ хаваслă таврăнчĕ вăл — унăн пиччĕшĕ, Федор Молгачов лейтенант, сывалсах пынă, çитменнине тата фашистсемпе паттăррăн çапăçнăшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ памалла тунă иккен. Часах вăл госпитальтен тухать те каллех фронта каять...

Кайса килме çăмăлах пулман, хăш чух Рина Петровнăсен пуйăсĕ станцисенче çуршар талăк тăнă, анчах кун пирки те вăл хавассăн каласа пачĕ:

— Пур çулсем тăрăх та фронт еннелле çар эшелонĕсем васкаççĕ. Мĕн чухлĕ куртăм пуль эп вĕсене! Вĕçĕмсĕр салтак каять, техника — танксем, тупăсем, автомашинăсем... Чун савăнать вĕсем çине пăхсан! Гитлер ĕнтĕ тахçанах Хĕрлĕ Çара пĕтерсе хутăмăр, унăн текех резервсем те, хĕç-пăшал та çук тесе каппаять, анчах пăхатăн та — пур вĕсем пирĕн! Иксĕлми вăй! Никам та çĕнес çук ăна!..

Çаксене вăл киле çитнĕ кунах каçалапа Евгенисем патне пырса каласа кăтартрĕ. Евгенисемпе Киккассен кил-йышĕсем ун калавне çав тери тулли кăмăлпа итлесе ларчĕç.

— Сирĕн çинчен каласа парсан тата сирĕн ятпа салам каласан Федя эп пынăшăн савăннинчен те ытларах хĕпĕртесе кайрĕ пулас, — терĕ Рина Петровна ватă Пауле. — Ыйтса пĕлсе тăна яратчĕ: «Епле çиткеленĕ вĕсем пирĕн пата? Пурте сывах-и? Ачисем мĕнле? Вĕренеççĕ-и? Янсен ашшĕ пирки хыпар пур-и?..» Тем те ыйтать! Тухса килес умĕн сире пурсăра та ытама кĕми пысăк салам калама, сирĕн ачăрсене пурне те ыталаса чуптума хушрĕ. Акă тата сире валли хăй сăнне те парса ячĕ — госпитальти тумпах ӳкерĕннĕ... — Рина Петровна кĕсйинчи блокнот хушшинчен пысăках мар сăн ӳкерчĕк кăларса Пауле тыттарчĕ.

— Тавтапуç, хĕрĕм... — йăрăм-йăрăмлă пижама тăхăннă, икĕ костыль çине тĕренсе тăракан паллană каччăна курсан ватă эстонецăн хурланнипе куçĕсем те шывланчĕç.

— Ывăлăм... — Вăл ӳкерчĕке чуптуса илчĕ те Амалие тыттарчĕ, лешĕ ун çине вăрахчен пăхнă хыççăн Яна пачĕ.

— Ону Федья... — çемçен кулса илчĕ Ян.

Хăйне итлесе ларакансем ыйтнипе Рина Петровна пиччĕшĕн вăрçăра мĕн-мĕн тӳссе ирттерме тивни çинчен каласа

кăтартма тытăнчĕ. Шăп çав вăхăтра алăк уçăлчĕ те, пӳрте Антонина Клементьевна фельдшерица кĕрсе тăчĕ. Арçын çĕлĕкĕпе, ваткăллă фуфайкăпа, уринче — пысăк сăран атă, аллине, яланхи пекех, хĕрлĕ хĕреслĕ симĕс сумка тытнă.

— Килех, кил, Тоня, иртсе лар пирĕнпе, — кăмăллăн кĕтсе илчĕ ăна Евгени амăшĕ Улька. — Рина Петровна пире хăй пиччĕшĕ çинчен каласа кăтартать-ха, эс те ларса итле...

Фельдшерица ăна хирĕç ним чĕнмесĕрех тумтирне хывса çакрĕ, вăраххăн малалла иртсе пурне те сывлăх сунчĕ те хыçсăр пукан çине ĕшенчĕклĕн ларчĕ. Çав самантрах йывăррăн сывласа ячĕ. Пурте ун çинелле пăхрĕç. Сăнĕ темле шурса-кăвакарсах кайнă унăн.

— Мĕн пулнă сана, Антонина Клементьевна? Чирлемерĕн пулĕ те? Санăн сăну темле... сывă çыннăнни пек мар, — пăшăрханса ыйтрĕ Рина Петровна.

— Эп сывах-ха, мана ним те пулас çук, — ывăннă куçĕсемпе пăхрĕ ун çине фельдшерица, — анчах питĕ пысăк хуйхă килсе тухрĕ, ниçта кайса кĕме пĕлместĕп...

— Хуйхă? Мĕнле хуйхă тата? Мĕн пулчĕ?

— Вăрçăран ырă мар хыпар килмерĕ пуль те? — ыйтрĕç Рина Петровнăпа Улька пĕр-пĕрине пӳле-пӳлех. Фельдшерицăн та упăшки вăрçăра-çке-ха.

— Фронтран хыпар кĕтместĕп-ха эпĕ, ман Илле Пермьре госпитальте выртать...

— Мĕн эппин, тата?

— Пĕр сехет каялла леш енче пурăнакан белорус хĕрарăмĕ Аксана Дорожка вилсе кайрĕ...

— Вилчĕ?! Епле вилчĕ? — хăраса кăшкăрсах ячĕç хĕрарăмсем.

— Аркашсем патĕнче пурăнакан Петруççен амăшĕ вилчĕ-и? — пукана кĕмсĕр-р! шутарса сиксе тăчĕ Евгени. — Ара, эп ăна виç-тăват кун каялла çеç çырмара кĕпе чӳхенине куртăм-çке?!

— Вăл виç-тăватă кун каялла пулнă, анчах паян акă... вилчĕ. Правление кайса каларăм ĕнтĕ тупăк тума...

— Ниепле те çăлма пулмарĕ-и?

— Ах, ан та калăр... — Антонина Клементьевна каллех пĕтĕм кăкăрĕпе ассăн сывласа ячĕ. — Мĕн тума пултарнине пурне те турăм çав, усси пулмарĕ. Çăлаймарăм. Кая юлнă. Малтарахран тытăнмалла-мĕн... Пĕр эрне каялла вăл ман пата пырса пуçĕ ыратнă пирки ӳпкелешрĕ. Грипп пуçланнăччĕ унăн. Эп ăна порошоксем патăм та чирĕ иртсе кайиччен килтех лар, ниçта та ан тух терĕм. Анчах эпир тухтăр тавращĕ каланине итлетпĕр-им? Вăл пĕр кун килте ларнă та кăшт самайланнине туйса пуль çав кĕпе çума тытăннă. Вĕриленнĕ ĕнтĕ, тарланă... Унтан çунă кĕписене чӳхеме çырмана аннă. Темле пулнă-çке,

пĕлместĕп, те пуҫĕ ҫаврăнса кайнă унăн, те пăрлак ҫĕрте ури ăнсăртран шуҫнă... Пĕшкĕнсе кĕпе чӳхекенскер вакка аннă кайнă. Пăрлă шыва кăкăрĕ таранах кĕрсе тăнă. Унпа пĕрле пулнă хĕрарăмсем ăна ҫийĕнчех туртса кăларнă, вăл киле чупнă, типĕ кĕпе тăхăннă та лайăхрах ăшăнас тесе вĕри кăмака ҫине хăпарса выртнă, анчах ăна часах пĕҫертсе пăрахнă. Кил хуҫи, Алтатти, нимĕнпе те пулăшайман. Ҫĕрле ман пата чупса пынă. Анчах эпĕ шăпах ҫав кун района аптекăна кайсаттăм. Часах ҫул пăсăлать, шыв-шур тапранать, унччен эмелсем илсе хурас терĕм. Аптека пуҫлăхĕ те Шупашкара медикаментсем патне кайнă иккен. Каҫ та таврăнмарĕ вăл, манăн ҫĕр выртмалла пулчĕ, тепĕр кунне те кăнтăрла иртсен тин ҫитрĕ. Эп те вара ҫĕрле пулсан тин таврăнтăм. Анне мана Аксана ачи темиҫе хут та чĕнме пыни ҫинчен каласанах эп вĕсем патне тухса чупрăм. Аксана ним пĕлми, вут пек ҫунса, аташса выртатчĕ. Итлесе пăхрăм — питĕ вăйлă пневмони, воспаление легких. Ик енĕ те шыҫнă. Эп эмеллеме тытăнтăм, температурине чакарма тăрăшрăм. Уссиех пулмарĕ. Чирлĕ хĕрарăм кăшт лăпланнă пек пулать те каллех аташма, тапкаланма тытăнать... Виҫĕ талăка яхăн лартăм ун ҫумĕнче. Халран кайса ҫитнипе ун пуҫĕ вĕҫне сак ҫине кăшт выртатăп та чирлĕ ҫын каллех асапланма тытăннине туйсанах сиксе тăратăп. Алтатти те виҫĕ кун вуҫех ҫывăрмарĕ пулмалла. Анчах ҫав-ҫавах ҫăлса хăвараймарăмăр. Чĕри тӳсеймерĕ курăнать...

Антонина Клементьевна калама чарăнчĕ те ҫĕрелле ним тĕлсĕр пăхса ларчĕ. Пӳртре шăп пулчĕ. Нихăшĕ те пĕр сăмах та калама пултараймарĕ ҫав, фельдшерица пĕлтернĕ хăрушă хыпар пурне те тăнран кăларса янă пек пулчĕ. Ытла та кĕтмен ҫĕртен, сасартăк килсе тухрĕ-ҫке ку хурлăх!

— Ырансем пытарас пулать ĕнтĕ... — терĕ Антонина Клементьевна пĕр хушă чĕнмесĕр ларнă хыҫҫăн. — Анчах ачисемпе мĕнле тумалла пулать-ши-ха? Иккĕ унăн: ывăлĕ пĕр вун иккĕ-вун виҫҫĕсенче пулмалла, хĕр ачи тин ҫеҫ шкула ҫӳреме тытăннă-ха — кам пăхса ӳстерĕ вĕсене? Тăванĕсем ҫук...

— Петрусь вун пиллĕк тултарать, пĕвĕпе пĕчĕккĕ пулнипе ҫеҫ кĕҫĕнрех пек курăнать. Калери, ун йăмăкĕ, тăххăрта, — терĕ Евгени, белорус ачи хăйĕн тусĕ Аркаш патĕнче пурăннăран ăна пит лайăх пĕлекенскер.

— Кам пăхтăр? Хамăрăнах пăхас пулать ĕнтĕ, колхозăн. Выҫтарса вĕлеретĕн-им ачасене? — терĕ Улька.

— Ишлейре Ленинградран куҫса килнĕ ачасен ҫурчĕ пур, иккĕшне те ҫавăнта вырнаҫтарма пулатчĕ ĕнтĕ, анчах унта ахаль те пĕр кравать ҫинче пуҫа-пуҫăн тăватшарăн ҫывăраççĕ иккен, пĕр воспитательницăран илтрĕм ăна, — терĕ Рина Петровна.

— Хамăрах пăхса ӳстеретпĕр, — тепĕр хут ҫирĕппĕн, пат татса каларĕ Евгени амăшĕ. — Колхоз кил-йышĕнче тăлăх пулмаççĕ вĕсем...

## Ҫулсем-йĕрсем

Апрель вӑрринче, шăп шыв-шур тапраннă вăхăтра, каç пуласпа «Ҫĕнĕ самана» колхоза каллех хайхи «райком хĕрĕ» Нина Кулюкова пырса ҫитрĕ. Кĕркунне килсен ҫывăх паллашнă май вăл тӳрех Рина Петровна хваттерне кайрĕ. Тĕл пулнăшăн хĕпĕртесе хĕрсем пĕр-пĕрне ыталаса чуптусах илчĕç.

— Мĕнле ырă ҫил вĕçтерсе килчĕ сана ҫакăн пек вăхăтра? Пĕр-пĕр лакăма кĕрсе ӳксе путасран та хăрамарăн пулать? — кăмăллăн ыйтрĕ Рина Петровна.

— Пĕрваскавлă ĕç сиксе тухрĕ-ха. Санăн каллех пулăшмалла пулать мана, — терĕ Кулюкова.

— Пултарсассăн — ма пулăшас мар?

Рина Петровна васкасах чей ăшăтнă хыççăн иккĕшĕ сĕтел хушшине ларсан «райком хĕрĕ» хăй мĕнле ĕçпе килнине каласа пачĕ.

— Эс илтнĕ пуль-ха, пирĕн республикăна вăрçă пыракан вырăнсенчен темиçе заводпа фабрика куçарса килнĕ, — терĕ вăл. — Хăшне-пĕрне пухса ĕçе те янă ĕнтĕ, вĕсем продукци туса кăларма та пуçланă. Анчах ҫак предприятисенче ĕçлеме ҫынсем ҫитмеççĕ. Квалификациллĕ рабочисем нумай кирлĕ унта. Вĕсене тăруках ăçтан тупатăн-ха? Халех, васкасах вĕрентсе хатĕрлес пулать. Ҫакна валли хулара харăсах икĕ ФЗО уçаççĕ. Пĕри электроаппаратсем тăвакан завод валли, тепри пир-авăр фабрики валли кадрсем хатĕрлемелли. Пĕрремĕшне пуринчен ытларах арçын ачасене илеççĕ, теприне — хĕр ачасене. Пир-авăр тĕртесси ĕмĕртенпех хĕрарăм ĕçĕ пулнă-çке-ха вăл. Вĕренекенсене государство хăй усрать — тумлантарать, ҫитерет-ĕçтерет, общежити те пулать. Ултă уйăхран вара вĕсем разрядлă рабочисем пулса тăмалла... Мана шăп ҫав ФЗОсем валли ҫамрăксене суйласа пухма кăларса ячĕç.

— Камсене, миçе ҫулхисене илеççĕ-ха унта?

— Пуринчен малтан фронтовиксен ачисене. Ашшĕ-амăшне ҫухатнисене, тăлăхсене. Вун тăватă ҫултан пуçласа. Паллах, вĕсем сывлăхлă, производствăра ĕçлеме юрăхлă пулмалла. Вĕренӳ енĕпе илсен улт-ҫич класс пĕтернисем кирлĕ.

— Миçе ҫын илсе каясшăн вара эс пирĕн патран?

— Пĕр пиллĕк. Районран пĕтĕмпе вăтăр ҫын ямалла. Заня-

тисем Майӑн пӗрремӗшӗ хыççӑнах пуçланаççӗ, çавӑнпа та ӗçе пӗртте вӑраха яма юрамасть. Епле шутлатӑн, тупатпӑр-и çавӑн пек «кадрсем»?

— Шырас пулать. Тупӑнать те пулӗ.

Хӗрсем çав каçах правление кайрӗç. Назар Егорчча хӑйсем мӗн пирки пынине пӗлтерсен старик хавасланса калаçма тытӑнчӗ.

— Апла-ха эппин, рабочи класс хатӗрлес тетӗр пулать? Ӑслӑ шухӑшласа кӑларнӑ. Кирлӗ, питӗ кирлӗ! — терӗ вӑл. — Пӗтӗм вӑй питти халӑх вӑрçӑра, анчах вӑрçин вӗçӗ курӑнмасть-ха. Камӑн ӗçлемелле? Ялӗнче те ал çитменнипе хӑшкӑлатпӑр ав. Кашни çын — ылтӑн. Заводсенче пушшех кансӗр ӗнтӗ, ӑна ӑнланма йывӑр мар. Пули-пулми çынна станок умне тӑратай-мастӑн. Уя пӗр лав тислӗк кайса тӑкасси мар унта. Пӗлес пулать... Юрӗ, хӗрӗмсем, ыран çынсемпе калаçса пӑхӑпӑр. Тата кама ярас тенисемпе хӑйсемпе те пуплемелле пулӗ. Ирӗксӗр-лесе ямастпӑр вӗт. Хӑйсен ирӗкӗпе каяççӗ.

— Паллах, хӑйсен кӑмӑлӗ пулнипе çеç, — терӗ Кулюкова. — Ирӗксӗрлесе илсе кайнӑ çынран мӗн усси? Вӑл вӗренессе те тӑрӑшса вӗренес çук, кайран ӗçлесси те темле... Халӑх укçине харама яни çеç пулать.

— Тӗрӗс сан сӑмаху...

Ирхине председатель бригадирсене, вӑхӑтлӑха шкул директорӗнче ӗçлекен Рина Петровнӑна, комсомол секретарьне Виталие чӗнтерчӗ те хӑйне майлӑ канашлу турӗ. Кама сӗнме май пур, хӑш ачинчен чунне парса ӗçлекен рабочи пулма пултарать?

— Чӑн малтан вӑрçӑрисен ывӑл-хӗрӗсене, тӑлӑх-туратсене ямалла тетӗр-и-ха? — ыйтрӗ Назар Егорчча Кулюковӑран.

— Инструкцире çапла каланӑ.

— Ӑслӑ тунӑ. Салтак çемйисене çӑмӑлрах пулать — лере çитереççӗ, тумлантараççӗ, вӗренсе пӗтерсен кил-йышне укçапа та пулӑшма пултарать. Тӑлӑхсем те ашшӗ-амӑшӗсӗрех патшалӑхшӑн усӑллӑ çын пулса ӳсеççӗ...

Çак Назар Егорччӑн пӗр тӗлӗнмеллерех йӑла пур: хӑй шухӑшланӑ чухне шухӑшӗсене вӑл саспах каласа пырать. Халӗ те çавӑн пек саспа шухӑшласа илчӗ вӑл. Унтан пухӑннӑ çынсене пӑхса çаврӑнчӗ те:

— Калаçӑр, юлташсем. Пысӑк ӗç вӗт. Патшалӑх ӗçӗ, — терӗ.

Комсомол секретарӗ Витали, «райком хӗрӗпе» каçах тӗл пулса калаçнӑскер, фронтовик çемйисен списокне туса хатӗрленӗ те иккен. Вӑл ӑна йӗркипе вуласа пама тытӑнчӗ. Кашни çемьере миçе ача тата вӗсем миçе çулта пулнине те кӑтартнӑ. Пилӗк-ултӑ ачаллисем те пур. Йывӑртарах пурӑнаççӗ... Йӗркипе сӳтсе явса Назар Егорчча пухнӑ «комисси» ФЗОна яма юрӑхлӑ

ачасене чылай тупрĕ. Вĕсем хăйсем тата амăшĕсем килĕшсен вунă çын ытла ăсатма пулать.

— Эвакуированнăйсем хушшинче тăлăхсем çук-и? — тăрук ыйтрĕ Нина Кулюкова. — Çавсене манас пулмасть...

Вара пурте пĕр харăсах Петрусь Дорожкăна аса илчĕç.

— Унăн халь кăна амăшĕ вилсе кайрĕ, пĕчĕк йăмăкĕпе çеç тăрса юлчĕç, — тесе пĕлтерчĕ Витали Кулюковăна.

— Мĕнле, юлташсем? — ыйтрĕ Назар Егорччă. — Ман шутпа, ăна вĕренме ярсан чăнах та лайăх пулать. Хĕр ачине ĕнтĕ хамăрах усракалăпăр.

Никам та хирĕç пулмарĕ. Унтан Ильза ятлă хĕр ачана асăнчĕç — ашшĕ çук, амăшĕ чирлĕрех.

— Ăна та ăсатас, — терĕ Назар Егорччă. Унтан пурне те пăхса çаврăнчĕ те: — Тата çав Хĕрлĕ Мари ачине Палляна сĕнсе пăхсан мĕнле-ши? — терĕ. — Эсир тем ан шутлăр, эп куна ачинчен хăтăлас тесе каламастăп, ăна юратрăм-ха эп, анчах манăн унран чăн-чăн этем тăвас килет. Ĕмĕрлĕх ĕçе вĕрентĕрччĕ...

«Райком хĕрĕ» хăйпе юнашар ларакан Рина Петровнăпа пăшăлтатса илчĕ. Мĕнле ача вăл тесе ыйтрĕ пулмалла. Учительница ăна хăвăрт ăнлантарса пачĕ, Кулюкова пуçĕпе сулчĕ.

— Кам мĕнле шутлать, юлташсем?

— Юрать те пуль... Амăшĕ çавнашкал пулнăшăн ачи айăплă мар вĕт. Пырать, эс ăна хăв патна илтĕн, атту тем курмаллаччĕ-ха, — терĕ кăшт тăрсан Евгени амăшĕ Улька.

— Ыттисем мĕн калаççĕ? Рина Петровна, эс мĕнле шутлатăн? Вăл санăн ученику, ăна эс пуринчен те лайăххрах пĕлетĕн...

— Юлашки вăхăтра Палля питĕ юсанчĕ, ĕлĕкхипе танлаштарма та çук, — терĕ Рина Петровна. — Хăйне малашне те çавăн пекех йĕркеллĕ тытсан унран лайăх рабочи пулма пултарать.

— Тата кам калас тет ун пирки?

Калакансем пулмарĕç. Пĕтĕмпе вара ФЗОна вун икĕ çын — çичĕ арçын ачапа пилĕк хĕр ача ăсатма палăртрĕç. Анчах Антонина Клементьевна вĕсен сывлăхĕсене тĕрĕслесен виçĕ арçын ачипе икĕ хĕр ачи производствăра ĕçлеме юрăхлах пулмаççĕ пуль терĕ. Хăшĕсен куçĕсем вăйсăртарах, теприсен ӳпкичĕрисем ытла вăйлах мар.

— Вĕсене лере тĕрĕслесен пур пĕрех каялла яраççĕ, — терĕ фельдшерица, — çавăнпа та каллĕ-маллĕ çӳретес те мар.

Икĕ арçын ачана тата амăшĕсем ярасшăн пулмарĕç — кил таврашĕнче пулăшакан çук, арçын — арçынах, темиçе сыпă вут татни те темех тăрать тепĕр чух терĕç. Вара «райком хĕрĕ» малтан палăртнă чухлех пулса тухрĕ — пилĕк ача. Вĕсем шутĕнче Палляпа белорус ачи Петрусь Дорожка та пулчĕç.

Назар Егорччӑ киле таврӑнса ФЗО пирки темиҫе сӑмах каласанах Палля ҫав тери хӗпӗртесе ӳкрӗ.

— Хулара пурӑнмалла пулать-и? Ӗҫлеме вӗрентеҫҫӗ-и? Хӑйсемех тумлантараҫҫӗ, тӑрантараҫҫӗ-и? Каятӑп!.. — терӗ вӑл.

— Анчах асту, ачам, унта вара питӗ йӗркеллӗ пулас, тӑрӑшса вӗренес пулать. Шалттай-палттайсене патшалӑх ҫӑкрине ҫитерсе усрамаҫҫӗ ӗнтӗ, — асӑрхаттарччӗ Назар Егорччӑ.

— Ун пирки ан та кала ӗнтӗ, чухлатӑп, — терӗ Палля.

Петрусь Дорожка та хӑйне вӗренме ярасси ҫинчен пӗлсен хытӑ савӑнчӗ. Каҫхине вӑл хӑйсене пӑхса пурӑнакан Алтаттипе — Аркаш амӑшӗпе — мӑн ҫын пекех ӑслӑн калаҫса ларчӗ.

— Пирӗн, йӑмӑкпа иксӗмӗрӗн, тин никам ҫине те шанса пурӑнмалли ҫук... Анне вилчӗ, атте ӑҫтине те пӗлместӗп, те чӗрӗ вӑл, те тахҫанах пӗтнӗ. Мӗнле пурӑнас-ха малашне? Анчах ФЗОра вӗренсе тухсан эпӗ ӗҫлесе укҫа илекен пулатӑп, Калерие те пулӑшма пултаратӑп.

— Питӗ тӗрӗс шутлатӑн, ачам, — терӗ Аркаш амӑшӗ. Темшӗн арҫын ача ҫавӑн пек калаҫнӑ хушӑра вӑл хурланса та илчӗ, унӑн куҫӗсем те нӳрленчӗҫ. — Мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ, пурнӑҫӗ ҫавӑн пек ҫаврӑнса килчӗ пулсассӑн... Анчах йӑмӑку пирки эсӗ пӗртте ан пӑшӑрхан. Эп ӑна ниҫта та ямастӑп, хам патрах усратӑп, хам ача пек. Кун ҫинчен Назар Егорччӑна та каларӑм. Шанчӑклӑ пулать...

— Ҫав тери ырӑ ҫын эсӗ, Алтатти инке. Яланах тав туса пурӑнӑпӑр эпир сана... — Петруҫӑн та куҫҫулӗ тухрӗ, анчах ӑна палӑртасшӑн мар пулса вӑл часрах чӳрече еннелле ҫаврӑнчӗ те тулалла пӑхма тытӑнчӗ.

Аркаш чӗнмерӗ, анчах хӑй питӗ салху ларчӗ. Ҫак иртнӗ ҫур ҫул хушшинче белорус ачи уншӑн тӑван шӑллӗ пекех пулса тӑнӑ-ҫке-ха. Вӗсем калама ҫук туслӑ пурӑнчӗҫ. Халь акӑ вӗсен уйрӑлмалла пулать. Питӗ шел, анчах та мӗн тӑвас-ха? Ҫынсен пурнӑҫ ҫулӗ-йӗрӗсем пурин те пӗр пек пулмаҫҫӗ...

...Тепӗр тунти кун Назар Егорччӑ пӗр урапана икӗ шанчӑклӑрах лаша кӳлтерчӗ те пилӗк ача лартса Шупашкара тухса кайрӗ. Икӗ талӑк пурӑнчӗ вӑл унта. Таврӑнсан вара правление Рина Петровнӑпа комсомол секретарьне Виталие чӗнсе илсе ҫав тери тулли кӑмӑлпа пӗлтерчӗ:

— Пурне те вырнаҫтартӑм. Арҫын ачисем электрицӑ хатӗрӗсем тунӑ ҫӗрте ӗҫлекенсем пулаҫҫӗ, хӗрӗсем — пусма-тавар тӗртекенсем. Шкулӗсене те, общежитине те кӗрсе куртӑм. Аптрамалла мар. Салтаксенни пекех. Кашнине койка панӑ, тӳшекҫытар, витӗнмеллисем — веҫех пур. Пырсан тепӗр куннех тумлантарчӗҫ. Таккуйски маттур пулса кайрӗҫ пирӗн ачасем — палламалла мар. Анчах мана ӑсатса янӑ чух пурте хурланчӗҫ,

мăнтарăнсем... Хăнăхман та-ха ĕнтĕ ютра пурăнма. Хĕр ачисем куççульпех макăраççĕ, хулана килсен, тархасшăн, пире курмасăр ан кайăр теççĕ. Хам пĕлнĕ пек лăплантарса хăвартăм вара: тепĕр çур çултан хулари пурнăçа хăнăхса çитсе яла та манса каятăр акă терĕм. Çук, çук, тăван киле ĕмĕрне те манассăмăр çук теççĕ... Пĕр сăмахпа каласан, пирĕн колхозран пилĕк рабочи класс пулать. Пĕри эстонецсен хĕр ачи те-ха ĕнтĕ, çапах та пирĕн патранах кайнă! Эпир леçнĕ!

...Ачисем вара малтанхи вăхăтра кил пирки чăнах та хытă тунсăхланă. Ытти вĕренекенсенчен ютшăннă, ялан иккĕшĕ кăна пĕрле пулма тăрăшнă, ыттисенчен пăрăннă. Анчах майĕпе çĕнĕ пурнăç йĕркине хăнăхса çитнĕ-çитнех. Ир тăрсан вĕсене физзарядкăна илсе тухнă, унтан пит çунă, вырăнсене пуçтарнă та стройпа столовăйне кайнă. Апат хыççăн вĕрентме лартнă — кашни кун пилĕк сехет. Класс стенисем çинче шав тĕрлĕ станоксен, вĕсен уйрăм пайĕсен чертежĕсем çакăнса тăнă. Уроксем вăхăтĕнче те вĕрентекенсем — заводри мастерсем, инженерсем — доска çине тĕрлĕ схемăсем, фигурăсем ӳкерсе кăтартнă. Ачасен ĕмĕрне илтмен сăмахсем илтсе вĕсене ăнланма тивнĕ. Акă токарнăй станок... Вăл питĕ нумай пайсенчен тытăнса тăрать. Вĕсен ячĕсем те тĕлĕнмелле: станина, бабка (малти, кайри), подшипник, суппорт, фартук, трензель... Рабочи хăй аллипе тытса ĕçлемелли хатĕрсен ячĕсене те тăруках астуса юлас çук: резец, кронциркуль, штангенциркуль, нутромер, микрометр, индикатор...

Ăнран тухса каймалла-иç!

Малтанхи ик-виç урок хыççăнах перемена вăхăтĕнче Палля Петрусь патне пычĕ те:

— Эс мĕн те пулин ăнланатăн-и? — тесе ыйтрĕ.

— Йывăртарах, — терĕ Петрусь.

— Эп нимĕн те ăнланмастăп. Тăр ухмах пекех ларатăп. Каплах пулсан пăрахса каймалла çеç. Мĕн усси? Луччă колхозра ĕçлес...

— Ытла тăруках хăраса ан ӳк-ха, тен, майĕпе ăнланакан пулăпăр. Çынсем вĕренеççĕ-çке?

— Çынсем манран ăслăрах, эппин. Манăн пуçĕ анкă-минкĕ така пуçĕ пек пулмалла. Ним те кĕмест.

Чăн та, малтанах ачасене вĕренме йывăр пулчĕ çав. Вĕрентекенĕсене вĕсем питĕ тимлĕн итлерĕç, хăйсене панă учебниксене те çине тăрсах вуларĕç, çапах та нумайăшне ăнланмасăрах юлчĕç. Анчах завода илсе кайса çав станоксем, вĕсен пайĕсем мĕнле ĕçленине кăтартма пуçласан ачасен куçĕсем тăруках уçăлнă пек пулчĕç. Ытлашши хăрамаллах та мар иккен!.. Малтан — пĕр ик-виç эрне пек — вĕсем токарнăй станок çинче çынсем мĕнле ĕçленине сăнарĕç. Унтан вара

ăста рабочисем хăйсене хăнăхтарма пуçларĕç: пысăк чукун таткисене — отливкăсене — станок çине мĕнле вырнаçтармалла, станокне епле хута ямалла, резеца еплерех тытса çав отливкăна мĕнле «сĕвме» тытăнмалла, ĕçленĕ май вĕсене епле виçе-виçе пăхмалла, кирлĕ детале мĕнле туса çитермелле...

Ачасене вĕрентме ятарласа пĕр кивĕрех станок уйăрса панăччĕ. Вăл самаях çӳллĕ пулнă, ачисем — пĕчĕккĕ, алăсемпе ирĕклĕ ĕçлеме пĕвĕсем çитмен, çавăнпа та вĕсем валли станок умне йывăç ещĕк хучĕç. Ачасем çав ещĕк çине тăра-тăра ĕçленине курса ватă рабочисем хăйсем хушшинче шӳтлекелесе те илчĕç:

— Часах акă цехсене сăпка илсе килсе çакатпăр пуль-ха. Пит аван пулать: хайхи çак шăкăр-макăрсем ĕçлеççĕ-ĕçлеççĕ те сăпкана кĕрсе выртса ĕмкĕч ĕмеççĕ...

— Ничего, ӳсеççĕ! Хамăртан ирттерекен те пулаççĕ акă! — терĕç теприсем. — Вĕсен пурнăçĕ малалла-ха!

Тĕрĕссипе, ачасем ФЗОра вĕреннĕ чух кăна мар, рабочи шутне кĕрсен те вăрахчен çавăн пек ещĕксем çине тăрса ĕçлесе пурăнчĕç.

...Хулана хăйсемпе пĕрле килнĕ хĕр ачасене — Иванюк Санькkипе Ильзăна, эстонецсен хĕрне, — Петруçпа Палля пĕр уйăха яхăн курмарĕç. Хĕр ачасем ăçта пурăннине те, вĕсен фабрики хăш тĕлтине те пĕлмен вĕсем.

— Çавсене пĕрре кайса курсан аванччĕ, — терĕ Петрусь темиçе хут та.

Ялта чухне те хĕр ачасене килĕштермен Палля кăмăлĕ вĕсем патне туртсах каймарĕ курăнать.

— Э, мĕн тумалла çав макрасемпе! — ал сулчĕ çеç вăл.

Анчах пĕр вырсарни кун, ирхи апат хыççăн, хĕр ачасем хăйсемех вĕсем патне пырса кĕчĕç.

— Тупрăмăр хайхисене! — савăннипе кăшкăрсах ячĕ Санькка, çĕмĕрт пек хура куçлă, шĕвĕртерех сăмсаллă хĕр ача. — Эсир мĕншĕн пирĕнтен пытанса пурăнатăр? Ниçта та курма çук-иç сире! Кусем пăрахса кайман-и тесе те шутларăмăр...

— Ним те пытанман, — терĕ Петрусь. — Эсир хăвăр курăнмастăр.

— Çук, эпир мар, эсир юри курăнасшăн мар пулмалла. Эпир каç-каç урама та, Атăл хĕррине те тухса çӳретпĕр. Иквиçĕ хут кинора та пултăмăр.

— Пирĕн хула тăрăх янккаса çӳреме вăхăт çук, — терĕ Палля кĕтмен хăнасем çине чалăшраххăн пăхса. — Ерçместпĕр.

— Ой, аларан ĕç пăрахманскер тупăннă! — тутине пăрса илчĕ Санькка. — Эс мĕн, халь те килти пек халăхран уйрăм

пурӑнасшӑн-им? Моммо! — Яланах хӑюллӑ пулнӑ хӗр ача Палляна пӗррех сӑмсинчен тытса туртрӗ.

— Кай! Тупӑннӑ халӑх... — Палля кулса ячӗ.

— Ну, мӗнле пурӑнатӑр-ха эсир! Ӗҫсем мӗнле пыраҫҫӗ? Йывӑр-и? Хӑнӑхатӑр-и? Мӗн тутараҫҫӗ сире? — ыйтса пӗлме тытӑнчӗ Петрусь.

— Мӗн тутарччӑр... Пир тӗртме вӗрентеҫҫӗ! — терӗ Санькка. — Чӑн малтанхи хут цеха илсе пырсан пӗтӗм тӑн-пуҫ арканса кайрӗ, хӑрасах ӳкрӗмӗр. Ретӗн-ретӗн пӗр ик ҫӗр станок лартса тухнӑ, пурте калама ҫук хытӑ шавлаҫҫӗ — чакӑл-чакӑл, чакӑл-чакӑл... — Санькка ҫав станоксем епле хӑвӑрт ӗҫленине кӑтартса аллисемпе сулма тытӑнчӗ. — Машин сассисӗр пуҫне урӑх пӗр нимӗн те илтӗнмест! Ҫынсем пӗр-пӗринпе хӑлхаран кӑшкӑрса кӑна калаҫаҫҫӗ... Цехра эпир пӗр сехет-сехет ҫурӑ кӑна пултӑмӑр, — пире унта ватӑ работницӑсем станоксем ӗҫленӗ чух малтанах мӗнле асӑрханмалли йӗркесемпе ҫеҫ паллаштарчӗҫ, — анчах унти шӑв-шав кунӗпех хӑлхара кӗрлесе тӑчӗ: чакӑл-чакӑл, чакӑл-чакӑл... Тепӗр кунне те ҫавӑн пекех пулчӗ — урама тухсан та хӑлхасем ним илтмеҫҫӗ... Ухмаха еретпӗр пуль эпир кунта е ӗмӗрлӗхех хӑлхасӑр тӑрса юлатпӑр акӑ терӗм Ильзӑна...

Санькка сӑмахӗсене арҫын ачасемпе пӗрле итлесе ларакан эстон хӗр ачи ҫемҫен кулса илчӗ:

— Эпӗ хам та ҫавӑн пекех шутланӑччӗ ун чух...

— Кайран мӗнле-ха вара? — ыйтрӗ Петрусь.

— Пӗр вунӑ кунтан хӑнӑха пуҫларӑмӑр.

— Ӗҫне вӗренсе пыратӑр-и? Мӗнле вӗрентеҫҫӗ?

— Пире кашнине уйрӑм работницӑсем ҫумне тӑратрӗҫ. Малтан вӗсем мӗнле ӗҫленине, мӗн тунине сӑнаса пурӑнтӑмӑр. Пуринчен ытла ҫип татӑлнине вӑхӑтра асӑрхаса ӑна сыпма пӗлес пулать... Ҫип татӑлсан путлӗ пир пулмасть вӗт-ха, ялти хӗрарӑмсем те тӗртнӗ чух татӑлнӑ ҫипсене сыпсах пыраҫҫӗ. Анчах кунта ҫак ӗҫе ҫийӗнчех, пӗр самант та тӑхтаса тӑмасӑр, шутсӑр хӑвӑрт тӑвас пулать, мӗншӗн тесен станокӗ вӑл вӑхӑтра чарӑнмасть, ӗҫлесех тӑрать, ҫипе малалла туртать...

— Э, ара, эс саҫҫим маҫтӑр пулса кайнӑ-ҫке, капла эсӗ часах ху та ҫынсене вӗрентекен пулатӑн пуль? — кӑмӑллӑн тӑрӑхланӑ пекрех кулса илчӗ Палля.

— Мӗнех вара? — ун еннелле вӑртах ҫаврӑнса ларчӗ Санькка. — Пулмастӑп тетӗн-и-мӗн? Вӑхӑчӗ ҫитсен вӗрентме те пуҫлӑп-ха! Ун ҫинчен пире каларӗҫ ӗнтӗ, хӑвӑр тӗллӗн ӗҫлеме тытӑнсан сирӗн те ҫынсене вӗрентмелле пулать терӗҫ. Пирӗн фабрики пысӑклансах пымалла тет, халь вырнаҫтарман станоксем те нумай тет-ха, вӗсем валли ҫӗнӗ ҫурт пулать тет. Кӗркунне пир-авӑр тӗртекен ӑстасем хатӗрлекен техникум

уҫăласси ҫинчен те каларĕҫ, унта каҫхине вĕренме пулать иккен...

— Ненай, ненай, — пуҫне пăркаласа илчĕ Палля. — Ытлашширех хапсăнмастăн-ши, каҫăр сăмса?

— Ним те ытлашши мар, — терĕ ăна хирĕҫ Санькка ҫирĕппĕн, — тепĕр ик ҫултан пур пĕр маҫтăр пулатăп. Курăн!

— Тĕрĕс, тĕрĕс калатăн, Санюк, — хушса хучĕ Петрусь, — эп хам та ҫине тăрсах вĕренесшĕн-ха. Пирĕн заводра та техникум уҫăласси ҫинчен калаҫаҫҫĕ. Лайăх пулать вăл!

...Ачасем вăрахчен ҫавăн пек кăмăллăн шакăлтатса калаҫса ларчĕҫ. Кил ҫинчен те аса илчĕҫ, хăйсен хальхи пурнăҫĕ ҫинчен те, малашне мĕнле пуласси ҫинчен те сăмах вакларĕҫ вĕсем. Кăнтăрла ҫитеспе, Петрусь сĕннипе, вĕсем тăватттăшĕ те пĕрле кино курма тухса кайрĕҫ.

## Пĕтĕм халăх вăйĕпе

...Сисĕнмерĕ те — юр кайса пĕтрĕ, унтан ырă хĕвел ăшăтсах тăнипе ҫĕр-шыв та типрĕ, ҫурхи тырăсем акма, пахча ҫимĕҫ лартма ҫĕр пиҫсе ҫитрĕ. Назар Егорччăпа бригадирсем вăл кунсенче ял ҫыннисене пĕр канăҫ та памарĕҫ, кам мĕн те пулин тума пултарать — пурне те хире кăларчĕҫ. Тепĕр тесен, ҫынсене «хăвалама» та, ирĕксĕрлеме те кирлех пулман — ку чухне кашниех ĕҫе хăй васканă, ҫурхи ĕҫсене вăхăтра туса пĕтересшĕн ҫуннă. Шăп та ҫавна пула ĕнтĕ колхозăн пĕр метр ҫĕр те сухаланмасăр, акăнмасăр юлмарĕ.

Шкул ачисем те ырми-канми ĕҫлерĕҫ вăл ҫулхине. Уроксем пĕтнĕ-пĕтмен килĕсене чупса кайса хăвăрт кăна апат ҫикелеҫҫĕ те уя васкаҫҫĕ. Арҫын ачасенчен хăшĕсем МТСран пынă икĕ кивĕ трактор ҫинче прицепщиксем вырăнĕнче ĕҫлерĕҫ, теприсем плугсемпе суха турĕҫ, сӳрелерĕҫ, хĕр ачасем паранкă, пахча ҫимĕҫ лартрĕҫ. Ку ҫеҫ те мар-ха тата. Рина Петровна ыйтнипе Назар Егорччă ял ҫумĕнчи айлăмра пĕр гектар ҫереме ҫĕттерчĕ те (унччен вăл ним усăсăр выртнă), унта шкул ачисем купăста, помидор, темиҫе йăран виктори — шултра ҫĕр ҫырли — лартрĕҫ, хăяр, кишĕр вăррисем акрĕҫ.

— Ку пирĕн «фронт пахчи» пултăр, ачасем, — ĕҫе тытăнас умĕнех ăнлантарчĕ Рина Петровна. — Кĕркунне ҫимĕҫсем пулса ҫитсен эпир вĕсене пĕтĕмпех Хĕрлĕ Ҫар валли парăпăр...

Ачасене ку шухăш питĕ кăмăла кайрĕ. Ҫăвĕпех ĕҫлерĕҫ вара вĕсем унта, никам та хăйĕн черетне сиктермерĕ. Йĕри-тавра карта тытма ҫуккипе пахчана выльăх-мĕн кĕрсе кайса сăтăр тăвасран хуралне те хăйсемех тăчĕҫ. Ăнăҫлă пулчĕ вĕсен ĕҫĕ...

Çапла, килти ĕçсем йĕркеллех пулса пычĕç, анчах çура тухнă хыççăн вăрçăран килекен хыпарсем халăха çав тери пăшăрхантарчĕç, ун кăмăлне хуçрĕç, кӳрентерчĕç.

...1942 çулхи çу уйăхĕсем пирĕн çĕршывшăн ытла та йывăр пулчĕç çав! Иртнĕ хĕлле гитлеровецсен Мускава çĕмĕрсе пырса кĕрес тискер ĕмĕчĕ тулаймарĕ, совет воинĕсем хамăр çĕршывăн столици патĕнче вĕсене хăйсене питĕ хытă аркатса тăкрĕç, фашистсене Мускав патĕнчен çĕр аллă-ик çĕр километр таран каялла хăваласа ячĕç. Ленинграда та пырса кĕреймерĕç фашистсем — паттăр хула хурçă крепость пек çирĕп тăчĕ, хăйĕн иксĕлми хастарлăхĕпе пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерчĕ. Хĕл каçа нимĕç захватчикĕсен ытти фронтсенче те нимĕнле ăнăçлăх та пулмарĕ. Анчах хĕллехи уйăхсенче çĕнĕрен вăй пухса хатĕрленĕ хыççăн Гитлер хăйĕн хурахла çарне совет çĕршывĕн кăнтăр еннелле ыткăнтарчĕ. Пирĕн çарсен чылай çĕрте каллех чакма тиврĕ.

Совинформбюро сводкисенче пĕрмай чуна ыраттаракан пĕлтерӳсем пулчĕç: «Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем Керчь çур утравĕнчен тухса кайнă... Тăшман Севастополь çине кунсерен пиншер бомба тăкать... Тăшман Воронеж хулине пырса кĕнĕ...» Унтан гитлеровецсем Дон çинчи Ростова, Ставрополе тата ытти хуласене йышăнни çинчен хыпар çитрĕ. Августăн 23-мĕшĕнче фашистсен темиçе çĕр самолечĕ пĕр харăс Сталинграда пырса тапăннă. Каярахпа çапăçусем Сталинград урамĕсенче пуçланнă... Тăшман Кавказ тăвĕсем патне çитнĕ...

Хăрушă пулнă ĕнтĕ, çав тери хăрушă!

Чарса пулĕ-ши тăшмана? Тата шаларах кĕрсе каймĕ-ши вăл?

Анчах темле йывăр пулсан та совет çыннисем тăшмана çĕнтерес, тăван çĕрĕмĕре фашист ирсĕрĕсенчен тасатас, хамăрăн телейĕмĕре каялла тавăрас шанчăка пĕр самантлăха та çухатман. Çук, çухатман! Вăрçăрисем куллен-кун паттăртарах, ăстарах çапăçнă, тылрисем çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Заводсенчи рабочисем цехсенчен эрнешер тухмасăр хĕç-пăшал туса кăларнă, ял халăхĕ çăкăр, аш-какай, тумтир валли çăм, тир-сăран туса панă. Пĕтĕмпех фронт валли, пĕтĕмпех çĕнтерӳ валли!..

Кăçал ĕнтĕ патшалăха тырри-пуллине пĕлтĕрхинчен ытларах парас пулать, мĕншĕн тесен тăшман тырă нумай туса илекен вырăнсене çавăрса илнĕ. Назар Егорччă июль уйăхĕн пуçламăшĕнчех, района васкавлăн кайса килнĕ хыççăн, бригадирсене пухса çапла пĕлтерчĕ:

— Халăх Комиссарĕсен совечĕ кăçалхи тырăран Хĕрлĕ Çар фончĕ пысăкрах туса хатĕрлеме хушнă... Акса ӳстернине питĕ тĕплĕн пуçтарса кĕртесчĕ, пĕр пĕрчĕ те сая ярас марччĕ.

Кашни килограмм ытлашши тырă салтаксем тăшман çинелле персе янă снарядпа танлашать теççĕ!

Çынсем çакна питĕ лайăх ăнланчĕç. Нихçанхинчен те тăрăшарах, тирпейлĕрех пухса кĕртрĕç уйри тыр-пула. Ачасем те ку ĕçрен аякра тăмарĕç, ăнсăртран ӳксе юлнă кашни пучаха хутаççене типтерлĕн пуçтарса чикрĕç. Пĕр пĕрчĕ çумне — çĕр пĕрчĕ, çĕр пĕрчĕрен — пин пĕрчĕ, пин пĕрчĕрен — килограмм, пăт!

Пĕрисем тырă вырнă хушăрах теприсем авăн çапрĕç, виççĕмĕшĕсем тулли михĕсене лавсем çине тиесе Шупашкара, хатĕрлев пунктне, леçрĕç. Ку ĕçе пĕтĕмпех комсомол секретарĕ Витали ертсе пычĕ. Тыррине турттаракансем пуринчен ытларах арçын ачасем пулчĕç. Пысăк михĕсене виççĕн-тăваттăн тытаççĕ те шăлĕсене çыртса, пĕтĕм шăнăрĕсене хытарса лав çине чиперех çавăрса хураççĕ, хулана çитсен вĕсене лав çинчен çавăн пекех йăтса антараççĕ. Хăйсен пичĕсем тăрăх шăпăртатса шултра тар юхать...

Евгенипе Аркаш та тырă лавĕсемпе Шупашкара улт-çичĕ хут кайса килчĕç. Ирхине ирех, хĕвел кăшт курăнма пуçланă вăхăтрах, тухса каяççĕ те кĕтӳ кĕртнĕ тĕлелле каялла таврăнса çитеççĕ. Юрать-ха, çанталăкĕ вăл кунсенче лайăх пулчĕ, кунĕкунĕпе хĕвел пăхрĕ. Çумăр-мĕн пулас пулсан питĕ хĕн килетчĕ. Ялтан шоссе çине тухма ултă километр, çулĕ шăтăкпутăклă, çитменнине тата икĕ çырма урлă каçмалла, сăрчĕсем чăнкă. Вăйсăртарах лашасем кӳлнĕ лавсене кунта уяр чух та хыçалтан тĕксе пулăшма тивет. Мĕн каласси пур ĕнтĕ, хытă ĕçлерĕç салтак ачисем, хăйсен вăрçăри ашшĕсемпе пиччĕшĕсене лайăх пулăшрĕç, вĕсене тивĕçлĕ пулчĕç!..

Пĕррехинче, Шупашкара çитсе лавсене пушатнă хыççăн хулана ансан, малта пыракан Витали «симĕс пасар» тĕлĕнче лашине чарса тăратрĕ.

— Чимĕр-ха, ачасем, ав çавăнта квас сутаççĕ, атьăр пурне те пĕрер курка ĕçтерем! — терĕ вăл лавĕ çинчен сиксе анса. — Пурин те ăшсем пиçрĕç пулĕ-ха?

Вăл тĕрĕссине каланă. Кунĕпех хĕвел çинче çӳренĕ тата çурăм тăрăх тар юхиччен ĕçленĕ ачасен паçăрах пырĕсем типсе ларнă, çавăнпа та хăйсене ертсе çӳрекен калани пурне те хĕпĕртеттерсе ячĕ. Квас сутакан киоск патне вĕсем кĕр-р! чупса пырса тăчĕç.

Витали кружка хыççăн кружка илсе ачасене пама тытăнчĕ. Чăн малтан Аркаша лекрĕ, кружкăра мĕн пуррине вăл пĕрре сывлăш çавăрмасăр ланкăртаттарса ĕçсе ячĕ.

— Э-эх, лайăх-çке-е! — тутине çаннипе шăлса илчĕ вăл. — Ку шĕвеке эпĕ витрипех ĕçнĕ пулăттăм! Шутсăр тутлă, эсрелĕ!

— Ай-ай, ытла нумая хапсӑнатӑн-ҫке эс, ачам! — терӗ ҫав вӑхӑтра киоск патне пырса тӑнӑ темле салтак. — Эп те ӗҫсе курам-ха эппин, ун пекех тутлӑ пулсан...

Ачасем пурте ун еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Салтак пуҫне те, хӑрах пит ҫӑмартине те бинтпа ҫыхнӑ, пилотки пуҫ тӑрринче аран тытӑнса тӑрать, сулахай аллине те бинтпа чӗркесе мӑйӗнчен кантрапа ҫакса янӑ. Сухалне чылайранпа хырман курӑнать, вӑл шӑрт пекех ӳссе ларнӑ. Хӑй симӗс фуфайка тӑхӑннӑ, ҫурӑмӗ хыҫӗнче — ҫавӑн пекех симӗс кутамкка. Ачасем ун ҫине питӗ тӗлӗнсе пӑхрӗҫ, аллисене кружка тытнисем ӗҫме те чарӑнчӗҫ. Паллӑ ӗнтӗ, ку ҫын — фронтран таврӑнакан салтак, ӑна пуҫӗнчен те, аллинчен те амантнӑ. Хисеплӗ, Тӑван ҫӗршывшӑн юн тӑкнӑ ҫын!..

Салтак малалла, киоск патнерех, иртрӗ те кӗсйинчен хут укҫа кӑларса ӑна чӳречерен шалалла чикрӗ.

— Йӑмӑк, — терӗ вӑл, — мана та пӗр курка ярса пар-ха, ҫак шӗвӗрсем сан квасна шутсӑр мухтаҫҫӗ...

Вӑл ҫапла каларӗ  ҫеҫ — унччен темиҫе самант хушши юпа пек хытса тӑнӑ Аркаш сасартӑк малалла ыткӑнчӗ те шари! кӑшкӑрса ячӗ:

— Атте! Аттеҫӗм!.. — Вӑл ҫавӑнтах салтак хулӗнчен уртӑнчӗ те макӑрса ячӗ.

Ашшӗне вӑл сӑнӗнчен мар, сассинчен палласа илнӗ. Ҫав самантрах ашшӗ те палларӗ ӑна, сывӑ аллипе ыталаса илсе хӑй ҫумне пӑчӑртаса лартрӗ.

— Ывӑлӑм!.. Аркаш!.. Ак епле тӗл пултӑмӑр иккен санпа...

Салтакӑн та труках куҫҫулӗ шӑпӑртатса анчӗ. Вӑл пӗшкӗне-пӗшкӗне ывӑлне пуҫӗнчен ҫине-ҫинех чуптурӗ. Ыттисем пурте шӑп пулса пӑхса тӑчӗҫ. Ара, ытла та ӑнсӑртран, ытла та тӗлӗнмелле пулса тухрӗ-ҫке-ха ку! Темле ватӑрах хӗрарӑм аманнӑ салтакпа арҫын ача ыталашӑнса тӑнине курса хурланнипе куҫӗсене тутӑр вӗҫӗпе шӑла-шӑла илчӗ.

— Мӑнтарӑнсем... тӗл пулнӑ вӗт-ха... Епле телей иккӗшиншӗн те! Анчах манӑн виҫӗ ывӑлтан пӗринчен те хыпар ҫук, шыва путнӑ пекех пулчӗҫ...

— Ан шарла, Марфа, ан кансӗрле вӗсене, — терӗ тепри.

Ҫавӑн пек пӗр-икӗ минут иртрӗ. Унтан Аркаш ашшӗ ӑна аллинчен вӗҫертрӗ те ассӑн сывласа илсе тин ыттисем ҫине пӑхрӗ.

— Ара, кунта пурте хамӑр ялсем пулас? — терӗ вӑл. — Эп асӑрхаман та...

— Пурте хамӑр ял, Матвей Ильич! Салам сана киле таврӑннӑ ятпа! — ал пачӗ ӑна Витали. — Тырӑ турттаратпӑр. Фронт валли... Ҫак командӑпа кашни кун пӗрер хутлатпӑр.

— Питӗ аван ку. Маттур, маттур, ачасем! Ҫапла кирлӗ те

хальхи вăхăтра. Салтаксене тăрантарас пулать, выçăлла çапă-çаймаççĕ вĕт-ха вĕсем...

Çакăн хыççăн вара ытти ачасем те хăюланса салтака пур енчен те хупăрласа илчĕç те пĕр харăс шавласа кайрĕç, пĕр-пĕрне пӳлсех ыйтма, тĕпчеме тапратрĕç.

— Пирĕн аттене курман-и эс унта, Матви пичче? Эп леш енчи Мăн Арçентти ачи...

— Пирĕнне курмарăн-и? Смирнов Николая?

— Пирĕнне тата?

— Пирĕнне?

— Пирĕнне?

— Çук, ачасем, хамăр ялсенчен никамах та курман çав, — терĕ салтак. — Вăрçăра халăх нумай вĕт, паллана çынна ăçтан шыраса тупатăн унта? Чăнах та тепĕр чух ăнсăртран тĕл пул-калатăн ĕнтĕ. Акă манпа пĕрле госпитальте хамăрпа кӳршĕллĕ Кинер каччи выртрĕ. Халь те унтах юлчĕ-ха вăл...

— Эсĕ ху пуçĕпех килтĕн-и ĕнтĕ? — ыйтрĕ ку таранччен шарласах кайман Евгени. Хăйĕн тусĕн ашшĕ киле килнĕшĕн вăл чунтанах савăнчĕ, çав вăхăтрах хăй ăшĕнче кăштах кĕвĕ-çесси те пулчĕ: акă Аркаш ашшĕпе юнашар тăрать, анчах унăн, Евгенин, ашшĕ таçта-ха ĕнтĕ çак самантра...

— Çук, пуçĕпех мар, — терĕ ăна хирĕç Аркаш ашшĕ, — икĕ уйăха çеç ячĕç, сурансем тӳрленсе çитиччен...

— Вара каллех каймалла пулать-и? — ашшĕн куçĕнчен хурлăхлăн пăхрĕ Аркаш. — Каллех вăрçа-и?

— Каймалла, ывăлăм, каяс пулать, — пуçĕнчен ачашласа илчĕ ăна ашшĕ. — Тăшмана аркатиччен çапăçас пулать вĕт пирĕн...

— Вăрçă хăçан пĕтет, Матви пичче?

— Эпир фашистсене çĕнтерсенех пĕтет. Унсăрăн пĕтмест.

— Вĕсене хăçан çĕнтерĕпĕр-ши?

— Ăна татса калама йывăр. Анчах та çĕнтеретпĕрех.

Çапла калаçса тăнă чух салтак çинчи фуфайка ăнсăртран кăшт ытларах уçăлчĕ те, унăн кăкри çинче, хĕвел çутинче, темскер питĕ хитрен йăлтăртатса илчĕ. Çакна пурте асăр-харĕç.

— Ой, Матви пичче! Санăн орден та пур тем? — кăшкăрсах ячĕ Евгени ун çывăхнерех пырса.

— Пур пĕрре.

— Кăтарт-ха, кăтарт! Ку таранччен пирĕн ялсем пĕри те орден илсе килмен-ха...

Пурте вичкĕн куçĕсемпе Аркаш ашшĕн кăкри çине тăрăнчĕç. Унта вĕр çĕнĕ Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ иккен.

— Ах, атте!.. — ашшĕне ыталаса илсе пуçĕпе ун çумне йăпшăнчĕ телейлĕ Аркаш, паттăр салтак ывăлĕ.

Çав самантрах Евгени пуçĕнче ăмсануллăрах шухăш вĕлтлетсе илчĕ: «Тен, пирĕн атте те ку таранччен орден илнĕ-и...»

Киле таврăннă чух малти лав çинче тăваттăн ларса пычĕç: Аркашпа ашшĕ, Витали тата Евгени. Çул тăршшĕпех — хĕрĕх километра яхăн — аслă сержант Матвей Ильич Мазяков фронтра хаяр çапăçусем пыни, хăй мĕнле аманни, ăна пĕр паттăр хĕр санинструктор çăлни çинчен каласа кăтартса пычĕ.

— Йывăр-ха, йывăр пире, ачамсем, — терĕ вăл юлашкинчен, — анчах хамăр çĕнтерессе пĕр самантлăха та шанма пăрахмастпăр, ĕненетпĕр ăна. Часах фронтра пысăк улшăнусем пулмалла тесе калаçаççĕ пĕлекен çынсем. Ахалех калаçмаççĕ пуль тетĕп, мĕншĕн тесен тăшмана çапса аркатма тылра çĕнĕ хăватлă вăйсем хатĕрлени хытă сисĕнет.

...Аслă сержант Мазяков килте икĕ уйăх мар, тăваттă таранах пурăнчĕ, мĕншĕн тесен унăн аманнă алли ниепле те час тӳрленсе çитеймерĕ. Икĕ хутчен районри военкоматра комиссире пулчĕ вăл, иккĕшĕнче те ăна тепрер уйăх хушса пачĕç.

— Аллу тӳрленсе çитиччен, пӳрнӳсем купăсçă пӳрнисем пек вылякан пуличчен эсĕ пур пĕр салтак мар, сана хысна çăкрине çитерни те харама каять кăна, — шӳтленĕ пек туса илчĕ иккĕмĕш комиссире ватă хĕрарăм тухтăр.

Ялан ĕçре пиçсе пурăннă çын, паттăр фронтовик, алли аманнă пулин те, вăл пĕр кун та килте лармарĕ, пĕрмай колхоз ĕçне хутшăнчĕ, колхоза мĕнпе те пулин пулăшма тăрăшрĕ. Малтанхи вăхăтра правленире учетчик — кам мĕн чухлĕ ĕçленине шута илсе пыраканни — пулчĕ, бригадирсенчен пĕри тăрук чирлесе ӳксен ун вырăнне тăчĕ. Кĕркунне, çĕрулми кăларнă вăхăтра, вăл темиçе хут та хулана «паранкă обозне» ертсе кайрĕ.

Анчах пуринчен пахи акă мĕн пулчĕ.

Киле таврăнсассăн ик-виç кунтанах Матвей Ильич ял хыçĕнчи Кашкăр варне кайрĕ. Вăрçăччен пĕр виçĕ çул малтан колхоз кунта темиçе гектар çинче сад ĕрчетме тытăннăччĕ. Садне лартса ӳстерме шкулти биологи учителĕ Иван Фомич нумай пулăшнăччĕ. Тĕрĕссипе çак пĕтĕм ĕç унран пуçланса кайрĕ те ĕнтĕ. Матвей Ильича садовод пулма та вăлах вĕрентрĕ.

— Мĕнле-ши-ха пирĕн сад, ӳсет-ши? — çак шухăшпа кайрĕ Матвей Ильич Кашкăр варне. Анчах унта нимĕн те юлман иккен... Иртнĕ хĕлле çанталăк ытла та сивĕ пулнипе çамрăк улмуççисем пĕтĕмпех шăнса кайнă. Кунсăр пуçне тата нумайăшне мулкачсемпе шăшисем те кăшланă пулмалла.

Юлашкисене, унта-кунта пăч-пач юлнисене, никам та пăхманнипе выльăхсем сăтăрланă. Пĕр сăмахпа каласан, çав тери илемлĕн, чуна килентермелле ешерсе ӳсекен сад пĕтнĕ... Матвей Ильич виçĕ çул хушши тăрăшни пĕтĕмпех харама кайнă...

Питĕ кӳрентерчĕ çак япала аманнă салтака. Вăл сăрт хĕрринче меллĕрех вырăн тупса ларчĕ те, чĕлĕм тивертсе ярса, унăнкунăн пăхкаласа тарăн шухăша кайрĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе ассăн сывласа илчĕ. Унăн куçĕ умне кăпăшка юрпа витĕннĕ пек шапшуррăн çурăлнă улмуççисем, чие, слива, груша, торн йывăççисем ретĕн-ретĕн ларни, унтан çавсемех, çимĕçĕсем йывăр пулнипе, çĕр таранах авăнса анни тухса тăчĕ пулмалла. Çавăн çинчен ĕмĕтленнĕççĕ вĕт-ха Матвей Ильич çакăнта кунĕ-кунĕпе лăш курмасăр ĕçленĕ чухне! Анчах халĕ ав умра нимĕн те çук. Нимĕн те!

Вăрахчен ларнă хыççăн вăл тăчĕ те ерипен кăна килнелле уттарчĕ. Кăштах кайсан сад пулнă вырăн çине тепре çаврăнса пăхса илчĕ...

— Сад пĕтнĕ-çке пирĕн, ывăлăм, — терĕ вăл киле çитсен лупас айĕнче тем ĕçлекен Аркаша курса. — Халь çеç кайса пăхрăм та...

— Пĕтрĕ çав...

— Питĕ шел вĕт!

— Ара, шел те-ха, мĕн тăвас тетĕн?

Ашшĕ кĕлет умне ларса чĕлĕм тивертрĕ те каллех, паçăр Кашкăр варĕ хĕрринче ларнă чухнехи пекех, шухăша кайрĕ.

— Мĕн те пулин тăвасах пулать, Аркаш, — терĕ унтан. — Ялта халь комсомол секретарĕ кам-ха?

— Витали.

— Каçхине чĕнсе кил-ха ăна. Манăн унпа калаçмалли пур...

Çав каçхи калаçуран пуçланса кайрĕ те вара пĕтĕм ĕç. Комсомол секретарĕ çитиччен малтан Аркашсем патне шăпах Назар Егорччă пырса ларнăччĕ — ку пушшех аван пулчĕ.

— Колхоз садне çĕнĕрен лартса ӳстерес пулать, тăвансем, — терĕ Матвей Ильич. — Çуррине те пулин! Лартмалли йывăçсем тупатпăр. Çĕрпӳри питомникре манăн палланă çынсем пур, параççех вĕсем мана. Анчах та чăн малтан йĕри-тавра карта тытмалла, унсăр каллех сад пулмасть. Епле шутлатăр?

— Шухăшĕ лайăх та-ха, ал çитмест-çке, — иккĕленерех каларĕ Назар Егорччă.

— Ак çаксене чĕнетпĕр, — пуçĕпе Аркаш еннелле сулса илчĕ Матвей Ильич. — Тепĕр тесен сачĕ вĕсем валли пулать вĕт, тăрăшчăр мĕн вăй çитнĕ таран!

— Картине тытма хăми те çукрах...

— Пăру варĕнче миçе йăмра? Пĕр пиллĕкĕшне касатпăр та

татса-çурса чутлатпăр, — терĕ Витали. — Халăх йывăçĕсем-иç, кам чарать?

Çакăн пек калаçса татăлчĕç те вара вĕсем.

...Тепĕр уйăхран çĕнĕ сад валли карта пулса та çитрĕ. Ачасем кăна мар, ваттисем те тăрăшрĕç унта. Пионерсем шефа илсе ялан пулăшса пынă ватă Маркка Петĕрĕ — виçĕ фронтовик ашшĕ — çитмĕле çитнĕ пулин те ик эрне хушши алăран пуртă пăрахмарĕ, иртен пуçласа каçчен решетке хăмисем турĕ. Ватă эстонец Пауль те, ыттисем те хутшăнчĕç.

Кĕркунне вара Матвей Ильич хăйĕн Аркашĕпе унăн уйрăлми тусне Евгение илсе икĕ лавпа Çĕрпӳрен лартмалли çамрăк йывăçсем тиесе килчĕ, ачасем шăтăксем алтрĕç, çав йывăçсене ретĕн-ретĕн лартса тухрĕç. Матвей Ильич ачасенчен пĕр шит те уйрăлмасăр вĕсене мĕнле ĕçлемеллине вĕрентсе пычĕ.

Çапла «Çĕнĕ саманара» çĕнĕ сад çуралчĕ, пурте пĕр кăмăллă пулса ăна «Çĕнтерӳ сачĕ» тесе ят пачĕç...

Хулана тырă пама кайнă ачасене ăнсăртран тĕл пулса вĕсемпе пĕрле килне килнĕ чух Матвей Ильич фронтра çитес çывăх вăхăтрах пысăк улшăнусем пуласси çинчен каланăччĕ. Ĕнентерсех каларĕ вăл ун чух...

Çав улшăнусем ноябрь уйăхĕнче пуçланчĕç. Шăп çав уйăхăн вун тăххăрмĕшĕнче пирĕн çарсем Сталинград патĕнче контрнаступлени тума тытĕнчĕç те кăшт тăхтарахпа фашистсен унти çарĕсене тимĕр унка çавăрса илчĕç. Тепĕр икĕ уйăхран вара радио пирĕн халăха кăна мар, фашистсен пусмăрне кĕрсе ӳкнĕ нумай çĕршывсенчи халăхсене те чунтан хĕпĕртеттерекен хыпар пĕлтерчĕ:

— Нимĕçсен Сталинградри виç çĕр пинлĕ çарне пуçĕпех аркатса тăкнă, вĕсен командующийĕ пулнă генерал-фельдмаршал Паулюс хăйĕн штабĕпе пĕрлех тыткăна лекнĕ...

...Иртнĕ хĕлле пирĕн паттăр воинсем фашистсене Мускав патĕнче аркатса тăкни пĕтĕм халăха калама та çук савăнтарнăччĕ. Кăçал акă тăшмана Сталинград патĕнче аркатни çавăн пекех савăнтарчĕ.

Çакă вăл пирĕн çĕнтерĕвĕн пуçламăшĕ пулчĕ. Çакăн хыççăн Совет Çарĕ тăшмана çине-çине пыра-пыра çапса, ăна вут-çулăмпа çунтарса, тăван çĕре фашист ирсĕрĕсенчен тасатса, вăхăтлăха пусмăра лекнĕ совет çыннисене ирĕке кăларса пĕрмай малтан мала, хĕвел анăçнелле, куçса пычĕ. Халăх кăмăлĕ çĕкленнĕçемĕн çĕкленчĕ, çынсен куçĕсенче савăнăç çиçрĕ, чĕрисем хаваслăран та хаваслă тапрĕç.

— Часах ĕнтĕ тăшмана пуçĕпех аркатса таврăнатпăр! — тесе хăварчĕ Матвей Ильич сывалса çитнĕ хыççăн каллех фронта тухса кайнă чух. — Чипер пурăнăр, кĕтĕр пире!

# Кун хыççăн кун

Çулталăк хушшинче ватă Пауль кил-йышĕ ялти пурнăçа хăнăхса çитрĕ. Старик колхозра чăннипех хисеплĕ çын пулса тăчĕ, кашни кун тенĕ пекех колхоз председателĕпе тĕл пулса малашнехи ĕçсем çинчен калаçрĕ. Назар Егорччă хăй те унпа канашлама юратрĕ — тулкăллă старик, пурнăçа пĕлет! Пауль кинĕ Амалия фермăра ĕçлерĕ, чи лайăх дояркăсенчен пĕри пулчĕ, унти хĕрсене тасалăха вĕрентрĕ, çавăншăн ялти хĕрарăмсем ăна питĕ юратрĕç. Ачисем çак хушăра чăвашла та чиперех калаçакан пулчĕç, ялти ачасенчен хăйсем шап-шурă çӳçлĕ те кăн-кăвак куçлă пулнипе çеç уйрăлса тăчĕç. Асли, Ян, Евгенирен хăпма та пĕлмерĕ, Евгени ăçта каять, мĕн тăвать — вăл та яланах унпа. Юулипе Эльга та чылай ӳсрĕç, Юули ĕнтĕ хăйпе тантăш хĕр ачасемпе пĕрле тĕрлĕ ĕçсене хутшăнчĕ...

Пĕр хуйхă çеç пулчĕ ватă Пауль кил-йышĕнче: вĕсем Янсен ашшĕ ăçтине, унпа мĕн пулнине — чĕрĕ-и вăл, вилнĕ-и —пĕлмерĕç. Ăна асăнман кун та пулмарĕ çав. Час-часах каçсерен пурте киле пухăнсан Рина Петровна парнеленĕ сăн ӳкерчĕкне чăматанран кăларса ун çине нумайччен пăхса ларчĕç. Ун пек чух Амалия яланах шăппăн, ыттисене систермесĕр макăрчĕ.

— Ăçта-ши эс, юратнă çыннăм? Кăшт та пулин пĕлесчĕ сан çинчен! Тен, сывă пулсан эсĕ те пире кашни сехетрех асăнатăн, пире тĕлĕкре куратăн пуль... Ах, Ильмар, Ильмар, пирĕн телейĕмĕр, çухалтăнах-ши эсĕ?..

Çапла кун хыççăн кун иртрĕ. Нимĕн те паллă пулмарĕ, чĕрери хуйхă сирĕлмерĕ. Унтан сасартăк, пачах та кĕтмен çĕртен, пĕтĕм ăс-пуçа пăтратса яракан, чĕрене тапми тăвакан савăнăç сиксе тухрĕ. Асамлă юмахри пек...

Январь пуçламăшĕнче ватă Киккас чирлĕрех пулнă пирки пĕррехинче килте пĕчченех выртнă чух Евгени таçтан питĕ васкаса таврăнчĕ. Унпа пĕрле комсомол секретарĕ Витали те пулчĕ. Кайри пӳрте кĕрсенех вĕсем пĕр-пĕринпе хăвăрт кăна тем калаçса илчĕç те, Евгени малти пӳрт алăкĕнчен шăкăр-шăкăр шаккарĕ.

— Кĕме юрать-и, Пауль Оскарович?

— Юрамасăр, мĕн эсĕ ют çын пек... — тĕлĕнерех сас пачĕ Пауль.

— Эп пĕччен мар, çавăнпа...

— Кĕрĕр, кĕрĕр!

Евгенипе Витали малалла иртрĕç, Витали Киккаса ырă сывлăх сунчĕ. Унтан вĕсем хыççăр пукансем çине ларчĕç те темшĕн пĕр-пĕрин çине пăха-пăха илчĕç.

— Сирĕн, çамрăк çынсем, мана тем каламалли пур пулас? — ыйтрĕ Пауль.

— Пур çав! — персе ячĕ те Евгени тӳсейменнипе пукан çинчен сиксе тăчĕ.

— Калăр эппин, ан кĕттерĕр...

— Вула, Витали! — команда панă пекех каларĕ Евгени.

Витали кĕсйинчен хуçлатнă хаçат кăларчĕ те ăна чĕркуççи çине хурса аллипе хăвăрт шăла-шăла тӳрлетрĕ.

— Татах лайăх хыпарсем пур ĕнтĕ хаçатра, çапла-и? — Пауль вырăн çинчен тăрса ларчĕ. — Мĕнле хуласене илнĕ-ши ĕнтĕ пирĕннисем?

— Илтетĕр акă, — терĕ Евгени.

Витали пĕрре Евгени çине, тепре Пауль çине пăхса илчĕ те васкамасăр вулама тытăнчĕ:

— «Вăйлă çапăçусем хыççăн... Калинински фронт çарĕсем Великие Луки хулине пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă...»

— Пит аван, пит аван! — пуçĕпе темиçе хут хавассăн сулса илчĕ Пауль. — Тата мĕнле хуласене асăннă?

— «Çак çапăçусене Эстони дивизийĕ активлăн хутшăннă...»

— Мĕн, мĕн? — сиксе тăчĕ Пауль.

— «Эстони дивизийĕ активлăн хутшăннă», — тепĕр хут вуласа пачĕ Витали.

— Ой, нивушлĕ ун пек дивизи те пур? — пĕççине шарт! çапрĕ старик. — Пирĕн Эстони дивизийĕ? Епле аван ку!

— Хаçатра çырнă пулсан пурах ĕнтĕ! — хушса хучĕ Евгени. — Малалла вула, Витали.

— «Эстони дивизийĕнче уйрăмах...» — Витали самантлăха вулама чарăнса старике куçран пăхса илчĕ. — «Эстони дивизийĕнче уйрăмах Ильмар Киккас капитан ертсе пыракан батальон паттăр çапăçнă. Унăн батальонĕ хулана пуринчен малтан вăркăнса кĕнĕ...»

Старик сасартăк кăвакарса кайрĕ те каялла чакса пырса вырăн çине ларчĕ. Пĕр хушă вăл нимĕн те калаймарĕ, чĕлхи çыхланса ларчĕ пулас, унтан вăраххăн пăшăлтатса илчĕ:

— Ильмар... Ильмар Киккас? Ман ывăл?!

— Çав ĕнтĕ, кам пултăр тата? — терĕ Евгени хуллен старик ытла пăлханса кайнине курса. — Ак хайхи, тупăнчĕ вĕт!

— Вулăр-ха тепре...

Витали татах вуласа пачĕ. Вара старик ун аллинчи хаçата карт! туртса илчĕ те часрах куçлăх тăхăнса хăй вуларĕ. Ун аллинчи хаçат вăйлă çил çинчи пек силленчĕ. Унтан хаçата хуçлатса чикрĕ те Назар Егорччă парнеленĕ кĕске кĕрĕкпе пăру çĕлĕкне йăпăр-япăр тăхăнса Евгенипе Виталие ним каламасăрах килтен тухса чупрĕ.

— Фермăна кайрĕ ĕнтĕ, кинне савăнтарма, — кăмăллăн кулса илчĕ Евгени чӳрече витĕр урамалла пăхса.

— Çухалнă çын тупăнсан — кам савăнмĕ?

...Çав кун вара ватă Пауль кил-йышĕнче чăн-чăн уяв пулчĕ. Амалипе Евгенисен амăшĕ васкасах тутлă апатсем хатĕрлерĕç. Назар Егорччă çырларан хăй тунă эрех илсе пычĕ. Пауль çак ялтах пурăнакан икĕ эстонецпа вĕсен арăмĕсене, Рина Петровнăпа Антонина Клементьевнăна кайса чĕнчĕ. Нумайччен хаваслăн та шавлăн калаçса ларчĕç хăнасем. Паллах ĕнтĕ, сăмахюмах пĕтĕмпех вăрçă çинчен, вăрçăри тăвансем çинчен, хамăр çарсем тăшмана çĕнтерсе пыни çинчен пулчĕ. Ватă Пауль темиçе хут та хăйĕн ывăлĕн ятне асăннă хаçата кăлара-кăлара вуларĕ, пĕрре куççулленчĕ, тепре савăнăçлăн кулкаларĕ.

— Ыранах Мускава, Оборона комитетне, çыратăп. Эстони дивизийĕ адресне ыйтса яратăп, — терĕ вăл. — Çапла та çапла, манăн ывăл çав дивизире çапăçать тетĕп. Ответ параççех вĕсем мана...

— Паллах, параççĕ, — килĕшрĕ Назар Егорччă.

Ку шухăша пурте ырларĕç. Пĕрре йĕрĕ палăрнă çынна тупма пулатех ĕнтĕ Тăван çĕршывра, вăл вăрçăра пулин те терĕç хăнасем.

Çырăва ирхине Рина Петровна çырса пачĕ.

Эрнерен Киккассен кил-йышĕ ответ кĕтме тытăнчĕ. Колхоз почтальонĕнчен, каçăр сăмсаллă Варьккаран, ватă Пауль кашни кунах тĕпчесе тăчĕ:

— Ман валли нимĕн те çук-и?

— Çук-ха çав, çыраççĕ кăна пулмалла, — шӳтлеме хăтланчĕ Варькка, анчах вăл шӳтлени ватă çынна кӳрентерни çеç пулчĕ...

Уйăх иртрĕ, иккĕмĕшĕ те иртсе пычĕ, анчах Мускавран нимĕнле хыпар-хăнар та пулмарĕ. Киккассен кил-йышне каллех хуйхă хупласа илчĕ. Ватă Пауль çынсемпе те сахал калаçакан пулчĕ, ялан çĕрелле пăхса, хăй тĕллĕн тем пăшăлтатнă пек çӳрерĕ. Амалия та сăнран ӳкрĕ, каç-каç никама систермесĕр шăппăн макăрса ларчĕ. Евгени амăшĕ ăна чунтан лăплантарма тăрăшрĕ:

— Сирĕн пек çырусем унта шутсăрах нумай пыраççĕ пульçке, ăçтан-ха пурне те çийĕнчех ответ парса çитеретĕн? Кун чухлĕ кĕтнине тата пăртак кĕтĕр ĕнтĕ, килетех пулĕ-ха отвечĕ...

Ватă Пауль тӳссе çитереймерĕ, Рина Петровна патне кайса Мускава яма тепĕр çыру çырса пама ыйтрĕ.

— Кам пĕлет, тен, леш çырăвĕ çухалнă?

— Ун пек те пулма пултарать çав, — килĕшрĕ учительница.

Вĕсем юнашар ларса Оборона комитетне çĕнĕрен çырчĕç. Анчах ку çыруне ярасси пулмарĕ — çырăва Варькка почтальонран парса яма шутланă кун лешĕ шăпах Пауле урамра тĕл пулса пичетлĕ пакет тыттарчĕ.

— Савăнăр ĕнтĕ, килчĕ хайхи, эсир кĕтни! — терĕ вăл хавассăн.

Пауль часрах киле кайрĕ, пакета чĕтрекен аллисемпе уçса вуларĕ те хытнă пек пулса ларчĕ. Куçĕсем шывланчĕç. Ку çыру Мускавран мар, çапăçу хирĕнчен, Эстони дивизийĕнчен килнĕ-мĕн. Унта акă мĕн çырнă:

«Ильмар Киккас капитан пĕр çапăçура йывăр аманнă пирки ăна тыла ăсатнă. Хальхи вăхăтра вăл ăçтине дивизи командованийĕ пĕлмест...»

Вăрахчен пĕр-пĕччен шухăшласа ларнă хыççăн Пауль çырăва кĕсйине чикрĕ те пĕркунхи пекех фермăна тухса кайрĕ — кинне каласа пама. Каçхине вара кун пирки икĕ кил-йышĕпех — Киккассемпе Евгенисем — тем таранах калаçса ларчĕç. Мĕнле, ăçтан аманнă-ши? Алăсăр-урасăр юлнă-ши? Ун пекки те сахал мар вĕт... Тата ăçталла ăсатнă-ши, хăш хулара выртатьши?

— Адресне пĕлес пулсан мĕнле майпа та пулин çитсе кураттăмăрах ăна, — ассăн сывласа илчĕ Пауль. — Рина Петровна ав шăллĕ патне чиперех кайса курса килчĕ... Эпир те çавăн пек тунă пулăттămăр. Хуть те çуран та пулин çитĕттĕмĕр.

— Çапах та, ман шутпа, халь ытлашши пăшăрханмаллиех çук, — терĕ Евгени амăшĕ кăшт ларсан. — Вилмен вĕт-ха, ку паллă, çавна пĕлни те темех тăрать. Йывăр аманнă пулсан та госпитальре тӳрлетеççех ăна...

— Ку та тĕрĕс, — килĕшрĕ Пауль татах ассăн сывласа. — Шанас пулать. Хальхи медицина тем те тума пултарать... Ильмара та сыватаççех!

Çакăн хыççăн вара Паульпе Амалин те кăмăлĕсем самаях çĕкленчĕç. Ачисене те пĕрмай хавхалантарчĕç вĕсем:

— Ан хуйхăрăр, сирĕн аçу чĕрĕ, пурăнать вăл, ăна фашистсем амантнă пулсан та сывалать. Çитет акă çавăн пек телейлĕ вăхăт — куратпăрах эпир ăна!

— Анчах вăл вăхăчĕ хăçан çитет-ха? — ыйтрĕç ачисем.

— Нумаях юлмарĕ ĕнтĕ кĕтмелли...

Ачасем хăйсен юратнă ашшĕне курасси чăнах та нумаях юлман пулнă ун чух, анчах хальлĕхе никам та ун çинчен пĕлмен, шухăшлама та пултарайман. Пурнăçра пач кĕтмен çĕртен çав тери тĕлĕнмелли япаласем пулаççĕ-çке...

...Колхоз каллех çур акине — вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуркуннене — кĕтсе илме хатĕрленчĕ. Анчах кăçал пĕлтĕрхинчен йывăртарах пуласси курăнсах тăчĕ. Чăн та, Назар Егорччăн акмалăх вăрлăх çителĕклех пулнă, ăна вăл кĕркунне авăн çапсанах уйăрса, тасатса хунă, унтан пĕр пĕрчĕ те тытман. Анчах çĕрне сухаласси-сӳрелесси хытах хăратнă. Колхозра лашасем

сахаллансах юлнă — хĕл варринче Хĕрлĕ Çар валли тата вунă лаша парса яма тӳр килнĕ. Паллах ĕнтĕ, çар валли чи вăйлă лашасем çеç юрăхлă пулаççĕ. Килте халĕ лаша выльăхран ваттисемпе тихараххисем кăна юлчĕç — мĕнле ĕçлесе çитерес вĕсемпе?

Районра кăçалхи çур акине мĕнле хатĕрленсе ирттерес ыйтупа канашлу пулсан Назар Егорччă унтан питĕ кăмăлсăр таврăнчĕ.

— МТС директорĕ кăçал пире пĕр трактор та памасть пулмалла, — тесе пĕлтерчĕ вăл бригадирсене пухса. — Ан та шанăр, ан та кĕтĕр терĕ...

— Мĕншĕн апла тата? — тĕлĕнчĕç кусем.

— Сирĕн лашасем пур-ха, хăвăрăн вăйпах майлашатăр, анчах хăш-пĕр колхозсенче виç-тăватшар лаша çеç юлнă, вĕсене те ӳкесрен вĕренпе çакса усраççĕ терĕ.

— Пирĕн те мухтанмаллиех çук та-ха... Ватăпа вĕтĕ...

— Пур пĕр çавсемпех ĕçлес пулать. Паянтан пуçласа пĕр лашине те ан кӳлĕр. Канччăр, вăй илччĕр. Пĕтĕм шанчăк вĕсем çинче. Ик çулхи тихасене туртана хăнăхтарасчĕ — сӳре те пулин сĕтĕрекен тăвас, ваттисене çăмăлтарах пулĕ...

— Хăш-пĕр çĕрте вăкăрсене кӳлме тытăннă, пирĕн те кӳлес мар-ши хамăрăн Мотора? Ахалех ял тăрăх ухмаха супса çӳрет, — терĕ Сар Тимухха, иккĕмĕш бригада бригадирĕ.

— Ун çинчен те шухăшланă-ха эпĕ, кӳлмелле те пулать пуль вăл шуйттана... — Пĕррехинче çав Мотор — колхозăн тем пысăкăш вăкăрĕ — Назар Егорччăна урампа пынă чух тĕкме тапăннă та правлени хыçĕнчи нушнике хуса кĕртсе çур сехет ытла тытса тăнă, ниепле те тухма паман, çавăнтан вара председатель ăна Мотор мар, «шуйттан» тесе пурăннă.

— Анчах унпа çыхланма хăрушăрах-ха, патне пырсанах мăйракисемпе çĕклесе ывăтма пултарать, — Назар Егорччăна сăмах тĕкнĕ пекрех куç хĕссе илчĕ Тимухха. — Тата кӳлме те пĕлес çук...

— Йывăртарах тиесе лартсан тĕкĕшеймĕ, — сисмĕш пулчĕ председатель. — Кӳлме леш Павăл Оскарччă вĕрентет, вĕсен Эстонире ĕне выльăхпа лашасемпе ĕçленинчен те ытларах ĕçлеççĕ тет.

— Ыйтас эппин, пулăштăр.

— Эп унпа калаçрăм. Вăл Мотора çеç мар, хĕсĕр ĕнесене те кӳлмелле терĕ.

— Ну, ку ылашши вара, ĕнисенех тивес мар, — калаçăва тăрук хутшăнчĕ Евгени амăшĕ. — Сĕтне те çиетпĕр, кӳлсе те чупатпăр пулать. Ваттисем пек каласан — çылăх та пулĕ. Эсир капла качакасене те кӳлес тейĕр!

— Качакисене кӳлме никам та шутламасть, эс куна пустуй

палкатăн, — терĕ Назар Егорччă çиллессĕнрех, — анчах хĕсĕр ĕнесене кӳлнĕшĕн ним çылăхĕ те пулмасть. Сĕчĕ вĕсен виçĕ пуслăх, апатне ыттисемпе танах тĕшĕреççĕ. Ĕçлеччĕр!

...Виç-тăватă кун урам янраса тăчĕ. Кăшкăраççĕ, кулаççĕ, çуйăхаççĕ, каллĕ-маллĕ чупкалаççĕ. Назар Егорччă хушнипе ачасем ик çулхи тихасене çăмăл кăна çунасене кӳлсе турта хушшинче çӳреме хăнăхтараççĕ. Лешсем хăранипе ним тума пĕлмеççĕ — пĕрре каялла чакаççĕ, тепре тăрук малалла ыткăнса ĕрĕхсе каяççĕ те çултан пăрăнса юр ăшне кĕрсе ӳкеççĕ. Ун пек чух çуни çинче ларса пыраканĕсем те тухса вăркăнаççĕ. Пуринчен ытла ачасем Аркашран кулса пĕтрĕç. Вăл темиçе хут та тӳнсе кайрĕ, пĕрре çуна айнех пулчĕ. Хăй тăп-тăр юр, куç-пуçĕ те курăнмасть, аякран пăхсан ăна юр муклашки кăна тейĕн. Юлашкинчен, тихине ниепле те итлеттерейменнипе, вăл çуна çине урăх ачасене лартрĕ те тихине йĕвенрен çавăтса малалла илсе пыма пикенчĕ, анчах капла та ĕç тухмарĕ, тихана тахăшĕ хулăпа çапрĕ те лешĕ сасартăк аяккалла сиксе илсе Аркаша та хăйпе пĕрле кĕрт ăшне кĕртсе ӳкерчĕ.

Çапах та, тем тĕрлĕ мыскара курса пĕтмелле пулнă пулин те, темиçе кунтан ачасем тăватă тихана турта хушшинче çӳреме вĕрентрĕç-вĕрентрĕçех. Кӳлсен чиперех чупакан пулчĕç!

Евгени Пауль Оскаровичпа, Назар Егорччăпа тата ик-виç çынпа пĕрле Мотора кӳлсе çӳретнĕ çĕрте пулчĕ. Вăкăра пысăк çара çунана кӳлчĕç, çуни çине икĕ мăн каска хучĕç. Ну, хăтланчĕ те вара паттăр вăкăр! Унăн куçĕсем тӳрех юнпа тулса хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕç, вăл мĕкĕрчĕ, темле тискеррĕн ӳлерĕ, пĕрре чĕркуçленчĕ, тепре кайри урисене хутлатса йытă пек ларчĕ, пушăпа ик-виçĕ хут лайăхраххăн тивертсен сиксе тăчĕ те сиккипе малалла ыткăнса пĕрисен вĕрлĕк алăкĕ çине пырса тăрăнчĕ, ăна шăтăр-шатăр хуçса тăкса кил картине кĕрсе кайрĕ. Каялла урама илсе тухма тăрсан ласт! хăяккăн выртрĕ те ниепле те тăрасшăн пулмарĕ... Çапах та сăмса шăтăкĕсем витĕр кăларнă сăнчăртан туртса ăна ура çине тăратрĕç те урама илсе тухрĕç, анчах вăл тăрук айăккăн пăрăнса çуна туртине пĕррех хуçса пăрахрĕ.

— Ну, шуйттан тăк шуйттанах çав! — тарăхса вăкăра хырăмĕнчен тапрĕ Назар Егорччă. — Пулать вĕт çакăн пек киревсĕр чĕр чун! Тытса пустаратăп ак, ашне халех заготовкăна паратăп...

— Ан пăлхан, хуçи, пур пĕр парăнтаратпăр, — терĕ ăна хирĕç Пауль, — темиçе кунтан пурçăн пек пулать акă вăл!

Чăнах та итлекен турĕç вĕт ку таранччен пĕтĕм ял халăхне хăратса çӳренĕ хаяр вăкăра. Сахал мар ĕçлерĕ вăл кайран колхоз валли. Мотор пекех ĕçлерĕ. Пур йывăр япаласене те унпа

турттарчӗҫ. Ахӑрса ҫӳреме те, ҫынсене хӑратма та пӑрахрӗ, кӑмӑлӗпе пӑру пекех йӑваш пулса тӑчӗ.

— Пӗлмен, пӗлмен, — терӗ Назар Егорччӑ кулкаласа, — тахҫанах кӳлсе лутӑркамалла пулнӑ-мӗн шуйттана!

## Ырӑ хӑна

«Ҫӗнӗ саманаран» инҫех те мар, Хусанпа Горькие ҫыхӑнтаракан ҫӗнӗ шоссе ҫулӗн пӗр сыпӑкӗнче, Мадис Ноот ятлӑ тепӗр ватӑрах эстонец ӗҫлесе пурӑннӑ. Ҫул-йӗр маҫтӑрӗ пулнӑ вӑл. Пӗччен ҫын. Эвакуаци вӑхӑтӗнче унӑн арӑмӗ поезд ҫинчех чӗрепе аптраса вилсе кайнӑ. Питӗ кичем те тунсӑх пулнӑ халь ӑна. Ӗҫре ҫеҫ чунне лӑплантаркаланӑ вӑл, ытти чух ҫынсемпе те калаҫсах кайман.

Пӗррехинче ҫав Мадис Ноот такамран «Ҫӗнӗ самана» колхозра хӑйӗн янташӗсем пурри ҫинчен илтнӗ те пуҫлӑхӗнчен икӗ кунлӑх отпуск ыйтса илсех тухса утнӑ. «Ҫӗнӗ саманана» ҫитсе эстонецсен кил-йышӗсем ӑҫтарахра пурӑнни ҫинчен ыйтсан ӑна тӳрех Евгенисен килне тӗллеттерсе янӑ, мӗншӗн тесен Пауль Киккаса ялта ытти эстонецсенчен ытларах пӗлнӗ, пӗрмай тимӗрҫ лаҫҫинче шаккакан, ялан колхоз председателӗпе пӗрле ҫӳрекен старике пӗчӗк ачасем те палланӑ...

Кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн каллех тимӗрҫ лаҫҫине кайма хатӗрленнӗ Пауль шӑпах урама тухнӑччӗ — вӗсем хапха умӗнче тӗл пулчӗҫ. Хӑй курнӑ старик кунти ҫын маррине сӑнранах уйӑрса илсе Мадис Ноот ӑна тӳрех эстонла саламларӗ:

— Тере-тере!

Пауль ун ҫине питӗ тӗлӗнсе пӑхрӗ, анчах хӑй умӗнче эстонец, пӗр чӗлхе ҫынни, тӑнӑшӑн тӑруках ҫав тери хӗпӗртесе тӳрех аллине тӑсса пачӗ:

— Тере-тере, тӑванӑм...

Палламан янташа вӑл пӗтӗм ырӑ кӑмӑлпа киле кӗме чӗнчӗ. Вӗсем паллашрӗҫ, Паульваскасах чей вӗретрӗ, ӑнсӑртран килсе кӗнӗ хӑна умне хытса кайнӑ «подушки» канфет кӑларса лартрӗ, ҫӑкӑр касса хучӗ, вара вӗсем хушшинче вӗҫӗмсӗр калаҫу, асаилӳ пуҫланса кайрӗ. Эстонире Совет влаҫӗ тӑвиччен Мадис Ноот Таллинри пӗр капиталист патӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ-мӗн. Лешӗ ун чухнехи буржуалла правительствӑран ҫӗршывра ҫӗнӗ ҫулсем, кӗперсем тума, киввисене юсаса тӑма подряд илсе икӗ пин ҫынна ӗҫлеттерсе пурӑннӑ та калама ҫук пуйса кайнӑ. Ҫул-йӗр тӑвакан рабочисен ӗҫӗ тӳсме ҫук йывӑр пулнӑ: чулне те кӑларнӑ вӗсем, хӑйӑрне те турттарнӑ, асфальтне те

пĕçерсе сарнă — тем те тунă, анчах ĕçлесе илнĕ укçи çиме те çитеймен.

— Çаплаччĕ çав пирĕн пурнăç буржуйсем вăхăтĕнче, — ассăн сывла-сывла илчĕ Пауль хăйĕн янташĕн калавне итлесе ларнă май, — эпир утайми пуличчен ĕçлеттĕмĕр, вĕсем пирĕн тартан, пирĕн юнран тунă укçапа керменсем лартатчĕç, тĕнчери чи чаплă курортсем тăрăх çӳретчĕç, мĕнле шут тытнă — çавăн пек ашкăнатчĕç... Мĕн каламалли!

Рабочисем ĕç укçине ӳстерме ыйтса вунă хут та ытла çырса панă, анчах «çул-йĕр патшин» пĕр ответ кăна пулнă:

— Камăн ман патăмра ĕçлес килмест, вăл паянах тухса кайма пултарать, никама та чармастăп. Пĕр çын вырăнне эпĕ тепĕр куннех вунă çын тупатăп...

Юлашкинчен рабочисем хуçа патне Таллина делегаци янă — вунă çын. Çав шутра Мадис Ноот та пулнă. Хуçа вĕсене кăмăллăн йышăннă пекех тунă, рабочисем çырса панă хута вуласа тухсан: «Эпир пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмасан май килмест, сирĕн нушасене эп пит лайăх ăнланатăп, çавăнпа та çитес уйăхранах ĕç укçине ӳстерме хушатăп», — тенĕ. Делегаци ăна ĕненсе тав тусах тухнă, анчах хуçа керменĕн крыльци умĕнче рабочисене полици машини кĕтсе тăнă ĕнтĕ. Алăкран урама тухсанах вĕсене полицейскисем çăтăр-çатăр ярса тытнă та хупă машина çине лартса тӳрех тĕрмене илсе кайнă. Тепĕр эрнерен камитле суд пулнă, вуннăшне те «рабочисене правительствăна хирĕç пăлхав пуçласа яма чĕннĕшĕн» айăпласа пилĕкшер çул тĕрмере хупса усрамалла тунă.

Икĕ çул ытла çавăн пек ним айăпсăр ларнă вара вĕсем, 1940 çулхи июнь уйăхĕнче, буржуалла правительствăна сирпĕтсе Совет влаçĕ туса хурсан, тин ирĕке тухнă. Нимрен те малтан Мадис Ноотпа унăн юлташĕсем хăйсен хуçине тытса ĕç халăхĕн сучĕ умне тăратасси çинчен шухăшланă, анчах лешĕ унччен пĕтĕм пуянлăхне карап çине тиесе Швеције тарма ĕлкĕрнĕ иккен...

— Совет влаçĕ вăхăтĕнче мана çул-йĕр рабочисен союзĕн председателĕ турĕç, — терĕ Мадис Ноот сивĕнме пуçланă чее сыпа-сыпа. — Хытă тăрăшрăм вĕсен пурнăçне лайăхлатасшăн. Вĕсен нуши-хурлăхне эпĕ хам тӳссе курнă-çке-ха, пĕлетĕп. Мухтанмасăр калатăп — юрататчĕç мана рабочисем. Анчах... вăрçă пуçланчĕ. Нимĕçсем Таллин çине çĕрĕн-кунĕн бомбăсем тăкрĕç. Мирлĕ халăха питĕ нумай вĕлерчĕç. Манăн пĕртен-пĕр хĕрĕм Пооли те пĕтрĕ. Вăл трамвайра пынă чух юнашарах пысăк бомба ӳкнĕ те, унта пĕр çын та юлман... Виллине те тупаймарăмăр... — Мадис Ноот хурлăхлăн сывласа илчĕ. — Унтан Россиялла тарса тухмалла пулчĕ. Тен, эпĕ хам юлаттăм та пулĕ, партизана каяттăм-и, мĕн-и, анчах манăн арăм хытă

чирлесе кайрĕ. Пооли бомба айĕнче пĕтни ăна урараннах ӳкерчĕ... Çул тăршшĕпех асаплантăм эп унпа. Пирĕн Свердловска çитмеллеччĕ, анчах вăл Хусана çитеспе вилсе кайрĕ те, манăн ирĕксĕрех анса юлмалла пулчĕ. Пытаркаларăм аран-аран... Унтан ĕç шырама тытăнтăм. Хулари парти комитетне кайса хам мĕн-мĕн ĕçлеме пултарни çинчен каласа патăм: эпĕ — çул-йĕр маçтăрĕ, тракторист та пулнă, шофера та пултаратăп терĕм, вара мана тӳрех çакăнта, Хусанпа Горький хушшинче тăвакан çул çине, ячĕç. Çулне туса пĕтерсен те кунтах юлма тиврĕ. Ăçта каятăн-ха? Паллах, питĕ кичем... Палланă çынсем çук. Пĕрмай Пооли ипе арăм аса килеççĕ, хăш чух шыва кайса сикес патнех çитетĕп, тупата! Ăнсăртран çак ялта эстонецсем пурри çинчен пĕлсен тин чун кĕнĕ пек пулчĕ. Епле пулсан та килсе курасах терĕм, хамăр çынсене курса калаççан, тен, кăштах лăпланăп тесе шутларăм...

— Питĕ тĕрĕс тунă эс, тăванăм, — терĕ Пауль. — Çуралнă çĕршывран аякра пурăннă чух хамăр енчи çынсемпе тĕл пулни темрен те хаклă вăл, тăван аçу-аннӳне курнă пекех пулать. Пĕлетĕп эп ăна, мĕншĕн тесен эп хам ютра нумай пурăннă...

Унтан Пауль Киккас çĕнĕ тусне хăй çинчен, унăн килйышĕ епле асапсем тӳсни, ăнсăртран хăйĕн çухалнă ывăлĕ Ильмар пирки пĕлни, анчах ăна ниепле те тупайманни çинчен каласа пачĕ. Ильмар епле паттăр çапăçни çинчен çырнă хаçата та кăларса кăтартрĕ.

Мадис Ноот куншăн питĕ хĕпĕртесе кайрĕ.

— Эппин, Эстони ывăлĕсем те тӳпелеççĕ фашистсене? Пирĕн ăнма пуçланă пурнăçа аркатнăшăн, пирĕн çынсен айăпсăр тăкăннă юнĕшĕн тавăраççĕ! О, мĕн тери лайăх ку!..

— Куран, кунта «Эстони дивизийĕ» тесе çырнă! — хаçат çине пӳрнипе тĕлле-тĕлле кăтартрĕ Пауль. — Взвод та, рота та, батальон та мар — дивизи! Пĕлетĕн-и эс, дивизире миçе çын унта?

— Эп çарта пулса курман çав, — терĕ Ноот.

— Ĕлĕкхи вăхăтра, эп патша çарĕнче службăра пулнă чух, дивизире вун тăватă пинччĕ. Халь те унтан кая мар ĕнтĕ. Шутла-ха эсĕ, пысăк вăй вĕт вăл!

— Тен, ун пек дивизи пĕрре кăна та мар, татах пур? — хăйсен тăван халăхĕн ывăлĕсем тăшманпа паттăр çапăçнăшăн Паульпе пĕрле савăнса каларĕ Ноот.

— Пулма пултарать! Паллах, — терĕ Пауль.

Сăмах кунти пурнăç çине куçсан Пауль хăй чылайранпа колхозăн тимĕрç лаççинче ĕçлени, ку кунсенче плугсемпе ытти ĕç хатĕрĕсене çур аки валли хатĕрлесе çитерме тăрăшни çинчен каласа пачĕ. Çавăнтах ӳпкелесе те илчĕ.

— Кансĕр пулать кăçал, — терĕ вăл. — Лашасем сахал кол-

хозăн. МТС тракторсем параймасть тенĕ. Çитмеççĕ. Тен, чылайăшĕ çĕмĕрĕлсе юрăхсăра тухнă. Çĕннисем, паллах, çук халь. Хамăр ята пĕр трактор пулнă пулсанах эпир сиксе ташламалла та çав, ăçтан тупатăн-ха ăна? Çук вĕт...

Мадис Ноот çакăн хыççăн пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ. Вăл тем çинчен шухăшларĕ курăнать. Унтан чикаркка чĕркесе чĕртрĕ те çăра тĕтĕме аллипе сире-сире хуллен кăна ыйтрĕ:

— Çур акине ирттерме йывăртарах пулать тетĕн эппин, Пауль Оскарович?

— Çапларах çав, тăванăм, — пуçĕпе сулчĕ Пауль. — Хĕнтерех пулать. Анчах епле те пулсан майлашмаллах ĕнтĕ. Вăрлăхĕ пур, пĕр аршăн çĕре те акмасăр хăвармастпăр. Çăкăрĕ фронт валли те, хамăра та кирлĕ-çке...

Ноот каллех чĕнмесĕр ларчĕ, унтан тăчĕ те каллĕ-маллĕ уткаласа илчĕ.

— Пĕр шухăш пырса кĕчĕ-ха ман пуçа, — терĕ вăл. — Сире пулăшма пултарассăн туйăнать...

— Мĕн енчен, тăванăм? — ыйтрĕ Пауль.

— Пĕлетĕн-и, манăн çул-йĕр участокĕнче пĕр кивĕ трактор пур. Газогенераторнăй трактор, краççынпа мар, вутă хутнипе ĕçлекенни. Çул тунă чух усă курнă та унпа, кайран, пăсăлнă пирки, лупас айне сĕтĕрсе кĕртсе лартнă. Анчах ытла çĕмрĕкех те мар пулас-ха вăл... Çавна тĕрĕслесе пăхас тетĕп эпĕ. Юсакаласа хута яма пулмасть-ши ăна? Таврăнсанах пăхатăп-ха, ытлашшиех арканса кайман пулсан çийĕнчех сана систеретĕп. Кайран мĕн тăвасси курăнĕ унта. Эпир иксĕмĕр те механиксем вĕт-ха...

— О-о, ку çав тери пысăк телей пулĕччĕ пирĕн колхозшăн! Анчах та парĕç-ши ăна пире? Сан пуçлăху хирĕç пулмĕ-ши? Патшалăх пурлăхĕ, эп уншăн ответлă тейĕ...

— Усăсăр ларса пурăнакан кивĕ япалана юсаса ĕçе янине кам хирĕç пултăр? Вăл трактор сире туя кайма мар, тырă акса тума кирлĕ вĕт-ха? Анчах тырри хăвах каларăн, фронта та, хамăра та кирлĕ. Апла тăк мĕнле хирĕçле сăмах пулма пултарать? — хĕрсех кайрĕ Ноот.

— Эппин, май çитнĕ таран пулăш-ха эс пире, тăванăм. Тен, чăнах та ĕç тухĕ? Кĕтмен-туман çĕртен тракторлă пулса тăрăпăр, э? — хавасланнипе аллисене хире-хирĕç сăтăркаласа илчĕ старик.

— Тăрăшатăп, Пауль Оскарович...

Мадис Ноот Киккассем патĕнчен ирхине тин тухса кайрĕ (çур çĕрччĕнех калаçрĕç вĕсем), тепĕр виç-тăватă кунтан Варькка почтальон ватă Пауле унăн кĕске кăна çыруне пырса пачĕ. «Трактора тĕрĕслесе пăхрăм, юсама пулать, пĕр виç кунлăха пуçтарăнса кил», — тесе çырнă Мадис.

Кун çинчен Пауль Назар Егорччăна каламанччĕ-ха («те ĕç тухать, те тухмасть?..»), анчах çак çырăва илсен тӳрех правление кайрĕ. Хăй патне ăнсăртран пырса кĕнĕ тепĕр эстонец колхоза çур аки валли трактор юсаса пама пулни çинчен каласан председатель хĕпĕртенипе ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ. Пĕрре тăчĕ, тепре ларчĕ, аллисене сăтăркаласа илчĕ.

— Ара, пирĕн пуç çине пĕлĕтрен татăлса аннă ылтăн пулать вĕт ку! Енчен чăнах та эс каланă пекех пулса тухсан эп вăл çынна çĕр хут ыталаса чуптăваттăм! — сĕтел çине чышачыша илчĕ Назар Егорччă. — Вĕçтер часрах, Павăл Оскарч, пĕр минут та тытăнса ан тăр, васка! Эп халех лаша кӳлме хушатăп. Çимеллисем илсе кай, ху валли те, ăна валли те. Ĕçленĕ чух тутă пулас пулать. Шел, эрех çук, эрех те парса янă пулăттăм санăн тусу валли!

— Ĕçмест вăл, — терĕ Пауль.

— Ну, апла пулсан — тата лайăхрах, ĕçмен çын ĕçе тĕплĕрех те, хăвăртрах та тăвать.

Килтен тухса кайнă чух Пауль Евгение унăн амăшĕ умĕнчех каласа хăварчĕ:

— Икĕ кунтан вырсарни пулать, эс ун чух вĕренместĕн. Пырса кил-ха эпир ĕçленĕ çĕре, тен, мĕн те пулин кирлĕ пулĕ, Назар Егорчча каласа ямалли тупăнĕ... Инçе мар вĕт — пĕр улт-çич километр çеç тет. Юманлăх ятлă ял тĕлĕнче. Вăл яла пĕлетĕн пуль?

— Пĕлетĕп, Пауль Оскарович, пулса курнă эп унта. Вырсарни кун ирех çитетĕп!

— Маттур ача çав эс...

Кун çинчен Евгени Аркаша каласа пачĕ. Икĕ эстонец вĕсен колхозĕ валли трактор юсаса хута яма хатĕрленни ачасене те питĕ хытă савăнтарчĕ. Ара, çур акире ĕç тем тери çăмăлланать вĕт, тата ик-виçĕ хут хăвăртрах пулать!

— Мана старик çитсе курма хушса хăварчĕ. Пĕрле пымастăн-и? — ыйтрĕ Евгени хăйĕн тусĕнчен.

— Хăварсан та юлмастăп, — терĕ ăна хирĕç Аркаш. — Çавăн пек çĕре те каймасан тата...

Икĕ тус вара вырсарни кун ирхи апат хыççăнах йĕлтĕрсем çине тăчĕç те Юманлăхалла вĕçтерчĕç — тӳрĕрен тӳрĕ, хĕвел çутинче йăлтăртатса выртакан шап-шур хирсем тăрăх, çырмасем урлă. Хĕрсе кайнă Аркаш Евгени пĕр вĕт вăрман пуçĕнче йăпăртлăха чарăнса тăнă хушăра унран иртсе кайрĕ те малта мĕн пуррине курмасăр самаях тарăн шырлана пырса сикрĕ. Юрать-ха аялта юрĕ тарăн пулнă пирки ни хăй сусăрланмарĕ, ни йĕлтĕрĕ хуçăлмарĕ. Каялла аран чакаланса тухрĕ вăл, шырлан хĕррине çитсе тăнă Евгени каçса кайса, варне тытса кулчĕ унран:

— Ак хайхи,васкакан тем хыпнă тени!..

Çӳлелле хăпарма хăтланакан Аркаш хырăмĕ çине ӳке-ӳке темиçе хут та каялла шуса анса кайсан Евгени татах тăрăхларĕ:

— Çук, Аркаш, начар альпинист эсĕ! Альпинист мар — пăру!..

Юманлăха вĕсем кăнтăрла тĕлнелле çитрĕç. Пауль Киккаспа Мадис Ноот ĕçлекен вырăна тупма йывăр пулмарĕ — сулйĕр участокĕн çурчĕсем шоссерен пĕр çĕр метрта кăна иккен. Стариксем трактора йăлт сӳтсе пăрахнă, унăн кӳлепи кăна тăрса юлнă, Аркаш сăмахĕпе каласан, тракторăн «пыршипакартине» пĕтĕмпех кăларса илнĕ. Урай талккишпех тимĕр выртать — темле шестернесем, гайкăсем, тем те пĕр, вĕсенчен хăшĕ мĕн тума кирлине вĕлерсен те пĕлсе çитес çук.

Ачасем пынăшăн Пауль хĕпĕртерĕ, пĕр вăхăтлăха ĕçне пăрахсах калаçса ларчĕ вĕсемпе. Евгени çурăмĕ хыçĕнчи кушелтен амăшĕ ятарласа пĕçерсе парса янă пăрçа икерчипе çур литр вĕретнĕ сĕт кăларса лартсан старик кăмăлĕ тата çĕкленсе кайрĕ.

— Ну, куншăн тавтапуçах аннӳне! Ăçтан пулма пĕлнĕ пуль ун пек ырă çын!.. — Вăл икерчĕпе сĕтне те çуррине Мадис Ноота пачĕ. Çинĕ май ыйтса пĕлме тытăнчĕ: — Мĕнле пурăнатăр эсир унта мансăр? Пурте тĕрĕсех-и, чирлекен-тăвакан çук-и?

— Лайăх пурăнатпăр, — терĕ Евгени. — Эсир хăвăр мĕнлеха кунта? Тракторĕ пулас пек-и? Назар Егорччă та, анне те питĕ пăшăрханаççĕ. Назар Егорччи каçхине пирĕн пата кĕрсе тухрĕ те, аннепе иккĕшĕ пĕр çак трактор çинчен кăна калаçрĕç. Епле пулсан та хута яччăрччĕ çавна, вара эпир нимрен те хăрамастăмăр теççĕ.

— Эппин, киле таврăнсанах кала вĕсене: пирĕн трактор пулать, Пауль Оскарович шантарсах каларĕ те. Тата çакна кала: халех шашка хатĕрлеме тытăнччăр. Ак çакăн пысăкăш йывăç таткисем... — Пауль ывăç тупанĕ çине пĕр çич-сакăр сантиметр тăршшĕ тимĕр татки хурса сиктеркелесе илчĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Аркаш.

— Вăл пирĕн горючи пулать, — терĕ Пауль. — Эс сăмавара кăмрăк вырăнне турпас хурса вĕретнине курнă-и?

— Хам та тем чухлех вĕретнĕ-çке, пирĕн сăмавар пур вĕт, — малтанхи пекех ним ăнланмасăр ответлерĕ Аркаш.

— Вăт, пирĕн çак трактор та сăмавар пекех йывăç таткисем çунтарнипе вĕресе ĕçлет, — çемçен кулса илчĕ Пауль. — Краççын вырăнне çунтаратпăр. Ăнлантăн-и?

— Халь чухларăм, — терĕ те Аркаш ĕнсине кăтăртаттарса илчĕ.

— Анчах вутти шутсăр типĕ пулмалла, унсăр трактор суха

тума мар, вырӑнтан та хускалаймасть. Кала Назар Егорчча, чи типӗ шашка хатӗрлетӗр. Тип йывӑç тупаймасан шашкисене хуть те вӗри кӑмакана пӑрахса типӗттертӗр...

— Нумай кирлӗ пулать-и вара вӑл? — ыйтрӗ Евгени.

— Сахалах мар ӗнтӗ, çӗр алӑ гектар таран сухаламалла вӗт. Халь тӗп-тӗрӗссипе калаймастӑп, анчах пӗр çирӗм кубометр вутӑ татса вакламаллах пулать пулӗ. — Ватӑ Пауль Мадис Ноотпа хӑйсен чӗлхипе калаçса илчӗ те тепӗр хут çирӗплетсе каларӗ: — Çапла, пӗр çирӗм кубометр...

Икерчӗпе сӗт çинӗ хыççӑн стариксем каллех ӗçе тытӑнчӗç — тимӗр çумне тимӗр тыта-тыта майлаштараççӗ, хӑш-пӗр пайсене тиски хушшине хӗстерсе якатаççӗ, унтан каллех виçсе пӑхаççӗ. Евгенипе Аркаш вӗсем мӗнле ӗçленине вӑрахчен сӑнаса тӑчӗç, стариксемпе пӗрле ачасен хӑйсен те мӗн те пулин тӑвас, вӗсене пулӑшас килчӗ, анчах та пачах пӗлмен ӗç çумне мӗнле çулӑхатӑн-ха? Майӗ çук...

— Килелле вӗçтерӗр ӗнтӗ, ачамсем, атту тӗттӗм пулса ларӗ те, таçта çухалса кайӑр тата, — терӗ Пауль пӗр-икӗ сехет пек иртсен.

— Юрать, Пауль Оскарович, каятпӑр, — терӗ Евгени. — Эппин, председателе эс хушнӑ пек калас?

— Кала, Евгени, çитсенех кала, хатӗрлентӗр... Малтан шашкине кунта та илсе килес пулать-ха, унсӑрӑн эпир трактора тӗрӗслесе пӑхма та, ӑна яла çитерме те пултараймастпӑр.

— Сывӑ пулӑр, Пауль Оскарович...

Туссем килелле чӑнах та вӗçнӗ пекех ыткӑнчӗç. Халь вӗсем уйсем урлӑ тӳрӗрен мар, малтан шоссе çуммипе, унтан пӑрӑнсан хытса кантӑк пек пулса тӑнӑ лаша çулӗпе кайрӗç те — йӗлтӗрӗсем çав тери лайӑх шурӗç. Çитменнине, шоссерен пӑрӑнсан çулӗ пӗрмай аналла анать — патаксемпе пӗрре лайӑхрах тӗртсе илсенех пӗр алӑ метр ярӑнса каятӑн. Аркаш хӑй пӗчӗкрех пулин те пӗрмай малта пычӗ, Евгени — ун хыççӑн. Вӗсем шоссерен уйрӑлса пӗр-икӗ километр пек кайсан таврара тӗттӗмленчӗ, çав вӑхӑтрах Атӑл енчи вӑрмансем хыçӗнчен темӗн пысӑкӑш хӗртнӗ çатма пек уйӑх шуса тухрӗ те, юрпа хупланса выртнӑ таврари уй-хирсем çине кӗрентерех тӗс ӳкрӗ. Темле асамлӑ юмахри пек пулса тӑчӗ уйра...

— Эх, хам художник пулнӑ пулсан çак пӗтӗм илеме ӳкерсе илӗттӗм, — йӗри-тавралла ӑмсанса пӑхрӗ Евгени.

Тепӗр çур сехетрен ачасем яла пырса кӗчӗç.

— Каялла килсе çӳриччен Назар Егорччӑна халех кӗрсе калар мар-и? — терӗ Аркаш, уй хапхи умне хывӑннӑ çӳллӗ кӗрт çинчен ярӑнса анса чарӑннӑскер.

— Эп те çаплах шутлатӑп, атя кӗрер, — килӗшрӗ Евгени.

Колхоз председателӗ униччерен инçе те мар, пӗр пилӗк-улт

кил урлă çеç пурăнать. Ачасем йĕлтĕрĕсене хывса хапха çумне тăратрĕç те çăматтисем, тумтирĕсем çумне çыпăçнă юра алсишĕсемпе çапа-çапа тасатса кил картине кĕчĕç. Вĕсене хирĕç крыльца айĕнчен пĕчĕк кăна çăмламас ула йытă сиксе тухса хаяррăн вĕрме тапратрĕ, анчах Аркаш ун патнелле хăюллăн пырса: «Улашка, Улашка! Ухмаха ан ер, эпир вĕт ку», — тесессĕнех йытă вĕрме чарăнса ун çинелле вылямалла сикме пуçларĕ. Ачасем кунта час-часах килсе çӳренĕ çав, Улашка та палланă вĕсене...

Назар Егорчч̆ă каçхи апат çиме ларнă-мĕн. Аркашпа Евгени паян ăçта кайнине пĕлнĕ вăл, çавăнпа та вĕсем алăкран кĕрсе тăрсанах алăри кашăкне пăрахрĕ те сĕтел хушшинчен тухрĕ.

— Ну, мĕнле унта? — пăшăрханарах ыйтрĕ вăл. — Пулать-и мĕн те пулин? Павăл Оскарччă мĕн каласа ячĕ? Савăнмалла-и, хурланмалла-и манăн?

Ачасем пĕр-пĕрне пӳлсех каласа пама тытăнчĕç.

— Савăнмалла! — Евгенирен малтан персе ячĕ Аркаш. — Часах ак ташлама та тивĕ-ха тен!

— Трактор пулать, Назар Егорчч̆ă! — терĕ Евгени.

— Вĕсем ăна йăлт сӳтсе пăрахнă, анчах тепĕр виç кунтан каялла пуçтарма пуçлаççĕ.

— Халь шалти пайĕсене майлаштараççĕ...

— Шашка хатĕрлеме хушрĕ Пауль Оскарович. Краççын вырăнне çунтармаллине, эппин. Сăмаварти пек...

— Анчах шашки типĕ пултăр терĕ, чĕрĕ пулсан трактор сухалаймасть терĕ.

— Нумай кирлĕ пулать тет. Çирĕм кубометр.

— Тракторĕ чăн та пулатех тет-и? — тепĕр хут ыйтрĕ председатель. — Шантарсах калать-и?

— Шантарсах калать! Тепĕр эстонци те çаплах калать. Вĕсем пĕрле ĕçлеççĕ. Киле килме тухас умĕн Пауль Оскарович тепĕр хут астутарчĕ пире: Назар Егорчча паянах кĕрсе калăр, шашка хатĕрлеме тытăнтăр терĕ. Тракторĕ ĕçлес шанчăк çук пулсан шашки мĕн тума кирлĕ ăна?

— Аван! Питĕ аван! — Назар Егорчч̆ă каллех сĕтел хушшине ларчĕ, анчах çиес вырăнне чĕлĕм туртса ячĕ — хытă пăлханчĕ пулмалла. — Ну, спаççипă сире ыр хыпар килсе пĕлтернĕшĕн. Тракторне хута яраççех пулсан эпир хамăрăн мĕн тумаллине тăвăпăр-ха ăна, шашки-машкишĕн хăрамастăп, вăл пирĕншĕн çăмăл япала! Халь кайса канăр ĕнтĕ, ыр каç пултăр...

Тепĕр ирхине ирех Назар Егорчч̆ă лаша кӳлчĕ те Пауль Киккаспа Мадис Ноот трактор юсанă çĕре хăй тухса кайрĕ. Каçхине Евгенипе Аркаш каласа пани ăна хытă савăнтарчĕ, анчах çапах та халĕ унăн колхоза пулăшма «ура çине тăратакан тимĕр лашана» хăйĕн куçĕпе курас килчĕ, унсăр пуçне

тата трактор валли мĕнлерех «апат» хатĕрлемелли çинчен старихсемпе хăйсемпе калаçса илмелле.

— Ăнма пуçланă ĕçе аларан вĕçертме юрамасть, — шухăшласа пычĕ вăл çул çинче, — мĕн кирлине çийĕнчех туса пырас пулать. Пурте вăхăтра, çителĕклĕ пултăр!

Ачасем ăна тĕп-тĕрĕс каласа панă иккен — икĕ ватă эстонец трактора йĕркеллех юсанă, туса çитерсен вăл чиперех ĕçлессе шаннă. Машинăн пăсăк пайĕсене кăларса пăрахнă, вĕсен вырăнне çĕннисене тупса лартнă, çитменнисене хăйсем тăваççĕ. Тепрер эрнерен çак лупас айĕнчен вăл хăех кĕрлесе тухма пултарать.

— Сире мĕнле тав тумаллине те пĕлместĕп ĕнтĕ, — терĕ Назар Егорччă çав тери пăлханса.

— Нимле тав туни те кирлĕ мар, тăванăм, ĕçĕ ăнăçлă пулса çиттĕрччĕ кăна, — терĕ Пауль. — Сан валли кăна мар вĕт-ха ку, халăх валли. Халăхĕ шутне эпир хамăр та кĕретпĕр. Эсир акса тунă тырра-пулла эпир те çиместпĕр-и-мĕн? Сан колхозу парса тăракан çăкăра çиекен салтаксем пирĕншĕн те çапăçмаççĕ-им? Çавăнпа та камăн кама малтан тав тумалли çинчен шухăшласа пăхас пулать-ха, тăванăм... — Пауль Назар Егорччă çине пăхса кăмăллăн кулса илчĕ.

— Тĕрĕс сăмах, — тăрук калаçăва хутшăнчĕ Мадис Ноот. — Пирĕн сире ытларах та тав тумалла пуль, мĕншĕн тесен пире эсир тăрантарса усратăр кунта, эсир çывăх тăвансене кĕтсе илнĕ пек йышăнтăр, этем шутлă пурăнма май патăр. Кам выçă — ăна çитертĕр, кам çарамас — ăна тумлантартăр, кама сивĕ — ăна ăшăтрăр. Пире эсир мĕн тери ыр тунине эпир виличчен те манас çук ĕнтĕ...

— Ăна шутлама кирлĕ те мар халь, — терĕ Назар Егорччă. — Эпир совет çыннисем пуль? Епле-ха пĕр-пĕрине пулăшмастăн? Енчен те эпир сирĕн пек хурлăха кĕрсе ӳкнĕ пулсан эсир те пире çавăн пекех пулăшаттăрччĕ вĕт?

— Ун пирки сăмах та çук, паллах, пулăшнă пулăттămăр, — терĕ Пауль.

— Шăп та çавă, пĕр-пĕринпе туслă пулса пулăшни çăлать те пире халь, — хушса хучĕ Мадис Ноот. — Гитлер авă урăхла ĕмĕтленнĕ иккен: Российăра тĕрлĕ халăхсем пурăнаççĕ, вĕсен кашнин хăйне майлă йăласем, кашнин хăйĕн тĕнĕ: пĕрисем — православнăй, теприсем — мусульман, виççĕмĕшĕсем — католик, культурисем те пĕр-пĕринчен расна. Çавăнпа усă курса вĕсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яратăп та Советсене çĕнтерме питĕ çăмăл пулать тенĕ. Анчах та ку унăн ĕмĕт çеç пулса тăчĕ, пирĕн халăхсен туслăхĕ унăн танкĕсенчен те çирĕпрех иккен...

— Шутласан, миçе тĕрлĕ халăх ывăлĕсем çапăçаççĕ халь тăшмана хирĕç! — аллинчи хыпкăчне чĕркуççи çине хурса кăкăр туллин сывласа илчĕ Пауль. — Вырăсĕ те, украинецĕ те, грузинĕ те, узбекĕ те, чăвашĕ те, тутарĕ те... Каласа та пĕтерес çук! Халь акă фронтра уйрăм Эстони дивизийĕ пурри çинчен пĕлтĕмĕр, ман ывăлăм Ильмар çав дивизире çапăçнă. Нумай пулмасть тата хаçатра латышсен дивизине асăнчĕç... Пурте пĕр кăмăллă вĕт-ха вĕсем, пурте фашизма чун-чĕререн кураймасăр çапăçаççĕ...

— Çавăнпа çĕнтерсе пыраççĕ те халь, — терĕ Ноот.

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ. Питĕ тĕрĕс, — пуçĕпе сулса илчĕ Назар Егорччă. — Çĕр çинче туслă пурăннине нимĕн те çитмест...

Киле таврăнсан каçхине вăл бригадирсене пухса канашларĕ.

— Трактор валли типĕ шашка ăçтан тупăпăр? Мăн çырма хĕрринчи кив витене сӳтсе татсан мĕнле-ши? Ахалех çĕрсе ларать вĕт? Асăрхарăм-ха пĕркун — пĕрер-пĕрер пĕрененех сĕтĕреççĕ пулмалла тахăшĕсем. Пĕр стени самаях лутраланнă...

Колхоз шăп вăрçă пуçланас умĕн ял хĕррине лашасем валли çĕнĕ пысăк вите тунă-мĕн те, ак ку, малтанхи, чăнах та, ахалех ларнă. Çийĕ те çук унăн, алăк-чӳречи те çук, кăшкарĕ çеç юлнă, ăна та майĕпе йăкăртма пуçланă имĕш. Пĕр вун пилĕк çул ĕлĕкрех кулаксен витисене сыпа-сыпа тунăскер, халь вăл ниме те юрăхсăр пулнă, анчах пĕренисем вара — тип-типĕ, вучаха-мĕне хурсан кӳкĕрт пекех çунмалла. Председатель хăйĕн шухăшне каласа парсан бригадирсем нумай та калаçса тăмарĕç, сӳтес те татас терĕç.

Ну, ĕç пулчĕ те вара ачасем валли!..

Мăн çынсем ишĕлтерсе антарнă кивĕ вите патĕнче урок-сем хыççăн кашни кун кĕшĕлтетрĕç вĕсем. Пĕрисем пĕренесене кĕскен-кĕскен татаççĕ, теприсем вĕсене пĕчĕк пуртăсемпе лач! лач! лартса çураççĕ, виççĕмĕшсем çав шашкăсене михĕсем ăшне тултараççĕ те çунашкасем çине хурса правлени хыçĕнчи пушă лупас айне кайса пушатаççĕ.

Çак ĕçе тытăннă чухне Назар Егорччă Евгенипе Аркаша тĕл пулчĕ те хытарсах каларĕ:

— Эсир аслисем пулатăр. Ну, бригадир пеккисем, эппин. Тĕрĕслесех тăрăр — ытлашши вăрăм та ан татчăр, шултра та ан çурччăр. Çунтарма кансĕр пулать...

— Юрĕ, Назар Егорччă, веçех эс каланă пек, тĕп-тĕрĕс пулĕ! — савăнсах кайрĕç туссем. — Шанма пултаратăн!

Хуть те ăçта та аслăраххи, малтарахри пулма юрататакан Аркаш вара хăйне чăн командир пекех тыткаларĕ. Пĕрисем патне пырать те кĕскерех татма хушать, теприсем патне çитет — çурнине тиркет, мĕнлерех çурмаллине хăй туса кăтартать.

— Ак çапларах кирлĕ ăна! Суккăр мар пуль?
Унтан тăрукваскатма тытăнать:
— Мĕн, кĕрхи шăнасем пек аран-аран хускалатăр? Нивушлĕ кăшт ӳрĕкрех пулмалла мар? Кун пек ĕçлесен эпир шашкăсене çур аки валли мар, кĕр аки валли те хатĕрлесе çитерейместпĕр!
Куна Аркаш кăлăхах каларĕ. Ачасем хăйсене хистемесĕрех пит аван ĕçлерĕç. Пилĕк-ултă кунтан кивĕ вите пĕренисем пурте шур пĕремĕк пек хитре шашкăсем пулса выртрĕç.
Трактор юсанă çĕре малтан кайса килнĕ хыççăн темиçе кунтан Назар Егорччă тепре çитсе курчĕ. Ун чух таркторне пухса çитерме пуçланă та иккен, нумай та юлман.
— Ыран шашка илсе килĕр, Назар Егорччă, — терĕ ватă Пауль, — мотора тĕрĕслемелле ярса пăхас пулать. Хăвна пĕрмай çӳреме кансĕр, санăн унсăр та ĕç нумай, шашкине пирĕн Евгени те леçме пултарать...
Анчах ун пек çĕре Евгени пĕччен çӳрет-и вара? Хальхинче те вăл хăйпе пĕрле Аркаша илсе кайрĕ. Лешин çак сăмавар евĕрлĕ трактор мĕнле ĕçленине çав тери курасси килнĕ-çке! Çитменнине, Аркаш трактор валли хутмалли çурса хатĕрленĕ чух сахал тăрăшнă-им? Ачасене епле васкатрĕ, епле хистерĕ вăл!
— Манăн халь тракторпа ларса çӳреме те полнăй правă пур! — тесе хучĕ вăл Евгение çул çинче.
Вырăна çитрĕç хайхисем. Паульпе Мадис Ноот пысăк машинăн «пырши-пакартине» пĕтĕмпех каялла вырнаçтарнă, тул енчен те тасатнă пулмалла — унтан та кунтан çуталса тăрать. Хăйсем лупас умĕнче, хĕвел ăшшинче, каска пукансем çинче чĕлĕм туртса лараççĕ. Иккĕшĕ те кăмăллă, ĕç пĕтнĕшĕн савăннă пулмалла.
— Илсе килтĕр-и? — ыйтрĕ Пауль каска çинчен тăрса.
— Илсе килтĕмĕр, Пауль Оскарович. Пилĕк михĕ.
— Парăр-ха эппин кунта...
Евгенипе Аркаш çуна çинчен шашка тултарнă михĕсене иле-иле лупас айне хучĕç. Паульпе Мадис çавăнтах пĕр миххине салтса Аркаш «сăмавар» текен бункер ăшне ячĕç те краççынланă кипке таткине спичкăпа тивертсе бункерăн аял енчи шăтăкран чиксе хучĕç. Тӳрех сарă хура тĕтĕм палкаса тухрĕ — çав тери усал шăршлă, куçа çиекен тĕтĕм. Ачасем ирĕксĕрех лупас айĕнчен каялла чакса тухрĕç.
Кĕçех бункера янă шашка тивсе илчĕ пулмалла, тем шăртшарт! туни илтĕнчĕ. Мадис кабинăна кĕрсе ларчĕ, генератора включить турĕ, çавăн хыççăн бункерти шашка хытăрах çунма пуçларĕ. Çапла пĕр çирĕм-вăтăр минут иртрĕ — бункерта трактор моторне ĕçлеттермелли газ пухăнчĕ. Евгенипе Аркаш трак-

тор кĕç-вĕç тапранса тухасса кĕтсе тăчĕç, анчах вăл хускалмарĕ-ха, лупас айĕнче малтанхи пекех тĕтĕм йăсăрланчĕ кăна. Чылайран тин Мадис кабинăран каялла сиксе тухрĕ те бункер патне пырса унăн хупăлчине — люкне — хупса лартрĕ. Унтан трактор пуçне пырса капота уçрĕ, пускача — тĕп мотора хута яма пулăшакан пĕчĕк мотора — кантринчен карт! карт! туртрĕ. Пускач тӳрех ĕçлеме тытăнчĕ: кăлтăр-кăлтăр-р, кăлтăр-кăлтăр-р... Мадис ăна тĕп моторпа пĕрлештерчĕ, анчах лешĕ пĕр сас та кăлармарĕ. Икĕ мотор мĕнлерех пĕрлешнине Мадис тепĕр хут тĕрĕслерĕ, унтан-кунтан тыткаласа, тĕрткелесе пăхрĕ — усси пулмарĕ...

— Каймасть мотор! — кăшкăрчĕ вăл юнашар тăракан Пауле.

— Мĕншĕн-ши? — лешĕ те кăшкăрсах ыйтрĕ унран. — Йĕркеллех пухрăмăр пек-çке?

— Мур пĕлет ăна!

— Тепре тĕрĕслесе пăхас пулать эппин...

— Тĕрĕслес пулать çав, мĕн тăвас тетĕн!

Ачасем çак калаçăва пĕтĕмпех илтрĕç те питĕ пăшăрханса ӳкрĕç: пулса çитеймен, эппин, вĕсен тракторĕ! Моторĕ каймасть тет. Моторсăр епле ĕçлетĕр-ха вăл? Ах, мĕнле инкек пулнă-ши? Паульпе унăн юлташĕ ăна хăйсем тĕллĕнех тӳрлетсе çитерме пултарĕç-ши?

Эстонецсем мотор ăшĕнче чаваланма тытăнчĕç. Пĕр сехет те ытла тăрмашрĕç пулмалла. Ачасем вĕсем мĕн тунине лайăххах курас ĕмĕтпе пĕрре çывăхах пырса тăнăччĕ, анчах вĕсене: «Ан кансĕрлĕр-ха, аяккарах кайса тăрăр», — терĕç. Ирĕксĕрех лупас айĕнчен тухма тиврĕ.

— Мĕн тăватпăр ĕнтĕ? Киле каятпăр-и? — хуллен ыйтрĕ Евгени хăй тусĕнчен.

— Тăхтар-ха пăртак, тен, халех ĕçлеттерме тытăнаççĕ! — терĕ Аркаш. — Интереснă вĕт-ха...

— Моторĕ каймасть пулсан — интересĕ пысăках мар çав. Мĕн пустуй шăнса тăрас? Каç та пулать акă...

— Кай ара, лар та вĕçтер, кам чарать сана? — куçĕсене çиллессĕн çутăлтарса илчĕ Аркаш. — Эп кайран çуранах пыма пултаратăп, çĕр çухрăм мар!

— Ухмах эсĕ, — терĕ Евгени ним çилленмесĕр.

— Эс пит ăслă. Пушкин пекех.

— Куна пĕлнĕ пулсан эп сана чĕнессĕм те çукчĕ.

— А эп санпа килместĕмччĕ!

Çав вăхăтра эстонецсем мотор патĕнче тăрмашма пăрахса пускача çĕнĕрен хута ячĕç, ăна тĕп моторпа пĕрлештерчĕç. Вара сасартăк мăн мотор лăкăр-р! лăкăр-р! турĕ. Пăшал пенĕ пек шартлатрĕ: пĕрре, иккĕ, виççĕ, унтан лаша тулхăрнă пек сасă илтĕнчĕ те... татах шăп пулчĕ.

— Каллех каймасть вĕт, эсрел! — çав тери пăшăрханса вăрçса илчĕ Евгени. — Мĕншĕн каймасть-ши?

— Тăхта, тепре ярса пăхать акă, — пăшăлтатрĕ Аркаш. Халь кăна пĕр-пĕринпе хирĕçсе илнине те манса кайрĕç вĕсем...

Кĕтни ахаль пулмарĕ: ик-виç минутран трактор моторĕ чăнах та тепĕр хут, малтанхинчен те хытăрах, кĕрлесе кайрĕ, каллех шатлатрĕ, патлатрĕ, чăх-чăх! турĕ те кăшт тăхтасан пĕр тикĕс ĕçлеме тытăнчĕ. Мадис мотор ĕçне йĕркелеме тăрăшрĕ пулас, пĕрре хытăрах кĕрлеттерчĕ, тепре хуллентерех ячĕ, унтан каллех хытăрах, шавлăрах ĕçлеттерчĕ. Халь ĕнтĕ мотор пĕрре те чарăнмарĕ.

— Кайрĕ вĕт! Ĕçлет! — хĕпĕртенипе Евгение çурăмĕнчен шап! çапса илчĕ Аркаш.

— Ытлашши каçса ан кай-ха, таçта куçăхтарăн тата! — терĕ ăна Евгени.

Çук, трактор куçăхмарĕ. Унăн моторĕ пĕр майлă, ним чăрмавсăр кĕрлесе тăчĕ. Кĕçех Мадис Ноот кабинăна сиксе кĕрсе ачасене: «Пăрăнăр!» — тесе кăшкăрчĕ те трактора пĕррех вырăнтан хускатрĕ. Вăл хуллен кăна лупас айĕнчен шуса тухрĕ, унтан сылтăмалла пăрăнчĕ те шоссе çине хăпарса Шупашкар еннелле кĕрлеттерчĕ. Ниçта кайса кĕрейми хĕпĕртенĕ Евгенипе Аркаш унпа юнашар чупрĕç, вată Пауль те васкасах лупас айĕнчен çул хĕррине тухрĕ. Унăн сăн-пичĕ тăруках çамрăкланнă пек пулчĕ, кăмăллă кулăпа çиçрĕ...

Шоссе тăрăх пĕр ик çĕр метр пек кĕрлеттерсе кайсан Мадис Ноот хăватлă машинăна каялла çавăрчĕ, çав вăхăтра ăнсăртран гусеница айне пуласран хăрамасăрах Аркаш трактор çине сиксе хăпарчĕ те аякра тăракан ватă Пауле çĕлĕкĕпе сулса саламлама тытăнчĕ.

## Телейлĕ тĕл пулу

«Çĕнĕ саманара» тракторпа ĕçлеме пĕлекен çын пулман (унччен икĕ тракторист пулнăччĕ, анчах вĕсем вăрçа кайнă), çавăнпа та колхоз уй-хирне Мадис Ноотах сухалаттарма тивнĕ. Ун пирки Назар Егорччă вăл ĕçлекен çул-йĕр участокĕн начальникĕпе ятарласа калаçса килнĕ.

— Тархасшăн, пулăшăр, — тенĕ вăл начальнике, — çав эстонеца çур аки вăхăтĕнче пирĕн патра пĕр пилĕк-ултă кун ĕçлеме ирĕк парăр. Уншăн эпир сире тем туса пама та хатĕр... Тыррине ăна вăхăтра акмалла-çке, унсăр пулмасть вăл. Çăкăрне пурте çиетпĕр — вăрçăри салтакĕсем те, эпир те, эсир те...

Начальникĕ бюрократласкер мар, халăх нушине лайăх ăнла-

накан, фронтран аманса таврӑннӑ ҫын пулнӑ та — тракторне те чарса тӑман (ӑна юсаса хута янӑшӑн хӑй те савӑннӑ-ха вӑл), Мадис Ноота та «Ҫӗнӗ саманана» кайса ӗҫлеме ирӗк панӑ.

Ҫакӑ вара колхоза чӑннипех ҫӑлчӗ. Ватӑ-вӗтӗ лашасемпе кӑна ӗҫленӗ пулсан ҫур аки пӗр виҫ-тӑватӑ эрненех пыратчӗ пуль, капла вара пӗтӗм ӗҫ ултӑ кун хушшинче пуҫтарӑнчӗ. «Ҫӗнӗ саманара» суха-ака пӗтернӗ хыҫҫӑн Мадис Ноот кӳршӗри «Малалла» колхоза та чылай пулӑшрӗ.

Иртнӗ ҫулти пекех, ҫур аки вӑхӑтӗнче ачасем питӗ тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Трактор пырса ҫавӑрӑнайман вырӑнсене пурне те плугсемпе сухаларӗҫ, сӳрине те турӗҫ, вӑрлӑхне те турттарчӗҫ, сеялкӑсемпе тыррине те акрӗҫ. Иртен пуҫласа каҫченех хирте пулчӗҫ вӗсем, анчах никам та ӳпкелешмерӗ, хӑй ыванни ҫинчен каламарӗ, ӗҫрен пӑрӑнма шутламарӗ.

— Пирӗн ачасем вӑйӑ мӗнне те пӗлмеҫҫӗ, ача пулса пурӑнмасӑрах мӑн ҫынсем пулса тӑчӗҫ, мӑнтарӑнсем, — терӗ пӗррехинче Евгени амӑшӗ Аркаш амӑшне ывӑлӗсем ирхине ирех уя тухса кайнине курса тӑнӑ чух.

— Ан та кала, Улька... — ассӑн сывласа илчӗ Аркаш амӑшӗ, — питӗ хӗрхенмелле те вӗт, вӗсен тӗлне пурнӑҫӗ ҫавӑн пек килсе тухрӗ те — мӗн тӑвас тетӗн? Хамӑр та ача чухне ырринех курмарӑмӑр, вӑрҫи те, выҫлӑхӗ те пулчӗ, мӑянне те, йӗкелне те ҫирӗмӗр, халь акӑ ачасем те тертленеҫҫӗ... Ҫав ҫӗр ҫӑтман Гитлершӑнах асапланатпӑр ӗнтӗ, пирӗн ҫынсен куҫҫулӗ уншӑн наркӑмӑш пултӑрах!

Уйри ӗҫсене пӗтерсен килти пахчасенче чылай тӑрмашма тиврӗ. Тимуровецсен командирӗ пулнӑ май Евгени тата ачасене фронтовиксен пахчисене илсе кайса ӗҫлеттерчӗ — килӗсенче вӑй питти ҫынсем ҫукраххисене ҫӗр улми, пахча ҫимӗҫ лартма пулӑшрӗҫ. Унтан тата улӑхри фронт пахчинче ӗҫлеме тиврӗ. Иртнӗ ҫулта ачасем унта чылай пахча ҫимӗҫ ӳстерсе госпитальсем валли панӑччӗ, кӑҫал акӑ тата ытларах туса илме ӗмӗтленчӗҫ.

Ҫуркунне — ҫулталӑкри чи ырӑ, ытармалла мар вӑхӑт ӗнтӗ, ҫуркунне пӗтӗм ҫӗршыв ешерет, чечексем ҫурӑлаҫҫӗ, хӗвелӗ ӑшӑтнӑҫемӗн ӑшӑтать, ӳсен-тӑрана ҫӗр ҫумӗнчен ҫӗклет, чунчӗрене савӑнтарать. Анчах вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ачасем ҫак илеме курсах та каймарӗҫ ҫав, вӗсем ӗҫлерӗҫ, пӗр вӗҫӗм, лӑш курмасӑр ӗҫлерӗҫ...

Евгенисен ашшӗ фронтран кашни эрнере тенӗ пекех ҫырса тӑратчӗ, пӗр вунӑ сӑмахлӑ «виҫкӗтеслӗх» те пулин яратчӗ. «Эп сывӑ, пуҫӑм та, аллӑм-урам та тӗрӗс-тӗкелех, пурсӑра та ыталаса чуптӑватӑп, ырлӑх-сывлӑх сунатӑп...» Вӑрҫӑри ҫын ҫакӑн пек кӑна ҫырса ярсан та килтисемшӗн вӑл тем пекех

пысӑк савӑнӑç пулнӑ. Нимрен хакли — çын сывӑ пулни! Иван Рыбаков сержант — Евгенисен ашшӗ — çавӑн пек çырусемпе час-часах хӗпӗртеттерчӗ кил-йышне. Хӑй çинчен нумаях çырмастчӗ вӑл, фронтра хӑй кам пулнине те пӗлтерсех каймастчӗ (юраман пуль çав!), пӗррехинче кӑна: «Ёнер пирӗн разведка питӗ ӑнӑçлӑ пулчӗ, «чӗлхе» тупма хушса ячӗç те — эпир нимӗçсен фельдфебельнех сӗтӗрсе килтӗмӗр, çавӑншӑн пире пурсӑмӑра та наградӑсем пачӗç, мана «Хӗрлӗ Çӑлтӑр» лекрӗ», — тесе çырнӑччӗ.

Çав кунах Евгени Аркаш патне кайса тулли кӑмӑлпа пӗлтерчӗ:

— Пирӗн аттене те орден панӑ. Сан аçунни пекех, орден Красной Звезды! Разведчик иккен вӑл, эп пӗлмен те...

— Пирӗнне халь артиллерине куçарнӑ, — терӗ Аркаш, — танксене персе шӑтаракан тупӑ патӗнче пӗрремӗш номер тет.

— Час-час çырать-и?

— Уйӑхра пӗр-икӗ çыру килет.

— Пирӗн те пӗлтерсех тӑрать-ха хӑй çинчен.

...Анчах çур акисем иртсен Евгенисен ашшӗнчен пӗр уйӑх ытла çыру пулмарӗ. Евгенипе амӑшӗ хытӑ пӑшӑрханма пуçларӗç: мӗн пулчӗ-ха капла, мӗншӗн çырмасть? Сӑлтавсӑрах мар ӗнтӗ ку...

Хӑйӗн ывӑлне халь те тупайманнипе час-часах хуйхӑракан ватӑ Пауль те çакӑн çинчен пӗлсен хытӑ пӑлханчӗ. Евгенисен кил-йышне вӑл хӑйӗн кил-йышӗ пекех юратнӑ та вӗсен кашни пӗчӗк хуйхинех чӗре патне илнӗ. Шыв-шур вӑхӑтӗнче Евгени йӑмӑкӗ Марине ӑнсӑртран шыва кӗрсе ӳксе хытӑ чирлесен те вӑл тем пекех ӑшталанчӗ, ун патӗнчен уйрӑлма пӗлмерӗ. Халь те тӳрех канаш пама тытӑнчӗ:

— Сирӗн ун адресӗ пур, çырса ярӑр часрах часть командирӗ патне, Рыбаков сержанта мӗн пулнӑ, ма çырмасть вӑл тесе ыйтӑр. Эпир ав Ильмар ӑçтине пӗлместпӗр те нимӗн те тума пултараймастпӑр, анчах сирӗн хуйхӑрмалли çук, тепӗр эрнерен ответ килет...

— Çыр çавӑн пек, — хушрӗ амӑшӗ Евгение. — Хӑçанччен пӑшӑрханса пурӑнмалла пирӗн капла? Чӗре çурӑлсах тухать ӗнтӗ...

Анчах çырса яма ӗлкӗреймерӗç вӗсем — çак калаçу хыççӑн тепӗр ик кунтанах ашшӗнчен уйӑх ытла кӗтсе пурӑннӑ çыру килчӗ.

— Эсир ман пирки пӑшӑрханса пӗтрӗр пуль, каçарӑр, — тесе çырнӑ ашшӗ, — анчах куншӑн эп айӑплӑ мар, мӗншӗн тесен пире кунтан инçете командировкӑна ячӗç, унта почта таврашӗ çук... Халь таврӑнтӑм ӗнтӗ, малашне кӳрентермӗп. Ӑçта пулни çинчен хам киле таврӑнсан каласа парӑп. Анчах вӑрçӑ

пĕтиччен эпир пĕр-пĕрине курасси ҫинчен ĕмĕтленмелли те ҫук. Вăрҫине часрах пĕтересчĕ!

«Нивушлĕ вăрҫăра та командировкăсем пулаҫҫĕ? — тĕлĕнерех шухăшларĕ Евгени. — Ăҫта кайса ҫӳреҫҫĕ вара унта?»

Хăйĕн ашшĕ — пĕтĕм дивизипе чапа тухнă паттăр разведчик Иван Рыбаков — темиҫе юлташĕпе пĕрле фронт линийĕ урлă каҫса уйăха яхăн тăшман тылĕсем тăрăх ҫӳрени ҫинчен, унта мĕн тери хăрушă пулни, вĕсем каялла таврăннă чух пилĕк разведчикран иккĕшĕ ҫеҫ юлни ҫинчен шухăшлама та пултарайман ҫав вăл...

Ҫак ҫыру хыҫҫăн Евгенисен кил-йышĕ лăпланчĕ, вата Пауль те савăнчĕ уншăн. Анчах хăйĕн ывăлĕ Ильмар пирки асăнман кун та пулмарĕ. Кинĕпе, мăнукĕсемпе пĕрле пухăнса ларса тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕҫ вĕсем.

— Тен, вăл хальччен сывалса ҫитсе каллех фронта тухса кайнă? — иккĕленчĕ Амалия.

— Командир ҫырăвĕнче «йывăр аманнă» тенĕччĕ-ҫке, ҫак хушăрах тӳрленсе ҫитрĕ-ши вара? — килĕшмерĕ Ян.

— Пĕлетĕр-и, салтак суранĕ вăл ахаль ҫын суранĕ пек мар, хăвăрт тӳрленет... — терĕ Пауль.

— Кам пĕлет, тен, каллех мĕн те пулин пулнă?

Ҫакăнтан ытла урăх ним калама та пĕлмерĕҫ вĕсем...

Ку енче ҫав ҫуркунне ҫанталăк питĕ лайăх пулчĕ. Пĕрре ҫумăр ҫурĕ, тепре хĕвел пĕтĕм ҫĕре ăшăтса тăчĕ, кăштах вăхăт иртсен каллех ҫумăр ҫуса илчĕ. Ҫавна пула акнă тырăсем типтикĕс шăтса тухрĕҫ те, ешĕл кавир пек курăнакан калчасем кунсерен мар, сехетсерен ӳсрĕҫ темелле. Ял ҫыннисене ку ĕнтĕ ҫав тери савăнтарчĕ.

— Фронт валли те, хамăр валли те пулать кăҫал...

Пĕлтĕрхи пекех, ачасем хăйсен улăхри фронт пахчинче чунтан тăрăшса ĕҫлерĕҫ. Июнь вĕҫнелле унта иртнĕ кĕркунне лартса хăварнă виктори ҫырли пуҫ пӳрне пысăкăш пулса хĕрелме тытăнчĕ — шутсăр тутлă тĕслĕ, ытармалла мар! Анчах ăна никам та тĕкĕнмерĕ, черетпе дежурствăна пынă ачасене Рина Петровна хăй кăна пĕрер-икшер стакан татса тутантарса пăхрĕ.

Ҫав кунсенче тухнă хаҫатсем нумай ҫĕрти колхозсенче «Тăван ҫĕршыва хӳтĕлекенсен сывлăхĕн фончĕ» тума тытăнни ҫинчен пĕлтерчĕҫ. Ял ĕҫченĕсем ҫав фонда сĕт, ҫăмарта, ҫĕр улми, пахча ҫимĕҫ нумай хывнă. Ҫакăн ҫинчен вуласа пĕлсен Рина Петровна тулли кăмăлпа шухăшласа илчĕ: «Эпир те аякра тăмастпăр... Пирĕн фронтовиксен «сывлăх фондне» хывмалăх пахча ҫимĕҫ ҫителĕклĕ пулать!»

Пĕр шăмат кун, каҫалапа, ун патне каллех леш «райком хĕрĕ» Нина Кулюкова пырса тухрĕ.

— Пирĕн республикăри пионер организацийĕ хамăр хуласенчи госпитальсене шефа илнĕ, — терĕ вăл. — Аманнă воинсем валли тĕрлĕ парнесем, кучченеçсем кайса параççĕ, концертсем ирттереççĕ...

— Ăçта вара вăл госпитальсем? — ыйтрĕ Рина Петровна. — Илтмен-çке эпĕ пĕрре те...

— Шупашкарта, Канашра, Улатăрта пур вĕсем. Шупашкарта икĕ шкул çуртне йышăннă. Сахал мар аманнă çын выртать унта...

— Эппин, пирĕн те мĕн те пулин тăвасчĕ-çке!

— Çула май шăп çавăн çинчен калама кĕтĕм эпĕ. Сирĕн фронт пахчи еплерех ӳсет кăçал? Çырла-мĕн çук-и унта?

— Пиçет ĕнтĕ. Виç-тăват кунтан самаях пухма пулать. Редиска пур... Вăл та витамин. Ытти çимĕçсем хатĕр мар-ха...

— Малтанлăха çитет те сире! — терĕ «райком хĕрĕ». — Тен, ачасем тата амăшĕсемпе калаçса татăлса пĕрер ешĕк пек çăмарта, пăртак çу пухĕç? Вара çавсене тиетĕр те — пĕр вуннăн-вун иккĕн каятăр...

— Ма ун пекех нумаййăн?

— Ара, аманнисене валли концерт пекки те тăвас пулать-çке!

— Э-э... Ун çинчен эпĕ шутламан та.

— Кирлĕ вăл, кирлĕ! Аманнисем ачасене питĕ юратса йышăнаççĕ. Вĕсене курсан хăйсен килти ачисене, шăллĕсемпе йăмăкĕсене аса илеççĕ пулмалла. Леш эрнере Çĕньял пионерĕсене ертсе кайсан асăрхарăм эпĕ: ачасем юрланă-ташланă чух хăш-пĕрисен куçĕсем те шывлансах тăчĕç...

— Пулĕ те... хурланаççĕ ĕнтĕ. Анчах пирĕн концерт валли нимех те çук-ха çав. Тем тумалла?

— Кив номерсенчен суйласа ил. Госпитальрисемшĕн вĕсем те çĕнĕ пулаççĕ. Леш Эстони ачи сĕрме купăс калама пăрахмарĕ-и-ха?

— Пăрахман, Анани Яккăльч патне час-часах çӳрет.

— Юрă учителĕ патне-и?

— Ийя çав. Ялта сĕрме купăс урăх никамăн та çук вĕт. Вĕрентет лешĕ ăна. Нотисем те чылай унăн...

— Вăт, питĕ аван ку! Çав ачана илсе каятăн.

— Унăн йăмăкĕ Юули пит лайăх юрлать...

— Ну, иккĕшне те илетĕн эппин. Ташлакансем те пурччĕха сирĕн. Акă хайхи программа пулчĕ те! Нумай кирлĕ мар, пĕр çирĕм-вăтăр минутлăха кăна.

Вĕсем çапла калаçса татăлчĕç: Рина Петровна ачасемпе пĕрле госпитале кайма мĕн кирлине хатĕрлесе çитерет те Кулюковăна телефонпа шăнкăравлать, вара лешĕ Шупашкара кайса хăш госпитале хăçан пыма май пуррине пĕлсе хыпарлать.

...Аманнă салтаксем патне кайса курас шухăша пурте ырларĕç — ачасем те, мăннисем те.

— Колхозран та кучченеç парса яратпăр. Пĕлтĕрхи пыл та пур-ха пăртак, пĕр пилĕк кило тупăнать пуль, — терĕ Назар Егорччă. — Унсăр пуçне кашниех мĕн те пулин пама пултарать. Тăван çĕршывшăн çапăçса юн тăкнă çынсемшĕн никам та хытсах тăмĕ...

Ачасем виçшерĕн-тăватшарăн уйрăм урамсем тăрăх килтен киле çӳрерĕç, хăйсем мĕн шут тытни çинчен ăнлантарчĕç. Вăрçăра аманнă салтаксем валли тесен пĕр çын та ачасене пушшăн кăларса ямарĕ — пилĕк çăмарта та пулин тупрĕ. Хăшĕсем çу, чăкăт, типĕтнĕ аш пачĕç. Чылай апат-çимĕç пухăнчĕ çапла, пĕр лавлăх!

Çав хушăрах Рина Петровна концерта хутшăнмалли ачасене ĕçрен уйăрсах репетицисем ирттерчĕ — манма пуçланă сăвăсене хут çине пăхмасăрах калама вĕренттерчĕ, ватă учитель Анани Яккăльч юрăсем юрлаттарчĕ, комсомол секретарĕ Витали купăс каласа виçĕ арçын ачапа виçĕ хĕр ачана йĕп-йĕпе тарличчен ташлаттарчĕ. Темле пысăк уяв умĕнхи пекех хатĕрленчĕç ачасем. Ара, вăрçă паттăрĕсем умне пули-пулми тухма юрать-и-мĕн? Ĕмĕр манми намăс пулать вĕт!..

Шупашкара ыран тухса каяс тенĕ чух, каçхине, яла Кулюкова хăй пырса çитрĕ.

— Ну, епле-ха ĕнтĕ, тусăм, мĕн кирли пурте пулчĕ-и? — ыйтрĕ вăл ывăннă сасăпа.

— Пĕтĕмпех хатĕр, — терĕ Рина Петровна. — Тăватă ещĕк çырла татрăмăр паян, çăмарта виçĕ ещĕк пухăнчĕ, пĕр пилĕк кило çу, тăватă кило пыл, председатель ирпе ирех така пустарătăп терĕ-ха...

— Питĕ пуян кучченеç пулать эппин сирĕн, — терĕ Кулюкова, анчах хăй темшĕн хурланнă пекрех ассăн сывласа илчĕ.

— Хытă ывăннă курăнать эсĕ, Нина, çикеле те — выртса кан, — терĕ Рина Петровна. — Хуларан çуранах килтĕн пуль-ха?

— Кам лаша патăр ĕнтĕ мана? — терĕ ăна хирĕç Кулюкова. — Яланах çуран çӳретĕп. Çăва тухнăранпа пин çухрăм та утрăм-и тен. Анчах та ку вăл нимех те мар-ха, хăнăхрăм ĕнтĕ районри çулсене утăмласа виçме. Урăххи кӳрентерет...

— Мĕн тата? — ун куçĕнчен иккĕленерех пăхрĕ Рина Петровна.

— Илтмен-и нимĕн те?

— Çук, илтмен... Радио çук та пирĕн...

— Виçĕ кун каялла нимĕçсем Орелпа Белгород енчен пĕр харăс Курск çинелле питĕ вăйлă наступлени пуçласа янă. Çапăçăва пиншер танк, çав тери йышлă авиаци кĕртнĕ. Темиçе çĕрте пирĕннисем чылай каялла чакнă...

— Ăнах-и?! — Рина Петровнăн тути хĕррисем чĕтресе илчĕç.

— Радиопа калаççĕ. Пĕтĕм çĕр çунса тăрать халь унта.

— Нивушлĕ вара фашист каллех хĕвел тухăçнелле куçса килме пултарĕ-ши? Хăйсене Сталинград патĕнче çав тери хытă аркатнă хыççăн та?..

— Кам пĕлет, кам пĕлет...

Çапла çав, 1942 çулхи çу кунĕсенчи пекех, 1943 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче, ир-ирех, нимĕç фашисчĕсем пирĕн позицисем çине пысăк наступлени пуçласа янă. Орелпа Белгород патĕнчен тапранса тухса вĕсем пирĕн оборонăна лутăркаса тăкса Курск хулине тытса илме, çапла майпа вара «Курск хысакĕнче» тăракан пирĕн çарсене «хурана» хупса лартма, унтан вĕсене пуçĕпех пĕтерсе хума ĕмĕтленнĕ. Тĕнчери пур вăрçăсен историне те пит лайăх пĕлекен çынсем каланă тăрăх, кун пек хăватлă та хăрушă çапăçу ĕмĕрне те пулман. Вăл çапăçура тăшман енчен те, пирĕн енчен те пин-пин танк, самолет, пин-пин тĕрлĕ йышши тупă, миномет, огнемет тата тем те пĕр пулнă. Фашистсем ку çапăçу валли вуншар çĕнĕ дивизи — çĕр çинчисене те, сывлăшрисене те — илсе пынă, вĕсенче пĕр миллион çын таранах шутланнă... Малтанхи темиçе кун хушшинче тăшман ăнах та хăш-пĕр çĕрте Совет Çарĕн оборона линине çĕмĕрсе кăштах малалла шума пултарнă, анчах кайран пирĕн паттăр воинсем вĕсене чарса лартнă çеç мар, хăйсене каялла хăвалама тытăннă. «Германи çĕнтерĕвĕшĕн пулса иртекен юлашки çапăçу» тенĕ гитлеровецсем Курск патĕнчи çапăçăва, анчах çав çапăçура вĕсем мар, пирĕн çарсем, пирĕн хĕç-пăшал çĕнтернĕ. Çав чаплă çĕнтерӳ ячĕпе пирĕн çĕршыв столицинче — Мускавра — августăн пиллĕкмĕшĕнче пĕрремĕш хут 120 тупăран пĕр харăс вун икĕ хут персе салют панă...

Курск тăрăхĕнче тăшмана çав тери вăйлăн аркатса тăкнă хыççăн пирĕн çарсем хула хыççăн хула, куллен çĕршер ял ирĕке кăларнă, вĕсем Десна, Сож, Днепр, Припять шывĕсем урлă каçса хĕвел анăç еннелле малтан мала пынă. Халь ĕнтĕ эпир фашистла Германие çĕнтересси куçа курăнсах тăнă, ун пирки никам та иккĕленмен...

...Шупашкара виçĕ лавпа кайнă ачасем кăнтăрла иртсен çитрĕç. Почта патĕнчен сылтăмалла пăрăнса Ленинград урамĕпе икĕ квартал хăпарсан вĕсем лапсăркка йывăçсем айне пытаннă икĕ хутлă вăрăм çурт умĕнче чарăнчĕç. Ачасене ертсе килнĕ Нина Кулюковăпа Рина Петровна вĕсене лавсем çинчех кĕтсе ларма хушрĕç те хăйсем сарлака чул пусма тăрăх

хăпарса шала кĕрсе кайрĕç. Ачасем унăн-кунăн урамри иртен-çӳренсене пăхса ларчĕç.

— Çапах та хулара халăх пит нумай пурăнать-çке, — терĕ Аркаш Евгение (вĕсем кунта та пĕрлех килнĕ). — Пурте çăкăр çиеççĕ вĕт-ха çаксем...

— Çиеççĕ кăна мар, ĕçлеççĕ те ĕнтĕ, — терĕ Евгени. — Ĕçлемесĕр кам çăкăр çитерет ку чухне?

— Ăçта ĕçлеççĕ-ха вĕсем?

— Сахал-и! Заводсенче, учрежденисенче...

— Ачисем тата? Эпир хуть колхозра тапаланатпăр...

— Вĕсем вĕренеççĕ, анчах ĕçлекенсем те сахал мар.

Çав вăхăтра урамăн тепĕр енчи тăвата хутлă пысăк çурт хапхинчен, хуркайăксем пек, пĕрин хыççăн тепри, сахалтан та пĕр вăтăр-хĕрĕх хĕр ача тухрĕç. Пурте пĕр пекрех çырă халатсемпе, шурă тутăрсемпе. Янраççĕ кăна хăйсем — калаçаççĕ, кулаççĕ, хăшĕсем пĕр-пĕрне тĕрткелесе те илеççĕ.

— Ку мĕнле команда пулчĕ тата? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Аркаш.

— Ара, кунта пир-авăр фабрики вĕт, пĕлместĕн-им? — терĕ Евгени. — Хамăр ялти Санькка па леш эстонецсен хĕрĕ Ильза та çавăнта ĕçлеççĕ пулас-ха...

— Ан тĕлĕнтер?

— Чăнах, ара. Çуркунне Назар Егорччăпа килсен вăл каларĕ.

— Тен, çак ушкăнра вĕсем те пур? Сăнар-ха лайăхрах...

— Пулма пултарать.

Фабрикăран тухнă хĕр ачасем шăпах кунталла, «Çĕнĕ самана» лавĕсем чарăнса тăнă çĕрелле, шакăлтатса утрĕç. Пĕр минут та иртмерĕ пуль — вичкĕн куçлă Аркаш хайхи хăйсен ял хĕр ачине курса палласа та илчĕ.

— Санькка-а! — тăрук çав тери хытă кăшкăрса ячĕ те вăл урапа çинчен сиксе анса урам тепĕр еннелле ыткăнчĕ. Лешĕ хăйне такам ятпа чĕннине илтсе тăпах чарăнса тăчĕ. Унпа юнашар пыракан хĕр ача та чарăнчĕ — ку Эстони хĕр ачи Ильза пулнă. Аркаш вĕсем патне пуля пек вăркăнса çитсе иккĕшне те аллисенчен ярса тытрĕ те пĕрре сывлăш çавăрмасăр калаçма тытăнчĕ:

— Салам, хĕрсем, эпир килтĕмĕр-ха, ак çакăнта, госпитале, аманнă салтаксем патне. Кучченеçсем илсе килтĕмĕр, концерт тăватпăр. Атьăр пирĕнпе! Нумаййăн эпир, авă пурте кунталла пăхаççĕ...

Хĕр ачасем хăйсене хирĕç мĕн калассине кĕтмесĕрех Аркаш вĕсене лавсем патнелле туртма тытăнчĕ. Ялтан килнисем питĕ хĕпĕртерĕç — вĕсене нумайранпа курман вĕт-ха! Ыйтма, тĕпчеме тытăнчĕç:

— Мĕнле пурăнкалатăр? Чиперех-и?
— Ма пĕртте киле пырса курмастăр? Çав териех ерçместĕр-и-мĕн? Ай, ямаççĕ-и?
— Кай, çур çул хушшинчех ӳссе кайнă-çке эсир!
— Ара, хула çăкри тутлăрах пуль...
Çав вăхăтра шкул пусми çинче Рина Петровнăпа Кулюкова курăнчĕç. Вĕсемпе пĕрле госпитальти икĕ санитарка тухрĕç — шап-шур халатсемпе, çавăн пекех шур калпаксемпе. Урапасем патне пырсан Рина Петровна çапла ăнлантарчĕ:
— Халĕ госпитальте «тихий час», аманнисем кăнтăрлахи апат хыççăн канаççĕ. Вĕсем тăриччен эпир хамăр кучченеçсене кухньăна илсе кĕретпĕр, çырлисене çуса стакансем ăшне тултаратпăр...
Çак ĕçсене тума пĕр сехет ытла иртрĕ. Çав хушăра «тихий час» пĕтрĕ, аманнисем вăранчĕç, утса çӳреме пултараканнисем чылайăшĕ картишне, пахчана тухрĕç. Пĕр çамрăк кăна сап-сар çӳçлĕ сестра палатăран палатăна çӳресе, унтан тула та тухса пурне те пĕлтерчĕ:
— Ялти пионерсем сире валли кучченеçсем илсе килнĕ, пысăк зала пухăнăр. Халех, халех...
Аманнисем нумай кĕттермерĕç. Аялти хутри пысăк пӳлĕм тепĕр вунă минутранах кăвакрах халатсем, пижамăсем тăхăннă çынсемпе тулчĕ. Пысăках мар сцена çине улăхтарса лартнă колхоз ачисем вĕсем çине сывламан пек пулса пăхрĕç. Таçтан та, темле те аманса пĕтнĕ иккен салтаксем! Хăшĕсен пуçĕсене пичĕ-куçĕ курăнмиех çыхса лартнă, хăшĕсен аллисене самолет çунаттисем евĕрлĕ подставкăсем çине хурса мăйĕсенчен çакса янă, пĕрисем икшер костыльпе — урисем сусăрлнă, теприсене тем пысăкăш хыçлă пукан пек коляскăсем çине лартса пычĕç. Анчах та — тĕлĕнмелле! — аманнисенчен пĕрин те сăнĕ-пичĕ çинче хуйхă-суйхă палăрмасть, пурте пĕр-пĕринпе хавассăн калаçаççĕ, унта та кунта кулни илтĕнет. Мĕн калăн ĕнтĕ, паттăр халăх çав!..
Госпиталь начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ — лутра та хытканрах, сулахай çаннине пиçиххи айне туса çыхнă майор — сцена хĕрринерех тухса пĕртен-пĕр аллине çĕклесенех залри халăх шăпланчĕ.
— Пирĕн пата паян Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ самана» колхозри ачасем хăнана килчĕç, — терĕ вăл. — Вĕсем пурте — сирĕн пек салтаксен ачисем, пурин те ашшĕсем вăрçăра. Пĕлетĕр ĕнтĕ, хальхи ачасен пурнăçĕ çăмăл мар. Колхозри пур ĕçсене те хĕрарăмсемпе ачасем туса пыраççĕ. Пирĕн паянхи хăнасем те çавăн пекех ырми-канми ĕçлесе фронт валли çăкăр-тăвар параççĕ. Анчах ку çеç те мар-ха. Вĕсем хăйсен колхозĕнче ятарласа фронт пахчи тунă иккен, унта сире, фрон-

товиксене, валли тĕрлĕ çимĕçсем ӳстереççĕ... Маттур ачасем, тӳрех калас пулать!

Майор çак сăмахсене каласанах хыçалти ретре тахăшĕ ывăç тупанĕсемпе шап! тутарчĕ те çав самантрах пĕтĕм зал алă çупнипе кĕрлесе кайрĕ...

— Халĕ вĕсен учительницине сăмах паратăп, — терĕ майор çынсем алă çупма чарăнсан.

Ачасемпе пĕр ретре ларнă Рина Петровна хĕрлĕ хăмач витнĕ трибуна пекки çумне пырса тăчĕ те çав тери пăлханса кайнипе пулас çав чĕтрекен сасăпа, хуллен кăна пуçларĕ хăйĕн сăмахне:

— Хисеплĕ юлташсем, боецсемпе командирсем, паттăр фронтовиксем, сире эпĕ хамăрăн колхозри пур çынсен ячĕпе те хĕрӳллĕн саламлатăп, пĕтĕм чун-чĕререн хăвăртрах сывалса каллех строя тăма ырă сунатăп... Пирĕн колхоз пысăк мар, унта пурĕ те çитмĕл кил кăна, анчах вăрçă пуçланнăранпа эпир фронт валли тырă та, çĕр улми те, аш-какай та, сĕт-çу та, пахча çимĕçĕ те, тĕрлĕ ăшă япаласем, алсиш-чăлха сахал мар патăмăр, мĕншĕн тесен эпир пурте, сирĕн пекех, тискер тăшмана часрах çапса аркатас ĕмĕтпе çеç пурăнатпăр!

Залра ларакансем каллех алă çупса ячĕç...

— Мана сăмах панă командир тĕрĕс houларĕ, çав тери тĕрĕс, — терĕ малалла Рина Петровна, халь ĕнтĕ самаях хăюланса, — ку чухне пирĕн ачасен пурнăçĕ çăмăл мар, колхозри пур ĕçсене те пуринчен ытларах вĕсен тума тивет, анчах нихăшĕ те нихçан та ӳркенсе тăмасть, мĕншĕн тесен вĕсем пурте — салтак ачисем, вĕсем хăйсен ашшĕсем фронтра паттăр çапăçнине пĕлнипе хавхаланаççĕ, ашшĕсем пекех маттур пуласшăн!

Татах пĕтĕм зал алă çупнипе кĕрлерĕ...

— Фронтовиксене ялан пулăшас, вĕсене мĕнпе те пулин ырă тăвас шухăш пирĕн пуçран пĕр самантлăха та тухмасть. Пирĕн пĕтĕм ĕмĕт çавăн çинче. Çавăнпах пирĕн ачасем хăйсен аллипе лартса тунă фронт пахчине калама çук тăрăшса пăхаççĕ, унти çимĕçсене куç пек пăхса ӳстереççĕ. Акă паян эпир сире валли çав пахчара чăн малтан пиçнĕ çырласене татса килтĕмĕр. Тутанса пăхăр тархасшăн çав çырлана...

Майор алăк патĕнче тăракан санитаркăна ал сулчĕ. Унччен те пулмарĕ, пӳлĕм алăкĕ уçăлчĕ те, коридортан пысăк та çап-çутă шуç ывăссем — подноссем — йăтнă шур халатлă пĕр вунă хĕр кĕчĕç. Ывăсĕсем çинче — пĕр пек симĕс кружкăсем, вĕсенче — хĕп-хĕрлĕ те сĕткенлĕ çырла. Залра ларакансене кашнинех пĕрер кружка парса тухрĕç. Ах, савăнса кайрĕç те вара салтаксем!..

— Çийĕр, юлташсем, çийĕр пирĕн кучченеçе! — терĕ сцена хĕрринче тăракан Рина Петровна хăй те темшĕн çырла пек хĕрелсе кайса. — Ятарласа сире хăналама татса килтĕмĕр...

— Ах, чаплă!
— Тавтапуç сире!
— Ытла та тутлă-çке, çăвара хурсанах ирĕлсе каять...
— Тата ытларах ăнса пултăр сирĕн çырлу! — хавассăн шавласа кайрĕç салтаксем унта та кунта.

Пурте каçса кайсах çирĕç. Çав вăхăтра хăрах алăллă майор тата çапла пĕлтерчĕ:

— Ку ачасем сире валли çырла кăна мар, ытти апат-çимĕç те илсе килнĕ: çăмарта, çу, пыл. Вĕсене каçхи апат вăхăтĕнче тутанса курăпăр...

— Тепĕр хут тавтапуç вĕсене!
— Маттур ачасем!
— Халĕ ĕнтĕ вĕсем сире хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ, сире валли пĕчĕк концерт пулать, — терĕ майор. — Тимлĕн итлесе ларма ыйтатăп.

— Пит аван! Итлес, итлес!

...Концерта ачасем вăрçă пуçлансанах, хĕрĕх пĕрремĕш çултах, вĕреннĕ хĕрӳллĕ юрăпа пуçларĕç. Рина Петровна ик аллипе сулса ярсанах хор пĕр тикĕссĕн, янравлăн юрласа ячĕ:

Вставай, страна огромная,
Вставай на смертный бой
С фашистской силой темною,
С проклятою ордой!

Пусть ярость благородная
Вскипает, как волна...

Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнче ку юрă çĕнĕ пулман, салтаксем хăйсем те ăна сахал мар юрланă, фронта пынă артистсем юрланине те, радиопа та нумай илтнĕ, анчах вĕсене ним чухлĕ те йăлăхтарман вăл, кашнинчех чĕре патне пынă, хумхантарнă, кăмăла çĕкленĕ. Хальхинче те салтаксем çак юрра ачасем хăйсен çирĕпленсех çитеймен сассисемпе юрланине питĕ тимлĕн, пăлханса итлесе ларчĕç...

Унтан хор тата темиçе юрă юрларĕ — вырăсла та, чăвашла та, вĕсене те аманнисем лайăх итлерĕç, партизансен паттăрлăхне мухтакан «Ой, туманы мои...» текен юрра вара, алă çупа-çупа, икĕ хут та юрлаттарчĕç. Кун хыççăн Рина Петровна çиччĕмĕш класра вĕренекен Аркадий Мазяков сăвăсем каласа парасси çинчен пĕлтерчĕ. Ăна та алă çупсах йышăнчĕç салтаксем.

Яланхи пекех Аркаш сцена хĕрнелле, итлекенсем çывăхнерех питĕ хăюллăн утса тухрĕ. Залри çынсене пăхса çаврăнчĕ, кĕпи аркисене турткаласа тӳрлетрĕ, хуллен кăна ӳсĕрсе пырне тасатрĕ те ним пăлханмасăр пĕлтерчĕ:

— «Наказ сыну», стихотворение Исаковского...

Ку вырăсла сăвва вăл çак кунсенче, аманнă салтаксем патне килме хатĕрленнĕ чух, ятарласа вĕреннĕ. «Вĕсем хушшинче тĕрлĕ халăх çыннисем пур ĕнтĕ, чăвашла пĕлмеççĕ, анчах вырăсла пурте ăнланаççĕ, çапла вĕт?» — терĕ вăл Евгение. «Тĕрĕс, — килĕшрĕ унпа Евгени, — вырăсла сăвă вĕренсен аван пулать, анчах эсĕ ху чăваш ачи пулнине те ан ман, тусăм...»

Сăввине вăл малтанхи йĕркеренех питĕ хĕрӳллĕ, пысăк туйăмпа калама тытăнчĕ:

Мой сын родной! Прильни к земле скорей,
Услышь
Слезами залитое слово.
Мой сын родной! У матери твоей
Теперь ни хлеба, ни земли, ни крова.

Пришли они, как черная чума.
Пришли
И кровью нашей упивались,
Угнали скот и подожгли дома,
Над старым и над малым надругались...

Аркаш хăш-пĕр сăмахсене вырăсла ытла тĕрĕсех калаймарĕ, хăш чух хытă сас паллисем çемçен тухрĕç, тепĕр чух пачах урăхла — çемçисем хыттăн илтĕнчĕç, анчах ăна никам та асăрхаса тăмарĕ (вырăс мар вĕт, чăваш ачи), пурте сывламан пек ларса итлерĕç, çынсене сăвăра мĕн çинчен калани тата ăна çак лутрарах та патвар арçын ача пĕтĕм чун хавалĕпе, фашистсем çакăнта, хăй умĕнче тăнă пекех хаярланса каласа пани тыткăна илчĕ... Пĕр-пĕччен тăрса юлнă салтак амăшĕ, ватă хĕрарăм, снаряд-бомбăсемпе çунтарса янă вăрманта пытанса çӳрет, гитлеровецсем унăн кинне — вăрçăри ывăлĕн арăмне те, йăмăкне те тем тĕрлĕ асаплантарнă хыççăн штыксемпе чике-чике пăрахнă, карчăк вĕсене пуçĕсемпе хĕвел тухăç еннелле, ывăлĕ тăшманпа çапăçнă çĕрелле, хурса пытарнă. Тавăрас пулать вĕсен айăпсăр юхнă юнĕшĕн, вĕсен асаплă вилĕмĕшĕн, Тăван çĕршывшăн!..

Салтаксем питĕ шăп, ним хускалмасăр ларчĕç, алăк патне пухăнса тăнă сестрасемпе санитаркăсем шывланнă куçĕсене тутăр вĕçĕсемпе шăла-шăла илчĕç...

Сăввăн юлашки сыпăкне Аркаш тата хĕрӳллĕрех, пӳрнисем шуралса каймалла хыттăн чăмăртанă чышкине çӳлелле çĕкле-çĕкле каласа пĕтерчĕ:

Уничтожай поганое зверье,
Пали огнем, дави его машиной! —
И в том благословение мое,
Которое навеки нерушимо!

Аркаш салтаксене пуҫ тайрӗ те йӑрст тӑсӑлса тӑчӗ, алӑ ҫупни аслати пек кӗрлерӗ — ҫав тери килӗшрӗ ку сӑвӑ ҫынсене, ӑна кашни сӑмахӗнчен хӗм сирпӗтнӗ пек каласа пани те шутсӑр кӑмӑла кайрӗ ҫав.

— Чӑвашла! Чӑвашла каласа пар тата! — кӑшкӑрчӗҫ хыҫалти ретсенчен иккӗн-виҫҫӗн. Эппин, госпитальте выртакансем хушшинче чӑваш салтакӗсем те пур — ҫавсем ыйтаҫҫӗ ӗнтӗ, урӑх кам пултӑр?

Аркаш хӑвӑрт-хӑвӑрт аса илме тытӑнчӗ: «Хӑшне каласа парас-ши? Кулӑшлараххи кирлӗччӗ кунта...»

— Гитлер ҫинчен кала, суя ҫӑмха ҫинчен! — илтӗнчӗ ҫав вӑхӑтра Рина Петровна хыттӑн пӑшӑлтатни. Аркаша ку питӗ пулӑшрӗ, самантрах ун пуҫӗнче сӑвӑ сӑмахӗсем ҫуралчӗҫ — вӑл ӑна тӗрлӗ вечерсенче каласа ҫынсене сахал мар ахӑртнӑ.

— Сӳтӗк Гитлер ухмаххин сӳтӗлет суя ҫӑмхи! — кӑшкӑрчӗ Аркаш. — Хусанкай ҫырнӑ. — Унтан сывлӑш ҫавӑрса илчӗ те сӑввине калама пуҫларӗ:

> Пант! пант! пант! — пуш параппан
> Пантлататчӗ Берлинран...

Чӑвашла ӑнланакансем тӳрех кулса ячӗҫ, сӑвва малалла вуланӑҫемӗн кулӑ вӑйлансах пычӗ. Пирӗн чӗлхене пӗлменнисем чӑвашсенчен ыйтса пӗлме тытӑнчӗҫ: мӗн ҫинчен ку сӑвӑ, мӗншӗн кулатӑр? Хӑйсене хӑвӑрт кӑна ӑнлантарса парсан вара вӗсемпе пӗрлех алӑ ҫупрӗҫ.

— Маттур ача! Ӳлӗмрен ку чип-чиперех артист пулма пултарать, — ырласа илчӗҫ Аркаша аманнӑ чӑваш салтакӗсем пӗрпӗрин хушшинче.

— А мӗн, пулӗ те пулӗ!

Питӗ килӗшрӗ ҫав вӗсене салтак ачи Аркаш...

Рина Петровна каллех сцена хӗрнерех утса пычӗ те, залра шӑпланчӗҫ.

— Пирӗн колхозра виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ амӑшӗсемпе пӗрле эвакуаципе килнӗ ачасем пурӑнаҫҫӗ, — терӗ вӑл. — Вӗсем пурте питӗ сӑпайлӑ ачасем, шкулта та лайӑх вӗренеҫҫӗ, колхозра та ӗҫлеҫҫӗ, вечерсенче те хӑйсене лайӑх кӑтартаҫҫӗ. Халӗ акӑ вӗсенчен иккӗшӗ — Эстони ачисем, пиччӗшӗпе йӑмӑкӗ, сире хӑйсен юррисене юрласа парӗҫ...

Хорта ретпе тӑракансем хушшинчен шап-шур кӗпесем тӑхӑннӑ, мӑйӗсене хӗрлӗ галстук ҫыхнӑ арҫын ачапа хӗр ача тухрӗҫ те сцена хӗррине лле темиҫе утӑм турӗҫ. Арҫын ача аллинчи сӗрме купӑсне янахӗ патне тытса хӗлӗхӗсене сӗркӗчпе тӗкӗне-тӗкӗне тӗрӗслерӗ, хӗр ачи ик аллине пӗрлештерсе кӑкри умне тытрӗ — юрлама хатӗрленчӗ. Сап-сар ҫӳҫлӗ те утмӑлтурат

чечекĕ пек кăн-кăвак куçлă ачасем çине залри халăх питĕ кăмăллăн, çав тери юратса пăхрĕ.

— Янпа Юули Киккассем хăйсен чĕлхипе «Сар хĕвел» ятлă юрă юрласа параççĕ, — пĕлтерчĕ Рина Петровна.

Ян сылтăм аллинчи сĕркĕчне хĕлĕхсем çине хума çĕклерĕ, анчах çав самантра, сасартăк, залри пур çынсене те калама çук тĕлĕнтерсе янă ĕç пулса иртрĕ...

Залăн сулахай енчи стени çумĕнче, коридора тухмалли алăкран инçе те мар, таянса лармалли çӳллĕ хыçлă коляска çинче пуçне бинтпа çыхнă, хăмăр халат тăхăннă типшĕм питлĕ, сарăрах сăнлă çын ларатчĕ. Унăн пуçĕ кăна мар, ури те аманнă, вăл хăй тĕллĕн утайман, çавăнпа коляска çине лартса килнĕ те ĕнтĕ ăна. Ун пеккисем залра татах та пулнă. Сестрасем «Çĕнĕ самана» колхоз ачисен çырлине пырса парсан ăна вăл ыттисем пекех юратса, тав туса çирĕ, ачасем концерт пуçласан — кашни номер хыççăнах хавасланса ал çупрĕ. Анчах Рина Петровна Янпа Юули ятне асăнсанах вăл коляска çинчен тăрук siксе тăчĕ те ăнран тухнă çын пек кăшкăрса ячĕ:

— Я-ан! Юу-ули!.. Ачамсем!.. — Çавăнтах ик аллине те малалла, сцена патнелле тăсса, хăй утма пултарайманни çинчен те манса, вăл ик-виç утăм ярса пусрĕ, анчах аманнă урисем ăна тытса тăраймарĕç, вăл кăкран касса янă йывăç пекех урайне ластлатрĕ...

Çакна пурте илтрĕç, пурте курчĕç; залри пĕтĕм халăх ура çине сиксе тăчĕ, пĕрремĕш ретсенче ларнисем часрах ун патнелле ыткăнчĕç. Чăн малтан хăрах алăллă майор — госпиталь начальникĕн заместителĕ — чупса пырса пĕшкĕнчĕ:

— Мĕн пулчĕ, капитан?

Ӳкнĕ çынна ик енчен тытса тăма пулăшрĕç,васкасах кресло-коляска çине лартрĕç.

— Киккас юлташ, мĕнле вара эс каплах? Пуç çаврăнса кайрĕ-и? Тен, сана палатăна кайса вырттарас?..

Анчах капитан тени, хăйĕнчен мĕн ыйтнине пачах та илтмен пек, пĕрмай сцена çинелле тинкерчĕ. Унтан аллипе малалла сĕлтрĕ те хуллен, питĕ пусăрăнчăк сасăпа:

— Çав ик ачана халех ман патăма илсе килĕр... Халех... — терĕ.

— Мĕн тума, капитан? — тĕлĕнчĕ хăрах алăллă майор. — Вĕсен халь юрламалла вĕт-ха, çынсем кĕтеççĕ...

— Кайран юрлĕç, анчах малтан кунта килччĕр, — аманнă çын сасси татах вăйсăрланнă пек пулчĕ. — Вĕсене эп ыталаса чуптăватăп çеç... Вĕсем иккĕшĕ те ман ачасем вĕт, пĕлетĕр-и, манăн!.. — Унăн куççулĕ шăпăртатса анчĕ. — Эп вĕсене икĕ çул ытла курман, вилнĕ пуль тесе пурăннă, нимĕн те пĕлмен...

Ун тавра кĕпĕрленнĕ ҫынсем тĕлĕннипе хытнă пек пулса тăчĕҫ. Майор часрах сцена ҫине чупса хăпарса Янпа Юулие чĕнсе пычĕ.

— Ачасем! Ылтăнăмсем!.. — иккĕшне те пĕр харăсах ытала-са илчĕ ашшĕ. Ачисем те ăна палласа ниҫта кайса кĕрейми хĕпĕртерĕҫ.

— Эпир сана нумай шырарăмăр, — терĕ Ян кăшт тăрсан,— анчах ниепле те тупаймарăмăр.

— Эп те сахал мар ширанă сире...

Концерта ирĕксĕрех татса перерыв тума тиврĕ. Пурте ҫак телейлĕ тĕл пулу ҫинчен калаҫрĕҫ. Кайран, аманнисем зала тепĕр хут пухăнса ларсан, Янпа Юули тĕлĕнмелле лайăх кăтарт-рĕҫ хăйсене. Ян аллинчи сĕрме купăс ҫав тери илемлĕн янă-рарĕ. Юули чăн-чăн шăпчăк пек юрларĕ. Ытти ачасем те хăйсен тусĕсем ашшĕне тупнăшăн хĕпĕртесе пăлханнипе питĕ хĕрўллĕ пулчĕҫ. Вĕсем юрланă-ташланă чух вут-хĕм сирпĕннĕн туйăнчĕ!

Ҫавăн пек ытла та шутсăр савăнтаракан ĕҫ пулса иртрĕ ачасем Шупашкара кайсан. Аманнисене кучченеҫсем панă, юрласа-ташласа кăтартнă хыҫҫăн вĕсен ĕнтĕ тўрех киле кай-маллаччĕ, анчах аманнă капитан — Янпа Юули ашшĕ — вĕсен-чен ниепле те уйрăласшăн пулманнине кура Рина Петровна кăшт тăхтама шут турĕ.

— Эсир калаҫса ларăр эппин, эпĕ вăл хушăра — пĕрер сехет пек — ытти ачасене хула кăтартса ҫўрем,— терĕ вăл Янсен ашшĕне, Ильмар Киккаса. — Сире чăрмантармăпăр...

— Пысăк тав сире, юлташ, пысăк тав куншăн,— темиҫе хут та пуҫ тайса илчĕ аманнă капитан. — Хăвăрах чухлатăр... Эп вĕсене икĕ ҫул ытла курман, ҫав тери тунсăхларăм...

— Ăнланатăп, питĕ лайăх ăнланатăп, Ильмар Паулевич! — Рина Петровна вĕсем ҫине кăмăллăн пăхса, ҫемҫен кулса илчĕ. — Чăн та питĕ пысăк телей пулчĕ паян сирĕншĕн. Хăвăршăн та, Янпа Юулишĕн те. Чунтан савăнатăп!.. Питĕ лайăх ачасем вĕсем сирĕн. — Рина Петровна Юулие пуҫĕнчен ачашларĕ. — Пауль Оскарович та ырă ҫын, Амалия Саариковна та ытар-малла мар хĕрарăм. Эпир вĕсемпе ҫав тери туслă пурăнатпăр вĕт, кашни кунах хутшăнатпăр...

— Уншăн та тав сире. Ютра пурăнакан ҫынсене туслăх пуш-шех те кирлĕ вĕт, унсăрăн пит йывăр пулать вĕсене!

— Анчах та эсир пĕлетĕр-и?.. — Рина Петровна кăшт именнĕ пек пулчĕ, — пирĕн хушăмăрти туслăх сирĕн кил-йыш кунта киличченех пуҫланнă иккен... Чăнах! Тĕлĕнетĕр-и?

— Ăнлансах ҫитейместĕп, — терĕ Ильмар Киккас.

— Хĕрĕхмĕш ҫулта, эсир тĕрмерен тухса киле таврăннă вă-хăтра, сирĕн патра пĕр совет лейтенанчĕ пурăннă... Ҫапла-и?

— Ҫапла, астăватăп...

— Çавă манăн тăван пичче пулнă. Федор Молгачов. Эпĕ — Рина Молгачова, унăн йăмăкĕ.

— Чăнах-и?! Ну, ку ытла та тĕлĕнмелле вара! Юмахри пек! — аллисене хире-хирĕç çапса илчĕ Киккас.

— Эсир çавăн чух пурĕ пĕрле ларса çапăннă ўкерчĕк те пур.

— Астăватăп ўкерĕннине, астăватăп!

— Вăл ўкерчĕке Рина Петровна пире пачĕ, ăна эпир кашни кунах кăларса пăхатпăр. Санăн сăну урăх çук та... — хушса хучĕ Ян.

— Халь ăçта-ха ĕнтĕ сирĕн пиччў?

— Ăçта пултăр? Вăрçăра. Нумаях пулмасть госпитальтен тухса каллех фронта кайрĕ...

— Çырать-и?

— Çырать-ха. Сывах.

— Салам ярăр ăна манран, пысăк салам.

— Тавтапуç...

Рина Петровна тухса кайсан Ильмар Киккас, ывăлĕпе хĕрачине пĕрмай ыталаса ларса, 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчи хăрушă ирхине сасартăк уйрăлнăранпа вĕсемпе мĕн-мĕн пулни, вĕсен мĕн-мĕн тўсме тивни çинчен пĕтĕмпех, йĕркипе, ним сиктермесĕр калаттарчĕ, чăн кĕçĕн хĕрĕ Эльга çинчен, ашшĕпе арăмĕ çинчен ыйтрĕ. Хушшăн-хушшăн хуллен кăна тути хĕррипе кулса та илчĕ вăл, тепĕр чух куçĕсем шывланчĕç, çав вăхăтрах хăйĕн аллисем пĕр чарăнмасăр ачисене ачашларĕç.

...Тĕттĕм пулнă чух киле çитсе Янпа Юули аслашшĕпе амăшне хăйсем паян ашшĕне курни, пĕр сехет ытла унпа пĕрле пулни çинчен каласа парсан лешсем чутах тăнран тухса каятчĕç. Вĕсем мĕн тери савăнни, мĕн тери пăлханни çинчен каласа пама та пĕлес çук. Паульпе Амалия çĕрĕпех чăлăм куç хупмарĕç. Вĕсен халех, çак самантрах, пĕр тăхтамасăр Ильмар патне, хăйсен телейĕ, хăйсен савăнăçĕ патне, тухса вĕçесси килчĕ. Тул çутăлнă-çутăлман ватă Пауль Назар Егорччăна кайса вăратрĕ. Лешĕ ăнсăртран тем пулман-ши тесе хăрасах кайрĕ: çак вăхăтрах çын ырăпа килмест ĕнтĕ! Анчах самантранах унăн шикленесси пĕтрĕ...

— Пирĕн çав тери пысăк савăнăç, тăванăм! Манăн ывăлăм, пĕртен-пĕр ывăлăм, манăн Ильмар тупăнчĕ! Ниçта кайса кĕме пĕлместĕп... — аллисене сăтăркаласа каллĕ-маллĕ уткаларĕ старик.

— Калама та çук пысăк телей ĕнтĕ ку. Чунтан-вартан саламлатăп! — ун аллине тытса хыттăн чăмăртарĕ председатель. — Мĕнле тупăнчĕ? Çыру ячĕ-и?

— Çыру мар! Ĕнер ачасем хăйне курса килчĕç! Шупашкар-

ти пĕр госпитальте выртать... Çавăнпа ирех килтĕм сан патна, тӳсеймерĕм, каçарах ĕнтĕ уншăн. Тархасшăн, Ильмара кайса курма пĕр-пĕр лаша пар...

— Пĕрре мар, хуть те иккĕ кӳл, кун пек чух нимĕн те шел мар! — ывçипе сĕтел çине шап! çапса илчĕ Назар Егорччă. — Вĕçтер! Атя, халех кайса кӳлтеретпĕр...

— Тавтапуç сана, тăванăм!

Тепĕр сехетрен Атăл леш енчи вăрмансем хыçĕнчен ирхи хĕп-хĕрлĕ хĕвел ерипен кăна шуса тухнă вăхăтра ватă Кик-касăн пĕтĕм кил-йышĕ мăн урапа çине тиенсе Шупашкара тухса кайрĕ.

— Пирĕнтен салам калăр, часрах сывалма ыр сунăр, — кăмăллăн ăсатса ячĕ вĕсене Евгени амăшĕ Улька.

— Спаççипă! — ал сулса савăнăçлăн кăшкăрчĕ ăна хирĕç Амалия. Ун пек телейлĕ çын та çук пулĕ çав халь...

## Унтан çапла пулнă...

Фашистсене Орелпа Белгород таврашĕнче аркатса тăкнă хыççăн пирĕн çарсем хăйсем вăйлă наступлени пуçласа ячĕç. Унччен хĕвел анăçнелле мăкăрăлса тăнă «Курск хысакĕ» тени кайăк çунаттисем пек ик еннелле сарăлса кайрĕ, фронт линийĕ тӳрленчĕ. Август уйăхĕн юлашки кунĕсенче çав «хысак» вĕçĕнчи Севск хулишĕн хаяр çапăçу тапранчĕ. Çак авалхи вырăс хулинче гитлеровецсем питĕ тĕреклĕ оборона туса хунă-мĕн. Хули сăртра, çӳллĕ вырăнта ларать, ун умĕпе, айлăм тăрăх, самаях сарлака Сев шывĕ юхса выртать. Шыв хĕрринерех пыма та кансĕр — унта та кунта кӳлĕсем, шурлăх, лачака. Сăрт çинче темĕн чухлĕ траншейăсем, дотсем алтса, темиçе рет йĕплĕ пралук карса, пралуксенчен маларах темĕн чухлĕ мина хурса вырнаçса ларнă тăшман тавралăха пит инçе курнă, унăн тупписемпе миномечĕсем Сев шывĕн ку енне хуть те хăш тĕле те персе лектернĕ.

Тăшман хăйĕн аякка перекен хĕç-пăшалне хăш-хăш тĕле вырнаçтарнине, унăн оборони, укреплениĕсем мĕнле пулнине тĕплĕрех пĕлме кашни каçах разведчиксен ушкăнĕсене кăлара-кăлара ячĕç. Хăш-пĕр каçсенче вĕсем Сев шывĕ урлă ишсе каçса тăшман йышăнса тăракан çырана та тухкаларĕç, унта вăрахчен сăнаса выртрĕç...

Пĕррехинче, чашлаттарса çумăр çунă сĕм тĕттĕм каç, пĕтĕм дивизипе чапа тухнă Иван Рыбаков разведчикăн ушкăнĕ Сев урлă кимĕпе каçса «чĕлхе» тытса килчĕ. Малтан ĕçсем аванах ăнса пычĕç вĕсен, анчах каялла таврăннă чух çумăр тăрук

чарӑнчӗ, тӑхлан пек пӗлӗтсем сирӗлчӗҫ те, нимӗҫсем сӑртран умлӑн-хыҫлӑн вӗҫтернӗ ракетӑсем ҫак тавралӑха кӑнтӑрлахи пекех ҫутатса ячӗҫ. Тӑшман наблюдателӗсем шыв ҫинчи пӗчӗк кимме асӑрхарӗҫ, вара кӗҫех ҫав тӗле минӑсем тӑкма, шултра калибрлӑ пулеметсенчен пеме тытӑнчӗҫ. Разведчиксем мӗн вӑй ҫитнӗ таран хытӑрах ишме тӑрӑшрӗҫ, анчах минӑсем ҫывӑхрах ҫурӑлчӗҫ, кашни темиҫе ҫеккунтрах кайра та, малта та, ик енче те темӗн ҫӳллӗш шыв юписем чашкӑрса ҫӗкленчӗҫ, вӗри металл вӗҫӗмсӗр тӑкӑннипе кимӗ тавраш ӗнчи шыв вӗресе кӑна тӑчӗ. Ал-урине ҫыхса, ҫӑварне пӑкӑласа кимӗ тӗпне пӑрахнӑ нимӗҫ ҫинче ларса пыракан Иван Рыбаков кӗсменсемпе ишекенсене пӗрмай васкатрӗ:

— Хытӑрах, хытӑрах! Хӑвӑртрах!..

Хамӑр енчи ҫырана ҫитесси нумай та юлманччӗ — пулсан пулӗ пӗр алӑ метр! — ҫав вӑхӑтра кимӗпе юнашарах пӗр пысӑк мина хрӗплетрӗ те, кимӗ, тӑрук ҫӳлелле ҫӗкленсе, пӗррех тӳнсе кайрӗ, ларса пынисем вара пурте шыва путрӗҫ...

Пуринчен малтан Иван Рыбаков чӑмса тухрӗ.

— Фриц ӑҫта? Фрица ҫӑлӑр! — кӑшкӑрчӗ вӑл йӗри-тавралла пӑхса. Паллах ӗнтӗ, ятарласа «чӗлхе» тытма кайнӑ разведчиксемшӗн вӑл нимрен те хаклӑрах-ҫке-ха.

Шывран тата ик-виҫӗ пуҫ курӑнчӗ.

— Нимӗҫ ӑҫта? Нимӗҫе шырӑр! — тата хытӑрах кӑшкӑрчӗ Рыбаков. Анчах ҫав вӑхӑтрах хӑйӗн урисем темле ҫемҫе япалана тивнине туйрӗ вӑл.

«Ҫавӑ! Нимӗҫ! Алли-урине ҫыхнӑскер, ним мар путать вӗт, шуйттан!» — ҫиҫӗм пек шухӑш вӗҫсе илчӗ те унӑн, вӑл ҫавӑнтах шыв тӗпнелле чӑмрӗ. Тепӗр ҫур минутран унӑн пуҫӗ каллех шыв ҫинче курӑнчӗ. Сулахай аллипе вӑл нимӗҫе ҫӳҫӗнчен ярса тытрӗ, сылтӑммипе ишрӗ. Ӑна капла питӗ йывӑр пулчӗ, нимӗҫ тушки аялаллах туртрӗ, ҫавӑнпа та вӑл пуҫне шывран кӑларсанах ҫӑварне тулнӑ шывпа чыхӑна-чыхӑна кӑшкӑрчӗ:

— Килӗр кунта хӑшӗ те пулин! Шарипов, Петренко! «Чӗлхене» ҫырана кӑларма пулӑшӑр!

Ун патне харӑсах виҫҫӗн ишсе пычӗҫ. Пӗри нимӗҫе ҫаннинчен ярса тытрӗ, иккӗшӗ хыҫалтан тӗрткелерӗҫ. Минӑсем халь сахалтарах ҫурӑлчӗҫ, ӳкессе те чылай каяраха ӳкрӗҫ, анчах пулеметсем ҫав-ҫавах урнӑ пек печӗҫ, шултра пульӑсем тикӗт пек хура шыва пӗр вӗҫӗм чӑк-чӑк-чӑк! туса тӑрӑнчӗҫ, ӑна пӗчӗк фонтансем пек сирпӗтрӗҫ.

Разведчиксем шӑппӑн, пӗр сассӑр ишрӗҫ. Мӗнле калаҫу пулма пултартӑр-ха ҫакӑн пек чух? Ҫынсем епле те пулсан ҫырана ишсе ҫитесси ҫинчен ҫеҫ шухӑшларӗҫ халь. Анчах разведчиксен командирӗ Иван Рыбаков пуринчен ытларах хӑйсен аллине лекнӗ «чӗлхе» пирки пӑшӑрханчӗ — вилсе ан кайтӑр

тата, шуйттан! Пĕтĕм тăрăшни, пĕтĕм тертленни сая каять вара!

Урасем шыв тĕпне, çĕре перĕнчĕç.

— Хăвăртрах, хăвăртрах! —васкатрĕ Рыбаков. — Фрица часрах кутăн тытса силлемелле, çăтса тултарнă шывĕ каялла тухтăр!

«Чĕлхене» вĕсем ал-уринчен тытса йывăр паранкă миххине çĕкленĕ пек йăтса кăларчĕç.

— Вăрмана, часрах вăрмана! Чуппипе!..

Рыбаков çапла кăшкăрса команда пама ĕлкĕрчĕ çеç — ăна сылтăм аякĕнчен, хул калакĕнчен кăшт аяларахран, умлăнхыçлăн икĕ пуля пырса çапрĕ. Вăл тӳрех малалла тирĕнсе кайрĕ. Анчах çак самантра та вăл нимрен малтан хăйĕн служба тивĕçĕ, салтак тивĕçĕ çинчен манмарĕ.

— Нимĕçе... штаба чĕррĕн çитерĕр... Комдив заданийĕ... — йынăшса илчĕ вăл.

Леш енчен персех тăракан пулеметсем татах лектересрен хăраса разведчиксем Иван Рыбакова та, ним пĕлми пулнă нимĕçе те васкасах чăтлăхалла йăтса кĕрсе кайрĕç.

Фронт пĕрмай хĕвел анăç еннелле куçса пычĕ.

Хула хыççăн хула, вуншар та çĕршер ял фашистсен пусмăрĕнчен хăтăлса ирĕке тухрĕ. Халăх савăнчĕ. Анчах хурланмалли те нумайччĕ-ха, ма тесессĕн вăрçă, уйрăмах наступлени, çухатусăр пулмасть. Кашни кунах, кашни сехетрех тахăшĕ вилет, тахăшĕ аманать, сусăрланать. Почтальонсем пĕр киле «Эп сывă-ха, çапăçатăп, тăшмана пуçĕпех аркатнă куна кĕтсе илме ĕмĕтленетĕп» текен çырусем кĕрсе парса савăнтараççĕ, тепĕр киле вĕсемпе пĕрле нимпе пусарма çук хуйхă пырса кĕрет: «...Сирĕн ывăлăр хамăрăн Тăван çĕршывшăн çапăçса паттăрсен вилĕмĕпе вилчĕ...» Çын вырăнне — хут татки. Çынни çук. Пулмасть те вăл. Нихçан та. Нумай куççулĕ кăларать çав пĕчĕк хут: эрне, уйăх, çулталăк, теприсене ĕмĕр тăршшĕпех хуйхăртать. Анчах мĕн тăвăн ĕнтĕ? Кама айăплатăн? Уншăн тăшман çеç айăплă, пирĕн çине вăрçăпа килсе кĕнĕ тискер тăшман çеç. Эппин, ăна хăйне часрах пĕтерес, çапса аркатас, тĕп тăвас пулать. Унсăрăн вăл пире тата тем чухлĕ сиен кӳме, пирĕн савăнса пурăнас çынсене тата ытларах пĕтерме пултарать...

Çавăншăн çапăçаççĕ салтаксем. Çавăншăн çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшать халăх. Çĕнтерӳшĕн! Телейшĕн!

Евгенисем патне чылай хушă нимĕнле çыру та килмерĕ. Ырри те, усалли те. Ик эрне, уйăх, уйăх çурă... Кил-йышра каллех кулянма тытăнчĕç. Иртнĕ икĕ çул хушшинче Евгени йăмăкĕ Марине те самаях ӳсрĕ те (вăл ĕнтĕ çак çуркунне

тăваттăмĕш класа куçрĕ), вăл та ашшĕнчен нимĕнле хыпар та пулманшăн хытă пăшăрханчĕ. Юлашки вăхăтсенче, Варькка почтальон ашшĕн «виçкĕтеслĕхĕсене» пырса парсан, вĕсене никамран малтан Марине уçса вуланă, ашшĕ ялти çынсенчен кама-кама салам янă — вĕсене кайса каланă, ашшĕ мĕн çырни çинчен ватă Пауль ыйтсан ăна та каласа кăтартнă.

— Ах, мĕн пулчĕ-ши, мĕн пулчĕ-ши?.. — час та часах хуйхăрса илчĕ амăшĕ. — Чĕрĕ пулсан, сывах пулсан пĕлтермеллех-çке вăл!..

Евгени хăй пăлханнинне питех кăтартасшăн пулмарĕ. Амăшĕ макăркаласа та илчĕ, анчах Евгени хăй кăмăлне хытарма тăрăшрĕ. Пĕчĕк ача мар-çке вăл халь, кĕçех вун уллтă тултарать. Сасси те хулăнланчĕ, сăмса айĕнче хурарах мамăк палăра пуçларĕ — усси шăтасшăн пулмалла. Мĕн калăн ĕнтĕ — арçын! Аркаш авă вăрçă пуçланнăранпа иртнĕ икĕ çул хушшинче ним чухлĕ те ӳсмерĕ пулмалла, çав-çавах пĕчĕккĕ (ратти çавăн пек çав вĕсен), анчах Евгени пĕвĕпе амăшĕнчен те иртсе кайрĕ...

«Пĕркуннехи пек, каллех таçта аякка, почта çук çĕре, командировкăна яман-ши ăна? — шухăшларĕ вăл ашшĕ пирки. — Тен, командирĕсем патне çырса пăхас?»

Анчах хальхинче унăн ашшĕ, Иван Рыбаков сержант, почта çук çĕрте пулман. Октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче вăл Красноярск хулинчен çырса ячĕ. Аманнă та госпитальте выртать иккен. Суранĕ йывăр пулнă, çапах та халь хăрамалли иртсе кайнă, тӳрленет. Киле ниепле те пĕлтерме май килмен — уйăха яхăн çул çинче пулнă...

— Ăçта вăл Красноярск? — ыйтрĕ Улька ачисем ашшĕн çыруне вуласа парсанах. — Инçе-и?

— Питĕ инçе, Çĕпĕрте, — терĕ хамăр çĕршывăн географине лайăх пĕлекен Евгени. — Свердловскран та, Новосибирскран та леререх...

—Ма ун пекех аякка янă-ши? Нивушлĕ кунтарахри хуласенче вырăн пулман ун валли? — ассăн сывласа илчĕ амăшĕ. — Çывăхарах пулнă пулсан, тен, иксĕмĕр ун патне кайса та килнĕ пулăттăмăр, анчах вăл тарана епле çитетĕн? Сывалсан ăна каллех вăрçа яраççĕ ĕнтĕ. Курайсмасăрах юлатпăр...

— Уншăн ан пăлхан, анне. Атте сывă пулни çинчен пĕлни те темех тăрать...

— Вăл апла та-ха, курас килет-çке! Пауль Оскарччăпа Амалия хăйсен Ильмарĕ патне кашни эрнере тенĕ пекех кайса килеççĕ те — мĕн тери лайăх!

— Вăхăчĕ çитсен эпир те курăпăр-ха...

Тепрер уйăхран Евгенисем патĕнче пурăнакан эстонецсен кил-йышĕнче питĕ пысăк савăнăç пулчĕ — вĕсем Янсен аш-

шĕне Шупашкарти госпитальтен киле илсе пычĕç. Унăн суранĕ тӳрленнĕ ĕнтĕ, анчах вăл текех çар служби валли юрăхлă пулман — сылтăм чĕркуççи шăмми ваннă пирки ури вуçех авăнмасть. Çапах та вăл килте ĕççĕр ларасшăн пулмарĕ, эрнеренех райкома кайса калаçрĕ те, ăна çар комиссариатне вырнаçтарчĕç. Кунта унăн фронтовиксен çемйисене пулăшас енĕпе ĕçлемелле пулнă. Район центрĕ инçех маррипе вăл часчасах киле пырса çӳрерĕ, эрнере пĕр каç та пулин хăйĕн килйышĕпе пĕрле ирттерчĕ. Хăй вара кашнинчех фронтри ĕçсем мĕнле пыни çинчен каласа пачĕ, полевой сумкинчен хĕррисем çĕтĕлсе пĕтнĕ карттă кăларса пирĕн çарсем тăшмана ăçта çити хуса янине, хальхи вăхăтра çапăçусем хăш тĕлте пулса пынине кăтартрĕ. Вăл каласа панисем кашнинчех кăмăла çĕклерĕç.

Евгени ашшĕ, Иван Рыбаков, инçетри Çĕпĕр хулинчен çырсах тăчĕ, суранĕ майĕпе тӳрленсе пыни çинчен пĕлтерчĕ, хăйĕн кил-йышне çав тери курас килни çинчен çырчĕ («кайăкăнни пек çунат пулас пулсан паянах вĕççе пырăттăм...»), анчах госпитальтен хăçан тухма пултарасси çинчен шарламарĕ-ха.

Колхозри ĕçсем хăй майĕпе пулса пычĕç. Кĕр акинче каллех леш çул-йĕр маçтăрĕ Мадис Ноот пулăшрĕ — ватă Паульпе иккĕшĕ юсанă трактор, начартарах пулин те, плугсене сĕтĕрчĕ-ха. Икĕ çул хушшинче самаях ӳссе тĕрекленнĕ ачасем халь ĕнтĕ чăн-чăн мăн çынсем пекех пулчĕç, вĕсене нимĕнле ĕç те хăратмарĕ...

Салтак кил-йышĕсемпе шкул валли вутăлăх вăрман уйăрса парсан та Назар Егорччă ăна касма, вăй питти темиçе хĕрсĕр пуçне, шав вун пилĕк-вун ултă çулхи арçын ачасене илсе кайрĕ. Шкулăн вутă пĕтсе çитнĕ пирки вĕренекен ачасенчен аслăраххисене вăхăтлăха вĕренӳрен те хăтарчĕç. Килтен пĕр вун пиллĕкĕн тухса кайса вĕсем Чикме енчи вăрманта ик эрнене яхăн пурăнчĕç. Çанталăкĕ ун чух сивĕччĕ ĕнтĕ, выртма-тăма çывăхра ял-мĕн çук, çавăнпа та вĕсен малтанхи кунне самаях пысăк çĕр пӳрт алтса майламалла пулчĕ. Тăррине пĕр рет кашта сарса хыр лăссисемпе витрĕç, варрине вучах вырăнĕ турĕç, стенасем çуммипе — çывăрмалли сарлака саксем, вĕсем çине, çемçерех пулма, çĕклемĕ-çĕклемĕпе типĕ çулçă тултарчĕç.

— Эпир те фронтри салтаксем пек пурăнса куратпăр-ха эппин, — терĕ лара-тăра пĕлмен Аркаш çĕр пӳрте туса çитерсе кăвайт чĕртсе ярсан.

— Тӳссе пăхни кансĕрлемест вăл, — терĕ Назар Егорччă.

Вăрман касасси — йывăр ĕç, тем пысăкăш йывăççене йăвантарма, вĕсен тураттисене иртнĕ хыççăн сыппăн-сыппăн татма, унтан çул хĕрринерех илсе тухса купалама сахал мар вăй

кирлĕ. Малтанхи ик-виç кун хушшинче ачасем питĕ ывăнчĕç, анчах кайран майĕпе çапах та хăнăхрĕç темелле, ĕç самаях кал-кал пыра пуçларĕ вĕсен.

Ӳкерме палăртнă йывăçа çĕр çумĕнченех çуррине яхăн пуртăпа касаççĕ, унтан çав тĕлтенех тепĕр енчен пăчкăпа касса кĕрсе каяççĕ, вара йывăç хăех малтан каснă еннелле вăраххăн сулăнма пуçлать те тепĕр темиçе самантран юнашар йывăççсен тураттисене авса, хăшĕсене çăтăр та çатăр хуçса, кĕпсĕрт! тăсăлса ӳкет. Анчах кун пек чух вара питĕ асăрханас пулать. Çӳлтен сулăмлăн тайăлса анакан йывăç туратти лексен те çынна çавăнтах вĕлерме е хытă амантма пултарать...

Кун пирки Назар Егорччă вăрмана çитсе ĕçе тытăнас умĕн те каларĕ, кайран та пĕрмай асăрхаттарчĕ:

— Йывăç ăçталла ӳкессине малтанах чухласа вăл енче никамăн та пулмалла мар. Касса янă йывăç тайăлма пуçласан хуть те хăçан та унтан аяккарах пулма тăрăш, унсăрăн тем курса ларăн!

Анчах та эпир ваттисем каланине пур чух та итлетпĕр-и-мĕн? Итлеместпĕр вĕт! Хамăрах пит ăслă мар-и вара, шутсăр паттăр мар-и! Назар Егорччă тем пек асăрхаттарнă пулин те, вăрман каснă çĕрте инкек пулчĕ-пулчех вĕт. Çитменнине, малтанхи кунсенче, ĕçе хăнăхса çитиччен те мар, пĕр эрне ĕçлесе самаях вĕренсе çитсен!

Пĕр кунхине, каç пуласпа, Евгенисен ушкăнĕ (вăрмана кайнисем пилĕкшерĕн-пилĕкшерĕн ĕçленĕ) тата тепĕр пысăк ăвăса ӳкерме шут турĕ. Пĕр енчен пуртăпа каснă хыççăн Евгенипе тепĕр хĕр — сĕлĕ кĕлти пек пуклак, чакăр куçлă Наçтук — йывăçа пăчкăпа касма тытăнчĕç. Вĕсемпе пĕрле ĕçлекен Аркаш çав вăхăтра инçетре те мар хăрăк турат пуçтарнă-мĕн: каçхине çĕр пӳрте ăшăтма. Ăвăс — çемçе йывăç, питĕ хăвăрт касăлчĕ. Шăп ун тăрри çĕрелле тайăлма пуçланă вăхăтра Евгение пĕр çĕклем çапă йăтнă Аркаш хăйсем патнелле пыни курăнса кайрĕ. Ниçталла та пăхмасть, тӳрех пырать...

— Аркаш, пăрăн! Йывăç ӳкет! Та-ар!.. — тăрук çав тери хăраса, ăнран тухса кайнă пек кăшкăрчĕ Евгени. Анчах лешĕ тарас вырăнне тăпах чарăнса тăчĕ те пуçне çĕклесе унăн-кунăн пăхкаларĕ — йывăç ăçтарах ӳкессине курасшăн пулнă пек.

— Та-ар!.. — татах кăшкăрчĕ Евгени.

Аркаш тин аяккалла сикме тăчĕ, анчах çав самантрах ăна питĕ хăвăрт ӳкекен йывăç тураттисем хупласа хучĕç. Çакна Евгенипе пĕрлех курса тăнă Наçтук йывăç айне урăх çын мар, вăл хăй пулнă пек, пĕтĕм вăрмана илтĕнмелле хăрушла кăшкăрса ячĕ.

«Пĕтрĕ Аркаш!» — терĕ те Евгени хăй ăшĕнче ун патнелле тапса сикрĕ. Наçтук та унран юлмарĕ.

— Аркаш! Аркаш! Чӗрӗ-и эс?..

Ăвăс тураттисем айӗнче Аркаш ӳппӗн выртнă. Тусӗ хăйне кăшкăрсах чӗннине хирӗç вăл сас та памарӗ, хускалмарӗ те.

— Вилнӗ вăл, ви-илнӗ-ӗ! — тата хытăрах çухăрса ячӗ Настук. — Пӗтертӗмӗр ачана, ай тур-тур-ту-ур!..

Евгени те унран кая мар хăрарӗ ӗнтӗ, анчах нимӗн те чӗнмерӗ, вăл хăйӗн тусне епле те пулсан хăтарасси çинчен çеç шухăшларӗ: «Вилсех вилмен пуль-ха, тăнран çеç кайнă-и тен... Часрах туртса кăларас та больницăна илсе каяс пулать...»

— Тыт туратсенчен, йывăçне илсе пăрахатпăр! — кăшкăрчӗ вăл ним тӗлне пӗлмесӗр тăракан Настука.

Анчах йывăçăн тăрри те йывăр-мӗн, ăна иккӗн йăтма пулмарӗ. Юрать-ха, Настук кăшкăрнине илтсе вӗсем патне харăсах виççӗн-тăваттăн чупса пычӗç те ăвăс тăррине йăпăр-япăрах аяккалла илсе ывăтрӗç.

Евгени тӳрех хурлăха лекнӗ тусӗ умне кукленсе ларчӗ.

— Аркаш! Аркаш, тетӗп...

Тусӗ чӗнмерӗ. Ӳппӗн выртаканскере, ăна çурăмӗ çине çавăрса вырттарчӗç, çавăн чух вара вăл йынăшса ячӗ те хуллен кăна куçӗсене уçрӗ.

— Эп вилмен-и? — шала кайнă саспа ыйтрӗ вăл.

— Çук-çук, вилмен, вилмен, живоях! — унччен ним пӗлми выртнă тусӗ сăмах хушнăшăн çав тери хӗпӗртесе кайрӗ Евгени. — Нимех те пулман курăнать-ха сана... Ыратать-и мӗн те пулин?

— Сылтăм хул пуççи... шăмми хуçăлнă пулмалла, — терӗ Аркаш. Вăл сылтăм аллине хускатма тăчӗ те çавăнтах йынăшса илчӗ. — Çӗçӗпе чикнӗ пекех...

Çав вăхăтра Назар Егорччă пырса тухрӗ.

— Мӗн пуххи тăватăр, ма ӗçлеместӗр? — аякранах ыйтрӗ вăл. — Каç пулман вӗт-ха, çутă чух вăхăта ахаль сая ярас марччӗ! — Старик чылай инçетре ӗçлекен тепӗр ушкăн патне кайнă та кунта мӗн пулни çинчен пӗлмен-ха.

— Хурлăх, Назар Егорччă, — терӗ тахăшӗ.

— Мӗн хурлăхӗ тата?

Йӗри-тавра карталанса тăнă çынсем ик еннелле сирӗлсен председатель çӗр çинче Аркаш выртнине курчӗ. Ача сăнӗ кăвакарса кайнă, пичӗ ик тӗлтен чӗрӗлнӗ те, кăштах юн тухнă. Мӗн пулнине тӳрех ăнланчӗ Назар Егорччă.

— Туса хутăр пулать такки! Каласа тăнă çӗртех! Эх, сире-е! — çилленсе кайрӗ вăл. — Хăшӗ хăтланчӗ-ха куна? Кам айăплă? Кама çурăм урлă пушăпа туртмалла?

— Эпир, Настукпа иксӗмӗр, — терӗ Евгени. — Эп кăшкăртăм, анчах Аркаш илтмерӗ пулмалла...

— Ăна малтанрах кăшкăрмаллаччӗ!

— Малтан ҫывӑхра ҫукчӗ вӑл...

— Ҫывӑхра, аякра! Пурне те курас пулать! Куҫсене мӗн валли туса панӑ сире? Пӑхма пуль?

— Вӗсем айӑплӑ мар, эп хам... — тусӗ хутне кӗчӗ Аркаш.

— Сана та мухтамастӑп, санӑн та асӑрханас пулнӑ! — Назар Егорччӑ ун умне пӗшкӗнчӗ. — Ну, мӗн ыратать, ӑҫта? Хуҫӑлса-сусӑрланса пӗтмен-и?

— Сылтӑм алла хускатаймастӑп...

Старик унӑн хул шӑммине хыпашлама тытӑнсанах Аркаш йынӑшса ячӗ.

— Хуҫӑлнах пулмалла ӗнтӗ е хытӑ мӑкӑлтаннӑ. Эх сире-е! — Назар Егорччӑ тӑчӗ те ассӑн сывласа илчӗ. — Тӑхтаса тӑмалли ҫук, халех киле илсе каяс пулать. Фершӑла кӑтартас, унтан, тен, больницӑнах леҫме тивӗ... — Вӑл пӳрнипе Евгени ҫине тӗллерӗ. — Эс амантнӑ, эсех илсе каятӑн, как хош! Тавай лаша кӳл. Эх сире-е!..

...Аркаша ӳречисемпе танах ҫулҫӑ тултарнӑ урапа ҫине йӑтса хучӗҫ, шӑнасран ҫиелтен чаппанпа витрӗҫ те Евгени лашана вырӑнтан хускатрӗ. Вӑрманти лакӑм-тӗкӗмлӗ ҫулпа пӗр ҫур сехет уттарнӑ хыҫҫӑн вӗсем ҫӗнӗ шоссе ҫине тухрӗҫ те ерипен кӑна кил еннелле кӑлтӑртаттарчӗҫ. Нихӑшӗ те чӗнмерӗ, хутран-ситрен кӑна Евгени тусӗнчен ыйткаларӗ:

— Шӑнса каймарӑн-и? Кансӗр мар-и?

— Чиперех-ха...

Часах вӑрман хушшипе пыракан ҫул ҫинче пӑч тӗттӗм пулса ларчӗ — куҫран чиксен те курас ҫук, анчах пӑртак кайсан малти хуп-хура йывӑҫсем хыҫӗнчен уйӑх шуса хӑпарчӗ те таврара лайӑхах курӑнакан пулчӗ.

— Но-но! — чумантарах лашана кӑрт-карт турткаласа хӑваларӗ Евгени. Лаши пӗрмай чупрӗ: шап, шап, шап... Аркаш тӗлӗрсе кайрӗ пулмалла, вӑл вӑрӑмраххӑн сывлани илтӗнчӗ.

— Ах, ӑнӑҫсӑр япала туса хутӑмӑр-ҫке! — кулянса илчӗ Евгени тусӗ ҫине ҫаврӑнса пӑхса.

Тепӗр ик сехетрен лаша хӑех шоссе ҫинчен сылтӑмалла пӑрӑнчӗ — выльӑх та кил ӑҫтине пӗлет ҫав! Уй урлӑ пыракан ҫул тикӗсех маррипе урапа кӑлт-калт сиккелерӗ те Аркаш йынӑшса ярса вӑранчӗ — хул пуҫҫийӗ хытӑ ыратрӗ пулмалла.

— Инҫе мар ӗнтӗ, часах ҫитетпӗр, тӳскеле епле те пулин, — тусне йӑпатма пикенчӗ Евгени.

— Ӑш ҫунать... Шыв ӗҫес килет... — терӗ Аркаш.

— Киле ҫитмесӗр вӑл та ҫук ӗнтӗ.

— Пӗлетӗп. Чуптар лашине. Часрах ҫитес. Киле ҫитсен аптрамӑп-ха...

— Санӑн ыратасран хӑратӑп-ҫке.

— Тӳсетӗп.

Урапа кустӑрмисем каллех пӗр майлӑн кӑлтӑртатма тытӑнчӗҫ. Акӑ малта ял ҫумӗнчи ҫил арманӗсем те курӑна пуҫларӗҫ. Евгени шӑппӑн ларса пычӗ. Ун пуҫӗнче йӗркеллӗ шухӑшсем те пулмарӗҫ, ҫывӑрас киле пуҫларӗ. Ӗнтӗркесех кайрӗ вӑл.

Сасартӑк малта ҫын мӗлки курӑнчӗ. Питӗ васкаса утать. Ҫывӑхарах пырсан вӑл шинельпе, мулаххайпа пулни, ҫурӑмӗ хыҫне пысӑках мар кутамкка ҫакни палӑрчӗ. Салтак вӗт ку! Ӑҫта каять-ши? Киле курма килекенскер-ши?.. Евгени тилхепене турткаларӗ те кӗҫех ҫав ҫынпа танлашрӗ.

— Инҫе каятӑн-и, пичче? Лар, яла ҫити илсе каям! — терӗ те Евгени тӑрех лашине пат! чарчӗ.

— Тавтапуҫ, ачам. Инҫе юлмарӗ пулсан та ларам-ха эппин...

Ҫав самантрах Евгени чӗри яш! турӗ. Ытла та паллаҫ сасӑ пулчӗ-ҫке ку, яланах ҫав тери юратнӑ, тӑван сасӑ!

— Атте! — кӑшкӑрса ячӗ вӑл. — Эсӗ вӗт ку, атте!..

Салтак та, хӑйӗн ачине палласа илсе, ун патнелле ыткӑнчӗ.

— Евгени! Ывӑлӑм!.. — Вӑл арҫын ачана ҫатӑрах ыталаса илсе унтан та кунтан чуптума тапратрӗ. — Эккей, киле ҫитичченех тӗл пултӑмӑр-иҫ! Ак ӑҫта вӑл телей тени!.. Ӑҫтан килетӗн капла ҫӗр хута?

— Вӑрмантан, вутӑ каснӑ ҫӗртен... Акӑ Аркаша сиен пулчӗ те киле килме тиврӗ... — чыхӑна-чыхӑна каласа пама пуҫларӗ Евгени.

— Мӗнле сиен тата?

— Йывӑҫ пырса ҫапрӗ мар-и...

— Ытла хытах лекмен, иртсе каять, — терӗ ҫав вӑхӑтра пуҫне ҫӗкленӗ Аркаш.

— Тем те курма, тем те тӳсме тивет ӗнтӗ сире, мӑнтарӑнсене... — ассӑн сывласа ячӗ ашшӗ. — Ку вӑрҫӑ такама та асап кӳрет, мӗн тӑвас тетӗн... Килтисем мӗнле, сывах-и?

— Пурте лайӑх-ха. Эс мӗнле килтӗн тата, атте? Пуҫӗпех ячӗҫ-и? Е вӑхӑтлӑха ҫеҫ? — шикленнӗ пекрех ыйтрӗ Евгени.

— Пӗр эрнелӗхе кӑна, ачам, ҫула май ҫеҫ, — терӗ ашшӗ. — Тухтӑрсенчен хам ыйтрӑм — госпитальтен маларах кӑларса киле кӗрсе тухма май парӑр терӗм. Вӗсем маншӑн ыр кӑмӑллӑ пулчӗҫ...

— Хӑрамалли нимех те ҫук. Хул пуҫҫи шӑмми хуҫӑлнах пулмалла та, ку нимех те мар, ик-виҫ эрнерен тӳрленет вӑл, сыпӑнса ларать, — терӗ Антонина Клементьевна Аркаша ҫарамаслантарсах пӑхнӑ хыҫҫӑн. — Ӳсекен ача ӳт-пӗвӗ ун пек сурансенчен хӑрамасть. Ҫапах та ыран больницӑна ҫитсе рентгенпа пӑхтарӑпӑр, шанчӑклӑрах пулать...

Евгенипе ашшĕ, Аркаша ун патне çавăтса кĕнĕскерсем, ăна тав туса тухрĕç. Киле Аркаш хăех утса кайрĕ...

Рыбаковсен килĕнче вара вăл каç çĕрĕпех çывăрмарĕç. Мĕн тери пысăк савăнăç, мĕнешкел хаваслăх илсе килчĕ ашшĕ хăйпе пĕрле! Икĕ çул ытла пулнă вĕт-ха вăл вăрçăра, тем те курнă, тем те тӳснĕ, хăй каларăш — вутра та çуннă, шывра та путнă, çапах та акă сывах, килте, арăмĕпе, ачисемпе пĕрле! Унăн сарлака кăкăрĕ çинче икĕ орденпа икĕ медаль — çĕр-шыв, халăх панă парнесем — йăлтăртатаççĕ. Вĕсем çине пăхма питĕ кăмăллă, савăнăçлă, анчах вĕсене илме мĕн тери йывăр пулнине Иван Рыбаков пĕр хăй кăна пĕлет...

— Каласа кăтарт, атте, пĕтĕмпех каласа кăтарт, — хулĕнчен уртăнаççĕ ачисем.

— Пурне те калас пулсан эрнипех калас пулать, ачамсем, — тет ашшĕ. — Ытла та нумай...

— Пĕтĕмпе калама май çук пулсан кĕскен те пулин кала, атте! — тет Марине.

— Вăрçă пуçланнă çулах эсĕ «тамăкран çăлăнса тухрăм» тесе çырнăччĕ. Мĕнле тамăк çинчен каланă эс ун чухне? — ыйтать Евгени. — Тата мĕнле командировкăсене яраççĕ фронтра?

Йĕркипех каларĕ ашшĕ. Хĕрĕх пĕрремĕш çулта вĕсен полкĕ нимĕçсен ункине, урăхла каласан окружение лекнĕ. Уйăх ытла çапăçнă вĕсем çав тимĕр ункăран хăтăлса тухасшăн. Полкран пĕр рота чухлĕ те юлман, çапах та хамăрăннисем патне тухнă-тухнах, полкăн чи хаклă та чыслă япалине — унăн ялавне — çăлса хăварнă, ăна тăшман мăшкăлĕ туман.

— Командировка-и? Пулаççĕ ун пеккисем, пулаççĕ! Сана штаба чĕнеççĕ те умна карттă кăларса хурса кăранташпа тĕлле-тĕлле кăтартма тытăнаççĕ: акă фронт линийĕ, сирĕн ак çак тĕлте ун урлă каçса каймалла, çакăнта, çакăнта тата ак çакăнта çитмелле, унтан çаплалла каймалла, тăшманăн ăçта мĕн пуррине йăлт пĕлмелле теççĕ. Вара эсĕ хăвăн пур документусене, орденсемпе медальсене штаба паратăн та, ытларах патрон, граната тултарса, çимелли чиксе, çав çулпа тухса каятăн... Çавăн пек «командировкăра» эпĕ икĕ хутчен те пулнă. Ак çак Отечественнăй вăрçă орденне мана шăпах çавăншăн панă...

Ашшĕ килте пурăннă кунсем Рыбаковсен кил-йышĕшĕн чи телейлĕ, чи çутă, нихçан манмалла мар кунсем пулчĕç. Анчах эрне тени ытла та кĕске-çке-ха вăл. Çичĕ кун та çичĕ каç иртсе кайни сисĕнмерĕ те. Каллех уйрăлса каймалла пулчĕ ашшĕн... Ăна чугун çул станцине çитиччен ăсатма çемйипех кайрĕç.

— Чипер, тĕрĕс-тĕкел çаврăнса килмелле пултăрах санăн! Пирĕн юрату çăлса хăвартăрах сана... — куççулĕ витĕр ыр сунчĕ ăна пĕтĕм кил-йышĕ. — Телейлĕ пул!

Поезд хуллен кăна хускалса кайрĕ, унтан хытăран хытă ыткăнма тытăнчĕ, анчах Иван Рыбаков çаплах тамбурăн уçă алăкĕнче тăрса çĕлĕкĕпе сулчĕ. Унăн арăмĕпе ачисем те тахçанччен, поезд курăнми пуличченех, аллисемпе сулса тăчĕç...

## Телей хакĕ

Каллех сивĕ хĕл иртсе кайрĕ, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш хĕл...

Çак хĕлте пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар сахал мар чаплă çĕнтерӳсем турĕ. Апрель пуçламăшĕнче хаçатсем Пĕрремĕш Украина фрончĕн çарĕсем Чехословакипе Румыни чиккине тухса хамăр çĕршывăн тулашĕнче çапăçма тытăнни çинчен пĕлтерчĕç. Халь вара фашистсенчен хăтаракан хула ячĕсем те темле тĕлĕнмелле, унччен нихçан илтменскерсем пулчĕç — Ботошани, Рэдэуцы, Фэлтичени... Часах пирĕн çарсем Хура тинĕс тăрăхĕнчи Одесса, Керчь, Симферополь, Бахчисарай хулисене ирĕке кăларчĕç. Ытти фронтсенче те пирĕн ĕçсем ăнсах пычĕç. «Çĕнĕ самана» колхоз клубĕн заведующийĕ Витали мăн карттă çинчи хутран тунă пĕчĕкçеç хĕрлĕ ялавсене куллен-кун хĕвел анăçĕ еннелле сиктерсе пычĕ.

— Нумай юлмарĕ тăшмана çĕнтересси! — терĕ вăл çав карттăна пĕрмай курма пыракан çынсене. — Тăшман вăйĕ чаксах пырать! Шутлăр-ха эсир: Итали вăрçăран тухрĕ — капитуляци! Румыни çарĕсем пирĕн енне куçса нимĕçсене хирĕç çапăçма пуçларĕç. Финлянди мир ыйтать, Мускавра ун пирки калаçусем пуçланнă ĕнтĕ...

— Ку питĕ аван-ха, питĕ аван, часрах пĕтересчĕ вăрçине! Ах, часрах пĕтересчĕ-çке! — терĕç çынсем.

Çулла, июль уйăхĕнче, совет çарĕсем Эстони чикки урлă каçса Нарва хули таврашĕнче çапăçу пуçласа янă. Районра пурăнакан Ильмар Киккас çавăн çинчен радиопа илтсенех хăйĕн тăванĕсене пĕлтерме çĕр хута киле персе çитрĕ.

— Кĕçех пирĕн çуралнă çĕршыв, нумай асап курнă Эстони, тăшманран тасалать, курăр! — терĕ те вăл карттă çинче Нарва хулине шыраса тупрĕ. — Ак ăçта пирĕн çарсем! Нарвăна илсенех Раквере еннелле çул уçăлать, унтан вара Таллин та инçе мар... — Ильмар Киккас аллинчи кăранташпа карттă çине вăрăм стрелкăсем ӳкерсе хучĕ. — Питĕ шеллетĕп çак кунсенче хам унта пулманшăн...

Ватă Пауль çавăнтах тумланчĕ те çак савăнăçлă хыпара «Çĕнĕ саманара» пурăнакан ытти эстонецсене каласа пама тухса кайрĕ.

Тепĕр кунне вĕсем патне çул-йĕр маçтăрĕ Мадис Ноот пырса çитрĕ.

— Илтнĕ-и эсир, пĕлетĕр-и?!. — алăкран кĕнĕ-кĕмен йăл кулса ыйтрĕ вăл.

— Илтнĕ, тăванăм, пĕлетпĕр! — Пауль те тулли кăмăлпа кула-кула саламларĕ ăна. Ноот мĕн çинчен ыйтни вĕсемшĕн халь каламасăрах паллă пулнă. Хăй çуралнă çĕршыв фашистсен пусмăрĕнче асапланса пурăннăшăн виçĕ çул хушши куллен хуйхăрнă çын мĕн çинчен шухăшлатăр-ха ĕнтĕ çак самантра? Паллах, тăван çĕршывне часрах ирĕке кăларасси çинчен çеç!

Вăрахчен каласса ларчĕç виçĕ эстонец.

— Тăшмана хăваласа янă хыççăн пĕтĕм пурнăçа çĕнĕрен тума тытăнмалла пулать, — терĕ Ильмар, — хăйсем тухса тарнă чух фашистсем нимĕн те хăвармаççĕ вĕт. Мĕн май килнине çаратса каяççĕ, ыттисене сывлăшалла сиктереççĕ те çунтараççĕ. Хаçатсенче вуланă пуль? Тĕрĕссипе, эпир хамăрăн килсен ишĕлчĕкĕсем, пушар хыççăн юлнă сивĕ кĕл куписем çине кăна пырса кĕретпĕр. Пурнăçа ура çине тăратма пи-итĕ нумай вăй хума тивет-ха.

— Уншăн хăрамастăп эпĕ, — терĕ Пауль. — Леш вăрçă вăхăтĕнче те Вильгельм салтакĕсем пирĕн тăрăхра нимĕн те хăвармарĕç — йăлт çаратса тухрĕç, ялсемпе хуторсене çунтарса ячĕç, хуласене те тем териех сиен кӳчĕç. Çапах та кайран пĕтĕмпех турăмăр! Ун чух эпир вырăс халăхĕнчен уйрăм, хамăр кăна пулнă-ха, пире никам та пулăшман, пуян хуçасем, укçаллисем, хăйсемшĕн çеç тăрăшнă, анчах халĕ эпир совет халăхĕн пысăк çемйинче пурăнатпăр... аптрамăпăр.

— Ку çапла вăл, — килĕшрĕ Ноот, — вырăс халăхĕ кăна мар, ытти халăхсем те пулăшаççĕ пире. Анчах эпĕ çав ишĕлтернĕ-çунтарса янă хуласемпе ялсене пĕтĕмпех фашистсене хăйсене çĕнĕрен тутарăттăм. Ишĕлтерме пĕлтĕн пулсан — çĕнĕрен тума пĕл!

— Эп те çапла шутлатăп, Мадис, — пуçĕпе сулчĕ Пауль, — тинкисем тухса кайичченех ĕçлеттерес пулать вĕсене. Ытти халăхсене чура туса пĕтĕм тĕнчипе пуç пулса тăма ан ĕмĕтлен, ирсĕр, çын аллипе тунă пуянлăха ан хапсăн, ылханлă йăх!..

Пĕр хушă йывăр шухăша кайса чĕнмесĕр ларнă хыççăн сăмаха каллех Ильмар пуçларĕ.

— Атте, — терĕ вăл Пауль еннелле çаврăнса, — эпĕ паянах Мускава çыру çыратăп...

— Кам патне? Мĕн пирки? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Пауль.

— Парти Тĕп Комитетне. Хамăр пата, Эстоние, ĕçлеме яччăр. Ура аманнă пирки эпĕ фронтра пулаймастăп, анчах хуçалăх ĕçĕнче, партипе совет ĕçĕнче пулма пултаратăп вĕт-ха. Сахал

пулать-и унта ĕç? Хамăр тумасан кам туса парĕ пире, кам йĕркене кĕртсе парĕ пурнăçа? Шухăшла-ха...

Ильмар питĕ тĕрĕс калать. Нимĕç захватчикĕсенчен хăтарнă районсене хăвăртрах ура çине тăратмалла. Партипе Совет влаçĕ çапла тума хушаççĕ те ĕнтĕ, вăрçă пĕтессе кĕтсе тăмалла мар, тăшмана хăваласа янă вырăнсенче пурин те çийĕнчех çанăсене тавăрса ĕçе тытăнмалла тесе вĕрентеççĕ. Йывăр пулсан та оккупацире пулнă вырăнсене пысăк пулăшу параççĕ. Ватă Пауль çакна хаçатсем тăрăхах лайăх пĕлет.

— Ырлатăп ку шухăша, Ильмар, — терĕ вăл. — Çырса яр. Эстоние тăшманран тĕппипех тасатасси ытла вăрахах каймасть пуль ĕнтĕ...

— Тавтапуç, атте, мана ăнланнăшăн!

Ĕçсем, чăнах та, вĕсем шутланă пекех пулчĕç: кĕçех Ленинград фрончĕн çарĕсем, малтан йышăннă вырăнтан хăватлă наступлени пуçласа ярса, сентябрь уйăхĕн вĕçнелле Эстоние пĕтĕмпе тенĕ пекех ирĕке кăларчĕç, унăн столицинчи — Таллинри — Тоомпе ятлă авалхи башня тăрринче хĕрлĕ ялав — Совет ялавĕ! — вут-çулăмлăн вĕлкĕшме тытăнчĕ. Эстонин Балти тинĕсĕнчи Моонзунд утравĕсем — Дагопа Сааремаа кăна хальлĕхе тăшман аллинче юлнă, анчах вĕсен шăпи мĕнле пуласси те уççăнах курăнса тăнă.

Çав кунсенче Ильмар Киккас Мускавран ответ илчĕ те, хăйĕн кил-йышĕпе сывпуллашса, çуралнă çĕршывне тухса кайрĕ.

— Эсир те кунта нумай пурăнмастăр ĕнтĕ, часах акă сире те чĕнсе илетĕп, — терĕ вăл кашнинех ытала-ытала чуптуса.

— Çапла пултăрччĕ, ывăлăм! Чипер çитсе ăнăçлă ĕçлеме тӳр килтĕр сана. Палланă çынсене тĕл пулсан салам кала!..

...Ылтăн кĕркунне, йывăçсем ытармалла мар хитре, сапсарă та çутă кĕрен çулçăсемпе капăрланса ларнă вăхăтра, пĕр шăмат кун, каçалапа, «Çĕнĕ самана» колхозăн ту вĕçĕнчи уй хапхинчен тăвата çамрăк — ик йĕкĕтпе икĕ хĕр ача пырса кĕчĕç. Пурте ваткăллă пĕр пек фуфайкăсемпе, атăсемпе, арçынĕсем хурарах карттуссем тăхăннă, хĕрĕсем сенкер тутăрсем çыхнă. Утнă май хăйсем хушшинче тем çинчен пит хавассăн калаçса пыраççĕ.

Ялта пĕр-пĕрне палламан çын çук, унта кашниех куç умĕнче, çавăнпа та ют çын пырса кĕнине пурте тӳрех асăрхаççĕ. Ак халь те униче хĕрринчи килтен урамри çăла шыв ăсма тухнă пĕр инке çак çамрăксене курчĕ те аллинчи витресене çĕре лартсах сăнама тытăнчĕ: камсем, ăçта каяççĕ? Унтан тăрук палласа илчĕ пулмалла...

— Ай-уй, кусем хамăр ялсемех тем? Эп малтан мĕнле хула

çыннисем килнĕ-ши тетĕп! — тăванĕсене курнă пекех савăнса сăмах хушрĕ вăл çамрăксене.

— Хамăр ялсем, Ультитти инке, хамăр ялсем! — кăшкăрса ал сулчĕ ăна хирĕç йĕкĕтсенчен пĕри.

— Кай, Палля, çакăн пек пулса кайрăн-и ĕнтĕ эс? Çырлахтăрах, таçта аякра курас пулсан ним тусан та паллас çук!

— Çав териех улшăннă-и? Питĕ хăрамалла-и? — кулса ячĕ Палля.

— Уншăн мар-ха, ара. Çитĕнсе кайнă тетĕп-çке. Санькки те хĕр пулса кайнă. Вырăсĕсем те çитĕннĕ... — Эвакуированнăйсем тĕрлĕ халăх çыннисем пулсан та ялта вĕсене пурне те вырăссем теççĕ.

— Çăкăр çиетпĕр-çке, Ультитти инке!

— Пурнăçĕ аптрасах каймасть унта пирĕн...

— Килсе курас тетĕр пулать ĕнтĕ?

— Çавăн пек шут тытрăмăр çав. Ыран ĕçлемелле мар та.

— Юрать, юрать, пит аван ку.

Çамрăксем урампа кăшт анатарах анса Назар Егорччă тĕлне çитрĕç те пурте чарăнса тăчĕç.

— Атьăр, кĕрсе курар старике, — терĕ Палля хăйĕн юлташĕсене, — хĕпĕртет вăл хăйне хисеп тунăшăн...

Хирĕçлекен пулмарĕ, пурте умлăн-хыçлăн картишне кĕчĕç. Çав самантрах лупас айĕнчен Улашка сиксе тухрĕ, антăхса каясла вĕрме тытăнчĕ. Палля ăна ятпа чĕнсе патнерех пырса лăплантарма пикенчĕ, анчах йытă тата хытăрах сикме тапратрĕ, ниепле те малалла иртме памарĕ — паллами пулнă иккен Палляна. Çамрăксен ирĕксĕрех чарăнса тăма тиврĕ, анчах çав вăхăтра крыльца çине Назар Егорччă хăй тухса тăчĕ.

— Э-эй, ара, пирĕн рабочи класс килсе çитнĕ-çке! — терĕ вăл. Палля каланă пек, чăн та хĕпĕртесе. — Кĕрĕр тавай, иртĕр, курманни чылай пулать. Эсир те килместĕр, хам та пит часчас пырса çӳрейместĕп ав...

Çамрăксем крыльца картлашкисем тăрăх хăпарнă май старик вĕсене кашнинех ал парса, çурăмĕсенчен лăпкаса илчĕ.

— Эп хаçат вуласа лараттăм-ха, — терĕ вăл пӳрте кĕрсен сĕтел патнелле пырса. — Ытла та савăнтаракан хыпарсем пĕлтереççĕ паян! Пирĕн салтаксем Германи çĕрĕ çине пырса кĕнĕ! Акă итлĕр-ха... — Старик аллинчи куçлăхне йăпăр-япăр сăмси çине утлантарчĕ те васкасах вулама тытăнчĕ: — «Виççĕмĕш Белорусси фрончĕн çарĕсем Юрбург тата Таураге хулисене ирĕке кăларса Хĕвел тухăç Пруссие чикки урлă каçнă...» Илтмен-и эсир кун çинчен?

— Илтмен...

— Эх, эсир те çав! Хăвăр хулара пурăнатăр тата! — çамрăксене юри намăслантарнă пек туса илчĕ Назар Егорччă. — Хĕвел

тухăç Пруссди — Германи вĕт вăл! Германи, шуйттан Гитлерăн çĕрĕ-шывĕ! Чухлатăр-и, мĕн шăрши кĕрет? Пирĕн Мускав патне çитсе курнă, Атăл хĕрринче те пулнă фашиста хăйĕн килĕнче шаккама тытăнтăмăр-иç? Акă ăçта вăл пирĕн савăнăç, пирĕн телей, ачамăрсем! Питĕ нумай тӳсрĕмĕр, сахал мар юн юхтартăмăр, хуйхă-суйхă куртăмăр, анчах тăшман айне пулмарăмăр. Кĕçех акă пирĕннисем вĕсен çăхан йăвине, çĕр çăтман Берлинне те çитĕç-ха, тен, Гитлерне хăйне те тытса кутăн çакĕç! Ак еплелле çаврăнчĕ пирĕн пурăнăç, ачамăрсем!..

Питĕ хавасланса çамрăк çын пекех вашават калаçрĕ старик. Унтан çамрăксенчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ:

— Мĕнле пурăнатăр, ĕçсем мĕнлерех пыраççĕ? Сывлăхсем чиперех-и?

— Аванах-ха, Назар Егорчча, — терĕ Палля пуриншĕн те. — Çамрăксен фронтовой бригадинче ĕçлетпĕр. Плансене ик çĕр процентшар тултарса пыратпăр.

— Хăнăхса çитрĕр пулать?

— Мĕнех вара хăнăхмалла марри...

— Малтанах йывăр теттĕрччĕ те.

— Э, вăл тахçанах иртнĕ ĕнтĕ! Халь ним йывăрри те çук.

— Эсир мĕнлерех ĕçлетĕр тата, хĕрупраç? — Саньккапа Ильза еннелле çаврăнчĕ старик.

— Эпир те йĕркеллех-ха, — терĕ Санькка темшĕн тăрук хĕрелсе кайса. — Иртнĕ эрнере Ильзăпа иксĕмĕре те Хисеп хăми çине çырса хучĕç...

— Ха, çав териех маттур ĕçлетĕр эппин?

— Маттурĕ-мĕнĕ... Çынсенчен юлмастпăр, усал сăмах илтместпĕр. Кăнтăрла ĕçлетпĕр, каçхине вĕренетпĕр. Паян та вĕренмеллеччĕ те-ха, Палляпа Петруçа тĕл пулса калаçрăмăр та çанталăк пăсăличчен киле килсе каяс терĕмĕр...

— Аван, аван апла пулсан. Малашне те çавăн пекех тăрăшăр, ачамсем, хамăрăн колхоз ятне ан ярăр. Эпир мĕн вăрçă пуçланнăранпах малтисен шутĕнче пыратпăр вĕт. Патшалăх умĕнче парăмра мар, вăрçăрисем валли яланах хамăртан ыйтниччен ытларах паратпăр, çĕнтерӳ валли нимĕн те хĕрхенсе тăмастпăр...

Питĕ кăмăллă пулчĕ Назар Егорччăпа çамрăксем хушшинчи калаçу. Стариkшĕн вĕсем хăйĕн тăван ачисем пекех çав. Вăл тăрăшнă вĕт-ха вĕсемшĕн, хулана вĕренме вăл илсе кайнă, хушшăн-хушшăн çимеллисем те кайса панă, епле пулсан та халăхшăн усăллă çынсем пулччăр тенĕ. Старик тăрăшни сая кайман...

Çав каçхине яла пырса çитнĕ кинопередвижка клубра «Секретарь райкома» ятлă картина кăтартрĕ. Ун чухне вăл вăрçă

çинчен калакан чи лайăх картинăсенчен пĕри пулнă. Çав тери хумханса пăхса ларчĕç ăна клуба лăках тулнă çынсем. Уйрăмах пĕр вырăс хĕрарăмĕ, фашистсене пула килсĕр-çуртсăр, çемьесĕр тăрса юлнăскер, партизансен отрядне лекнĕ хыççăн пĕррехинче вăрманта тăшман салтакĕсене пулеметран çав тери хытă çунтарни питĕ кăмăла кайрĕ.

— Вĕтеле лайăххрах! Çав кирлĕ вĕсене! — кăшкăрчĕç пĕрисем, теприсем ниçта кайса кĕрейми хăпартланса алă çупрĕç. Партизансем тăшман штабне аркатса фашистсен генералне чĕррĕнех тыткăна илнине курсан вара зал тахçанччен кĕрлерĕ...

Кино хыççăн клуб пуçлăхĕ Витали хăйĕн кивелнĕ купăсне çĕклесе тухрĕ те тӳрех чăваш ташши кĕввине туртса ячĕ. Нумайранпа ташă таврашĕ пулманччĕ ĕнтĕ клубра, анчах кĕçĕр çамрăксем питĕ хытă ташларĕç. Ма ташлас мар-ха, ма савăнас мар, пирĕн çарсем тăшмана çĕнтерсе унăн ылханлă çĕрĕ çине пырса кĕчĕç пулсан, пирĕн татăклă çĕнтерӳ çывхарсах килет пулсан?!.

Ташша малтан фермăра ĕçлекен хĕрсем пуçласа ячĕç, вĕсем хыççăн кун пек чух тӳссе ларма пултарайман Аркаш сиксе тухрĕ. Хул пуççисене вылятса, темĕн тĕрлĕ авкаланса, урисене явса, куклене-куклене ташларĕ вăл, унтан паян çеç хуларан килнĕ Саньккапа Ильза тĕлне çитсе чарăнчĕ те, вĕсене ташлама чĕнсе, тăпăртатса илчĕ. Лешсем кĕттерсе тăмарĕç, урай варрине тухрĕç те Виталие вырăс ташши калама хушрĕç. Ай вĕтрĕç те вара ташшине, ай вĕтрĕç, пĕтĕм халăха тĕлĕнтерчĕç! Пурте хавасланса кайрĕç вĕсене пăхса тăрса, пурте алă çупрĕç — шапăр-шапăр, шап-шап! шапăр-шапăр, шап-шап! Хăшĕсем ташă çемми майĕн хăйсем те урисемпе урайне тапатапа тăчĕç, тахăшĕ ши! ши! шăхăрчĕ. Клуб кĕрлерĕ кăна...

Унтан сасартăк çав тери кĕтмен япала пулчĕ. Клубăн шултăрканă алăкĕ шăлт-шалт! уçăлса хупăнчĕ те, хайхи уй хĕрринче пурăнакан Ильтиван салтак арăмĕ Ультитти кĕрсе тăчĕ. Пачăр, кaç пуласпа кăна, вăл хулара ФЗОра вĕренсе тухнă çамрăксене çăл кутĕнче никамран малтан тĕл пулса кăмăллă калаçрĕ-ха, ун чух питĕ савăкчĕ вăл, анчах халь палламалла мар улшăннă — çӳçĕ-пуçĕ сапаланчăк, сăнĕ-пичĕ шурса кайнă, куçĕсем хĕрелсе тăртаннă... Малтанах ăна никам та асăрхамарĕ, ун çине çаврăнса пăхакан та пулмарĕ. Хăй те унталла-кунталла пăхса тăмарĕ, çынсем хушшипе хĕсĕнсе ташă карти умне хăвăрт кăна тухрĕ те куçĕсемпе такама шырама тытăнчĕ.

Витали çаплах хут купăсне туртрĕ-ха, Саньккапа Ильза ташларĕç, курса тăракансем алă çупрĕç.

— Ман ачасем пур-и çакăнта? — никам çине пăхмасăр тăрук кăшкăрса ыйтрĕ Ультитти. — Елькка! Люпук? Ăçта эсир?

Амăшĕн сассине илтнипе мар, ăна хăйне курнипе чупса пычĕç ун патне вунă-вун ик çулхи хĕр ачасем.

— Мĕскер, анне?

— Эпир хамăрах кĕç пыраттăмăр-ха... — терĕç вĕсем.

Çав самантрах Ультитти вĕсене иккĕшне те мăйĕсенчен ыталаса илчĕ те хăлхана çурмалла кăшкăрса макăрса ячĕ.

— Ай, ачамсе-ем! Пĕтрĕмĕр вĕ-ĕт, пăчланчĕ пирĕн пурăнă-ăç, выртса вилмелли анчах юлчĕ-ĕ... Ай тур-тур-ту-ур...

Купăс сасси тăрук татăлчĕ, ташлакансем пат! чарăнчĕç, алă çупакансем те — аллисене çĕкленипех — хытса тăчĕç.

— Мĕн пулчĕ, анне? Ма макăран? — хăвăрт ыйтрĕ аслăрах хĕр ачи, кивĕ пиншак тăхăнса янă çап-çавракка питлĕ Елькка.

— Аçуна... Аçуна вĕлернĕ-ĕ!.. Халĕ çеç хут килчĕ! Ай-у-уй, мĕн тăвăпăр-ши, мĕн курăпăр, ачамсе-ем... — Те пуçĕ çаврăннипе, те тăрук халтан кайнипе, Ультитти ачисене ыталаса тăнă çĕртенех малтан чĕркуççисем çине ӳкрĕ, унтан çĕре йăванса кайрĕ. Вара тек пĕр сăмах та калаймарĕ, темле тискеррĕн ӳлесе ярса, пач тăнсăр пулса выртрĕ. Ун патне пĕр харăсах темиçен чупса пычĕç, анчах нихăшĕ те ним тума та пĕлмерĕ.

— Тытса пăрахрĕ пулмалла ăна, часрах фельдшерицăна чĕнес! — кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Шыв! Шыв парăр! Питĕнчен пĕрĕхĕр!

— Çухавине вĕçертсе ярăр!..

Ультитти, вилнĕ çын пек, кĕл тĕслех пулса выртрĕ, куçĕсене те уçмарĕ, хушшăн-хушшăн кăкăрĕ çĕкленсе илнипе кăна вăл вилменни паллă пулчĕ. Шывпа пĕрĕхни те, вăйпах ĕçтерме тăни те пулăшмарĕ ăна. Пурте калама çук хăраса пăхса тăчĕç. Антонина Клементьевна чупса пырса хăвăрт кăна укол тусан тин вăл вăраммăн йынăшса ярса куçĕсене уçрĕ. Унтан ăна виççĕн-тăваттăн тытса килне йăтса кайрĕç...

Ультиттие пурте питĕ хытă хĕрхенчĕç. Вăрçа кайнисем вилни çинчен пĕлтерекен хурлăхлă хутсем виçĕ çул çурă хушшинче вуннă та ытла килнĕ ĕнтĕ, ял çыннисем вилнисене пурне те чунтан шеллесе хуйхăрнă, анчах Ультитти упăшки вилни çинчен пĕлни чĕрене уйрăмах хытă пырса тиврĕ.

Евгени клубран таврăнса унта кĕçĕр мĕн пулни çинчен каласа парсан ун амăшĕ те Ультиттие шутсăр хĕрхенчĕ, унăн куçĕсем те шывланчĕç пĕр хушă.

— Ултă ача вĕт-ха, пĕринчен тепри пĕчĕккĕ! — терĕ вăл ассăн сывласа. — Мĕнле ӳстерсе çын тăвас вĕсене пĕччен хĕрарăмăн?.. Ахаль те питĕ йывăрччĕ ун пурнăçĕ, упăшки таврăнасса çеç шанкаласа пурăнатчĕ, ăна куç пек кĕтетчĕ, анчах халĕ ĕнтĕ вăл шанчăк та пĕтрĕ. Эх, вăрçă, вăрçă! Мĕн кăтартмарĕ вăл пире! Хăçан пĕтĕ-ши?..

— Нумаях пымасть пуль ĕнтĕ, пирĕннисем Германие пырса кĕнĕ теççĕ вĕт, малаллах каяççĕ, — терĕ Евгени.

— Вăл апла та-ха, çавах çыннисем кашни кунах пĕтеççĕçке, çав чуна ыраттарать, — ассăн сывласа илчĕ амăшĕ. Унтан кăштах шухăша кайса ларчĕ те: — Аçу та темле-ха, вăрçă пĕтиччен тем те пулма пултарать, шанма çук вĕт, — терĕ.

Тĕрĕссипе, ашшĕ киле килсе кайнă хыççăн Евгени çакăн çинчен темшĕн пĕрре те шухăшламан. Аса та илмен вăл ашшĕне мĕн те пулин пулма пултарассине. Темĕн тĕрлĕ вут-çулăм витĕр тухнă, ик-виçĕ хут аманса сывалнă çынна халь тин, вăрçă пĕтеспе, мĕн пултăр-ха? Анчах паян, амăшĕ чунтан пăшăрханса, иккĕленсе калаçнă хыççăн, вăл та тăрук шикленсе шухăшлама тытăнчĕ. Ăна Ультитти ним пĕлми пулса ӳкни те аса килчĕ... Çавăн пек «вилĕм хутне» паян Ультитти мар, вĕсем илнĕ пулсан? Ун пек те пулма пултарнă вĕт-ха? Вăрçăра унта пурин шăпи те пĕрешкел, пурте вилĕм айĕнче çӳреççĕ. Снаряд е пуля никама та суйласа тăмасть теççĕ, кама пырса тивнĕ — çавна пĕтерсе хурать...

Хурлăх нихçан та пĕччен çӳремест тенĕ пек, Ультитти упăшки вилни çинчен пĕлтерӳ килнĕ хыççăн темиçе кунтанах ялта тата тепĕр йывăр хыпар çиçĕм пек хăвăрт сарăлчĕ: Варькка почтальон ашшĕ киле ик урасăр таврăннă. Урисене кăк таранах татнă иккен, госпитальтен ятарласа ăсатма килнĕ салтак санитар Варькка ашшĕне каска пуканĕ пекех йăтса кĕртсе пӳрчĕ тăвăррипе ниçта лартма пĕлмесĕр тӳрех сĕтел çине пырса лартнă имĕш. Упăшки çавăн пек таврăннине курсан арăмĕ чут Ультитти пекех тăнсăр пулса выртман.

— Эй, мăнтарăн, ик урасăр мĕнле пурăнĕ ĕнтĕ вăл? Мĕн ĕçлесе тăрантарĕ ачи-пăчине? Вăрçа кайиччен мĕн тери лайăх трактористчĕ!.. — шеллерĕç ăна ял çыннисем.

Унтан тата пĕр эрнерех тăват-пилĕк çын Германи çĕрĕ çинче аманса халĕ госпитальсенче выртни çинчен çырусем килчĕç. Çакăн çинчен илтсен ватă Пауль вăрахчен шухăша кайса ларчĕ те çапла каларĕ:

— Аманнă кашкăр пушшех хаяр пулать теççĕ. Пурнăçне епле те пулин çăлас тесе вăл ним те пăхса тăмасть, юлашки пурçук вăйĕпе сикет сан çине. Фашист халь шăп çавăн пек ĕнтĕ. Эпир унăн пилĕкне çапса хуçрăмăр, хăйĕн йăвине пырса кĕтĕмĕр. Паллах, вăл халь кашни хулашăн, кашни ялшăн кăна мар, кашни çуртшăн урнă пекех çапăçать. Вилсе выртас патне çитнĕ пулсан та парăнасшăн мар... Çавăн пирки юн нумай тăкма тивет пирĕннисен. Анчах темле урсан та фашист халь тин хăтăлаймасть ĕнтĕ, пĕтрĕ унăн кун-çулĕ!..

Пĕр хушă чĕнмесĕр шухăша кайса ларнă хыççăн старик ассăн сывласа илчĕ те майĕпе калаçма тытăнчĕ:

— Тăшмана пуҫĕпех ҫĕнтернĕ кун пирĕн пурнăҫри чи телейлĕ кун пулать. Анчах хамăрăн телее пирĕн ҫав тери хаклă хакпа илме тивет... Тӳсме ҫук пысăк хак патăмăр эпир уншăн! Миллионшар ҫын пурнăҫĕпе сапларăмăр! Ун ҫинчен шухăшлама та хăрушă... Ҫавăнпа та эпĕ тĕнчери ырă кăмăллă ҫынсем кун ҫинчен ĕмĕрне те манмĕҫ, текех никама та вăрҫă пуҫлама ирĕк памĕҫ тесе шутлатăп... Пĕтĕм чĕререн ĕненетĕп ҫавна!

— Ах, ан пултăрччĕ вăл вăрҫă тени, нихăҫан та ан пултăрччĕ-ҫке! — ватă Пауль пекех ассăн сывласа илчĕ ăна итлесе ларнă Улька. — Мĕн шуйттанĕ тума кирлĕ вăл? Мĕншĕн-ха халăхсен пĕр-пĕрне пĕтермелле? Ма вĕлермелле? Ҫĕр ҫинче пурин те пурăнас килмест-им? Хĕвел ҫути пурин валли те ҫитмест-им? Мĕншĕн килĕштерсе пурăнмалла мар? Пĕр-пĕрне кӳрентермесĕр, кăмăллăн! Пурăнма пулать вĕт-ха ҫавăн пек?..

— Паллах, — терĕ ватă Пауль. — Анчах ун пек тума нумайăшне хурҫă сăнчăрпах ҫăварлăхлас пулать.

— Кама?

— Тĕнчери мул хуҫисене. Капиталистсене. Пин-пин ҫынсен пурнăҫне пĕтернипе юмахри пек пуякансене. Тĕнчере вăрҫă пĕр ҫавсене ҫеҫ кирлĕ вĕт, урăх никама та кирлĕ мар!

Ҫак вăхăтра Евгени кайри пӳртре пĕр-пĕччен ларчĕ. Октябрь уявĕнче вĕсем шкулта «Парăнманнисем» ятлă пьеса лартма шут тытнă та, Евгенин унта партизансен командирне вылямалла. Халĕ вăл ҫине тăрсах ҫав роле вĕренчĕ. Герой сăмахĕсене йĕркипе астуса юлма кăна мар, вĕсене хăҫан мĕнлерех каламаллине те хăнăхма тăрăшрĕ вăл.

— Лайăхрах хатĕрленер-ха, — терĕ ачасене Рина Петровна ҫĕнĕ пьесăна вуланă хыҫҫăн рольсене валеҫсе парсан, — чăн-чăн театрти пек, суфлерсăр-мĕнсĕр выльăпăр...

Вăрҫăри паттăрсем ҫинчен шкулти ачасем юлашки ик ҫул хушшинче темиҫе спектакль те лартрĕҫ ĕнтĕ, вĕсене хăйсен ялĕнче ҫеҫ мар, кӳршĕри ялсене те кайса кăтартрĕҫ. Ытти шкулсенчи драмкружоксем хушшинче «Ҫĕнĕ самана» шкулĕнчи кружок чи лайăххи пулчĕ. Ун ҫинчен районри хаҫатра та ҫырчĕҫ. Ҫакă вăл кунти ачасем спектакльсенче выляма питĕ юратнинчен килнĕ ĕнтĕ. Халĕ те куракансем умĕнче намăс курасшăн мар вĕсем.

Аркаша ҫĕнĕ пьесăра староста рольне пачĕҫ. Анчах та пьесăри ҫак герой ячĕшĕн ҫеҫ староста пулнă иккен, хăй йăлтах совет ҫыннисем майлă ĕҫленĕ, нимĕҫсене пĕр вĕҫĕм улталанă, партизансемпе тачă ҫыхăнса, вĕсене ялти сутăнчăксене, полицайсене пĕтерме пулăшса пынă. Аркаша ку роль килĕшнĕ те, вăл ăна питĕ тăрăшса хатĕрленнĕ. Репетицисенче вăл уйрăмах полици начальникне ĕҫтерсе ӳсĕртсе пысăк миххе чиксе

хунă сценăна лайăх ирттерчĕ, пĕррехинче шутсăр хĕрсе кайнипе çав полици рольне вылякан Караçăм Колькине тапатапа куççулĕпех макăртрĕ. Рина Петровна ун пек тума юраманни çинчен каласан та Аркаш тӳрре тухма тăрăшрĕ:

— Мĕнех вара вăл иккĕ-виççĕ тапни? Астăвăр-ха эсир, кинори артистсем тепĕр чух пĕрне-пĕри еплерех тӳпелеççĕ? Тата пьесинче те «полицая темиçе хутчен тапать» тесе çырнă-иç?

— Йăлине çеç тăвас пулать, ачам, тапнă пек туса кăтартмалла кăна...

— Ун пек ĕненмелле пулмасть! Епле-ха полици начальникне шеллесе хĕнетĕн? Алла лекрĕ пулсан пар ăна мĕн вăй çитнĕ таран! — чышкине чăмăртасах хирĕçлерĕ Аркаш.

— Апла пулсан ку роле эсĕ ху выля, сана хĕнекенни эпĕ пулам, — терĕ Колька. — Миххе чикнĕ çынна ислетесси йывăрах мар.

Аран килĕштеркелерĕ вĕсене Рина Петровна.

Акă кĕçĕр те репетици пулать-ха. Çула май Аркаш Евгени патне кĕмелле те, вĕсем пĕрле каяççĕ. Анчах темшĕн вăл час килмерĕ-ха. Ĕнтĕ кĕçех çиччĕ çитет — çиччĕре репетици пуçланмалла, çапах та Аркаш çук та çук.

Евгени роль çырнă тетраде йĕм кĕсйине чикрĕ те тумланма тытăнчĕ. «Тӳрех шкула кайрĕ пулинех...» — шухăшларĕ вăл юлташĕ пирки тата тепре стена çинчи сехете пăхса илсе.

Шăп çав вăхăтра алăкран Аркаш кĕрсе тăчĕ. Темшĕн вăл нимĕн те чĕнмерĕ, ерипен малалла иртрĕ те сĕтел пуçĕнчи пукан çине ларчĕ. Сăнĕ те улшăннăн курăнать, хăй темшĕн пĕрмай çĕрелле пăхать.

— Мĕн эс... такампа вăрçнă пек? — ыйтрĕ Евгени. — Тем пулман пуль-çке?

Аркаш ытла тӳрех чĕнмерĕ, Евгени çине пăхса илчĕ, унтан тин ассăн сывласа ячĕ те:

— Пулнă çав, тусăм... акă вула, — терĕ. Вăл хăйĕн аллинчи лутăрканнă темле çырăва сĕтел çине пăрахрĕ.

— Мĕн ку? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Евгени.

— Вула тетĕп-иç... — Аркаш сасси чĕтрерĕ.

Евгени тем ырă маррине сисрĕ, унăн чĕри те картах сиксе илчĕ. Кăвак конверт çинче районри çар комиссариачĕн штампĕ пулнă. Кун пек конвертсемпе хальхи вăхăтра ырă хыпарах килмест, пуринчен ытларах вĕсен ăшне «вилĕм хучĕсем» чиксе яраççĕ — Евгени ăна пит лайăх пĕлнĕ, мĕншĕн тесен вĕсене пĕрре кăна мар курнă...

«...сообщаем, что ваш муж Мазяков Матвей Ильич погиб смертью храбрых в боях за нашу Советскую Родину...» — питĕ хăвăрт вуларĕ те Евгени, çыру хăех ун аллинчен вĕçерĕнсе сĕтел çине ӳкрĕ.

— Хăçан... килчĕ ку хут? — шăппăн ыйтрĕ вăл.

— Акă, халь кăна, Варькка почтальон урамра тĕл пулчĕ те...

Тĕлĕнмелле! Çак таранччен Аркаш хăйне хăй темле хытарнă-ха, чăтнă, пĕр куççулĕ те ÿкермен, анчах халь ĕнтĕ урăх тÿсеймерĕ, пуçне ик аллипе пăчăртаса тытрĕ те, сĕтел çине чавсаланса, ÿлесе макăрса ячĕ. Евгени ним тума, ним калама аптраса тăчĕ. Кĕçех Аркаш макăрнине Евгени амăшĕпе Пауль илтрĕç те малти пÿртрен васкасах тухрĕç.

— Мĕн пулнă ăна? — хăраса хăвăрт ыйтрĕ хăй ывăлĕнчен Улька.

— Акă... — Евгени ăна çар комиссариачĕн пĕлтерĕвне кăтартрĕ.

— Эх, мăнтарăн.. — тăруках улшăнчĕ Улька. Ун аллинче хут сиксе чĕтреме тытăнчĕ.

Вата Пауль те Аркаш мĕншĕн çав тери хурланса макăрнине тÿрех ăнланчĕ. Вăл пĕр хушă ним чĕнмесĕр тăчĕ те пĕтĕм кăкрипе ассăн сывласа илчĕ.

— Каларăм вĕт-ха, ытла та хакла ларать пирĕн пулас телейĕмĕр... Юнпа тÿлетпĕр... — пăшăлтатрĕ старик кăвакарнă тутине кăшт çеç хускатса.

Улька хăйĕн ывăлĕн тусне тем тĕрлĕ те лăплантарма тăрăшрĕ, ăна пуçĕнчен ачашларĕ, çурăмĕнчен лăпкарĕ, çепĕç сăмахсем каларĕ, анчах арçын ача вăрахчен чарăнаймарĕ. Чылайран тин кăшт лăпланнă пек пулчĕ...

— Аннене мĕнле пĕлтерес-ха манăн? — куççульне çаннипе шăла-шăла пăшăрханчĕ вăл.

— Пĕлмест-им-ха вăл?

— Хутне халь çеç илтĕм вĕт-ха, мансăр пуçне никам та пĕлмест... Анне чирлĕ, чĕрепе аптрать, Антонина Клементьевна хушнипе пĕр эрне ĕнтĕ вырăнпах выртать, кун çинчен пĕлсен хăй те вилсе каять пуль?

— Сываличчен тăхтас пулать эппин... Каярахпа каласан, тен, çăмăлтарах тÿссе ирттерĕ. Эх, пурнăç, пурнăç! — Улька тăрук халран кайнă пек пулса пукан çине ларчĕ.

Пÿртре шăп пулчĕ. Аркаш «вилĕм хутне» хутлатса шалти кĕсйине пытарса хучĕ.

— Эс паян репетицине пыраймастăн пуль ĕнтĕ? — хуллен ыйтрĕ унран Евгени.

— Пыратăп, — терĕ те Аркаш ура çине тăчĕ. — Нихçан та юлмастăп. Пĕр ĕçрен те. Манăн халĕ епресе кайма та, сĕлеке юхтарма та юрамасть...

— Питĕ тĕрĕс калатăн, ачам, — ун çине кăмăллăн пăхрĕ Улька. — Темле йывăр килсен те этемĕн парăнмалла мар, хуть те хăçан та çирĕп пулас пулать...

# Çитрĕ ырă çуркунне

...Вăрçăн тăваттăмĕш хĕлĕнче Хĕрлĕ Çар тăшмана кулленкун аркатрĕ. Январь уйăхĕнче Балти тинĕсĕнчен пуçласа Карпат тăвĕсем таран — пин те ик çĕр километр тăршшĕ — тăсăлакан фронтра тăшман оборонине пур çĕрте те çĕмĕрсе тăкса пирĕн çарсем малтанхи хĕрĕх кун хушшинчех нимĕç фашисчĕсене тĕрлĕ çĕршывсенчи виç çĕр хуларан хăваласа кăларчĕç.

Совет тупписем халь ĕнтĕ хамăрăн Тăван çĕршыв чиккисенчен нумай аякра — Чехословакире, Венгрире, Югославире, Польшăра кĕрлеççĕ, çав çĕршывсенчи çынсем хăйсене фашистсен тамăкĕнчен хăтаракан совет салтакĕсене чи хаклă тăвансене кĕтсе илнĕ пек чечексемпе, чĕререн тухакан чи ырă сăмахсемпе саламласа, хавассăн тав туса савăнăç куççулĕсемпе кĕтсе илеççĕ.

Пуринчен те хаяртарах çапăçусем Германире пулса пычĕç. Совет çарĕсем тăшман çĕрĕ çине шалтан шала кĕчĕç, кулленкун Берлин патнелле шурĕç. Епле пулин те çăлăнас тесе гитлеровецсем пур çĕрте те калама çук вăйлă укрепленисем туса тултарнă, вĕсен урнă «фюрерĕ» çав укрепленисенче ларакан салтаксене пĕр çын юлмиччен, вĕсен пĕр патрон юлмиччен çапăçма хушнă, анчах пирĕн çарсене халь тин ĕнтĕ нимĕн те чарма пултараймарĕ, вĕсем çаплах малалла пычĕç.

Германи çĕрĕ çинчи çапăçусем мĕн тери хаяр пулни çинчен Евгени ашшĕ, халь ĕнтĕ аслă сержант ятне илнĕ Иван Рыбаков, Хĕвел тухăç Пруссири Кенигсберг хули çывăхĕнчен çырса ячĕ.

«Кунта фашистсем кашни хуларан, кашни ялтан кăна мар, кашни çуртран крепоç туса хунă. Пур çĕрте те — тимĕрпе бетонран тунă дотсем, пур çĕртен те вут-çулăм сапаççĕ, эпир пырас çулсем çине — кашни утăмра тенĕ пекех — минăсем лартса тултарнă. Юрать, çак иртнĕ виçĕ çул çурă хушшинче эпир çапăçма вĕренсе çитрĕмĕр те тăшман темле тискеррĕн чееленсе хăтлансан та ăна пур пĕрех çĕмĕрсе малаллах пыратпăр...»

«Питĕ хăрушă, каласан ĕненмелле мар япаласем курма тивет тăшман йăвинче! Темиçе кун каялла кăна эпир фашистсем плена лекнĕ совет салтакĕсемпе тĕрлĕ çĕршывсенчен хăваласа пынă çынсене хупса усранă концлагере ирĕке кăлартăмăр. Пирĕн танксем таврараи кайса çав лагерь патне хыç енчен, никам кĕтмен çĕртен, пырса тухнипе фашистсем кунти заключеннăйсене хăваласа кайма та, вĕлерсе пĕтерме те ĕлкĕреймен. Çапла вара вилме пӳрнĕ çынсемех хăтăлса юлчĕç.

Мĕн тери савăнчĕç, мĕн тери тав турĕç çавăнти вуншар

тёслё чёлхепе калаçакан çынсем эпир вёсене ирёке кăларнăшăн!.. Мён кăна тўсмен вёсем унта, мён кăна курман!.. Хăйсем çине пăхма та хăрушă — çынсем мар, чёрё вилесем кăна çав, шăммисемпе тирё çеç юлнă. Вёсем каласа панă тăрăх, фашистсем çак лагерьте виç çёр пин çын ытла вёлернё — хăшёсем выçăпа, чирпе пётнё, хăшёсене персе пăрахнă, теприсене ятарласа тунă тем пысăкăш кăмакасенче чёррёнех çунтарса янă... Вёсем хушшинче аран утакан стариксем те, хёрарăмсемпе ачасем те нумай пулнă. Ёмёрне те манас çук эпир çакна!..»

«Çав вилём лагерьне ирёке кăларса унта фашистсем мён тери тискер ёçсем тунине хамăр куçпа курнă хыççăн хăй тёллёнех митинг пуçланса кайрё. Пёр минут та тăхтаса тăрас мар, халех малалла, хёвел анăçнелле,васкас, тăшмана хăвăртрах, ним юлми çапса аркатас!.. Малалла, часрах малалла! — кăшкăрчёç салтаксем...»

«Пирён наступлени халь куллен-кун хăватланса, сарăлса пырать. Тăшман темле тапаçлансан та унăн çав-çавах чакма, тепёр чух чакма та мар — питё хытă тарма тўр килет. Вёсен Гитлерё, паллах, çакна пит лайăх пёлет. Çавăнпа та вăл хăрушла приказ кăларнă: çапăçу вăхăтёнче каялла чакма пăхакан кашни салтака вырăнтах, судсăр-мёнсёрех персе пăрахмалла. Позицисене пăрахса таракансене чарма вёсен хыçне ятарласа пулеметсем лартса тухнă. Совет салтакёсен вут-çулăмёнчен хăтăлас тесе кутăн чакакансем çавăнтах хăйсен вут-çулăмё çине пырса тăрăнаççё... Нумай салтаксене фашистсем хăйсен пулемечёсем çумне сăнчăрласа лартнă, вёсене «смертниксем» — «вилме пўрнисем» теççё. Ун пекки хăйне темле хён пулсан та пулеметне пăрахса тараймасть, унăн пур пёр вилмелле, çавăнпа та вăл пёр патрон юлмичченех е хăйён чёри тапма чарăниччченех персе выртать, пире сиен кўрет...»

«Çапла, вилём умне çитсе тăнă Гитлер халё хăйён халăхне те нимён чухлё те хёрхенмест. Эпир фашистсене ăçтан та пулин хуса кăларсан вёсем кайран çав вырăна каялла тавăрасшăн вуншар хут контратакăна ыткăнаççё, вара çапăçу хирёнче кашнинчех çёршер тăшман вилли выртса юлать. Паллах ёнтё, вăрçăра тăшмана хёрхенместён, ăна мён чухлё ытларах пётерен — çавăн чухлё лайăхрах, анчах тепёр чух... шеллес те килет. Эпё куна акă мён пирки калатăп: тăшманăн çапăçусенче вилнё салтакёсем хушшинче çап-çамрăккисем питё нумай — вун улт-вун çич çулхисем, пирён Евгени пек шкул ачисем! Çухатусем ытла та пысăк пулнипе, салтаксем çитменнипе фронта ачасене хăваласа пыраççё! Янахёсем те çап-çарах-ха вёсен, тутисем çинчен амăшёсен сёчё те типмен темелле. Çавсене курсан, чăнах та, хёрхенмелле... Çут тёнчере вёсем нимён те курман-ха вёт, пурнăç тутине те пёлмен, анчах Гитлер вёсене

пинĕ-пинĕпе вутта чиксе çунтарса ярать. Çакăн пек хăрушă преступленишĕн нимĕç халăхĕ хăех фашистсене нихçан та каçармĕ тесе шутлатăп...»

«...Малтанах каларăм ĕнтĕ, пире халь тин нимĕнле вăй та чарса лартма пултараймасть. Пирĕн пур салтаксен те пĕр ĕмĕт — часрах Берлина çитсе фашизмăн тĕп йăвине аркатасси, унтан вара, сывă пулсан, киле те таврăнăпăр. Инçетре мар ĕнтĕ çав Чаплă Телей кунĕ!..»

Çакăн пек çырусем Евгенисен ашшĕнчен çеç мар, ытти салтаксенчен те тăтăшах килсе тăчĕç. Вĕсем калама çук савăнтарчĕç, ашшĕ-амăшĕсен, тăванĕсен, çырусене вуланă пур çынсен кăмăлĕсене те çĕклерĕç, хаваслантарчĕç.

Çав хĕлте ачасем унччен пек те мар хытă ĕçлерĕç. Йăлăмран çулла хатĕрленĕ утине те, вутти-шанкине те турттарчĕç, тислĕкне те тăкрĕç. Çур аки валли вăрлăхне те тасатрĕç, колхоз выльăх-чĕрлĕхне те пăхрĕç, ватă Паульпе пĕрле тимĕрç лаççинче те шаккарĕç... Тĕрĕссипе, халĕ пĕтĕм колхоз вĕсем çинче тытăнса тăчĕ темелле. Кунтан тĕлĕнмеллиех те çук ĕнтĕ, — вăрçă пуçланнă чух вун-вун икĕ çулта кăна пулнисем те халĕ вун тăват-вун пилĕк çула çитрĕç пулать те! Хăшĕсем палламалла мар ӳссе кайрĕç, пĕрмай ĕçре пулни вĕсен шăммишаккисене пушшех çирĕплетрĕ, тĕреклетрĕ. Пытармалли çук, аслăрах классенче вĕренекен хăш-пĕр арçын ачасемпе хĕр ачасем хăйсем хушшинче вăрттăн çырусем те çӳреткелерĕç, пĕрнепĕри кăмăллани çинчен систерчĕç. Çынсем умĕнче хăйсем пĕрпĕрне куçран пăхма та именчĕç, анчах кашни меллĕ самантрах пĕрле пулма тăрăшрĕç. Мĕн тăвас тетĕн, этем пурнăçĕ çавăн пек тĕлĕнтермĕш япала вăл, унăн хăйĕн ĕмĕртен ĕмĕре пыракан ниçта çырăнман саккунĕсем пур!

Евгени халĕ те-ха тимуровецсен командине ертсе пычĕ. Нумай лайăх ĕçсем турĕ унăн команди хĕл каçа, фронтовиксен, уйрăмах çапăçу хирĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилнисен, кил-йышĕсене сахал мар пулăшрĕ. Çак ĕçрен Аркаш та аякра тăрса юлмарĕ, яланхи пекех, вăл пур чухне те Евгенипе пĕрле пулчĕ. Унăн ашшĕ фашистсемпе çапăçса пуçне хунă, çак хурлăха тӳссе ирттерме питĕ йывăр пулчĕ, кун çинчен пĕлсен уйрăмах амăшĕ хытă асапланчĕ, унăн сывлăхĕ пĕр хушă тата ытларах начарланчĕ. Çапах та халь тин ку хурлăха нимĕнпе те тӳрлетме çук вĕт-ха, вăл ĕмĕрлĕхех чĕрере юлать, ăна ыраттарать ĕнтĕ, анчах халĕ çавăншăн халăхран, ушкăнран уйрăлса каймалла-им? Тепĕр тесен, ушкăнпа, тус-юлташсемпе пĕрле пулсан темле йывăр хурлăха та çăмăлтараххăн тӳссе ирттеретĕн вĕт...

Пирĕн çарсем январь уйăхĕнче тĕнчене тĕлĕнтермелле хăватлă наступлени пуçласа ярса тăшман çĕрĕ çине шалтан

шала кĕрсе пыма тытăннăран вара клуб пуçлăхĕ Витали кашни кунах Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене пысăк сас паллисемпе плакат пек çырса урама кăларса çакрĕ, ун умĕнче кашни вулама пĕлекен çын вăрахчен чарăнса тăчĕ.

— Ăçтарах çапăçаççĕ пирĕн паттăрсем? Берлина çитесси тата нумай юлнă-и вĕсен?..

Ку тĕлелле ялти библиотекăра вăрçă çинчен çырнă кĕнекесем — вырăслисем те, чăвашлисем те чылай пухăнчĕç. Вĕсенчен пĕри те тусанлă сентресем çинче канса выртмарĕ, кашни кĕнекиех куллен алăран алла куçрĕ. Хăшĕсене вулама черете çырăнчĕç, теприсене каç-каç кам патĕнче те пулин пухăнса ушкăнпа вуларĕç. Вĕсене çамрăксемпе пĕр танах ваттисем те çав тери тимлĕн, пĕр сăмахне те сиктермесĕр итлерĕç...

Питĕ тарăхтарчĕç, тăшмана хаяррăн курайми турĕç вăл кĕнекесем, мĕншĕн тесен вĕсенче фашистсем пирĕн çĕр çинче нимĕнпе танлаштарма çук тискер ĕçсем туни, ним айăпсăр çынсене хăрушла асаплантарни, ватти-вĕттине пăхмасăрах персе-çакса вĕлерни, вутта пăрахса çунтарни çинчен çырнăччĕ, çав вăхăтрах тата шутсăр савăнтарчĕç — кĕнекесенче совет çыннисем тăшмана нихçан та парăнманнине, ăна хирĕç тĕлĕнмелле паттăррăн кĕрешнине, фашистсене кунĕн те çĕрĕн, ăçта май килнĕ унта пĕтерсе пынине кăтартнăччĕ. Çавăн пек кĕнекесене вуланă чух пĕрисен — паллах, пуринчен ытла хĕрарăмсен — куççулĕсем те тухрĕç, вĕсем хăйсен ăшĕнче усал тăшмана ылханчĕç, теприсен — паллах, пуринчен ытла арçын ачасен — кĕнекери паттăрсемпе пĕрле, вĕсемпе юнашар пулас, çав пур фрицсемпе ганссене пулеметсенчен, автоматсенчен çунтарас, гранатăсемпе пере-пере сирпĕтес, вĕсен ылханлă пуçĕсем çине бомбăсем тăкас хаяр кăмăл çĕкленчĕ... Тепĕр чух çур çĕр те иртсе кайрĕ, тул та çутăла пуçларĕ, анчах вуланине итлекенсем çаплах килĕсене саланмарĕç. Пурин те ытларан та ытларах пĕлес килчĕ çав хамăрăн вăрçăри юратнă паттăрсем çинчен, вĕсем тăшмана епле кисретни çинчен!..

...Тăшманне пирĕн паттăрсем вăл хĕлте хытăран та хытă кисретрĕç кăна мар, ăна ним юлми аркатса хăватлă çил-тăвăл пек малалла ыткăнса пычĕç. Тăшманăн кун-çулĕ кĕскелнĕçемĕн кĕскелчĕ, унăн çăлăнса юлмалли майĕсем пĕтрĕç. Юр кайнă хыççăн çĕр-шыв типме пуçланă вăхăтра, апрель уйăхĕн вĕçнелле, ял халăхĕ совет çарĕсем тăшманăн тĕп йăви — Берлин — патне тĕрлĕ енчен пырса тухса хула хĕррисенче çапăçусем пуçласа яни çинчен пĕлчĕ.

Çак калама та çук ырă хыпарлă хаçата пĕтĕм кил-йышпа пĕрле вуласан ватă Пауль пĕр хушă ним чĕнмесĕр, никам çине пăхмасăр ларчĕ. Халь çеç вуласа пĕлнине ĕненмен пек пулчĕ

вăл, ку хыпар унăн пуçне тăруках шăнăçса те çитеймерĕ курăнать... Чылайран тин вара сĕтел çинче выртакан хаçата аллипе шап! çапрĕ те тулли кăмăлпа кăшкăрса ячĕ:

— Çитрĕ вĕт, тăвансем! Çитрĕ эпир тăватă çула яхăн кĕтсе пурăнни! Пĕтрĕ фашист çĕленĕ, пăчланчĕ, тек нихçан та, никама та сăхаймасть вăл! Татаççĕ унăн пуçне!..

Унтан хыççăр пукан çинчен тăчĕ те пĕтĕм вăйĕпе чышкисене чăмăртаса шăнăрĕсем шатăртатмалла карăнса илчĕ.

— Э-эх, часрах киле таврăнасчĕ-çке! Мĕн чухлĕ ĕç кĕтет пире унта, мĕн чухлĕ вăй хурас пулать!..

— Ĕлкĕрĕр-ха, ма ытла пит васкамалла? Эсир пирĕн патăрта та ĕççĕр лармастăр, кунта та усăллă çын, — терĕ Евгени амăшĕ Улька.

— Сан сăмаху тĕрĕс, Ольга Павловна, чипер ăс-тăнлă çын пур çĕрте те усă кӳме пултарать, — терĕ ăна хирĕç Пауль, — анчах пирĕн лере пĕтĕм пурнăçа çĕнĕрен пуçласа ямалла-çкеха, нимĕççем унта нимĕн те хăварман!

— Вăл çапла-ха ĕнтĕ... Çын çеç мар, вĕçен кайăк та хăйĕн йăвине таврăнать. Çапах та манăн сирĕнтен пĕртте уйрăлас килмест, Пауль Оскарович. Тĕрĕссине калатăп. Çав тери хăнăхса çитрĕмĕр вĕт пĕр-пĕрне, виçĕ çул ытла тăвансем пекех туслă пурăнтăмăр та...

— Çав тăванла туслăх çăлса хăварчĕ те пире, Ольга Павловна, — каллĕ-маллĕ уткаласа илчĕ ватă эстонец. — Эпĕ хамăн кил-йыш çинчен мар, пĕтĕм çĕршыв çинчен, Россия çинчен калатăп. Пирĕн патшалăхри тĕрлĕ халăхсем пĕр-пĕринпе çакăн пек туслă пурăнман пулсан, кам пĕлет, тем кураттăмăр-ха. Ăнланатăн ĕнтĕ...

— Ăнланатăп, Пауль Оскарович. Çынсем пĕр-пĕринпе туслă пурăннине мĕн çиттĕр? «Укçапа пуйиччен туспа пуй», — тенĕ пирĕн ваттисем...

— Çапла, Ольга Павловна, çапла. Анчах киле пирĕн васкасах каяс пулать. Пурнăç тумалла. Çĕнĕ пурнăç... Паллах, эпир кунтан кайсан сире виличчен те манассăмăр çук, эсир пире мĕн чухлĕ ырă туни яланах пирĕн асра пулĕ, тен, май килсен, ӳлĕмрен, пурнăç юсанса вырăна ларсан, эсир те пирĕн пата пырса курăр-ха. Никамран та хаклă хăнасем пулăр...

— Тавтапуç ыр сăмахшăн, Пауль Оскарович!

...Киккассен кил-йышĕ те, «Çĕнĕ саманара» пурăннă ытти эстонецсем те халĕ Сааремаа утравĕ çинче вăрçăчченхи пекех районĕçтăвком председателĕ пулнă Ильмар хăйсене пыма чĕнсе кирлĕ хут çырса ярасса çав тери пăлханса кĕтсе пурăнчĕç. Ун чухне саккунĕ çавăн пек пулнă: эвакуаци йĕркипе инçетри тыла килсе пурăннă çынсем каялла хăйсен ирĕкĕпе вăрт-варт

пуҫтарӑнса тухса кайма пултарайман, вӗсен хӑйсене лерен, ҫуралнӑ ҫӗршывран, чӗнсе илессе кӗтме тивнӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн тин вӗсене пропусксем панӑ.

Юлашкинчен, шӑп Май уявӗ умӗн, Варькка почтальон Пауль Киккаса пилӗк ҫӗртен сӑркӑчлӑ пичет пуснӑ пысӑк конверт пырса пачӗ. Ку ӗнтӗ хайхи нумайранпа кӗтсе пурӑннӑ ҫыру пулнӑ. Тепӗр куннех Пауль районран хӑйсене киле каймa ирӗк паракан хут илсе килчӗ. Икӗ кунтан вара вӗсене пӗтӗм ялӗпе, тӑвансене ӑсатнӑ пек, ырӑ кӑмӑлпа ӑсатрӗҫ...

Назар Егорччӑ ирех пилӗк лаша кӳлтерчӗ. Эстонецсем хӑйсен япалисене, ҫул ҫине валли хатӗрленӗ ҫӑкӑр-тӑварне вырнаҫтарсан, лавсем клуб тӗлне пырса чарӑнчӗҫ. Вӗсене пур енчен те ял халӑхӗ сырса илчӗ — ватти, вӗтти. Тухса каякансене кашниех ыр сунчӗ, вӗсен аллисене тытса чӑмӑртама тӑрӑшрӗ.

— Чипер ҫитмелле, малашне телейлӗ пурӑнмалла пултӑр сирӗн!

— Пире те ан манӑр, ҫырӑр...

Унтан Рина Петровнӑпа пӗрле шкул ачисем тӗркӗлтипе чупса ҫитрӗҫ. Учительница ӗнер хӗр ачасене ятарласах вӑрмана ҫеҫпӗл чечекӗсем пухма янӑ иккен те, халӗ тухса каякансене кашнинех пӗрер ывӑҫ сеп-сенкер чечексем тыттарчӗҫ. Рина Петровна хӑй аллинчи чечек ҫыххине Пауль кинне Амалие пачӗ те ӑна ыталаса темиҫе хут чуптурӗ, унтан унӑн ачисене — Яна, Юулие, Эльгӑна ытала-ытала ҫурӑмӗсенчен лӑпкарӗ, юлашкинчен вӗсен аслашшӗн аллине хыттӑн чӑмӑртарӗ.

— Ҫулӑр такӑр пултӑр сирӗн, Пауль Оскарович! Пурнӑҫ тӑршшӗпех телей сирӗнпе юнашар пытӑр!.. Ӗнер пиччерен, Федьӑран, ҫыру илтӗм, Венгрирен ҫырса янӑ, сире салам калама хушнӑ...

— Тавтапуҫ, Рина Петровна! Хӑйне те пирӗнтен хӗвел пек хӗрӳллӗ салам ярӑр, ырлӑх-сывлӑх сунӑр...

Ҫав вӑхӑтра Паульпе Рина Петровна патне Назар Егорччӑ пырса тӑчӗ. Пӗр аллине пысӑк кӑкшӑм тытнӑ, теприне — эрешлесе пӗтернӗ авӑрлӑ йывӑҫ курка.

— Павӑл Оскарччӑ, тусӑм, пирӗн, чӑвашсен йӑлипе, ҫул курки... — терӗ те вӑл кӑкшӑмран кӑпӑклӑ сӑра тултарса пачӗ. — Эсир каясса пӗлсен ятарласа тутартӑм. Сӑри пит лайӑх пулнӑ, ӗҫ-ха!

— О, спасибо, спасибо, председатель... Эс ҫав тери ырӑ ҫын...

— Ҫынни эс те начар мар, Павӑл Оскарччӑ. Ылтӑн ҫын тес пулать, пирӗн колхоза ҫав тери нумай пулӑшрӑн... Ӗҫ тепре! Пирӗн, чӑвашсен, йӑли ҫапла — ҫул куркине виҫҫӗ ӗҫмелле.

Унтан Назар Егорччӑ хӑй те пӗр курка тултарса ӗҫрӗ те

йĕпеннĕ уссийĕпе сухалне шăлса илсе Пауле виçĕ хут чуптурĕ.

— Ну, çилленсе ан кай, тăванăм!

— Çилленсе мар, ĕмĕр тав туса пурăнăпăр сире...

— Çапла пултăр, Павăл.

...Кăшт тăхтасан лавсем хускалчĕç. Малти лашине Евгени тытса пычĕ, иккĕмĕшне — Аркаш, ытти лавсем çинче те ямшăк вырăнче шкул ачисемех пулчĕç. Ял çыннисем вĕсене униче картине çитиех ăсатса ячĕç, нумайччен ал сулчĕç.

Май уйăхĕн пуçламăшĕнче çанталăк çуллахи пекех ăшăтса пăрахрĕ. Пĕлĕт çуса тасатнă кăвак кантăк пек, иртен пуçласа каçчен хĕвел хĕртет, сывлăш пĕр хускалмасть. Темиçе кун хушшинчех йывăç папакĕсем сарăлса уçăлчĕç, сип-симĕс çамрăк çулçăсем кăларчĕç. Ăшша пула çĕр питĕ хăвăрт кушăхса пычĕ, типме пуçларĕ.

Назар Егорччă çынсене хистеме тытăнчĕ:

— Часрах сухалас пулать, ачамăрсем, хăвăртрах акас. Кĕçех акă вăрçине пĕтерсе салтаксем те таврăнма пуçлĕç, вĕсем умĕнче намăс курăпăр тата. Васкас, васкас...

Хальхинче пĕтĕм çур аки уйне плугсемпе çеç сухалама тиврĕ — трактор травашĕ пачах та пулмарĕ. Çавăнпа та суха тăвакансем уя ир-ирех, хĕвелпе пĕрлех тухрĕç те тĕттĕмччене тăрăшрĕç. Апла пулин те, ĕçсем ытла хăвăртах пулса пыраймарĕç çав — вăйсăртарах лашасене те, кӳлме хăнăхтарнă вăкăрсене те тектекех тăратса кантармалла пулчĕ.

Евгенипе Аркаш яланхи пекех пĕрле ĕçлерĕç. Аркаш тилхепе тытса лашасене касă йĕрĕпе уттарать, Евгени плуг хыççăн пырать. Сухаламалли лаптăкĕ пысăк, йĕри-тавра пĕр-икĕ километр та пулать пулĕ. Вĕсем умĕн тата пилĕк-ултă плугпа сухаласа пыраççĕ. Пĕр-икĕ хут çаврăнсан хашкама ернĕ, тарласа лачкам пулнă лашасене чарса тăратаççĕ те хăйсем те пĕлтĕрхи хăрăк хăмăл çинех тăсăлса выртаççĕ. Ăшă, кăмăллă... Таврара çав тери шăп, тӳпере çеç тăрисем каçса кайса юрлаççĕ... Ачасен çывăрасси те килет, уя ир-ирех тухнă вĕт-ха вĕсем. Анчах çывăрма юрамасть, ĕçлемелле, пĕр чарăнмасăр, çине тăрсах ĕçлемелле. Вăхăт кĕтмест. Суха-ака тунă чух пĕр кун та темех тăрать, ялти ачасем ăна пит лайăх пĕлеççĕ.

— Евгень, — тет куçĕсене хупса месерле выртакан Аркаш, — пирĕннисем çав çынçиен Гитлера тытсан мĕн тăваççĕ-ши сан шутпа?

— Переççĕ те вĕлереççĕ, мĕн туччăр тата? — хуравлать Евгени.

— Эп, хам пулсан, ăна чĕрĕллех вутта пăрахса çунтарăттăм. Вăл хăй пин-пин ним айăпсăр çынна çунтарттарнă вĕт-ха.

— Ун пек тусан та юрать. Эп хирĕç мар.

— Вăрçи тата миçе кунтан пĕтет-ши?

— Ун çинчен мана никам та телеграм ярса пĕлтермерĕ-ха, тусăм.

Вĕсем пĕр хушă ним чĕнмесĕр тăрисем юрланине итлесе выртрĕç, унтан Аркаш каллех ыйтрĕ:

— Хамăр патра вĕренсе тухсан эс института каятăн ĕнтĕ, çапла-и?

— Пĕлместĕп. Кайсан пит аванччĕ те... Агронома е зоотехника вĕренсе тухас та хамăр колхозах ĕçлеме килес...

— А эпĕ... пĕлетĕн-и, эп мĕн шутлатăп? Пĕлместĕн!

— Авланма шутламастăн пулĕ те?

— Ухмах! Чĕлхӳ çине çăпан тухтăр.

— Мĕн, эппин, тата?

— Вунă класс пĕтерсенех хама çар шкулне яма ыйтатăп. Артиллери шкулне. Ман атте те юлашки вăхăтра артиллерист пулнă. «Артиллери — вăрçă турри», — теççĕ вĕт-ха. Эпĕ çав турра пăхăнтараканни пулатăп. Илеççех мана, эпĕ фронтовик ачи.

— Лайăх шухăш. Ырлатăп. Анчах халлĕхе атя-ха, тăр, лашасем канчĕç пуль, сухалар...

Çапла хĕрӳ ĕçре кун хыççăн кун иртрĕ. Иртен пуçласа каçченех ĕçлесе ачасем хытă ĕшенчĕç, анчах уйран таврăнсан апат çикелесе часрах вырăн çине чăмас вырăнне вĕсем клуба, Витали патне, чупрĕç-ха: паянхи хаçатсенче мĕнле çĕнĕ хыпарсем пур? Ăçта çитнĕ пирĕн çарсем? Çаксене пĕлмесĕр вĕсем ниепле те лăпкăн çывăрма выртма пултарайман.

Хыпарĕсем ун чухне чăн та кунран-кун çав тери лайăхланса пычĕç, халăха калама та çук савăнтарчĕç: Берлина вăркăнса кĕнĕ пирĕн салтаксем унта урам хыççăн урам йышăнаççĕ, хулана тăшман çарĕсенчен тасатсах пыраççĕ... Чехословакире кашни кун çĕнĕрен çĕнĕ хуласене ирĕке кăлараççĕ... Майăн виççĕмĕшĕнче Пĕрремĕшпе Иккĕмĕш Белорусси фрончĕсен çарĕсем, фашистсене нумай хуласенчен çапса кăларнă хыççăн, Эльба шывĕ хĕррине çитнĕ те унта Англи тата Америка çарĕсемпе тĕл пулнă...

— Ну, халь ĕнтĕ Гитлер чăнах та капут! — терĕ Аркаш çак хыпара пĕлсен. — Çакăнмалла анчах унăн!

...Ирхине ачасем каллех уя кайрĕç, лăш курмасăр, тар юхтарса суха турĕç.

Пĕррехинче, ирхи кӳлĕмре, Аркашпа Евгени ывăна пуçланă лашисене кантарма тăратрĕç те хăйсем касă хĕррине ларчĕç. Евгени тăпра тулнă çăпатисене салтса сырма пиксенчĕ, Аркаш кĕсйинчен тем пысăкăш кишĕр туртса кăларса кăшлама тытăнчĕ.

— Çиместĕн-и? — тусне те сĕнчĕ вăл.

— Аюк, — пуçне пăркаларĕ Евгени, — эп сан пек кушак кайăкĕ мар вĕт...

— Хăвăн ирĕк. Анчах та кишĕрте витамин нумай, эс çавна ан ман. Вăй хушать.

— Манăн сана хĕнемелĕх вăй ахалех пур.

— Ăна малтан тĕрĕслесе пăхас пулать-ха. Пĕр тытăнсан кама кам хĕнĕ...

Çапла пĕр-пĕрне шӳтлесе-йĕплесе калаçнă хушăра Аркаш темлерен ял еннелле пăхрĕ те хăйсем патнелле пĕр юланут ыткăнса килнине курах кайрĕ. Тахăшĕ кăçал хĕлле çеç кӳлсе çӳреме хăнăхтарнă ула тиха çине утланнă та тĕпĕртеттерет кăна. Тӳрех кунталла, Аркашпа Евгени ĕçленĕ çĕрелле, килет. Малтан Аркаш çыннине паллаймарĕ — те ача, те мăн çын, лашине пĕрмай хулăпа çапса, урисемпе аякĕсенчен тапса пынине çеç лайăх курчĕ. Унтан, юланут самаях çывхарсан, уйăрса илчĕ: председатель иккен, Назар Егорччă! Тĕлĕнсех кайрĕ — старик юланутпа çакăн пек çĕмĕрттерсе çӳренине унччен малтан ĕмĕрне те курман вăл.

— Пăх-ха, Евгень, Назар Егорччă вĕçтерсе килет, — терĕ Аркаш аллипе сулса, — мĕн пулнă-ши ун пекех васкамалли?..

Çăпата кантрисене çыхса пĕтерме те ĕлкĕреймен Евгени вăртах сиксе тăрса ял еннелле пăхрĕ те Аркашран кая мар тĕлĕнчĕ.

— Чăнах та ялта темскер пулнă пуль! Ахаллĕн мĕншĕн çӳретĕр-ха вăл çакăн пек? Карттусне те тăхăнман, çара пуçăнах, çав тери васканă курăнать...

Унччен те пулмарĕ, ачасем патне Назар Егорччă хăй ыткăнса çитрĕ те хашкама ернĕ лашине пĕррех чарса тăратрĕ. Хăй те лашинчен каяхмар хашкать иккен...

— Мĕн пулнă, Назар Егорччă? Ма кун пекех килтĕн? — хăрарах ыйтрĕç Евгенипе Аркаш ун çывăхнех пырса.

— Ташлăр, ачасем! — тăрук кăшкăрчĕ старик вĕсене хирĕç хулă тытнă аллине çӳлелле çĕклесе. — Ташлăр, юрлăр, сикĕр!..

— Мĕнех пулнă апла, Назар мучи? Мĕншĕн ташламалла?

— Çĕнтерӳ, ачасем, çĕнтерӳ-ӳ! Пирĕннисем Германие йăлт çĕнтернĕ! Тăшмана чĕркуççи çине тăратнă! Лешсем пĕр сăмахсăрах парăнатпăр тесе акт çине алă пуснă! Кончал Гитлер, капут!..

— Чăнах-и?! Ăçтан пĕлтĕн? — старике лаша çинчен туртса антарас пекех урисенчен лăскама тытăнчĕç ачасем.

— Чăнах пулмасăр тата! — куçĕсене яш çын пек çутăлтарса илчĕ Назар Егорччă. — Кун пек япаласем пирки кам суеçтерсе калаçма пултартăр? Халь кăна районран телефонпа шăнкăравласа каларĕç, пĕтĕм халăха пĕлтерме хушрĕç. Пурте, пурте

савăнччăр терĕç... Кăнтăрлахи апата киле пырăр, митинг тăвăпăр! Анлантăр-и?

Назар Егорччă ачасем хăйне хирĕç мĕн калассине те кĕтсе тăмарĕ, лашине пĕрре çапрĕ, тепре тапрĕ те çак ырăран та ырă хыпара уйра ĕçлекен ытти çынсене пĕлтерме ыткăнчĕ...

Ачасем пĕр хушă ун хыççăн пăхса тăчĕç, унтан Евгени Аркаш еннелле çаврăнчĕ те ăна çатăр! ыталаса илчĕ.

— Çитрĕ эппин пирĕн телей! Çĕнтертĕмĕр! Пурăнатпăр халь, тусăм! Питĕ лайăх пурăнатпăр!..

Аркаш чĕнмерĕ.

— Эсĕ, мĕн, савăнмастăн-им? Ма чĕнместĕн? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Евгени ăна хул пуççисенчен пăчăртаса тытса.

— Ман атте çавах таврăнмасть... — çĕрелле пăхса хуравларĕ Аркаш. Унăн куçĕсем шывланчĕç.

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, тусăм? Сана мĕн тери йывăр пулнине эпĕ пит лайăх чухлатăп, сан хуйху ман чĕрене те тем пекех ыраттарать, анчах пурнăçне çавах пурăнмалла-çке. Пирĕн ӳсес, вĕренес, халăхшăн, çĕршывшăн усăллă çынсем пулас пулать. Ахальтен эпир ачаллах çакăн чухлĕ терт куртăмăр-им? Пĕтĕмпех хамăрăн пулас пурнăçшăн вĕт...

— Ăна тĕрĕс калатăн-ха эсĕ, — ассăн сывласа ячĕ Аркаш. — Атте те çавăншăнах пуçне хучĕ ĕнтĕ. Пирĕншĕн, пире телейлĕ тăвасшăн... Çапах та чун ыратать, Евгень.

— Пит лайăх ăнланатăп, тусăм. Вăрçи ытла та хăрушă пулчĕ-çке. Сан пек тăлăха юлнă ачасене шутласа кăларма та çук пуль... Тӳссе ирттерес пулать ĕнтĕ...

— Çапла, Евгень, тĕрĕс, тӳсес пулать. Эп халь те тӳсетĕп. Пуçа усмастăп... Ну, юрĕ, атя ĕçлер-ха лашасем тепре тарличчен, унтан киле кайăпăр.

...Тепĕр вунă кунтан, кăнтăрла иртсен, Шупашкар станцине темĕн тĕрлĕ илемлетсе, эрешлесе пĕтернĕ поезд çĕр кисретсе пырса тăчĕ. Пăравус пуçĕнче хăмач ялав вĕлкĕшет, малти вакун çумне икĕ енчен те хĕрлĕ пусма тăрăхĕсем çине аршăн çӳллĕш сас паллисемпе «Эпир — Берлинран!» тесе çырса çапнă, ытти вакунсем çинче «Эпир çĕнтертĕмĕр!», «Салам сана, çуралнă Çĕршыв!» тесе çырнисем аякранах курăнаççĕ.

Вакунсен чӳречисем пурте уçă, кашнинченех салтаксем пăхса тăраççĕ, вĕсен кăкрисем çинче орденсемпе медальсем ялкăшаççĕ, аллисене чечек çыххисем тытнă...

Çак поезда кĕтсе илме хулари темиçе пин çын пухăннă, — арçынĕ-хĕрарăмĕ, ватти-çамрăкки, пурте тенĕ пекех чечексемпе, çынсен пуçĕсем çийĕнче ялавсем, ялавсем... Поезд станци патне çитичченех оркестр çав тери хаваслă, чуна çĕклентерекен, çан-çурăма çӳçентерекен марш янратма тытăнчĕ. Мĕн

кăна пулмарĕ вара унта! Вакунсенчен перрон çине тухакан паттăрсене çупăрларĕç, ыталарĕç, чуптурĕç, «урра» çĕклесе сывлăшалла ывăтрĕç, кĕçех юрă, ташă пуçланчĕ. Макăракансем те сахал мар пулчĕç — пĕрисем савăннипе, теприсем хăйсен тăванĕсем, çывăх çыннисем таврăнайманшăн...

Пĕр икĕ сехет кĕрлерĕ, шавларĕ, янрарĕ станци.

Каçалапа тин халăх майĕпе салана пуçларĕ...

Çав кунах, çур çĕр çитеспе, «Çĕнĕ самана» колхоза Етĕрне мăн çулĕ енчен виçĕ салтак пырса кĕчĕ. Правлени тĕлне çитсен вĕсенчен иккĕшĕ ансăр тăкăрлăкпа сулахаялла, çырма леш енчи урамалла, пăрăнчĕç, пĕри вара çак тĕп урампах анаталла анчĕ. Кĕçех вăл пĕр вырăсла хапха умне çитсе чарăнчĕ те калинккерен шаккарĕ. Пĕрре, иккĕ... Акă тахăшĕ крыльца çине тухрĕ, картлашкасем тăрăх анса хапха патне пырса тăчĕ.

— Кам унта? — ыйтрĕ шалти сасă. — Кам кирлĕ?

— Уç, Евгени, эпĕ ку... — терĕ салтак.

— Атте!..

— Эпĕ, ывăлăм, эпĕ!

Самантранах ашшĕпе ывăлĕ пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç.

— Епле телей! Мĕн тери пысăк телей... — куççулĕ витĕр пăшăлтатрĕ ывăлĕ ашшĕ çумне хытăран хытă йăпшăнса.

1958–1964

# САЛТАК ЫВĂЛĔ

(Калав)

Пин те тăхăр çĕр хĕрĕх тăваттăмĕш çулхи март уйăхĕнче эпĕ пĕр районта ял хуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен канашлăвĕнче пултăм. Тĕрлĕрен çынсем пухăннăччĕ унта: колхоз председателĕсем, бригадирсем, ферма пуçлăхĕсем, МТСра ĕçлекенсем, трактористсем. Вĕсен хушшинче кĕрхи анис пан улми пек сăнлă хĕрсем те, шур сухаллă стариксем те, нумай пулмасть фронтран аманса таврăннă вăтам çулхи арçынсем те нумайччĕ.

Канашлăвăн президиумĕнче, районта ĕçлекенсем, тĕрлĕрен ватăрах çынсем хушшинче, эпĕ пĕр вун виçĕ-вун тăватă çулхи арçын ача ларнине асăрхарăм.

«Кам-ши вара ку? — тĕлĕнтĕм эпĕ. — Пĕр-пĕр шкулăн е пионер отрячĕн представителĕ-ши?»

Пулкалать-çке тепĕр чух: çавнашкал паллă канашлусене пионерсем пырса саламлаççĕ. Анчах ку... Ку президиумра ларать, сĕтел çине чавсаланнă та трибуна çине тухса калакансене шăтарас пек пăхса çав тери тимлĕн итлесе ларать.

— Çав ача кам ара вăл? — тесе ыйтрăм хампа юнашар ларакан шинельлĕ çынран.

— А вăл «Шуçăм» колхозри ача, — ответ пачĕ ку мана.

— Мĕнле майпа çак канашлăва килме, çитменнине тата президиумах суйланма тивĕçлĕ пулнă-ха вăл?

— Тĕрĕссипех пĕлейместĕп. Пĕлесех килет пулсан ав çавăнта иккĕмĕш ретре ларакан шур сухаллă старикрен ыйтăр. Вăл — «Шуçăм» колхоз председателĕ.

Часах кăнтăрлахи перерыв пулчĕ. Делегатсем тĕркĕлтипех столовăйне апатланма кайрĕç. Президиумри ача çинчен питех те пĕлес килсе кайнипе эпĕ залран тухнă чухнех хайхи «Шуçăм» колхоз председательне хулĕнчен пырса тытрăм.

— Чăрмантарнăшăн каçар, мучи, — терĕм, — сирĕн колхозран темеççĕ-и çав ачана?

— Хăшне? — тĕлĕнерех пăхрĕ ман çине мучи.

— Президиумрине...
— А-а! Эс Аркаш ҫинчен ыйтатӑн-и?
— Ятне пӗлместӗп те...
— Аркаш вӑл. Пирӗн колхозран, тӗрӗс.
— Каласа паман-ши ун ҫинчен, мӗнле ача вӑл сирӗн? Пит пысӑк хисепе тивӗҫлӗ пулнӑ-ҫке вӑл. Президиума яланах чи паха ҫынсене суйлаҫҫӗ.
— Куна та начар теме ҫук ҫав. Тӳрех калас пулать — питӗ маттур ача!
Эпир районти клуб ҫуртӗнчен тухса урампа столовӑй еннелле утрӑмӑр. Эпӗ ыйтнине пула мучи хӑйӗн калавне пуҫларӗ. Ҫынни калаҫма юратаканскер пулчӗ. Ҫул ҫинче те, столовӑйне ҫитсен те каласа пачӗ, пӗр чарӑнмасӑр каларӗ.
— Ачи ҫапласкер вӑл... — тесе пуҫларӗ старик. — Ашшӗ фронтра вилчӗ унӑн, амӑшӗ виҫӗ пӗчӗк ачапа тӑрса юлчӗ, чӑн асли — ку, Аркаш, вун виҫҫӗре ҫеҫчӗ ун чух. Анчах та ҫамрӑк пулин те колхоз ӗҫне хутшӑнма пуҫларӗ амӑшӗпе пӗрле. Чӑнах та, пӗр вӑл кӑна мар ӗнтӗ, шкул ҫулне ҫитнӗ нумай ача ӗҫлеме тытӑнчӗ. Хӑвӑрах пӗлетӗр, вӑрҫӑ ҫулӗсем-ҫке... Вӑй питти арҫынсем пурте вӑрҫӑра, ялта хӗрарӑмсемпе ватӑ-вӗтӗ ҫеҫ юлнӑ. Ватӑлнипе ӗҫлеме пӑрахнӑ стариксем те кӑмака ҫинчен анса ӗҫе тытӑнчӗҫ. Ак мана хамах илес... Тӑватӑ ывӑлччӗ манӑн, пӗринчен тепри тӗреклӗрех — пӗри колхоз председателӗнче ҫӳретчӗ, тепри бригадирччӗ, иккӗшӗ хулара пурӑнатчӗҫ. Мӗн тума ӗҫлемелле пулнӑ манӑн? Вӑрҫӑ пуҫланнӑ ҫулах эпӗ утмӑл ҫиччӗреччӗ те... Эп мӑнуксемпе пӗрле хур-кӑвакал пӑхса кӑна ҫӳреттӗм. Анчах арҫынсене вӑрҫа ӑсатса пӗтерсен пысӑк шухӑша кайрӑм: ҫук, капла май килмест, шӑммӑм-шаккӑмра вӑй пур-ха пӑртак, тавай каллех тытӑнас ӗҫлеме! Правление пытӑм та: «Парӑр мана пӗр-пӗр ӗҫ, ҫак саманара килте ларма пултараймастӑп», — терӗм. Ну, мана бригадир туса хучӗҫ. Унтан ҫур ҫул те иртрӗ, те иртмерӗ ҫав — пирӗн председатель, вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех аманса килнӗскер, тӳрленсе ҫитрӗ те каллех фронта тухса кайрӗ, вара мана ун вырӑнне суйларӗҫ. Халӑх хама ҫавӑн пек шаннӑшӑн как следоват ӗҫлес терӗм, халӑх умӗнче те, государство умӗнче те намӑс курас мар терӗм...
Анчах ку сӑмах хам ҫинчен пулчӗ-ха. Эс мана Аркаш ҫинчен каласа пама ыйтрӑн... Каларӑм-иҫ, ваттисемпе пӗрлех пирӗн ачасем те ӗҫе хутшӑнма тытӑнчӗҫ. Хӑшӗ лашасем патӗнче, теприсем сурӑх пӑхаҫҫӗ, виҫҫӗмӗшсем унта-кунта лавпа кайса килеҫҫӗ, пӗр сӑмахпа каласан — кашни валлиех ӗҫ тупӑнать пысӑк хуҫалӑхра. Ҫак Аркаш та малтан лашасем таврашӗнче ӗҫлесе пурӑнчӗ. Ну, тӗрӗссипех калас пулать, ыттисенчен пачах расначчӗ вӑл. Нихҫан та бригадир ӗҫ хушасса

кĕтсе тăмастчĕ. Коннăй двора ирхине ирех тухать те хăех ытăнать ĕçлеме.

Пĕринче, çур енне, çак ман пата правление пычĕ те:

— Васлей мучи, ман пĕр шухăш пур, — терĕ.

— Мĕнле шухăш? — тетĕп.

— Манăн хамăн алла пĕр виçĕ лаша парăр-ха.

— Мĕн тума?

— Пăхса пурăнма.

— А эс халĕ те пăхатăн-çке вĕсене.

— Çук, эпĕ пĕр хам çеç пăхса пурăнас тетĕп вĕсене. Хай... зоотехниксем хушнă пек... Хуть те чи имшерккисене пар.

Хăй ман çине çав тери тархасланă пек пăхать. Эпĕ килĕшрĕм вара.

— Юрĕ, — терĕм, — пăхса пурăн. Анчах лайăххисене памастăп, канма тăратнисене çеç.

— Мана вĕсем те пыраççĕ, — тет.

Эх, тытăнчĕ хайхискер тăрăшма! Таçтан «Лашасене тĕрĕс пăхасси» ятлă кĕнеке тупнă, ăна питĕ тĕплĕн вуласа тухнă, лашасене хăш вăхăтра тата мĕн чухлĕшер апат памалли, шăвармалли, тасатмалли, уçăлтарса çӳретмелли расписани тунă та — çавна тĕп-тĕрĕс пăхăнса пыратчĕ. Тепĕр уйăхран-уйăх çурăран пирĕн начаркка лашасем çăмарта пек чăп-чăмăр пулса кайрĕç. Эпир ытти конюхсене, лашасене кирлĕ пек пăхайманнисене, хистеме тытăнтăмăр:

— Намăс мар-и сире? Ав Аркаш çине тăрсах тăрăшать те — мĕн туса хучĕ?

Пуçланса кайрĕ вара конюхсем хушшинче ăмăрту... Çунса кăна ĕçлекен пулчĕç!

Çав çулхине пирĕн колхозри пек лашасем районĕпе те çукчĕ. Çур акине никамран малтан пĕтертĕмĕр. Хытă мухтарĕç ун чухне пире. Районти хаçатра пĕрех май «Шуçăм» колхоз та «Шуçăм» колхоз тесе çыратчĕç. Ырлама сăлтавĕ те пурччĕ ĕнтĕ. Тыр-пула та вăхăтра, пĕр тăкаксăр пуçтарса кӳртрĕмĕр, государствăна та срокченех парса татрăмăр, кĕрхине те аван акса хăвартăмăр. Нихăш енчен те кая юлмарăмăр темелле.

Анчах тепĕр çулхине пирĕн ĕçсем сасартăк начарланчĕç. Пурнăçра пулать вĕт вăл темле те. Темиçе лаша — чи лайăххисене — эпир Хĕрлĕ Çара парса ятăмăр. Ку нимех те мар-ха, ку вăл çĕнтерӳ валли кирлĕ, ăна памаллах, кунсăр пуçне тата эпир çара панă çав лашасемсĕр те пур ĕçе туса çитерме пултарнă... Пире урăххи хупларĕ. Колхозра юлнă лашасем кĕтмен çĕртен ӳке-ӳке вилчĕç пирĕн — улт-çич лаша! Темле мур пырса ерчĕ! Ну, часрах ветеринарсене чĕнтĕмĕр, акт çырчĕç вĕсем, ытти лашисене халех урăх çĕре тăратма хушрĕç. Вĕсем хушнисене эпир веçех турăмăр ĕнтĕ, çур аки çывхарнă май юлашки

лашасене çине тăрсах çитерме тытăнтăмăр... Çапах та каллĕ-маллĕ шухăшласа пăхатпăр та — ĕç тухмасть пирĕн. Кун чухлĕ лашапа эпир çур акине ниепле те вăхăтра туса пĕтерме пултарас çук...

Мĕн тумалла? Пĕтĕм колхозĕпе хуйха ӳкрĕмĕр. Ку таранччен нихçан та кая юлман, а кăçал чип-чиперех пĕтĕм район умĕнче намăс курас пулать вĕт!

Колхоз вăкăрĕсене кӳлсе çӳреме вĕрентес терĕмĕр. Ку таранччен лашасем енчен нуша пулманччĕ те-ха пирĕн, эпир вăкăрсене вĕрентсе хăтланманччĕ. Анчах халь чăн-чăн нуша çитсе тухрĕ те ирĕксĕрех тытăнмалла пулчĕ. Юрать тата пирĕн ялта Украинăран 1941 çулта килнĕ ватă тимĕрçĕ, Цыбулько хушаматлăскер, пурăнатчĕ. Вăкăрсене мĕнле кӳлмелли йĕркесене вăл аван пĕлетчĕ. Çиччас кӳлмелли хатĕрсене турăмăр, кӳлтĕмĕр, Цыбулько инструкци парать, ачасем вăкăрсене урам тăрăх каллĕ-маллĕ çӳретеççĕ. Никамран малтан, паллах, ку ĕçе те Аркаш тытăнчĕ. Ыттисем хăрарах параççĕ, а куншăн пулсан — ним те çук. Çитменнине, Аркаш пирĕн хуçалăхшăн пуринчен те (ачасенчен ĕнтĕ) ытларах пăшăрханать-çке. Пĕтĕм чунне пама хатĕрччĕ уншăн...

Эрне хушшинче Аркашпа унăн юлташĕсем колхозăн виçĕ вăкăрне те кӳлсе çӳреме вĕрентсе çитерчĕç. Вара кăштах çăмăлраххăн сывласа ятăмăр. Вăкăр — лаша мар, çапах та ака вăхăтĕнче пысăк пулăшу пама пултарать тетпĕр. Пирĕншĕн пулсан — плуг сĕтĕртĕр, суха тутăр!

Анчах ĕç кунпа пĕтмерĕ-ха. Чăн пысăк ĕçĕ каярахпа пулса иртрĕ. Ăна та çав Аркашах туса хучĕ...

Февраль уйăхĕнчех пирĕн яла фронтран Ванюш Ваньки тенĕскер таврăннăччĕ. Унăн сулахай алли кăкранах татăлнă. Вăрçăччен вăл МТСра трактористсен бригадирĕнче ĕçлетчĕ. Халĕ, алли çуккипе, килтех пурăнма тӳр килчĕ çав йĕкĕтĕн...

Пĕрре эпир правленире çур аки валли лашасем çитменни çинчен калаçса лараттăмăр. Халăх чылайччĕ, ачасем те пурччĕ.

— Эх, — терĕ çавăн чух çав Ванюш Ваньки, — пĕр трактор çеç кирлĕ те çав пире, вара ним хуйхи те пулас çук, йăпăртах сухаласа пăрахмалла та...

Унăн сăмахĕсемпе пурте килĕшрĕç, анчах çавăнтах кӳрене-кӳрене илчĕç:

— Аван пулмалла та, çук-çке вăл...

— Тракторĕ пулсан та унпа ĕçлеме пултараканни çук...

Калаçу çакăнпа пĕтрĕ. Урăх кун çинчен никам та асăнмарĕ.

Анчах та Аркашăн чĕринех кĕрсе ларнă пулмалла çак калаçу, вăл манман ăна.

Пĕрре, апрель пуçламăшĕнче, çак ача хулана пасара кайнă. Киле таврăнсан тӳрех ман пата чупса пычĕ вăл.

— Итле-ха, Вaçли мучи, эп пĕр япала шухăшласа тупрăм, — терĕ хыпкаланса. — Эс ан кул тулькким...

— Ма куласс? Кала, ывăлăм, итлетĕп, эс яланах ăслă сăмахсем калаканччĕ, — терĕм çакна вăл питех те хытă пăлханнине асăрхаса.

— Паян эпĕ çула май леспромхоз кил хушшине кĕрсе тухрăм. Унта пĕр япала куртăм...

— Мĕнле япала?

— Лапкаран кăшт тăварах хăпарсан, хӳме çумĕнче, пĕр кивĕ трактор ларать. Гусеницăллă трактор, хайхи йывăç шакмака çунтарса ĕçлекенни...

— Мĕн вара уншăн? — тесе ыйтрăм эпĕ Аркаш мана кун çинчен мĕн пирки каласа кăтартнине ăнланса илеймесĕр.

— Ара, пĕркунне правленире трактор илсе килсен аван пулмалла тесе калаçса лартăр-çке... Çур аки валли... — аса илтерчĕ Аркаш.

Вăл çапла калани питех те савăнтарчĕ мана. Тытăнтăмăр иксĕмĕр сӳтсе явма.

— А вăл çĕмрĕкскер пулĕ... урамра ларать пулсан, — терĕм.

— Çук, эпĕ пĕр çынтан ыйтса пĕлтĕм те — ытлашши çĕмрĕкех мар тет, — ответ пачĕ Аркаш. — Ванька пичче кайса пăхсан пĕлет ĕнтĕ ăна, вăл маçтăр вĕт. Тен, юсама май пур?

— Май пулсан та юсаканĕ кам пулĕ? Ванькăн хăрах алă кăна.

— Хамăр тимĕрçĕ Цыбулькăпа Ванька пичче...

— Ĕçлекенĕ кам пулĕ тата?

— Ăна вĕренкелĕпĕр епле те пулсан. Ванька пиччех вĕрентет.

Тĕлĕнтерсех ячĕ! Пĕтĕмпех, йĕркипех шухăшласа хунă, шăхличĕ. Çав ванчăк трактора ăнсăртран курсан вăл эпир тахçан калаçнине аса илнĕ те ĕнтĕ çул тăршшĕпех çав шухăшпа утнă, епле майпа мĕн тума пуласси çинчен план туса пынă. Вăт çамрăк ача те эсĕ ăна!

«Шуçăм» колхозăн ватă председателĕ калама чарăнчĕ те ман çине савăнăçлăн пăхса илчĕ. «Акă епле маттур ачасем пур пирĕн колхозра!» — терĕç унăн куçĕсем çав самантра.

— Ну, вара мĕн турăр эсир? — ыйтрăм эп Вaçли мучирен ку истори мĕнпе вĕçленнине пĕлесшĕн пулса. — Аркашăн сĕнĕвне йышăнтăр-и, çук-и?

— Йышăнтăмăр! Чип-чиперех йышăнтăмăр! — терĕ вăл. — Аркаш каланине çав каçах правленире сӳтсе яврăмăр та тепĕр куннех лесхоза кайрăмăр. Виççĕн кайрăмăр: эпĕ, Аркаш тата хайхи тракторист пулнă Ванюш Ваньки. Çитрĕмĕр, Ванька трактора тулаш енчен те, шал енчен те питĕ тĕплĕн пăхрĕ те пĕр эрнере юсама пулать терĕ. Вара эпир директорĕ патне кĕтĕмĕр. Çапла та çапла, сирĕн трактора юсаса ĕçе яма шут пур пирĕн тетпĕр.

— Эп хам та юсаттарасшăнччĕ те-ха ăна, ниепле те май килмерĕ-ха, юсама пултаракан çыннисене тупаймарăм, — терĕ директор. — Пултаратăр пулсан — юсăр... Анчах кайран, хăвăрăнне сухаласан, пирĕн рабочисене пахчасем валли панă çĕре те сухаласа паратăр вара, — терĕ.

Çавăн пек калаçса татăлтăмăр та киле таврăнтăмăр.

Тепĕр ирхинех пирĕн маçтăрсем — Ванькăпа Цыбулько, вĕсемпе пĕрлех Аркаш та — çав трактора юсама тухса кайрĕç.

Виçĕ кунтан Аркаш каялла чупса çитрĕ:

— Трактор часах хута каять, часрах йывăç шакмаксем хатĕрлеме тытăнăр! Пĕр лавне пирĕн пата илсе пырăр...

Хăй çавăнтах каялла лесхоза ыткăнчĕ. Трактора юсанă май вăл ăна мĕнле ĕçлеттермеллине вĕренсе пынă пулнă. Ванюш Ваньки кайран каласа пачĕ: Аркаш тракторăн кашни пайĕ çинчен, вăл мĕн тума кирли çинчен алшар хут та ыйтатчĕ пулĕ тет. Епле пулсан та вĕренесшĕн пулнă ĕнтĕ вăл...

Тата виçĕ кунтан, маçтăрсем хушнă пек, эпĕ ирех лесхоза шакмаксем тиесе ятăм. Кĕтетпĕр ĕнтĕ. Пурте, пĕтĕм колхозĕпе кĕтетпĕр. Уялла, шоссе çине тухкалатпăр. Кăнтăрла та çитсе иртрĕ, каçалла та сулăнчĕ — пирĕн трактор çаплах çук-ха. Колхозниксем хушшинче унта-кунта кăмăлсăр калаçкалани илтĕнме пуçларĕ — ĕнтĕ хăшĕсем ĕненме те пăрахрĕç.

— Э-э, çавсенчен пулать-и ара трактор илсе килесси?

— Пĕри чăлах, тепри ача, виççĕмĕшĕ хăй ĕмĕрне плугсем çеç юсаса ирттернĕскер...

Мана кун пек сăмахсем тарăхтарма пуçларĕç.

— Ан лăркăр пустуя, паян мар тăк ыран çитеççĕ вĕсем, курăр акă! — тетĕп.

Чăнах та, çапла カларăм кăна — инçетре мотор сасси илтĕнсе кайрĕ. Кĕрлет кăна!

— Куртăр-и, — тетĕп хай трактор килессе ĕненме пăрахнисене. — Авă вĕсем, веç килеççĕ!

Пурте униче хыçнелле чупса тухрĕç. Трактор гусеницисемпе чанкăртаттарса, шăтăк-путăксем çинче сиккелесе, трубинчен паровоз пек тĕтĕм кăларса çывхарса пычĕ ял патнелле. Пирĕн çынсен сăнĕсем хавасланнипе çуталсах кайрĕç.

Акă вăл униче хапхи патне çитрĕ. Пăхатпăр — руле пирĕн Аркаш тытнă, Ванюш Ваньки унпа юнашар ларать, Аркаша вĕрентсе пырать пулмалла... Цыбулько çӳле тăнă та аллине сулса, кулса пырать.

Пурте алă çупса ячĕç.

— Вот молодца! — тесе кăшкăрать тахăшĕ.

— Çитрĕр пулать? — кăшкăрсах ыйтать тепри.

— Çитрĕмĕр! — тет те Аркаш трактора тăпах чарса тăратать.

— Ма час килмерӗр? — чупса пытӑм эпӗ трактористсем патне.

— А ма чӗрӗ шакмак парса ятӑр? Никак та ҫунмасть, тӑн тухрӗ аппаланса, — ответ пачӗҫ мана. — Аран ҫитрӗмӗр!

— Пӗлмен-ҫке эпир мӗнле йышши кирлине...

— Малашне пӗлес пулать! — терӗ те Аркаш ман ҫине пӑхса кулса ячӗ. Унӑн кӑмӑлӗ ҫав тери тулнӑччӗ.

Хӑвӑрах чухламалла, ку ӗнтӗ пӗтӗм колхозшӑн пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ. Халь тин эпир нимрен те хӑраман. Ҫур аки аванах иртет пирӗн.

Чӑн та, аван иртрӗ вӑл. Ҫӗр-шыв типсе ҫитнӗ-ҫитменех Аркашпа Ванюш Ваньки хӑйсем юсанӑ тракторпа хире кӗрлеттерсе тухрӗҫ те мӑкӑрлантарчӗҫ кӑна.Ултӑ кун хушшинче шӑнкӑртах пӗтерсе хутӑмӑр ака-сухана. Юнашар колхозран пулӑшу пырса ыйтрӗҫ те, вӗсене те икӗ кун ӗҫлесе пачӗҫ.

— Ҫавӑн пек вӑл ачан историйӗ, — тесе вӗҫлерӗ хӑйӗн калавне «Шуҫӑм» колхозӑн председателӗ Ваҫли мучи.

— Питӗ аван, — терӗм эпӗ. — Чӑн-чӑн патриот сирӗн Аркаш!

— Тивӗҫлӗ-и вӑл ҫак канашлу президиумӗнче ларма?

— Пит те тивӗҫлӗ!

...Каҫхи ларура Аркаш хӑй сӑмах тухса каларӗ. Пӗтӗм зал ӑна, ҫӗр ӗҫӗн ҫамрӑк ӑстине, калама ҫук кӑмӑлласа итлесе ларчӗ. Аркаш пӑлханчӗ, хӑш чух тытӑнкаласа тӑчӗ, анчах унӑн сӑмахӗ вӗри те ӗнентерӳллӗ, кӑмӑла ҫӗклентерекен сӑмах пулчӗ.

Залри ҫынсем пурте нумайччен алӑ ҫупрӗҫ...

# ТУПМАЛЛИ

**Салтак ачисем** (повесть) .......... 3
Пăрахут анаталла каять... .......... —
Аса илме те хăрушă .......... 10
Шупашкартан инçе те мар .......... 18
Икĕ тус .......... 25
Васкавлă ĕç .......... 37
Малтанхи каç .......... 47
Çил-тăман витĕр, çĕрле .......... 55
Паллашусем .......... 63
Пĕр кăмăлпа .......... 74
Пирвайхи савăнăçсем .......... 83
Çĕнĕ çул умĕн .......... 94
Хĕллехи пĕр кун .......... 102
Кам вăл? .......... 112
Куншăн никам та каçармĕ! .......... 119
«Пурне те ĕçе кӳлетпĕр» .......... 127
Ырă ят. Кукамăшĕ патĕнче .......... 133
Хăрушă тĕл пулу .......... 141
Ăçта çухалчĕ Евгени? .......... 147
Тăлăх пулмаççĕ вĕсем .......... 157
Çулсем-йĕрсем .......... 166
Пĕтĕм халăх вăйĕпе .......... 173
Кун хыççăн кун .......... 181
Ырă хăна .......... 187
Телейлĕ тĕл пулу .......... 199
Унтан çапла пулнă... .......... 215
Телей хакĕ .......... 225
Çитрĕ ырă çуркунне .......... 236
**Салтак ывăлĕ** (калав) .......... 247

*Литературно-художественное издание*

Для детей
старшего и среднего школьного возраста

**Леонид Яковлевич Агаков**

# САЛТАК АЧИСЕМ
# СОЛДАТСКИЕ ДЕТИ

Повесть и рассказ

На чувашском языке


Редактор *А. К. Шашкина*
Художник *И. В. Алексеев*
Художественный редактор *А. В. Семенова*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректоры *З. И. Гаврилова, Н. В. Григорьева*

Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01.

Сдано в набор 14.12.01. Подписано к печати 20.02.02.
Формат 84x108 $^1/_{32}$. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс.
Печать офсетная. Усл. печ. л. 13,44. Учетно-изд. л. 15,79.
Тираж 2000 экз. Заказ № К-3048. Изд. № 17.

РГУП «Чувашское книжное издательство»,
428000, г. Чебоксары, пр. Ленина, 4.
РГУП «ИПК «Чувашия», 428019, г. Чебоксары,
пр. Ивана Яковлева, 13.

**Агаков Л. Я.**
А 23 Салтак ачисем: Повеçпе калав. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2002. — 255 с. ISBN 5-7670-1228-8

«Салтак ачисем» повеçри ĕçсем вăрçă вăхăтĕнче тылра пулса иртеççĕ. 1941 çулхи кĕркунне Атăл тăрăх пăрахутпа эвакуированнăйсем Чăваш çĕрне килсе çитнĕ. Вĕсем — хаяр вăрçă пыракан вырăнтан хăтăлса тухнă, вăрçă çук çĕрелле куçса килекен ватă çынсемпе ачасем, хĕрарăмсем. Вĕсене кунта таврари ялсене вырнаçтараççĕ. Темиçе çемьене – эстонецсене, белоруссене – «Çĕнĕ самана» колхоза илсе каяççĕ. Чăн-чăн тăванла, ăшшăн кĕтсе илеççĕ вĕсене ялта. Ялти шкул ачисем инçетрен килнĕ ачасемпе хăвăрт туслашаççĕ, вĕсемпе пĕрле вĕренме, колхоз ĕçне хутшăнса фронта пулăшма тытăнаççĕ... Ăшшăн та ĕненмелле çырнă çаксем çинчен Л. Агаков писатель.

**ББК 84 (2 Рос – Чув) — 44**

25-00

Чăваш кĕнеке издательстви



***ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ АГАКОВ*** (1910–1977) тăван литературăра паллă йĕр хăварнă çыравçă. Вăл 1910 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Чăваш Республикинче Етĕрне районĕнчи Çуткасси ялĕнче çуралнă. Етĕрнери педагогика техникумĕнче вĕреннĕ, кайран Мускаври А. В. Луначарский ячĕллĕ театр искусствин институтĕнчен вĕренсе тухнă. Вăл çырнă «Партизан Мурат», «Ылтăн вăчăра», «Салтак ачисем», «Юманлăхра çапла пулнă» т. ыт. кĕнекесем ачасен юратнă кĕнекисем пулнă. «Салтак ачисем» повеçшĕн Л. Агаков Чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине илме тивĕçлĕ пулнă. Ку повесть ачасене, тин çеç пурнăç çулĕ çине тухакан çамрăксене Тăван çĕршывшăн усăллă пулса пурăнма, ĕçчен пулма, халăхшăн ырă ĕçсем тума вĕрентекен произведени. Пултаруллă çыравçă 1968 çулта «Чăваш АССР искусствасен тава тивĕçлĕ деятелĕ» хисеплĕ ята, 1974 çулта «Чăваш халăх писателĕ» ята тивĕçнĕ.